Шупашкар — 2016



Михаил СЕНИЭЛЬ

Çырнисен пуххи

Улттăмĕш том

ВИЛĔМСĔР ЧУН

Повеҫсем, новелла-калав,
пьесăсем, статья та очерк
1960—2000

Шупашкар — 2016

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос-Чув)-5
С 31

Михаил СЕНИЭЛЬ

С31 **Çырнисен пуххи. Улттăмĕш том. Вилĕмсĕр чун.** Повеҫҫем, новелла-калав, пьесăсем, статья та очерк. 1960—2000. — Шупашкар, 2016. — 404 с., портрет.

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос-Чув)-5

© М. Сениэль, 2016

Повеçсем

БАНДЕРОЛЬ

Света, кĕт мана. Эпĕ Тухăҫа, Дамански утравĕнчен инҫех мар, лекрĕм; халĕ присяга йышăнман-ха, карантинра эпĕ, салтак мар, йышăнсан вара, халăх ĕҫĕшĕн пурнăҫа та пама хатĕрри ҫинчен командовани умĕнче, салтаксем умĕнче, пĕтĕм халăх, Тăван ҫĕршыв умĕнче тупа тусан, чĕркуҫленсе ялав чуптусан, вара салтак ятне илетĕп. Ҫав самантран эпĕ — атте-аннен мар, санăн мар, пĕтĕм халăхăн, ҫавăнпа та ăнлан, вăхăт ҫитмесĕр, Ҫĕршывăм саппаса ямасăр, киле пыраймăп, сана кураймăп, кăвак куҫунтан пăхаймăп, ҫӳхе тутунтан чуптăваймăп, ҫурăмунтан лăплăп! лăпкаймăп. Эс парса янă тĕрленĕ тутăр — кăкăр кĕсйинче; эс парнеленĕ, ман ҫине йăлкăшса пăхакан сăну — кăкăр кĕсйинче, чĕре тĕпĕнче; ир пулсан та, каҫ килсен те, минутсерен-пĕр кăлара-кăлара пăхатăп, ҫамкунтан чуптăватăп. Чĕрене ăшăтать вăл, чуна ăшăтать, куҫа ҫивĕчлетет, ăса уҫать.

Кĕт мана, никампа та ан ҫӳре, никампа та ан улăштар мана. Эсĕ Силемпи аппаран ҫуралнă вĕт, аҫу та сан — Акташ. Саврăш паттăр пек, вилнĕ ҫĕртен чĕрĕлсе тăнăскер, шывра та путманскер, вутра та ҫунманскер сан аҫу. Илтнĕ-и эсĕ хăвăн аҫупа аннӳ ҫинчен тĕлĕнмелле хитре те чаплă халап? Е ăна сана никам та каласа кăтартман-и? Света, вĕсен тĕслĕхĕ, ҫав хăватлă симфони, мана тĕпренех пăлхатрĕ. Ялта чухнех ҫырма пуҫланăччĕ эпĕ повесть. Ҫыртăм, чылай ҫыртăм, хальччен ех, паян кунччен ех, тăрăшрăм, ҫĕркаҫ, акă, ҫырса пĕтертĕм. Света! ăна халĕ сана ярса паратăп. Колхоз правленинче те, шкулта та, ху пĕлетĕн ĕнтĕ, пичетлемелли машинка пур. Таса хутне района кайса Митюк тусăмран, хаҫат редакцинчен, ыйтса пăх. Пĕр ҫĕклем парса ярĕ вăл сана таса шурă хут, копировка текеннине те тупса парĕ. Эпĕ ун патне те ҫыру ҫыртăм-ха, вăл кĕтет те пулĕ ĕнтĕ сана.

Света, алҫырăвне никама та ан кăтарт, ху ҫап, икĕ экземпляр, вара эп ҫырни тăрăх тĕрĕслесе тух та Шупашкара Василий Алендей писатель патне ярса пар. Вăл та манăн тус. Алҫыру пырасси пирки эпĕ ăна та ҫырса ятăм.

Света! Халĕ çур çĕр çитсе пырать, ку çырăва дневальнăйпе калаçса килĕшсе, пуринчен те пытанса, çыратăп, ыйха татса, сана курас килнипе çунса хурататăп шурă хута.

Повеçре аттем çинчен ăна пĕр шеллемесĕр, анчах та вăл çапла пулнишĕн чунран хĕрхенсе çыртăм. Хĕрӳллĕ салампа сана чунран хисеплекен Михетер Мирунĕн Павăлĕ. Çырăва илсенех ответ çыр. Кĕтетĕп.

1. Мирун ĕмĕчĕ

...Çыхăну çур сăмахранах татăлчĕ. Трубкăра Акташ сасси:

— «Çăка», эпĕ — «Юман», мана илтетĕн-и? — терĕ те шăп пулчĕ. Ахалех кăшкăрашрĕ ăна хирĕç Мирун, вырăсла та, чăвашла та каласа пăхрĕ:

— «Юман»! Акташ! Мĕн шуйттанĕ пулчĕ, ма чĕнместĕн? Кабеле халь çеç тăсрăмăр вĕт! — тарăхса кăшкăрчĕ вăл. «Юри хăтланать йĕксĕк, ялтишĕн тавăрать, Силемпийĕшĕн халь те кураймасть. Мана бомбăсем айне провод сыпма ярасшăн», — вĕчĕрхенсе шутларĕ Мирун тăшман самолечĕсем ĕрлесе, пĕтĕм тӳпене хупласа килнине ывăç тупанĕ айĕнчен сехĕрленсе сăнаса. Çӳлте тӳпере икĕ «мессершмитт» пирĕн самолета тапăнчĕç. Моторсем хаярăн ула-ула яни, çуначĕсем хĕвел çинче йăлтăртата-йăлтăртата илни, пулемечĕсемпе вăхăт-вăхăт шатăртаттарни чуна кайса тивет. Пирĕн самолет, кăвак тӳпере çăра хура тĕтĕм варкăштарса, вăрман хыçне ӳкрĕ.

Çук, Мирун ĕненмест — ăна-и, вĕлересшĕн-и? Акташ ăна фашист самолечĕсемпе усă курса вĕлересшĕн-и? «Çук, тăванăм, ентешĕм, çак тамăк ăшне эсĕ чăм, провод сыпма эсĕ сĕтĕрĕнсе тух; эпĕ мар, эсĕ пĕтмелле; бомба айне тӳр килеймесен, ак хам, карабинпа...» — çапла шутласа, Мирун куçĕ умне Силемпи сăнне ӳкерчĕ: пĕрре пăхсан, хĕр сăнĕнче нимех те çук пек — çаврака çепĕç янах, тӳрĕ селĕм сăмса, куç палăрăмĕнче темле ăнланмалла мар вăрттăнлăх... Пит питех ĕнтĕ, урăх мĕн пултăр... Анчах... пăхăр-ха ун тути çине. Кулмасть-ха тути, ак-ак кулса ярас пек... кулса яратех вăл. Ирĕксĕрех çав кулла кĕтетĕн, уçă, именчĕклĕ, ĕненӳллĕ кулла, чи пысăк телее кĕтнĕ пек кĕтетĕн. Чĕнӳллĕ, анчах чуптутарман, уçă кăмăллă пек, анчах ăнланма май çук тута. Именӳллĕ те хĕрӳ юнлă пӳ... Çĕр çинче мĕн чухлĕ хитре хĕр пуль! Мĕн тума кирлĕ вĕсем

Мируна? Мирун нихҫан никам ҫине пăхса та ҫапла савăнмасть, нимĕне те ҫапла тери юратмасть, чунне пĕтĕмпех Силемпие панă, пĕр ăна ҫеҫ! Хĕрĕн тути ҫеҫ мар ҫапла савăнтарать ăна — хура куҫ харшисем, тĕлĕнтермĕш тăрăхла куҫсем, вăрăм ачаш мăй авăкĕ, килĕшӳллĕ питшăмми... Епле савăнмасăр пăхăн-ха ĕнтĕ ҫакăн пек хĕр ҫине? Ҫакă мар-и ĕнтĕ вăл халиччен пулман илем, ăнланмалла мар вăй-хăват, тĕлĕнмелле чаплă япала?! Кăкăр-ҫурăмĕ, кĕлетки, утти, калаҫни-кулни... «Эй, турăҫăм... пĕтме ан пар мана. Анчах чим-ха, сывă юлăп, тейĕпĕр, вăрҫă пĕтĕ, Акташ та сып-сывах таврăнĕ. Вара мĕн пурăнни? Силемпи манăн мар, Акташăн...»

Мирун карабинне хыпашласа пăхрĕ, магазин коробкине тĕрĕслерĕ — тулли обойма. Пĕр патронне пеме хатĕрлесе кĕпҫине кĕртрĕ, затворне предохранитель ҫине лартрĕ; карабинне ҫакрĕ те кабель тĕрĕслесе кунталла шума тивĕҫлĕ Акташа хирĕҫ кайрĕ. Ҫул урлă каҫрĕ ҫеҫ, тăшман самолечĕсем пуҫ ҫинех ҫитрĕҫ. Унта-кунта зениткăсем кĕрслетрĕҫ. Хура курак кĕтӳне ачасем юрпа пенĕ пек ҫеҫ туйăнчĕ ҫакă — самолетсем вĕсене шута та илмерĕҫ. Хир ҫӳлтен ывăҫ тупанĕ ҫинчи пек лайăх курăнать. Тăшман Мируна та паҫăрах асăрханă ĕнтĕ, паллах. Хĕвеллĕ аслă тĕнче пĕтĕмпех мотор шавĕпе тулса ларнă, ҫĕрпе пĕлĕт таранах, мотор улать те, шăрăхпа типсе хăрнă хир сиксе чĕтрет, кашни курăк туни хăраса пуҫне чикет. Зениткăсем халь пĕрер-икшерĕн ҫеҫ пемеҫҫĕ, урнă йытăсем пек сиксе вĕреҫҫĕ. Кăвак тӳпере снаряд вĕҫĕхĕррисĕр нумай ҫурăлать. Мĕн пур-ши тӳперен анли, тарăнни? Ҫав аслă тӳпере паян — тăвăр. Ҫунатсем, ҫунатсем, ҫунатсем, самолет кӳлеписем, хӳрисем — тăвăр; тӳпере ăҫта пăхнă унта хура хĕрес. Мĕлкесем вĕлтлетнипе хир чӳхеннĕн туйăнать. Пĕр вăхăт тикĕссĕн кĕрлесе тăнă хыççăн моторсем хаярăн шăхăрса улама тапратрĕҫ. Пĕр самолечĕ тайăлчĕ, ҫĕрелле ана пуҫларĕ, тепри, тата тепри... Чуна кайса тивмелле улаҫҫĕ, тĕрлĕ саслăн — чĕре тапма чарăначарăна ларать, куҫ хуралса килет. Самолетсем Мирун ҫинех анаҫҫĕ, Мирун, шăтăкне тупайман шăши пек, ниҫта кайса кĕрейми ăшталанать. Пĕрремĕш самолетран хура пăнчăсем уйрăлчĕҫ: фашистсем Мирунпа Акташăн артиллери дивизионне бомбăсемпе аркатма пуҫларĕҫ.

Мирун темшĕн ури ҫине сиксе тăчĕ, ҫавăнтах тăмлă вĕри, хытă ҫĕре ӳкрĕ, пичĕпе, кăкăрĕпе, хырăмĕпе, пĕтĕм пĕвĕпе, армути шăрши перекен тăпра ҫумне йăпшăнчĕ. Мăнтарăн ҫĕр,

пĕртен-пĕр шанчăк, хăтар инкекрен, çĕр. Мирун макăрса ячĕ. Çĕр хăрушшăн силленсе илчĕ, пĕрре, иккĕ, унтан сиксе чĕтреме пуçларĕ. Çӳлте тӳпе çурăла-çурăла каять, Мирун çине ишĕлсе анассăн туйăнать. Çителĕклĕ! Çитрĕ! Пĕтĕм тĕнче арканса кайрĕ пулмалла. Чарăнсамăрччĕ ĕнтĕ! Анчах çĕр чĕтреме чарăнмасть, бомбăсем шилесе анаççĕ те ахлатса çурăлаççĕ, сывлăшра бомба ванчăкĕсем чăшăлтатса тăраççĕ — вĕçĕ те, хĕрри те çук бомбежкăн. Шанмасть чĕрĕ юласса Мирун. Пĕчĕк, ниçта кайса кĕрейми, пурте маннă шăши. Пĕчĕк? Кам, Мирун-и? Çук, вăл акăш-макăш пысăк, пӳне самолетсенчен ниçта пытараймасть. Пурте маннă? Манман. Пĕтĕм енчен курнать. Эх, ана пыйти пек пĕчĕк пулса тăрасчĕ, хăтăласчĕ, пурнасчĕ! Вилме-и? Кунта питĕ час вилме пулать, секундрах пашалу, котлет, нимĕр туса хураççĕ. Вĕçне çитиччен тӳсесчĕ, сывă юласчĕ, пурнас, пурнас килет!

Шăплăх кĕтмен çĕртен килсе хупларĕ. Взрывсенчен те хăрушăрах, анратакантарах шăплăх. Шăплăха илтмесĕр, ăна ĕненмесĕр, Мирун çĕр çумне лăпчăнать те лăпчăнать, пĕр çĕрте çеç сывă юлнă лаптăка ыталать. Минут иртет, иккĕ, — таврара çаплах шăп. Мирун пĕвĕ пĕчĕкленнĕçемĕн пĕчĕкленсе пычĕ, унтан малтанхи пысăкăш çеç тăрса юлчĕ.

Мирун — ура çинче. Шăрăхпа типсе хăрнă хирте çил тухнă, шуйттан урапи текен ӳсентăран çăмхи кусать. Таврара пурте сып-сывах иккен, пĕр взрыв варинкки те çук — бомбăсем кунта мар, Акташ килмелли енче ӳке-ӳке çурăлнă. Хăранă та тарăхнă кушак пек чашкăрса тӳперен аташнă хурçă катăкĕ килес ӳкрĕ. Мирун тăпах чарăнса ун çине тĕлĕнсе пăхса тăчĕ: шăллă, кукăр-макăр, çунчăк хурçă татăкĕ, пуçран лекнĕ пулсан, пуç чашкине хăпăтса пăрахатчĕ.

Самолетсем кăмăлĕсем тулнăн мăрăлтатса каялла кайрĕç, зениткăсем вĕсене нимех те тăваймарĕç.

Хĕвел анса ларас патнех çитнĕ. Хирте тусан тĕтри тăрать, ăна хĕрлĕ анăç тĕсĕ çапнă. Мирун армути тĕмĕсем хушшипе тăсăлакан кабель тăрăх, татăлнă тĕлне тупса сыпса хăвармăпи, тепре килмелле ан пултăр тесе, пĕлнĕ çĕрпе сăнав пункчĕ еннелле утать. Армути шăпăрĕ кирза атта çапăнать, атă сăмсине йăлтăраса тăракан пуличчен тусанран тасатать. Сăнав пункчĕ инçе мар ĕнтĕ, çывхарнăçемĕн çывхарса пырать, Акташпа тĕл пуласси те çывăх. Мирун кабель сыпасса кĕтсе ларать пуль, сысна, çын пĕтсен те юрать, вăл çеç сывă юлтăр. Силемпи —

унăн... Вăл чĕрĕ чух Силемпи нихçан та Мируна пулас çук. Çак шухăш пуçне пăта пек кĕрсе ларнипе, Мирун Акташа курайми те курайми пулса пычĕ. Чĕр тамăкра пиçсе тухнăскер, вилĕме куçран пăхнă кĕвĕç чун, çиллине шăнарайманнипе карабинне пӳрнисем пĕлми пуличчен чăмăртать: «Ларать пуль-ха сăвăр пек пытанса, халĕ те тухман пуль. Патрона кĕртсе лартнă, затворне туртса хунă, предохранитель çинче çеç тытăнса тăрать, иксĕмĕр çеç юлсан, перетĕп те пăрахатăп, — шухăшлать Мирун, — персе пăрахатăп та чавса чикетĕп, шыраччăр унта кайран çак асар-писер вăхăтра — пĕрре пăх, эпир кунта, тепре пăх, пирĕн вырăна нимĕçсем çитсе тăнă, аташса килнĕ фашист пули çине йăвантарма пулать». Мирун шухăшне çирĕплетме тенĕ пекех, сылтăмран пĕрин хыççăн тепри виçĕ пуля çепĕççĕн юрласа иртрĕ, унтан инçех те мар пулемет шăтăртатса илчĕ. Пырсан-пырсан, армути уйĕ пĕтрĕ те, автан хӳри пек сарăлса та авăнса тăракан кăкăр çӳллĕш курăк пуçланчĕ. Курăк хушшипе ĕнтĕрĕкре пĕр мĕлке йăкăлт-йăкăлт! сиксе килет. Ку Акташ, улах вырăнта персе пăрахма меллĕ пулать тесе, Мирун карабинне вĕçертрĕ. Акташ-и? Çук, урăх салтак. Мируна асăрхарĕ те аллине арман çуначĕ пек сулкалама пуçларĕ, такăна-такăна ӳксе чупать. Хăй хытă чупнипе ăшша пиçнĕ, йĕп-йĕпе тара ӳкнĕ, куçĕсем ылмашăнса кайнă.

— Кĕçĕн сержанта...

Мирун туять: ун карабин тытнă алли тарласа кайрĕ, çурăмĕ те йĕп-йĕпе.

— Акташев кĕçĕн сержанта... Халь çеç... Бомбежка вăхăтĕнче... Çав тамăкра кабель сыпма тесе тухнă та... Куç умĕнчех... Бомба ӳкрĕ те таçта çити ывăтса ячĕ... Пырса пăхрăмăр та вилнĕ...

Мирун тарлă аллипе карабина çатăрласа тытнă та юпа пек шак хытса кайнă, сăнне хăй калама çук тĕлĕннĕ, хуйхă витĕр çапнă пек тăвать, пуçĕнче: «Çапла çăмăл татăлтăмăр-и, çапла çăмăл пĕтрĕ-и, аван, питĕ аван», — текен шухăш хăйĕн. Салтак çаплах лăпланаймасть:

— Никам та ирĕксĕр яман ăна... Мана хăйпе чĕнчĕ те, каймарăм... Инçе те шуса ĕлкĕреймерĕ...

Салтак çаннипе тарлă питне шăлать, тĕссĕр куçĕсемпе Мирун çине мĕскĕннĕн пăхать. Мирунăн урисем тимĕртен тунă пек йывăрланса кайрĕç, çĕр çумĕнчен хăпăтаймасть вĕсене. Пĕр

вырăнтах тăрать, нимĕн те чĕнмест. Вăл сасартăк çав тери хăраса ӳкрĕ, мĕншĕнне хăй те пĕлмест.

— Лейтенанта пĕлтерес пулать, — терĕ юлашкинчен Мирун. — Ним калама пĕлмелле мар, тăванăм... Хамăр та бомба айне лекнĕ пулсан...

Мирун хăй сисмесĕрех карабинне хулпуççи çине çакрĕ те малалла талпăнчĕ:

— Кайрăмăр...

Салтак юнашар сиккелесе пырать, Мирун умне туха-туха бомба епле шăхăрса анни, çĕр çĕмĕрсе çурăлни, Акташа взрыв хумĕ таçта çити ывăтса яни çинчен çĕнĕрен те çĕнĕрен каласа кăтартать:

— Кам шутланă... Бомби ун çине тенĕ пекех ӳкрĕ вĕт... Ах, анчах... Ача çеç вĕт-ха, çирĕм те тултарман... Ача çеç... Эх-ах-ах... Çынни пит лайăхчĕ, тус тесен чунне çурса пама хатĕрччĕ...

Анăç вут хыпса илнĕ пек ялкăшать. Çĕр хĕрринче пушар çăра хĕрлĕ, юнпа пĕвеннĕ тĕслĕ, çӳлерех тĕс шĕвелет, çепĕç, таса, сарăрах та симĕсрех. Анăçран пулеметсемпе автоматсем тапратнă усалах мар харкашу илтĕнет. Паçăрхи çӳллĕ курăк çĕрелле пуçне усса тăрать. Çил лăпланчĕ те таврара сывлама сывлăш пĕтрĕ.

Пырса çитрĕç те, Мирун умне палланă лăпкă сăн-пит, çамки çумне çыпăçнă çӳç пайăрки, витĕрех тар шăрши çапнă типсех те ĕлкĕреймен сап-сарă çӳç тухса тăчĕ. Аллин чĕрнисем кăвакарма та пуçланă ĕнтĕ. Çăварĕ кăштах уçă. Чĕркуççийĕсене, пĕчĕк ача пек, хырăмĕ патне хутлатнă. Начаркка, темле пĕчĕкленсе кайнăн туйăнать. Тĕсĕ кайнă гимнастерка çат тытса тăрать, ун витĕрех кĕçĕн сержант шултра шăмшаклă, яштака хитре салтак пулни палăрать. Аттисем кивĕ, кĕлисем чалăшса кайнă.

Хăй Акташа курайми пулнă самант Мируна çине-çинех аса килет, халĕ те вăл ун умне яр-уççăн тухса тăчĕ. Ачаранпах купăс калама ярăнса, Мирун шкулта çуллен япăхрах та япăхрах вĕрене пуçларĕ, учительсем ятлани те, килте ашшĕ-амăшĕ лайăхрах вĕренме чунран тархаслани те пулăшмарĕ ăна, çичĕ класс пĕтеркелерĕ те шкул çине алне сулчĕ, лаша витине ĕçе кĕрсе, туйсем, ĕçкĕсем, улахсем тăрăх купăс каласа çӳре пуçларĕ, ялти чи шухă каччă пулса тăчĕ. Пĕрре, шкула пăрахсан чылайран, çуркунне, урамра яш-кĕрĕмĕн

туйĕ-çуйĕ пуçлансан, вăл купăсне çакса яланхиллех вăйăа тухрĕ. Купăсĕ унăн чаплăскер, саккаспа тутарнă, корпусне лакпа витнĕ, чечеклесе пĕтернĕ купăс, капăрки йĕпкĕн хĕрлĕ, чĕлĕхĕсем, хăй каланă тăрăх, ылтăн. Çаккисене хăюсемпе илемлетсе тухнă. Мирун «Буденный маршне» шăрантарса ярсан, çамрăксем çеç мар, граждан вăрçи ветеранĕсем те хăлхисене тăратаççĕ.

Пĕррехинче Чистай хулинче ăна судья хĕрĕн çуралнă кунне ирттернĕ çĕре укçа парсах илсе кайнă. Мирун купăс калани вуннăмĕш класра вĕренекен хĕре çав тери килĕшнĕ, чунне çурса пама хатĕрскер, çамрăк майра чупса пырса хура кăтраллă çамрăк качча çамкинчен чуптуса илнĕ. «Кĕтни» вальс кĕввипе çаврăннă май, пикен пуçĕ çаврăнса кайнă та, Мируна питĕ ырă мар пулнă. Кайран Мирун çакна аса илсе нумай мухтаннă, судья хĕрĕн ăна хытă юратнипе пуçĕ çаврăнса кайнă, теме юратнă вăл.

Юратнă-и, юратман-и судья хĕрĕ Мируна, пĕлме хĕн, ял хĕрĕсем вара, Саврăшпуç пикисем, уншăн вилсех каяççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна тĕрленĕ тутăрсем, перчеткесем çине-çинех параççĕ, купăсне тĕрлĕрен хăюсемпе илемлетеççĕ. Ялта ăна юратман хĕр çук та темелле, кашниех ăна савни тăвасшăн. Мируна пит çăмăлах çавраймăн, вăл хăй мĕн хак тăнине аван пĕлет, парнесем те ăна илĕртмеççĕ, çемçе чĕлхе те ăна витеймест. Кăшт сыпсан, вăл юлташĕсем хушшинче çапла мухтанма юратнă: «Ман чĕрене тыткăнлама пултараканни таврара çук, тупăнас пулсан, ун умне купăсăма çĕклесе çапма та хĕрхенмĕп». Тусĕсенчен чылайăшĕ ăна ĕненнĕ: Мирун ун пек пике умне хăйĕн чаплă купăсне çĕклесе çапатех. Епле тăрăшсан та, Саврăшпуç пикисем маттур йĕкĕт пуçне çавраймăн, купăсçа вĕсен илемĕ те, тумĕ те, парнисем те кăсăклантарайман. Хĕрсен ушкăнне вăл яланах сӳрĕккĕн пырса кĕнĕ: хĕрупраç кулли те, çунса тăракан куçĕ те Мируна пăлхатайман. Ăнсăртран уяв картине, шур акăшсем пек юхса çаврăнакан çав тери хитре шутланнă хĕрсем хушшине, купăсĕпе пырса кĕрсен, пурне те куçне хĕсерех кичеммĕн пăхса çаврăннă; салху пуснипе ним тума аптăраса, пĕр шухăхĕрне йăл кулса кăтартнă та, лешĕ савăннипе çу пек ирĕлнĕ. Йĕкĕт питĕ сисĕмлĕ, пӳрнепе пуснă-пусман чĕвĕлтетме тытăнакан чĕлĕхсене калаçтарма пуçланă çеç, сарлакан янăракан тунсăхлă уяв юрри тăпах чарăнса ларнă, таврара çав тери шăп пулса тăнă, Мирун купăсĕн

пĕрми ассăн сывласа илни тата йăлтăраса тăракан вĕр-çĕнĕ атти чăкăртатни çеç илтĕннĕ.

— Сывлăх сунатăп, шăпчăксем, — пур еннелле те пуç сĕлтсе куларах каланă вăл. — Çывхарса килекен çимĕк ячĕпе саламлатăп сире, чиперккесем!

— Хăвна та çаплах саламлатпăр, Мирон Михедерович! — хирĕç тавăрнă уяври хĕрсем...

— Итлетĕп те, ытла та кичем юррăрсем паян, кама пит тунсăхлатăр?

— Кама тунсăхлас пирĕн, сана пулмасăр, хисеплĕ Мирон Михедерович, — те шӳтлесе, те чăнах хуравланă хĕрсенчен пĕри, шухăраххи.

— Нивушлĕ? — юриех тĕлĕннĕ пек тунă Мирун. — Нивушлĕ çапла терех тунсăхлатăр мана?

— Тунсăхламасăр тата, хăçантанпа килсе курăнмастăн пирĕн ума, Чистайра майрасене ташлаттарса çӳрен, вилес пек тунсăхларăмăр, — тĕксе илнĕ тепĕр хĕрĕ.

— Ах, иккĕлентереççĕ мана сирĕн пыл пек сăмахăрсем, чунăмсем! Ĕненме те йывăр, каçарăр та мана çакăншăн, ылтăнăмсем... — хĕрсене татах шăл йĕртересшĕн, тархаслаттарасшăн пулса сăмах вылятнă Мирун, купăсĕн шурă тӳмисене шăкшак! пуса-пуса илнĕ.

— Эс ĕнен пире, Мирон Михедерович!

— Çав тери ырă кăмăллă пулсам пĕрре...

— Ан иккĕлен эс ним чухлĕ те, — сырса илнĕ Мируна хĕрсем саркайăк пек чĕвĕлтетсе.

— Питĕ те ăнланатăп, майрасем. Юрлама паян эсир, чăнах та, ытла салху юрлатăр. Пĕрре те манăн кăмăла килмест çакă.

— Пирĕн упа пек чĕмсĕр йĕкĕтсемпе урăхларах та юрласа ярăн, вилсе выртăн салху пусса илнипе!

— Купăссăр пирĕн темме юрри те юрланасшăн мар, ури те шумасть...

— Çитес çимĕк ячĕпе савăнтармастăн-ши пĕрре, тăванăм?

— Тивĕçтерсем ĕнтĕ ыйтăва.

— Сатин кĕпе илсе парăпăр.

— Пружинăллă койкă...

— Хĕр вăрлама — самолет...

— Каласа пар пире «Линькка-линькка», ташлар пĕрре чун каниччен.

— Краковьяк!

— Полька!

— Вальс!

Анчах та хĕрсем мĕн кăшкăрнине Мирун хăлхине те чикмест ĕнтĕ. Вăйă картинче Силемпие асăрхаса, вăл юпа пек шак хытса кайрĕ, купăс тӳмисем тăрăх чупакан пӳрнисем те тăпах чарăнчĕҫ. Çук, нимĕн те ăнланмасть Мирун. Çапла. Нимĕн те... Çак çӳллĕ те яштака, ютрах сăнлă пикене курсан, вăл çут тĕнчене йăлтах манчĕ: уява та, хĕрсен сассисене те, кăкăрĕ çинче йывăррăн усăнса тăракан чаплă купăсне те. Вĕсене кăна мар, хăйне те манса кайрĕ Мирун, ялти пĕр чаплă каччă. Куçне мăч! та тутармасăр, çăвар карса, Силемпи çине вăл чылайччен пăхса тăчĕ, куçĕ хуралса килчĕ унăн, пуçĕ çаврăнса кайрĕ: «Кам ку? Нивушлĕ чиканран çуралнă Силемпи текен тăлăх хĕр çапла терех çитĕннĕ? Нивушлĕ çавă? Çавă... Силемпи...»

Юлашкинчен, çухалса-пăтрашăнса кайнăскере тинех тăн килсе кĕчĕ. Вăл хура кăтрисене вĕçкĕннĕн лăстăр! силлесе илчĕ, Силемпи еннелле çирĕппĕн пĕр утăм ярса пусрĕ, купăсне хĕрӳллĕн те хăватлăн кĕрлеттерсе ячĕ. Мăн сасăпа мĕкĕрекен бассем чĕвĕлти чĕлĕхсемпе ăмăртни мăнаçлă та чуна çӳçентермелле хаяр илтĕнсе тăчĕ — итлесен, Мирун купăсĕ хăех пĕр оркестр. Вăйă карти юрра ярса илчĕ, алран-алла тытăнса çаврăна пуçларĕ. Уяв куракан ватă-вĕтĕ чĕрне вĕççĕн тăрса Мируна ытараймасть. Юрри, анлă та тунсăхлăскер, çынсене савăнтарса юхать те юхать:

Чĕнтĕрлĕ кермен ту çинче,
Мĕлки хура шыв çинче,
Каччи уяв патĕнче,
Кăвак куçĕ хĕр çинче.

Кăруççел пек капăр, вăраххăн çаврăнакан вăйă карти — уяв тенĕскер — юхать, вĕлтĕртетет Силемпи куçĕнче те. Ушкăнпа килтерсе юрлакан çак юрăпа Силемпи чĕри хытăран та хытă тапрĕ, хĕр пăлханнипе юрлайми кăна мар, сывлайми те пулса тăчĕ. Вăл туйрĕ: хăйпе юнашар пыракан Акташ Михайли, тури касри çӳллĕ яштака сар каччă, кăçал çеç, ĕнер пуль-и, вăтам шкул пĕтернĕ тĕреклĕ яш ача, ăна ал тунинчен тытрĕ, çирĕппĕн чăмăртарĕ. Вăйă картинче те Силемпи çав вăйлă та шанчăклă алла пула кăна тытăнса юлчĕ пулĕ, ыттисемпе пĕрле çаврăнчĕ. Акташ çине тĕренсен, вăл темле

ăнланмалла мар савăнăç, телейлĕх туйăмĕ çавăрса илнине сисрĕ, хĕр ĕшенсе, ывăнса кайрĕ, унăн пуçĕ çаврăнчĕ.

Мирун Силемпи çывăхнех çитнĕ ĕнтĕ, унпа юнашарах пырать, хулпуççипе хулпуççи лекмеллех çывăх. Купăсĕ ăшĕнчен хĕпĕртӳллĕ, çав вăхăтрах йыхравлă та тунсăхлă, сасăсем тăвăллăн кĕрлесе тухаççĕ. Тĕлĕнмелле тĕрĕс те чуна витермелле калаçаççĕ «ылтăн чĕлĕхсем» Мирун пӳрнисем тӳмесем тăрăх çиçĕм пек ыткăнса çӳренĕ май:

Тăкки-такки ан пусăр,
Çĕр кисренет, ачисем,
Хĕр куçĕнчен ан пăхăр,
Хĕр вăтанать, ачисем.

Ăнланать Силемпи, ăна купăс кĕввипе тата аслă уяв юррипе чунран тархаслать чаплă купăççă:

Ан кай, савни, леш касса,
ман чĕрене çунтарса!..

Çав хушăра Акташ (ăна эпир малалла та Акташах тейĕпĕр) Силемпи аллине вĕçертмесĕр, ним чĕнмесĕр пычĕ. Ялти ăста юрăçсенчен пĕри, çепĕç баритон, клуб сценин илемĕ Акташ халăхпа пĕрле юрласа ямасăр ниепле те чăтас çук. Çавăнпа та вăл чĕнмесĕр пыни пурне те хытă тĕлĕнтерчĕ. Силемпие Акташ ун çине тăраниччен пăхасшăн пулнăн туйăнать, купăс та çавăн çинченех калать пек:

Куçăма ятăм ирĕке,
чун каниччен пăхтарсам.

...Анчах та мĕн пулчĕ? Пушар пек асса кайнă хăватлă юрă мĕншĕн тăпах чарăнса ларчĕ? Пырне ларнă пек чыхăнса илсе купăс та шăпланчĕ? Хĕрсем шăри-шари! çухăрса илчĕç. Пĕр вăхăта каллех çав тери шăп пулса тăчĕ, тахăшĕн атлас кĕпи чăшăртатни, пуç çинченех вĕçсе иртнĕ кайăк çуначĕн сасси уççăнах илтĕнчĕ. Хĕрсем вăйă картине пăсса пĕр çĕре пухăнчĕç, хăравçăраххисем каччисем хыçне пытанчĕç. Йĕкĕтсем çеç вырăнтан та хускалмарĕç. Сарлака кăкăрлă та çӳллĕскерсем, карттусĕсене чалăш лартса, лапсăркка çӳçĕсене çамкисем çине уснă маттурсем, хăшĕ тĕрĕллĕ шурă кĕпепе, хăшĕ çутă сатин кĕпе çийĕн пурçăн пиçиххи çыхнă, çав тери сăнарлă курнаççĕ. Кирлĕ пулсан, çивчĕскерсем, çапăçма та хатĕр.

Пăхса тăракансем курчĕç: Мирун кĕрлекен купăсĕпе Силемпи тавра чылайччен явăнчĕ, Силемпие хăйĕн илемлĕ сăнĕпуçĕпе, яштак пĕвĕпе, чуна çунтаракан хитре кĕввипе çавăрма тăрăшрĕ. Шухăша кайнă хĕр хăй çине пĕрре те куç ывăтманнине курса, Мирун унпа таччăнах пырса тăчĕ, Акташа уйăрса ярса хушша кĕме хăтланчĕ. Силемпи, те çакна сиссе, Акташ çумнерех тĕршĕнчĕ, купăсçа хушша кĕме памарĕ. Мирунăн ăнăçсăрлăхне курса тăракансем савăннипе уласах ячĕç. Анчах та Мирун хăравçă йышши мар, кун пек чух çухалса кайма хăнăхман. Вăл карма çăварсене илтмĕш пулчĕ, ним те кулянман пек курăнма тăрăшса хĕре епле те пулин, пурин умĕнче, çĕнсе илмех шутларĕ; антив, халлĕхе çеç, пĕр саманта, анчах çĕнсе илмеллех, терĕ вăл. Çапла шутласа, купăсне хальччен никам курманла авкалантара-авкалантара, каллех Силемпи патне çывхарчĕ. Çывхарчĕ те купăсне картах туртса, астумасăр тенĕ пек, сулахай чавсипе Акташа Силемпи çумĕнчен хăпăтса ывăтма хăтланчĕ. Çакна Акташ малтанах сисрĕ пулмалла, Силемпи аллине тата хытăрах чăмăртарĕ те хĕре каллех хŷтĕлесе хăварма пултарчĕ.

Иккĕмĕш хутĕнче те ĕç тухманнине курса тăракан карма çăварсем ахăрсах кулса ячĕç. Уяв картине кĕмесĕр кĕпĕрленекен йĕкĕтсем, çапăçу пуласса сиссе, Мируна тем те кăшкăрма, хĕтĕртме тытăнчĕç:

— Хăравçă пулни пĕтерет сана, Мирун!

— Шикли шикленнĕ!

— Купăс лăтăртаттарасси çеç мар çав хĕр çаврасси!

Мирун майлисем те пур-мĕн ушкăнра. Вĕсем те хĕтĕртсе кăшкăраççĕ:

— Ан вĕçерт чиперккене, туртса ил!

— Эх, мемме, ху тĕлне ху тăраймастăн!

— Купăсçă пулатни эс, мунчала!

— Хĕрĕ тата, хĕрĕ, патша майри пек вĕт!

— Пĕр кашăк шывпа çăтса ямалла!

— Форменнăй картинккă!

— Мĕн каласси пур!

Ахаль те ялкăшса çунакан кĕвĕçŷ вучĕ çине йĕкĕтсем «краççын» сапсах тăчĕç. Мирунăн куçĕсем чарăлса кайрĕç, чышкисем чăмăртанчĕç, çилли тăвăлса килчĕ. Мирун, пуçран çапнă пек, тăпах чарăнса тăчĕ, сиксе ŷкме хатĕрленекен усал вăкăр пек хаяррăн куç айĕн пăхса, пĕтĕмĕшпе

тăсса янă купăс пĕрмине лаштах пĕрсе хучĕ. Лăй-лай! турĕ купăс, пĕрми те çурăлчĕ пуль.

Уяв юрри çурмаран татăлчĕ. Таврана каллех хăрушă шăплăх хупăрларĕ, анчах вăл нумая пымарĕ. Хуралса килнĕ, ним курми пулнă куçĕпе пĕр вăхăт Силемпи çине пăхса, Мирун хĕр шурса кайнине, çав сăлтавпа тата хӳхĕмрех курăннине асăрхарĕ, тăшманĕ çине сиксе ӳкме тесе, туртса карăнтарнă ухă пек пулса тăчĕ, купăсне икĕ аллипе те пуç çине çĕклесе хăрушшăн Акташ çине ыткăнчĕ. Силемпи Акташран вĕçерĕнчĕ те, çухăрса ярса, килнелле тарчĕ, Акташ вилсе тăмарĕ, Мирунран вĕлт! çеç пăрăнчĕ те хăлхи чиккинчен шан! çеç тутарчĕ. Лешĕ купăсĕ-мĕнĕпе çĕре тăсăлса ӳкрĕ. Мирун аран-аран ура çине тăнă тĕле Акташ уявра çукчĕ ĕнтĕ...

Çавăнтанпа Акташ — Мирун тăшманĕ, çавăнтанпа Мирун купăс каламасть. Анчах та шанчăк пĕтмен иккен-ха: Акташ — вилĕ, Мирун умĕнче мĕскĕннĕн выртать, темиçе минутран ăна çĕре персе чикеççĕ. Акташ халь — пушăлăх, нимĕн марлăх. Вăл текех çук ĕнтĕ. Мирун вара сып-сывă, калама çук пысăк уйрăмлăх çакă, хаклă Силемпи. Мирунра — малашлăх, калама çук пысăк шанчăк, вăл эрне каялла çеç çирĕм тултарчĕ-ха. Ахалех пăркаланать. Силемпи, пурнăç хăйĕннех тăвать, мĕншĕн тесен, Акташ çут тĕнчере урăх çук ĕнтĕ, пур пулсан та вăл — тислĕк, тăм чăмăркки. Акташа хурт çисе янă та çĕр апачĕ тунă. Акташ-этеме текех курма та, итлеме те, ыталама та, чуптума та, ăсатма та, кĕтсе илме те май пулмасть Силемпийĕн. Асаилме çеç пулать, анчах та асаилӳпе ĕмĕрне тутă пулаймăн. Çапларах халь ĕçсем, Силемпи. Кĕтме, аса илме май пĕттĕр тесе, куçпа курса ĕненмелли япаласем сахал мар илнĕ Мирун.

Хĕрлĕ анăç хуралнăçем хуралса пырать. Хĕп-хĕрлĕ хĕрнĕ тӳпе хĕррине çĕр сăхса тăрать, тейĕн. Акташ Михайли курмасть ĕнтĕ çав анăçа. Ыран ирпе хĕвел çĕкленессе те вăл пĕлеймест. Хĕвел те, тӳпе те, кун та, çĕр те уншăн мар... Карабин кĕпçине патрон кĕртсе лартнăччĕ... Ун валли...

Çӳç пайăрки типмен-ха, çамки çумне çыпçăннă, чĕркуçсийĕсене хырăмĕ патне хутлатнă, анчах та аллин чĕрнисем кăвакарнă ĕнтĕ...

Кабельне сыпса та ĕлкĕреймен пуль, «анне!» тесе те ĕлкĕреймен? Бомба шăхăрса аннă самантра, тен, Силемпи курăннă куçне! Нимех те мар — урăх курăнаймĕ...

— Пытарар, чавса чикер, — терĕ Мирун салтака. — Документсене илтĕн-и?

— Документсемпе темле ҫырусем — тем чухлех, тетрачĕ пур... темле чĕлхепе ҫырнă, ăнланаймарăм.

— Мана пар тетрачĕпе ҫырăвĕсене.

— Тархасшăн, хаваспах.

— Хаваспа? Тьфу! Ҫын вилнĕ — вăл хавасланать... — Мирун йĕрĕнсе сурнă пек турĕ, вилене месерле ҫавăрса пăрахрĕ.

Ҫирĕм-вăтăр утăмра — кивĕ окоп. Акташа окоп тĕпне хучĕҫ, бруствер ҫинчен карабин приклачĕсемпе тăпра тăккаларĕҫ те кăшт-кашт, ячĕшĕн, виткелесе хăварчĕҫ — пурпĕрех мар-и вилнĕ ҫынна. Кукленсе пĕр вăхăт шавламасăр тăчĕҫ — каллех ячĕшĕн, мĕншĕн тесен пурте ҫапла тăваҫҫĕ.

Ҫыннипе пĕрле ăна витĕр курайман туйăма та ҫĕр айне чикрĕ пек Мирун. Анчах чăнах та чикейрĕ-ши? Хăвăн иртсе кайнă яшлăхна пулать-ши яланлăхах ҫĕр айне алтса чикме? Чĕрене ĕмĕрлĕхе ларса юлмасть-ши вăл, ҫĕре хупа пĕрле ҫеҫ, ху вилсен ҫеҫ кĕмест-ши? Пĕр япала ҫеҫ пĕтĕмпех паллă Михетер Мирунне: хăйпе пĕр ял ачин пурнăҫне татассинчен хăтăлчĕ вăл. Ку — яланлăхах...

Чавса, ҫĕмĕрсе, аркатса пĕтернĕ хире каҫ тĕттĕмĕ хупласа илчĕ. Тĕттĕмпе пĕрле шăплăх килчĕ. Шăплăхпа пĕрле вара — ху чĕррине пĕлтерекен туйăм: чĕрĕ эсĕ, чĕрĕ, Мирун, тен, ĕмĕрех чĕрĕ пулăн, тен, ирччен ҫеҫ... Мирун пĕтĕм кĕлеткипе каҫрăлса утса ҫӳрет, пытанма шутламасть те. Тĕттĕм, никам та курмасть — ҫавăнпа. Ырлăх — чĕрĕ те сывă пуласси...

...Ҫăлтăрсем ҫунаҫҫĕ. Аялтах, шултраскерсем, темле тăмаланчăкскерсем.

Окопсенче тахăшĕ карăнса илчĕ те, шăмшакĕ шăтăр! турĕ, пĕри ахлата-ахлата ыратакан ҫурăмне вăрҫать. Темиҫен бруствер ҫине тухса ларнă, сак ҫинче ларнă чухнехи пек, урисене аялалла уснă, халап ҫапаҫҫĕ. Кунĕпе хĕрсе ҫитнĕ ҫĕртен ăшă килет, калаҫусенчен — савăнăҫ: ҫапах та чĕрĕ вĕт-ха, чĕрĕ!

Таврара шăпах, анчах та ҫав шăплăх ултавлă. Кам шăрпăк ҫутрĕ унта? Эсрел! Пытар чикарккуна! Вилсе выртас килет-и?! Упра тĕттĕме шăплăхра канассу килсен, упра тĕттĕме, плащ-палатка айне пытанса турт, окоп тĕпне анса турт.

Мирун месерле выртнă, тӳпенелле, тĕлĕрекен ҫăлтăрсем ҫине пăхать. Кун иртрĕ аранах. Мируна вара хăй тахҫан ĕлĕк,

пĕр вун çул каяллах, артиллери колоннинче утса пынăн туйăнать. Хире пирĕн самолет çунса ӳкрĕ. Мирун çаплах кăкăрне каçăртрĕ: ăна, Мируна, вĕлерме-и? Вĕлереймеççĕ... Тахçанах пулнă çав ку, чăнах та тахçанах: айван пулнă кăнтăрла Мирун — ăна вĕлерме-и? Мĕнех, кам вăл, Мируна та вĕлерме пултараççĕ. «Аманасчĕ, киле каймалла аманасчĕ, вилме вара урăххисем, Акташ пек ухмахсем, бомбежка айне чупса тухса вилччĕр, манăн вара сывах юласчĕ-ха, аманса сывах юласчĕ те мĕн вăрçă пĕтичченех килте, Силемпи илемĕпе йăпанса пурăнасчĕ. Тен, илемĕпе çеç мар, хăйпе те ыр курăп, — сасартăк шухăшларĕ Мирун, шухăшларĕ те хăйĕнчен хăй хăраса кайрĕ. — Анчах мĕн тумалла çапла пултăр тесен?»

Нивушлĕ пĕр кун çеç иртрĕ-ха? Çав пĕр кун хальччен пурăнса ирттернĕ вăхăтпа тан пек: иртнĕ пĕтĕм пурнăç — Саврăшпуç ялĕ, Силемпи — çак пĕр кунпа тан. Ĕненме те çук.

Тăнăç. ытла та тăнăç...

Çăлтăрсем пĕрне-пĕри куç хĕсеççĕ. Ырă кăмăллăн, темле вăрттăн япала пĕлнĕ пек, Мируна хăйсен шухăшне уçаççĕ пек, йăлтăраççĕ. Нимех те мар, çăлтăр çăлтăрах ĕнтĕ, мĕн тĕлĕнмелли пур. Мĕн тĕлĕнмелли пур? Акташ Михайлишĕн вара, эсир, çăлтăрсем, сӳнтĕр — çук эсир, пачах çук, пĕтĕм çут тĕнче çук пекех çук. Ак сана — «нимех те мар».

Сасартăк çăлтăрсем шупкаланаççĕ — сĕм-тĕттĕм тӳпене пĕчĕк вут çăмха кусса хăпарать, ракета! Бруствер çинче ларакан халапçăсем окопа шуса анаççĕ. Паçăрхи салтак курăк çумнех йăпшăнать, Мирун та çĕре ыталать.

Вăрçă хирне чун кĕрет, кашни мĕлке куçать, кукăркаланать, сиксе тăрса таçта çити тарассăн туйăнать. Хире çутатакан çутă, кăвакскер, куçа шартать, чуна сехĕрлентерет.

Çăмха кусса хăпарчĕ те анса кайрĕ. Мĕлкесем мăнланаççĕ, вăрăмланаççĕ, Мирун патнелле туртăнаççĕ — калăн, юмахри армак-чармак тухса тăнă çӳллĕ йывăçсем. Ракета сӳнсен, тавралăх тата тĕттĕмрех пулса тăрать, йĕппе пырса чиксен те, пĕр вăхăта, куç курмасть.

Салтаксем каллех бруствер çине ĕселенсе тухаççĕ, мирлĕ пурнăçа аса илсе тĕрлĕ халап çапаççĕ.

Каллех — шăп, шăп... Каллех — çăлтăрсем...

Ирхине тăшман мĕн пултарнă çавна килсе тăкрĕ: пехота, мина, снаряд, танксем, бомбăсем. Дивизион комиссарне амантрĕç. Фашист ниçта кайса кĕмелле мар хĕстерет.

Хир ҫунать. Хӗвел ҫутинче ҫулăм курăнмасть. Ҫӗртен пӗр хăлаҫра пуль, тӗтӗм палăрать. Тӗтӗм хушшинчен ҫӗмрӗк тупă хăяккăн выртни курăнать. Пӗр туппине ҫӗркаҫ тыла ăсатрӗҫ — бомба сиенленӗ. Иккӗшӗ халлӗхе сывах. Вӗсен кутӗнче тӗркӗшни, кăшкăрашни, ятлаҫни илтӗнсе тăрать. Чакса кайма приказ килнӗ иккен.

Ҫунакан тырă тӗтӗмӗпе сиксе ташлакан ăрша леш енчен нимӗҫ танкӗсем нăрăсем пек шуни курăнать. Вӗсем паҫăр ҫеҫ пӗчӗкҫӗччӗ, халӗ пысăкланнăҫем пысăкланса пыраççӗ.

Пӗр орудие турттарса кайма хатӗр турӗҫ — лашисене кӳлнӗ, ҫавăрса тăратнă. Ездовойсем вӗсене саламатпа ҫунтарса илеççӗ те, лешсем малалла тапса сикеççӗ.

Инҫех те мар снаряд ӳксе ҫурăлчӗ, салтаксен хурҫă каскисем ҫине тăм муклашкисем кăпăрах килсе тăкăнчӗҫ — никам та асăрхамарӗ ҫакна.

Утăм хыççăн утăм, утăм хыççăн утăм — шалалла, Тухăҫалла!

— Сывлăш!

Ҫул ҫинче никам та юлмасть, кюветалла — питпе, кăкăрпа ӳкеççӗ: упрасам, ҫӗр-анне!

Бомбардировщиксем вӗҫсе каяççӗ те, ҫул ҫинче каллех — халăх. Пӗрисем бинтпа чӗркесе пӗтернӗ аллисене пӗчӗк ача пек йăтса пыраççӗ, теприсем пуҫран е кăкăртан аманнă, виҫҫӗмӗшӗсем винтовкисене туя туса лăкăштатаççӗ. Чӗрри те, ҫурма чӗрри те Тухăҫалла чакать. Мирун та вӗсемпе пӗрле пырать, сывă юласси пирки шухăшлать...

2. Силемпи

Амăшне Силемпи астумать, ашшӗ кам иккенне тӗплӗн пӗлекен ҫук: пӗрисем тимӗрҫӗ Микулай, теприсем ҫӗвӗҫ Петӗр, теççӗ. Лаша вăрри пулнă, чăвашланнă чикан Яшкă хăй вилес умӗн: «Силемпи — манăн хӗр», — тенӗ пулать. Тахăшне ĕненмелле — ял ҫăварӗ пин ҫăвар, кашниех тӗрлӗрен пакăлтатать. Силемпи амăшӗ, ҫемьере пӗртен-пӗр ача пулнăран-ши, ачашрах, чарусăртарах ӳснӗ. «Ачаш хӗр ача тунă», — тет халăх сăмахлăхӗ. Ҫак сăмах, тен, пур чухне те тӗрӗсе те килмест, хальхинче вара вăл чăна килнӗ: хӗр, яла тӗлӗнтерсе, качча каймасăрах ача ҫуратса панă. Ачине вăрттăн, хутман мунчара,

сивĕ те нӳрлĕ çĕрте, çуратнăран-ши е урăх сăлтавпа, вăл вĕрĕлет те талăка яхăн асапланнă хыççăн çĕре кĕрет. Алăри ача кукашшĕпе кукамĕш куçне тăрса юлать.

Силемпи ачаранах чĕмсĕр, никампа та хутшăнмасăр, аслисенчен те, ача-пăчаран та ютшăнса ӳснĕ, яланах пĕччен пулма тăрăшнă, ыттисемпе пĕрле алхасма та, тĕрлĕрен вăййăсем выляма та юратман. Пĕчченех çырма хĕрринче хурсем кĕтсе çӳренĕ, хирте чечек пуçтарнă, хăш чух вăрмана çырла татма кĕнĕ. Çын куç умне пуласран яланах асăрханнă.

Хĕрача ун чух хăй сĕм-тăлăххи çинчен те, ашшĕпе амăшĕ камсем тата ăçта иккенне те пĕлмен. Темшĕн ĕнтĕ вăл ялти ача-пăча ура та ярса пусма хăракан Чулпалăкçи текен вырăна кăмăллана, Киремет çырминчи шăнкăр-шăнкăр çăлкуçĕ патĕнче выляна, çула май çăва картине кĕрсе, вилтăпри тĕмески çине ура усса ларнă. Мĕн кăна калаçман-ши ял ачи-пăчи çак вăрттăнлăхпа илĕртекен кăваклăхри вырăнсем пирки. Пĕрисем каланă тăрăх Чулпалăкçи енне çĕрле, çур çĕр тĕлĕнче, вĕреçĕлен анать, вăл çутăласпа тин, автан виççĕ авăтсан, хăй çулăхнă тăлăх арăм патĕнчен мăрьерен тухса ту пуçĕнчи çӳллĕ йăмра урлă Киремет çырминелле вĕçет, теприсен шучĕпе ку пачах та вĕреçĕлен мар, аçтаха — çынна та, выльăха та çăтакан пысăк çĕлен. Вĕреçĕлен пирки питĕ хăрушă япаласем калакала кăтартаççĕ! Ĕлĕк вăл Силемписен ялĕ çийĕпе яланах иртеирте каятчĕ, тет. Ăна ял çыннисенчен чылайăшĕ курнă. Пĕрре арман патне аннă тет те арман хуçи умĕнче çарамасах тăрать, тет. Пĕр чух арçын, тепĕр чух хĕрарăм пулса курнать вăл. Унтан питĕ сыхланмалла, ахаллĕн хăйĕн çынни туса çӳрет, мĕн чунна иличченех вĕçертмест, вăрçтарсан — çынна лаша туса, çăварлăхласа утланса çӳрет, вăрçтармасан — тивмест. Вĕреçĕлен тырă пуссисем урлă вут тăкса иртсе кайсан, çав çул тырă пулмасть е, пулсан та, çунса каять. Çавăнпа та вăл хирсем урлă вĕçессе питĕ сыхласа тăмалла. Тахçан авал çапла пĕр мучи, çĕрле, вăрман хĕрринче, лаша çитерме тухнă ачасемпе кăвайт тавра ларнă хушăра, çӳлте вĕреçĕлен йăлтăртатса, хĕм тăкса пынине курать. «Ункăллă çĕçĕ, ункăллă çĕçĕ парăр!» — тесе кăшкăрса ярать вăл сасартăк. Телее, пĕр ачин ункăллă çĕçĕ пулнă. Мучи ăна картах туртса илет те, темскер каласа, унки витĕр кăвар кăларать. Вĕреçĕлен чипер вĕçсе пынă çĕртенех ши! шăхăрса çак ачасем патнех ӳкет, куçран пачах çухалать. Унталла пăхаççĕ, кунталла... Чим... мĕскер ку? Айккинерех та-

кам сăхманпа пĕркенсе выртнине кураççĕ. Сăхманне сиреççĕ те — пĕр вутпуççи пек çунса кайнă хуп-хура кĕлетке вырта парать. Мучи маттурлăхĕпе çав çул вара тырă йăтăнса пулчĕ, тет; пушар тухса çунса та каймарĕ, тет.

Чулпалăкçи текенни — авалхи пăлхарсен çăви, ялтан инçех мар вăл, ик çырма пĕрлешнĕ вырăнта, çурутрав манерлĕ çеремлĕ лаптăкра. Хĕвел питтинче — шăкăрах шурă «чул палăксем». Кунта, тахçан авал сĕм вăрман кашланă тĕлте, уçланкă пулнă пулмалла та, тутар-монголсемпе çапăçса вилнĕ паттăрсене пытарнă. Шăрпăк йĕнни хурмăллăрах чулсем çырулла, темле ӳкерчĕксемлĕ, ĕлĕк мĕнле лартнă çаплипех ларaççĕ, хăшпĕрисем çеç тайăлнă. Унта мĕн çырнине çырăва пĕлмен пĕчĕк Силемпи мар, ялти чи пысăк вĕреннĕ çын та вулама пултараймасть, авалхи пăлхарла çырнă ăна. Хĕрачан вулас шухăш мар, выляс шухăш. Чулсем хыçне пытана-пытана вылять вăл, чулсемпе калаçать, хăйĕн пĕчĕк чĕлхипе палăксене тĕрлĕрен юмахсем каласа кăтартать, хитре вĕтĕ вутчульсем, чечексем кăтартать, вылять-вылять те палăк çумне таянса ларса çывăрсах каять. Тĕлĕкре чулсем айĕнчен чĕрĕлсе тăнă паттăр тетесем курнаççĕ. Вĕсем вуннăн, çирĕмĕн, вăтăрăн... çĕрĕн пĕр çĕре пухăнаççĕ. Шурă лашисене утланса çырманалла анса каяççĕ. Анса каяççĕ те тухмаççĕ, анса каяççĕ те тухмаççĕ. Пĕри çеç леш енне ишсе каçса сăрталла ĕрĕхтерсе хăпарать. Вăл кăшкăрнипе хĕрача вăранса каять: çывăхри чул юпа çинче ула курак ларать иккен, çавă кăранклатнă. Силемпи хăраса ӳкмест, курака чулпа персе хăваласа ярать. Ачасем каланă тăрăх, пăлхар масарĕнче выртакан Саврăш паттăр кашни çуркунне, йывăç-курăк ешере пуçланă тапхăрта, вилнĕ çĕртен чĕрĕлсе тăрать, юлташĕсене кăшкăрса вăратать, вара йĕкĕтсем тапăртатса ташласа тăракан çилçуначĕсем çине утланса Кивĕ Саврăш çулĕпе Пӳлерелле, пăлхарсен юлашки тĕп хулинелле, васкаççĕ. Çур çĕр тĕлĕнче, Пӳлер туне хура пĕлĕт хыçĕнчен тухнă çурхи тулли уйăх çап-çуттăн çутатса ярсан, паттăрсем сĕм вăрмантан ту умне тĕпĕртеттерсе тухаççĕ. Вĕсем Пӳлере çичĕ ютран хăтарма васкаççĕ, анчах та, мĕн чуль шырасан та, хулана тупаймаççĕ. Пӳлер те, тăшмансем те çук, çĕрпе танлашнă, кĕл пулса вĕçнĕ, çичĕ ĕмĕр айне юлнă... Аслашшĕсенчен илтнĕ пулас çакна ачасем. Аслашшĕсем вара хăйсен аслашшĕсенчен. Хулана та, çынсене те тупайман Саврăш вара пĕтĕм вăрмана янратса чуна çурасла ахлатса ярать те çĕре кай-

са ӳкет, ҫӗре ытала-ытала, йӑвалана-йӑвалана макӑрать. Ҫӗр чӑтмалла мар хуйха курса тӑракан тусӗсем учӗсене ҫавӑтса шӑппӑн вӑрманалла утаҫҫӗ. Тӳпере хура хаяр пӗлӗтсем чупма пуҫланӑ, тавра пӑчӑ-тӗттӗм пулса тӑнӑ, ҫичҫӗр ҫул каялла, Пӳлер ҫӗрпе танлашнӑ кун шӑтса тухнӑ юмансем ҫӗре ҫити тайӑла-тайӑла илеҫҫӗ, хӑшӗ-пӗрисем хуҫалса кӗрслетсе ӳкеҫҫӗ, ту айӗнчен хӑватлӑ ҫӑлкуҫ тапса тухать, — ҫичӗ ӗмӗр каялла Пӳлерте пӗтнӗ пиншер пӑлхар куҫҫулӗ. Саврӑш куҫҫулӗпе пӗрлешсе, вӑл ӗмӗртен-ӗмӗре Кӗҫӗн Ҫарӑмсаналла юхать, Ҫарӑмсанӗ — Чулман Атӑлалла. «Ҫитсе ӗлкӗреймерӗм, каллех ҫитсе ӗлкӗреймерӗм!» — ҫапла ӳпкелешет кашнинчех Саврӑш.

Киремет ҫырмине каҫсерен тенӗ пек тухатмӑшсемпе тӗрлӗрен чуниллисем канашлӑва пухӑнаҫҫӗ. Пырса лек-ха ҫавӑнта ҫӗрле кам та пулин — пыршу-аршуна кумса хурӗҫ.

Ҫак хӑрушӑ халапсене пӗчӗк Силемпи хӑлхине тӑратса, чӗререн ӗненсе итлет. Хӑй вара, апла пулин те, ҫуллахи кашни ирех, ҫанталӑк уяр чух, шиклене-шикленех юлташӗсенчен вӑрттӑн ҫав тӗлӗнтермӗш вырӑнсене чупать. Мӑн ҫынсем те пӑрӑнса иртекен ҫӗрсене темле синкерлӗ вӑй туртать ӑна. Кунта ӑна ҫыруллӑ чулсемпе каласа, вилтӑприсенчен вӗсен тӗксӗм аваллӑхӗ пирки ыйтма, курӑксем кӑштӑртатнине итлесе йӑпанма, вӗсем мӗнле ӳснине сӑнаса ларма никам та кансӗрлемен. Пӗчӗк хӗрача пӗччен хурӑн сассине те чунӗ каничченех итленӗ. Хурӑнӗ вара пӗрченлӗх пирки хурлӑ юрӑ юрланӑ, хаваслӑ ращаран аякра ӳсме мӗн тери йывӑрри ҫинчен каланӑ, паттӑр юмансем еннелле туртӑннӑ. Силемпи хурӑна питӗ хӗрхеннӗ, лӑплантарма тӑрӑшнӑ, тӗрлӗ ӑшӑ сӑмах каласа, хитре юрӑ юрласа йӑпатнӑ. Юррине ачан тунсӑхлӑ, пӑшӑрхануллӑ чӗри хӑех шухӑшласа тупнӑ пулӗ, вӑл ытла чуна витермелле ҫепӗҫ пулнӑ.

Ҫапла иртсе пынӑ Силемпи ачалӑхӗ, ҫапла вӗҫсе иртсе кайнӑ вӑл. Уй-хирпе ҫырмаҫи шӑплӑхӗнче, хӗвел ҫинче те ҫил ҫинче. Пӗччен выляса, пӗччен йӑпанса. Ир ҫуралнӑ унӑн пӑшӑрхануллӑ туйӑмӗпе, ӗмӗчӗсем, мӗн кирлине хӑй те пӗлмен кӑмӑл туртӑмӗ. Асра юлмалли ача чух сахал мар ӗнтӗ, анчах та яланлӑха, ӗмӗрлӗхе, Силемпи асне сӗрме купӑс сасси тата хирпе инҫетелле кайса пыракан чикансен ушкӑнӗ тарӑн кӗрсе юлнӑ. Ҫакӑ ҫуллахи пӗр шӑрӑх кун пулса иртнӗ. Выляса ывӑннӑскер, хӗрача укӑлча карти сулхӑнӗнче нимӗнпе те интересленмесӗр тӳпенелле пӑхса ларнӑ, хурӗсем ҫырмара юхса ҫӳренӗ,

пĕлĕт таткисем пĕрерĕн-икшерĕн анăçалла шăва-шăва иртнĕ, чĕкеçсем вĕçнĕ, тĕкĕлтура нăрланă. Сасартăк таçтан аякран, çĕр тĕпĕнчен тенĕ пек, сĕрме купăсăн чуна ыраттаракан тунсăхлă сасси илтĕнсе кайнă. Хĕрача ыйхăран вăраннă пек пулнă. Шуйханнă кайăк пек, сывлама та пăрахса, чĕтресе ӳкнĕ вăл, укăлча хапхинчен тухса инçетри пĕчен йывăç еннелле, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ тĕлелле çул тытнă чикан ушкăнне курах кайнă. Çатан авса çиелтен хуппа витнĕ урапасене кӳлнĕ лашисем лавсене тăвалла тапса туртаççĕ. Лавĕсем çинче — чиканăн мĕн пур пек пурлăхĕ: тӳшекки-минтерри, хуранĕ-сăмаварĕ, чашки-тирки. Тилхепе тытнă мăн сухаллă чикансем хăшĕ шăхăра-шăхăра, лашине хăратса иле-иле лав çулĕпе утаççĕ, хăшĕ кусла çинчех ларса пырать. Алăри ачаллă хĕрарăмсем — лав çинче, утакан-чупакан ачисене çавăтнисем — хыçалта, чечеклĕ пурçăн тутăрĕсене, хулпуççирен уртса янă, лапсăркка вăрăм кĕписем çĕртен сĕтренеççĕ. Яш ачисен йĕпкĕн хура кăтрисем хулпуççи таран, çийĕсенче кăн-кăвак, сип-симĕс, хĕпхĕрлĕ сатин кĕпесем, пилĕкĕсене пурçăн пиçиххи çыхнă, шереписем чĕркуççине çитеççĕ, пĕр каччи сенкер пурçăн хăю çакăллă гитарине хулпуççи урлă çакнă, çамрăк хĕрĕсем пĕрпĕринпе темĕн каласа-каласа илеççĕ. Чикансем питĕ ывăнса çитнĕ пулмалла, аран-аран утаççĕ. Йыттисем чĕлхисене тем тăршшĕ кăларнă, йывăррăн сывлаççĕ. Шăрăх. Каяс çулăн вара вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть. Те кичем çула кĕскетес шутпа, те урăх сăлтавпа малти лав çинче пĕр чиканĕ сĕрме купăс калать. Амăш аркинчен çаклаННă тăмаланчăк пуçлă пиллĕк-улттăри хĕрачи сасартăк такăнса ӳкрĕ те макăрса ячĕ. Унтан ури çине хăвăрт сиксе тăчĕ те тăп чарăнса чылай вăхăт Силемпи ларакан еннелле пăхрĕ. Силемпие çакă: «Манăн анне пур, санăн пур-и? — тенĕ пекех туйăнчĕ. — Атте те пур, авă малта, кусла çинче, сĕрме купăспа чикан кĕвви каласа пырать...»

Чикан ачи тесен, чикан ачин ашшĕпе амăшĕ пур. Силемпин ма кукашшĕпе кукамăш çеç? Ашшĕпе амăшĕ ăçта?

Ушкăн кайнăçем аяккарах та аяккарах кайса пычĕ. Силемпи ăна мĕн куçран çухаличченех укăлча карти çине хăпарса пăхса юлчĕ. Аякран чикансем утса мар, юхса пынăн туйăнаççĕ, хирти пĕр-пĕр çырмана анса каяççĕ пулĕ те, хăш чух пачах куçран çухалаççĕ, вара кăштран татах курăнса каяççĕ.

Куçне хĕвелтен пĕчĕк ывăç тупанĕпе картласа, ăна инçет ĕмме пуçличчен, ыратакан тăвиччен тинкерчĕ Силемпи чи-

кансене. Ăҫта, инҫе те телейлĕ мĕнле ене, илсе кайрĕ вĕсене купăссăй? Мĕн ҫапла терех пăшăрханса ӳкрĕ ун чухне хĕрача чикансене курсан? Ма куҫҫуль тухичченех пăлхантарчĕ ăна сĕрме купăс сасси? Ма халь те манаймасть чикан кĕввине Силемпи? Юн систерĕвĕ мар-ши ҫакă? Юн чĕнĕвĕ? Тăлăх туратăн кӳтсе ҫитнĕ чунĕ татăлса йĕмен-ши ун чухне? Тен, кĕвĕ калаканĕ пачах та чикан мар, купăсĕ те пачах купăс мар?

Иртрĕ ҫапла ачалăх. Питĕ хăвăрт иртсе кайрĕ вăл Силемпин. Нимĕн те асра юлмарĕ пулас унран, уй хапхинчен кĕпĕрленсе тухса ҫĕр хыҫнелле кайса ҫухалнă чикансем ҫеҫ нихҫан манăҫас ҫук, халĕ те чĕп-чĕррĕн куҫ умĕнче тăраҫҫĕ.

Кайса ҫухалчĕҫ чикансем.

Кайса ҫухалчĕ ачалăх.

Иртет, иртет яшлăх.

Анчах та тăрса юлчĕ те пурнать чун тĕпĕнче тахҫан пĕр ҫуллахи шăрăх кун илтĕнсе кайнă пăшăрхануллă, тунсăхлă кĕвĕ, чикан сĕрме купăсĕн чĕрене ыраттаракан сасси. Пуҫне чиксе шухăша кайнă самантсенче ҫавă ҫеҫ, ҫавă ҫеҫ, инҫетри ытарайми сасă, аса илтерет ăна каялла нихҫан та таврăнми ачалăх ҫинчен. Кашнинчех, асра сĕрме купăс хĕлĕхĕсем юрлама пуҫласан, Силемпие кĕтмен ҫĕртенех салху пусать, уҫăмлах мар ĕмĕтсем ҫавăрса илеҫҫĕ, хăй те ăнланайми туртăм ҫуралать чунĕнче. Ҫавăнпа мар-и, вăл халь ăҫта та пулин сĕрме купăс каланине курсан тĕлĕнсех каять, мĕн калама чарăничченех сĕрме купăс ҫинчен хурлăхан пек хура тăрăхла пысăк куҫĕсене вĕҫертмест. Ҫав минутсенче унăн юнĕ хыттăн вĕреме пуҫлать пулĕ, чĕрине кĕрсе ларнă тахҫанхи йывăр тунсăх темле хальччен илтмен инҫетри телейлĕ ҫĕрелле, темле ăнланма ҫук, урăхла, ҫын курман-илтмен еннелле хăватлăн чĕнет пулĕ?

Кукашшĕпе кукамăш ватă пирки Силемпи нумаях вĕренеймерĕ, ҫамрăклах ĕҫе кӳлĕнмелле пулчĕ унăн. Ӳсрĕ, тĕрекленчĕ вăл, ҫӳллĕ те яштака пӳллĕ, ялта ҫук вăр-вар та акăш уттиллĕ хĕр пулса тăчĕ. Вара пурин куҫне те илĕртекен тĕлĕнмелле илеме йĕкĕтсем асăрха пуҫларĕҫ. Ҫавна туйса, пике кĕре питĕнчи пĕр ҫутă йăл куллипе вĕсене вилесле именгерсе ярать, хальччен паттăр та шапăлти пулнисем те шăпланса пуҫĕсене чикеҫҫĕ. Силемпи тантăшĕсем, паян-ыран качча каяс хĕрсем, чылайăшĕ, унпа ăмăртланса, ун кунтилле мар ют хитрелĕхне вăрттăн ăмсанаҫҫĕ, хĕре витĕр кураймаҫҫĕ. Карчăк-

па старик тăлăха тулли çӳпçесемпе арчасем туса парайман. Чухăн хĕре колхозра ырми-канми ĕçлесе ĕçкунĕ нумай тунăшăн кăна кавча илме ухмах мар-ха ялти сумлă çынсен ачисем. Колхозĕ пулнăранпа та пилĕк-улт çултан ытла мар, те тытăнса юлаять-ха вăл, те пĕтсе ларать. Нумайăшне вара Силемпи «вĕлтрен кайăкĕ» пулни килĕшмест. Ашшĕ кам иккенне те пĕлмен ятсăршывсăра кин тума тĕнче хĕсĕр мар-ха, атте-аннеллиех, çын ĕретлиех тупăнĕ. Силемпие хĕрхенсе, хутне кĕрсе калаçакансем те пулнă, паллах, ăшă сăмахпа хĕр кăмăлне çĕкленĕ вĕсем, пулăшмалли ĕç сиксе тухсан пулăшнă та. Анчах усал сăмах чĕрене тарăнрах кĕрсе ларать. Силемпи пĕрре мар татăлса йĕнĕ килĕнче хăйпе хăй çеç юлсан, çын куç умне сайра курăннă, каçхи вăйăсене те, уявсене, кăнтăрлахисене те пачах çӳреми пулнă. Чаплă çипуçшăн та, тулли арчашăн та çунман Силемпи. Хаклă йышши пустав та, пурçăн та, хăмач та пулман ун çӳпçинче. Качча каяс ĕмĕтпе питшăллисемпе сĕтел çиттисем те, туй тутрисемпе кĕрӳ кĕписем те çĕр çывăрмасăр тĕрлесе ларман, пӳтлĕ çын тĕл килсен катанпирпе те, йӳнĕ çитсăпа та çырлахĕ; пĕр-пĕрне килĕштерсен, туприне те, çуртне-йĕрне те тума пулĕ, телейĕ те тупăнĕ, тенĕ. Килĕшӳпе татулăх, юрату пулмасан, пуянлăх та ниме те тăмасть, пачах кирлĕ мар япала.

Çипуçшăн питех çунмасан та, ытла лăпăс-лапăс çӳремен хĕр, ахаль кун та, праçникре те таса, килĕшӳллĕ тăхăнса çӳренĕ.

Пĕррехинче çеç тем пулчĕ ăна: амăшĕнчен юлнă халиччен те никам тĕкĕнмен, килте тĕртнĕ йĕтĕн пир кĕпене арчаран туртса кăларчĕ. Авалхи çипуçра чи капăрри пир кĕпе пулнă. Унăн умне, аркине, çаннисене, хул çийĕсене, хыçне чаплă тĕрĕпе эрешленĕ. Çамрăк хĕрсен кĕпе ум тĕрри виçкĕтеслĕх е ромб евĕр. Ку тĕрре Саврăшпуçĕнче пӳштĕр теççĕ. Тĕрре ытларах тĕксĕм хĕрлĕ çиппе тĕрлеççĕ. Ромб хĕррине тата варрине тăваткăл-тăваткăл япаласем ӳкереççĕ. Чăваш хĕрарăм кĕпин тĕрĕпе чаплă капăрлатнă тепĕр вырăнĕ — çурăм енĕ, ĕнсе хыçĕ. Хул калаккинчен кăшт аяларах хăмач хăюсемпе тăваткаллатса, кĕтеслетсе карта пек çĕлесе тухнă, тăваткал варринчи пушă вырăна нумай тĕслĕ çиппе тĕрленĕ, расна ӳкерчĕксемпе тунă. Кĕпен хулпуççийĕсене пĕтĕмпех тĕрĕ хупласа тăрать, вăл çаннăн çиелти енĕпе аялалла анать. Кĕпе арки вĕçне çăмран тĕртнĕ хăю çĕленĕ, хăю хĕррипе вĕт тĕрĕ лартнă... Пăхса тухрĕ те кĕпене Силемпи ахлатсах ячĕ: авалхи кĕпе! Мĕн тери илемлĕ!

Тăхăнса пăхрĕ — чух кăна, ятарласа çĕленĕ, тейĕн. Кĕпепе пĕрле чĕрçитти тухрĕ. Ку Силемпи куллен çакса çӳрекен йышши мар, ĕлĕкхи, ун чухне ăна уяв кунсенче çеç çакнă, тĕрри те хальхи пек ӳсентăран е лаша кĕлеткиллĕ мар, хантăс тĕрĕ.

Хĕр чĕрçитти çыхрĕ те мăйне шӳлкеме, шăрçа ярăмĕсем çакрĕ, хăлхине вутăн-хĕмĕн çунса тăракан кĕленче алкасем çаклатрĕ, пуçне тухъя тăхăнчĕ. Арча сунтăхĕнчен «илес-ши е илес мар-ши» тесе çеç алла тытнă куçлă çĕрре тĕрлĕ майлă çавăркаласа нумайччен шухăша кайса тăчĕ: «Чикан парни, — сасартăк пуçне пырса кĕчĕ кĕтмен шухăш, — шăрçа ярăмĕсем те, хуртпуççисем те, алкисем те... Апла эпĕ чăнах та чикан хĕрĕ...» Анчах Силемпи текех хурланса ӳкмерĕ. Вунçич çулхи хĕр куçне вĕри куççуль пĕртте килĕшмест, хуйхăрса пӳртре питĕрĕнсе ларма мар вăрмантан вăл иртерех килчĕ: паян, эрнекун, Саврăш тăрăхĕнче çулленех пулакан кăнтăрлахи уяв, çамрăк-кĕрĕмпе ватти-вĕтти ял варне пухăнса ирттерекен вăйăкулă, юрă-ташă. Эрнере вăл, хирти ĕççем пуçланичченех, Питравччен, икшер, эрнекунпа вырсарникун пулать.

Силемпи хăй çине куçкĕски витĕр тепре пăхса илчĕ те тĕлĕнсех кайрĕ: «Аюй, эп мар пуль вăл унта курнаканни?! Епле маттур, епле хӳхĕм, пукане пек хитре?! Ялта кун пек чипер хĕр çук та пулĕ...»

Хăйĕнчен хăй çапла хытă тĕлĕннипе лăпланаймасăр, урай варринче хытса тăчĕ, вара унченхинчен те ытларах пăлханса, çураçнă хĕрĕн ĕлĕкхи чаплă тумĕпе çамрăк ĕмĕрĕнче пĕрремĕш хут вăйăа тухас килсе кайрĕ унăн. Урама, халăх çине, тантăшĕсем патне. Йăлăхтарчĕ пĕчченлĕх, ютшăну, çитет ялан вунçиччĕри пуçпа, çитмĕл çулхи карчăк пек, кăмака çинче кĕл пăрçи суйласа ларса. Вăй выляс, юрă юрлас килет унăн. Вăйă картине пырса кĕрсе акăш пек юхасчĕ, тет, шăпчăк пек шăрантарасчĕ. Ӳсĕрĕлсе, пуç çаврăнса кайиччен савăнасчĕ тантăшĕсемпе пĕрле, хуйха-суйха манса, малашлăхшăн та пăшăрханмасăр!

Çиçекен сăнпа та капăр тумпа тухрĕ килĕнчен Силемпи, утса та мар, чупса, çук, вĕçсе çитрĕ вăл вăйă карти патне, çитрĕ те унта пĕрремĕш хут мар, яланах çӳренĕ пек çăмăллăн та вăтанмасăр кĕчĕ, тури касри çӳллĕ яштака сар каччăпа, «пысăка вĕренсе çӳрекен» Акташ Михайли текен яш ачапа, хăйсен кӳрши Улька хушшине лекрĕ. Улька, лутра та мăнтăркка хĕр, хăйне Акташ каçхи вăйăран пĕрре мар ăсатни çинчен

Силемпие икĕ хушăри карта урлă каçсах сывлайми кала-кала паратчĕ. Ял çинче те вĕсене каччипе хĕрĕ тетчĕç ĕнтĕ, ахальтен каламан пуль. Халĕ акă Акташпа Улька хушшинче Силемпи пырать. Нимех те чĕнмесĕр, çирĕппĕн тытрĕ вăл вĕсене иккĕшне те аллисенчен, ыттисен уттине пăтраштармасăр, çăмăллăн, ярăнса утса кайрĕ, çавăнтах пуринпе те пĕрле юрласа ячĕ:

Ан ишĕл, çыран, ан ишĕл,
Эпир каçса кайиччен.
Ан авланăр, ачисем,
Эпир ӳссе çитиччен.

Кĕтмен çĕртен вăййа, ялтилле каласан уява, ваттисене пысăк хисепе хунине кăтартакан авалхи чăваш тумĕ тăхăннă, çиçекен сăн-питлĕ хаваслă Силемпи килсе хутшăнни каччăсемпе хĕрсене тĕлĕнтерсе пăрахрĕ.

Яш-кĕрĕм çеç мар, уяв курма тухнă ватă-вĕтĕ те чĕрне вĕççĕн тăрсах ăна сăнарĕ, вăйă карти тавра кĕпĕрленчĕ. Вăйăрисем пурте тенĕ пекех хальччен килĕнче хупăнса ларнă, çын çине тухма юратман, чĕмсĕр хĕр вăй выляса йăл-йăл кулнине аптăраса та ăнланмасăр пăхрĕç: мĕн пулнă хĕрупраçа, тен, ӳссе çитсе хĕр пулнине пĕлтерет çакă? Вунçич çулта вĕт çапах та, чи хитре вăхăт...

Силемпи, хăй çине çăвар карса пăхакансене ним чухлĕ те асăрхаман пек, тĕлĕннипе лăпах пусрăннă тантăшĕсене те питех шута илмесĕр, çаврăнать те çаврăнать ыттисемпе пĕрле вăйă каласа, янраттарать те янраттарать йĕс шăнкрав пек сассине. Улька сассине аяла туса, ăна юрă пуçлама та памасăр, уçă та хĕрӳллĕ юрлать хăй юратнă юрра Силемпи:

Вăрманта куккук,
вăрманта куккук,
вăрманта куккук сасси çук,
çавăнпа вăрман илем çук.
Уявра савни,
уявра савни,
уявра савни сасси çук,
çавăнпа уяв илем çук.

Нихçан чунне çапла пырса тивменччĕ-ха, нихçан çав тери пăлхантарманччĕ Силемпие ĕмĕртенпе юрлакан çак тунсăхлă юрă. Иккĕллĕ туйăм çавăрса илчĕ хĕре: тус çукки, савни çукки,

пĕрхенлĕх пăшăрхантарчĕ ăна; çав вăхăтрах куккук вĕçсе килессĕн, вăрман илемлĕн янраса каяссăн, савни çитсе тухассăн, уява çеç мар, пĕтĕм тĕнчене чаплă сăн кĕрессĕн туйăнчĕ; çав ĕç халех, çак самантрах, пулса ирттĕр тени, ăна чунпа та, чĕрепе те кĕтни хаваслантарчĕ, çунатлантарчĕ. Такама ачашлас, хĕрхенес килчĕ унăн. Савăнăçпа тата çепĕçлĕхпе тулнă чĕри кăкăрĕнчен тухса тарас пек тапрĕ. Тенкисемпе чăнкăртаттарса, пуçне кăшт каçăртса, Силемпи акăш пек юхса пычĕ, ури айĕнче çĕр туймарĕ вăл, пурте ăна тĕлĕкри пек туйăнчĕ. Сасартăк юрлама пăрахнă Улька хыçĕнчен утса, Акташ Михайлине алăран çавăтса пырса, йĕкĕт çине пĕрре çеç пăхайрĕ вăл: куçпа куç тĕл пулчĕç. Акташ алли пĕçерсе кайрĕ, куçĕ вут тăкса çунчĕ. Силемпи именчĕ те, хĕпĕртерĕ те: епле çирĕп те вăйлă алă унăн пĕчĕк ывăçĕнче, хĕрӳ, шанчăклă алă, арçын алли. Ма именчĕ-ха вăл, ма ырă мар пулчĕ ăна Акташа алăран çавăтса хăйне телейлĕ туйса пыма? Мĕншĕн тесен Акташ Улька савнийĕ. Вăл вара, Силемпи, çын савнийĕ çумне сĕртĕнчĕ, ăна аллинченех çавăтрĕ. Вăрттăн кавар тунă пекрех пулмасть-ши капла? Аван-и кун пек хăтланни? Ма тата çын савнийĕ, хальччен унпа питех калаçса та курманскер, ăна ытла та пăлхатса ячĕ, çывăххăн, тахçанах лайăх пĕлнĕ, туслă пулнă çын пек туйăна пуçларĕ? Пĕр çакă йĕкĕт, урăх никам та мар, хăй çумĕнче пулни, Силемпие çав тери ырă туйăм кӳчĕ, ăшĕнче кăшт мухтантарчĕ те. Юнашар вĕсем кĕтмен çĕртен, ăнсăртран, пĕр-пĕрин çинчен аса та илмен самантра пырса лекрĕç. Пĕри теприн çинчен нихçан та шутламан, пĕрне-пĕри кĕтмен те вĕсем, тĕл пуласшăн та çунман.

Çук, ку час-час сиксе тухакан япала мар — çак çывăхлану. Ахаль иртес çук вăл. Пурнăçа тĕпренех улăштарса, ăна урăх йĕрпе яракан темле ăнланмалла мар ĕç пулассăн туять Силемпи чĕри. Мĕнле ăнланмалла мар ĕç — пĕлмест. Хĕр питĕ пăлханать пулин те, пуçĕ унăн тĕрĕс те хăвăрт ĕçлет: çук, халĕ Силемпи унченхи пек, тантăшсемсĕр, вăйă-кулăсăр, юрăсăр пурăнма пултараймасть. Тен... пĕчĕк вĕри ывăç тупанĕнче выртакан çирĕп арçын аллисĕр те... Силемпи куçа курăнми темле йĕр урлă каçрĕ пек, йĕрĕн леш енне ун иртнĕ пурнăçĕ тăрса юлчĕ; туять хĕр: каялла кайма çул çук. Хăй те кĕтмен çĕртен, сасартăк, ун умĕнче урăх, çĕнĕ, тĕнче уçăлчĕ. Çав тĕнче ытла та куçне шартса янипе вăл малтанлăха ним курми пулса тăчĕ. Анчах та, канăççăр та савăнтаракан çутăпа куç йăмăхтарнăс-

кер, ĕненӳллĕн те пăхăнуллăн утса кайрĕ вăл малалла — хумхантаракан, чĕнекен, паллă мар пуласлăха хирĕç, пăлхануллă чĕрепе, çунакан чунпа. Ăшчике хускатакан шиклĕ туйăм мĕн чухлĕ вăйлăрах пулса пынă, çавăн чухлĕ хаваслăрах та шухăрах тытма тăрăшрĕ вăл хăйне тантăшĕсем хушшинче, шухăшсăр та пуçтах курăнма тăрăшрĕ. Уявра паян унран хаваслăраххи çук та тейĕн.

Çав вăхăтра вăйă картине татса ун варне таврари пĕр чаплă купăсçă Михетер Мирунĕ пырса кĕчĕ. Малалла мĕн пулнине Силемпи тĕлĕкри пек çеç астăвать: Мирун ун çине куç хыврĕ, ăна йĕрлеме пуçларĕ, вĕçкĕнлĕхĕпе хĕр пуçне çавăрса ăна хăй аллине кĕртсе ӳкерме хăтланчĕ. Ĕç тухмарĕ. Акташа тапăнчĕ. Кĕске тытăçу. Вĕçкĕн çаппи çĕре лаплатса ӳкрĕ. Акташ, тăнă çĕртех, куçран çухалчĕ. Килне епле çитсе ӳкнине те япăх астăвать Силемпи.

Мирун, аран-аран ури çине çĕкленсен, умĕнче тантăшĕнчен инçех мар пĕччен тăракан Улькана курчĕ. Савнийĕ, Акташ, пăрахнăскер, Улька хăлха чикки туяннă купăсçă çине алчăранă куçпа пăхрĕ, ун кăмăлне çĕклес шутпа-ши, кулма-кулма хăтланчĕ, анчах та кулли мĕскĕн те суя пулса тухрĕ. Хăй çине пăхтарма юратакан Мирун, лешĕ уншăн вилсех кайрĕ пуль тесе, унран тусанлă питне тасатма алтутри ыйтрĕ. Питне шăлса çипуçне тӳрлеткелесен, йĕкĕт çĕмрĕлнĕ купăсне хул хушшине хĕстерчĕ те, Улькапа иккĕш урам тăрăх утрĕç.

Çапла вĕçленчĕ Силемпи пĕрремĕш хут вăйăа тухни. Тантăшсемпе çывăхланас ĕмĕчĕ инкеке çаврăнчĕ: хĕре пула вĕçкĕн Мирун пĕрремĕш хут пысăк мăшкăл тӳсрĕ, тăшман айне пулчĕ, купăсне ĕçлĕхрен кăларчĕ; Улька хăй чунран юратнă Акташа ĕмĕрлĕхех çухатрĕ.

Акташ Силемпи куçне те урăх курăнмарĕ...

Акташ амăшĕ суккăр Тарье, ват енне сулăннă хĕрарăм, пĕртен-пĕр ачине арсăр ӳстерекенскер, арçыннине ывăлĕ пĕчĕк чухнех вăрман каснă чух йывăç çапса вĕлернĕ, ывăлне авлантарасшăн çулталăкĕпех йăнкăртатрĕ: «Хамăн куç курмасть, ĕçлейместĕп, ĕçлеме мар, ача пек çавăтса çӳрес пулать, — терĕ вăл. — Михайла текех вĕренсе çӳренипе хуçалăх та юхăнса кайрĕ; çынсем каланă тăрăх, пӳрт те ыттисенни пек çĕнĕ мар, тăйлăк-тайлăк курнать. Ывăла хăвăртрах авлантарас та, кинпе иккĕш çурт та лартĕç, туприне те тăвĕç. Эпĕ ачисене пăхăттăм».

Акташ малалла вĕренме ĕмĕтленнине те, çулĕпе те вунсаккăрта çеç иккенне те шута илесшĕн пулман хĕрарăм: ĕлĕк хăшне-пĕрне вунтăваттă-вунулттăрах авлантарнă; вăйпитти, тĕреклĕ, çынна çитнĕ, тата мĕн кирлĕ; хĕрне пуянтараххине тупсан, пачах та шеп пулĕ.

Авланасси пирки ывăлĕ малтан çăвар та уçтарман. Амăшĕ йăнласан-йăнласан, мăкăртатсан-мăкăртатсан, вăл алне сулнă: вĕренме пĕр-пĕр института кĕрсе каярахпа та вĕренĕп, тенĕ, çурт ишĕлсе яла култариччен аннене итлес, кам ачи — çавăн ачи, тейĕç. Мĕнле итлемĕн-ха суккăр пуçпах хăвна ачаран пăхса ӳстерсе ура çине тăратнă, вăтам шкул пĕтерттернĕ юратнă аннӳне? Акташ итлекен, пархатарлă ывăл пулнă. Амăшĕ хушнă пекех, ашшĕ-амăшлĕ, хула пек çурт-йĕрлĕ, килкарти тулли выльăх-чĕрлĕхлĕ кладовщик хĕрне, Улькана, куçласа хураççĕ. Ял çинче Улька ашшĕ Павăл пирки колхоза ĕмсе пуять, теççĕ те, кам курнă, кам ăна аллинчен ярса тытнă? Çемйипех çĕрнекунне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ, хĕрĕ те ĕçре пиçĕхсе ӳснĕ, сахалрах вĕреннĕ ĕнтĕ, анчах мĕне кирлĕ ялти хĕрарăма нумай вĕренни? Ачи-пăчи пулать, выльăх-чĕрлĕхĕ килкарти тулли, пӳртре те ĕç мăй таран, колхоз ĕçне те тухмалла, кĕнеке тытса ларма вăхăт та пулас çук. Шутласан, ялта кам хĕрĕ питех нумай вĕреннĕ? Хĕрупраç мар, арçын ача-пăча та ытлах вĕренесшĕн мар-ха, кунта ял, хула мар.

Акташ вунă класс пĕтерсен тепĕртакранах хĕр çураçма кайрĕç. Хĕр ашшĕ хăтана пынăскерсемпе малтанах калаçасшăн та пулмарĕ, çара çерçие, хутпа кăранташран урăх нимĕн те курманскерне пĕртен-пĕр хĕрне пама мар, унăн питне те кăтартмастăп, терĕ. Тата Акташ йăхĕ тӳрпилĕкрех йăх, тет, иккен, Михайла ашшĕ те ĕçленĕ çĕрте вăр-вар пулманран, ыйхăласа çӳренĕрен пĕтнĕ имĕш. Пĕтĕм ĕçе Улька татса пачĕ: вăйăран пĕрре ăсатнăшăнах Акташа чунран юратса пăрахнăскер, вăл ашшĕн хаяр сăмахĕсене илтсен йĕрсе ячĕ, Михайлана памасан кӳлле путса вилеп, терĕ. Хĕрарăм куççулĕ курсан чăтмалла мар аптраса ӳкекен Павăл, чăхăмла-чăхăмлах, майĕпен, сĕтел çинчи тулли черккене хăй умне куçарчĕ. Тепĕр сехетрен, хĕре Акташа пама килĕшнине пĕлтерсе, «çутти» кĕленчисене пĕрин хыççăн тепĕрне пушатрĕç те, пулас тăхлачăсемпе хăтасем ыталашма, пĕрне-пĕри тата кашни хăй ачине мухтама тытăнчĕç, ал сула-сула, пуçĕсене уха-уха тахçанччен юрă юрласа ларчĕç, урисене тăрс! тăрс! тапа-тапа илчĕç. Сасартăк тур умне ӳксе

турра пуççапрĕç, пĕрне-пĕри мĕн виличчен те пăрахмасса, пулăшса пырасса ун умĕнче тупа турĕç. Акташпа Улька, телейлĕ те савăнăçлăскерсем, пĕр-пĕрин ăшшине туйса, çинеçинех куçран пăха-пăха илчĕç, йăл кулчĕç.

Тепĕр кунне — пĕтрĕ пуç!

Тĕнче ишĕлсе анчĕ, хĕвел сӳнчĕ, пурте пĕтрĕ. Çураçу ĕçкинчен тăна кĕрсе те çитменскерсем, «хăтасемпе» «тăхлачăсем», хир юпи пек шак хытса тăчĕç, эрех ĕçнинчен те ытла анраса шалкăм çапнă пекех пулчĕç.

Тата тепĕр кун ирхине ял çине çакăн пек хыпар сарăлчĕ: чикан таврашĕ Силемпи аскăнланса кайнă, çавна пĕлтерсе тахăшĕ хапхине тикĕтпе лапăртаса хăварнă. Кам хăтланнă çавна — паллă мар, те Павăл хушса янă пуçтахсем, те Михетер Мирунĕ? Тепĕр тесен, кирлех-ши кам иккенне шырама, пĕлмесĕрех, сăлтавсăрах туман пуль çав ĕçе. Тантăшĕсем хушшине вăййа тухнă çав инкеклĕ самантчен Силемпи çине чылайăшĕ вĕчĕрхенерех сивĕ куçпа пăхнă пулсан, çав ăнсăрт ĕç хыççăн ăна курайман хĕрсемпе хĕрарăмсен шучĕ ӳссе кайрĕ. Карма çăварлисем умĕнчи ĕçĕсене мансах хĕре çирĕç, хăйне çеç мар, кукашшĕпе кукамăшне, тахçанах çĕр айĕнче выртакан амăшĕпе ашшĕне, чикана, чи усал сăмахсемпе вăрçрĕç. Силемпи тăлăххи те, ватăсем вăйсăр та йăваш пулни те килĕшмест вĕсене. Карчăк-кĕрчĕк те, хальччен палласах кайманскер, чарăнса тăрсах ывăç тупанĕ айĕпе пăхса юлать. Кĕтӳ хапхине качакине илме кайсан, укăлча карти çинче ларакан ача-пăча, такам хĕтĕртнипе, Силемпие тăпра муклашкисемпе перет. Хĕр урамра курăнса кайсанах, унăн усăнчăк пуçĕ çине чуна çӳçентерекен усал сăмахсем пăр çунă пек тăкăнаççĕ. Тарăхнипе, çав тери кулянниpe тата кӳреннипе тăрăхла та тĕттĕм куçĕсем кун çутине курми пулаççĕ, уринчен ури иртмест. Силемпи туйрĕ: шавлă та хаваслă вăйă-кулă текех уншăн мар, хĕрупраç савăнăçĕпе ĕмĕт-туйăмĕ уншăн ĕмĕрлĕхех сӳнчĕç. Анчах та мĕн тумалла-ха? Мĕн туса ăша пусармалла?

Çав хушăрах килте питĕрĕнсе ларасси те унран яшлăхпа пĕрле таçта хыçала юлчĕ, яланлăхах пĕтрĕ. Текех вăл килте пăчăхса, ниçта тухмасăр лараймасть ĕнтĕ. Çапла, çапла. Пурте иртнĕлĕхре, пурте хыçалта, пĕтĕм халичченхи пурнăç. Анчах та унта каялла таврăнма та май çук. Пĕлет Силемпи: килте унчченхилле хупăнса пĕчченлĕхре ларма вăл урăх ниепле те пултараймасть. Унччен час-часах пулакан сăлтавсăр тунсăхпа

сӳрĕк кӑмӑл вырӑнне ҫынсемпе ҫывӑхланасшӑн тунсӑхлани, вĕсенчен хӑшĕ те пулин ӑшӑ сӑмах каласса, хута кĕрессе е ачашласса кĕтни йышӑнчĕ. Ыйхи килмерĕ Силемпин ҫуллахи ҫак шӑрӑх та пӑчӑ каҫсенче. Ҫурма хывӑннӑскер, хулӑм та вӑрӑм ҫӳҫне салатса ярса, вӑл сехечĕ-сехечĕпе чӳрече умĕнче ларчĕ. Пĕрре пушар пек хыпса илекен, тепре пӑр пек шӑнса ларакан чĕри кӑкӑртан тухса тарасла кӑртлатса тапать. Аялти кĕпе вĕҫҫĕн ҫеҫ хĕр, куҫне пысӑк уҫса тинкерет вӑл уйӑх ҫутинчи ҫурма тĕттĕм каҫа, тулта илтĕнекен аякри чӑштӑртатусемпе сасӑсене пĕтĕм чунĕпе тилмĕрсе итлет. Чунӑн ҫавӑн пек ӑнланмалла мар, хӑнӑхма йывӑр тимлĕхĕ ҫак самантсенче ӑна ҫуллахи кĕске каҫ вĕҫнелле йӑлтах пушатса хӑварать, халтан ярать. Вара вӑл ир енне ҫеҫ, тул ҫути палӑрсан, кӑшт тĕлĕрсе каять. Силемпи хӑйне мĕн пулнине хӑй те ӑнланмасть. Чунĕ теме сисет унӑн, такама вӑйлӑраххӑн та вӑйлӑраххӑн пӑшӑрханса кĕтет. Тен, ҫав «такам» кам иккенне йышӑнасшӑн пулмасӑр, тен, хӑйне никам та мар, пĕрскер ҫеҫ, Акташ Михайли, хӑш чух тĕлĕнмелле ҫывӑххӑн, хӑш чух питĕ юттӑн курӑнакан пĕртен-пĕр ҫын, кирлине туйса ӑна кĕтет вӑл?

Ҫапла, унпа тĕл пулса калаҫу пуҫарма тӳр килет иккен. Тĕрĕсех ĕнтĕ, Акташ Силемпие нимле сӑмах та паман, нимле ӑшӑ сӑмах та каламан. Хĕр те йĕкĕте ним каласа та шантарман, чунне уҫса паман. Унпа юнашар вӑл пачах та ӑнсӑртран, тур пĕлет епле, ҫумлӑнах пырса тӑчĕ вӑйӑра. Пĕрне-пĕри вĕсем ун чух ҫӑвар уҫса ҫур сӑмах та каламарĕҫ. Ҫавӑнпа та вӑл килессе кĕтсе ҫĕрĕ-ҫĕрĕпе уҫӑ чӳрече умĕнче аялти кĕпе вĕҫҫĕн, ҫарран, куҫ хупмасӑр ирччченех ларни питĕ пысӑк айванлӑх ĕнтĕ. Каҫхи шӑплӑха тилмĕрсе тӑнлать вӑл, тӑнлать, тӑнлать, кĕтет ӑна, кĕтет. Кӳрентерет те ҫакӑ, чуна та ыраттарать. Ухмахла япала. Ҫакна пурне те Силемпи аванах ӑнланать. Анчах мĕн тӑвас-ха? Кунта каллех пӑтраштаракан темле синкерлĕх пурри сисĕнет. Ҫавӑнпах пуль, Силемпи халĕ ниҫта кайса кĕрейми асапланать, ыйхине ҫухатса чӳрече умĕнче ҫĕрĕ-ҫĕрĕпе ларать, тултан илтĕнекен кашни чӑштӑртатӑва, кашни сасса илтмесĕр хӑвармасть. Анчах каҫхи пĕр чӑштӑртату та, сасӑ та хумхантармасть, пырса тивмест унӑн пӑлхавлӑ вĕри чунне. Ҫук ҫав, унӑн мар, урӑх ҫыннӑн ура сасси илтĕннĕ урамра, урӑх ҫыннӑн хаваслӑ та уҫӑ кулли янӑранӑ инҫех те мар, ыйхӑллӑ тӑкӑрлӑкра. Кама кĕтнĕ, вӑл чĕнмен, сас паман, чӳрече патне пыман.

Акташа çĕр çăтрĕ тейĕн, пачах çухалчĕ. Мирунпа çапăçнă хыççăн, çураçнă хĕрĕнчен сивĕнсен, вăл, Силемпи пекех, çын çине тухми пулчĕ, куçа курăнма пăрахрĕ. Силемпи çаплах кĕтрĕ, чĕнчĕ ăна, йыхăрчĕ чунĕпе, ирчченех чӳрече умĕнчен каймарĕ, унчченхинчен те ытларах тилмĕрсе тăнларĕ кашни пĕчĕк чăштăртатăвах, кашни аякри сассах.

Юлашкинчен, пĕррехинче, эрнеренччĕ-ши, ăнсăртран куçакуçăнах тĕл пулчĕç. Хальхинче вĕсем çине пăхакан никам та çукчĕ, иккĕшĕ çеçчĕ çамрăксем.

Çав кун Силемпи, лашапа ĕçлекенскер, ĕçрен иртерех таврăнчĕ те тахçанах авăртса хунă çăнăхне илме армана анчĕ. Миххе хурса тухса, утне арман пĕви хĕррипе уттарса пынă чух, чылай аякка кайсан, хĕр тăрă та сивĕ шывпа питне уçăлтарасшăн пулчĕ. Ял енчи çыранта кĕпе çума меллĕ вырăнта каçма пеккисем чылай иккен. Силемпи унта чупса анчĕ, силленекен каçма çинче тăнă май пĕве çинелле пăхса çаврăнчĕ. Таçта мурта, хăвалăхра, пĕччен кăвакал нартлатать, вăхăт-вăхăт шывра шапа кăрăлтатса илет. Лăпкă та ăшă июнь каçĕ. Пĕве те, çанталăк та тăп тăрать. Хĕвел паçăрах анса ларнă ĕнтĕ. Тĕттĕмленет. Хĕвел айĕнче кунĕпех хĕвĕшнĕ çут тĕнче канма хатĕрленет, ыран каллех ĕç нумай вĕт, каçхине канса тепĕр кун валли вăй пухмалла.

Мăнаçлă каçхи лăпкăлăхра çамрăк хĕр чĕри пĕрре те лăпкă мар, вăл ывăнма та, витĕрех аманма та ĕлкĕреймен-ха, ним туйми пулса хытса ларма ăна вăхăт çитеймен. Пăлханать, хытă пăлханать, темĕн кĕтет. Кĕтни çитессĕнех туйăнать. Уйăх çӳлтен пĕве çине хытă тĕлĕнсе пăхать. Пĕве шывĕ çуталнипе çырансем тата тĕксĕмрех, синкерлĕрех курăнаççĕ. Ним хускалми тăракан шыв тĕкĕрĕ Силемпи пит çунă чух ванчĕ те, унта уйăх та арканса кайрĕ, унăн вуншар ылтăн катăкĕ йăлтăраса выляма тапратрĕ. Уйăх ванчăкĕсен вăййине сăнаса тăнă май каçма та сулланма тытăнчĕ пек, хытăранхытă сулланать вăл, сулланнă хушăрах хĕре шалалла, пĕве варнелле туртса кĕрет. Силемпи ӳсĕрĕлсе кайнă пек пулчĕ, пуçĕ çаврăна пуçларĕ, хĕр хытă çӳçенсе илчĕ. Пăлханчăк та шиклĕ чунпа, халь тесен халь пысăк савăнăç е калама çук хăруш инкек пулас пек, тӳпе хĕрринелле пăхрĕ те чут çеç ӳкмерĕ. Шăлне çыртса, хуçне хупса, вăл ура çинче аран тытăнса юлчĕ. Çав вăхăтра, тен, тĕшĕрĕлсе те анатчĕ-и, такамăн çирĕп алли тытса чарчĕ, ӳкме памарĕ... Акташ... Си-

лемпи вăл çывхарнине пĕртте туймарĕ, анчах кам пырса тытнине тӳрех ăнланчĕ. Каччă сасартăк килсе тухни ăна ним чухлĕ те хăратмарĕ, шуйхатмарĕ, тĕлĕнтермерĕ. Унчен тахçан малтан тĕл пулма калаçса килĕшнĕ тейĕн.

Силемпи куçне тӳрех уçмарĕ, вăл темле сасартăк çемçелсе, йăвашланса кайрĕ, Акташ аллисене хуллен кĕрсе ӳкрĕ. Тути, çурма уçăскер, шăппăн темĕн пăшăлтатрĕ, пĕçерсе çунма тапратрĕ, çăварĕ типрĕ. Силемпи сăмахне каласшăн-каласшăн, калаймасть, тути пăсăлать, куççулĕ шăпăрах юхса анать унăн.

Пĕр япалана çеç туять хĕр — тăлтлатса тапакан тăнлав çывăхĕнче Акташ хĕрӳн сывланине. Каччă янахĕ хĕрĕн питне перĕнет. Урăх ним те туймасть, курмасть, илтмест çак саманта Силемпи Акташ ытамĕнче. Тĕнчере иккĕн çеç — Силемпипе Акташ. Чим-ха, тĕнчи хăй пур-и-ха вăл? Тен, тĕнчи хăй те çук? Анчах та тĕнче пур иккен: Мирун, Улька, ялйыш тата ыттисем. Тĕнчере инкек, хуйхă-суйхă, уйрăлу, вĕлерӳ, ылхану, ултӑвпа суя, элек пур иккен. Аçа пек хаяр ылхан, вут пек вĕри курайманлăх, тамăкран пин хут хăрушă вăрçă пур иккен... Тĕнчере çынсене чĕрĕллех вута пăрахса çунтараççĕ иккен, туса тус, лешĕ вилмесĕрех, чĕрĕллех, çĕр айне те чавса чикет иккен... Тĕнчере çукки пĕртте çук.

Тепĕр кунне Силемпи аякри ĕшнене ут валли çулма кайнăччĕ те вăрçа каякан салтак ачисене укăлчаран тухсан тĕл пулчĕ. Лавсем хыççăн кĕпĕрленсе утакан яшсене, вĕсене ăсатакан ялйыша, ача-пăчана курсан, Силемпие ачалăхри пĕр сăн аса килчĕ. Ун чух хĕрача питĕ пĕчĕкçĕччĕ-ха, укăлча хапхи патĕнче ларатчĕ пулас. Таврара шăп. Çырмара хурсем юхса çӳреççĕ. Пĕлĕт таткисем пĕрерĕн-икшерĕн анăçалла шăва-шăва иртеççĕ. Чĕкеç вĕçет, тĕкĕлтура нăрлать. Çав вăхăтра, сасартăк, таçтан аякран, çĕр тĕпĕнчен тенĕ пек, сĕрме купăсăн чуна ыраттаракан тунсăхлă сасси илтĕнсе каять. Хĕрача картах сикет. Шуйханнă кайăк пек, сывлама та пăрахса, чĕтресе ӳкрĕ вăл, укăлча хапхинчен тухса инçетри пĕччен йывăç еннелле, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ тĕлелле çул тытнă чикан ушкăнне курах кайрĕ ун чух. Лашисем лавсене тăвалла тапса туртаççĕ. Силемпи ушкăна мĕн куçран çухаличченех пăхса юлнăччĕ. Аякран чикансем утса мар, юхса пынăн туйăнаççĕ, хирти пĕрпĕр çырмана анса каяççĕ пулĕ те, хăш чух пачах куçран çухалаççĕ, вара тепĕртакран татах курăнса каяççĕ. Куçне хĕвелтен пĕчĕк ывăç тупанĕпе картласа, ăна инçет ĕмме пуçличчен,

ыратакан тăвиччен тинкерчĕ Силемпи чикансене. Ăҫта, мĕнле ене илсе кайрĕ вĕсене купăсҫă? Асран чикансем ҫухалчĕҫ те, ума каллех салтак ачисемпе вĕсене ăсатакансен ушкăнĕ тухрĕ. Сĕрме купăс вырăнне хуткупăс йынăшать. Ăҫта, мĕнле инҫе те хăрушă ҫĕре ăсатать, илсе каять вĕсене купăсҫă? Салтак ачисем ҫирĕпленсех те ҫитеймен уҫă сасăсемпе ҫаврăнтарса авалхи хурлăхлă салтак юррине юрлаҫҫĕ. Хăшĕн-пĕрин нумай юрланипе сассисем ҫĕтнĕ, теприсем хытă хӳхлесе макăрнипе юрлаймаҫҫĕ те. Пĕкĕсем ҫумне яваласа туртаран усса янă тĕрĕллĕ питшăллисем ҫĕртен сĕтĕрĕнеҫҫĕ. Ачасем те мăйĕсенчен питшăлли уртнă, хăшĕн-пĕрин аллинче вĕҫрен-вĕҫе ҫыхнă алтутри. Купăс калаканĕ — Мирун — купăсне хаярăн ҫухăрта-ҫухăрта илсе лав ҫинчен сике-сике анать, кĕвĕ калама пăрахса, анăҫалла такама юнаса илет: «Гитлер! Юнĕҫен Гитлер! Граница памăпăр!» — тенисем Силемпи хăлхине киле-киле кĕреҫҫĕ. Акташ Михайли юрламасть те, кăшкăрашмасть те. Вăл суккăр амăшне ҫавăтнă. Пырсан-пырсан-пĕр, карчăка пĕчĕк ачана ачашланă пек, кăвакарнă ҫӳҫĕнчен, лĕпкинчен ачашла-ачашла илет, тем каласа текех йăпатма тăрăшать. Амăшĕ те, утма чарăнсах, ывăлне умне тăратать те питне, мăйне, хул-пуҫ-ҫурăмне хыпаласа пăхать, алли чĕтрет мăнтарăнăн, сасси тухмасть — калама ҫук пысăк хуйха пула ăшне кайнă. «Ҫул ҫине тесе чикнĕ читнайăн сăмсине, касса, Микул турă хыҫне хутăм, ҫаврăнса килсе активмелле пултăр, ачам», — тет амăшĕ пăшăлтатса. — «Юрĕ, анне, юрĕ», — хуравлать ывăлĕ унпа килĕшсе. «Пуҫна ҫухатсан та чысна ан ҫухат, начальниксене итле, ялти пек шух ан пул». — «Шух пулмăп, анне». «Тарса ан кил». — «Тарса та килмĕп». «Вилсе ан ҫӳре, вăр-вартарах пул, вилсе ан кил». — «Вилсен те таврăнăп, анне. Эс кĕт, ялан кĕт. Эп вара таврăнăп». «Таврăн. Таврăнсан, Чикан Силемпине мар, шуйттан асламăшне илес тесен те чармăп», — суккăр Тарье кăх-кăх! кăх-хăк! ӳсĕрсе илчĕ те пĕр хушă, чĕнмесĕр пычĕ. Вăл ывăлĕпе мĕн калаҫнине никам та итлекен пулмарĕ — кашнин хăйĕн шухăшĕ, хăйĕн хуйхи. Уй хапхинчен тухнă чух ӳсĕррисем те урăлса кайса пуҫĕсене усрĕҫ. Айккинчен пăхсан, ҫак ушкăна виле ăсатакан ушкăн теме пулать: йăл кулаканни, кăшкăрса калаҫаканни никам та ҫук. Укăлчаран тухсан ҫеҫ Кладовщик Павăл Ульки Мируна мăйĕнчен уртăнса ӳлеме пуҫларĕ, Мирунăн пулас хуньĕпе хуньамăшĕ те сăмсисене нăшăк! нăшăк! туртаҫҫĕ, лешĕн ашшĕпе амăшне ывăлĕ патне ямаҫҫĕ те темелле.

Силемпи лавĕ çинчен анса тăнă та юпа пек шак хытса кайнă. Унăн чĕлхи çĕтрĕ, чунĕ кӳтсе килчĕ. Тапранас, тапранас, Акташпа амăшĕ патне пырас терĕ, тапранаймарĕ, пыраймарĕ.

Уй хапхинчен тухсан, лавсем те, çынсем те чарăнчĕç — сывпуллашма вăхăт çитрĕ. Колхоз председателĕ Малов Пракух сăмах каларĕ. Сăмахне пĕтерсен, ваттисен йăлипе, çӳлелле кĕмĕл укçа ывăтрĕç. Укçи герб май ӳкрĕ те, пурте хытă савăнчĕç, малти лава кӳлнĕ ут хăш уринчен тапранасса кĕте пуçларĕç. «Сылтăмминчен! Сылтăмминчен! Çул ăнăçлă пулать! Çĕнтерсе килеççĕ!» — терĕç пурте пĕр харăс, ватти-вĕтти таранах, лавсем тапранса кайсан. Халăхран вăтанса Силемпи Акташ патне çывхараймарĕ, ун патне Акташ хăй пычĕ. Амăш аллине Силемпие тыттарчĕ те: «Киле çитерсе яр», — терĕ, амăшне тепĕр хут çурăмĕнчен лăпкаса илсе çамкинчен чуптурĕ, вара, уйрăлса, лавсем еннелле çирĕппĕн утса кайрĕ. Пĕрре те çаврăнса пăхмарĕ. Çаврăнса пăхма юрамасть-мĕн, сывă килеймест, теççĕ, вилсе килет, имĕш.

Кăкăрне çурса чĕрине такам тымарĕ-мĕнĕпе тăпăлтарса кайнăн, чĕлхерен çĕтсе, вилнĕ пек тăрса юлчĕ Силемпи. Чылайччен пăхса тăчĕ вăл анăçалла, салтак ачисем кайнă еннелле. Çĕр хыçнелле кайрĕç ачасем, тискер тăшмана хирĕç, вилĕме хирĕç... Çук, çĕнтерĕве хирĕç. Силемпие темшĕн чикансем мар, Саврăш паттăр асне килчĕ, Саврăш паттăр. Хăвăртрах çиттĕрччĕ вăл хăйĕн паттăр йышĕпе çитес çĕре, кая ан юлтăрччĕ вăл самант та, чунне çурса ӳкĕнмелле ан пултăрччех унăн. Халь ĕлкĕреймесен, çичçĕр çултан та, пин çултан та тавраяс çук çухатăва, Тăван Çĕрĕмĕре-Шывăмăра, Халăхăмăра. Кая пулать, питĕрех те кая пулать. Кайса çухалчĕç паттăрсем.

Кайса çухалчĕ ачалăх.

Кайса çухалчĕç салтак ачисем.

Иртет, иртет яшлăх.

Анчах та тăрса юлчĕ те пурнать чун тĕпĕнче тăватă çул каялла уй хапхинче пĕр çуллахи ăшă кун илтĕнсе кайнă пăшăрхануллă, тунсăхлă кĕвĕ, чуна çӳçентерекен, ăна çĕçĕ пек касса каякан салтак юрри. Пуçа чиксе шухăша путнă самантсенче çавă çеç, çавă çеç, инçетри тĕлĕнмелле витĕмлĕ, асамлă сасă, ытарайми, çав вăхăтрах хăрушă сасă, чуна çатăрлать, пăчăртать, кисретет, тăпăлтарать.

Кашни çулах, кашни уйăхрах темелле, каяççĕ ачасем вăрçа. Ял çумĕн шыв мар, куççуль çырми юхать, ял çийĕн йӳçĕ тĕтĕм мар, халăх хуйхи пăтранать-явăнать. Кĕрхи тĕттĕм те сивĕ каçсенче асар-писер çил мар ахлатать урамсенче, халăх чĕри çурăлать, халăх ахлатать. Эсрелчунилли мар çӳрет килрен киле, Кришка старик вилнĕлĕх хучĕсем салатать.

Кришка — мĕн, Кришка айăплă мар, унăн хăйĕн те кĕреш пек виçĕ ывăлĕ танкра çунса вилнĕ. Малов Пракух комиссар пулса вăрçа кĕнĕ те, партбилечĕ витĕрех пуля тухса кайнă. Кладовщик Павăла та вăрçа илчĕç. Павăл та... вилнĕ. Акташ Михайли — вăрçă пуçламăшĕнчех... Документчĕсем те, çыру тетрачĕсем те, пĕтĕм хучĕ килчĕ. Вилнĕ. Михетер Мирунĕ хăй куçĕпе хăй курнă, хăй аллипе хăй пытарнă. Вилнĕ. Вилнĕскер чĕрĕлсе тăрас çук. Мĕн тăвас тен: çур ял тенĕ пек вăрçăра вилсе пĕтрĕ. Сывă юлнисем нумай мар, Михетер Мирунĕ те тата темиçе çын. Мирунĕн те алли-ури хуçăлса пĕтнĕ, тет. Таçта, çĕр хыçĕнче, госпитальре ăшталанать, тет. Суккăр Тарье çеç ялта Акташ вилнине ĕненмест. Вилнĕлĕх хутне вулама унăн куçĕ курмасть, вилнĕ тенине итлеме — хăлхи илтми пулса ларнă. «Михайла килсен, Михайла таврăнсан», — тет пĕрехмай карчăк. Тата... Силемпи ĕненмест.

3. Тискер телей

Кун хыççăн кун, çĕр хыççăн çĕр, эрне хыççăн эрне... Уйăх... Çулталăк... Иртет вăхăт. Вăрçă пуçланни виççĕмĕш çула кайрĕ. Каллех шăрăх çу тăчĕ, ылтăн кĕркунне çитрĕ, вăл хура кĕркуннене куçсан, хĕл çитесси палăра пуçларĕ.

Халĕ ĕнтĕ пирĕн салтаксем тухăçалла мар, анăçалла утаççĕ. Вăрах вăхăт походра пулнă хыççăн, шăннă çĕр çинех ларчĕç — шăнса ĕнтĕркенĕ, çара, кичем уй варрине чарăнчĕç. Армутине пас тытнă, йĕри-тавра пĕр хуралтă та çук. Вăраха чарăнчĕç-ши? Салтаксем шинель çухисене тăратнă, витĕр касса вĕрекен çил çинче шăнса чĕтреççĕ. Эх, каясчĕ малалла. Çук. Çав, оборона йышăнмалла-мĕн. Килсе çитрĕç иккен. Ăçта чарăннă, çавăнта çĕр чавма тытăнмалла. Аллисене кĕреçе тытрĕç...

Салтак тенин ăçта окоп, çавăнта кил. Малтанхи кун шăтăксем чаврĕç те пĕр-пĕрин çумне тĕршĕнсе нимĕнпе витĕнмесĕрех выртса çывăрчĕç. Çӳлтен юр ӳккелет. Тепĕр кунне

таçтан кивĕ хăмасем, çуннă пĕренесем турттарса килчĕç. Снарядран-бомбăран хăмапа хупланнипе хăтăлаймăн та, пуç çинче хӳтĕ пурри çапах аван: хăма, пĕренесем сарнă, ăна çĕрпе витнĕ, окопсене тăшман тӳрех курасран çиеле армути тĕмĕсем лартса тухнă. «Çуртăн» алăкĕ те пур — шăнса пăрланнă плащ-палатка. Çĕтĕк витререн кăмака пекки майласа яраççĕ. Турпас çунать. ПТР патрунĕнчен тунă «шăшикуç» мĕлтлетет. Çĕрпӳртре ăшă пулса каять, стенасем çинче мĕлкесем сикеççĕ, типекен пӳрттенкке шăрши сарăлать. Улатăрах тулта çил, саптăрах вăл питрен юрпа. Çĕрпӳртре — хӳтĕ. Хир варринче çĕр айĕнчи ял ӳссе ларчĕ. Ялтан тĕрлĕ еннелле кабельсем тăсрĕç: хыçалалла — дивизи штабне, малалла — батальонсен штабĕсене, сулахая, сылтăма — кӳршĕсем патне. Полк оборонăна тăчĕ. Нумая-ши? Наступленине каясси пирки тăтăшах калаçаççĕ. Ахальтен калаçман иккен: пĕр пĕлĕтлĕ сивĕ ирпе тавралăх хăрушшăн кĕрлеме, чĕтреме тытăнчĕ. Снарядсем халь пирĕн çинелле мар, тăшман еннелле вĕçеççĕ ĕнтĕ, пирĕн пуç çине мар, унăн пуçĕ çине ӳксе ахлатса çурăлаççĕ.

Пăрах çĕрпӳртӳсене, ăшă вырăнна, витререн тукаланă кăмака пеккисене, пуçтарса чĕрке кабельне — малалла каймалла, наступлени.

Пĕлĕтлĕ сивĕ кĕрхи çанталăк...

Салтаксем яланах хатĕр. Тапраннă. Утаççĕ. Çул хĕррине лав тӳнсе кайнă, патрун ещĕкĕсем сапаланса выртаççĕ. Пуçтарса тиеме вăхăт пулман — тăшманăн çаврăнса пăхмасăр тармалла.

Утать салтак...

Фашистсен машини тăрать. Бензин пĕтнĕ те, хуçисем çуранах тарнă.

Утаççĕ пирĕн салтаксем.

Пăрахса хăварнă тупăсем, хăяккăн тӳннĕ танксем тĕл пулаççĕ. Хăшпĕр ялсене тĕпĕ-йĕрĕпе çунтарса янă. Окопсем, хирĕç тĕллесе лартнă пулеметсем, шăнса хытнă тăшман виллисем...

Кун пĕтет те çĕр пулать. Салтак çаплах утать.

Кухньăсемпе обозсем хыçала тăрса юлнă. Наступлени умĕн старшина валеçнĕ сухари татăкĕсене таççанах çисе янă. Çулăн вĕçĕ те хĕрри те çук. Салтак утать, пĕрехмай утать.

Ывăннă офицер иртсе каять, кăшкăркаласа илет:

— Ан юлăр, вăр-вартарах пулăр!

Сĕм-çĕрле те утаççĕ. Малта — салтак çурăмĕ. Такам çав салтак. Тахăш ротăран, тахăш батальонтан. Çул çинче пурте пăтрашăннă.

Танксем иртеççĕ, пĕри, тепри... Чăнкăр та чанкăр! Бензин çунăкĕн шăрши сăмсана кӳ! килсе кĕрет.

— Сылтăмарах, сылтăмарах пăрăнăр, танк айне ан пулăр!

Умра çав-çавах салтак çурăмĕ. Ыйхă пусать. Урасем утасшăн мар, çурăм сурать, хырăм — пуш-пушах.

Пулать-ши çулăн вĕçĕ? Тул та çутăлса килет ĕнтĕ, çул йĕрĕ курăнакан пулчĕ. Хирте тĕттĕм мар, ĕнтрĕк.

Умра çав çурăмах-ши е урăх? Сасартăк сăмсапа çав çурăм çине пырса тăрăнатăн. Ыйхă сирĕлнĕ пек пулать, ятлаçса илетĕн.

Çул çине машина путса ларнă. Чарăнаççĕ. Тĕртсе кăларнă хыççăн, малалла утаççĕ.

Çутăлсан, кунĕпех юр çурĕ, юр ларчĕ. Аманса-çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ хир шап-шурă пулса тăчĕ. Вилесем, хуçасăр окопсем, снаряд-бомба ӳксе пулнă шăтăксем юрпа витĕнчĕç, çулсем çеç çаплах хуран курăнса выртаççĕ.

Чунра — мĕн? Тунсăх? Пулма пултарать. Йĕрес килни? Пулĕ те. Анчах — телейлĕ тунсăх, анчах — куççульсĕр йĕрес килни. Тап-таса шурă хирте таçтан йыхравлă сасă килет пек — чĕре чарăнса ларасла уçă та ырă сасă. Мĕн сасси ку? Тăван яла, вăрçă умне тăрса юлнă яшлăх сасси-и е тăван ен, тăван çĕр сасси? Тен, минут та манăçман пирвайхи юрату чĕнĕвĕ? Малта вара санăн вăрçă. Тен, талăкĕпех маршра пулнă хыççăн, ура çинченех, кăшт та канмасăр, çапăçăва кĕмелле пулать? Выçă хырăмпа, кабель катушкисене аран-аран çурăм çине йăтса хурса, çĕнĕ юр тăрăх упаленме тӳр килет? Алăсем шăнса кӳтеççĕ, тирĕ сĕвĕне-сĕвĕне каять, снарядсем вĕççе иртнĕ май питпе юр çумне лăпчăнатăн. Тен, вĕлерĕç... Вĕлерĕç? Çук, вилме ниепле те юрамасть. Урăххисем вилччĕр, Михетер Мирунĕ мар. Турăçăм! Çак асамлă самантра сурать вăл пурин çине те: чун каллех пирвайхи юрату кĕввипе тулса ларчĕ, чунра та, чĕрере те каллех — Силемпи, Силемпи... Ним те нимĕн тĕшне те тăмасть — çапăçу, выçлăх, ывăну, вилĕм, — лачлаттарса сурмалăх çеç! Чĕнӳ сасси пур, йыхравлă таса сасă, чунра янăрать, шалта, — ахлату та пăшăрхану, ĕсĕклесе йĕрӳ те ăрăскал... Тăван ен чĕнет, туртать, юрату йыхăрать, пурнăç, пурнас килни илĕртет, канăç памасть, анчах меллĕ самант çаплах килмест те килмест. Сисет Мирун — килмеллех вăл, килетех.

Мирун вилме тивĕç мар, мĕншĕн тесен вăл хăшпĕрисем пек сĕм ухмах мар, юлташĕсене упрама пĕлмесен те, хăйне упрама калама çук лайăх пĕлет. Меллĕ самант, меллĕ самант... Хăçан çитĕн эсĕ? Хăçан? Мĕнле сăн-сăпатпа? Хăш вăхăтра? Меллĕ самант, саккунлă самант... Саккунлă пек курăнакан меллĕ самант... Саккунлă самантсем те тĕрлĕ пулаççĕ иккен: саккунлă та пултăр çав самант, çав хушăрах саккунсăр та... Çавăн пек меллĕ самант çеç тивĕçтерет Михетер Мирунне, ыттисем вырăнлă мар. Саккунлă та, çав хушăрах саккунсăр та... Саккунсăрне пĕр Мирун çеç пĕлмелле, урăх — пĕр чун та. Çавăнпа Мирун хăйне хăй ăслă тет те ĕнтĕ. Киле, тăван яла чĕрĕ те сывă çитмелле — акă Михетер Мирунĕн хальхи вăхăтри пурнăç программи. Пуçĕсене айвансемпе ухмахсем хуччăр, Акташ Михайли пек мĕскĕн патриотсем. Тĕнчене этем пĕрре çеç çуралать. Çавна аван пĕлмелле, ӳт-тирпе туймалла. Вара айван та, ухмах та, мĕскĕн те пулмастăн. Кирек кам патĕнче лаша пăхсан та пĕр мар-и Мируна: хăть — колхозра, хăть нимĕç улпучĕ патĕнче. Тăван ялĕ çеç умра пултăрччĕ, тата... Силемпи. Ăçта çитсен те тăван ялĕ, тăван ялпа пĕрле Силемпи сăнарĕ Мирун асĕнчен тухмарĕ. Ун хытнă чунĕнче, эгоизмăн наркăмăшлă тăпринче, Силемпи сăнарĕ асамлă та синкерлĕ кĕлчечек пек ешерсе чечекленчĕ. Çав сăнар хăрса сӳнмерĕ, çăткăн чунăн харпăрлăх япали пулса салтака чăн-чăн салтак пулма чăрмантарчĕ, салтак тумĕ тăхăнса икĕ çулталăк ытла çӳресе те Мирун салтак пулаймарĕ. Хăйĕн пĕчĕкçĕ пурнăçне вăл пĕтĕм çут тĕнчерен те хаклăрах тесе шутлать. Вилĕмрен йĕрĕнме, ăна çĕнтерме чăн-чăн салтак çеç пултарать çав. Сан пурнăçунтан хаклăраххи тĕнчен пит нумай иккен. Мирун çавна ăнланаймарĕ. Епле те пулсан чĕрĕ юлмалла. Мĕн хака пулать-ши чĕрĕ юлма, мĕн парса? Пĕлет-и çавна Мирун? Пĕлет...

Тăшманăн оборонине татса, пирĕн çирĕм-вăтăр разведчик малти лини леш енне çирĕпленсе ларнă. Каçĕ тĕттĕм. Лапкалапка юр çăвать. Тĕттĕмре çав çирĕм-вăтăр çын та тăшмана батальон пек туйăнать пулмалла. Фашистсем урса кайса, тĕллипаллисĕр, пĕр чарăнми переççĕ. Çак пăтăрмахпа усă курса юласах пулать. Анчах та разведчиксемпе çыхăну çук, ракетăсем ярса хăтланни вырăнлах мар. Радиостанцисем — батальонсенче. Чĕнсе илсе майлаштариччен тул та çутăлса кайĕ. Рота штабĕнчен разведчиксем патне кабель сĕтĕрмелле тесе йышăнчĕç.

Урăхла нимле май та ҫук. Леш енчен килнĕ разведчик, Ҫӳллĕ Вырăс, ăна Михетер Мирунĕ ҫапла ят пачĕ, катушкăна ҫĕртен илсе ҫурăмĕ ҫине хучĕ. Мирун та ҫаплах турĕ. Тулта тавралăх питĕ тĕттĕм. Юр кăшт шуррăн курăнни ҫеҫ малалла кайма хавхалантарать пек. Шурă халатлă разведчик ҫĕрпӳртрен тухнă-тухман сăрă юр ҫине выртрĕ те унта пачах курăнми пулчĕ. Вăл юра чăштăртаттарни, хушăран сăмса турта-турта илни ҫывăхрах илтĕнет. Ҫил вăйлăлансах пырать. Юр пите, алăсене пĕҫерте пуҫларĕ. Ăҫта пăхнă унта — юр. Юрсăр пуҫне урăх ним те ҫук тейĕн ҫав. Юра ҫеҫ туять Мирун. Ытти — тĕттĕм пушăлăх, хура тĕнче. Ниммарлăх. Тĕттĕмлĕх те пушлăх, ним-ҫуклăх — ҫакă пуль ĕнтĕ вăл вилĕм тени. Чавса ҫине тăрать те Мирун малалла тапаланать, тăрать те тапаланать. Шăвать, шăвать, малта вара — вĕҫĕмсĕр хура тĕнче; япаласем те, ҫĕр те, ҫăлтăрсем те, пурнăҫ та ҫук. Ху та пулмасса пултаратăн.

Мирун Ҫӳллĕ Вырăс ҫине пырса тăрăнчĕ. Лешин катушки пушаннă-мĕн, разведчик ҫĕҫҫи ҫуккипе кабель вĕҫне шăлĕпе кăшласа ларать. Мирунăн ҫаннисене юр кĕрсе тулнă, пӳрнисем шăнса кӳтнĕ, проводсене пĕр-пĕринпе ниепле те ҫыхаймасть. Вырăс пулăшрĕ, ятлаҫа-ятлаҫа ҫыхăнтарчĕ. Халĕ ĕнтĕ малта — Мирун. Акă ĕнтĕ пынă ҫĕртех пач куҫран ҫухалчĕ: сăмсипе шăтăка тăрăннă иккен. Вырăс каллех мала упаленсе тухрĕ. Пĕр вăхăт ним хускалмасăр выртрĕҫ, сас-чĕв ҫук-и, хăйсем кунтине тăшмана систермерĕҫ-и? Тавра шăпах, тĕттĕм. Асăрханса малалла шуса кайрĕҫ. Нумай шурĕҫ-и, сахал-и, тĕпсĕр хура тĕнчене вăратса ҫӳлелле ракета чашкăрса хăпарчĕ. Унăн сивĕ кăвак ҫути юра ҫап-ҫутă ҫутатрĕ, юрпа пĕрле ҫиҫсе куҫа шартарчĕ. Ракета ҫӳлелле вĕҫрĕ-вĕҫрĕ те авăнса аялалла ана пуҫларĕ. Тавра ҫаплах ҫап-ҫутă-ха. Кăвак юр ăшне чаваланса кĕрсе выртнă Мирунпа вырăс йăшăл та тумаҫҫĕ, сывламаҫҫĕ те. Тăшман енчен, чылай аякран, пулемет тăкăртата пуҫларĕ. Пульăсем ҫывăхрах чăшлата-чăшлата юра шăтарса кĕчĕҫ. Ракета сӳнчĕ, анчах тавралăх паҫăрхи пек шăп та тĕттĕм пулса тăмарĕ. Сарлака ҫутă йĕр хăварса, ҫутăлакан пульăсем иртрĕҫ. Пĕр мина ҫурăлса вут-ҫулăм варкăштарчĕ, тепре, тата тепре... Сивĕ вĕтĕ юр тусанĕ пите витĕрех ҫатăрларĕ. Часах ахаль миномет мар, ултă кĕпҫелли пере пуҫларĕ. Минăсем выҫă кашкăр пек уласа пĕчченшерĕн мар, кĕтĕвĕпе килеҫҫĕ. Хăрушшăн уласҫĕ, хăранипе чун тухса кайĕ. Мирун шăлне шатăрах ҫыртрĕ. Минăсем вĕҫĕ-хĕррисĕр ӳкеҫҫĕ: улттăн ҫеҫ мар, ҫĕрĕн, пинĕн пуль вĕсем?

Миномет сасартăк пеме чарăнать те шăв-шав лăштах пулать. Каллех пулемет тăкăртатать. Пульăсем шăннă çĕре хаяррăн пыра-пыра çыртаççĕ.

Мирун юлташĕ, Çӳллĕ Вырăс, умне нимĕçсенчен тытса илнĕ автомат çакнăскер, сиксе тăчĕ те малалла талпăнма хăтланчĕ. Çав хушăра çĕре каллех сенкер, куçа йăмăхтаракан çулăм хыпса илчĕ — ракета чашкăрса хăпарчĕ. Тем чĕриклетет, чĕриклетет. Ултă кĕпçеллĕ миномет çапла сасă кăларать пулас. Вара сывлăшра выç кашкăр кĕтĕвĕ каллех хытăран-хытă улама тапратрĕ. Унта та кунта мина кĕрслетсе çурăлать. Вутçулăм сирпĕнет. Мирун куçĕ хуралса-хуралса килчĕ. Сивĕ сывлăшра çав тери йĕрĕнтерекен, чыхăнтаракан темле шăршă кăмăла пăтратать, сывлама памасть. Куç умĕпе сарă ункăсем шăва-шăва иртеççĕ — васкамасăр, сылтăмалла, сылтăмалла, хăяккăн, — таçталла çил вĕçтерет тейĕн вĕсене...

Тăна кĕрсе куçне уçрĕ те тĕлĕнчĕ: умра ним те çук, хăрăм пек хура тĕттĕмлĕх, саркаласа Мирун пичĕ çинех витнĕн туйăнакан тĕттĕмлĕх çеç. «Вилĕ-ши эпĕ е чĕрĕ-ши? — шухăшларĕ Мирун. — Чĕрех пуль-ха: ма тесессĕн, ав, леш енче пĕрпĕринпе тупăшсах пулеметсемпе автоматсем переççĕ. Паçăр та перетчĕç вĕсем».

Инçех те мар, темиçе утăмра, шур юр çинче хура япала палăрать. Чĕтрекен хулĕсем çине тĕренсе, Мирун унта шуса пычĕ — юлташĕн пысăк çăматăллă ури иккен. Хăй, Çӳллĕ Вырăс, маскхалат тăхăннăскер, юр кĕрчĕ пек мăннăн курăнса выртать; пуснă сысна пек, юнпа чыхăна-чыхăна хăрăлтатать. Мирун ăна çавăрса пăрахса питĕнчен пăхасшăнччĕ. Ăçта унта! Юлашки минучĕсене сывлать, пĕтрĕ вырăс. Хамăрăннисем патнелле илсе тухма-и? Ăçтан сĕтĕреен çав упана! Мирун чухлĕ иккĕ пур пуль те вăл...

Таврашпех — перкелешӳ. Нимĕçсем çывăхрах пулас: автоматсемпе шатăртаттараççĕ, кăшкăрашнисем те илтĕнеççĕ.

Хура тӳпе те шурă юр, юр та тӳпе. Автомат-пулемет туйĕ. Иккĕнччĕ вĕсем. Юлташĕ, авă, вилчĕ, Хăйпе хăй çеç тăрса юлчĕ Мирун — тамăк хуранĕнче пĕр хăйпе хăй. Никам та çук: пăхса тăракан та, итлесе тăракан та. Вăл чĕррипе сыввине тĕплĕн пĕлекен те халлĕхе никам та çук. Мирун вара чĕрĕ. Чĕрĕ кăна мар, сывă та. Куç умне каллех ял, Силемпи килсе тухрĕç. Акташа аса та илмест ĕнтĕ халь Мирун. Мĕн аса илмелли тахçанах нӳрлĕ çĕрте çĕрсе выртаканскерне. Пурнăç. Акă

мĕн кирлĕ Мируна. Самантлăх пурнăç мар, ватăлса вилич-ченлĕх пурнăç. Мĕн парса илме пулать ăна вăрахлăха çак чĕр тамăкра? Мĕн парса? Пуçа парса мар ĕнтĕ, паллах. Пуçа çухатсан — мĕн пурнăçĕ пултăр? Пуçа пĕтерсен, Мирун мар, юмахри паттăрсем те чĕрĕ юлаймĕç. Анчах та сутăн илме пулать иккен пурнăçа çăва шăтăкĕнче вилĕме хирĕç пăхса пĕр урапа тăнă чух та. Пулать. Мĕн вăл алă, мĕн вăл ура çакăн пек чух? Акă кабель. Вăл хамăрăннисем патне илсе тухма тивĕç. Унччен, хамăр енне çывхариччен, тăнран кайса çеç ӳкес марччĕ. Чăтас, тӳсес пулать, шăла çыртмалла. Автоматпа чĕркуççинчен аяларах тĕллерĕ.

Персен, каснă йывăç пек йăванса кайрĕ те тăнне çухатрĕ. Тăнĕ килсе кĕнĕ хыççăнхи малтанхи шухăш: «Автомат», пулчĕ. Автомачĕ унтах йăваланса выртать-мĕн, пур вăя пухса ăна юр айне чавса чикмелле. Чикрĕ... Аран-аран... Чавси çине çĕкленчĕ кăна — çемçе юр çине тăрăнса та анчĕ, йынăшса ячĕ: ура тупаньнчен пуçласа ĕнсене çити ӳт-пĕве темле çивчĕ япала касса çурнăн туйăнчĕ. Мирун йĕп-йĕпе тара ӳкрĕ. Выртсан-выртсан, ыратни иртнĕ пек пулчĕ. Пĕр урине хускатса пăхрĕ аманнăскер, теприне. Пĕри чиперех хускалать, тепри вара питĕ йывăрланса, пысăкланса кайнă пек туйăнать, кăвар çине хунă пек пĕçерет, ун айĕнче юр та чăшăлтатса ирĕлет тейĕн çав. «Турра шĕкĕр, чиперех иккен-ха, ĕç ăнчĕ», — сиввĕн шухăшларĕ Мирун. Каллех чавса çине тĕренчĕ, каллех пĕтĕм пӳ пĕçерсе, ыратса кайрĕ: çутă сарă ункăсем куç умĕпе шуса иртрĕç. Мирун пичĕпе юр çине тăрăнчĕ.

Куçне уçсан, калама çук ĕçес килнипе, юр çиме тытăнчĕ. Кăштах вăй кĕнĕ пек пулчĕ, пуçĕ çăмăлланчĕ. Шăвас пулать. Аллисем аран-аран итлеççĕ, Мирун пĕтĕм пĕвĕпе юра сухаласа пырать. Инçе шумалла-ха, питĕ инçе. Ним çинчен те шутламалла мар, шумалла çеç. Шит, тепĕр шит... Каллех хал пĕтрĕ, алăсем ывăнчĕç.

Епле ырă та çемçе иккен юр. Алăсем чĕтреме пăрахрĕç, йывăрланнă пӳ те çăмăлланчĕ, ура хытах мар туртса ыратать. Ыратни пĕтĕм ӳт тăрăх сарăлать, чавсана, ал тунине çитсе систерсе тăрать, пуç çаврăнать, анчах вăйлах мар. Сивве пачах туймасть пӳ — çемçе, ырă юр çинче. Ним çинчен те шутлами пулчĕ Мирун, ним пирки те пăшăрханмасть, унăн çыврас килет. Ытларах канас килет. Тĕлĕрсе выртнă çĕртех вăл шартах сикет: çывăрма юрамасть, юр çинче çывăрса кайни вилĕмпе пĕрех. Шумалла, епле пулсан та шумалла. Хамăрăннисем пат-

не, унта çеç çăлăнма пулать, нимĕçсем патне хăвна ху персе ӳкерсе кайнин мĕн усси? Унта каçни яла, Силемпие çухатни пулĕччĕ, нимĕçсем пире пĕрех çĕнеес çук, анчах та эпĕ мар, урăххисем çĕнтерччĕр, пуçĕсене хуччĕр. Ухмахсем кĕрхи шăна пек тăкăнччăр — акташсемпе çӳллĕ вырăссем. Эпĕ, пĕр çын, мĕн вăл çавăн пысăкăш çаршăн, унта мансăр та салтак нумай. Мансăрах çĕнтереççĕ фашиста, çĕнтереймесен те пире, ахаль çынна, нимĕç мĕн тутăр? Коммунист та, комсомолец та мар эпĕ, çырма-вулама пĕлекен мирлĕ хресчен çеç. Силемпипе пĕрле, вăл килĕшсен, шуйттан шăтăкĕнче те рай пулать: лайăх ĕçлесен, нимĕç тарçинче те выçă вилес çук-ха.

Мирун шăвать. Шăвать-и, çук-и, шунă пек туйăнать хăйне. Пуçĕ çав тери йывăрланса çитрĕ — ăна алăсем те, мăй та тытса тăраймасть. Куç умĕпе сарă ункăсем айккинелле иртеççĕ, пĕрисем иртсен, теприсем шуса тухаççĕ. Кăшт кансан, хулсене каллех вăй кĕрет. Пӳ çăмăлланса каять, сывлăшалла вĕçсе çĕкленет, тейĕн, ярăнать сывлăшра. Хамăрăннисем патнелле. Хăй тĕллĕнех ярăнса пырать — шума та кирлĕ мар пек.

Вĕçĕ-хĕррисĕр юр тинĕсĕнче, шартлама сивĕре, хамăрăннисемпе нимĕçсен хушшинчи тăрăхра, хăрах уринчен юн юхтарса Мирун выртать. Çип татма та вăйĕ юлман унăн. Хура тӳпе, шурă юр. Кабель вĕçне тухасси пулать-и, пулмасть-и... Çакна Мирун пĕлмест. Çав самантра хăй çапах та савăнăçлă, телейлĕ. Хăрушă, тискер телей, хăрушă, нĕрсĕр савăнăç. Çак савăнăçпа телее Мирунсăр пуçне никам та туймасть, сăнамасть, пĕлмест. Таврара тĕттĕм каçпа шурă юр. Шур юр çинче хура мĕлке — савăнăçлă та телейлĕ мĕлке, таса хут çинчи чернил лапăрчăкĕ, сывă ӳт çинчи кĕсен-çăпан, ешĕл улăхри шăршлă лачака, çутă юхăм шыври пăх муклашки, чĕрĕ кĕлеткери çĕрĕк чун...

Çав хура мĕлке «Силемпи» тесе пăшăлтатать.

Вăл питĕ телейлĕ, кун пек телейлĕ ниçан та пулман. Астумасть... Пурăнса та курман-ха вăл пурнăçа, çирĕм пĕр те тултарман. Телей... Мĕн тери ырă япала иккен вăл... телей.

4. Ялта

Вилнĕлĕх хутне суккăр Тарье вута пăрахса çунтарнă, ниепле те ĕненесшĕн пулман вăл ывăлĕ вилнине, çухатман шанчăка. Силемпи те шанчăка чĕри варнех вырнаçтарнă. Усал хут

вутра ҫунса кӗл пулнӑ, Силемпи шанчӑкӗ хӗр чӗрине ҫулӑм хыптарса кӑварлатнӑ. Силемпи туйнӑ: унӑн юратӑвӗ вилӗмсӗр, ҫавӑнпа Акташ та вилӗмсӗр пулмалла. Тӑван ҫӗрне вӗҫӗмсӗр юратнӑ пирки Саврӑш паттӑр ҫулсерен чӗрӗлсе тӑрать, Акташ та, Силемпие ӗмӗрлӗхе юратать-тӗк, вилнӗ ҫӗртен чӗрӗлсе тӑрса тӑван ялне таврӑнмалла. Ӑссӑрлӑх-и ҫакӑ? Ӑссӑрлӑх. Анчах та кӑвар чӗре вилӗм мӗн иккенне те, абсурд мӗн тамаша пулнине те шута илесшӗн мар. Чун-чӗрен унӑн хӑйне саккун, хӑшпӗр чух вӑл пуҫа пачах пӑхӑнасшӑн мар. Шутла-шутла, ҫуна-ҫуна Силемпи веҫех вӑйсӑрланса, типсе кайрӗ. Ҫиме ларсан, хӗлхем ҫӑкӑр та пыра ларать, анмасть; йӗме тытӑнсан, куҫҫуль тухмасть. Типнӗ. Лаша тӳсейменне ҫын тӳсет. Колхозри пур-ҫук лашасем выҫӑпа тата йывӑр ӗҫе пула вилсе пӗтрӗҫ, вилейменнисем ура ҫине тӑраймаҫҫӗ — шӑммипе тирӗ ҫеҫ. Сухара лаша вырӑнӗнче — ӗне, вӗсене те пусса ҫисе пӗтерсен, плуга хӗрарӑмсем хӑйсем кӳлӗнчӗҫ. Сухине те турӗҫ, тыррине те акса хӑварчӗҫ. Хӗрӗх пиллӗкмӗш ҫул ҫуркунне плуг кӳлӗнсе хыт ана ҫине тухсан, пӗр ирхине Силемпи сулӑнса-сулӑнса кайрӗ те лӑштӑрах ҫӗре тӗшӗрӗлсе анчӗ, пуҫне ярса тытрӗ. Ҫавӑнтан вара вӑл ӗҫе тухайми пулчӗ, пуҫӗ хыт кашланипе вырӑнпах выртать терӗҫ.

Пӗр лӑпкӑ та ӑшӑ каҫ вӑл кӑмака хыҫӗнчи шӑрчӑк чӗриклетнине итлесе килӗнче пӗрченех ларатчӗ — кӑшт ҫӑмӑл пек туйрӗ те тӑрса ларчӗ ҫав ӗнтӗ вырӑн ҫинчен аран-аран. Урайне тултан кантӑк витӗр уйӑх ҫути ӳкет, ҫавӑнпа та Силемпи хӑйӑ та ҫутман. Ял варринчи лаптӑкра яш-кӗрӗм вӑйӑ калани илтӗнет. Вӑрҫӑ чарӑнни вунӑ-вунпилӗк кун иртрӗ пуль-и, яла каллех чун кӗчӗ, салтаксем вӑрҫӑран таврӑна пуҫларӗҫ — хӑшӗ хӑрах алӑллӑ, икӗ ураллӑ, хӑшӗ вара хӑрах ураллӑ, икӗ алӑллӑ. Хӑрах куҫпа таврӑнакансем те, ӳсӗрнӗ чух юн суракансем те, темӗн тӗрли те пур, уксах-чӑлах марри ытла та сахал. Ҫамрӑккисемпе ҫамрӑкрах салтаксем каҫ пулсанах вӑййа тухаҫҫӗ те ирччченех урамра ҫӳреҫҫӗ, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ватта юлнӑ хӗрсене тиркесе тин ӳссе ҫитӗннисем ҫинелле ытларах пӑхаҫҫӗ. Пӗриккӗшӗ авланма та ӗлкӗрчӗҫ, 16—17 ҫулхи хӗрсене кавча илсе арӑм турӗҫ.

Чӗриклетет те чӗриклетет шӑрчӑк кӑмака хыҫӗнче. Уйӑх кантӑкран каҫса кайса ҫутатать. Силемпи урамалла пӑхрӗ те — урам та кӑнтӑрлахи пек ҫап-ҫутӑ.

Урам леш енчен кунталла пӳрт-ҫурт, хуралтӑ, йывӑҫ мӗлкисем ӳкнӗ. Шӑп, калама ҫук шӑп. Уявра (вӑйӑра) хӗрсемпе

каччăсем, тăват-пилĕк çул каялла юрланă пекех, авалхи юрра питĕ килтерсе юрлаççĕ:

Ан ишĕл, çыран, ан ишĕл,
Эпир каçса кайиччен,
Ан авланăр, ачисем,
Эпир ӳссе çитиччен.

Çыранĕ те 4—5 çул хушшинче нумай ишĕлчĕ пулĕ, шывĕ те унтанпа нумай кĕрлесе юхса иртрĕ, хĕрĕсем те ӳссе çитрĕç, чылайăшĕ, ватта юлтăмăр тесе, пăрахрĕç вăййа тухма, ашшĕне, пиччĕшне, шăллĕне, савнине çухатнисем вăхăтсăр та ватăлчĕç пуль, пӳпе мар пулин те, чунпа... Мĕн тăвас тетĕн, çын чунĕ те çыннисем пекех, пĕр пек мар вĕт: хăшĕ питĕ тӳсĕмлĕ, хăшĕ вара апла мар. Чул та тĕпренет те, этем чунĕ чул мар çав. Ачисем те, çап-çамрăкла вăрçă вут-çулăмне кĕрсе, вилĕмпе куçран-куç пĕрре мар тĕл пулса, яшлăхпа, чылайăшĕ вара пурнăçпа та, час сывпуллашрĕç, хăшĕ-пĕрисем хĕр тутине пĕрре сĕртĕнсе курмасăр, юрату мĕн иккенне те пĕлмесĕр, пуçĕсене хучĕç. Юратса курнисем те, савнисене качча илсе, çĕр чĕтретсе туй тăвас чух, юнлă туя лекрĕç. Çав туй-çуй вĕсене те çĕре нихçан тăраймасла çапса антарчĕ.

Хăш хушăра вĕçсе иртрĕ ачалăх?

Хăш хушăра çухалчĕ яшлăх?

Ăçта кайса кĕчĕ çамрăк вăхăт?

Ăçта йĕкĕтсем? Ăçта юрату? Телей?

Ачалăх — сăрт хыçĕнче, Яшлăхпа-çамрăклăх — ахăр самана çăварĕнче. Йĕкĕтсем — нӳрлĕ çĕр айĕнче... Телей — куян. Ярса тытма хӳри кĕске. Вăрçă чуна, юна, ĕмĕте ĕмсе илчĕ, пĕтĕм пурнăçа çапса хуçрĕ, пирвайхи юратăва хура юпа çумне пăталарĕ, çунтарса кĕлне çилпе вĕçтерчĕ, этемрен шăммипе тирне çеç хăварса чĕр виле туса хучĕ. Кам халь Силемпи? Ватă хĕр тесен, ватă хĕр мар, çирĕм пĕрте çеç-ха вăл. Çамрăк хĕр тесен, çамрăк хĕр мар, çамрăк хĕрсем кун пек пулмаççĕ — сăнĕ шуранка, питçăмарти путса кĕнĕ, çурăмĕ пĕкĕрĕлнĕ, куçĕсем сӳннĕ, кулли çухалнă. Типсе хăрса кайнă кĕлетки, каçарăр та, çынна тухатмăш карчăкĕ пекрех кăтартать. Эх, Акташ, мĕн туса хутăн эсĕ Силемпие хăвăн вилĕмӳпе? Ху вилсе, эсĕ ăна та вĕлертĕн. Силемпи, тĕрĕссипе каласан, тахçанах вилĕ ĕнтĕ, кĕлетки анчах çӳрекелет, часах вăл та сӳнсе çĕр айне кĕрсе выртĕ, нумай юлман. Туять çакна Силемпи хăй те. Анчах, анчах... чĕри çеç, чунĕ, çунса кĕлленнĕ пулин те, сӳней-

мест, çаплах хĕмлене-хĕмлене илет-ха вăхăт-вăхăт, çаплах теме шанать, ĕненет, хĕлхем сӳнсе-сӳнсе тăрать те каллех чĕрĕлет.

Тухатмăш карчăкĕ те мар Силемпи. Тухатмăш карчăкĕ пулсан, тимĕр тылă çине е килĕ çине утланĕччĕ те вăрçă хирне, Акташ ĕмĕрхи ыйхăпа çывăракан çĕре, вĕçсе кайĕччĕ, малтан вилĕ шывпа, унтан чĕрĕлĕх шывĕпе пĕрĕхĕччĕ, савнă тусне тăван яла хăйпе пĕрлех лартса килĕччĕ.

Те чӳрече умĕнче уйăх çутине вăрах тинкерсе ларнипе, те асаилӳсен хумĕ хытă килсе çапса тăнран янипе, Силемпи, кунĕпе нимĕн çимен пулин те, леклетсе хăса пуçларĕ; чĕрине ярса тытса сывлăш çавăрасшăнччĕ, куçĕ хуралса килчĕ: хĕр сулăнса кайрĕ те урайне тĕшĕрĕлсе анчĕ, тăнне çухатрĕ. Тăна кĕрсен, вăл нумайччен куçне уçма хăраса выртрĕ: урамра çамрăксем вăйă калама пăрахнă, унта çын сасси мар, йытă вĕрни те илтĕнмест. Шăп. Кăмака хыçĕнчи шăрчăк та шавламасть — вăл та ыйха путнă пулас. Шăп. Калама çук шăп. Силемпи хăйĕн чĕри мĕнле тапнине, хăлхи йăнлавне, тăнлавĕсем епле талтлатнине уççăнах илтет, пуç мими вăхăт-вăхăт кăчăртатнă пек те туйăнать ăна, анчах та пуçĕ ыратмасть, кашламасть. Çакна та туять Силемпи. Туймасăр. Пуç кашланă чух хăвна кун пек çăмăл тытаймăн — пĕтĕм шăмшак сурать ун чух, пĕтĕм ӳт-пӳ сăрăлтатать, хăвна такам тимĕр тылăпа тылланăнах туйăнать.

Чим... Мĕн ку? Шашулккине хуллен шăлтăртаттарса çенĕк алăкĕнчен такам кĕчĕ. Нивушлĕ çавă? Тăватă çул каялла, Силемпи вăйă картине пирвайхи хут тухсан, Михетер Мирунĕпе вăрçса кайнă Акташ мĕн чуль кĕтсен те каçхине хĕр чӳречи умне пымарĕ. Халĕ, авă, çакăн чуль кĕтнĕ хыççăн, тӳрех пӳрте кĕрет пулас...

Тултан çын кĕриччен çипуçне те, вырăнне те кăштах майлас тесе, Силемпи ура çине тăчĕ. Уйăх çути халь урайне кантăкран тӳп-тӳрӳ ӳкет. Ун çинелле пăхнă май, тахçан çырма çинчи каçă сулланма тытăннă пек, урай ярăнса сулланма пуçларĕ. Силемпи, чăнах та, каçă çинче тăратăп терĕ пулмалла, аллисемпе хăлаçланса тӳрленсе тăма хăтланчĕ, каçми çаплах ярăнать, шыва ӳкме тăнă çĕртен ăна пилĕкрен такам тытма ĕлкĕрчĕ. Пăхмасăрах пĕлчĕ, вăл вĕрин сывланинченех туйрĕ хĕр. Акташ... Нимĕн те чĕнмест-ха йĕкĕт, хăвăрт-хăвăрт сывлать çеç, хĕре пуçĕнчен, çурăмĕнчен ачашлать, савса лăпкать. Хĕр тути, çурма уçăскер, шĕл кăвар пек тĕлкĕшсе-çунса тăракан çӳхе

тути, йĕкĕт тутипе пĕрлешрĕ. Вара хĕрпе каччă урама тухрĕç, уйăх çутинче вĕсем урамсем тăрăх нумайччен çӳрерĕç, кĕпер урлă каçса уй хапхи патне çитрĕç те, Силемпи Акташа, унччен хăй салтака кайнă çулпах, ялтан ăсатрĕ.

— Мĕнпе каятăн? — пăшăрханса ыйтрĕ, умра нимле лав та çуккине курса, Силемпи.

— Аптрамăп, — куçĕпе çеç каларĕ Акташ, — сăрт хыçĕнче кĕтет йĕнерлĕ лаша. Халĕ эпĕ, Саврăш паттăр пек, çилçунатпа çеç ĕрĕхтерсе çӳретĕп.

Уйăхлă çутă каçсенче, Силемпи килне пĕччен юлнă самантра, Акташ кашнинчех киле пуçларĕ, анчах çавна астăваймасть хĕр: мĕн калаçать йĕкĕт, çăвар уçса сăмахпа калать-и е каллех, малтанхи пек, куçĕпе çеç калать?

Вăрçăччен çăвар уçсах калаçатчĕ пек...

Тĕлĕнмелле: Акташпа çĕрле «тĕл пулма» пуçланăранпа Силемпи хытă улшăнчĕ, курпунне кăларса пĕкĕрĕлсе çӳреме пăрахрĕ, вырăнне пуçтарса тĕрленĕ çиттипе витсе хучĕ, минтерĕсене хăпартса пĕр-пĕрин çине купаларĕ, çакă вăл çын текех вырăнпа выртмаллах чирлĕ маррине пĕлтерчĕ ĕнтĕ; кăштах апат та çиет халь, çынсем пырсан, чĕнмесĕр лармасть, ял çинчи хыпар-хăнара ыйта-ыйта пĕлет. Ларать-ларать те çапла калаçкаласа, пӳртрен сасартăк вăшт! тухса çухалать, каçчен çырма хĕрне, уй хапхине темиçе те кая-кая килет. Ял çыннисем ăна курсан пуç тайса иртеççĕ, тантăшĕсем чарăнса тăрсах хĕр сывлăхне ыйтса пĕлеççĕ: «Часрах сывал, сансăр ĕçре тунсăхласа çитрĕмĕр», — теççĕ, Силемпи сывалнăшăн савăнаççĕ.

Акташ кăнтăрла пĕрре те килмерĕ, çĕрле çеç алăк уçса кĕрет те, урама каяççĕ, пĕве хĕрринче, укăлчара тахçанччен шăкăл-шăкăл калаçса çӳреççĕ. Мĕн çинчен калаçаççĕ — Силемпи астумасть. «Мана курнине çынна ан кала», — тет пулас лешĕ. Тен, апла та каламасть? Мĕнле сăнлă Акташ, ватă курнать-и, çамрăк-и? Мĕн тăхăннă? Астăвать пек те Силемпи, астумасть те... Мĕншĕн тата яла килет те каллех каять-ха вăл? Лере çапла хушаççĕ-ши? Ма халь те ямаççĕ ăна салтакран? Çынсем тахçанах килнĕ-çке? Акташ вилнĕ-çке вăл... Мĕнле вилнĕ пултăр? Мĕнле вилнĕ пултăр? — кукашшĕпе кукамăшĕ вырсарни кĕллине Чистая каймассерен, кашни эрнере тенĕ пек, алăка килсе шаккать те хĕре урама чĕнет.

Мăнукĕ апат çие пуçланăшăн ватăсем ача пек хĕпĕртеççĕ, Силемпие хăнана пăхнă пек пăха пуçларĕç, мĕнле техĕмлĕ

апат пур, пурте Силемпи валли, сывалтăрччĕ çеç, вăй-хал кĕтĕр, урăх ан чирлетĕр. Акташ, суккăр Тарье ачи, вилнĕскер, чĕрĕлсе тăрас çук ĕнтĕ, пуç пулсан, сывлăхĕ аптрамасан, каччи те тупăнĕ-ха, çирĕм урлă çеç каçнă-çке мăнукĕ. Çапла кулленех сăн кĕрсе пычĕ Силемпие, вăл чăмăрланса, яштакаланса, вĕрсе тултарнă пек хитреленсе кайрĕ, куçĕ яш чухнехи пек хĕм сапа пуçларĕ. Питне çеç мар, çӳçне те çĕнĕ тĕс, пурнăç тĕсĕ, çапрĕ пек. Силемпи халь шалти çутăпа çуталса темле юмахри пике пек курăнать.

Çурхи кунсем çу кунĕсемпе ылмашăнчĕç. Хĕрсем хире вир çумлама çӳреççĕ. Ял çине Акташ вилнĕ текен хыпар сарăлнăранпа, тăватă çул хушши ĕнтĕ, Кладовщик Павăл Ульки Силемпипе каллех туслă. Унченхиллех уçă кăмăллă кӳршĕ хĕрĕ, ним ыйтмасăрах тем тĕрлĕ çĕн хыпар та, темле вăрттăн япала та каласа кăтартать. Хуйхи-суйхине вăл та çамрăклах самай тӳсрĕ ĕнтĕ — вăрçăран ашшĕ таврăнмарĕ, сывлăхсăра кайнă амăшне пула, çуртри хĕрарăм ĕçне те, арçын ĕçне те хăйĕн тума тӳр килет. Çуртрине кăна-и, колхозрине те. Хытă аврĕ Улькана та вăрçă вăхăчĕ, анчах Улька авăнмарĕ, хуçăлса ӳкмерĕ, пурнăçĕ мĕн чуль йывăртарах, çавăн чуль çирĕпленсе, тĕрекленсе пычĕ. Ун патне ик-виç хут та хăтана çитрĕç ĕнтĕ, унччен тахçан такам тиркенĕ тесе тăмарĕç, пĕрре тата чут çеç вăрласа каймарĕç, анчах та вăрлама пыраканĕсем, салтака та кайма ĕлкĕреймен йĕпе сăмсасем, виççĕнлетсе те Улькана трантас çине йăтса çапайман, Улька пурне те чыша-чыша йăвантарнă, лешсене юнаса:

— Мирун пиччĕр, салтакран таврăнсан, кăтартать-ха сире хĕр мĕнле вăрламаллине, куç умĕнчен мар, ялтан çухалăр, ахаллĕн пĕтрĕр, — тесе хăратнă.

Мирунĕ чăнах та таврăнмалла, тет, ĕнтĕ, тахçанах сывалнă, тет, Свердловскри госпитальре темиçе çул сывалса выртнă. Урине малтанах касмалла тенĕ, темле нерва татăлнă, тет-и, ӳчĕ те çĕре пуçланă, кайран тепле майпа татмасăр хăварнă — пĕлме çук. Халĕ сулахай ури виçĕ сантиметр кĕскерех, тет, пачах та хуçланмасăр юпа пек хытса тăрать имĕш. Госпиталь хыççăн, яла çара çерçи пек нимсĕр килсе кĕрессрен, пĕр организацинче снабжени пайĕнче ĕçленĕ. Самаях тупраллă, тет, халь, пысăк хитре купăс, баян, туяннă, çипуçне майлаштарнă, велосипедпа çĕвĕ машини таранах йӳнеçтернĕ, тет. Тупраллă килет иккен яла Михетер Мирунĕ, вилме кайса

пуйса килет... Çакна пĕтĕмпех Силемпие Улька каласа пачĕ. Савăнăçне ниçта чикеймест Улька, анчах вăхăчĕпе кулянать те — вăрçа кайнăранпа тăватă çул хушшинче пурĕ те тăватă çыру çеç ячĕ, тет, Мирунĕ.

— Ан кулян, Улька, — лăплантарчĕ кӳршĕ хĕрне Силемпи, — часах килсе çитет акă. Курнăçăр, пĕр-пĕрне унччен-хинчен те ытларах юратса пăрахăр. Ман çунтараканни çеç темшĕн яланлăхах таврăнасшăн мар-ха, çур çĕр тĕлĕнче килет те ним сăмах чĕнмесĕр кăвак çутăччен çӳрет, вара укăлчаран таçта мура кайса çухалать.

Силемпи сăмахне Улька хăй пек ăнланчĕ:

— Çапла-а, — терĕ вăл тăсарах, шăппăн, — кашни каçах курнаççĕ вĕсем, хăйсем вара тăххăр выртса пĕрре те тĕлленмеççĕ пуль пирĕн çинчен. Ертсе килĕ, акă, пĕр-пĕр майра. Пур Михетер Мирунĕн ун пек çăмăлттайла йăли. Астăван пуль?

— Астăватăп-ха... Епле астуман.

Каласкаласа тăнă май икĕ тантăш сисмен те, хĕвел уйра пĕччен тăракан лапсăркка юман хыçне пытанма хăтланать, пытансан вара сăрт хыçне каясси те инçе мар унăн. Хĕрсем, юлташĕсем ялалла аннине пăхса, хыпăнса ӳкрĕç, чĕресе юлнă ăшăнса кайнă шыва пĕрер çăвар сыпса, ыттине çĕре тăкрĕç. Яла кĕреспе Улька тӳррĕн кайрĕ, Силемпи, тахçантанпах Акташ амăшне кĕрсе курманскер, тавраран утрĕ, карчăка мĕнле те пулин пулăшу кирлĕ мар-и тесе, пĕчĕк те лапчăк пӳрт патнелле тӳрĕлесе пычĕ. Акташсен пӳрчĕ, унчченех кивелсе çитнĕскер, халĕ татах пусăрăннă, тăрринче тĕл-тĕл улăмĕ сĕвеленнĕ те, çумăр çусан çумăр шывĕ витĕрех шапăртатса анать пулĕ. Çĕрнĕ улăм çине унта-кунта мăян шăтса ларнă. Пĕчĕк чӳречисене тахçантанпах шыв сапса юхтарман, тасатман, тусанлă кантăк витĕр анакан хĕвел çути аран-аран кĕрет. Вĕрлĕк хапха лăштăрах ишĕлсе аннă, курăк пуснă килкартинче пĕр кĕтӳ хур какăлтатать, такам пăрăвĕпе виçĕ качака çӳрет. Карчăк, куçĕ курманскер, хăлхи илтменскер, килкарти тулли выльăха та асăрхамасть куран, çавăнпах пуль, килекен çынна хирĕç те тухмасть. Ыр çын килĕ те кайĕ, усалли килсе те кĕрес çук: кама мĕн тунă суккăр Тарье, камăнне мĕн илнĕ? Ăна та никам ним парăмлă мар, вăл та никама та нимĕн памалла мар. Никама та кĕтмест суккăр Тарье, никамран та хăрамасть те. Кĕтме кĕтет-ха вăл... Акташ таврăнасса кĕтет, вăхăчĕ-вăхăчĕпе Силемпи халĕсене пĕлесшĕн вăл, пулас кинĕн

сывлăхĕ начаррине илтнĕччĕ те, çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупмарĕ карчăк, Силемпишĕн пăшăрханчĕ. «Эх, хĕрĕм, хĕрĕм, — тенĕччĕ пĕррехинче, Силемпи хăй патне кĕрсен, — ытах ан ăшталан-ха, тен, плина лекнĕ пуль, тен, урăх çĕрте. Тур майне парсан, чиперех çаврăнса килĕ-ха. Салтак ачисене леçме каякан лаши те ун чух сылтăмран тапранчĕ, укçи те... Çăкăр сăмси те кĕтет авă турăш хыçĕнче — миçе çул выртрĕ, кăвакарман та теççĕ. Çук, çук, вилмен Михайла, чун сисет... Плинрах пуль, çичĕ ют аллинче авкаланать пуль, чĕрĕлле тирне сĕвеççĕ пуль? Эх-ах-хах... Ырă турă... Пӳлĕх...»

Силемпи самайланнине пĕлсен, Тарье хытă савăнчĕ, туйипе таклаттарса урам урлă та каçакан пулчĕ. Паян ăçта-ши тата, курăнмасть?.. Силемпи, пӳрте кĕриччен, килкартине тирпейлеме шутларĕ: чи малтан выльăх-чĕрлĕхе урама хăваласа кăларчĕ, унтан çил хапхана тăратса лартса кирлĕ çĕре пăта тупса çапрĕ, тăпсине, хăпăнса кайнăскерне, лайăх шаккаса вырнаçтарчĕ, кивĕ пралука авса ункăларĕ те хапхана выльăх хирсе уçмалла мар туса çаклатса хучĕ. Кивĕ пусма тупса пӳрт маччине улăхрĕ, унта темиçе хуппа хăма татăкĕсем упранса юлнă иккен — пӳрт тăррине майлаштарчĕ. Лупас айне кайса пăхрĕ те карчăкăн вут-шанки пĕтĕмпех пĕтсе çитнине асăрхарĕ. Икĕ кустăрмаллă кивĕ урапана туртса тухса хăрăк турат пуçтарма ял çумĕнчи ращана хăпарчĕ. Хăрăк турачĕ кунта тем чухлех, шала та кĕмелле мар — часах тиесе хучĕ.

Вут-шанкă туртса анаканскерне суккăр Тарье хапха умĕнче кĕтсе илчĕ. Хапхине те уçса хунă хăй, ăçтан вăй çитернĕ, мăнтарăн. Кинемей сĕм-суккăрах мар пулас, хăрах куçĕ çын мĕлкине палăртать, ывăç тупанĕ айĕнчен тĕмсĕлсе пăхсан.

— И-и, — терĕ карчăк Силемпи хапха умне çитсе килкартинелле кĕнĕ чух, — каларăм çав кин кĕретех паян тесе, тĕлĕкне те курнă. Михайлапа утă çулатăр пек, калатăп çав... Хапхана та юсанă, çаклатсах хăварнă, урапа та çухалнă... Калатăп çав урапам вăрманалла çул тытнă тесе — хăрăк турат пуçтарма. Мĕн тăвас тен, тăлăх турата та хăрăк турат кирлĕ çав, чуна ăшăтма, ват шăмшакка ăшăтма. Мĕн-и, кин, тертленсе пĕтмерĕн-и? Хам пенççи, Михайлашăн параканнине, илме кайрăм. Илес темесен те вăйпах параççĕ — Михайлана укçалла сутнă пекех капла... Илме те йĕрĕнмелле...

— Ил эс пурпĕрех. Ăна сана патшалăх парать, Михайла çухалнăшăн... Ай, мĕн терĕм эп? Çухалман-çке Михайла, аюк...

Тен, вăл пĕр маншăн çеç çухалман? Эх, кăтартасчĕ ăна пĕтĕм ял умне кăларса. Тепĕр вырсарни каç килĕ-ши вăл? Мĕн терĕм эп? Э-э, ил эс пурпĕрех, параççĕ пулсан, укçа-тенкĕ пурри кансĕрлемĕ вăл...

Силемпи хăйпе хăй калаçса тăнине карчăк илтеймерĕ: «Эп кĕрем-ха, улма çакам хурана», — тесе, пӳртелле кăштăртатрĕ. Карчăк алăк хыçне çухалсан, Силемпи хăрăк турата пушатрĕ те пусма умĕнче выртакан катăк пуртта ярса тытрĕ, пĕр çĕклем кăвайт туса пӳрте илсе кĕчĕ. Карчăк ăна улма пиçмесĕр ярасшăн та марччĕ, Силемпи, килĕнче те ĕç нумайййине астуса, васкасах тухса кайрĕ: «Вăхăт пулсан татах кĕрĕп», — терĕ. Карчăк темле кăмăлсăрланса, пусăрăнса юлчĕ. Тĕрĕссипе, хĕр килĕнче ĕç нумайран та мар, кашни вырсарни каçах çĕрле хăй патне кĕрекен Акташ ватă амăшĕ патне пĕрре те кĕменшĕн тарăхса, хăй тарăхнине карчăка систерес мар тесе, тухса утрĕ.

Хĕвел çĕр хыçнелле кайса пыратчĕ ĕнтĕ. Хытă пăлханнипе, тулта сулхăнлатнă пулин те, Силемпие ăшă пулчĕ, пичĕ тăрăх унăн икĕ шултра тар пĕрчи юхса анчĕ. Питне çуса чунне уçăлтарас шутпа хĕр тӳрех килне кĕмерĕ, çырма хĕрнелле çул тытрĕ.

Çыранта, ытти çулсенчи пекех, кĕпе çума меллĕ вырăнта, каçма пеккисем пур. Ăшăх шыва шалçасем çапнă та çиелтен урлашкасемпе çирĕплетсе вĕсем çине хăмасем хунă. Хăшпĕр «каçмасем» шывалла чылай шала кĕреççĕ, темиçе сыпăкран тăраççĕ. Кăнтăрла кунта кĕпе çума килнĕ амăшĕсем патĕнче кунĕпех ача-пăча хĕвĕшет. Пĕчĕкреххисем шыва кĕме хăраса каçма çине лараççĕ те тяпписене шыва чиксе, ăна акăшмакăш пăлхатса, кĕпе çăвакансене тарăхтараççĕ, аслăраххисем каçма çинченех шыва чăмаççĕ.

Лăпкă та ăшă июнь каçĕ. Пĕве те, çанталăк та тăп тăрать. Хĕвел аннă ĕнтĕ, тавралăх тĕттĕмленет. Таçта, хăвалăхра пуль-и, кăвакал нартлатать, шывра шапа кăрăлтата-кăрăлтата илет. Чим... Хăçан çапла пулнăччĕ-ха? Ытла та палланă, теме аса илтерекен самант. Силемпин кӳтсе çитнĕ чунĕ кăртах турĕ: ах, мĕн тери ырă та манăçми самант — тăватă çул каялла, çакăн пек пĕр уйăхлă та ăшă каç пулса иртнĕччĕ çав ĕç, Акташ пирвайхи хут чуптунăччĕ Силемпие! Пурте пĕтĕмпех куç умне тухса тăчĕ. Хĕр чĕри тутлăн ыратса кайрĕ, çав иртнĕ телейлĕ вăхăт пĕртте иртмен пек, халь тесен халь каялла килес пек туйăнчĕ ăна.

Унчченхи пекех, уйăх тӳперен пĕве ҫине шăрантарса пăхать. Ним хускалми тăракан шыв тĕкĕрĕ Силемпи пит ҫунă чух ванчĕ те, унта уйăх та арканса кайрĕ — йăлтах унчченхи пек! Тĕлĕнмелле! Уйăхăн вуншар ылтăн катăкĕ йăлтăраса выляма пуҫларĕ. Ҫав вăйăа сăнаса тăнă хушăра каҫма та сулланма тытăнчĕ пек, хытăрах та хытăрах ярăнать вăл, хĕре шалалла, пĕве варнелле туртса кĕрет — ҫапла туйăнать Силемпие. Силемпи ӳсĕрĕлсе кайнă пек пулчĕ, пуҫĕ ҫавăрăна пуҫларĕ, пĕтĕм кĕлетки ҫӳҫенсе чĕтĕресе илчĕ. Пăлханчăк та шиклĕ чунпа, шăп та лăп тăватă ҫул каялла пулса иртнĕ пек, тӳпе хĕрринелле пăхрĕ те чут ҫеҫ ӳкмерĕ. Шăлне ҫыртса, куҫне хупса, вăл ура ҫинче аран тытăнса юлчĕ. Ҫав вăхăтра, тен, тĕшĕрĕлсе те анатчĕ-и, такамăн ҫирĕп алли тытса ĕлкĕрчĕ, ӳкме памарĕ... Ах, пурнăҫ, пурнăҫ... Нивушлĕ сана каялла тавăрма пулать, нивушлĕ чи телейлĕ ырă самантсем иртмесĕр пĕр вырăнта тăпăртатса тăраҫҫĕ е эпир хушсанах таҫти аякри ҫĕрсенчен калле килсе пире ҫын чăтайми ырлăх кăтартаҫҫĕ?! Силемпи пĕр сăмах ҫеҫ пăшăлтатма пултарчĕ: «Акташ...» Вăл ҫывхарнине пĕртте туймарĕ, анчах кам пырса тытнине тӳрех ăнланчĕ — Акташ. Кам пултăр-ха урăх тата? Ăна, пĕр ăна ҫеҫ чун пек кĕтет хĕр миҫе кун хушши, миҫе эрне хушши, миҫе ҫул хушши?! Чим-ха, мĕнле-ха апла, паян шăматкаҫ ҫеҫ вĕтха, вырсарни каҫ мар, ытла ир ҫитрĕ мар-и Акташ, пĕр кун малтан ҫитрĕ? Тен, яланлăхах?

Силемпи куҫне халĕ те, тăватă ҫул каялли пекех, тӳрех уҫмарĕ, вăл темле сасартăк ҫемҫелсе, йăвашланса кайрĕ, ҫирĕп алăсен ытамне хуллен кĕрсе ӳкрĕ. Тути, ҫурма уҫăскер, «Акташ» тесех пăшăлтатрĕ, пĕҫерсе ҫунма тапратрĕ, ҫăварĕ типрĕ. Халтан кайнăскер, Силемпи сăмахне татах каласшăн, калас тет, калаймасть, тути пăсăлать, куҫҫулĕ шăпăрах юхса анать пичĕ тăрăх. Пĕр япалана ҫеҫ туять хĕр — талтлатса тапакан тăнлав ҫывăхĕнче качча хĕрӳн сывланине. Качча янахĕ хĕрĕн питне перĕнет. Урăх ним туймасть, курмасть, илтмест ҫак самантра Силемпи хĕрӳ ытамра. Тĕнчере иккĕн ҫеҫ — Силемпи те Акташ... Силемпие ӳкесрен пырса тытаканĕ те, антраса кайнă тейĕн, «Силемпи» тенинчен урăх нимех те калаймасть. Сывлăш ҫавăрса ярсан тин: «Ылтăнăм, — терĕ, хĕвелĕм, ĕмĕр сӳнми ҫутă ҫăлтăрăм...» Хăй яка тумланнă, хула костюмĕпе, шурă кĕпепе, галстукпа. Ҫӳҫне те хулалла кастарнă. «Тăватă ҫул ĕмĕтлентĕм, вутлă тăвăл витĕр, чĕрĕ тамăк витĕр тухса,

пиншер ҫухрӑмран ыткӑнса килтӗм, саншӑн тӗнчере ним те шеллемерӗм... пул манӑн, Силемпи, ман эс Акташа, вилнӗ вӑл таҳҫанах, хальччен ҫӗрсе те кайнӑ ӗнтӗ ҫӗр айӗнче. «Акташ» тесе ан ҫунтар ман чуна, Акташ мар эпӗ, Мирун...»

Пӗлӗт татки хыҫне пытаннӑ уйӑх каллех сиксе тухрӗ те тавралӑха ҫутатса ячӗ. Силемпие тӑн килсе кӗнӗ пек пулчӗ — хӑлха патӗнчех темле ют сас мӑкӑртатать. Халӗ ҫеҫ кунтаччӗ Акташ, ӑҫта кайса ҫухалчӗ вӑл? Кам ку ӑна ҫупӑрласа тӑраканни? Мирун? Мӗнле Мирун? Мӗн сӳпӗлтетет вӑл? Акташ халӗ ҫеҫ кунтаччӗ, ку вара, Мирун текенни, Акташа манма хушать... Тинкеререх пӑхрӗ те Силемпи, чунӗ тухасла хаяррӑн ахлатса ячӗ:

— Чунилли! Эсӗ вӗлернӗ Акташа! Ӑҫта Акташ? Хӑп ман ҫумран, шуйттан эсӗ, мӑйракалли! Кашни вырсарни каҫ килетчӗ ман пата, паян шӑматкун килчӗ те, эсӗ ӑна хӑваласа ятӑн, вӗлертӗн пулмалла! Ах, ах! Вилетӗп пулмалла, хӑтарӑр!

Силемпи Мирун ытамӗнчен хӑпӑл-хапӑл вӗҫерӗнчӗ те ҫӳҫне-пуҫне тустарса ҫӳллӗ ҫыраналла чупрӗ. Вӑхӑтра тытса чарса пусса выртмасан мӗн пулса тухасса ӑнланнӑ Мирун хӗр хыççӑн чупрӗ.

— Каҫар сасартӑк пырса тухса хӑратнӑшӑн, — терӗ вӑл хӗре хуса ҫитсе, — тархасшӑн каҫар. Киле тин таврӑнатӑп-ха эп, сана асӑрхарӑм та пӗве урлӑ каҫнӑ чух хыҫалтан систермесӗр пырса куҫна хуплас тенӗччӗ — кам хупланине пӗлейӗши, ҫук-ши, терӗм. Пӗлнӗ пулсан ак ҫак пурҫӑн тутӑра мӑю ҫине уртсах ярӑп, тенӗччӗ.

Мирун пиншак кӗсйинчен шурӑ пурҫӑн тутӑр кӑларса хӗр мӑйӗнчен уртса ячӗ. Силемпи сиксе чӗтрет, Мирун ҫывхармассерен кӑшкӑра-кӑшкӑра ярать:

— Кай, ан ҫывхар, тӗсне курассӑм килмест, кала, ӑҫта хутӑн Акташа?

— Хӑҫан? Ӑҫта?

— Халь. Халь ҫеҫ кунтаччӗ Акташ. Е эсӗ Акташ пулса килтӗн-и ман пата? Тен, вырсарни каҫсенче те, кукамайпа кукаҫей Чистая кӗлле кайсан, эсӗ ман пата Акташ пулса пытӑн? Кала, эсрел, ман чуна илесшӗн пуль эсӗ?

— Чим, тӑнла-ха, мӗн шӳтлешен? Тин ҫеҫ таврӑнатӑп-ҫке эпӗ, Свердловскран таврӑнатӑп, госпиталь хыççӑн. Акташ вӑл вилчӗ, бомба айне лексе вилчӗ, тӑватӑ ҫул каялла, эпӗ те чут ҫеҫ сывӑ юлтӑм, аманса тӑнран кайнӑскерне юлташсем вилӗм

хирĕнчен çĕклесе тухнă. Эсĕ упрарăн, пирĕшти пек, мана, Силемпи, сан пата çитес тесе тăватă çул ĕмĕтлентĕм эпĕ, тинех çитрĕм, эсĕ вара мана чунилли, çын вĕлерекен тесе ятласа кĕтсе илетĕн. Лайăх ачаччĕ Акташ, анчах та вăл тахçанах вилнĕ, хам алăпа хам çĕр айне пытарса хăвартăм; мĕн тăвас тен, вăрçă. Эпĕ те чут çеç вилеттĕм, юлташсем хăтарчĕç.

— Хă... вилеттĕн... Ма вилмерĕн?! Ма вилмерĕн?! Ăçта Акташ, кала! Вилмен Акташ, ыран каç килет, эсĕ вара вилнĕ... Фу-у! Мĕн ку? Шăршлă тунката... Йăтă вилли, — Силемпи сасартăк каллех урса кайрĕ: — Шуйттан! Çухал куç умĕнчен, çухал! — сасартăк хĕрӳн Мирун çине хĕрес хура пуçларĕ. — Эй, ырă турă, хăтар, эй, ырă турă, хăтар...

Сехри хăпнă Мирунăн çӳçĕ чăшăлах вирелле тăчĕ. Илтнĕччĕ вăл Силемпи пĕр вăхăтра питĕ чирлĕ тенине, анчах мĕнле чирпе чирлине пĕлмен. Нивушлĕ... пуçпа асапланать?.. Çапла шухăшласа тăнă самантра Силемпи ăна çӳçрен çавăрса илчĕ те тăпăлтарма пуçларĕ. Аран-аран хăтăлса, урнă хĕр еннелле лачлаттарса сурчĕ те сăртарах лартса хăварнă чăматанĕпе плащĕ еннелле уксахласа утрĕ. Сулахай ури чăнах та виçĕ сантиметр кĕскерех пулас, Мирун питĕ нушаланса утать, тата пĕр чĕркуççийĕ пачах та хуçланмасть. Çавăнпа та Мируна пушшех утма кансĕр. «Мĕнех, — терĕ Мирун сăрталла васкамасăр утнă май, — пулать пурнан пурнăçра: пирĕшти патне утатăп тесе вуншар çул утатăн та анкă-минкĕ ашапатман-тухатмăш патне пырса тухатăн. Эпĕ ăна тӳпери чи çутă çăлтăр, чĕрери нихçан сӳнми хĕвел тенĕ, вăл вара ăсран тайăлнă киревсĕр хĕрарăм çеç иккен. Эпĕ пур пĕр уншăн вилĕмрен çăлăнса тухрăм, вăл мана чунилли, çын вĕлерекен тесе хăй патĕнчен хăвалать. Тавтапуç. Тьфу! Ытла та йĕрĕнмелле. Çапах та, мĕнле-ши Улька? Улька, мĕнле пурнатăн, ылтăнăм, кĕтсе ил мана, эпĕ çитрĕм, тусăм...»

Мирун хыçалалла тепре çаврăнса пăхрĕ, тепре лачлаттарса сурчĕ. Силемпи темĕн мăкăртатса çӳллĕ çыран еннелле утрĕ. «Пĕтин пĕттĕр, кама кирлĕ çав тухатмăш карчăкĕ», — шухăшларĕ Михетер Мирунĕ плащне тăхăнса чăматанне çĕкленĕ май. Улька сăнарĕ ун умне уççăнрах та уççăнрах тухса пычĕ...

Тепĕр кун ял çине «Чикан Силемпине вĕри çĕлен ернĕ» текен усал хыпар сарăлчĕ. Силемпине ял çумĕнчи катаран тытса таврăнса больницăна çыхса-пăрахсах илсе кайрĕç: «Атя киле, вăрманта каçа хирĕç мĕн туса çӳрен?» — тенĕ, тет,

тытма каякансем. «Часах Акташ килмелле, çавна тĕл пулса илме килтĕм», — тавăрать, тет, лешĕ. «Вăл таврăнчĕ ĕнтĕ, сирĕн патра ларать», — тесен çеç килме килĕшрĕ, тет, килне. Пырса çитсен пăхать — Акташ та, никам та çук килĕнче. Урсах кайнă Силемпи. Вара çыхса пăрахнă мăнтарăна. Хĕре хулана ăсатсан, стариксем пухăнса пӳртĕнче виçĕ хутчен пăшал печĕç, тет, — вĕри çĕлене хăратма ĕнтĕ, текех ан çулăхтăр мĕскĕн тăлăха, сывалтăр Силемпи, çын кулли ан пултăр — чипер хĕрччĕ, мĕн каламалли, кăмăлĕ те ытла та аванччĕ. Кама усал тунă вăл ял çинче? Никама та. Мĕн тери юратнă иккен шеремет Акташне — ăсĕ пăтрашакан пуличчен кĕтнĕ ăна... Эх, вăрçи... Мĕн тери ырă ачасем çап-çамрăклах пуçĕсене хучĕç. Ылханлă вăрçă, ылханлă Гитлер, акă кам чăн-чăн çынçиен! Харам пулчĕ ытармалла мар йĕкĕт Акташ, харам пулчĕ пĕр кашăк шывпа çăтса ямалла чипер сарпике Силемпи. Çапла шутларĕç ялти сумлă çынсем вăхăтсăр сӳннĕ икĕ çамрăк чун пирки. Пăшăрханчĕ халăх чунĕ, ыратрĕ. Мирун çеç ним чухлĕ те кулянмарĕ, Улькана кăнтăрлах ял урамĕпе хулĕнчен çавăтса çӳре пуçларĕ.

Тепĕр эрнерен вĕсем пĕрлешрĕç... Тĕлĕнмелле-и? Мĕн тĕлĕнмелли: çапла ĕнтĕ вăл сутăнчăк тени — юратушăн тесе тăван çĕрне сутать, юратăвĕ вара унăн шăршлă шыв кӳленчĕкĕ пек ăшăх. Хăй тирĕ çеç ăна пуринчен те хаклă, хăй тирĕ тата ырлăхĕпе киленĕвĕ. Мĕн тума кирлĕ ăна ăсран тайăлнă Силемпи, саппасра муллă, мăнтăркка, вăйпитти, хăйне чунран парăннă Улька пур чух?! Тĕнчере чи хакли савни те, амăш те, Тăван çĕр те мар, вăл хăй çеç, — Михетер Мирунĕ...

5. Акташ

Света! Малтанах эп повеçе çакăнпа вĕçлесшĕччĕ. Çакăнпа вĕçлесен те мана вулакан темех ӳпкелеймен пулĕччĕ: мĕнех вара, пулать вăл ун пекки йывăр вăхăтсенче — çын тӳсеттӳсет те, чăтать-чăтать те, юлашкинчен е чун хавалĕ пĕтсе çитет, е организмĕ этем йăтайми çав йывăр çĕклеме текех çĕклейми пулать. Силемпи, мĕн ачаран çав тери сисĕмлĕтуйăмлăскер, ытла та пурне те чĕри патне çывăха илекенскер, туйăмпа шухăш хăватне, шалти вута чăтса ирттереймесĕр чирлесе каять. Сахал пулнă-и пурнăçра çакăн пек тĕслĕхсем? Сахал мар. Ĕлĕк авал та, хальрех те. «Вĕри çĕлен ернĕ» тенисене

эпир мĕн ачаран илтнĕ. Ĕлĕкхи тĕттĕм халăх çав чире тĕшмĕш япалипе çыхăнтарнă, эпир вара халĕ аван пĕлетпĕр: тĕнчере нимле «вĕри çĕлен» те çук, ку — нерв системи, пуç, чун чирĕ. Çав чиртен ĕлĕк пуртех тенĕ пек вилнĕ, халĕ çав амакран сыватаççĕ. Ĕлĕк те сывалнă тĕслĕхсем пулнă: йăлтах этемĕн организмĕнчен тата пурнан пурнăçран, ĕç-хĕлтен, килет. Мĕнле çавăрăнса каять пурнăç: калама çук йывăр хуйхă вырăнне тĕлĕнмелле пысăк савăнăç килсе хупласан, сăмахран, çын сасартăк сывалать. Этеме кĕтрет хĕвелĕ çупăрласан, каласа ĕненмелле мар, куçпа курсан çеç, хăлхапа илтсен çеç ĕненмелле тĕлĕнтермĕш килсе çапсан, этем пĕтнĕ çĕртен пурнăçа таврăнать.

Çавăн пекки те пулать пурнăçра. Эпĕ, Михетер Мирунĕпе Улька ывăлĕ, шантарсах калатăп сана çакна. Каллех калатăп, повеçе эпĕ Силемпие больницăна ăсатнипе вĕçлесшĕнччĕ. Пессимистла вĕçленет, тесшĕн-и? Çук-çке: Силемпи юлашки самантченех ĕненме пăрахмарĕ Акташ таврăнасса. Амăшĕ вара, суккăр Тарье, амăшĕ... Акташ вилнĕ ĕнтĕ, текех нихçан та таврăнмасть текене куçран лачлаттарса сурма, пырне кăшласа татма хатĕр. Кăмăлĕ çапларах унăн. Аслă ĕненӳ! Вилĕмсĕр ĕненӳ! Хĕвеллĕ ĕненӳ! Мĕн калайĕ мана вулакан? Нимĕн те. Повеçĕн теми те, тĕп теми, çавă: Ĕненӳ, Шанчăк. Вулакан нимĕн те калаймĕ, анчах эсĕ, Света... Эсĕ, Акташпа Силемпин кĕçĕн хĕрĕ, повеçе çапла вĕçленĕшĕн мана ĕмĕрне те каçарас çук: мĕншĕн тесен Силемпи аппа халĕ те сып-сывах, Акташ, Михайла тете, чĕп-чĕрех. Аннӳ больницăран, аçу вилĕм шăтăкĕнчен тахçанах тăрса тухнă.

Света! Ман повесть мистикăлла произведени мар, халапюмах маррине те аванах куратăн, фантастика та мар, анчах та вăл питĕ чăтăмлăн кĕтме, çав тери тарăннăн ĕненме тархаслакан произведени. Аçупа аннӳ пек пул, повеçре çырса кăтартнă хăшпĕр типсем пек ан пул. Чăтăмлă пул, тӳсемлĕ пул. Çак пĕтĕм историе, паллах, эс çиелтен ĕлĕк те темиçе те илтнĕ пулĕ, анчах ман пек тарăннăн сана ăна никам та каласа паман, мĕншĕн тесен эпĕ ăна илемлетсе, хăшпĕр пулман япаланах пулнă пек туса, каласа патăм. Сăмахран, Михетер Мирунĕ çапăçу хирĕнче хăйне хăй пенине, вăлах Акташа персе пăрахма хăтланнине тата ыттине те. Акташпа Силемпи çинчен çырни вара пĕтĕмпех тĕрĕс. Света, савнă тусăм, мухтанма тивĕç эсĕ вĕсемпе. Тĕлĕнмелле таса та çутă, çирĕп чунсем вĕсем.

...Пирĕн çарсем Тухăçалла чакса кайнă хыççăн, çапăçу хирĕ, Михетер Мирунĕ хĕрĕх пĕрмĕш çулхи çулла хăтăлса тухнă хир, калама çук шăп пулса тăчĕ, унта тăшманăн танкĕсем те, пехоти те чарăнма шутламарĕç, пултарнă таран малалла талпăнчĕç. Тепĕр каç та анăç вут хыпса илнĕ пек чӳхенчĕ, ялкăшрĕ. Çĕр хĕрринче «пушар» çăра хĕрлĕ, юнпа пĕвеннĕ тĕслĕ, çӳлерех тĕс шĕвелет, çепĕç, таса, сарăрах та симĕсрех — ĕнер каç мĕнле пулнă, халь те çаплах.

Тавра шăп, питĕрех те шăп. Пăшал-пулемет сасси е аманнисем ахлатни мар, кураксемпе çăхансем карлатни те пулин илтĕнмест: юлташĕсене чиперех тирпейлесе пытарма ĕлкĕрнĕ пулас совет салтакĕсем. Хĕрлĕ анăç хуралнăçем хуралса пырать. Хĕп-хĕрлĕ тӳпе хĕррине çĕр сăхса тăрать, тейĕн. Вилнĕ салтаксем курмаççĕ ĕнтĕ çав анăça, ыран ирпе хĕвел çĕкленессе те пĕлеймеççĕ вĕсем. Хĕвел те, тӳпе те, кун та, çĕр те вĕсемшĕн ним те мар текех.

Умрах — армути уйĕ, кунтарах — автан хӳри пек сарăлса та авăнса тăракан кăкăр çӳллĕш курăк ашкăрса ларать. Çав курăк та, армути те тарăн шухăша путнă, пуçĕсене усса каç шăплăхне итлеççĕ. Чавса, çĕмĕрсе, аркатса пĕтернĕ хире каллех каç тĕттĕмĕ хупласа илчĕ. Тĕттĕмпе пĕрле шăплăх та ӳсрĕ. Шăплăх... Унпа пĕрле ху чĕррине пĕлтерекен туйăм, ĕмĕрех чĕрĕ пуласса калакан туйăм килинех. Ун чух пĕтĕм кĕлеткӳпе каçăрăлса утса çӳрĕттĕн, пытанма шутламăттăн та. Тĕттĕм, никам та, ним те курăнмасть. ырлăх — чĕрĕ те сывă пуласси. Анчах... кам патне килтĕр вăл çав туйăм вилнисем пурте нӳрлĕ çĕр айĕнче выртаççĕ пулсан?..

Çăлтăрсем çунаççĕ. Аялтах, шултраскерсем, темле тăмаланчăкскерсем. Çутă çăлтăрсем. Армути хушшинчен вăрăм хăлхаллă пĕчĕк чĕрчун йăпшăнса тухрĕ. Кашни тăпра муклашкине, курăк тунине шăршласа пăхать, тĕмерен тĕмене сиксе окоп брустверĕ çине хăпарсан, хăлхисене чанках тăратрĕ. Мулкач. Кайри урисем çине ларчĕ те малти тяпписемпе питне çума пуçларĕ: савăнăç — çапах та, чĕрĕ вĕт-ха, чĕрĕ! Кунĕпе хĕрсе çитнĕ çĕртен ăшă çапать. Çăлтăрсем пĕрнепĕри куç хĕсеççĕ. Ырă кăмăллăн, темле вăрттăн япала пĕлнĕ пек, хăйсен шухăшне часрах мулкача уçса парасшăн пек йăлтăраççĕ. «Нимех те мар, çăлтăр çăлтăрах ĕнтĕ, мĕн тĕлĕнмелли пур?» — тенĕн пăхса илет те кĕске хӳре çăвать те çăвать тяпписемпе питне. Вилнĕ салтаксемшĕн вара эсир,

çăлтăрсем, сӳнтĕр, — çук эсир, пачах çук, пĕтĕм çут тĕнче çук пекех çук.

Анăçри хĕп-хĕрлĕ хĕрнĕ тӳпе хĕррине çĕр çăтса пĕтерсен, сасартăк çил тухрĕ: автан хӳри пек сарăлса та авăнса тăракан кăкăр çӳллĕш курăк канăçсăррăн хускалса илчĕ. Çиле армутисем те туйрĕç. Тӳпере çăлтăрсем пĕрин хыççăн тепри çухалма тытăнчĕç: пĕлĕтсем туртăна пуçларĕç иккен, хĕвел ахальтен мар çапла хĕрелсе анчĕ, халĕ, акă, çил тухрĕ. Çилĕ ăшă та нӳрĕскер — çумăра пулмалла. Çанталăк пăсăлать. Çумăр пуласса çĕр хурчĕсем те сисеççĕ. Унта та кунта ăман йăшалана пуçларĕ. Кĕске хӳре пит çуса ларнă бруствер çинчен аяла ансан, окопа лекетĕн, окоп тĕпĕпе те ăман шăвать. Çанталăк улшăнасса вăл та туять-шим? Шурĕ-шурĕ те, пĕччен шума кичемрен пуль-и, окоп тĕпĕнчи тĕмене шăтарса кĕчĕ, юлташне шыраса вăл тăпра айĕнче выртакан вилĕ салтакăн хĕвнех кĕрсе кайрĕ. Салтак ӳчĕ ăманнăни пекех сивĕ, тăпра унтан нумай ăшăрах. Хĕврен тухса пит çийĕпе шунă чух тусне тĕл пулчĕ те, çамка çинче канма чарăнчĕç. Çав вăхăтра çӳлте çил вăйлăланчĕ, тӳпене йăлтах çумăр пĕлĕчĕсем карса илнĕ, пĕр çăлтăр та курăнмасть. Часах çумăр чашлаттарса ячĕ. Вăл, вăйланнăçем вăйланса, шăннипе тăр-тăр! чĕтрекен мулкача окоп тĕпне хăваласа кĕртрĕ: кунта, çумăрĕ çапсах çăвать пулин те, çил лекмест, самаях хӳтĕ. Сайкка шăнса кӳтрĕ. Çумăр вĕççĕр тăкнă май, окопа шыв тула пуçларĕ. Йĕпене юратман кĕске хӳре ирĕкĕлле тапса сикесшĕнччĕ, пултараймарĕ, йăнăш енне сиксе çӳллĕ çĕре лекрĕ те яка тăм çийĕпе окопа каялла шуса анчĕ. Виле тĕмески çине ӳксе, сехри хăпнипе ниçта кайса кĕрейми чĕтре пуçларĕ. Ăмансем, çамка çинчен шуса анса, çиеле тухрĕç. Тĕмеске хускалса илнĕ пек пулчĕ. Мулкач çакна сиссе окопран тухса тарчĕ те çумăр витĕр армути пуссинелле çиçĕм пек вĕçтерчĕ. Çав хушăра окоп тĕпĕ каллех хускалса илчĕ, тĕттĕмре шывпа тăм пылчăкĕ ăшĕнчен хура мĕлке ĕселенсе тухрĕ. Тĕреленсе тăчĕ те, окоп хĕррине кайса ӳксе, этем сассипе татăлса макăрса ячĕ. Макăрсан-макăрсан, макăрайми те пулчĕ. Темрен калама çук хытă хăранипе анрасах кайнăскер, кĕлетке чĕркуç таран шывран çӳлелле тухмаллине те тавçăрса илеймест. Чунран татăлса йĕрет, нăйлата-нăйлата, ула-ула ярать, антăхса кайса, хашка-хашка, ӳпки-пĕверĕпе çеç мар пуль, пĕтĕм пĕвĕпе уçă сывлăш çăтать. Алчăраса кайни кăштах лăплансан, çĕр айĕнче вăраннă хыççăн темиçе секунд хушшинче мĕн туй-

ни асне килсе капланчĕ, пуçне тимĕр кăшăлпа хĕстерчĕ. Тăн килсе кĕрсенех вăл сывлăш ӳпкере пачах çуккине туйса илчĕ. Сывласа ярĕччĕ, ниепле те май çук: темĕн чăтмалла мар хытă пусарса, хĕссе тăрать, çĕртен пулакан йĕрĕнчĕк шăршă пуç мимине витĕрех витнĕ, йĕклентерет вăл, хăсас килтерет, питĕ тăвăр пирки урана та, алла та, пуçа та хускатма çук; тинĕс тĕпне лекнĕ тейĕн, пĕр сас-чĕв те, çутă пайăрки те çитмест кунта, тĕттĕм, шăп, виле хурчĕсем пуç миминех шăтарса кĕнĕ, сывлăш та, курăк та таçта çӳлте, тус-юлташсем те унтах, эсĕ чĕррине, сывлăш хумĕпе тăнна çеç çухатнине вĕсем пĕлмеççĕ, пĕлнĕ пулсан, чĕрĕллех пытарса та хăвармĕччĕç, хăйсемпе илсе кайĕччĕç. Эсĕ халĕ тĕнчере çук ĕнтĕ, эсĕ çĕр айĕнче, виле эсĕ. Чĕре вуниккĕлле тапать, ак-ак кăкăртан сиксе тухать тейĕн, тискер, хăрушă çак тĕнчере ху текех çуккине туйма. Кам пурши чĕрĕлле пытарнă çынсенчен телейсĕртереххи çĕр çинче!

Макăрса тăрансан, салтак хăй питĕ вăйсăррине туйса илчĕ. Шăнса хытнипе сиксе чĕтрет вăл, шăлĕ çине шăлĕ те лекмест. Тапалана-тапалана окопран тухать те хăй сисмесĕрех кĕсйисене хыпашлама пуçлать. Аллине ниçта та нимĕн те лекмест. Йăлтах кăларса илнĕ: документсем те, ытти япаласем те çук — мĕн мурне кирлĕ пултăр вилсе выртнăскерне леш тĕнчере документ, блокнот, кăранташ, сăнӳкерчĕк?! Мĕн тума кирлĕ ăна тата унта хĕçпăшал? Унта нимĕн те кирлĕ мар: хырăм та выçмасть, тум та çĕтĕлмест, вар та ыратмасть, шăмшак та сурмасть, куç та пăсăлмасть, сивĕ те мар, ăшă та мар, ырă та, начар та мар, хăрамастăн та, савăнмастăн та. Унта аçупа аннӳ те, тусусем те, савнийӳ те, тăшмансем те, вăрçăпа мир те çук...

Виле шăтăкĕнчен тухрĕ кăна, пурте кирлĕ пулса кайрĕ. Чи малтанах çул тупмалла. Çул çынсем патне илсе çитерме тивĕçлĕ, тăшмансем патне мар, хамăр çынсем патне. Унта çитсен, ăшăнĕччĕ те пĕрер татăк çăкăр ыйтса пăхĕччĕ. Пĕр татăк çеç. Анчах та ăçтан çул тупмалла? Хăш енче кăнтăр, хăш енче хĕвелтухăç. Хĕвелтухăçнелле кайсан, фронт линийĕ урлă каçса хамăр енне çитме пулĕччĕ. Анчах та ăçта-ха хамăрăннисем?

Пĕр вырăнта хытса тăраканскер тинех малалла сĕнкĕлтетрĕ: пырсан-пырсан, пуçĕ çаврăннипе, ӳкет те тăрса татах малалла каять, ӳкет те тăрать, ӳкет те тăрать. Çумăр сайрарах çăва пуçларĕ. Вĕтелсе-вĕтелсе пычĕ те сасартăк тăпах чарăнчĕ. Акă ĕнтĕ тумлам та ӳкми пулчĕ. Малта тӳпери хура чаршавăн пĕр

хĕрри уçăлчĕ те куç умне пысăк çутă çăлтăр тухса тăчĕ. Ăна курсан, каçхи çулçӳрен чиксĕр хĕпĕртесе ӳкрĕ:

— Силемпи, çутă çăлтăрăм, эсĕ çутататăн манăн йывăр çула...

Пĕччен çăлтăр çумне тата тепри хутшăнчĕ. Тĕттĕм хирте самаях çутă пулса тăчĕ. Салтак малалла хăвăртрах та çирĕпрех утса кайрĕ:

— Аннем, эсĕ те куртăн-и мана? Эсĕ те чĕнетĕн-и, кĕтетĕн-и, çул кăтартатăн-и?

Часах тӳпе пĕлĕтсенчен йăлтах тенĕ пек тасалса çитрĕ. Акташ, юмахри Саврăш паттăр пек, вилĕмрен чĕрĕлсе тăнăскер, пурнăçа хирĕç утать. Вăл ăна тĕл пулса илмеллех. Пурнăçа пĕтĕмпех туянма халь çул мар, пĕр татăк çăкăр çеç, нумай та мар, пĕр татăк, кирлĕ. Çулне вăл хăй те тупать — çăлтăрсем кăтартаççĕ: ав мĕн чухлĕн вĕсем тӳпере!

Армути уйĕпе пырать. Армути шăрши сăмсана çурать, пуçа ыраттарать, курăк урана тăллантарать, ахаль те вăйсăрскерне йăлтах сĕлтен ярать. Уринчен ури те иртмест ĕнтĕ салтакăн. Пĕр-ик çухрăм пек кайсассăн, армути пĕтрĕ. Акташ темле сукмак çине тухрĕ. Сукмакпа утма çăмăлрах, анчах та хал пĕтсен, çулĕ мĕнле такăр пулсан та, инçех каяймăн çав. Çĕр метр пек куçать те тĕмеске тупса канма ларать, татах куçать. Кутпа шуманни кăна, йăлтах хал пĕтнĕ. Паçăртанпах ĕнтĕ Акташ тĕлĕкри пек пырать: пуçĕ ĕçлеме пăрахнă, пуш-пушă, туйăмсисĕм тени çухалнă, алли-ури хуçине пачах итлесшĕн мар. Канма ларсан çеç пĕр саманта çынна чун кĕнĕ пек пулать, тăн килсе кĕрет, пуç мимин пĕр кĕтесси Акташ вăрçа тухса килнĕ куна çине-çинех куç умне ӳкерет. Салтак ачисем çирĕпленсех те çитеймен уçă сасăсемпе çаврăнтарса авалхи хурлăхлă салтак юррине юрлаççĕ. Хăшĕн-пĕрин нумай юрланипе сассисем çĕтнĕ, теприсем хытă хӳхлесе макăрнипе пачах юрлаймаççĕ. Пĕкĕсем çумне яваласа туртаран усса янă тĕрĕллĕ питшăллисем çĕртен сĕтĕрĕнеççĕ. Ачасем те мăйĕсенчен питшăлли уртнă, хăшĕн-пĕрин аллинче вĕçрен-вĕçе çыхнă алтутри. Купăс калаканĕ — Михетер Мирунĕ — купăсне хаярăн çухăртаçухăрта илсе лав çинчен сике-сике анать, кĕвĕ калама пăрахса, анăçалла такама юнаса илет. «Гитлер, юнĕçен Гитлер!» — тенисем хăлхана киле-киле кĕреççĕ. Акташăн юрлас та, кăшкăрашас та килмест. Вăл суккăр амăшне çавăтнă та, пырсан-пырсан-пĕр, карчăка, пĕчĕк ачана ачашланă пек, кăва-

карнă ҫӳҫĕнчен, лĕпкинчен ачашла-ачашла илет, ăшă сăмахпа йăпатма тăрăшать. Амăшĕ те утма чарăнсах ывăлне умне тăратать те питне, мăйне, хул-ҫурăмне хыпаласа пăхать, алли чĕтрет мăнтарăнăн, сасси тухмасть — калама ҫук пысăк хуйха пула ăшне кайнă. «Ҫул ҫине тесе чикнĕ читнайăн сăмсине, касса, Микул турă хыҫне хутăм, сывă ҫаврăнса килсе активмелле пултăр, ачам», — тет амăшĕ пăшăлтатса. Акташ, унпа килĕшсе, пуҫне сулать. «Пуҫна ҫухатсан та чысна ан ҫухат, начальниксене итле, ялти пек шух ан пул, тарса ан кил, вилсе ан ҫӳре, вăр-вартарах пул, вилсе ан кил...»

Амăшĕн пехилне пурне те астăвать Акташ. Ун чухнехи пекех, вăл халĕ те ҫапла пăшăлтатрĕ: «Ҫаврăнса ҫитетĕпех, анне, эсĕ Микул турă хыҫне хунă ҫăкăр сăмсине активме. Пуҫа ҫухатсан та чыса ҫухатмăп, ан пăшăрхан, начальниксене те итлĕп, хамăрăннисене, паллах, ютсене мар, тарма мар, вăйпа хăваласа ярсан та фашиста тĕп тумасăр киле пырас ҫук эпĕ, анне. Ялтинчен пин хут шухă та чăрсăр пулăп, каҫар ĕнтĕ мана ҫакăншăн, ватăскерĕм: шухă та чăрсăр ҫын ҫеҫ вăрҫăра ҫиеле тухать — шухă ăс, чăрсăр ăс кирлĕ.

Ăссăр хăтланни вилĕмпе тан. Вилсе те килмĕп. Эсĕ ҫĕр ҫинче пур чух мана вилме ниепле те юрамасть...»

Силемпи таҫтан таврăнатчĕ, лавĕ ҫинчен анса тăнă та юпа пек шак хытса кайнă.

Уй хапхинчен тухсан лавсем те, ҫынсем те чарăнчĕҫ, сывпуллашма вăхăт ҫитрĕ. Такам сăмах каларĕ, такам ҫӳлелле кĕмĕл укҫа ывăтрĕ... Укҫи гербĕ май ӳкрĕ пулас...

Халăхран вăтанса, Силемпи Акташ патне ҫывхараймарĕ, ун патне Акташ хăй пычĕ, амăш аллине Силемпие тыттарчĕ те: «Киле ҫитерсе яр», — терĕ, амăшне тепĕр хут ҫурăмĕнчен лăпкаса илсе ҫамкинчен чуптурĕ, вара, уйрăлса, лавсем еннелле утса кайрĕ. Пĕрре те ҫаврăнса пăхмарĕ. Ҫаврăнса пăхма юрамасть-мĕн, сывă килеймест, вилсе килет имĕш. Кăкăрне ҫурса чĕрине такам тымарĕ-мĕнĕпе тăпăлтарса кайнăн, чĕлхерен ҫĕтсе, вилнĕ пек тăрса юлчĕ Силемпи. Ҫаврăнса пăхмарĕ ҫав Акташ, халĕ акă ҫаврăнса пăхманшăн чунран ӳкĕнет...

Ăҫта хамăрăннисем? Ăҫталла илсе каять сукмак? Пуҫĕ кашлать Акташăн, хăлхинче темĕн янăрать, ҫурăмĕ хыҫĕнче ҫĕр пăтлă кабель ҫакăнса пынăн туйăнать, ниепле йăтма пĕлмелле мар: мĕнле йăтсан та ҫурăма авать, пусса ӳкерессипе хăратать, пилĕкне хуҫассăн сулланать. Таҫтан шалча тупăнчĕ. Ак-

таш шалча ҫине тӗренсе малалла куҫать. Умра йӑваш ҫеҫ хӑйҫути мӗлтлете пуҫларӗ. Акташ ӑна асӑрхать пек те, асӑрхамасть пек те — хӑлхине таҫта самолет шӑхӑрса иртни хуплать, мотор сассипе пӗрле: «Ҫӑка!» Эпӗ — «Юман!» «Ҫӑка!» Эпӗ — «Юман!» Илтетӗн-и?!» — тени килет. Кӑна Акташ хӑех калать пулас. Хирӗҫ вара никам та чӗнмест. Акташ наушниксене таҫта ҫити ывӑтса ярас тесе хӑлхисене ярса тытать: нимле наушниксем те ҫук иккен. Хӑлхисене ывӑҫ тупанӗсемпе хуплать. «Ҫӑка!» Эпӗ — «Юман!» — тени ҫаплах хӑлхана ҫурать, пуҫ мимине каса-каса каять. Шӑнса кӳтнипе тата выҫӑхса ҫитнипе сиксе чӗтрекенскер, ҫывӑхрах паҫӑрхи йӑваш хӑйҫутие курать, шалча ҫине тӗренсе ун патнелле пӗр утӑм, икӗ утӑм тӑвать, хӑйҫути урса кайса ташлама, шавлама, кӗрлеме пуҫлать, бомба шӑхӑрса анать те ҫӗр чӗтретсе-кӗрелетсе ҫурӑлать. Такамӑн пахчи хыҫӗнчи мунча пӑлтӑрне Акташ шалчи мӗнӗпе кӗмсӗртетсе кӗрсе ӳкет, тӑнне ҫухатать.

Халь ҫеҫ заданинчен таврӑннӑ, ури тупанӗнчен пуҫласа пуҫ тӳпине ҫити пылчӑкпа вараланса пӗтнӗ амӑшӗ мунча кӗнӗ вӑхӑтра хуралта тӑракан вунвиҫӗ ҫулхи Петрусь Смидович шартах сикрӗ: нивушлӗ амӑшӗ лапка ҫинчен персе анчӗ?! Апла тесен, сасӑ ма шалта мар, пӑлтӑрта, юнашарах, илтӗнчӗ?! Петрусь, амӑш каланине манса тата нимӗҫсем ялта ҫуккине асра тытса, карабинне хул урлӑ ҫакнӑччӗ те мунчаран хӑпса пусӑ патне пынӑччӗ, каҫран пулӑ ҫинӗскер, шыв ӗҫме шутланӑччӗ. Вӑл витрепе шыв ӑсса хӑпартрӗ ҫеҫ, ӗҫсе те ӗлкӗреймерӗ, мунчара кӗтмен ҫӗртен сасӑ пулчӗ. Амӑшне чӳречене хуплама-сӑрах хӑй ҫутнӑшӑн, хӑйне ытла та мемме пулнӑшӑн чӗререн ятласа, Петрусь мунча патне йӑпшӑнса пычӗ. Пӗр сас-чӗв те ҫук. Амӑшӗ ҫутта сӳнтернӗ те алӑкран кӗрекене тӳрех персе ӳкерме пистолетне хатӗр тытнӑ пулмалла. Пӗр минут иртет, иккӗ... Никам тапӑнса кӗрекен те ҫук. Пӑлтӑрта тахӑшӗ йывӑррӑн сывлани ҫеҫ илтӗнет. Ывӑлне такам ҫапса пӑрахрӗ пулӗ тесе, ҫара ҫан ҫинченех пиншак тӑхӑннӑ амӑшӗ алӑка тапса уҫать, пӑлтӑра сирпӗнсе тухать, кӗсъе хунарӗпе ҫутатса пӑхать те тинех ӑнланса илет: окруженинчен тухакан хамӑр салтак... аманнӑ пулас, тӑнран кайнӑ. Петруҫе чӗнсе илет. Мунча чӳречине ҫӗтӗк-ҫурӑкпа хуплаççӗ те хӑй ҫутаççӗ. Салтак ҫарапуҫ. Пуҫӗ те, пичӗ-куҫӗ те тӑм пылчӑкӗпе вараланса пӗтнӗ. Кӗпи-йӗмӗ пӑхма ҫук лапра, йӗп-йӗпе. Ачи ҫап-ҫамрӑк, хитре ача хӑй. Ҫарран. Аттисене ҫӑрӑлчӑк урлӑ каҫнӑ чух унта хывса

хăварнă куран, утма çăмăлрах пултăр, тенĕ ĕнтĕ. Вырăс мар пулас, тухăç çынни пекрех курăнать. Шăлне шатăр çыртнă. Куçĕ мĕнле чарăлса кайнă, çапла тăрать, патне çутă илсе пырсан та мăчлатмасть, çутта сисмест пулмалла. Чĕри питĕ хуллен тапать, юн таппи çукпа пĕрех. Пичĕ-куçĕ шĕвĕрленсе, тути шуралса кайнă. Çынна вилнĕ сăн çапнă. Ольга Смидович ывăлне шкапран аптечкăпа пĕрле шприц, медицина спирчĕпе нашатырь тата вĕретнĕ сĕт илсе килме хушса ячĕ. Хăй тăнсăр салтака меллĕрех вырнаçтарса хучĕ те пылчăкран çуса тасатма пуçларĕ. Тепĕртакран Петрусь таврăнсан, чирлĕ çыннăн шăлне тимĕр кашăкпа хайăрса çăварне уçрĕç те унта пĕчĕккĕн сĕт яра пуçларĕç. Тип пырне ан кайтар тесе, салтака тăратсах лартрĕç темелле. Анчах та сĕт ниепле те шала каймасть, каялла юхса тухать. Вара укол турĕç — камфора çăвĕ те кофеин. Петрусь нашатырьпе йĕпетнĕ ватăпа чирлĕ çыннăн сăмси шăтăкĕсене сăтăрать. Амăшĕ салтака чĕре тĕлĕнчен массаж турĕ-турĕ те аллисенчен ярса тытса вĕсене пĕрре пуçĕ вĕçнелле, тепре кăкри çинелле çӳрете пуçларĕ. Вунă-вунпилĕк минутран салтак пичĕ кăштах кĕренленчĕ, куçĕ хупăнса илчĕ. Вăл асаплăн сывласа ячĕ. Ĕнсинчен çĕклесе тăрса, Ольга ăна вĕретнĕ ăшă сĕт ĕçтере пуçларĕ. Тăраничченех ĕçтерчĕ. Çамкине тытса пăхрĕ те хăраса кайрĕ: паçăр сип-сивĕскер, салтак çамки халь кăвар пекех вĕри. Çын калама çук нушаланса, йывăррăн сывлать. «Ӳпке шыçнă тетӳн, Петрусь, — ывăлне шăппăн каларĕ Ольга, — киле чуп та ун валли кăмака çине вырăн майла, ăна халь ăшăпа типĕ тата ырă апат кирлĕ, имçамне тупăпăр, ăшшипе типпи ытларах пултăр. Таса кĕпе-йĕм илсе кил, аçун пижамине те манса ан хăвар».

Акташ халиччен нихăçан та курман хĕрарăмпа ача ăна типĕ те таса кĕпе-йĕм, ун çинчен пижама тăхăнтартрĕç те аçампа чĕркесе пӳрте çавăтса кĕчĕç, кăмака çине лайăххăн майласа выртгарчĕç. «Малашне, салтак юлташ, эсĕ Петруçăн куккăшĕ, манăн шăллăм пулатăн, — терĕ Ольга Смидович Акташа ырă каç сунса. — Мĕн те пулин кирлĕ пулсан, тӳрех ыйт, эпир кунтах пулатпăр, Петрусь ашшĕ те сан пекех салтакчĕ, кайнăранпа та пĕр хыпар çук...»

Акташ ырă хĕрарăма тав туса вăйсăррăн пуçне сĕлтрĕ. Ольга çутă сӳнтерсен çывăрма выртмарĕ-ха, вилĕмрен çăлăннă салтакăн кĕпи-йĕмне çĕр айне алтса чикме тухрĕ. Çутăлнă-çутăлман аттисене тупса килчĕ те вĕсене те ял çумĕнчи ращара алтса чикрĕ.

Уйăха яхăн Ольга ниçта та кайса çӳремерĕ, чирлĕ çынна пăхрĕ. Смидовичсен çурчĕ ял хыçĕнче пĕр-пĕччен ларать те, çирĕклĕх витĕр унта никамах та пырса аптăратмасть, уçлăх енчен — çаврăнăç. Мĕн те пулин кирлĕ пулсан, ял çине Ольга хăй тухать, Петрусь та çаплах тăвать. Буйновичи белорус ялĕ. Те ытла пĕчĕкрен, нимĕçсем унта пурĕ те пĕрре çех пулнă, ялта «çĕнĕ йĕрке» тума Микола ятлă пĕр пӳтсĕр çынна хушса хăварнă. Староста Микола, совет влаçĕ вăхăтĕнче вăрă ĕçĕпе тĕрмене çакланнăскер, ял тăрăх чăн-чăн хуçа пек утса çӳрет. Ватă-вĕтĕ, ăна курсан, таçтанах пуç тайса иртет, яш-кĕрĕм вара куç тĕлне пулас мар тесе аякран пăрăнса утать.

Петрусь Акташа ялти пĕтĕм хыпара пĕлтерсе тăрать, каласа çнă чух ăна çине-çинех Акташ тете мар, Аркаш тете тесе чĕнет. Кăшт самайлансанах Акташ Петруçпе амăшне хăй çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кăтартрĕ. Чĕрĕлле пытарнă çĕртен тăрса тухнине пĕлсен, амăшĕпе ывăлĕ тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕç. «Пурнас куну пĕтмен пулнă, ай-яй-яй мĕн тери тамăк курнă эсĕ, чĕрĕллех леш тĕнчене кайса килнĕ, — пуçне сулкала-сулкала, аллисене саркала-саркала, пĕççисене çапа-çапа итлерĕ Акташ калавне Ольга Смидович. — Совет салтакĕсем çавăн пек паттăр çынсем ĕнтĕ вĕсем...»

Пĕррехинче Ольга ĕçпе ирех кӳршĕ яла кайсан, Петрусь ĕнине пахча хыçĕнчи çерем çине кăкарса килчĕ те «Аркаш тетĕшне» пӳрт маччи çине илсе хăпарчĕ. Пӳрт сăртарах ларнăран ял ывăç тупанĕ çинчи пек аван курăнать. Тĕп урам Нерусса шывĕ хĕррипе тăсăлать. Çурçĕр енчен яла сĕм вăрман хупăрласа тăрать, тухăçран анăçалла Нерусса юхать. Шыв урлă самаях пысăк кĕпер хывнă, анчах та мăн çулĕ яла кĕмест, кунтан пĕр виç-тăват çухрăм аяларах ялăн хĕвеланăç енĕпе çурçĕртен кăнтăралла, район центрнелле, иртет.

— Атте çав кĕпершĕн çапăçса вилчĕ вĕт, — сасартăк персе ячĕ Петрусь, персе ячĕ те шăлне çыртрĕ, пĕр вăхăта шăп пулчĕ.

— Епле апла? Аннӳ вăл фронтра çапăçать терĕ-çке?

— Сана начар пĕлнипе çапла каларĕ, халь никама та тӳрех шанма юрамасть. Чăннипе вара атте вилнĕ. Хам куçпа хам куртăм. Ăçта пытарнине те аван пĕлетĕп. Вĕсем те, сан пекех, «унка» тăрса юлнăччĕ. Тăшман унки хĕсĕнсе те хĕсĕнсе пынă. Юнлă çапăçусенче вĕсене юлашкинчен йăлтах аркатса тăкма пултарнă. Тăххăрăн çеçчĕ ушкăн, апла пулин те, пурте — хĕç-

пăшаллă. Документчĕсене, партипе комсомол билечĕсене пĕри те пăрахман. Аттепе юлташĕсем пирĕн патра виçĕ каç пытанса пурăнчĕç. Вара тепĕр ушкăнпа çыхăнса Зерново станцинчи фашистсен гарнизонне çĕмĕрсе тăкнă. Киевпа Мускава çыхăнтаракан магистраль çинче вăл çав станци. Нерусса урлă хывнă çак кĕпере сывлăша сирпĕтме кайсан, ĕç ăнман, атте пуçне хунă, анне аллинчех вилсе кайнă. Кĕперне вара сирпĕтесех пулать, ун урлă урăх пĕр эшелон та ирттерсе ямалла мар.

Вунвиç çулхи ача çапла калаçни Акташа шухăша ячĕ, ăна намăс пулса кайрĕ: ытла та вăрах хĕртĕнет-çке вăл тăлăх арăм кăмаки çинче! Ăçта кайса кĕнĕ унăн шухлăхĕпе чăрсăрлăхĕ, ăсĕпе паттăрлăхĕ? Мĕн тунă вăл хальччен урнă тăшмана тытса чарасчĕ тесе? Мĕн тейĕ ăна амăшĕ, мĕн тейĕ Силемпи, мĕн тейĕ ялйыш, çĕршыв? Нивушлĕ мачча çинче пытанса çӳресех çынçиенсене çĕнтересшĕн вăл, çĕнтерӳпе килне таврăнасшăн, ырă-сывă çитсе, амăшĕ Микул турă хыçне хурса упракан çăкăр сăмсине активесшĕн?

Вунвиçĕ çулхи ача мĕнлерех сăмахлать! Нивушлĕ вунвиçĕ çулхи пионер чухлĕ çук эсĕ, Акташ комсомолец?!

— Петрусь, аннӳ ăçта кайрĕ?

— Калама хушман.

— Эсĕ йăлтах каласа патăн ĕнтĕ.

— Нимĕн те каламан. Ан ыйт, вăхăт çитсен, хăвах пĕлĕн, сывалса çит-ха.

Ачапа йĕкĕт çапла калаçкаласа мачча çинче тăнă хушăра яла кĕпер енчен фашист машинисем кĕрлеттерсе çитрĕç. Петрусь васкасах аяла анчĕ, Акташа мăръе хыçне пытанма хушса хăварчĕ. Лешĕ пӳрт çамкинчи чӳрече умĕнчен ниçта та хăпмарĕ. Фашистсем ял тăрăх саланса пĕтрĕç. Унта та кунта автомат шатăртата пуçларĕ. Ял çинче ĕне мĕкĕрни, сурăхсем макăрни, чăх кăтиклени илтĕнсе тăрать. Ялти пĕтĕм выльăха вĕлерсе пĕтерсен, çуртсене çаратма пикенчĕç: тӳшек-минтере, тумаюма, пĕтĕм çĕтĕк-çурăка машинсем çине йăтаççĕ. Юлашки сурăх виллине кузова çĕклесе çапрĕç те кайма тесе паçăр килнĕ еннелле çаврăнчĕç. Çав вăхăтра офицер патне Микола староста чупса пычĕ, аллине сулкала-сулкалах Акташ пытаннă çурт еннелле кăтартать, темĕн ăнлантарать. Офицер пĕрре Микола çине, тепре сехетне пăхса илчĕ, вара алне сулчĕ: «Кайăрах, кеплеттерсе антарăр тепрер ĕнине, мухтавлă Германи çав ытлашши ĕнепе татах та хăватлăлантăр», — терĕ пуль-и? Фаши-

стсем, Петрусь ĕнине аякранах асăрхаса, тӳрех пахча хыçне кĕрлеттерсе пычĕç, янавара машин çинченех персе ӳкерчĕç те ушкăнпа тытса кузова пăрахрĕç. Ĕне ӳкнĕ вырăнта чĕп-чĕр юн кӳлленчĕкĕ тăрса юлчĕ. Шăлне шатăрах çыртрĕ Акташ, анчах нимĕн те тума пултараймарĕ. Çарату вăхăтĕнче тулта пĕр ял çынни те курăнмарĕ. Çынсем пурте вилсе пĕтнĕ, тейĕн, ялта. Машинсем кайсанах урама тем чул халăх тапса тухрĕ. Колхозниксем пĕрин патĕнчен теприн патне çӳреççĕ, чĕнмесĕр, хуллен иртеççĕ урамсем тăрăх. Ял çине чĕр юн шăрши сарăлчĕ.

Маччана Петрусь чĕрмеленсе хăпарчĕ.

— Кĕçĕртен урăх йĕксĕке çут тĕнчере хăвармастăп, — терĕ вăл такама çав тери ылханса. Çаннипе куçне шăлса типĕтрĕ, сăмсине хыттăн шăнкарчĕ.

— Кама, Петрусь?

— Кама пултăр, Миколăна.

— Ялта тивме юрамасть, шăллăм. Ăна пула пĕтĕм яла персе пăрахма, çунтарса яма пултараççĕ. Ăçта та пулин çул çинче сыхласа тăмалла. Лайăх çĕçĕ пур-и сан?

— Çĕçĕ мар, унран меллĕреххи те тупăнать.

— Ну?

— Ну мар, тпру! Килсе çитрĕмĕр, атя, анар... Эпĕ кĕçĕр «Красульшăн» Миколăна пурпĕрех тĕп тăватăп. Тытса чарма ан та шутла.

Маччаран анчĕç те пӳрте кĕчĕç. Тĕпсакай хăмине уçса тăпрас çинчен Петрусь çĕтĕк-çурăкпа чĕркенĕ сулмаклă япала илчĕ. Чĕркенине салтрĕ те, куç умне карабин тухса тăчĕ.

— Кунпа персен, сасă пулать, шăллăм.

— Хă... сасă пулать... Тăшманпа эсĕ пĕр сас тумасăрах вăрçасшăн-и? Тупса пар эппин сасăсăр пăшал.

— Ну, юрать, санпа кĕçĕр эпĕ те пыратăп: йытта — йытă вилĕмĕ. Ахаллĕн вăл пĕтĕм яла фашистсене тытса пама пултарать.

Каç пуласса чăтăмсăр кĕтрĕç икĕ тус. Каçĕ те, октябрь уйăхĕн çурринче, вĕсем кĕтнĕ пекех, питĕ тĕттĕм. Кăштах çумăр пĕрĕхнипе вăл пушшех те хура. Куçран пырса тĕксен те курăнмасть, теççĕ ун пек чух халăхра. Ялта пĕр çутă та çук. Кунта пĕр чĕрĕ чун юлман, пурте вилсе пĕтнĕ, тейĕн. Анчах та апла мар иккен: çуртсем патне çывăхарах пырсан, шалта çутă пурри палăрать, хупланă чӳречерен тĕлĕ-тĕлĕпе сарă пайăрка ӳкет.

Икĕ пӳртлĕ пысăк çуртра, колхоз председателĕн хваттерĕ пулнăскерĕнче, Микола пĕчченех пурнать, пӳртне-çуртне аппăшĕ, асат хуçнă пĕчĕк те хаяр хĕрарăм, тирпейлесе тăрать, имĕш. Тарçă тытăччĕ Микола, шикленет: тем курса тăрăн, çак ахăр саманара шанчăклă çын ăçтан тупан?

Икĕ сехете яхăн явăнаççĕ ĕнтĕ çак çурт тавра Петруçпе Акташ, патне пыма ниепле те пултараймаççĕ. Шала кĕме вара ан та шутла: килкартинчи арăслан сассиллĕ йытă хăр-хар! харлатать те сăнчăрне чăнкăр-чăнкăр! чăнкăртаттарса хапха патнелле ыткăнать. Çакăн чуль çӳресе тăшмана тавăрма мар, вăл килте пуррипе çуккине те пĕлеймен-ха тавăруçăсем. Акташ тарăха пуçларĕ, карабина таçта çити ывăтса ярса каялла каяс шухăш çуралчĕ унăн: мĕн ĕç кăлараян çак йĕпе сăмсапа, чĕчĕ ачипе. Анчах та... Ан тив, Петрусь çитĕннĕ çын пултăр. Ун чух мĕн тума май пур? Кантăкне ватса шалалла карабинпа пеме, тейĕпĕр. Кама? Ăçта тĕлĕ? Тен, унта Микола пачах çук? Алăкне çĕмĕрме тапратсан, хăй кирек кама та леш тĕнчене ăсатма пултарать. Çуртне вут тĕртсен, тухса тарать. Тахăш енчен — ăна пĕлме çук. Персе ӳкересси пирки ан та шутла. Хăтăлсан, пĕтĕм яла çĕрпе танлаштарттарĕ. Çумăр самаях хытă пĕрĕхет. Иккĕшĕ те шăнса кӳтрĕç. Ал сулса каялла çаврăнас тенĕ вăхăтра Акташ Петруçпе тепре калаçса пăхма шутларĕ.

— Петрусь...

— А?

— Шăнмарăн-и?

— Кучан пекех шăнса кӳтрĕм. Çăмăл мар иккен вăл партизан пуласси.

— Мĕн тăвăпăр ĕнтĕ? Çурт патне те çывхараймастпăр вĕт. Ма çĕр çăтса каймасть çав карма çăвар йытта! Атя хальхинче тивер мар Миколăна, меллĕ самант килсен тавăрăпăр «Красульшăн».

Сисет тĕттĕмре Акташ: ачана тем пулчĕ, вăл йывăррăн сывла пуçларĕ, калама çук тарăхса кайрĕ, карабина картлаттарса туртса илчĕ те Микола çурчĕ патнелле уттара пачĕ.

— «Красульшăн» çеç мар, аттешĕн те... — хыттăнах каласа хучĕ ача. — Хăратăр пулсан, тухмалла та марччĕ килтен...

Акташа Петрусь сăмахĕсем вутпа пĕçертнĕ пек çунтарса илчĕç, вăл ăна каллех тытса чарчĕ:

— Мĕн тăвасшăн ăна эсĕ, Петрусь?

— Чĕнсе кăларасшăн та персе пăрахасшăн.

— Тухмасан?

— Тухать, майне тупатпăр.

— Яла мĕн кăтартĕç кайран?

— Кăтартаймаççĕ, аллисем кĕске.

— Кĕске мар, шăллăм, халлĕхе питĕ вăрăм. Итле-ха, ак мĕнле тăвăпăр: эпĕ карабинпа йывăç хыçне тăратăп. Эсĕ, йытă урса тулашнине пăхмасăрах, хапха патне пыратăн та хапхана хытă шаккаса силлеме пуçлатăн. Ху текех: «Микола тете! Микола тете!» — тесе çухăр. Сассине илтсен: «Герр офицер чĕнет! Герр офицер сана чĕнме ячĕ! Çăмăл машини ял вĕçĕнчи лачакана путса ларнă!» — тесе вĕçĕ-хĕррисĕр кала. «Герр офицер» теме пĕрре те ан пăрах, çеккунт та чĕнмесĕр ан тăр. Малтанах калатăп: е пĕтрĕмĕр, е çĕнтеретпĕр. Микола хапхаран тухсан, пĕр вырăнта çывăрса ан тăр, малалла ертсе кай. Йывăç тĕлĕпе иртнĕ чух эп ăна прикладпа пуçран çапса ӳкеретĕп...

Миколăна сĕтĕрсе килсе витене пăрахнă çĕре çумăр татах вăйланчĕ, витререн ячĕ. Алли-урине хытăрах пăрса çыхрĕç те çăварне тӳсех чӳпĕк тултарчĕç. Петрусь таçтан кире пуканĕ мекĕрленсе йăтса килчĕ. Хуçисĕр тăрса юлнă арăслан сасăллă хаяр йытă çаплах яла янратать... «Курпушки килте пулмарĕ-ха, шăллĕ çухалнине сисмесĕрех юлчĕ», — терĕç икĕ юлташ, пӳрте кĕресшĕн крыльца çине хăпарса. Пӳрте кĕресси пулмарĕ, анăçра аçа çапнинчен те вăйлăрах темĕн кĕрслетрĕ, унтан пĕтĕм тавралăх кăнтăрлахи пек çап-çутă пулса тăчĕ, анăçа талккăшпех пушар ярса илчĕ. «Кĕпере сирпĕтрĕç, — терĕ Петрусь пăшăлтатса. — Авиабензин çуннă пек туйăнать. Халĕ çынçиенсем урсах каяççĕ ĕнтĕ, облава хыççăн облава тума пуçлаççĕ».

Пĕрер сехетрен Петрусь амăшĕпе тепĕр палламан çын килсе çитрĕç. Вĕсем килкартишне анкарти хыçĕнчен кĕчĕç те, Акташа Ольга тӳрех çула хатĕрлеме тытăнчĕ. Палламан çынна Петрусь айккинелле чĕнсе илчĕ, хăлхинчен пăшăлтатса вите алăкĕ çине кăтарта пуçларĕ. «Йăтса кайса пăрахăпăр, аннӳ пӳрте кĕтĕр-ха», — хытах хуравларĕ палламан çын. Килнĕ-килменех куккăшне çыпăçнăшăн Ольга ывăлне ятласшăнччĕ те, вăхăчĕ пулмарĕ, пӳрте кĕрсе çухалчĕ. Петрусь куккăшĕпе Акташ Миколăна витерен сĕтĕрсе кăларчĕç, хăпăл-хапăл йăтса, çырмара путарма илсе кайрĕç. Кире пуканĕ çĕкленĕ Петрусь вĕсем хыçĕнчен аран ĕлкĕрсе пычĕ...

Фашистсем пирĕн çĕр çинче ĕмĕрлĕхех хуçаланма ĕмĕтленнĕччĕ. Ку вĕсене малтанлăха ансат та çăмăл пек туйăнчĕ: çил-

тăвăл пек килсе çапмалла та халăха бомба-снаряд айне тумалла, вутра çунтарса, такансем çине çакса тухмалла, вара ĕçĕ те пĕтрĕ: совет халăхĕ сехĕрленсе ирĕксĕрех Аслă Германи аттине ӳксе чуптăвать. Анчах фашистсем хытă улталанчĕç! Ĕç тухмарĕ!

Тăшман куçĕ умĕнчех, кунран-кун, юн ăшне путнă, вутра çунса кăмрăкланнă, анчах парăнман ялсемпе хуласем кĕрешĕве çĕкленчĕç, юлашки вăя пухса çапăçăва кĕчĕç: çĕнтерӳ е вилĕм. Гитлер Ирĕке, Юратăва, Пурнăçа тĕп туса совет çыннине мĕскĕн чурана çаврасшăн пулчĕ, ĕç выльăхĕ туса хурасшăн хыпăнчĕ. Анчах пĕр япалана шута илмерĕ каппайчăк фюрер: совет çыннисем вилеççĕ, анчах парăнмаççĕ; пĕр япалана ниепле те уççăн курса тăраймарĕ умĕнче: совет çыннисем вилсен те каялла чĕрĕлсе тăраççĕ. Вĕсен вăйĕ шанчăкра, ĕненӳре. Шанчăк тӳсĕм çуратать; ĕненӳ, çĕнтерессе ĕненни, иксĕлми вăй хушать, хăват парать.

Хальччен пулман çак хаяр вăрçăра Юрату вилмеллех аманса темиçе хут та çăва шăтăкне кĕрсе выртрĕ, анчах аппасемпе йăмăксем, кукамайсемпе асаннесем, чун савнисемпе нихçан асран кайми аннесем хушнипе вăл вилнĕ çĕртен чĕрĕлсе тăчĕ, вут хыпса илнĕ Çĕр тăрăх тăшмана тĕп тума васкарĕ.

Акташ Çĕнтерӳ кунне Польша çĕрĕнче кĕтсе илчĕ. Польша партизанĕсемпе пĕрлешсе, вĕсем Варшавăна çити кайрĕç. Варшавăран киле килме тухрĕ...

Света! Аçупа аннӳне салам кала. Аттене текех усалпа ан асăнччăр — йывăр тăпри çăмăл пултăр, хăй персе амантнă уриех вăхăтсăр çĕре кĕртрĕ ăна, хускалмиех пулса ларнăччĕ вĕсем, вара атте вырăнпах вырта пуçларĕ, кайран, нумай вăхăт хушши хускалмасăр выртнипе, чĕре чирĕ аталанчĕ. Çакна эсĕ, Света, ху та аван пĕлетĕн. Мĕн тума çыратăп-ха?

Чуна кăштах çăмăл пултăр тесе. Атте шăпине аса илсен, чĕрене темĕн кăшлама пуçлать. «Каçарар вилнĕскере, хамăр ун пек пулар мар», — тетĕп эпĕ хурланса. Кам пĕлет ăна: урине те хăех пенĕ, те тăшман персе амантнă. Эпĕ хăй пенĕ пуль тесе шутлаттăм, çавăн пек туйăнатчĕ. Ыйтас, ыйтас тенĕ çĕртех çул хыççăн çул иртрĕ, малтан: ача-ха, халех ыйтам мар; каярахпа: тута ешĕл-ха, çитĕнсе çитсен ыйтăп, тесе пурăнтăм. Акă халĕ, ыйтăттăм та, май çук...

Силемпи Акташ вилĕмрен чĕрĕлсе тăнипе хăрушă савăннăран сывалнă тесе паçăрах систертĕм ĕнтĕ сана. Ăна эсĕ ху та

питĕ аван пĕлетĕн, çакна медицина та хирĕçлемест. Повеçри геройсем прототипсенчен чылай уйрăлса тăнине те лайăх чухлатăн, çавăнпа та эпĕ ăна çакăнпа вĕçлесшĕн.

Света! Калама мансах кайнă: повесть пирки аçупа аннӳне те, пиччӳпе аппуна та ан кала, ялта кун çинчен халлĕхе пĕр чун та ан пĕлтĕр. Итле-ха, тен, повеçри тĕп геройсен ячĕсене улăштаратпăр? Митюкпа та канашласа пăх-ха кун пирки. Ман шутпа, Акташ вырăнне Актай, Силемпи вырăнне Салампи тăвас пулать, Михетер Мирунне Минисса Хĕлипĕ тес. Чим-ха, «Салампи» тесен, Александр Артемьев çилленме пултарать, Актай тени те пурччĕ пулас унăн? Мĕнле ят памаллаши тĕп геройсене? Эппин, Митюк патне çит те, Акташне Муркаш, ун пек ятлă паттăр та пулнă чăвашсен, Силемпине Илемпи, Мирунне паçăр каланă пекех хăварăр. Митюк редакцилесе, пăхса тухтăр та, машинкăпа çапма пултаран.

Куляран пăрăнарах çӳрĕ, вăл питĕ чее çын, чике тăршшех лартма пултарать, кайран чавса çывăх та çыртма пулмĕ. Юрĕ эппин, сывлăх сунатăп, хам та сывă юлатăп. Кĕт мана, питĕ кĕт. Савса — Павăл...

1974

ҪУТĂ ШЫВ ХĔРРИНЧЕ

1

Кӳлĕ хĕрринче иккĕн ларатпăр: эпĕ те Кириле мучи. Эпĕ, шăпăрлан, çын шутнех кĕрсе çитеймен-ха, вунултăра çеç, кăçал сакăр класс пĕтертĕм. Халлĕхе мана хушаматпа шкулта урок ыйтнă чух çеç чĕнкелеççĕ, атте ячĕпе вара никам та чĕнекен çук. Йытта е кушака «Ваçка», «Мишка», пăрăва е качакана «Майкка», «Зойкка» тенĕ пек, мана та кĕскен «Хумкка» теççĕ. Хумкка-тăк Хумкка пулам, мĕн кӳренмелли уншăн. Аттене те, авă, ĕмĕр тăршшĕпех Хумкка тесе чĕннĕ те, аптраман вăл, питех кулакан та пулман унран çак куна çитсе, халь тесен, пушшех те кулмаççĕ, кулма мар, хисеплесе Фома Фомич теççĕ-ха тата. Чĕнмĕттĕн те, чĕнесех пулать çав: колхозĕпе чи чаплă кĕтӳç Фома Фомич! Кăçал вара, аллă çул тултарнă ятпа тата ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ пачĕç. Акă кам вăл Фома Фомич Фомин! Коммунист. Партком секретарĕн заместителĕ, парти райкомĕн бюро членĕ. Çынна ячĕ чаплăлатмасть иккен, ятне çынни чаплăлатать. «Пушкин» тетпĕр эпир. Çапла калатпăр та, пирĕн çурăм тăрăх сивĕ чупса каять. Мĕн тери чаплă та мухтавлă, сăваплă та илемлĕ ят! Мĕн тери хитре сăнар тухса тăрать куç умне! Сăнасарах пăхсан вара: мĕн вăл Пушкин? Пушок е пушка тени. Пушокĕ — мамăк, пушки — авалхи тупă. Грибоедов тата? Кăмпа çиекен тени вĕт ку. Тамаша! Эпĕ хам, туллин калаçан, атте пекех Фома Фомич Фомин, хамăр класри Аськина Анюк, Никкăн Анюкĕ, каларăшле — $(Ф^3)^2$. Сăмах май хушса хурам, ятăм-шывăм формули ытла ансатах мартан, доска хыçне те, учитель курмалла мар çĕре, ыттисене çырнă пек М + В = Ю (Мĕтри + Верук = Юрату) тесе мар, $(Ф^3)^2 + А^2Н = Ю$ тесе çыраççĕ. Вăт çавăн пек ĕнтĕ вăл хушаматпа ят мыскари.

Паян çулса пăрахнă утăран хамăр хальрех çеç туса лартнă хӳшĕ умĕнче эпир вут çине çакнă витрери шыв вĕреме кĕрессе кĕтсе ларатпăр. Вучĕ самаях хитре ташлать-ха. Вут-шанки, хăрăк туратпа типĕ çапă, тĕтĕм кăлармасăр хĕрӳн ялкăшса çунать. Кириле мучи кăвайт пусăрăнма пуçламассерен витре

айне, вут çине, хурăн çаппи хуçа-хуçа пăрахать. Кăвайт каллех хăват илет те ялкăшса çунма пуçлать. Старик юлашки хуçăкне вута пăрахрĕ те сасартăк ман енне çаврăнса кĕтмен-туман ыйту пачĕ:

— Авланас темĕстĕн-и-ха?

— Авланас?

— Эре.

— Хм, мĕнле калас, авланас тетĕп. Е сан сăнанă хĕр пур-и? Евчĕ тăвап, килĕш. Ĕнеллĕ-и, кĕрĕклĕ-и, тӳшеклĕ-и? Чошшă текенни, «Жигули» илсе парать-и, «Волгине» те тиркемен пулăттăм?

— Эс мĕн-ха, чим-ха, ан шăл йĕр-ха, эп чăнласах калатăп. Эхе-хей, алла, тутар пек каласан, çĕре нӳрĕ çапрĕ, кӳлĕ çине пăх-ха, шыв епле пăсланать. Тĕтре пек вĕт, э. Ыран, мар-ха, паян, кĕçĕр эппин... Каç пулать вĕт, шăллăм. Хĕвел те, авă, кӳлĕ хыçне кайрĕ. Ав çав утрав мĕн ятлă — пĕлетни? Чарлан утравĕ... Темме çапла каланă, чарланĕ те унта пĕриккĕ кăна пуль. Çитсе курнă-и эс Чарлан утравне?

— Чарлан утравĕ? Илтмен-çке тем ку утрава çапла каланине.

— Чарлан утравĕ çав. Ав вĕçет, куратни? Чим, мĕн мурне çапла терех çуйăхать вăл? Нивушлĕ ыран ире çумăр пулать, пĕтрĕ вĕт вара пирĕн утă, типме ĕлкĕреймесĕрех çĕрсе каять.

— Пулмасть пуль-ха çумăрĕ, хĕвел пĕлĕте лармарĕ.

— Мĕн терĕм-ха эп маларах?

— Мана авлантарма пуçларăн.

Эпĕ çапла каласан, старик ăшшăн кулса ячĕ, йĕтĕн пек шурă сухалне ачашласа илсе ура çине тăчĕ. Кириле мучи, ялтилле каласан, Эстун Кирили, тĕреклĕ старик-ха. Саккăрмĕш теçеткере пырать пулин те, кĕлеткине тӳп-тӳрĕ тытса çӳрет, хăрах куçĕ хĕсĕкреххи те ун сăнне илемсĕрлетеймест, ытти ватăсем пек кукша та мар вăл, шуралнă вăрăм çӳçлĕ, илтме те аванах илтет. Кирилен мăйĕ хулăн, кăкăрĕ вăкăрăнни пек тĕреклĕ. Тумланма мучи питĕрех те тирпейлĕ тумланса çӳрет. Утă çулма та вăл шурă кĕпепе хура шăлавар, самаях çĕнĕ салтак атти тăхăнса килнĕ. Хулпуççийĕ çине матрос бушлачĕ уртса янă. Хĕсĕкрех куçĕ шывланмассерен, кĕсйинчен шурă тутăр кăларать. Те вут çине чылай пăхса ларнăран, те инçетелле тинкерсе нумай тăнăран, унăн йăвашрах куçĕ татах шывланчĕ.

— Эккей, — терĕ старик, — ватăлатăп пулмалла. Ĕлĕк апла шывланакан марччĕ. Çамрăк чух, Питĕрте, пăсрăм эп куçа. Пĕри юсанчĕ, тепри ĕмĕр тăршшĕпех çапла йăвашрах.

— Мучи, эс каллех мантăн-ха паçăрхи сăмахна. Ма авлантарасшăн эс мана халех?

— Халех, тет. Миçере-ха эсĕ?

— Вунултăра.

— Ĕлĕк вунтăваттăрах авланнă. Аннӳ вилни вунпилĕк çул çитрĕ иккен апла?

— Эп курман çав аннене, пĕлейместĕп.

— Авлан. Кил-çуртра хĕрарăм алли пулнине мĕн çитет.

— Ан кул-ха, Кириле мучи, мана халь качча пыракан та пулмĕ. Малтан вунă класс, унтан институт пĕтермелле-ха. Вара куç курĕ.

Кириле лĕх-лĕх-лĕх кулса илчĕ.

— Авлан та авлан, тенĕрен, ан шутла эс эп сана чăнах та авланма хушать тесе. Кӳлĕ варринчи Чарлан утравĕ çинелле пăхнăран-и, яшлăх аса килчĕ, яшлăха таврăнма çуккине кура, çав сăлтава пула вунçич çулхи хĕре качча илме те май килменнине туйса, авланма сана сĕнсе пăхас терĕм...

Яшлăх... Питĕр хули... Чарлан утравĕ... Мĕн калаçать старик? Нимĕн те ăнланмастăп. Эстун Кирили чĕмсĕр çын, теççĕ ялта. Асту, чĕмсĕр ан пултăр. Пĕр çич çул каярах-ши, Кириле патне тимĕрçĕ лаççине турчăка тутарма кайрăм эпĕ. Вăл ун чухне кив лаçăра пĕчченех ĕçлетчĕ, тытăнчĕ мана калаçтарма: «Аçу мĕн тăвать, мĕн пĕçерет, мĕн çĕлет, мĕнле кĕнекесем илсе пачĕ, малашне те пĕчченех пурнас тетĕр-и?» — тет. Тем те, тем те ыйтса пĕлет. «Шкул пĕтерсен, мана пулăшма лаççа кил, эп сана лайăх тимĕрçĕ тăвăп», — тет. Хĕлле ярăнма тимĕр тупанлă селĕм тăркăч туса пачĕ. «Тепре килнĕ çĕре селĕм çуна туса хурăп, татах кил, аçуна салам кала», — тесе ăсатса ячĕ.

Пирĕн, ача-пăчан, яланах вăхăт çук çав, ерçейместпĕр, яланах таçта васкамалла. Панă сăмаха та часах манатпăр. Каяймарăм эп ун чух Кириле патне тимĕрçе вĕренме. Килте аттепе çеç пурăннăран, выльăх-чĕрлĕхне те хамăрăн пăхмаллаччĕ, пӳрт-çуртне те хамăрăнах пуçтармалла, колхоз ĕçĕнчен те юлмастчĕ атте, платникре çӳретчĕ; çапла уйăх хыççăн уйăх, çул хыççăн çул иртсе пычĕ. Эпĕ ĕнтĕ текех çиччĕ-саккăрта мар, Кириле те шуралчĕ, текех тимĕрçĕре ĕçлемест, пенси илсе пурăнать. Çемйи унăн пысăк мар: карчăкĕ, Урине мăнак-

ка, хĕрĕ те мăнукĕ. Мăнукĕ Михаля кăçал кăна флотран служба пĕтерсе таврăнчĕ. Михаля бушлачĕ Кириле çинче камитлерех курнать. Шур мăн сухаллă старике, моряк бушлачĕ тăхăннăскерне, ман темшĕн, «Макаров адмирал» тессĕм килсе кайрĕ. Пуç тавра лайăхрах шухăшларăм та, тăхтамалла пек туйăнчĕ: адмирал-и, адмирал мар-и, Кириле мучи, çапах та, ман пек вунултăри йĕпе сăмса мар, çитмĕл пиллĕкри нумай хура-шур курнă çын, сумлă старик, ялта ăна курсан ахаль çынсем çеç мар, парторгпа колхоз председателĕ те таçтанах çĕлĕк хывса пуç таяççĕ. Унăн орденĕ те, медалĕ те пур тенине илтнĕ эпĕ. Хампа пит çывăххăн та ăшшăн калаçнипе, çыннăн пуçĕ çинех хăпарса ларам мар-ха. Ачапча тесе çапла уçă кăмăллă ĕнтĕ вăл манпа. Çитменнине, паян эпир унпа иксĕмĕр те чин тĕлĕшĕнчен пĕр пек: вăл та утă хуралçи, эпĕ те, вăл та пулă шӳрпи пĕçерекен, эпĕ те...

Витрери шыв вĕреме кĕчĕ. Халь кăвайта вăйлă çунтармасан та юрать. Çĕрулми шуратса ятăмăр. Тепĕр витрере хĕрлĕ çунатлă уланкăсем шыва шăмпăлтаттарса выляççĕ. Сумккинчен Кириле мучи сухан пуçĕсем кăларчĕ. Эпĕ куççуль юхтара-юхтара сухан шурата пуçларăм. Мучи çаплах сумккипе тăрмашать. Тăвар, лавр çулçи... Витререн пĕр пуллине тытрĕ те чĕрĕллех хуппине тасатса вĕрекен шыва ячĕ. Уланкă чалт! çеç турĕ, çӳлелле вĕçсе хăпарчĕ, каллех вĕри шыва çатлатса ӳкрĕ те урăх çĕкленеймерĕ. Эпĕ ахăлтатса кула пуçларăм. «Пар-ха, эпĕ те ярса пăхам», — тетĕп. Тытрăм пĕрне. Тасатас тесе çĕçĕ илтĕм. Старик ним те шарламасть, сухал витĕр кулкалать çеç. Чи малтанах пуллăн пуçне касса пăрахрăм, вара пуçĕ енчен хӳринелле тасатма хăтланса çĕçĕпе хырма тытăнтăм. Сĕвĕнмест пулă хуппи — мĕн япала? Халĕ ĕнтĕ эпĕ мар, Кириле мучи сасăпах кулса ячĕ.

— Эх, мăнтарăн пулăçĕ. Кам пулла пуçĕнчен тасатма пуçлать? Тытнăскерне те тасатма пĕлместĕн эсĕ, тытма вара епле тытайăн-ши? Вăт эпир Эстонире... революциччен...

— Мучи, эс Эстонире те пулнă-и? Ăçтарах вăл Эстони? Мĕнле хула, мĕнле тинĕс патнерех?

— Эстони Балтика тинĕсĕ хĕрринче. Питĕртен, хальхи Ленинградран, инçех мар вăл. Революциччен ман çав тинĕсри пĕр утрав çинче пурăнма тӳр килнĕччĕ. Патша йыттисенчен пытанса пурăнтăм эпĕ. Вăт çавăн чух, çав утрав çинче, палланă пулăçсенчен кимĕ ыйтса илеттĕмĕр те залива кĕрсе ди-

намитран тунӑ пӗчӗк бомба пӑрахаттӑмӑр. Темӗн йышши пулӑ та тухатчӗ ҫиеле, икшер-виҫшер пӑт турттарса килеттӗмӗр.

— Динамит тетӗн-и? Бомбине ӑна кунта тума ҫук-и? Шкулти лабораторире?

— Тума май пур та, юрамасть. Бомба пӑрахсан, кӳлӗри пӗтӗм чӗрчуна вӗлерсе пӗтеретӗн. Саккун хушмасть. Ун пек ҫынна тытса хамах милицине кайса яратӑп, тӗрмене хуптаратӑп йӗксӗке.

— Уланкӑ мӗнпе лайӑх кӗрет-ши, мучи?

— Вӑлта ярсан-и?

— Ӑхӑ.

— Ир ҫинче, хӗвел тухас умӗн, ҫӑкӑр ҫемҫипе... Ӑманпа.

Калаҫнӑ май Кириле чӗрӗ уланкӑсем чӑмпӑлтатакан витрене аллине чике-чике ярса мӗскӗнсене пӗрерӗнех тытса пӗтерет. Акӑ ӗнтӗ пур уланкӑ та вут ҫинчи витре тавра ҫаврӑна пуҫларӗ. Тӑварне те, суханне те паҫӑрах янӑ. Мучи лармассерен кашӑкпа шӳрпе ӑсса илсе вӗре-вӗре сивӗтет, тӑвар тата кирлипе кирлӗ маррине тӗрӗслет. Юлашкинчен вӑл ҫырлахрӗ пулмалла: «Шӑллӑм, — терӗ, — шӳрпе пиҫрӗ, кӑлар чашкусене, ҫӑкӑр кас...» Тепӗртакран эпир, каҫхи икӗ хуралҫӑ, лӗрплеттерсе пулӑ шӳрпи сыпа пуҫларӑмӑр. Сыпса тӑрансан, бидонран шыв ӑсса илсе, савӑт-сапа ҫурӑмӑр, шӳрпене тутӑрпа витсе хӳшӗ ҫумне лартрӑмӑр. Ӗҫ пӗтсен тин старик ассӑн сывласа ячӗ:

— Пулӑ шӳрпи те пулин яшлӑха аса илтерет. Эккей, пурнӑҫӗ... Хӑш хушӑра кӗрлесе иртрӗ? — хӑйпе хӑй калаҫрӗ вӑл. — Пӑх-ха, шӑллӑм, Чарлан утравӗ еннелле — темле ҫутӑсем мӗлтлетеҫҫӗ пек. Те мана ҫеҫ ҫапла туйӑнать?

— Нимле ҫутӑсем те ҫук-ҫке... Утравӗ те Чарлан утравӗ ятлӑ мар вӑл, ятсӑр утрав.

— Пулӗ, пулӗ. Балтика тинӗсӗнчине вара чӑнах та Чарлан утравӗ тетчӗҫ, лайӑх астӑватӑп. Утравӑн тӑршшӗ вунӑ, сарлакӑшӗ пилӗк ҫухрӑмччӗ. Талккӑшпех тем ҫӳллӗш хыр вӑрманӗ кашласа ларатчӗ, кӑнтӑр енче пӗртен-пӗр ял — Кивӗ Ял ятлӑскер — пурччӗ. Эпир ҫурҫӗр енче ӗҫлеттӗмӗр... Унта та ял пекки пурччӗ.

Ҫинӗ хыҫҫӑн эпӗ, хӳшше кӗрсе выртса, тӗлӗрсе илесшӗнчӗ, Кириле мучи ҫулса пӑрахнӑ ҫарана пӑхса ҫаврӑнасшӑн пулчӗ.

— Ҫывӑрма юрамасть ӗнтӗ пире, хуралҫӑсене, вӑрман урлӑсем килсе хамӑр ыйхӑ туртнӑ хушӑра пӗтӗм ҫарана таптатапта, юрла-юрла тиесе кайӗҫ. Вӑрман урлӑсем авалтанпах кукӑр

алăллăрах, пурте мар, паллах, хăшĕ-пĕрисем. Пуян Кантратти йăхĕнчисем — уйрăмах, — терĕ вăл, тавраналла пăхкаласа.

— Эс вĕсене те астăватăн-и, мучи? Кантратти таврари чи пуян çын пулнă, теççĕ?

— Пуян пулмасăр, ара, питĕ пуян, пуянăн ывăлĕ те хăй пекех путсĕрччĕ. Службăна эпир пĕр карап çинех лекрĕмĕр, вăл офицер, эпĕ ахаль матрос. Мана чут çеç тĕп тумарĕ, эсрел пуçĕ.

Кириле мучи куç умĕнчех урăхланса, çĕнелсе пырать. Урлăпирлĕ перкелешсе калаçкаланă хушăрах мĕн тери кăсăк япаласем пĕлетĕн ăна итлесен. Йĕркипе каласа пама ыйтсан мĕнле-ши: Кириле мучи, Эстун Кирили, историн чĕрĕ палăкĕ, вăл революцичченех тинĕс-çар флотĕнче службăра тăнă, революци мĕнле тунине хăй куçĕпе курнă?! Ыйтса пăхас, чăнах та, тен, каласа парĕ. Çапах та, юлташлă вĕт эпир: пĕр витререн пулă шӳрпи сыпрăмăр, иккĕн пĕр çарана хураллатпăр, иккĕн пĕр пулса хӳшĕ турăмăр, пĕр ялсем, мучийĕ тата кăмăллăскер! Лайăх çын иккен вăл Эстун Кирили, эп ахалех ун патне тимĕрçе вĕренме çӳремерĕм, ӳркентĕм. Мĕн тери интереслĕ çын Кириле мучи.

— Кириле мучи, хĕвел пĕлĕте лармарĕ. Апла ыран çумăр пулмасть пуль-ха?

— Пулмасть пуль.

— Санран пĕр япала ыйтма юрать-и?

— Ыйт.

— Сана мĕншĕн Эстун Кирили теççĕ? Сан аçу Эстун ятлă пулнă-и-мĕн? Чăвашсен Эстун ятлă ят та пур-и?

— И-и, шăллăм, Эстун вăл Эстони сăмахран пулнă. Яш чух эпĕ яла Эстони майри ертсе килтĕм. Çавăн хыççăн Эстун Кирили теме пуçларĕç. Ял ун чух тĕттĕмччĕ-ха, тин çеç ирĕке тухнăччĕ. Çыпăçрĕ те çав ят паян кунччен те хăпмасть...

Çарана пăхса çаврăннă çĕре вăрман тăрринчен уйăх тухрĕ. Кириле мучи ӳпĕнтернĕ витре çине ларса аттисене хыврĕ те пурттенккисене такан çине типме çакрĕ.

— Эс, шăллăм, — терĕ вăл, вута çĕнетес шутпа çапă таткалама пуçласа, — çын пурнăçĕпе, çын кунçулĕпе тес пулать-и, пит кăсакланатăн иккен. Пурнăçĕнче ман тем тĕлĕнмеллиех пулман та, çын мĕн тӳснĕ çавна тӳснĕ те, çăмăлах та килмен çав, ай-яй, хытă авнă пире самани.

— Каласа пар, мучи, каласа пар. Ӳссен эп сан çинчен кĕнеке çырса кăларатăп.

— Кĕнеке çырма кирлĕ мар пуль те... Асран тухмасть-мĕн çавă вăхăт, яшлăхпа тӳр килнĕ-çке вăл, хăямат.

— Эсĕ революцие хăямат тесе вăрçатăн-и?

— Çук, революцичченхине. Ну, мĕнрен пуçлас-ха ĕнтĕ? Ытла та ешĕл вĕт-ха эсĕ, шăллăм. Пурне те ăнланайăн-и?

— Эпĕ вунулттăра. Гайдар вунултă çулта полк командирĕ пулнă, Лермонтов тĕнчипе паллă «Испанецсем» трагедине вунулттăра çырнă.

— Тăлăх ачапча час тăна кĕрсе, ӳссе çитет, тетчĕ ĕлĕк анне. Эсĕ те çурма тăлăх ӳснĕ вĕт. Хумма, аçу ăслă пулчĕ, çĕнĕ арăм туянса сана амаçуриллĕ тумарĕ. Пăрахмарĕ вăл сана. Кайран эсĕ те ан пăрах ĕнтĕ ăна.

— Пăрахмăп, мучи, ма пăрахас-ха ăна ман? Унсăр пуçне никам та çук-иç çывăххи?

— Халь пăрахмăн-ха та... Кайран, ӳссе çын пулсан, мăшăрланас тейĕн. Мăшăрĕ путли лексен, юрĕ-ха, тухатмăш тĕл килсен — темле.

Çапла такмакла-такмакла Кириле пурттенккисене те типĕтрĕ, аттине те тăхăнчĕ. Калавне çав-çавах пуçласшăн марха. Эх, хăçан ӳссе çитес-ши: хисеп çук ачапчана, хисеп çук. Мучи хӳшĕ çăварĕ патнелле пычĕ:

— Шала кĕрсе ларар пуль, унта ăшăрах пулма кирлĕ, пĕр-пĕрин çумне тĕршĕнĕпĕр. Вара эп сана чулсем хушшинче хам епле пытанса пурăннине те каласа кăтартăп.

Эпир хӳшше упаленсе кĕтĕмĕр, пĕр-пĕрин çумне тĕршĕнсе лартăмăр: эпĕ Эстун Кирилине итлеме хатĕрлентĕм. Янкăр тӳпери уйăх, вăрман çийĕпе шуса иртсе, пирĕн хӳшĕ çăварĕ тĕлнех килсе тăнă. Ун çутипе кӳлĕ ытармалла мар çиççе-ялкăшса выртать. Çап-çутă! Кĕмĕл пек! Таçта, вăрманта, тăлăх кайăк тискеррĕн кăшкăра-кăшкăра илет.

Анăçра — тĕксĕм хĕрлĕ йĕр. Вăл халь-халь сӳнессĕн туйăнать.

2

Эп ун чух Эстун Кирили пулман, тесе пуçларĕ Кириле хăй калавне. Пирĕн йăха Эльмук йăхĕ тенĕ. Атте, Эльмук Энтри Миккулайĕ, питĕ чухăн çыннăччĕ, пилĕк ачаллăскер, çич çынна пĕччен тăрантаратчĕ. Çемьере виçĕ арçын чунĕ пулин те, çĕрне пĕр пай çеç акаттăмăр, икĕ пайне, çитмен пур-

нăçа пула, сутса яма тиврĕ. Пĕр пай çĕрпе çичĕ хырăма усрама пачах та май çукчĕ. Пĕтĕм лайăх çĕрсем Пуян Кантратти аллинчеччĕ. Хамăр тырă çĕнĕ çула та аран çеç çиткелетчĕ. Нуша пусса çитернипе çăлăнăç шыраса, атте вăрман хуралçине кĕчĕ, талăкĕ-талăкĕпе вăрманта çухалса çӳрекен пулчĕ. Хуçалăха анне тытса пыратчĕ. Пилĕк ачине выçă лартас мар тесе, тара кĕрĕшсе ĕçлетчĕ. Кунĕпе вăрман лартнăшăн вунă пус паратчĕç. Атте, вăрман хуралçине кĕрсен, пире, Энтюк тетепе иксĕмĕре, сунар ĕçне хăнăхтарчĕ. Кĕрхи тĕтреллĕ кунсенче тата хĕлле куян тытма çӳреттĕмĕр. Каярахпа куяна пăшалпа кăна мар, мăйкăчпа та лайăх тытма вĕренсе çитрĕмĕр. Пĕр вăхăтра пурнăç самаях сыпăнса кайнă пекчĕ. Энтюк тетепе Сăпани акка ӳссе çитрĕç те хуçалăхра пулăшакан пулчĕç. Эпĕ те пĕчĕккех марччĕ ĕнтĕ, вунултта кайнăччĕ. Икĕ йăмăк кил хушшинче аннене самаях пулăшатчĕç. Анчах та çакăн пек пурнăç вăраха пымарĕ, пире калама çук пысăк хуйхă килсе çапрĕ: пĕррехинче анне вулăса пасара кайнă та таврăннă чух вăйлă çумăр айне пулнă. Çӳхе тумланнăскер, витĕрех йĕпеннĕ вăл, вунă çухрăм шывпа пылчăк тăрăх çăпатапа килсе, шăнса пăсăлнă. Виçĕ уйăх вырăнпах выртрĕ. Вăл вăхăтра тухтăр тавраш пулман. Анне тем тери тертленсе, сывлăшсăр пӳлĕнсе вилчĕ. Атте хуйхăпа ĕçке ярăнчĕ. Тăтăшах ĕçнĕрен вăрманне те лайăх пăхаймастчĕ. Пĕрре çапла эпĕ вăрмантан таврăнатăп. Укăлча хапхинчен кĕтĕм те хурал пӳрчĕ патĕнче халăх туй халăхĕ пек кĕпĕрленсе тăнине куртăм. Мана хирĕç пĕр карчăк сĕнкĕлтетсе килет.

— Ма халăх пухăннă?

— Аç?

— Мĕн пит халăх кĕпĕрленет?

— Вĕлермен... Хĕнеççĕ.

— Кама хĕнеççĕ?

— Виçĕ тĕп юман вăрласа сутнă Пуян Кантраттинне.

— Кам?

— Эльмук Энтри Миккулайĕ.

Эпĕ шартах сикрĕм. Ура вăйĕсем пĕтсе ларчĕç, янах чĕтре пуçларĕ. Карчăкпа тек калаçса тăмарăм, хурал пӳрчĕ патнелле чупрăм.

Аттене, аллисене хыçалалла пăрса, хурал пӳрчĕ умĕнчи ут юпи çумне тилхепепе çатăрласа çыхса хунă. Унăн çӳçĕ-пуçĕ туснă, сăмси-çăварĕнчен манка-сурчăкĕ юхса тăрать, пуçне уснă, мăнтарăн, ӳсĕр пулмалла, пĕрре ахăрса-мĕкĕрсе, тепре

юрласа ярать. Ăна икĕ енчен икĕ уретник чĕн пушăпа хĕнеççĕ. Атте, самаях тĕреклĕ çын, уретниксем туртса касмассерен кăртах сиксе илсе какăрнă чухнехи пек сасă кăларать. Кĕпи çурăлса пĕтнĕ, çанçурăмĕ хĕп-хĕрлĕ юн. Эпĕ унка татса тухрăм та хаярăн кăшкăрса ярса атте патне ыткăнтăм.

— Куда, щенок! Назад! — çула пӳлсе хучĕ çутă тӳмеллĕ, пустав тум тăхăннă, çӳллĕ тăрăллă карттуслă пĕр çамрăк ача, хам çулаллискер-ши е кăшт çеç аслăрахскер? Аллинче унăн та саламат. Мана тӳрех сăмса урлă сăтăрчĕ пушшипе. Куç-пуçран вут тухса сирпĕнчĕ. Эпĕ, урса кайнăскер, çакна ая пĕтĕрсе чиксе таптама тытăнтăм. Тилĕ сăмси пек шĕвĕр питлĕскер, самаях тĕреклĕ тата хăй. Темле мелпе мана çавăрса çапма хăтланать. Вĕçерĕнсе атте патне ыткăнас тесе çеç шутланăччĕ, такам хыçалтан пырса çӳçрен пĕтĕрсе илчĕ. Пĕтĕрсе илчĕ те çĕклесе çĕре нăчлаттарчĕ, вара ураран сĕтĕрсе тапа-тапа айккинелле туртса кайрĕ. Пăхрăм та: Пуян Кантратти! Куçĕ чарăлса кайнă, çăварĕнчен кăпăк тухать. Леш шукăль улпут Кантратти Ехремĕ пулнă иккен, Чистайра гимнази текен шкулта вĕренекенскер. Пуян Кантратти, хăй вулама-çырма та пĕлменскер, ывăлне чăн-чăн улпут туса ӳстерме шут тытнăччĕ. Ехремĕ халь чăвашла пачах калаçмасть, йĕрĕнет тĕттĕм чăвашсенчен, улпут-купса ачисемпе пĕр шкулта, гимназире вĕренетçке-ха...

Хĕнесен-хĕнесен, атте урăлса çите пуçланă, шыв ыйтнă, шыв вырăнне ăна уретниксем çур витре лаша шăкĕ пуçĕ тăрăх янă, пĕрехмай: «Эпĕ вăрă, ман пек вăрă ан пулăр!» — тесе кăшкăрма хистенĕ. Урă чухне ытла та çынран именекенскер, атте ялйыш умĕнче курнă çак мăшкăла чăтса ирттереймерĕ. Тепĕр кунне вăрман çулĕ çинчен ун виллине турттарса килчĕç: тепре ĕççе ӳсĕрĕлнĕ те вăрман хĕрринчи çăкаран çакăннă. Çапла вара пилĕк пĕртăван аттесĕр те, аннесĕр те тăрса юлтăмăр. Часах пирĕн тĕнчен тĕрлĕ еннелле саланса пĕтмелле пулчĕ. Сăпани аккапа Энтюк тете йăмăксене приюта кайса пачĕç. Энтюк телей шырама Питĕре кайрĕ, акка пĕр ват çынна качча тухрĕ те, çулталăкран ача-пăчаллă пулчĕ, хăйĕн çемье, хăй нуши хăйне çитет. Эпĕ кутамкка çакса Чистаялла çул тытрăм. Икĕ эрне пек ĕç шыранă хыççăн Чулман Атăлпа çӳрекен пĕр паршă çине матроса кĕтĕм. Мана, çамрăк ачана, пысăккисен шалăвĕн çуррине çеç тӳлетчĕç. Паршă çинче пĕр ватă çын, шурă çӳçлĕ Кавĕрле пурччĕ, çамрăклах йывăр йăтса пилĕке хускатасран, вăл мана çăмăлтарах ĕççем тупса па-

ратчӗ, хăш чух пуç пăхтаратчӗ. Михĕсем сĕтĕрттерсе халран янисĕр пуçне пире Кавĕрле тата тепĕр «ĕç» хушатчӗ, тырă вăрлаттаратчӗ. Вăл асличчӗ те, итлемесен юрамастчӗ. Чистайран çу каçа анаталла вунă миллион пăт тырă каятчӗ. Паршăсем ыраш, пăрçа, хуратул тиесе Атăлалла вĕçĕ-хĕррисĕр шăватчĕç. Каçхине, вахтă пĕтсен, кашни матросах михĕсене «хыпашласа» тухса виç-тăватă кĕрепенккерен кая мар тырă тумаллаччӗ. Паршăра çĕр пин пăт тырă пулсан, çав майпа икçĕр ытла михĕ тырă вăрлама пулатчӗ. Тырра çыранта, чарăннă-чăрăнман тенĕ пек, сутса пĕтеретчĕç. Кавĕрле пĕтĕм ĕçшĕн кашни матроса пилĕк тенкĕ тӳлетчӗ, хăй вара тырă сутса пуйнă укçапа темиçе хутлă çурт лартнăччӗ. Паршă çинче çӳре-çӳре чун тухас патне çитсен, эпĕ Питĕре çитсе Энтюк тетене шыраса тупма шутларăм. Вăл кайни ик çула яхăнччӗ ĕнтĕ, матросра тăратăп тесе çыратчӗ...

Хумкка йăшаланса илчӗ. Ăна уретниксен тискерлĕхĕ, Пуян Кантратти Ехремĕпе Кантратти епле хăруш çынçиенсем пулни хытă пăлхатрĕ. Ехремĕ, çамрăклах çапла сăхăскер, кайран ăçта кайса кĕнĕ-ши? Çавна питĕ пĕлес килет Хумккан. (Хам пирки эп юриех виççĕмĕш сăпатра калатăп, «эпĕ» теекенни халлĕхе, ан тив, пĕр Кириле мучи çеç пултăр.)

— Кириле мучи, Ехрем кайран ăçта кайса кĕчĕ?

— Ехрем-и? Питĕрте куçа-куçăн тĕл пулма тӳр килчĕ унпа. Анчах кун пирки каярах каласа парăп. Каларăм ĕнтĕ, манăн текех паршăпа çӳрес килми пулчĕ. Атăл çинчи пĕр хулара анса тартăм та пуйăспа Питĕре çитсе ӳкме шут тытрăм, анчах та, вокзалта тĕлĕрсе кайсан, мана çаратрĕç. Эпĕ татăк çăкăрсăр, çур пус укçасăр тăрса юлтăм. Пĕрер уйăх пек ватă майра патĕнче тарçăра пурăнтăм, Питĕре çитмелĕх укçа тăвайрăм. Пĕррехинче, чейпе çăкăр пулмĕ-ши тесе, хупаха кĕтĕм. Хупахра çак ват майран хĕрĕ урай çăватчĕ. Вăл мана хăш чухне çăкăр татăкĕсем, пылак чей тупса паркалатчĕ. Кăнтăрла иртнĕччĕ ĕнтĕ, эпĕ шывпа çăкăр çисе лараттăм. Ман сĕтел патне икĕ çӳллĕ йĕкĕт пырса тăчĕç:

— Сирĕн сĕтел хушшине ларма юрать-ши? — ыйтрĕ пĕри шӳтлерех.

— Ларăр, тархасшăн, хăна пулăр, — хуравларăм çав сасăпах. Йĕкĕтсем çирĕмсенче пуль, иккĕш те сывлăхлă, таса, пичĕсенчен юн пĕрхĕнсе тухас пек туйăнать, сарлака хул-

çурăмлă. Аллисем шăнăрлă та чукмар пек пысăк. Çавăн пек чăмăрпа пĕрре çапсан, Пуян Кантратти Ехремне кăна мар, Кантраттине те вĕлерсе пăрахма, çав маях уретникĕсене те тирпейлесе хума пулать.

— Ну, мĕнле, тутлă-и кăвакал сĕчĕ? — сăмах хушрĕ тепри.

— Тутлă, — терĕм эпĕ, — уйрăмах ĕнертенпе ăша нимĕн те яман пулсан.

— Ĕнертенпе?

— Ĕнертенпе.

— Официант! Виç çын валли — прибор!

— Каçарăр та, мĕнлеччĕ сирĕн ят? — каллех ман енне çаврăнчĕ малтанхи.

— Кириле, вырăсла Кирилл.

— А эс мĕн вырăс мар-им?

— Вырăс мар.

— Тутар?

— Чăваш. Тăлăх эпĕ, атте те, анне те çук. Тете патне Питĕре çитес, тетĕп.

— О, Питĕр инçе. Тата вăл питĕ пысăк хула, унта тетӳне йăпăр-япăрах тупма та пулмĕ. Тăхта-ха, атя пирĕнпе, эпир сана ĕçе вĕрентĕпĕр, хырăму тутă, çийӳ питĕ пулĕ. Каярахпа тетӳ патне те кайăн. Халлĕхе эпир вăрманта, çĕр пӳртсенче пурăнатпăр, Атăл шăнса пăр хулăмлансанах ăскăçсем лартатпăр та шыв тĕпĕнчен вĕтĕ чул кăларма пуçлатпăр.

— Пултарайăп-ши эпĕ?

— Пултаран. Миçĕ çулта-ха эсĕ?

— Вунултăра.

— Эс апла каччă пулнă-иç. Атя, пуçтарăн.

Пуçтарăнмалли манăн нимех те çукчĕ, халь тесен халь çула тухма хатĕрччĕ эпĕ. Йĕкĕтсенчен пĕри таçта кайрĕ, тепри манпах юлчĕ, сасартăк шухăша путса кантăкран Атăл çинелле пăхса ларчĕ. Тулта тĕттĕмлене пуçласан, кайнă йĕкĕт таврăнчĕ те, эпир урама тухрăмăр, пĕр-ик çухрăм хирпе пынă хыççăн сукмакпа вăрманалла пăрăнтăмăр. Вăрмана кĕрсен, эп шикленсе ӳкрĕм: камсем кусем, ăçта илсе каяççĕ?

— Атьăр, каллех хире тухар, хиртех лайăх.

Каччăсем кулса ячĕç.

— Вăрă-хурахсем мар эпир, ан хăра, тивместпĕр, — терĕ те хурараххи сарăраххине кăлт! тĕксе илчĕ. — Çапла вĕт Князь?

— Çапла, Барон.

Ансăр сукмак ахрат çырми патне илсе тухрĕ. Тĕпĕнче шыв йăлтăртатни курăнать. Тепĕр енче, пĕр пĕчĕк лаптăкра — хӳшĕ. Хӳшĕ патне çитсен, Князь хуллен çеç:

— Асатте, сана валли пулăшакан тупса килтĕм, — терĕ. Çапла каларĕ те тĕттĕмелле кĕрсе çухалчĕ. Хӳшĕрен, ĕхлете-ĕхлете, пĕр старик ашăка сирсе пăхрĕ, шалалла кĕме чĕнчĕ.

— Çакă пулать-и вара çĕрпӳрт? — ухмахла перçе ятăм эпĕ.

— Кам каларĕ сана çĕрпӳрт тесе? — кăмăлсăр пулчĕ мучи.

Тем те пĕлес килни, çав вăхăтрах хытă шикленни канăç памарĕ мана: эпĕ старикрен тата темĕн ыйтасшăнччĕ, анчах та вăл таçта çывăхра, манран инçех те мар пулас, майлашса выртрĕ те урăх нимĕн те чĕнмерĕ.

Тулта пĕр сас-чӳ те çук. Кĕрхи каç сулхăн та лăпкă. Пĕр вăхăт шăплăха тăнласа выртнă хыççăн, эпĕ сисмен те, йывăр ыйха путнă. Улăм ăшĕнче тӳшек çинчинчен пĕртте кая мар лайăх çывăрнă.

Ирхине, хӳшĕрен упаленсе тухсан, тӳрех мучие куртăм. Вăл, вăтам пӳллĕскер, çăпатапа, саплăклă кивĕ кĕрĕкпе. Ватăскер, пĕрехмай тем мăкăртатать. Мана асăрхасан, ĕç хушрĕ: çапă сĕтĕрсе килсе кăвайт хатĕрлемелле. Кăвайт хатĕрлесе çитерсен, эпĕ шыв хĕрне антăм, шыв ăсса килтĕм. Ик витре кĕрекен хуранпа яшка çакрăмăр. Типĕ туратсем самантрах чĕрĕлсе кайрĕç те ялкăшса çуна пуçларĕç.

Пиртен инçех мар хӳшĕсем татах пур иккен: хăшне брезентпа, хăшне михĕсемпе виткеленĕ, шала типĕ курăк тултарнă пулмалла. Çывăхарах пытăм та, шалтан çынсем харлаттарса çывăрни илтĕнет. Пĕр вăхăт шухăша кайса тăтăм: мĕн мурне вăрманта пытанса тискер кайăксем пек пурăнаççĕ кусем? Çак тĕттĕм вырăнта урăх пĕр чун та çук пуль, чараксăр çăварлă чакак çеç таттисĕр чарăлтатать.

Ахрат çырми çыннисем кăнтăрлана тин вăранса хӳшĕсенчен тухрĕç. Тĕл-тĕл курăнакан юрпа çăвăнкаласа унталлакунталла чупа пуçларĕç, майĕпенех пĕр çĕре пуçтарăнса тĕмескесем, тункатасем, каскасем çине ларса тухрĕç: мучи апат валеççе парасса кĕтеççĕ. Вунă-вунпилĕк арçын, пурте çамрăк та вăйпиттискерсем, икĕ витре кĕрекен хурана часах ним юлмиччен пушатрĕç. Сăнаса ларса, эп акă мĕн асăрхарăм: çирĕмсенчисем те, вăтăр-хĕрĕхрисем те, сарăрах вăрăм кăтра çӳçлĕ, яштака та сарлака хул-çурăмлă çамрăк паттăра, темшĕн пурте Князь тесе чĕнекенскерне, пăхăнаççĕ,

унăн кашни сăмахне хăлхана чикеççĕ, мĕн хушнине ҫавăнтах пурнăҫлаççĕ. Лайăхрах пăхрăм та, Князь мана ҫакăнта ертсе килнĕ йĕкĕтсенчен пĕри пулчĕ кайрĕ! Князь! Ҫапла ҫав, Князь терĕ вăл ун чух хăй ятне. Тепри — Барон. Тĕлĕнмелле ятсем пур иккен тĕнчере...

Князь сăпайлăн та уҫăмлăн калаҫать. Сăнĕнчен пăхсан, вăл питĕ ырă кăмăллă ҫын пулни палăрать. Пысăк ҫырă куҫĕсем, ăшă кулли чуна ăшăтса яраççĕ, ирĕксĕрех ҫак илемлĕ те вăйлă ҫын патне пырса: «Сывă-и, Князь тете, мĕнле ҫĕр каҫрăр?» — тесе ыйтас килет.

Апат ҫисе тăрансан, нумайăшĕ туртса ячĕҫ. Вара пĕрин хыççăн тепри таҫта кайса пĕтрĕҫ. Вĕсемпе пĕрле Князь та кайрĕ. Лагерьте мучи, эпĕ, Барон юлтăмăр. Баронпа мучи хӳшĕсене сӳтсе урăх ҫĕре куҫарчĕҫ. Малтанхи вырăна типĕ ҫапă сĕтĕрме хушрĕҫ. Эпир самантрах пилĕк-ултă ҫĕре ҫапă сĕтĕрсе купаларăмăр та чĕртсе ятăмăр. Купасем ҫатăртатса, хĕлхем сапса, ялкăшса ҫунаççĕ. Эпĕ, ниҫта кайса кĕмелле мар хавасланнипе, вĕсем тавра чупатăп, чăтлăха кĕрсе ҫапă сĕтĕре-сĕтĕре килетĕп. Ҫапă куписем пĕр вăхăт ҫĕкленсе ҫунчĕҫ те лăпланчĕҫ. Вара пачах пусăрăнчĕҫ те, юлашкинчен, кăвар ҫеҫ тĕлкĕшсе выртакан пулчĕ. Кĕлпе кăмрăк ҫеҫ тăрса юлсан, мучи таҫтан сарлака йывăҫ кĕреҫе, пысăк шăпăрсем йăтса килчĕ. Кĕлпе кăмрăка кĕреҫепе хырса пăрахса шăпăрпа шăлтăмăр, таса вырăна каллех хӳшĕсем туса лартрăмăр, шала утă-улăм тултартăмăр. Ҫапла вара каҫа валли «ăшă хваттерсем» хатĕр пулчĕҫ.

Кун хыççăн кун иртсе пычĕ. Ҫанталăк сивĕтнĕҫем-сивĕтет, юр ҫăвать. Тавралăх шурă тумпа пĕркенчĕ. Хĕл ҫитрĕ. Хĕл ҫитрĕ пулин те, ĕҫ пирки сăмах хускатакан никам та ҫук. Хӳшĕсем патне каллех виççĕн юлсан, пĕррехинче, хăра-хăрах Баронран:

— Тете, Атăлтан вĕтĕ чул хăҫан кăларма тытăнатпăр? — тесе ыйтрăм.

— Часах, часах, — ҫурăмран лăпкаса ăшшăн кулчĕ вăл. Мучи вара, темме хытă пăлханса та тарăхса, шăл витĕр каласа хучĕ:

— Эс мĕн, хăвăртрах путса вилес тетĕн-им? Пулă апачĕ пулас килет-им? Ĕлкĕрĕн...

Эпĕ тĕлĕннипе хытсах кайрăм: авă мĕнле иккен, ĕҫлеме кунта никам та шутламасть-мĕн. Куляннипе, эпĕ хуйха ӳкрĕм: хальччен, ҫуран утнă пулсан та, Питĕре тахҫанах ҫитеттĕм. Ăҫта лекрĕм эпĕ? Камсем ҫак ҫынсем?

Эпĕ кăмăлсăрне курса, Барон ман пата пычĕ:

— Эс, шăллăм, ҫи те ҫывăр, ҫи те ҫывăр, малашне пурăнма вăй пух, пиртен ан хăра...

Темиҫе кунтан ушкăн пуҫлăхĕпе, Княҫпе хăйĕнпе, калаҫса пăхма шутларăм. Вăл тунката ҫинче чĕлĕм туртса ларатчĕ, вăхăт-вăхăт айккинелле чăртлаттарса суратчĕ. Князь мана кăмăллăн кĕтсе илчĕ.

— Ну, мĕнле, тăванăм, сивĕ мар-и? Выҫă мар-и?

— Ҫук, тете, тавтапуҫах.

Князь асăрханса ҫеҫ ман ҫĕлĕке хыврĕ те ҫемҫе ҫырă ҫӳҫе тытса пăхрĕ, пуҫран ачашласа илчĕ.

— Аҫупа аннӳ вилни нумай пулать-и?

— Анне маларах вилчĕ, атте — нумаях пулмасть.

— Эхе-хей, апла иккен... — ассăн сывларĕ йĕкĕт ват ҫын пек. — Тетӳне Питĕрте епле тупăн-ха, Питĕр хули сирĕн ял пысăкăш кăна мар вĕт вăл, пы-ысăк хула? Ҫухалан эс унта, ачам, ҫухалан. Ан кай, хамăрпа юл. Ҫын тăвăпăр.

— Камсем эсир, тете? Хăҫан чул кăларма пуҫлатăр?

— Эпир-и? Ҫынсем. Чулне техник килсе ҫитсен кăларма тытăнасшăн. Эс пурăн, пурăн, нимшĕн те ан кулян...

Князь тете ăшшăн ĕнентерсе калаҫни мана кăштах лăплантарчĕ. Аванах ăнланатăп-ха: тăлăх-турата ниҫта та никам та ăшă йăва хатĕрлесе хуман. Хулинче ĕҫ тупаймасан, выҫсах вилетĕн. Кунта ҫапах, хӳшĕре пурăнсан та, хырăм тутă хуть. Лăпланса ҫеҫ ҫитетĕп, ҫынсем хăйсене хăйсем тĕлĕнмелле тыткалани каллех шухăша ярать: пĕр кĕтмен-туман ҫĕртен таҫта кайса ҫухалаҫҫĕ, ҫĕрĕпех таврăнмаҫҫĕ. Ир енне ҫеҫ килсе выртса кăнтăрлаччен ҫывраҫҫĕ те каҫ енне каллех саланса пĕтеҫҫĕ. Барон каҫхине Атăл ҫыранне тухса чылайччен ҫул ҫинелле пăхать, темĕн сăнаса тăрать.

Пĕр уйăх ҫын ҫăкăрне ҫисе ним тумасăр тенĕ пек пурăнни мана асапа кĕртсе ӳкерчĕ. Ҫуран утса та пĕр уйăхра Питĕре ҫитеттĕм. Кунта пурăнни мана малашне мĕн пама пултарĕши? Нимĕн те. Шанчăксăр та иккĕленӳллĕ пурнăҫ кунта. Тарас. Пуҫ сывă чух часрах тухас ку ахрат ҫырминчен!

Ҫын куриччен эпĕ хамăн хутаҫ пеккине тĕмсем хыҫне пăрахрăм та, Князь тетене тĕл пуласран шикленсе, каҫ пуласса кĕте пуҫларăм, йывăҫсем хыҫне пытантăм. Тĕттĕмленсен, вăрманалла чăмрăм, унччен хамăр килнĕ сукмак еннелле кайрăм. Сукмак ҫине тухасси пулмарĕ, темле ҫула тухрăм. Пĕр

вăхăт вăрман хĕррипе пынă хыççăн çул каллех вăрманалла кĕчĕ. Утрăм-утрăм, вăрман çаплах пĕтмест. Ир енне çеç мал енче йытă вĕрнĕ сасă илтĕнчĕ, вăрман та сайралчĕ. Хире тухнă çĕре ураран ура та иртми пулчĕ. Пĕр тĕмеске çине канма лартăм та, ыйха путасран шикленсе, темиçе минутран каллех ура çине сиксе тăтăм, шăла çыртса малалла талпăнтăм. Утса пынă май, пуçа темле шухăш та пыра-пыра кĕрет, вăхăтсăр вилнĕ атте-анне, акка аса килет, куç умне пĕр сăн хыççăн тепри туха-туха тăрать. Пуян Кантраттипе унăн çĕлен пек ывăлĕ курăнать... Шухăша кайнипе эпĕ асăрхаман та, умра икĕ пысăк мĕлке тăра парать.

— Чарăн, ăçта каян, мĕншĕн? — хаярăн ыйтрĕ тӳрккес сасă.

— Питĕре, тете патне, — шартах сикрĕм эпĕ хăранипе.

— Паспортна кăтарт.

— Паспорт тавраш çук ман. Хĕрхенĕр тăлăха...

— Паспорт! — хĕçĕпе чăнкăртаттарса кăшкăрчĕ жандарм.

Эпĕ сехре хăпнипе макăрса ятăм. Çакна курса, тепĕр жандармĕ питне çывăхах илсе пычĕ те мана куçран шăтарас пек пăхрĕ.

— Суятăн пулсан, асту...

Кĕсъене, хутаçа ухтарчĕç, нимĕн те тупайманнипе-ши е урăх сăлтавпа:

— Ут ху çулупа! — терĕç.

Яла кĕреспе салтаксем куртăм. Пусă патĕнче хĕрарăмсем, хĕрсе кайсах тем пирки тавлашаççĕ. Пăшаллă икĕ ватă çын иртсе пыраççĕ. Çак мучисем мĕншĕн пăшал йăтса тухнине пĕлес килнипе эпĕ вĕсен патне пытăм:

— Элле вăрçă хусканнă-и, асаттесем?

— Эс ăçтан килетĕн? — ыйту çине ыйтупа тавăрчĕç шăнса кӳтнĕскерсем.

— Вăрмантан.

— Эс пиртен лайăхрах пĕлме тивĕç мĕн пуçланнипе пуçланманнине.

— Ну, эпĕр унта вутă хатĕрлерĕмĕр.

— Вутă? Çĕрле-и?

— Çĕрле.

— Тьфу! Сан сивĕпе манку шăнса ларнă пулмалла. Ав çав виççĕмĕш кил — манăн пӳрт, кĕрсе ăшăн, ахаллĕн çул çинчех ӳксе вилĕн.

— А эсĕр ма шăнса тăратăр?

— Эпир — хурал.

— Кама хураллатăр?

— Икĕ пуян хуçана вĕлерсе çаратакансене сыхлатпăр.

Эпĕ ăнланнă пек туса пуçа сĕлтрĕм те мучи кăтартнă çурт еннелле утрăм. Çав хушăра хамăн пĕтĕм ӳт-пĕве пĕр шухăш çиçĕм пек çурса анса кайрĕ: «Ахрат çырми, хӳшĕсем...» Куçа хӳшĕсенче пурнакан тетесем, Княçпе Барон, яшка пĕçерекен мучи курăнчĕç...

3

Кириле мучи сасартăк калама чарăнчĕ те тула, уйăх çутине, тухса тăчĕ. «Атя-ха, шăллăм, татах кăшт çӳресе килер, тем юн çывăрса кайрĕ, пилĕк хытрĕ, — терĕ вăл, ывăç тупанĕ айĕпе кӳлĕ çинелле пăхса. — Çутă шыв... Чи ешĕл яшлăхăм ман, йывăр вăхăтра килчĕ пулсан та, çутă, тăрă шыв умĕнче иртрĕ. Пĕлесчĕ сан. Эстонире кӳлĕсем епле тăрă иккенне».

Эпĕ Эстун Кирилине пӳлсе пĕр сăмах та чĕнмерĕм: калаçтăрах ĕнтĕ, аса илтĕр хăйĕн яшлăхне. Тен, Хумкка та кайран, ватăлсан, аса илĕ-ха хăй Кириле старикпе çутă кӳлĕ хĕрринче утă çулса хуралланине. Тен, Хумккана та çутă шыв ватлăхра çине-çинех аса килĕ. Хама каллех виççĕмĕш сăпата тăратса, эпĕ Хумкка ятлă яш ачана Хумкка старик ролĕнче курма хăтланса пăхрăм, анчах та хал çитереймерĕм: эй, мĕн халех ватлăх пирки шутламалли пур, вунулттă та тултарман-ха... Кирлĕ-кирлĕ марпа халех пуçа çĕмĕрес мар. Ватлăхпа яшлăх çинчен шутлама пăрахса, эпĕ тăлăх ача Кириле Питĕре епле майпа çитсе ӳкнине пĕлесшĕн пултăм.

— Мучи, Питĕрне вара мĕнле çиткелерĕн?

— Питĕрне-и? Çуран. Икĕ пин çухрăм ытла çуран утрăм. Шăнса та вилмерĕм, выçă та пĕтмерĕм, утрăм та утрăм, юлашкинчен çапах та Питĕр хулине çитрĕм-çитрĕмех. Энтюк тетене, епле шырасан та, тупасси пулмарĕ. Питĕр хули, Князь каларăшле, чăнах та, пирĕн ялтан самай пысăкрах иккен. Ĕçе вырнаçса пулмĕ-ши тесе, портра сулланса çӳренĕ хушăра пĕр старикпе паллашрăм. Старик, типсе хăрса кайнăскер, пĕчĕк те кукăр кĕлеткине темле чĕтретерех утса пыратчĕ. Утса пыратчĕ тени тĕрĕсех те мар-ха вăл, сĕтĕрĕнсе пыратчĕ, пырать-пырать те чарăнса ӳсĕрет, юнлă сурчăк сурса пăрахса анакан

йĕмне хăпартать те малалла каять. Акă вăл чипер утнă çĕртех такăнчĕ те кăшт çеç татăлса анмарĕ, шĕлепки пуçĕнчен тухса ӳксе малалла кусса кайрĕ. Çакна асăрхаса, эпĕ ватă çын патне чупрăм, шĕлепкине çĕртен илсе тăхăнтартрăм та пăрăнса хам çулпа утасшăн пултăм. Старик тав туса пуçне сĕлтрĕ, вара каллех ӳсĕрме пуçларĕ.

— Йĕксĕк ĕçе пула сывлăха пĕтертĕм, — терĕ вăл хытах.

— Мĕнле ĕç пирки калатăр эсир, пичче? — ыйтрăм эпĕ, хам та ĕç шыраканскер.

— Асфальт ĕçĕ. Маçтăр эпĕ, вăтăр çул ытла çĕр айĕнче ĕçлерĕм. Ĕçĕ питĕ йывăр пирĕн. Нӳрĕ çапасран, снаряд хумалли складсен ăшчикне вĕри битумпа витеттĕмĕр. Склачĕсем пурте тенĕ пекех тинĕс тĕпĕнчен те аяларах, пĕр тумлам шыв ан лектĕр, нимле снаряд та ан тивейтĕр тесе çĕр тĕпне тунă ĕнтĕ. Асфальт маçтăрĕ пулас килсен, атя хампа, мана çын кирлĕ.

— Ăçта вара сирĕн кантур?

— Инженер управленийĕнче.

— А миçе çултан маçтăра тухайăп-ши?

— Ху ухмах та наян пулмасан, пĕр сезонрах.

Эпĕ калама çук савăнса ӳкрĕм. Каярахпа акă мĕн палăрчĕ: ватă маçтăра взятка тавраш кирлĕ мар иккен, эрехне те ĕçейми пулнă ĕнтĕ, укçи те хăйĕн хăйне çитсе пырать, перекетлени те самаях пур, ватлăхра выçă ларас çук. Вĕренекенне вăл часрах маçтăра кăларасшăн та хăй ĕçрен тухса ватлăхра канса пурнасшăн. Сывлăхĕ те япăх, çитменнине. Чăнах та, пĕр сезон тамăкра пулнă хыççăн, эпир старикпе управление пытăмăр:

— Ваше благороди, — терĕ вăл пуçлăха. — Эпĕ ватăлса çитрĕм, текех форт склачĕсем тăрăх çӳрейместĕп. Ак çак йĕкĕт, ман пулăшакан, эп кăтартарах тăрсан, кирек хăш ĕçе те лайăхах тума пултарать. Мана заместитель кирлĕ, килĕшĕр, ваше благороди?

Инженер-капитан ман çине ура тупанĕнчен пуçласа пуç тӳпине çити пăхса тухрĕ те килĕшсе пуçне сулчĕ.

— Пит аван, ĕçлетĕр.

Вара эпĕ пĕр чуллă-сăртлă çыран хĕрне кайса лекрĕм, фортсен тарăн путвалĕсенче эрни-эрнипе çухалса çӳрекен пултăм. Тимĕрбетон маччасен айĕнче ĕçлесси шахтăринчен пĕртте çăмăл мар: ниçтан уçă сывлăш кĕмест, сывлăш вĕри битум шăршипе, сĕрĕм-тĕтĕмпе лăках тулса ларать, сывлама, куçа уçма май пĕтсе çитет, çирен шапăртатса тар юхать,

пуç çаврăнать, хăсас килет, ытла хытă ӳсĕрнипе ӳпке çурăлса-татăлса тухассăнах туйăнать.

Икĕ çул хушшинче эпĕ çичĕ хутчен вилес пек йывăр чирлерĕм, юлашкинчен икĕ уйăха яхăн вырăнпах выртрăм, хăлха илтми, куç курми пулчĕ. Çавăн чух ĕнтĕ хăрах куç хытă хавшаса юлчĕ. Иртнĕ ылханлă саманан парни вăл, ĕмĕр тăршшĕпех канăç памарĕ мана, суккăрланасран аран хăтăлтăм ун чухне. Вара урăх ниççан та çав тамăка кайса пуçа чикмессе сăмах патăм. Вăл вăхăтра иккĕмĕш çул ĕнтĕ тĕнче вăрçи пыратчĕ. Портра çĕрĕн-кунĕн пневматически мăлатук шаккатчĕ, металл шăтаракан пăрасен сасси шăхăрса тăратчĕ. Декабрьте эпĕ пĕр канонерка çине ĕçе кĕтĕм: унта эпир çĕр çирĕм миллиметрлă çĕнĕ тупă вырнаçтараттăмăр. Пĕррехинче ирех порт управленийĕнчен çын килчĕ те пире, виçĕ йĕкĕте, порт кантурне пыма хушрĕ. Эпир пынă çĕре унта икĕ врач, темиçе тинĕс офицерĕ ларатчĕç. Çара илекен комисси иккен. Пăхакансем пирĕн сывлăхпа ытлашшиех интересленмерĕç, унтан-кунтан çавăркаласа пăхрĕç те: «Ăмăрткайăк!» — тесе кăкăртан чăмăрпа шан! тутарчĕç. Эпир комиссире çирĕме яхăнччĕ, пурте — «ăмăрткайăксем». Манăн пăсăк куçпа никам та интересленекен пулмарĕ. Çапла эпĕ, кĕтмен-туман çĕртен, тинĕс-çар флотне службăна лекрĕм. Пире çар ĕçне вĕрентес вырăнне кунĕн те çĕрĕн, талăкне вунултă сехет, карапсем çине груз тиеттереççĕ, тулли килнисене пушаттараççĕ. Çар карапĕсене ăсататпăр çеç, тĕрлĕ транспортсем килсе çитеççĕ. Тиесе пушатнисĕр пуçне пирĕн оборудование çĕннипе улăштарас ĕçе те тума тивет. Çыранти казармăра ним йĕрки çук. Ĕçеççĕ, туртаççĕ, картла çапаççĕ. Вăхăт-вăхăт акăш-макăш вăйлă çапăçусем пулса иртеççĕ. Матроспа матрос, матроспа кĕçĕн офицер юна ӳкиччен тӳпелешеççĕ. Кĕçĕн офицерсем матроссене, ватă матроссем тинрех службăна пынисене çиеççĕ. Пĕрре çапла моряксем тимĕрленĕ кивĕ крейсер çине виçĕ талăк пĕр канмасăр чукун балласт тиерĕç. Таçти залива тăшман эскадри кĕресрен фарватерне чукун тултарма шутланă-мĕн командовани. Çур çĕр иртсе пĕр сехетре тин офицер: «Шабаш!» — терĕ. Çамрăк матроссем казармăна аран-аран сĕтĕрĕнсе çитсе нарсем çине йăванса кайрĕç те йывăр ыйха путрĕç. Виç сехет каннă-и, çук-и, тăмаллине пĕлтерсе шăхăртса та ячĕç. Ӳт-пӳ тăхлан тултарнă пек йывăрланса кайнă, куç пачах та уçăлмасть. Малтан атăсене тупаймасăр хăшкăлтăм, тупсан — тăхăнаймасăр. Те вĕсем

пĕчĕкленсе ларнă, урана ниепле те кĕресшĕн мар. «Мур илесшĕ, урăх атăсем килсе хунă пуль, юри, куласшăн!» — ятлаçаççĕ матроссем. Кĕçĕн чин, вахта офицерĕ, ниçта кайса кĕрейми тилĕрсе, янраса çӳрет, çăварĕнчен сурчăк сирпĕнет. Эпĕ ун куçĕ тĕлне пулах кайрăм та тĕлĕннипе çăвара карса, куçа чарса пăрахрăм: умра тилĕ сăмси пек шĕвĕр пит-куçлă, чăваш сăнлă, самаях тĕреклĕ çамрăк офицер тăрать. Мана палларĕ-и, çук-и, пĕлместĕп, эпĕ тӳрех палласа илтĕм: Пуян Кантратти Ехремĕ! Тĕлĕннипе тата пăлханнипе ниепле те хăрах атта урана лектереместĕп, çавна пула ӳсĕр пекех курăнатăп пулмалла. Ехрем ман умах çитсе тăчĕ:

— Пĕтĕ хĕрарăм! Ĕне! — çухăрса ячĕ вăл. Унтан сăран перчеткипе мана икĕ енчен çутăлтара-çутăлтара илчĕ. Çилĕ тăвăлса килнипе, куçăм курми, хăлха илтми пулса ларчĕ, ялта аттене уретниксем хĕненĕ чух хам унта ыткăнса пыни, ман çула çак çĕлен, кулак сĕлеки, пӳлсе хуни яр-уççăн аса килчĕ. Пит тăрăх пĕрчеткепе мар, каллех чĕн саламатпа туртса каснăн туйăнчĕ. Эпĕ, сывлăш пӳлĕнсе килнипе хаяррăн кăшкăрса ярса, тăшман çине урнă вăкăр пек ыткăнтăм, Ехреме тĕшĕрсе антарса таптама тытăнтăм. Юлташсем чарман пулсан, татăкăнтатăкăн çурса тăкаттăм. Мана, пуçран темле хытă япалапа çапса анратса, çыхса пăрахнă. Пуç тăрăх пĕр витре сивĕ шыв ярсан тин тăна кĕнĕ эпĕ. Тăна кĕрсенех, конвойпа гауптвахтăна ăсатрĕç. Портри гауптвахта начальникĕ, служба пĕтерсе хăй ирĕкĕпе флота юлнăскер, йĕксĕк, матроссем мăшкăлласа «шкура» текенскер, мана «смирно» тăма хушрĕ. Эпĕ яштах тăсăлса тăрсан, винтовкăллă икĕ конвоир умĕнчех йăлтăр-ялтăр çупса ячĕ. Унтер-офицер çине эпĕ çисе ярасла пăхрăм пулмалла, вăл ман умран унталла-кунталла утса иртрĕ те, темрен шикленсе, хăвăртрах мана йышăнни çинчен пĕлтерекен хут çине ал пусма пĕшкĕнчĕ. Ал пуссан: «Пĕрремĕшне!» — терĕ те разводящине куçĕпе виçсе илсе таçта тухса кайрĕ. Шăвăнас, терĕ пуль, темрен тем сиксе тухма пултарать, матроссем халь, вăрçă вăхăтĕнче, кашкăрсем пекех хаяр. Йĕксĕксем яланах тенĕ пек хăравçă пулаççĕ.

Пĕччен лармалли камерăра стена çумне пĕчĕк сĕтел çыпăçтарса хунă, ларма пукан пур, леререх — çакăнса тăракан койка... Койкине кăнтăрла питĕрсе илеççĕ, выртса канаймастăн... Йĕксĕк çупнă вырăнсем вут пек пĕçереççĕ. Вăт йытă! Янахне çапса çĕмĕресчĕ. Тен, пирĕн кучченеçе те тутанса пăхăнха, моряксем кивçене юлакан марччĕ.

Виçĕ кунтан хурал улшăнчĕ. Ристансене пăхса çӳренĕ чух çĕнĕ хурал пуçлăхĕ ман пата та кĕчĕ. Хăй çăра уççисемпе чăнкăрчăнкăр! тутарать. Куç хĕссе илчĕ те кулса ячĕ:

— Начальниксене мĕн сăтăр турăн?

— Тĕшĕрсе тăкрăм.

— Кама?

— Пĕр çĕлен-калтана.

— Уççăнрах каласан?

— Пĕр ентеше. Çĕрме пуян ачи...

— А-а... Ăнланатăп, ăнланатăп. Класла курайманлăх. Мухтатăп...

— Мухтатăп, тетĕр-и? Мĕншĕн?

— Кулак ачине, юнĕçене, тытса силленĕшĕн.

— Эсир ăна паллатăр-и вара?

— Кăна палламастăп та, ыттисене, чылайăшне, паллатăп. Тĕпрен илсен, вĕсем пурте пĕрешкел.

— Кун ашшĕ, Пуян Кантратти, виçĕ тĕп юманшăн аттене пĕтĕм ял умĕнче саламатпа хĕнеттерчĕ, атте вара мăшкăла тӳсеймесĕр çакăнса вилчĕ.

— Питĕ шел. Анчах та эсĕ шухăш-кăмăлна ытла та пытармасăр калаçатăн. Капла майпа чунна турра пама та часах пулать.

Пирĕн калаçăва разводящий çăварне карса итлет. Эпĕ хам ытла та пысăк йăнăш тунине тинех ăнланса илтĕм: эх, айван, кама каласа паратăп хамăн хуйха-суйха? Хурал пуçлăхне. Тарăхса шăла çыртрăм. Караул начальникĕ мана ура тупанĕнчен пуç тӳпине çити, куçне мăч та тутармасăр, пăхса тухрĕ те тем аса илме хăтланса сылтăм аллипе çамкине тытрĕ. Унтан вĕсем урăх ним те каламасăр камерăран тухса кайрĕç, урăх ниçта та кĕмерĕç. Эпĕ шухăша путрăм. Тепĕр сехетрен çав унтер-офицерах ман камера алăкĕ патне пырса тăчĕ, ман çине вăрттăн сăнаса пăхрĕ. Мĕн кирлĕ ăна манран? Тен, ку та лешĕн пекех йĕксĕк, чеерех çеç? Эпĕ те пăхнине курсан, унтер-офицер пăрăнчĕ, анчах нумайлăха мар. Çур сехетрен вăл таврăнчĕ те камерăна кĕмсĕртеттерсе уçрĕ, тимĕр бак йăтса кĕчĕ. Бакĕнчен тутлă яшка шăрши тухать, сăмсана кăтăклать, сĕлекене юхтарать. Кĕсйинчен çăкăр чĕлли кăнтарса тăрать. Алăка хупрĕ те, ăшшăн йăл кулса, пысăк çырă куçĕсене йăлтăртаттарса, сĕтел патне пычĕ:

— Эп, шăллăм, палларăм сана, — терĕ вăл шăппăн, — эсĕ, шăпăрлан, палласшăн мар иккен?

Эпĕ шартах сикрĕм. Ытла та паллана сасă! Нивушлĕ?

— Князь тете! Тăванăм...

Князь яшкипе çăкăрне сĕтел çине хучĕ те мана ыталаса илчĕ, пĕчĕк ачана чуптунă пек питçăмартинчен чуптурĕ.

— Мĕнле-ха эс, шăллăм, — терĕ вăл шывланнă куçĕсене ал тутрипе типĕтсе тата куççульне çăтса, — тӳрех паллаймарăн? Князь эпĕ... Князь тетӳ, тĕрĕсрех каласан, Иван Ларионов. Эх, Кирюш, Кирюш, ытла час манатăн-çке тусусене.

— Манман эп, тете, нихçан та манас çук. Эсĕ ун чух сухалсăрччĕ, халĕ, авă, епле хӳхĕм мăйăх пĕтĕрсе янă.

— Эпĕ ун чух айван пулнă, йăнăш çул çинче тăнă, халĕ вара манăн пачах урăхла платформа. Пуян хуçасен кĕсйисене тавăрса текех хĕçпăшал туянмастпăр, Ленин юлташ хушмасть...

— Эпĕ сире ун чух хурахсем пуль тенĕ, çавăнпа пăрахса тартăм. Чут çеç жандармсен аллине лекеттĕм.

— Эпир те кăшт çеç çакланмарăмăр, анчах чеерех пултăмăр, вĕсене асăрхасанах ахрат çырми тăрăх Атăл хĕрне тухрăмăр та пĕр кĕпĕрнерен теприне куçрăмăр.

— Вăрмансенче пурăнмарăр пуль урăх?

— Çук. Саланса пĕтрĕмĕр. Эпĕ, сăмахран, сулă юхтаракана кĕтĕм: вăрçă пуçлансан, çара илчĕç те çырăва лайăх пĕлнипе унтер туса хучĕç. Унтере вара мăйăхсăр пачах та килĕшмест, мĕнле унтер вăл пĕтĕрсе янă хӳхĕм усси пулмасан!

Иван тетен (Княçăн) ырă сăнĕнчен пĕртте кулă çухалмасть. Эпĕ хаштах сывласа ятăм та, хама малашне мĕн кĕтнине астуса, пуçа усрăм. Иван çакна тӳрех курчĕ.

— Сана мĕн пуласса пĕлетĕп, — терĕ вăл, кулма пăрахса. — Çар трибуналĕ, анчах эс ан кулян, эпĕ йăлтах шутласа хутăм: чирлерĕм тесе, тухтăр патне яма ыйт, тухтăр патне кĕнĕ чух коридорта сылтăмри алăка тĕртсе пăх, эсĕ пынă çĕре эпĕ ăна уçтарса хуратăп, асту — сылтăмри пĕрремĕш алăк.

— Юрать... сылтăмри пĕрремĕш алăк.

— Конвоирсем сисмен вăхăтра йăшт! тухатăн та урамри халăх хушшине кĕрсе çухалатăн.

— Тавтапуç...

— Эпĕ сана вокзалта кĕтсе илĕп, поезд çине билет хатĕр пулĕ.

— Юрать, Иван тете... Эсĕ каланă пекех тăвăп.

Иван, виççĕмĕш хут хурала килсен, мана лазарета кайма хут çырса пачĕ. Пире, кӳршĕ камерăри тепĕр матроспа

иксĕмĕре, виçĕ конвоир часах тухтăр патне хуса та кайрĕç. Лазаретра чирлĕ рабочисемпе матроссем туллиех кĕшĕлтеттеççĕ. Конвоирсенчен пĕри, аслăраххи пулас, манпа килнĕ матроса тухтăр патне илсе кĕчĕ, ытти иккĕшĕ, çанă пек чикаркка чĕркесе, пĕр этем хăй йытти çинчен тем суйнине итлеме пуçăнчĕç.

— Ниепле те ăнланаймастăп, — суять лешĕ. — Те йытта эп хăтартăм, те йытă мана хăтарчĕ...

Суеçĕ матрос халапне итлесе пĕтересси пулмарĕ, атă сăмсипе сылтăмри алăка тĕксе пăхас терĕм, уçăлчĕ! Иван каланă пек, йăшт! çеç турăм вара, урама сиксе тухрăм та хĕвĕшекен халăх хушшине чăмрăм.

Эпĕ вокзала çитнĕ çĕре Иван билет тупса, вырăн йышăнса хунăччĕ ĕнтĕ, пуйăсĕ те халь тесен халь тапранса каяссăн хашкаса тăратчĕ.

— Тепре куриччен, шăллăм, ан манса кай тетӳне, ак сана паспорт: халĕ ĕнтĕ эсĕ Эльмуков мар, Иванов, çуралма та Чистай уесĕнче мар, Чĕмпĕр енче çуралнă. Кирек ăçта кай — çул уçă, — терĕ Иван тете, мана инçе çула ăсатса. Эпир пĕртăвансем пек пĕрне-пĕри ыталаса чуптурăмăр. Те тĕл пулаятпăр малашне, те çук, ăна никам та пĕлмест. Самани ытла та ахăрса кайрĕ-çке. Эпĕ ун чух çапла шухăшласа пăшăрханни чăнахах пулчĕ: Иван Петрович Ларионов, граждан вăрçи вăхăтĕнче, вунсаккăрмĕш çул, Хĕвелтухăç фронтĕнчи пиллĕкмĕш çарăн полк комиссарĕ Шур Атăлшăн пынă хаяр çапăçура паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Çакăн çинчен мана унăн тусĕсем чылай вăхăт иртсен çырса пĕлтерчĕç...

4

Кириле мучипе эпир хамăр утта мар, колхоз утине хураллама юлнă кĕçĕр. Пирĕн нимле пăшал та, йытă та çук, паллах. Пăшал... Мĕне кирлĕ вăл ялти хуралçа, унпа персен те çӳлелле çеç пеме пулать, вăррине пеме юрамасть. Утă вăрланăшăнах пере-пере пăрахсан, пĕтрĕмĕр, утă çинче капла мĕн пулса тухĕ-ха вара? Кашнинех утă кирлĕ, улăхĕсем пирĕн хĕсĕкрех, вĕсене те колхоз çулать. Эх, хăçан ларекра сĕт сутма пуçлĕ-ши колхоз? Атте çавăншăн тăрăшать те-ха, ларекне ниепле те туса пĕтерсе хута яраймаççĕ. Ларек уçсан, мĕн тума нушалана-нушалана килте ĕне усрамалла? Мĕн чухлĕ чăрмав

унпа, ачана пăхнă пек пăхас пулать ăна, ахаллĕн сĕт памасть. Хуралта пире йытăсăрах лайăх, пĕрмай туллашса хăлхана йĕрĕнтерекен çук капла, вăрри килес пулсан, ăна çич çухрăмранах сисетпĕр-ха, суккăр та, хăлхасăр та мар. Хамăр çеç эпир хуралта, пире шухăшлама та, сăмахлама та никам чăрмантаракан çук.

Хальхинче эпир ката хĕрне çитиех кайрăмăр.

— Çак вăрман, — терĕ мучи, — эпĕ ача чух вĕтлĕх çеçчĕ. Халĕ пăх-ха, мĕн тери хăватлă юмансем лараççĕ. Атя-ха çавăнталла, Павăл хăртни текен лаптăкалла, аттене çав çул çинче тупса тухнăччĕ.

Эпир Павăл хăртнинелле çул тытрăмăр.

— Эстонире, — терĕ Эстун Кирили шавламасăр пырсан-пырсан, — эпĕ пĕр утрав çине лекрĕм...

— Эс кун пирки каларăн ĕнтĕ, Чарлан утравĕ çине.

— Çапла, Чарлан утравĕ çине... Çар трибуналĕнчен тарса хăтăлсан пулчĕ ку. Пĕр паллана механик мана Эстоние каякан пăрçĕмренĕн кăмрăк шăтăкне пытарчĕ. Карап çитес çĕре çитсе чарăнсан, механик кочегарсем патне анчĕ те çак вырăнта чылай тăма тӳр килессине пĕлтерчĕ. Кочегарсем çăвăнса тасалчĕç, çĕнĕ тум тăхăнса çыран хĕрне тухрĕç. Вĕсемпе пĕрле кочегаркăран механик та çӳле хăпарчĕ, анчах унта нумай тăмарĕ, каялла таврăнчĕ. Вăл шаккаса паллă парсан, эп шăтăкран пуçа кăлартăм.

— Ăçта чарăнтăмăр?

— Пирс патне, анчах та çырана тухма тăхта-ха.

— Мĕншĕн?

— Тепре тĕрĕслесе кĕрем.

Эпĕ пытаннă çĕртен ĕçеленсе тухрăм та çирен кăмрăк тусанне шаккаса тасатрăм, çăвăнтăм. Çав вăхăтра трап тăрăх механик хăпарчĕ.

— Халĕ тухма юрать. Тăхта-ха, чей ĕçĕпĕр, ан васка...

Механик патĕнче чей ĕçсе ларнă чух вăл мана иллюминатортан хăш çулпа каймаллине кăтартрĕ. Паçăрах каларăм ĕнтĕ, утравĕ пысăк мар, кайран пĕлнĕ тăрăх, тăршшĕ вунă, сарлакăшĕ пилĕк çухрăм. Кăнтăр енче ял пур иккен, леререх тата тепре пур тет. Манăн кăнтăр енчине çитмелле, унта шанчăклă çын кĕтет. Утрав çине тин ура ярса пуснине никама та пĕлтерес мар тесен, яла çитмелли çула никамран та ыйтмалла мар. Çавăнпах ĕнтĕ механик ман чăматана йăтрĕ те çырана тухрĕ.

Ăна вăл пысăк чул хыççĕнчи виçĕ хыр патне, сукмак çине, кайса лартать, каялла таврăнать те, эпĕ механикпа сывпуллашатăп.

Тус çур сехетрен таврăнчĕ. Унпа эпир çырана тухрăмăр та, хыр вăрманĕ хĕрне çитсен, ал парса уйрăлтăмăр.

Сукмак тăвалла кукăркаланса чупать. Çине-çинех гранит чулсем тĕл пулаççĕ, çынсем те ирте-ирте кайрĕç, тĕлĕнсе пăхса илеççĕ те малалла, хăйсен çулĕпе, утаççĕ. Чăматана никам та тĕкĕнмен. Ун патне çитсен, лăпланса, кăвак валун çине лартăм, çăмăллăн сывласа ярса, хыр шăршиллĕ сиплĕ уçă сывлăша кăкăр туллин çăта пуçларăм. Кăмрăк шăтăкĕнче эпĕ икĕ талăка яхăн выртнă. Ытларах сывласа ларнă пулсан та пăсмастчĕ те, каймалла, шанчăклă çынна шыраса тупмалла. Вăл мана çар строительстви валли чул хатĕрлекенсен ушкăнне ĕçе вырнаçтарма тивĕç. Чăматан йăтса тĕмсем хыçне кĕтĕм те тума улăштарса тăхăнтăм: хура костюм, галстук, пальто. Вара васкаса ялалла утрăм. Чулçăсен кантурне çăмăллăнах тупрăм. Унта ыраш улăмĕ пек сарă сухаллă секретарь, мана кирлĕ çын, пĕчченех ларатчĕ. Пăрçĕмĕрен механикĕн ятне асăнсан, вăл ура çине тăчĕ те мана алă пачĕ.

— Сирĕн пирки инженерпа калаçрăм, — терĕ вăл, килнĕ çынна пукан сĕнсе. — Халĕ çеç тухса кайрĕ. Чăматанна хăвар та чуп-ха ав çав сукмакпа, — секретарь кантăкран сăрт айккинелле кăтартрĕ, — инженер халь çеç аялалла анса кайрĕ, эс ту урлă каç та ăна хирĕç тух...

Эпĕ çитнĕ çĕре инженер лаши пирс патĕнче тăратчĕ. Хăй темле майрапа калаçать. Калаçса пĕтерчĕç те лашине буксир патне уттарса пычĕç. Çак вăхăтра эпĕ çитрĕм.

— Ваше благороди, сире чăрмантарма юрать-и?

— Мĕн шуйттанĕ? Мĕн кирлĕ сире манран?

— Механик сире çуралнă кун ячĕпе салам ярать!

— А-а... Таркăн моряк Иванов, Чĕмпĕр таврашĕнче çуралса ӳснĕскер? Кăтартатчĕç-ха сана Чĕмпĕр, ху Эльмуковран епле майпа Иванов пулса тăнине пĕлеймесĕрех леш тĕнчене ăсанаттăнччĕ, сиссе те юлаймастăнччĕ, Княçа тав ту. Ах-ха-ха-ха-ха! — инженер таврана янратса, пĕççине икĕ аллипе çапа-çапа кула пуçларĕ, унпа пĕрле майри те ахăлтатать. — Эх, Кирюш, халĕ те паллаймарăн-и? Кил ĕнтĕ ыталам!

— Барон?!

— Мĕн баронĕ пултăр, Вячеслав Петрович эпĕ, Вячеслав Петрович Ларионов, Ваня манăн пичче вăл...

Çакна илтсен эпĕ, тĕлĕннипе, юпа пек хытса тăтăм. Сăнасарах пăхрăм та, чăнах та Барон. Çав вăхăтра буксир тапранса кайрĕ, эпир виççĕмĕр те лав патне таврăнтăмăр, ларса кантура килтĕмĕр. Барон — ман пулас начальник, çавăнпа та, хăй каласа памасăр, эпĕ унран нимĕн те ыйтса пĕлесшĕн пулмарăм. Кантурта вăл мана таса хут листи тăсса пачĕ:

— Çыр-ха çакăнта мĕн те пулин.

— Мĕн?

— Ну: Зина, эп сана юрататăп, — те.

— Тавай.

Эпĕ шурă хут çине питĕ тăрăшса хăвăрттăн: «Зина, эп сире пачах та пĕлместĕп», — тесе çырса хутăм. Барон хута илчĕ те, вуласа пăхсан, савăнăçлăн кăшкăрса ячĕ:

— Зина, пăх-ха, манран темиçе хут хитререх çырать, писарь, каллиграф!

Эп çырнине паçăрхи майра та пырса пăхрĕ, «Зина, эп сире пачах та пĕлместĕп», тенине курсан, хĕрелсе кайрĕ.

— Зина вăл эпĕ пулатăп.

— Питĕ аван, — тавăртăм хаваслăн.

Барон хута чăмăркка туса карçинккене пырса пăрахрĕ те:

— Строительство материалĕсен начальникĕ пулатăн, — терĕ. — Уйăхра виççĕр тенкĕ тӳлетпĕр, çиме те, тумланма та, хĕрсемпе çӳреме те çитет. Хыт тăрăшса ĕçлесен, преми илетĕн. — Кĕтесре ларакан секретаре кăшкăрчĕ: — Тусăмăра хваттере вырнаçтар!..

Сар сухал мана çыран хĕррипе ертсе кайрĕ. Ял хĕрринчи пĕр пӳрт умне çитрĕмĕр.

— Ырă кун пултăр! — ним именмесĕр, тӳрех пӳрт алăкне уçрĕ юлташ.

— Хăвăра та — ырă кун.

Ватă карчăк кăштăртатса тухрĕ, ун хыççăн старик пуçĕ курăнчĕ. Эпир шала кĕрсе тăтăмăр. Мĕншĕн килнине пĕлсен, малти пӳртне илсе кĕчĕ те кравать çине кăтартрĕ:

— Акă сана кравать, пурăн, тархасшăн, ачасем çук пирĕн, никам кансĕрлекен те пулмасть.

Пӳлĕмĕ таса. Чӳречисем иккĕшĕ кăнтăралла, иккĕшĕ хĕвелтухăçнелле, дюнăсем çинелле, пăхаççĕ.

Тепĕр кун эпĕ кантура ĕçсемпе паллашма кайрăм. Пĕръевĕрлĕ кичем пурнăç пуçланчĕ. Ялта арçынни те, хĕрарăмĕ те эстонла çеç пуплеççĕ. Ĕçре тăлмач урлă каласа тивет. Эстон

чӗлхине вӗренме ӗмӗтленсе пӗринпе ҫыхлантӑм, вӑл, эсрел, мана веҫех намӑс сӑмахсем вӗрентсе тултарнӑ. Пӗр сӑмахне ҫеҫ каларӑм, намӑс сӑмах та пулман-ха, «юратап» тени ҫеҫ пулнӑ, хӗрарӑмсем ҫӗре пусса антарчӗҫ те ӗнсе хыҫне, хӗве юр тултарса ячӗҫ, хӑйсем вилес пек ахӑлтатаҫҫӗ.

Ют ҫӗре лекрӗн-тӗк, чӗлхине пӗлнисӗр пуҫне, йӑли-йӗркине пӗлни те питӗ кирлӗ. Ахаллӗн темӗн те курса тӑма пулать. Эстон пулӑҫисем, сӑмахран, кайӑк кӑвакалне вӗлернӗшӗн хытӑ ҫилленеҫҫӗ, ҫапла туни пысӑк ҫылӑх, теҫҫӗ. Кӑвакал тытнӑ ҫынна курсан, эстонец-пулӑҫӑ шурса-кӑвакарса каять:

— Мӗн сана, пулӑ сахал-им, турӑ кайӑкне вӗлеретӗн?! — кӑшкӑрса тӑкать вӑл. Ҫакӑн хыҫҫӑн санпа урӑх калаҫма та, сывлӑх сунма та пӑрахать.

...Тӗнче вӑрҫи ҫак пӗчӗк утрав ҫинчи мӑнаҫлӑ хырлӑхсене те килсе пӑлхатрӗ. Пӗрин хыҫҫӑн тепри, ӗмӗрхи хырсем кӗрслетсе ӳкеҫҫӗ, чул сӑртсене сирпӗтнӗ сасӑ тупӑсем пенӗ пек кӗрлесе тӑрать. Чул форт, шоссе тунӑ ҫӗре каять. Барон ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ лавсем хӑвала-хӑвала килет. Вӑрман, чул тиенӗ лавсем вӗҫӗ-хӗррисӗр тӑсӑлаҫҫӗ.

Сӗрекесӗр чухӑн пулӑҫсем ҫемйи-ҫемйипе стройкӑра ӗҫлеҫҫӗ. Хӗрсем вӗтлӗх вӑрман иртеҫҫӗ. Кӑкланӑ тӗмсем айӗнче — ҫур метр хулӑнӑш торф. Ӑна сирсен, пӑхатӑн та, шӑкӑрах яп-яка та ҫаврака чул выртать. Чулсем хушшинче ыйха путнӑ ҫара ҫерҫисем нумай. Пӗррехинче бурильщиксене динамит, шнур, запалсем валеҫсе патӑм та хӗрсем патне пытӑм. Вӗсем мана кӑшкӑракӑшкӑра, кула-кула кӗтсе илчӗҫ. Пурте хӑйсем «пӑх-ха, пӑх-ха!» тесе ҫӗрелле кӑтартаҫҫӗ. Пӑхрӑм та — ҫӗрте темӗн чуль ҫара ҫерҫи! Хӗрсем мана юр ҫине ҫӗклесе ҫапрӗҫ те ӗнсе хыҫне ҫав ҫерҫисене тултара пуҫларӗҫ. Эпӗ ҫӳҫеннипе тата йӗрӗннипе ниҫта кайса кӗреймесӗр тапаланатӑп. Мӗн куратӑм пулӗ малалла, пӗлместӗп, пӗр хӗрачи: «Начальник, начальник килет!» — тесе ҫухӑрса ячӗ, пурте айккинелле тарса пӗтрӗҫ, хӑвӑртрах ӗҫе пуҫӑнчӗҫ. Барон пӗсехине каҫартса, никам ҫине те пӑхмасӑр, чӑнах та калама ҫук пысӑк начальник тейӗн, ман паталла утать:

— Хулӑпа купарчаран хӗртмелле вӗсене, хулӑпа, эп сире хӗрсемпе вылянӑшӑн ҫавӑн чухлӗ шалу тӳлетӗп-им?! — аякранах кӑшкӑрса килет вӑл. — Вӗсемпе хивререх пулас пулать, — тет ман пата ҫитсе, вара хӑлхаран ҫеҫ: — Ахаллӗн ху та сисмӗн, Кивӗ Ял кӗрӳшӗ пулса та тӑрӑн, — тесе хурать. Иксӗмӗр те ахӑлтатса кулатпӑр...

Пин те тăхăрçĕр вунултăмĕш çулхи çуркунне эпĕ сунара çӳреме ярăнтăм. Сунара каймасăр пĕр кун ирттерместĕм. Çыран хĕрринчи пĕчĕк кӳлĕ пеккисене кайăк кăвакалĕсем пĕлĕт пек килсе хупларĕç, ĕшнесенче ăсан кĕтĕвĕсем çӳреççĕ. Çĕрле çывăхах пытанса тăратăн та пĕр-пĕринпе çапăçакан ăсан аçисен ушкăнĕ çине тĕллесе перетĕн, иккĕ-виççĕ персе вунна яхăн ăсан тытатăн. Çыран хĕрринче кайăк-кĕшĕк сасси шавласакĕрлесе тăрать. Сунарçăсем пĕрне-пĕри хăлхаран кăшкăрса та аран çеç илттереççĕ.

Барон ĕçлекенсем патне кĕтмен-туман çĕртен килсе тухма юратать. Зинăпа кантуртан тухать те, яла кĕмесĕр, вăрмана анать, ик-виçĕ çухрăм çуранах утаççĕ. Вара, тĕмсем хыçне пытанса, ĕç мĕнле пынине сăнаса тăраççĕ. Рабочисене мĕн чуль ĕç тунăшăн мар, кашни куншăн тӳлетчĕç, çавна пула нумайăшĕ ĕçлес вырăнне сăмах çапса ларма юратарах паратчĕç. Çавăн пек çитменлĕхсене асăрхасан, Барон хăйĕн майрипе кантура таврăнатчĕ те аслатиллĕ тăвăл кăларатчĕ. Пĕррехинче эпĕ ăна çакăншăн ӳпкелеме пуçларăм: «Эсĕ пĕртте пиччӳ пек мар, халăха хисеплеме пĕлместĕн», — терĕм. Çапла калаçан, вăл пушшех те тарăхса кайрĕ:

— Çав ăçтиçук кахалсем халăх-и? Жуликсем вĕсем, ним тумасăрах укçа хырса выртасшăн. Намăссăрсем!

Эп, унпа килĕшмесĕр, каллех ăна тапăнатăп:

— Кам валли крепость тăватăн эсĕ? Патшапа унăн йыттисем валли. Вăрçă кама кирлĕ? Патшана, капиталистсемпе помещиксене. Мĕн тума кирлĕ вăрçă? Çĕнĕрен кĕрлесе килекен революцие юн ăшне путарма.

Çакна хирĕç Барон, куçне-пуçне чаркаласа, çапла ответлерĕ:

— Тупăннă политик, революционер! Патша валли мар, Раççей валли тăватăп эпĕ, Раççей тесе вара помещикпа капиталиста мар, хресченпе рабочие шутлатăп. Патшана кутран тапса сирпĕтсен, тарçисене хăваласа ярсан, çак фортсем, чикĕри крепоçсем тăшманран кама хӳтĕлеççĕ? Питĕре. Питĕрти рабочи класа. Раççей хапхине...

— Хăçан тапса сирпĕтĕç-ха вĕсене?

— Ан васка.

Çавăнпа пирĕн калаçу татăлать. Вара Барон, Зинине кантура пăрахса хăварса, сунара каять, приказ парсах мана хăйпе илет.

— Акă сана виçĕ патрон, — тет вăл çыран хĕрне çитсен, — мана виçĕ кăвакал илсе килсе паратăн.

Çыран хĕрринчи хăйăрпа пырса, эпĕ хăмăшсем хушшинче, залив пеккинче, кайăк кăвакалĕсем асăрхарăм.

— Ваше благороди, ав çав валунсем хыçне пытанса, çывăхарах кĕрĕр!..

— Мĕн тетĕн эс мана? Благороди? Парăп эп сана благороди, ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм, ваше благороди!

— Çук, ним те ăнланмарăн, ухмах!

— Лараканнисене перĕр!

— Пыр, хăратса яр.

Çӳллĕ чулсенчен пăрăнса кăвакалсем патнех пытăм та хăратса ятăм. Аçапа ама кăвакал пăр! çеç çӳлелле вĕçсе хăпарчĕç. Барон иккĕ персе икĕ кăвакалне те лектерчĕ, пăшал кĕпçипе ăçтарах ӳкнине кăтартрĕ. Чĕркуç таран шыва кăвакалсем патне кĕтĕм, илсе тухсан, ама кăвакалне шеллесе:

— Кăна пемелле марччĕ, — терĕм.

— Ма?

— Çăмарти пур унăн.

— Эс ăçтан пĕлен, хыпаласа пăхрăн-и элле?

— Хыпаласа пăхрăм. Ача чух анне хур амисене хыпаласа пăхтаратчĕ.

«Ача чух», «анне» тенисене илтсен, Барон тĕксĕмленчĕ, калаçăва урăххи çине куçарчĕ:

— Аттуна хывса шывне тăк, ахаллĕн шăнса пăсăлатăн. Чимха, эсĕ мĕншĕн вăрăм кунчаллă атă туянмастăн, шурлăхра çӳремеллине?

— Кунти лавккара çук, хула — инçе.

— Хулана кайма юрамасть, ярса тытĕç...

Кăвакал урăх перес темерĕмĕр, шыв чăххисем шырама пуçларăмăр. Шыв чăххисем ăçта пуррине эпĕ аван пĕлеттĕм: сăрта хăпарас пулать, унта пысăках мар кӳлĕ çуталса выртать, кӳлĕ хĕрринче шыв чăххисем тем чухлех. Сăрчĕ самаях чăнкă, çулпа çаврăнса кайма тивет.

— Тискер кайăк иртеймен вырăнтан сунарçă иртетех, — терĕ Барон паттăррăн. Вара эпир тӳррĕн кайма шутларăмăр. Сăрта талккăшĕпех тĕрлĕ пысăкăшлĕ шултра чулсем сырса илнĕ. Хушшисенче хырсем ӳсеççĕ. Хăпарма йывăррине туйса, атăсене хыврăм та çарран, чул çинчен чул çине сике-сике, çӳлел-

ле улăхса кайрăм. Барон часах ывăнчĕ те сăрта вăрçа пуçларĕ. Пĕчĕк кӳлĕ патне çитнĕ çĕре йĕп-йĕпе тара ӳкрĕ, хăй çапах тĕл перет, шуйттан, кашни пемессерен пĕр шыв чăххи тытать. Эпĕ те ларакан икĕ чăххине персе илтĕм.

Хĕрӳ ĕçре тата сунарта сисĕнмесĕрех çу иртсе кайрĕ, хĕл çитрĕ. Хĕлле вăрманта калама çук шăп. Пĕр улатакка çеç хăйĕн кулленхи ĕçне тăвать: сăмсипе йывăçа таккать, хăйне валли апат шырать. Ăсансем, пĕсехисене хурăн папки тултарса, юр çине персе анаççĕ те юр ăшне кĕрсе çывраççĕ. Мулкач-тăр, мĕн-тĕр ыткăнса иртсен, хăраса вăранса каяççĕ, пăрлатса вĕçсе хăпараççĕ. Тăмансем пуçланчĕç, ик метртан çынна уйăрса илейместĕн. Çакăн пек çанталăкра ĕçе тухасси пирки калаçмалли те çук. Эрне хыççăн эрне, сисместĕн те, уйăх та пĕрин хыççăн тепри иртет. Пĕр тăманлă кун эпĕ хăнана кайса килме шутларăм. Кӳршĕ ялти Яак ятлă рабочи мана çине-çинех хăнана чĕнетчĕ. Вăл, питĕ хаваслăскер, шӳтлеме юрататчĕ, пире эстонла калаçма хăнăхтаратчĕ. «Пыр-ха ман пата хăнана, словарь парнелесе паратăп, çуллана пирĕнле шакăртаттарса калаçакан пулатăн, — тетчĕ. — Пирĕн лавкки те пысăкрах, таварĕ те ытларах, сирĕн Кив Ялти пек мар...»

Çил — нордчĕ, çула май. Йĕлтĕр лайăх шăвать. Пулăççен ялĕ çыран хĕрринчех иккен. Хуçи мана ял вĕçне тухсах кĕтсе илчĕ. Çурчĕ ун ултă кĕтеслĕ, тимĕр витнĕскер. Начар пурăнмасть-мĕн Яак. Арăмĕ те, хăй те хулалла тумланнă. Сĕтел çине темĕн тĕрлĕ пулă тухса ларчĕ. Эпĕ пĕр кĕленче коньяк кăлартăм. Çакна курсан, Яак савăнăçлăн: «Пурнатпăр, шуйттан илесшĕ!» — тесе кăшкăрса ячĕ. Пĕр черкке ĕçрĕм те урăх ĕçесшĕн пулмарăм, чей тултарнă стакана ярса тытрăм. Яакпа арăмĕ мана ăна çи те, кăна çи тесе кăна лараççĕ. Епле йăлăнса ыйтсан та, урăх тумлам та ĕçмерĕм, пыр ыратни çине йăвантартăм, тĕрĕссипе вара ӳсĕрпе темтепĕр пакăлтатса парасран шиклентĕм. Хам шухăша эп сăмахпах персе ятăм, «шан-ха çынна» терĕм пулмалла, Яак тĕлĕнсе куçне чарса пăрахрĕ: «Эс чăваш-и?» — ыйтрĕ вăл таса чăваш чĕлхипе. Эпĕ те Яак пекех антраса кайрăм: «Чăваш», — терĕм хам мĕн каланине хам та ăнланмасăр. Вара иксĕмĕр те ăсран тайăлнă çынсем пек ахăрса кулма тытăнтăмăр. Пĕрне-пĕри ыталаса илсе кулатпăр.

— Апла пулсан, эсĕ Якку пуль?

— Якку.

— Ăçтарахрисем?

— Самар енчисем.

— Эсĕ вара?

— Чистай уесĕсем. Чулман Атăл çинчен.

Пирĕнпе пĕрле Якку арăмĕ те кулать: «Вырăсла калаçăрха, ним те ăнланмастăп», — тет. Эпĕ ун енне пуç сĕлтетĕп:

— Ку майра-им?

— Эстони майри, вырăсла самаях ăнланать.

— Эп вĕт санпа, шуйттанпа, çак куна çити тăлмач урлă калаçнă, ма хальччен пытартăн?

— Сăлтавĕсем пулнă. Эс ĕç-ха, кун пирки каярахпа калаçăпăр.

— Çук, халех калаçар, вара ĕçсе паратăп.

Эпĕ, чăнах та, коньяк тултарнă черккене тĕппипех ĕçсе ятăм.

— Тавай, пуçла, кĕтетĕп.

— Эп сана малтан вырăс пуль, тенĕ, анчах хăш енчисем иккенне пĕлмен. Пĕр çын каланă тăрăх...

— Ну, кун пирки, ху каларăшле, кайран... Епле çакăнта килсе çаклантăн, каласа кăтарт?

— Таркăн моряк эпĕ, патша çакса хурасран çиччĕмĕш çулта тарса килтĕм. Питĕрте восстани турăмăр: шпионсемпе тĕрлĕ провокаторсем, рабочи тумне тумланнăскерсем, пире, çамрăксене, эрех лавккисем, нӳхрепсем çĕмĕрме хĕтĕртсе ертсе кайрĕç. Эпир, айвансем, çавна сисмен. Нумай моряк хĕн курчĕ çавăн чух, чылайăшне судсăр-мĕнсĕрех çака-çака хучĕç. Эпĕ çулталăка яхăн пĕр ялта пытанса пурăнтăм, пытанса пурăнма май пĕтсен, çĕтĕкçурăк тум тумлантăм та пулăçсемпе пĕрле çакăнта çитсе ӳкрĕм. Тем те курма тӳр килчĕ, килсĕр-çуртсăр йытта ыйткалакан та пулин тапса сирпĕтме хăтланать. Малтан тулăхрах пурнакан пулăçсем патĕнче тарçăра пурăнтăм, каярахпа çак çурта киле кĕтĕм.

Якку арăмĕ ачи патне тепĕр пӳлĕме тухрĕ. Якку малалла каларĕ:

— Унăн малтанхи упăшки пулла кайсан путса вилнĕ, — терĕ арăмĕ тухнă енне кăтартса. — Кунта сахал çын хăй вилĕмĕпе вилет, нумайăшĕ яланлăха канма тинĕс тĕпне каяççĕ. Çыннисем ку ялта аван, хăнăхрĕç мана, влаççене пĕлтермерĕç, арăма пула мана та эстони çынни теççĕ.

— Тăван çĕрелле чун туртмасть-и?

— Ютра йыттăн та тăрасси килмест. Малтан питĕ тунсăхлаттăм. Çемьеленсен, çăмăлрах пула пуçларĕ. Халĕ, авă, ывăл ӳсет, çичĕ çулта. Питĕрте мĕн пулса иртет-ши, пĕлместĕн-и?

Питĕрте мĕн пулса иртнине Барон час-часах каласа кăтартатчĕ-ха мана. Çавăнпа та эпĕ татсах каларăм:

— Питĕрте паян тесен паян революци пулма пултарать, Якку.

— Пире пиллĕкмĕш çулти пек революци кирлĕ, ун чухнехи йăнăшсене çеç тăвас марччĕ. Рабочи класпа хресчене, салтаксене пĕрле пĕтĕçтермелле парти ялавĕ айне.

— Эс, Якку, политикăна питĕ аван ăнланатăн иккен?

— Атту эс ăнланмастăн пуль...

Якку арăмĕпе ывăлĕ тахçанах тĕлĕк кура-кура çывăраççĕ ĕнтĕ. Эпир çаплах пĕр-пĕрин çинчен ыйтса пĕлетпĕр. Çутăлас умĕн çеç, лăпланса, çывăрма выртрăмăр.

Хăнаран таврăнсан темиçе кунтан тăман лăпланчĕ, çанталăк уяртрĕ. Стройкăна эпĕ яланхи çулпа мар, вăрманпа кайрăм. Сăрта хăпарса уçланка тухсан, хĕрарăм макăрнă сасă илтĕнчĕ. Пăхатăп та, сарай хыçĕнче вăрман хуçи Тоомас кулак пĕр хĕре пушăпа хĕнет: сулахай аллипе вăрăм сарă çивĕтĕнчен ярса тытнă, сылтăммипе ислетет анчах мĕскĕне. Çывăхрах — пĕр çĕклем хăрăк турат çыххи. Кулак мĕншĕн урса кайнине эпĕ тӳрех ăнланса илтĕм. Хĕрачи палланăскерех, ятне çеç астăваймастăп. Ман çине çав тери йăлăнса пăхать, хăй тĕллĕн ниепле те çăлăнса тараймасть. Эп чупса пытăм та старике тĕксе ятăм, хĕре çурăмĕнчен лăпкаса лăплантара-лăплантара каска çине лартрăм. Старик çĕртен пурттине илчĕ те куçне хăрушшăн вылятса хирĕлме тытăнчĕ:

— Ку йĕпе сăмса вырăс мар, сан ĕçӳ те çук ун çумĕнче, — кăшкăрчĕ вăл, — ут ху çулупа!

Сых ятне эп те сарай çумĕнче тăракан лума ярса илтĕм:

— Эп сана кăтартăп «вырăс мар». Сан вăрману вунă квадратлă километр çинче кашласа ларать, йытă, пĕр çĕклем хăрăк туратшăн çынна пушăпа хĕнетĕн! Çухал куç умĕнчен халех!

Старик тата темĕн кăшкăрашрĕ, вĕлерессипе хăратрĕ пулмалла, пурттине пиçиххи хушшине хĕстерчĕ те, хăрăк турата çĕклесе, вăрмана кĕрсе çухалчĕ.

Хĕрача Рийна ятлă, пĕр вунсаккăрсенче пуль. Куçĕ кăнкăвак, çӳçĕ шур пурçăн пек хумлăн-хумлăн юхса, йăлтăраса тăрать. Çӳллĕ кăкăрлă та çинçе пилĕклĕскер, яланах хаваслă çӳретчĕ вăл ĕçре, халĕ акă куççуль юхтарса ларать. Куççуль шăрçисем чечен, таса, шурă пичĕ тăрăх юр çине куса-куса анаççĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл старик пушăпа çапса ыраттарнăран та

мар, эпĕ çакна курнипе вăтанса йĕрет. Эпĕ таса тутăрпа ун пит-куçне шăлса типĕтрĕм. Çав хушăра хама пĕр япала аса килчĕ: канма çыхса тунă çакмалли вырăнта эп канса выртаттăм; çак хĕрача систермесĕр пынă та çаккине салтса янă; эп çĕре кĕрслетсе антăм; хĕрача кула-кула сывлайми пулса вăрмана тарчĕ. Çав пуçтах та ашкăнчăкскер халь мĕскĕннĕн йĕрсе ларать. Эпĕ пĕлнĕ-пĕлмен чĕлхемпе хĕре лăплантарма тăрăшрăм. Сăмахпа мар, ĕçпе пулăшмаллине ăнланса, вăрмана кĕтĕм те тем чул хăрăк турат пуçтарса тухса ун умне купаласа хутăм, пирус чĕртсе купа çине лартăм, шухăша путрăм. Рийна инçех те мар ларакан хыр çумне кайса тăчĕ, ăна икĕ аллипе те ыталаса ман çине куçне илмесĕр пăха пуçларĕ.

— Халĕ кай ĕнтĕ, — терĕ вăл шăппăн. — Тавтапуç сана, ырă йĕкĕт. Эсĕ питĕ лайăх вырăс каччи, ырă кăмăллă господин.

— Господин мар эпĕ, Рийна, сан пекех ĕçлекен çын.

Эпĕ хĕрача патне пытăм, алла хулпуççийĕ çине хурса, кăвак куçĕнчен пăха пуçларăм. Вăл, мана ыталаса илсе, питрен хытă-хытă чуптурĕ. Çавăнтах йăл кулса ярса: «Эпĕ сана питĕ юрататăп», — терĕ.

Вут-шанка пĕр çĕклем туса çыхрăмăр. Çĕклеме йăттарса ятăм та, хĕр хăй килĕ патне çитиччен йывăç хыçĕнчен пăхса тăтăм. Килĕ умне çитсен, Рийна тутрине салтса тахçанччен ман енне сĕлтсе тăчĕ...

Икĕ çул пурăнтăм эпĕ патша йыттисенчен пытанса çав утрав çинче. Юлашкинчен тахçантанпах кĕтнĕ хаваслă хыпар çитрĕ. Хыпарне Барон, Вячеслав Петрович Ларионов большевик, темле маяк çинчен шыв айĕнчи кабель тăрăх пĕлтерчĕ:

— Петроградра революци! — терĕ вăл таçтан, леш тĕнчерен, аран çеç илтĕнекен сасăпа. — Патшапа министрĕсене вырăнтан кăларса сирпĕтнĕ, анчах та влаçа буржуази ярса илме хăтланать. Эпĕ утрав çине текех пыраймастăп, вăхăт çук, эсĕ унта, Кирюш тăванăм, хуçалăха упра, вăл халĕ хамăрăн ĕнтĕ, халăхăн! Ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм! — кăшкăртăм эпĕ пĕтĕм вăйран. — Сывлăхăра упрăр, асăрхануллăрах пулăр.

Барон: «Ху та асăрхануллă пул», — терĕ те трубкине хучĕ. Çавăнпа пĕтрĕ калаçу. Урăх тепĕр кун та, эрнерен те, уйăхран та унтан хыпар-хăнар пулмарĕ, кайрĕ те çухалчĕ çын. Кунсем Питĕрте чăнах та питĕ хĕрÿ пулнине эпĕ каярахпа пĕлтĕм, анчах та Вячеслав Петрович Ларионова урăх тĕл пулса пул-

марĕ. Петроградра вăл нумаях пурăнман, ăна фронта, салтаксем хушшине, вăрттăн ĕçлеме янă.

Хуçалăхпа аппаланса апрель те çитсе тăчĕ. Пĕрре çĕрле пĕр юлташпа çыран çинче тăратпăр. Сылтăм енче тинĕсре çутăсем йышлăн курăнса кайрĕç.

— Пирĕн карапсем Российăналла таврăнаççĕ пулмалла, — терĕ юлташ.

Ир енне эскадра утравăн хĕвеланăç вĕçĕпе танлашрĕ. Чăнах хамăр карапсем-ши тесе, эпир çывăхранах кайса пăхма шутларăмăр. Юлташ икĕ мăшăр йĕлтĕр тупса килчĕ. Аяла чупса анса йĕлтĕрсем тăхăнтăмăр та пăр çине кĕтĕмĕр. Эскадра патне çывхарсан, юлташ:

— Карапсем пулаççĕ-и кусем, мăйăр хупписем, — тесе мăкăртатать. Малта пăрçĕмĕрен шăвать. Ун хыçĕнчен пăрахутсем, транспортсем пыраççĕ, чăн карапсем çук. Вĕсене пăхса тăрса эпир асăрхаман та: пире шыв иле пуçланă. Йĕлтĕрпе хытă килнĕ чух пăр катăлса ĕлкĕреймен, авăнса çеç пынă. Йĕлтĕрсем шӳнипе хуллен пыма тытăнсан, пăр путма, тюлень шăтăкĕсенчен шыв фонтан пек сирпĕнме тапратрĕ. Урăх шалалла кĕме юрамасть. Эпир çĕлĕксене хывса сулларăмăр, моряксем пире сăмсасăр карттусĕсемпе хăйăвĕсене вĕлкĕштерсе сĕлтеççĕ.

Çыран хĕррисем темиçе кунтан пăртан тасалчĕç. Пĕррехинче эпĕ юлташ сăрт çинче тем кăшкăрашса аллисене сулкаланине куртăм.

— Мĕн çухăрашатăн?

— Кил-ха, кил хăвăртрах, мĕн шăвать çавăнта? — кăтартрĕ вăл тинĕселле. Эпĕ те вăл кăтартнă еннелле пăха пуçларăм. Тинĕсре, чăнах та, пирĕн утрав патнелле хура пăнчă шăвать, майĕпенех çывăхарса пырать. Эпир йăпăр-япăрах сулă çине анса тăтăмăр та шалçасемпе авăса-авăса пăнча хирĕç кайрăмăр. Çурçĕртен йăваш çил вĕрет, вăл килекен кимме (пăнчă çывхарнăçем кимĕ пулса тăчĕ) çырантан хĕвелтухăçнелле пăра пуçларĕ. Шалçасемпе таçтах каяймăн. Эпир шухăша путрăмăр. Çав вăхăтра çил хĕвеланăçнелле çаврăнчĕ те, кимĕ пирĕн сулă патне шăппăн, васкамасăр юхса пычĕ. Кимĕре çамрăк çын месерле выртать. Питне карттуспа хупланă. Тинĕс офицерĕ, анчах та пакунĕ те, кокарди те çук. Аллисем çапса хуçнă пек усăнса тăраççĕ. Сулахай кăкăрĕнчен юн юхать. Ал тымарне тытса пăхрăмăр, тапмасть. Вилнĕ. Хальрех çеç чунĕ тухнă пу-

лас, сивĕнме те ĕлкĕреймен-ха. Карттусне пичĕ çинчен илтĕм те хăранипе тата тĕлĕннипе шартах сикрĕм:

— Ехрем! Пуян Кантратти Ехремĕ...

Ман улшăнса кайнă сăна курса, тем мăкăртатнинчен хытă тĕлĕнсе, юлташ шак хытса тăчĕ.

— Мĕн, палланă çын-им? — шăппăн ыйтрĕ вăл Ехреме çырана илсе тухнă май.

— Палланă çын, кӳршĕ ялсем...

— Пулать вĕт пурнăçра. Çынни йĕркеллĕ çынахчĕ-и?

— Йывăр тăпри çăмăл пултăр та, йĕксĕкчĕ. Çавна пула чут çеç трибунала çакланаттăм.

Эп каланине çирĕплетме тенĕ пекех, юлташ Ехрем кĕсйинчен хут туртса кăларчĕ: «Йытта йытă вилĕмĕ», — тенĕ унта. Анчах та эпир Ехреме йытта пытарнă пек мар, этеме пытарнă пекех тирпейлесе пытартăмăр. Тăпри çине хĕрес лартса, кам вилтăприйĕ иккенне палăртса çырса хутăмăр. Киммине, малашне питĕ кирлĕ пуласса пĕлсе, шанчăклă вырăна пытартăмăр.

5

Чипер утса пынă çĕртенех Кириле мучи тăп чарăнчĕ:

— Акă вăл Павăл хăртни, — терĕ, — çакăнтан пуçланать те Эльмук юманĕ тĕлĕнче пĕтет. Юман патĕнчен, кĕтесрен, вăрманалла çул кĕрсе каятчĕ, атте вăрман пăхма ялан çав çулпа çӳретчĕ. Эльмук юманĕ тесе Павăл хăртни кĕтессинче вăрман хĕрринче акăш-макăш сарăлса ларакан çӳллĕ те хулăм юмана калаççĕ. Мĕншĕн ăна пирĕн мăн асатте юманĕ тенĕ, калама пултараймастăп. Павăл хăртни тени пĕр йышлă çемьеллĕ чăваш тахçан авал вăрман хăртса тырă акма хăтлансан тухса кайнă, теççĕ. Хăртайнă-и вăрманне, çук-и, ăна эпир пĕлместпĕр, ячĕ вара юлнă, хальччен упранать.

Хумкка, урăхла каласан — эпĕ, кун çинчен ĕлĕк те илткеленĕ. Вăл старик ашшĕ мĕнле çакăнса вилнине тĕплĕнрех пĕлесшĕн: шӳтле япала-им, этем хуйхăпа çакăнса вилнĕ, хăрушă япала. Хăвна ху çапла харам тăвасси мĕн тери асаплă пуль, мĕн тери тертленсе, кӳтсе çитнĕ пуль çын. Анчах та Кирилерен нимĕн те хăйса ыйтаймарĕ, астуса илсен хăех каласа кăтартĕ, терĕ.

Кириле юман патне çитсен ассăн сывласа ячĕ çеç. «Çак тĕлте», — терĕ те урăх ним те шарламарĕ. Пăхса тăрсан-тăрсан тин:

— Хăйĕн те шалчи тулчĕ, — тесе хучĕ.

— Камăн, Кириле мучи?

— Камăн пултăр, Пуян Кантраттин. Ав лере, ик вăрман хушшинче, эсремет çӳллĕш юман хĕрес кăнтарса тăрать, çур ĕмĕр иртрĕ, халĕ те çĕрсе ӳкмест, йĕксĕк. Ыр çынсен йывăçран мар, тимĕртен тунисем çĕрсе татăлчĕç пуль, ку çаплах ик вăрман хушшинчи уçлăхра тĕнчене сехĕрлентерсе тăрать.

— Çавă вара Кантратти тăприйĕ-и вăл?

— Çавăн пулмасăр, камăн пултăр.

— Пĕр пупа пытарнă теместчĕç-и-ха унта?

— Нимле пуп та мар, Пуян Кантратти выртать.

Темшĕн Кириле мучин кăмăлĕ пăсăлчĕ. Пĕр хушă эпир ним чĕнмесĕрех утрăмăр. Кӳлĕ хĕрнелле анатпăр. Тĕнче тӳлеккĕн канать.

— Хăй кунта, ывăлĕ лере апла? — терĕм эп асăрхануллăн, Кириле мучи паçăрхи калава малалла тăсасса ĕненсе.

— Çапла... Мула хапсăнни пăсать çынна. Юлашкинчен тĕп тăвать.

— Мучи, малалла каласа кăтарт-ха, тата мĕн-мĕн куртăн, епле майпа хăтăлса тухрăн утрав çинчен?

— Халь те йăлăхмарăн-и-ха итлесе?

— Йăлăхмарăм.

— Тоомас кулак хăйне кӳрентернине час манакан йышши пулмарĕ. Вăл ман хыçранах йĕрлесе çӳренине эпĕ аван сисеттĕм. Пĕр вăхăт Яак (Якку) патĕнче пурăнса пăхрăм. Ман пирки ăна та инкек пулма пултарать: тытăç те çуртне вут тĕртсе çунтарĕç, ăçта кайса кĕрĕ вара хăй те çын патне киле кĕрсе пурăнаканскер, ĕмĕр тăршшĕпе мана ылханса пурăнĕ. Çакна шута илсе, эпĕ строительствăн ытти работникĕсемпе пĕрле кантуртах пурăнма шут тытрăм. Пĕррехинче, ирпе-ирех, пĕр вăхăтрах кантăкран та, алăкран та килсе шаккарĕç. Эпир пурте сиксе тăтăмăр, пĕр-пĕрин çине шиклĕн пăха-пăха хăвăрт тумланатпăр. Тата хытăрах шаккарĕç. Пуринчен ытла строй-кăна хальрех çеç килнĕ теçетник сехĕрленсе ӳкрĕ. Сиксе чĕтренипе урисене ниепле шăлавар пĕççине чикеймест. Кĕтмен хăнасене хирĕç юлташ тухрĕ, эпĕ телефон патне лартăм. Алăк урлă мана ыйтаççĕ. Юлташ вĕсене темĕн ăнлантарать, кунта çук, кӳршĕ яла кайнă, тет пулас. Лешсем ĕненмеççĕ, пӳрте кĕртме ыйтаççĕ. Юлташăм кулак хӳрешкисемпе алăк витĕр калаçнă хушăра эпĕ сăнав вышкипе çыхăнтăм. Унтан самант-

рах ҫичӗ ҫын хашкаса чупса ҫитрӗҫ, кашни икшер винтовка, темиҫешер патронташ йӑтнӑ. Тоомас ушкӑнне моряксем чӑлпар! салатса, хӑваласа ячӗҫ, пире хӗҫпӑшаллантарчӗҫ. Ҫав каҫах эпӗ лару-тӑру пирки Яккупа ларса канашларӑм.

— Малтан материк ҫинче мӗн пулса иртнине тӗплӗн пӗлмелле. Вара эпӗ сана ӑсатса ярӑп, — терӗ вӑл лӑпкӑн. — Ҫак кунсенче Выборга кайса килетӗп... Эсӗ унччен вӑрмана тар, пытанса пурӑн. Кӗҫӗр лупас ҫине, утӑ хуракан ҫӗре шала, кӗрсе вырт, кӑҫал ҫур ӑшӑ килчӗ, кӗрӗксемпе витӗн те ним шухӑшламасӑр ҫывӑр.

Ирхине ҫынсем тӑриччен эпир хура вӑрман витӗр чуллӑ хысак патне кайрӑмӑр. Хысак ҫине хӑпарса пӗр сарлака та лаптак чул айӗнчен пӗчӗкрех чулӗсене кӑлартӑмӑр та тасатса самаях ирӗк вырӑн турӑмӑр, иккӗн-виҫҫӗн кӗрсе ура ҫинче ҫӳремелӗхех. Чул купаласа алӑк пекки хӑвартӑмӑр. Унта мӗн те пулин карсан, аванах хӳшӗ пулать. Ӑшӑ сыхлама шала, стена ҫумне те, ҫӗре те, хӑмӑш купаларӑмӑр. Туса пӗтертӗмӗр те, «мӗнрен япӑх ҫурт?» тесе савӑнатпӑр.

— Хӑнӑхиччен сулхӑнрах пулӗ те, ӑшӑ япаласем килсе парӑп-ха сана, — тет Якку. — Сӑртсемпе уҫланкӑсем юртан тасалнӑ, йӗр тӑрӑх халь сана тупаяс ҫук. Хӑрушлӑх сиксе тухсан, кунтан тарма та ҫӑмӑл. Кичем пуласран, килсех ҫӳрӗпӗр, хам та, ыттисем те килӗҫ... Асту, халлӗхе вут ан чӗрт-ха.

Якку кайсан, пӗрер сехет ҫӳрекелерӗм те кӑнтӑрла ӑшӑ чух ҫывӑрса илем, ҫӗрле сивӗре ҫыврасси пулас ҫук тесе, «ҫуртӑма» кӗтӗм, чӗркенсе выртса ыйха путрӑм. Мӗн чухлӗ ҫывӑрнӑ, пӗлместӗп, чул катӑкӗ шаклатса ӳкнӗ сасӑпа вӑранса кайрӑм, винтовкӑна ярса тытрӑм. Пуҫа ҫӗклесе пӑхатӑп, нимӗн те курӑнмасть. Тепӗр чул катӑкӗ кусса анчӗ те юр ҫине пырса тӑрӑнчӗ. Унтан кашӑртатса темӗн шуни илтӗнчӗ. Эпӗ, хӳшӗрен пуҫа кӑларсан, ҫӳлте, хысакӑн чи тӑрринче, хӗр урисене сулласа ларнине куртӑм. Мана курсан, вӑл кулса ячӗ те, чул ҫинчен чул ҫине сике-сике, хӳшӗ патне анса тӑчӗ. Рийна ҫӑкӑр, ҫӗрулми, сӗт, пулӑ илсе килнӗ, мана хӑналама пуҫларӗ:

— Ҫи, ӗҫ, — терӗ пӗрре эстонла, тепре вырӑсла. Хӑй пысӑк чул ҫине урисене усса ларчӗ, салака текен пулла, пуҫӗсене татса таҫта ҫити ывӑта-ывӑта, юратсах ҫиме тытӑнчӗ. Апат хыҫҫӑн манӑн чул хӳшше пуҫне чиксе пӑхрӗ те:

— Кунта сана питӗ кичем пуль? — терӗ. Вӑл тата темӗн каларӗ, эпӗ, эстонла лайӑхах ӑнланманнипе, пуҫа пӑркаларӑм. Рийна ахӑлтатса кулса ячӗ.

— Эпĕ, — терĕ хăй çине кăтартса, — эсĕ, — халĕ ĕнтĕ ман çине кăтартрĕ, — хорошо, лайăх. — Шĕвĕр пӳрнине çӳлелле тăратрĕ: — Пĕччен — начар.

Эпĕ тинех ăнлантăм: иккĕн лайăх, пĕччен начар, тет иккен. Халĕ ĕнтĕ иксĕмĕр те кулатпăр. Питĕ çамрăк пулнă çав, вунсаккăр-вунтăххăрсенче кăначчĕ. Кăшт савăнмалли тупăнсанах ача пек савăннă, малашнехи пирки ытлашши пуç çĕмĕрсе ларасах та темен, вăхăчĕ, самани хăрушă пулин те, тĕнче çине çамрăк куçпа, çутă куçпа пăхнă. Пурнăçăм утрав çинче йывăрччĕ, шывĕ пурпĕр халĕ те, ав, çур ĕмĕр иртсен те, çуттăн курăнать, пуласлăхăм — тĕтреллĕччĕ, унта ирттернĕ икĕ çул паян кунччен те асран тухмасть.

Рийна çывăхарах пырса ларчĕ. Ăнланмалла мар темле сăмах калать те кулать хăй, унтан çумах ларчĕ, пуçне ман чĕркуççи çине хучĕ. Ăна эп çӳçĕнчен шăлса ачашлатăп. Хĕрача сасартăк макăрса ячĕ те мана мăйран ыталаса илчĕ:

— Эп сана юрататăп, сансăр пурнаймастăп, вилетĕп, — тет.

— Эпĕ те юрататăп сана, Рийна.

— Юрататăп, юрататăп, юрататăп...

Чунран юратнипе хамăн та йĕрес килет. Икĕ тăнлавĕнчен ик алăпа çупăрласа тытса тутинчен хытă-хытă чуптăватăп. Рийна хăвăрт-хăвăрт сывлать, куçне хупнă вăл, мăйăмран уртăннă. Кăкăрăма вут хыпрĕ, пирвайхи хут юратнăскер, каçченех Рийнăна çупăрласа, пĕчĕк ачана ачашланă пек ачашласа лартăм. Тĕттĕм пуличченех кăвак тинĕселле пăхса, тăрă шыв хĕрринче, çутă савăнăçпа телей ытамĕнче, тарăн шухăш шухăшларăм: «Хальччен эпĕ тăр-пĕчченччĕ, килсĕр-çуртсăр, тăван çĕршывсăр, таçти ют çĕрте пытанса пурăнакан таркăн этемччĕ. Паян вара, акă, юрату тупрăм, çамрăк чун, ир ватăлса сарăхма тытăннăскер, çĕнĕрен ешерсе, чечекленсе кайрĕ, усăннă çунат юсанчĕ, çĕнĕ вăй илчĕ. Тăван çĕршыва çухатнăскер, тӳрех икĕ тăван çĕршыв чунăма кĕчĕ, çак утрав та калама çук çывăх та тăван пулса тăчĕ. Мĕншĕн тесен вăл Рийнăн тăван çĕрĕ. Рийна — эпĕ, эпĕ — Рийна. Çавăнпа та мана паян Рийна пурнакан утрав çеç мар, вăл пурăнакан пĕтĕм çут тĕнче ытармалла мар ырă».

Çапла шутларăм эпĕ ун чух вунтăххăрти хĕрӳ пуçпа. Çамрăк хунав яланах хĕвел патне туртăнать çав... Ман умра вĕçĕхĕррисĕр тинĕс сарăлса выртатчĕ, хыçра ман юрату тăшманĕсем, эпĕ ун хутне кĕнĕшĕн тавăрас тесе, пĕтĕм утрава ухта-

ратчĕç, мана тытса тинĕсе путарасшăнччĕ. Анчах эпĕ путмарăм, çăлăнса тухрăм, юратăва те пĕтме памарăм. Çак ĕçре мана ырă çынсем пулăшрĕç.

Каçхи сулхăн çапсан, Рийна чул хӳшше кĕчĕ те икĕ çын валли вырăн сăрчĕ. Эпĕ нумайччен çывăрса каяймарăм. Пирвайхи юрату мана тĕпренех пăлхатрĕ: «Этем тени пур çĕрте те пĕрех иккен вăл, çыннисем çеç пĕр пек мар: пĕрисем ырă, теприсем хаяр, виççĕмĕшĕсем — çăткăн. Мулшăн хыпса çунаканнисем пурте тенĕ пекех — юнĕçен, çынçиен тесен те йăнăш пулмĕ...»

— Ма çывăрмастăн? — терĕ ыйхăллă сасăпа Рийна.

— Тинĕселле пăхатăп.

— Ан пăх, çывăр.

— Тинĕс çинче çутăсем нумай. Манăн киле, Россие, каймалла. Эс манпа пыма килĕшетĕн-и, Рийна?

Хĕрача чылайччен хуравламарĕ, шухăшласа выртрĕ. Вара аран-аран çавăрттарса каларĕ:

— Тăвансемпе сывпуллашмасăр, пĕр япаласăр пăрахса каймаха хăратăп. Малтан эсĕ кай, материкра мана кĕтсе тăр. Навигаци уçăлсан, залив урлă пулăçсемпе пĕрле каçатăп та, санпа тĕл пулатпăр.

Рийна ирхине ирех кайрĕ, каçпа килме пулчĕ, анчах килеймерĕ, шăматкун çеç, пиллĕкмĕш кунне, хашкаса чупса çитрĕ.

— Мунчаран тӳрех эпĕ, — терĕ вăл хашкама ниепле те чарăнаймасăр, — вăрманпа тăватă çухрăм чупрăм. Апат-çимĕç, кĕпе-йĕм илсе килтĕм, ку — апат, ку — кĕпе-йĕм, — çыххисене ума кăлара-кăлара ларт рĕ Рийна.

— Ма час килеймерĕн?

— Тинĕсе тухрăмăр, пулă начар кĕрет.

— Эпĕ те пулă тытрăм, чул çинче ăшаласа çирĕм.

— Ай-я-яй, ай-я-яй! — тĕлĕнет Рийна, кĕпе тӳмисене вĕçертме хушса: — Таса мар кĕпе-йĕмне хыв, тасине тăхăн. Çак çĕр шăтăкĕнчен тухма та вăхăт çитнĕ ĕнтĕ, тулта, ав, епле ăшă.

Хăй хут çине пăха-пăха илет, кирлĕ сăмахсем шырать, хут çинче çуккине аллисемпе кăтартса ăнлантарать. Ытарайманнипе, эпĕ ăна ыталаса илетĕп, çума пăчăртаса питĕнчен хытă-хытă чуптăватăп. Çак пилĕк кун хушшинче Рийна чылай улшăннă, хăйне мăн çын пекех çирĕп тыткалать.

Ирхине эпĕ сунара кайма пуçтарăнтăм. Рийна пуçне çĕклерĕ те: «Ăçта каян?» — тет. Винтовкăна кăтартатăп, каймалла, тетĕп.

— Пулă пĕтмен-ха, ытти апат-çимĕç те пур, — хирĕçлет вăл.

— Çав ăсансене тасатса хур, — кăтартатăп чул айне, хам тухса каятăп. Рийна хыçран кăшкăрать:

— Хăвăртрах таврăн!

...Пĕр уйăх ытла пытанса пурăнтăм эпĕ чуллă хысак çинчи шăтăкра. Юлашкинчен ырми-канми кĕтнĕ кун çитрĕ: каçхине хысак çине Якку пычĕ те хăй пĕр старикпе ман пирки калаçса татăлнине пĕлтерчĕ. Старик шхунăпа материке, пулă заводне, темиçе çĕр пичĕке салака тĕтĕмлеме турттарса каять-мĕн. Çула май мана та илме килĕшет. Укçине Якку тӳлесе те татнă иккен ĕнтĕ. «Санăн, — терĕ вăл, — лармалла та каймалла, çавă çеç юлнă. Шхуни утравăн тепĕр енче кĕтсе тăрать...»

Пытарса хунă кимме туртса кăлартăмăр. Рийна шухăшлăн та ерипен кимĕ çине япаласене вырнаçтарма пулăшать. Вырнаçтарса пĕтерсен, Рийна кимĕ сăмсине кĕрсе ларчĕ, пуçне уснă хăй, шухăша путнă, шывалла пăхать. Тинĕс шывĕ кимĕ айĕнче тăрă-тăрă, тĕпĕнче выртакан чулсем шăкăрах курăнаççĕ, тинĕсĕ хĕвел çинче çап-çутă çуталса выртать.

Эпĕ кимме тĕксе ятăм та хӳрене кĕрсе лартăм. Ĕçсем питĕ аван пыратчĕç пек ĕнтĕ, анчах, кĕтмен çĕртен, чуна ыраттармалла япала сиксе тухрĕ: Рийна куçĕсем куççульпе тулчĕç, вăл хăйсенле темĕн кăшкăрса ячĕ те, кимĕрен сиксе анса, çыран хĕрринелле чупрĕ, чул çине ларса питне аллисемпе хупларĕ, хытă татăлса йĕнипе унăн пĕтĕм ӳт-пĕвĕ чĕтрет. Эпĕ кимĕ хӳрине тытса пымалли тимĕре алăран ӳкертĕм. Кимме çыран хĕрне илсе пытăм та, Рийнăна, йăтса илсе, калле сăмсана лартрăм. Чĕлхе пĕлменни хытă кансĕрлерĕ мана çак самантра, савние чунра мĕн пуррине йăлт каласа ăнлантараймарăм. Çĕр метр та каяймарăмăр, Рийна татах кимĕ çинчен сикрĕ, çыран хĕрне ишсе тухрĕ. Эпĕ ăна каллех лартасшăн пултăм, хальхинче вăл аллипе те урипе те çапкаланчĕ, кимĕ çине ниепле те ларасшăн пулмарĕ. Яккăва Рийнăпа хăварма тиврĕ:

— Тархасшăн каласа ăнлантар-ха, — терĕм эпĕ Яккăва, — хĕрипраç шăпи — тупмалли юмах, хĕрсенчен пĕри те хăй ĕмĕрне кампа тата ăçта ирттересе тĕплĕн пĕлмест.

— Хăвала киммӳне хăвăртрах, — тавăрчĕ мана хирĕç Якку. — Курмастăн-им норд пуçланать, çулу çинче вара шыв айĕпе те, çийĕпе те мĕн чухлĕ чул. Çил тапрансан, киммӳне чул çине çавăрса çапса турпас тăвать! Рийнăна ӳкĕте кĕртетĕпех эпĕ. Хăвах ăнланма тивĕç: çăмăл-им тăван çĕршыва пăрахса кайма! Хамăртанах илер, мĕн тери тĕмсĕлетпĕр тăван çĕршывсăр!

Чуллă хысак тĕлĕпе иртнĕ чух эпĕ унпа çĕлĕке сĕлтсе, чĕрĕ çынпа сывпуллашнă пек сывпуллашрăм: «Тавтапуç сана, — терĕм, — таркăн çынна пытарса усранăшăн, тăшмансенчен хăтарнăшăн. Тавтапуç, хысак, тавтапуç, утрав. Кунта эпĕ пуçласа юрату мĕн иккенне пĕлтĕм...»

Текех çаврăнса пăха-пăха, сăмсах хыçне пăрăнтăм. Пуçра хамăн çав-çавах пĕр шухăш: «Ларĕ-ши ыран çак кимĕ çине Рийна?»

Каçхинене старик ман япаласене пулă пичĕкисене чиксе пĕтерчĕ, аялтан та, çиелтен те тăварланă типĕ пулăпа хупларĕ. Ку вăл лере пырса çитсен мана ярса ан тытчăр тесе çапла турĕ. Шхуна çинче эпĕ ахаль пулăç пулса пыратăп.

Ирхине çил кăнтăр-хĕвелтухăç енчен вĕрсе ячĕ. Шхуна çула тухма хатĕр: якăрне хăпартнă, парăссене сарнă.

— Кайрăмăр! — кăшкăрчĕ пулăç, рульне ярса тытса, майпен фарватерелле туха пуçларĕ. Эпĕ куçа илмесĕр утрав çине, чуллă хысак енне пăхатăп: курăнса каймĕ-ши Рийнăн яштака та тăп-тăп кĕлетки, асăрхаймăп-ши унăн вĕл-вĕл шурă тутăрне?! Ик алăпа та канатсенчен çатăрласа тытса, утрав мĕн куçран çухаличчен хыçалалла тинкертĕм, анчах та — кăлăхах. Утрав хыçа тăрса юлчĕ, Рийна çырана тухмарĕ. Апла пулин те, эпĕ ăна хампа илсе кайрăм, чунра, чĕрере. Кунçулта тӳсме тивнĕ калама çук йывăр кунсенче вăл маншăн мĕн тери пысăк савăнăç, телей пулчĕ. Эпĕ çакна Рийнăпа уйрăлсан тата çивĕчрех туйса илтĕм, тарăнрах ăнлантăм.

Питĕре çитсенех мана тиф çулса антарчĕ. Те чуллă хысакра, нӳрĕ те сивĕ çĕр шăтăкĕнче, уйăх ытла темиçешер кун выçăхса пурăннăран, организм хавшаса çитнĕ, те урăх сăлтавпа, эпĕ урампа пынă çĕртех йăванса кайнă та тăна çухатнă. Телее пула, шăпах ман тĕлпе матроссем иртсе пынă, моряк тумĕ тăхăннă çын ним хускалмасăр выртнине курсан, тăпах чарăннă, тĕрĕслесе пăхнă. Çамка вĕри çатма пек пĕçернĕ. «Тиф!» — тесе кăшкăрнă çамкана хыпаласа пăхаканни, вара лав тытса госпитале ăсаттарнă.

— Эх, хаклӑ юлташ, — каллӗ-маллӗ утнӑ май тарӑхса калаçать тухтӑр, — медикаментсем çителӗклӗ пулсанччӗ пирӗн, пачах урӑхла пăхăттăмăрччӗ чирлисене. Эсӗ те тахçанах сывалса тăнӑ пулăттăн, ыратнине те туймăттăн. Патшапа улпутсем ялан çичӗ ютран кӳнӗ имçамне, Раççейре кăларасси пирки шутламан та. Эс, тăванăм, ан кулян, тӗрӗслесе пăхрăмăр та — сывалмалла курнатăн. Организм текенни çамрăк санăн, кăвакарчăнăм.

Тухтăр пӗрмаях шантарать, хавхалантарать. Госпитальтен вăл пӗрре те каймасть темелле. Тулли кӗлеткеллӗскер, сăнӗпе лăпкă вăл, кăмăлӗ уçă та ырă, куçӗсем çутă. Тухтăр иртен пуçласа каçчен ывăнма пӗлмесӗр ӗçлет.

Госпитальтен сывалса тухсан, урамра «Листок правды» текен хаçат номерӗ тупрăм та, çуллахи çанталăк ытла та ырă пулнипе киленсе, пӗр сквера канма лартăм. Хаçачӗ вăрттăн тухнă иккен, «Правда» редакцине юнкерсем аркатса тăксан çак ятпа кăларнă. Хаçат пăхкаласа кăшт каннă хыççăн, туяпа хуллен туяланса Московски вокзалалла утрăм.

Вокзалта юнкерсем пысăках мар митинг пекки уçнă. Ман юнкерсем мӗн каланине итлесе пăхас килчӗ. Перронти тенкел çине пӗри хăпарса тăнă та «Живое слово» хаçатран темӗн вуласа парать. Хăлхана: «Ленин — шпион, Германи разведкин агенчӗ т.ыт.те», — тени кӗрех кайрӗ. Тарăхнипе эпӗ кӗсъерен «Листок правды» туртса кăлартăм. Çакна рабочисем асăрхарӗç те мана сырса илчӗç. Вӗсем хаçата сасăпах вуласа тухрӗç, каялла парса çапла кăшкăрчӗç:

— Ак халӗ çак йӗкӗте итлесе пăхăр, мӗн калӗ вăл сире!

Юнкер вырăнне тенкел çине эпӗ хăпарса тăтăм. «Хисеплӗ юлташ! — пуçларăм хаçата вулама. — Июлӗн пиллӗкмӗшӗнче тухнă «Живое слово» номерӗнче Ленинпа тусӗсене шпионсем тенӗ. Çак ирсӗр элеке политикăлла хак панă май, эпир çапла каласшăн...»

Мана вуласа пӗтерме памарӗç: «Çитет, çитет!» — тенисем илтĕнчӗç. Куçа хаçат çинчен илсе пăхрăм та хама тӗлленӗ виçӗ штыка куртăм. Юнкерсем мана тенкел çинчен тӗксе антарса çул çинче тăракан состав патнелле хуса кайрӗç. Хирӗç тăнин усси çукчӗ. Госпиталь хыççăн уралансах çитейменни те хытă чăрмантарчӗ. Тарăхнипе эпӗ туяна çӗклесе çапрăм, васкамасăр перрон тăрăх утрăм. Виççӗмӗш класлă вагон тӗлне çитсен, сасартăк чарчӗç те алăкран шала тӗксе кӗртрӗç. Эпӗ кӗнӗ çӗре

вагонта иккĕн ларатчĕç те ĕнтĕ, иккĕшĕ те салтакла тумланнă, арестленĕскерсемех иккен.

— Кам, большевик-и? — кĕрсен тӳрех ыйтрĕ вăрăм мăйăхлă ватăрах салтакĕ.

— Çапла, — куçа мăч та тутармасăр тавăртăм эпĕ.

— Лар. Пирĕнпе çулĕ хаваслăрах пулĕ, — хăй çумне вырăн пачĕ çап-çамрăк салтакĕ.

— Питĕртен пурне те пурпĕрех илсе кайса пĕтереймеççĕ, — каллех сăмах хушрĕ аслăраххи.

— Эсир мĕнле полкран? — интереслентĕм эпĕ.

— Пулемет полкĕнчен, — çавăнтах ответлерĕ вăл. — Июльти демонстрацие хутшăннăшăн Керенский пирĕн полка салатса яма хушрĕ. Нумайăшне фронта ăсаттарчĕ...

Пĕр станцире пире таçта шуйттан шăтăкне илсе кайрĕç те тĕттĕм путвала хупса хучĕç. Путвалне тахçан улăм сарнă пулнă, халĕ унта çумăр шывĕ тулнă та, эпир чĕркуççи таран шывра тăратпăр. Выртас килсен, шыва выртмалла. Талăка яхăн путвалта тытнă хыççăн пырса купăста шӳрпи сыптарчĕç, каллех çăрапа питĕрсе илчĕç. Виççĕмĕш кунне офицер килчĕ те пире фронта кайма ӳкĕтле пуçларĕ. Эпир килĕшмерĕмĕр. Çур уйăхран ку офицер улшăнчĕ, тепри, кĕçĕнрех чин, подпоручик, каллех фронта хамăр ирĕкпе кайма тархаслать. Çур уйăхра выçă касăлса çитнĕскерсем, чееленме шутларăмăр:

— Йытă вырăнне хума пăрахăр, вара шухăшласа пăхăпăр, шывра, тĕттĕм çĕрте, вунпилĕк кун выçă тăрса йăлтах хавшарăмăр эпир, — тетпĕр. Подпоручик: «Мда-а», — терĕ те таçта кайса çухалчĕ. Пĕрер сехетрен тимĕр алăк çумне çакнă çăраççи чĕриклетсе илчĕ, алăка яри уçса хучĕç. Икĕ салтак пире тухма хушрĕç, хăмаран çапса тунă вакун пеккине хăваласа кĕртрĕç те самаях ăшă тулă пăтти пачĕç. Тепĕр кунне, ирхине, кăнтăрла, каçхине, хырăм сарăличченех яшка, пăтă çиме тӳр килчĕ.

— Пусма самăртаççĕ, — терĕ çамрăк салтак, эрнеренех выçăпа аптраса çитнĕскер.

— Апатпа кăмăла çавăрасшăн.

— Тен, офицерĕ лайăххи лекрĕ?

Темиçе кунтан офицер таврăнчĕ те пирĕнпе лăпкăн, тусла калаçа пуçларĕ:

— Эп хальрех çеç окопсенчен тухса килнĕ, салтаксем пухма ячĕç, задани çавăн пек. Сирĕн вырăнта пулсан, эпĕ çур уйăх

каяллах фронта кайма çырăннă пулăттăм... — Кăштах чĕнмесĕр тăнă хыççăн, кашнине куçран пăхса хушса хучĕ: — Çырăнăр. Эпир сире маршевăй ротăна ярăпăр. Унта сире хураллама пăрахаççĕ, вара... эсир ухмах мар пуль тетĕп... вара сирĕн ĕç... Çырăнма сĕнетĕп...

Арестленисем пĕр-пĕрин çине пăхса илтĕмĕр. Пуçа сĕлтсе эпĕ хам килĕшнине пĕлтертĕм. Манпа ыттисем те пĕр пулчĕç:

— Çырăр, — терĕм вара подпоручика, — мĕн пулсан пулать.

Пире хуралпа Мускава пĕр маршевăй полка илсе килсе ячĕç. Кĕске вăхăтрах хутсене çырса хатĕрлерĕç, кĕпе-йĕм, тум пачĕç те мунчана хăваласа кайрĕç.

— Мунчи çывăхах мар, транвай çине ларăпăр, — тет хуралçă салтак.

— Пире пурпĕрех, — хаваслăн хуравлатпăр конвоира, — хăвăртрах çитсе тăраниччен çапăнасчĕ те çăвăнасчĕ.

— Тĕрĕсех çав, — пирĕн майлă пулать вăл, — салтака тата мĕн кирлĕ.

Икĕ лини хĕресленнĕ çĕрте трамвайсем капланса тăнă. Халăх вĕркет, кăшкăрашать-çухăрашать. Мĕн тумаллине эпир çийĕнчех тавçăрса илтĕмĕр. Çамрăк салтак хыçалти алăкран, мăйăхлă ватăрах салтакĕпе эпир малтинчен тухса сирпĕнтĕмĕр. Конвоир халăх хушшине пӳлĕнсе юлчĕ. Виççĕмĕр те Хусан вокзалнелле çул тытрăмăр, унта, пĕр çĕтĕк хупаха кĕрсе ларса, кам ăçта каяссине сӳтсе яврăмăр.

— Ăçта каймалла? — терĕ мăйăхли. — Пирĕн полка хăваласа салатнă, Питĕре çитсе туссене шыраса тупас, тен, хĕрлĕ гвардине çырăнма май килĕ.

— Эпĕ те санпа пыратăп, — терĕ çамрăкки. — Эсĕ тĕнчере нумайрах пурăннă, нумай тӳссе курнă. Санран ниçта та юлмастăп, вилме те пĕрле вилетĕп.

Вара туссем ман енне çаврăнчĕç:

— Эсĕ ăçталла çул тытасшăн?

— Яла каятăп, киле. Унта та революци тумалла, кулакпа тĕрлĕ харампыра тытса силлемелле.

Çапла хăтăлса юлтăмăр эпир фронт нушинчен.

Питĕре Энтюк тетене шырама кайса çавăн чухлĕ хурашур курса таврăнтăм. Граждан вăрçи пĕтсен, хăех тупăнчĕ, Хура тинĕсе куçарнă пулнă ăна.

6

Кириле мучи сасартăках шăпланчĕ те пĕр хушă чĕнмесĕр пычĕ. Пакуссем уйăх ҫутинче ĕрет-ĕретĕн таҫта ҫитиех тăсăлаҫҫĕ. Ир енне сывлăм ӳкрĕ, ыран апла ҫанталăк уяр пулать иккен-ха. Сывлăм пĕрчисем ҫутă уйăх питтинче ахах-мерченĕн ҫиҫеҫҫĕ. Атăсем самаях шӳрĕҫ пулмалла, йывăрланчĕҫ. Ҫитсен, ҫĕнĕрен вут чĕртрĕмĕр, ĕреххетленсе вут умне ăшăнма лартăмăр. Татăлнă калава Кириле мучи вут умĕнче малалла тăсĕ-ши тесе, шиклене-шиклене старик ҫине пăха-пăха илетĕп. Те каҫхине ҫывăрмасăр ҫӳреме хăнăхманран, шăмшак самаях йывăрланчĕ, куҫ хупăна пуҫларĕ, ларсан-ларсан ĕнсе лăнк! каять. Ҫакна мучи те сисрĕ пулмалла:

— Куратăн-и, уйăх анать? — терĕ вăл. — Халĕ чи тутлă ыйхă вăхăчĕ. Ешĕл хунава пачах тĕлĕрсе илмесен юрамасть, кĕрсе вырт-ха хӳшше, аҫампа чĕркен, утăпа витĕн... Ирхине хăвнах ҫăмăл пулĕ.

Пăхрăм та, уйăх чăнахах анать иккен. Ҫутатса ывăннă та канма каять. Хӳшше кĕрсен, унăн хушăкĕнчен эпĕ вут ҫуннине, вут умĕнче хускалмасăр шăппăн ларакан старик мĕлкине чылайччен сăнаса выртрăм. Вара ҫывăрса кайнă. Тĕлĕкре темле утрав курнă. Ҫӳллĕ те чăнкă ҫыран ҫинче хамăрпа пĕр класра вĕренекен Аськина Анюк, ҫӳҫне салатса янăскер, ниҫта кайса кĕреймесĕр ăшталанса, кăшкăрса макăрса ҫӳрет пек. Хăй, пĕрехмай хăлаҫланса, тинĕселле темен кăшкăрать. Мĕн кăшкăрнине ниепле те ăнланса илме ҫук. Хам ăҫта пулнине астумастăп: те тинĕсре, те вăрманта. Анюк хăлаҫланать-хăлаҫланать те кассăн-кассăн иртекен шурă тĕтрепе хупланать, хăлаҫланать-хăлаҫланать те хупланать. Акă ĕнтĕ Анюкăн тĕтрепе пĕрле хумлă-хумлă вăрăм ҫӳҫĕ ҫеҫ ялав пек вĕлкĕшсе-чӳхенсе тăрать. Ҫӳҫрен ялав, ялавран ҫулăм, тем пысăкăш ҫулăм, пулса тăчĕ. Вара пĕтĕм утрава вут хыпса илчĕ. Ҫулăмра — телефон юпи ҫӳллĕш хура хĕрес. Акă хĕрес сулкаланма, унтан хăлаҫланма тытăнчĕ. Анлăн утăмласа ман паталла хăрушшăн килет...

Вăрансан та чылайччен тĕлĕк хăрушлăхĕнчен хăпаймасăр сехĕрленсе выртрăм. Те сулахай енне выртнипе чĕрене йывăр пулнăран, те мучи каласа панисем чуна пырса тивнĕ, эпĕ икĕ сехет ытла тĕлĕкпе аташнă. Хăранипе халĕ те чĕтреме пăрахмасăр, тĕлĕке Кириле мучине каласа патăм. Кириле ҫаплах

вут умĕнче ларатчĕ. Умĕнче — вăлта хуллисем, тĕрлĕрен банкăсемпе çипсем, вăлтасем. Ирпе пулла кайма шутланă иккен вăл. Тĕлĕкĕмрен Эстун Кирили хытă тĕлĕнчĕ. «Анюк» тес вырăнне эпĕ, паллах, «пĕр хĕрупраç» терĕм.

— Тĕшмĕше ĕненсех пĕтерместĕп те, кунта мĕн-тĕр пурах.

— Мĕн-ши, Кириле мучи?

— Урине мăнаккуна инкек пулман-ши эпир кунта утă хуралланă вăхăтра?

— Сан карчăкна-и?

— Вара çав.

— Эп тĕлĕкре карчăк мар, çамрăк хĕр куртăм.

— Эс мĕн, карчăксем тӳрех карчăк пулса çуралнă тетĕн-им?

— Урине мăнакка та хитре хĕрччĕ-и?

— Питĕ маттур хĕрачаччĕ. Ун çинчен кĕçĕр çĕрĕпех каласа кăтартрăм та хăвна.

— Хăçан?

— Халь çеç чарăнтăм.

— Леш утрав çинчи-и? Рийна-и? Эс ăна утрав çинех тăрса юлчĕ терĕн-çке!

— Малтан юлчĕ, кайран килчĕ... Яккупа. Яккăва эпĕ хамăн адреса парса хăварнăччĕ.

— Анчах та Урине мăнакка чăваш вĕт?

— Кам каларĕ? Халь чăваш, унччен эстони майриччĕ.

— Ан тĕлĕнтер-ха.

— Ним те тĕлĕнтерместĕп. Киле кайсан, ыйтăпăр акă.

— Эсĕ шӳтлен пуль, мучи? — Шӳтлеместĕн пулсан, каласа пар-ха эппин, епле майпа килсе ӳкрĕ вăл çакăнта çити Балтика тинĕсĕнчен?

— Каларăм-çке-ха Яак (Якку), эстонцă пулса кайнă Самар чăвашĕ, хайхи тус, илсе çитернĕ тесе. Малтан Питĕре, Питĕртен Мускава, Мускавран Хусана, Хусантан Чистая... Ĕçĕ те пĕтнĕ. Утрав çинчен эпĕ кайсан темиçе уйăхран унта кайзер салтакĕсем пырса тулнă. Хайхи кулак кам кăна вырăсемпе туслă пулнă çавсене нимĕçсене тытса пара пуçланă. Яккупа çемйи, Рийна, Рийнăн ашшĕпе пиччĕшĕ, тата ытти нумай пулăç сĕм вăрмана тарса пытаннă, арçынсем çав кулака епле пулсан та тытса вĕлерме тупа тунă. Пĕрре çакна ăшă вырăн çинченех илсе тухаççĕ те вăрманти вăрттăн вырăна сĕтĕрсе пыраççĕ, çавăнтах сут туса пуçне тунката çине хураççĕ... Рийна ашшĕ, пиччĕшĕ тата Якку Баронран юлнă динамита

шанчăклă вырăна пытарнă пулнă. Кулака вĕлернĕ хыççăн тепĕр чăрсăр ĕç тăваççĕ: айне динамит хурса нимĕçсен штабне сывлăша сирпĕтеççĕ. Штаба сирпĕтиччен арçынсем ачасемпе хĕрарăмсене чылайăшне материка ăсатнă. Çак диверси нимĕçсене уртарсах ярать: икĕ ялтан çĕр çын ытла персе пăрахаççĕ, çав шута Рийнăн ашшĕпе пиччĕшĕ те лекнĕ. Çапла вара Урине мăнакку ман пекех тăлăх-турат пулса тăнă. Икĕ тăлăх-турат пĕрлешсе çемье чăмăртарăмăр, икĕ ывăл пĕр хĕр çуратса ӳстертĕмĕр. Ывăлсен пуçне Гитлер çирĕ, хĕрĕмĕр ав сывах... Михаля, унăн ачи, ман мăнук пулать. Ăна пĕлетĕн пуль ĕнтĕ, туслă та мар-и-ха унпа?

— Туслă, паллах. Вăл сирĕн радиотехникăпа питĕ кăсăкланать, мана та çавăнталла сулăнма хĕтĕртет.

— Ăна пĕлни те кирлĕ. Мĕн чуль нумайрах пĕлетĕн, çавăн чул лайăхрах, çул уçăрах. Самани питĕ хивре килнипе эпĕ нумай вĕренеймерĕм. Пĕрехмай çапăçу та кĕрешӳ, вăрçă çине вăрçă... Сире, мăнуксене, ырă пултăр тесе тăрăшрăмăр, сисмерĕмĕр те, ĕмĕр иртсе кайрĕ. Аллă çул ытла пĕрле пурăнтăмăр Урине мăнаккупа. Хăш хушăра Рийнăран Урине кинеми пулса тăчĕ, сиссе юлаймарăмăр. Пурнăçсем йывăр килчĕç, çавăнпа пуль... Халĕ ĕнтĕ вăл эстони майри пулнине астăвакан та ялта темиçе çын кăна пуль, сахаллансах пыраççĕ. Килсенех ăна ялта пит йывăрччĕ: чĕлхине те пĕлмест, йăли-йĕрки те урăхла кунта, çыннисене те палламасть, пурте «эстун, эстун» теççĕ, мана хама та Эстун Кирили тесе чĕнме пуçларĕç, çав ят паян кунччен те хăпмасть çумран. Рийна эстони майри пулнине маннă, кăна манмаççĕ. Малтан Рийнăпа вырăсла калаçаттăмăр, «мой дом дале-еко» тесе час-часах куççуль юхтаратчĕ. Кайран чăвашла шакăртаттарса калаçакан пулчĕ те Рийнăран Урине пулса тăчĕ, хуйхă-суйхи те майĕпен сĕврĕлчĕ. Ывăлсем вăрçăра вилни вара пачах хуçса хăварчĕ мăнтарăна, вĕсем вилнĕ хыпара илсен, сарă çӳçĕ пĕр каçра юр пек шуралса ларчĕ.

Эс тата тĕлĕкӳнте хура пысăк хĕрес куртăм тетĕн. Каçран эпĕ каласа пани пуçна ларса юлнă та çавă курăннă ĕнтĕ. Пуян Кантраттие такамсем эпĕ яла çитичченех, хăй вăрманĕнчех, çул урлă тилхепе карса çул варне çакса хунă. Пĕрисем хăйĕн тарçисемех çакнă теççĕ, теприсем урăхларах та калаçаççĕ. Вăрманта вăл сахалтан та эрне тăнă. Кайран тин, совет влаçĕ çĕнтерсе çирĕпленсе çитсен, санăн аслаçу каласа паратчĕ: кайрăмăр, тет, асаннӳпе пĕрре Кантратти вăрманне кăмпана. Чи тĕттĕм

çĕрсенче, улах вырăнсенче, вăрман хуçи тĕлне пуласран хытă шикленсе, ним сасă кăлармасăр çӳренĕ асланçупа асаннӳ, ун чухнехи яшă çынсем. Пĕлтĕрхи çулçăсене сирсе майра кăмписем, шур кăмпасем, кăрăçсем йышлă тухса ларнă. «Ытла та хитре-çке шур кăмпапа кăрăç! Яшка валли типĕтсен, çисе тăранмалла мар пулать», — савăннă кăмпа татнă май асланçу. «Каларăн та, — хирĕçленĕ асаннӳ. — Тăрăннă та хăйĕн яшкине, пĕрех унпа супать. Сала майрисем, авă, кăмпана шаритлеççĕ, тăварлаççĕ, кукăль пĕçереççĕ». Хайхисем кăмпа татата ывăнсах çитеççĕ. «Канар-ха, Мĕтри, — тет асаннӳ, — вăрманти пĕтĕм кăмпана татса та пĕтереймĕн. Итле-ха, епле шăп вăрманта». Кăмпа кунтăкĕсене кивĕ çул хĕрне лартаççĕ те хăйсем те ларaççĕ. Каланçнă май çул урлă, çул тăрăх пăхкалаççĕ. Сасартăк асланçу кĕл пек кăвакарса каять, чĕлхесĕр пулса тăрать. Аллине хăй текех пĕр еннелле кăтартать, нимуй çын пек: «М-м, ав, мĕн, унта», — тесе мăкăртатать. Асаннӳ вăл кăтартнă çӳрелле çаврăнса пăхать те чут çеç йăванса каймасть: çын çӳремен кивĕ çул урлă тилхепе карнă, тилхепе варринчен пăяв çаклатса çын çакса хунă. Хăра-хăра пырса пăхаççĕ те: Кантратти! Куçне хупнă, пичĕ кăвакарса шыçăнса кайнă. Чĕлхи çăварĕнчен алсатуль пек тухса тăрать, хупхура. Пăхса тăрсан-тăрсан тин мăшăра тăн килсе кĕрет. Кунтăкĕсене çавăрса тытаççĕ те çак усал вырăнтан çаврăнса пăхмасăр тараççĕ: курман-илтмен, пĕр сăмах. Çынни те тата тĕнчере çук пӳтсĕрскер. Темиçе çултан тин каласа кăтартрĕç çакна асланçупа асаннӳ, унччен çăвара шыв сыпнă пек пурăнчĕç. Вăрман урлăсене хытă силленĕ терĕ кун хыççăн кантуртисем, вăхăтлăх правительство йыттисем. Пирĕн яла килсе тĕкĕнмен, ялтан ытла инçетре çакăнса тăнă çав Кантратти, хăйсенченех кам та пулин, тенĕ пуль. Вăхăчĕ пăлхавăрлă, тăнăççăр вăхăтчĕ, эсерсен Кантраттисĕр пуçне те ĕçĕсем мăй таранах пулнă пуль. Ик вăрман хушшине шăтăк алттарнă та персе чикнĕ пуяна, çине элес-мелес юман хĕрес ларттарнă. Пӳкле вилĕмпе вилнĕскерне, чăваш йăлипе, çăвана мар, уйрăм пытарнă.

— Халĕ те паллă мар-и вара кам вĕлени?

— Паллă мар. Хăйĕн тарçисемех пуль. Мĕншĕн тесен ытла та чунсăр, тискер, хыткукар çынччĕ Кантратти. Тарçисене те чĕрĕлле çинĕ ĕнтĕ вăл. Самана тикĕс марне кураççĕ те лешсем... вара...

Мучи вăлтисене майласа пĕтерчĕ. Хĕвел тухаспа эпир кӳлĕ хĕрне антăмăр. Хăмăш хушшинче пирĕн пĕчĕкçеççĕ кимĕ пур, пирĕн те мар-ха вăл, колхозăн, халлĕхе çеç пирĕн. Хускалмасăр тăракан тăрă шыва шăпăлтаттарса кимме шаларах тĕртсе кĕртетпĕр, пулă тытмалли ăпăр-тапăра кимĕ çине хуратпăр. Эпĕ кĕсменсем тытатăп, мучи хӳрене ларать. Хăмăшсенчен иртсен, кăшт шаларах, «якăр яратпăр»: вăлтасене пĕри пĕр еннелле, тепри тепĕр еннелле ывăтатпăр, вара иксĕмĕр те тăм пуканесем пек чĕнместпĕр, çур сехет, сехет çурă çапла ларатпăр. Шыв тăп-тăрă. Тайăлса пăхсан, унăн тĕпĕ йăлтах курнать. Хĕвел тухнă май шыв çийĕ çутала пуçларĕ, тухса çитсен — кӳлĕ çине çăмăл çутă тĕтре карса илчĕ. Эпĕ умри хĕрлĕ путăша куçа хупмасăр сăнатăп: «Ма туртса антармасть, мур илесшĕ!» Хĕрлĕ путăш-хулкка шыв çийĕнче çаплах хускалмасăр тăрать. Мучи ĕнтĕ виç-тăват хутчен вăлта хуллине картлаттара-картлаттара туртрĕ, хĕрлĕ çунатлă самаях пысăк уланкăсене вăлтаран вĕçертсе илсе витрери шыва ячĕ. Ман ĕç ăнманнине вăл лайăхах туять пулмалла. Çаврăнчĕ те: «Хулккапа вăлта хушшинчи çипне кĕскет, — терĕ, — кунта кӳлĕ тарăн мар, вăлту шыв тĕпнех çитсе выртать, пулă куртăр тесен, шывра çакăнса тăмалла. Вăлти вĕçĕ те ăманĕнчен тухса ан кайтăр».

Мучие итлесе вăл каланă пек турăм та кĕтме пуçларăм. Чăнах та! Хулкка малтан силленсе илчĕ, унтан... путса анса кайрĕ. Пĕррех туртса кăлартăм вăлтана. Унта çакланнă хĕрлĕ çунатлă пулă, шывран чаклатса тухса, таçта çити çӳле çĕкленчĕ те вĕçерĕнсе кайса кимĕ тĕпне килсе ӳкрĕ. Савăннипе эпĕ ташламанни кăна! «Ытла хытă ан турт, — мăкăртатать мучи, — кӳлĕри пулăсен çăварĕсене йăлтах çурса пĕтерĕн».

Хĕвел тухса çурăмсене самаях хĕртме пуçланăччĕ ĕнтĕ, ман котелок уланкăпа тулса ларчĕ. Мучин пĕчĕк витри те чут çеç тулмарĕ. Тата тытнă пулăттăмăр-и, хӳшшĕмĕр патĕнчен йытă вĕрни, хĕрача çинçе сасăпа хыттăн кăшкăрни уççăн илтĕнсе кайрĕ:

— Мучи! Хумкка-а! — янăрать сасă. — Вĕри яшка илсе килтĕм! Урине мăнакка парса ячĕ-ĕ!

Кириле кăмăлсăррăн йăшаланса илчĕ: «Никкăн хĕрĕ амăшĕ пекех уçă саслă», — тесе çыраналла çаврăнса пăхрĕ те хатĕрхĕтĕрсене пуçтарма хушрĕ. Эпĕ, хĕрсе кăна çитнĕскер, тата кăшт ларасшăччĕ, çӳлтен каллех уçă сасă илтĕнчĕ:

— Хăвăртрах килĕ-ĕр! Сивĕнет!

Анюк-çке ку! Аськина Анюк! Вăл пулмасăр кам пултăр — чанкăлти майра...

Эпир хăмăш хушшинелле ишнĕ самантра Анюк сăртран пирĕн паталла сиккипе чупса анчĕ. Хыçĕнчен хӳрине кĕлентĕр пек авса хунă Улайкка ĕрĕхтерсе пырать. Анюк çанăсăр кĕске кĕпепе, кĕпи çутă, чечеклĕскер пулас та, чечекне аякран уйăрса илме çук. Çӳхе çитсă, хĕрача хытă чупса аннипе, ӳчĕ çумнех çыпăçса ларнă. Чĕркуççийĕсем вĕлтлетсе çеç пыраççĕ. Кĕске çивĕчĕсене çыхнă шурă сарлака хăюсем, пысăк лĕпĕшсем пулса, Анюк хулпуççийĕсем çине ларасшăн пуçĕ тавра вĕркеççĕ, ăна хăвалаççĕ пек. Кимĕ патне Анюк тап! тап! тап! тап! тутарса, çĕре кисретсе чупса пычĕ. Вăт тĕнче култармăш: хĕрача пуçпа çуллахи шăрăх кунта кирза атă тăхăнса янă! Эпĕ çакна тӳрех асăрхарăм та манăн питĕ кулас килсе кайрĕ.

— Атя атăсене улăштаратпăр, — терĕм эпĕ тăрăхлас шутпа, — хамăн тăвăртарах, санăн хĕрĕх иккĕмĕш размер тенине илтнĕччĕ.

— Шел, вăтăр саккăрмĕш анчах, тен, сана лутра кĕлеллĕ туфли килĕшерех парать? Манăн кунтах пур, сумккăра, хĕсмест, çăмăл, вăтăр улттăмĕш размер.

— Ху ма тăхăнмастăн тата, пилĕк çухрăм кирзă атă сĕтĕрнĕ?

— Эп велосипедпа килнĕ... Утă тавăрнă чух атăсăр хăрушă, çĕлен сăхма пултарать.

Анюк виртлесе Кириле мучинчен вăрттăн чĕлхине кăларса кăтартрĕ те шыва чăмпăлтаттарса кимĕ патне кĕчĕ. Мучи, сăмах чĕнмесĕр, малтан ăна вăлтасене тыттарчĕ, унтан ытти ăпăр-тапăра, ман тулли котелока, юлашкинчен, кусене типĕ çĕре тухса хурсан, хăйĕн витрине пачĕ.

— Ку витрери пуллине эп тытнă, — терĕм эп мучие куç хĕссе, Анюк умĕнче мухтанса илес шухăшпа.

— Асту, тупăннă герой.

— Герой-и, герой мар-и, тытрăм-ха.

— Атту эп Урине мăнакка витрине палламастăп пуль.

Ну, каçăр сăмса-çке çак Анюк! Ăна ним каласа та килĕштерме çук. Чим-ха, сăмси чăнах та каçăр мар-и унăн? Анюк сăмси мĕнлине тепĕр хут пăхса илес тесе пуçа çĕклерĕм те, хĕрача кĕтмен çĕртен йăл кулчĕ. Сăмси... каçăр мар иккен, тӳрĕ хитре сăмса. Улайкки те, хуçи пекех, манпа питех интересленмест: эп тип çĕре тухсанах ман тăрăх пĕр-иккĕ сикрĕ

те мучине пырса çулăхрĕ, кăкăрĕ çинех сиксе ăна питĕнченех çуласа илчĕ.

— Эккей ку Улайккапа, — мăкăртатать Кириле кĕсменсене кимĕ тĕпне майласа хунă май, — пĕр талăк курмасăрах епле тунсăхланă.

Кимме шалçа çумне кăкартăмăр та хӳшĕ патне хăпартăмăр. Анюк, чăн та, велосипедпа килнĕ иккен: «çуран лаша» хӳшĕ сулхăнĕнче шăппăн канса тăрать.

— Анюк, велосипедпа ярăнса килем-ха.

— Ывăннă вăл, кантăр-ха, яшка çимелле, яшка сивĕнет.

— Яшка çисен, ирĕк паратăн-и?

— Ирĕк паратăп.

— Пирĕн пулă шӳрпи пур, сыпатăн-и пулă шӳрпи?

— Çиес килмест ман, тавтапуç.

Утă хураллакансем валли Урине мăнакка ватă автанне пуснă, яшкине, час ан сивĕнтĕр тесе, чĕреспе парса янă. Яшкапа пĕрле пĕрер тукмак, пĕрер çунат çирĕмĕр те, мучи ман валли йĕтес тупса кăларчĕ:

— Акă, йĕтес туртăр, эп сирĕнпе тупăшаймăп, ватă ĕнтĕ, час манăçатăп, — терĕ.

Аллăма тăсса ĕлкĕриччен Анюк пычĕ те йĕтесе тытса илчĕ. Эп сиксе тăрсан, хӳшĕ тавра тара пачĕ. Хăваларăм-хăваларăм — ниепле çитме çук. Малта Анюк вĕçтерсе пырать, ун хыçĕнчен — эпĕ, ман хыран — Улайкка. Улайкка хыçăмран хамлатса сиксе пычĕ-пычĕ те шăлавартан кăларса янă кĕпе аркине кап! хыпрĕ. Хыпрĕ те çакăнса каялла туртма пуçларĕ. Ирĕксĕрех чарăнтăм. Çакна курсан, Анюк кула-кула йăвансах кайрĕ. Майпен лăпланса ума пырсан, йĕтесне сăмса умĕнче вылятса:

— Мĕн илсе памалла туртатпăр? — терĕ.

— Мĕн илсе памалăх укçа пур пирĕн, иксĕмĕр те шалу илместпĕр? — тавăртăм эпĕ. — Çапла килĕшĕпĕр: эп вăлтсан, эс велосипедпа ярăнтаратăн, эсĕ вăлтсан, эпĕ кимĕпе ярăнтаратăп. Килĕшрĕмĕр-и? Килĕш ĕнтĕ.

— Килĕшрĕмĕр!

Кирек хăçан, кирек ăçта, кирек кампа йĕтес туртсан та, асăрханă-и эсир, пуç яланах: «Малашне асра тытасчĕ, улталанас марччĕ», — тесе шутлать. Çав майпа, малашĕ йĕтесне туртнă самантрах пуçланать пулин те, çав самант пирки пит шухăшласах каймастăн, хăш чух вăл пуçран та тухса ӳкет. Йĕтесе иккĕн туртса уйăратăн та, пĕри çавăнтах, çав самант-

рах, тепĕрне, çекĕл пек шăмă мĕнле хуçăлса икке уйрăлнине пуçне кĕртсе лартнăскерне, урăххи çинчен шухăшласа та ĕлкĕреймĕнскерне, йĕтес хуçăкне тыттарать. Лешĕ: «Асăмра!» — тес вырăнне куçне чарса анраса тăрать. Çав вăхăтра: «Йĕтессĕм!» — тени шартах сиктерет ăна. Анюкпа йĕтес туртрăмăр та, хам татăка кăкăр кĕсйине чикесшĕн пултăм, йĕрки çапла. Анюк хăй çине пăхкаларĕ те кĕсъе таврашĕ çуккипе: «Ме-ха манăнне те чиксе хур», — тесе тăсса пачĕ йĕтесне. «Асăмра!» — темеллеччĕ манăн. Эпĕ, тăмана, Анюка кĕсйи çуккишĕн шеллеме вăхăтлă пăрахайманнипе, ним калама аптăрарăм, Анюк «йĕтессĕм!» тесен çеç «асăмра» тесе ятăм. Анюка каллех кулă. Манăн вара, тин кӳлĕ çинчен таврăннăскерĕн, çĕнĕрен унта тухмалла. Ним тума та çук, вăйă йĕркине пăхăнмаллах. Пиртен тухнăскер мар. Кам айăплă? Хам айăплă. Хам ытла та анкăминкĕ. Манран мучи те кулать, кĕнеке çыракан пулаймастăн капла, тет. «Кĕнеке çыракан» тенĕ сăмахсене илтсен, Анюк хăлхине чанках тăратрĕ:

— Кĕнеке çыракан? Фу! Хумккаран пулать-и кĕнеке çырасси. Вăл «çырас» сăмаха та хальччене «ы»-па мар, «и»-пе çырать те...

Тавлашсан та усси çуккине туйса, эпĕ кĕскен çеç: «Кайрăмăр!» — терĕм. Эп хушнине чи малтан Улайкка илтрĕ, хăлхисене тăратса ман енне пăхрĕ те янках сиксе тăчĕ. Хуçи, те паçăрхи критика витнĕрен, лăпăш-лапăш аттине хывса çапса çăмăл туфли тăхăнчĕ. Эстун Кирили, ăпăр-тапăр япаласене тирпейлесе вырнаçтарнă май, Макаров адмиралăнни пек шурă кĕреçе сухалне çине-çинех ачашлать, пирĕн çине кăмăллăн та юратса пăхать. «Шывра ан алхасăр, киммĕр ӳпленсе кайĕ, вăйăран вăкăр сиксе тухĕ, — терĕ вăл хыçран пăхса юлса, — утă тавăракансем халех килмеççĕ пуль-ха, питех ан васкăр».

Кăмăлсăрланни сисĕнетех çав. Эп кăмăлсăр пулнишĕн хăйне айăпласа, Анюк, эпир кӳлĕри уçă вырăна тухсан, манпа ытла та ырă калаçа пуçларĕ. Çине-çинех ыйту парать, «леш мĕн?» те «ку мĕн?» тесе кăна пырать. Хăмăшсен хушшинчен пĕртен-пĕр ула чарлан çĕкленчĕ те, пирĕн çывăха ана-ана темиçе хутчен çуначĕпе шыва çапса илсе, малалла, Эстун Кирили Чарлан утравĕ теекен утрав еннелле, вĕçсе кайрĕ. Ăна эпир мĕн куçран çухаличченех пăхса ăсатрăмăр, вара хамăр та унталла ишме тытăнтăмăр. Кимĕ айĕнчи тăрă шыв ирхи хĕвел

çутипе вутăн-хĕмĕн ялкăшать, кĕсмен вĕçĕсенчен ахах-мерчен пулса тăкăнать. Çак илеме эпĕ çеç мар, Анюк та ытарайми пăхса савăнса пырать-мĕн. Савăнăçне ниçта чикейменнипе кимĕ пуçне тăчĕ те, сылтăм аллине малалла кăнтарса:

Под ним струя светлей лазури,
Над ним луч солнца золотой! —

тесе хучĕ. Кимĕ сулăнса кайнипе хăй чутах ӳкетчĕ, ирĕксĕрех ман мăйран уртăнмалла пулчĕ. Çапла тунипе кимĕ пушшех те тайăлчĕ, иксĕмĕр те кăшт çеç шыва çатлатмарăмăр. Эпир ахăлтатни утрав çине те илтĕнет пуль. Çывăхах мар-ха пиртен утрав, ик çухрăмсем те пулать-тĕр.

— Эп сана тĕлĕкре курнă, сан çӳçӳ питĕ хулăм пек, пилĕкрен явкаланать пек, сана кĕске çӳç мар, вăрăм çӳç килĕшет, — терĕм Анюка. Вăл çакна тăрăхлани вырăнне йышăнчĕ:

— Эпĕ те сана курнă, — терĕ йĕкĕлтесе, — çӳçӳ-пуçу тăмаланчăк пек, куршанаксем çыпăçса пĕтнĕ пек, сана тăмаланчăк пуç мар, шакла пуç килĕшерех парать пек...

— Ан шăл йĕр-ха эс, Анюк, эпĕ чăн калатăп.

— Эпĕ те чăн калатăп.

— Эпĕ сана темле утрав çинче курнă. Вут çунать пек, çулăм, тĕтĕм явăнать...

— Эп сана лачакара курнă. Пылчăк, çăрăлчăк пек...

— Эс кăшкăрсах макăратăн пек, Анюк...

— А эсĕ макăрайми те пулнă.

— Мĕне пĕлтерет-ши çакă пĕтĕмпе?

— Тăххăрмĕш класра вĕрене пуçласан, математикăпа иккĕ çине иккĕ илессе.

— Эс пĕрре те иккĕ илмĕн ĕнтĕ.

— Эп иккĕ мар, пĕрре илĕп...

Çапла калаçса пыра-пыра эпир сисмен те, умри утрав, Чарлан утравĕ, пирĕн патах çитсе тăнă, унăн çӳллĕ те хĕрлĕ çыранĕ уççăнах курăнать ĕнтĕ, çийĕнче чарлансем йышлăн явăнаççĕ, явăнаççĕ-явăнаççĕ те шыв çинелле чул пек анаççĕ, вара каллех тӳпенелле ярăнса хăпараççĕ.

Хыçалалла çаврăнса пăхрăмăр. Унта пирĕн хӳшĕ, хӳшĕ патне юлнă Улайккапа Кириле мучи кăшт çеç палăраççĕ...

Çыран айнех пырса çитсе, Анюкпа иксĕмĕр те:

— Сывă-и, утрав, Чарлан утравĕ! — тесе кăшкăратпăр. Ахрăм янăрать.

Утрав урăх нимĕн те чĕнмест, хăй сыввине пĕлтерсе чарланĕсене шуйхатать çеç. Чарланĕсем çуллахи хĕвеллĕ ире мухтаса тата пире саламласа хытăран-хытă çуйăхаççĕ.

— Пирĕн утрав, — терĕм те Анюка çырă куçĕнчен пăхрăм.

— Пирĕн утрав, — хуравларĕ вăл, ачашшăн йăл кулса.

Ула чарлан, пуç çийĕн вĕçсе иртсе, кӳлĕ хĕрринелле васкарĕ... Вăл çыраналла таврăннине халь Кириле мучи, тен, ывăç тупанĕ айĕнчен сăнаса тăрать пуль? Сăнанă май, тен, каллех яшлăхне аса илет?..

Эпир, çӳллĕ çыран айĕпе ишсе иртсе, сĕвек çĕре пырса чарăнтăмăр. Сĕвек çыранта шыв патне çитиех тенĕ пек симĕс çерем. Анюк туфлисене çерем çине тухса хучĕ, эпĕ шăлавар пĕççине тавăрса ятăм, вара кимме хăйăр çине сĕтĕрсе кăлартăмăр. Утрава тĕпчеме пуçличчен, çӳллĕ çырана улăхса тавралăха сăнас килчĕ. Çемçе курăк çинче çарран утма питĕрех те ырă иккен. Шывалла карттус сăмси пек тухса тăракан çӳллĕ вырăнтан тавралăх таçта çити курăнать. Ял. Фермăсем. Водокачка. Ял çумĕнчи хурăн кати, ун айккипе иртекен шоссе. Шоссепе вĕçĕхĕррисĕр чупакан машинсем... Аякра пирки пурте пĕчĕккĕ, уçăмсăр курнаççĕ. Катаран леререх пысăк вăрман, çав вăрманăн пĕр хĕрри кунтах çаврăнса килет, Павăл хăртнинчен иртсе кăшт кайсан, çĕнĕрен пысăк вăрман, вунă-вуник çухрăма тăсăлаканскер, пуçланать. Пирĕн колхозăн кӳлĕ хĕрринчи çаранне час-часах, кашни çулах пулмасан та, вăрман урлăсем каçса çулкалаççĕ, хатĕр утта турттарса кайма та йĕрĕнсех тăмаççĕ. Хăйсене вĕсем «вăрман патшисем» тесе шутлаççĕ. Ялĕ, Таркăн ятлăскер, вăрман айĕнчех ларать, пысăк мар, çирĕм-вăтăр килтен ытла та мар пуль. Вăрланă утисене килĕсене кĕртмеççĕ, вăрмана пытараççĕ, çавăнтанах аякран утă шыраса килекенсене, хĕлле, утă хакĕ икĕ хут ӳссен, е çуркунне енне, утă-улăм ылтăн хакĕпе танлашсан, сутаççĕ. Çуллах, çаран çинчен тӳрех, тиесе янă самантсем те пулман мар. Кун пек меслет вăрăсемшĕн тата аванрах: хатĕр ют утта ик хака сутса тиесе яраççĕ те, сутаканĕсем те, илекенĕсем те, пуçтах шоферсем, услам тăваççĕ. Вăрлама, паллах, хурал çукрах çĕрсенчен, хуралĕ укçана е «çуттине» кăмăллакан çарансенчен, канлĕ. Ăçта мĕн начар выртнине вăрман урлăри пĕчĕк ялта, уйрăмах Пуян Кантратти йăхĕнчи пĕр-ик кил, аван пĕлеççĕ. Тытма вĕсене пĕрне те тытман-ха, çын сăмахĕ çеç ку халлĕхе — çак ялти хăшпĕр çынсен алли кукăр тени, анчах унта Пуян Кантратти йăхĕнчи

пĕр-ик тымар пурри вара тĕрĕсех. Тытман вăрă — вăрă мар, тетпĕр те, çакă пур чухне те тӳрре килмест çав. Хăш чух тытман вăрă та вăрă пулать, çакна пĕлме пире совет самани хăй пулăшать, ăçтан вăрласа мĕнле пуйнине халăх контролĕ часах тĕпчесе пĕлет.

Колхозăн кӳлĕ хĕрринчи çаранĕ тĕп çаран мар, тĕп çарансем пирĕн пысăк вăрманăн аслă ĕшнисенче. Халĕ пĕтĕм халăх çавăнта утăра, кӳлĕ хĕррине маларах çулса пăрахрĕç, паян кăнтăрла утă тавăрса, каçпа ăна купасене хывмалла.

Шоссепе машшинсем унталла-кунталла чупнине Анюк çăварне карсах пăхса тăрать.

— Кăткăсем пекех вĕркеççĕ, — терĕ вăл сасăпах.

— Машинсем-и?

— Аха. Элеватора тырă леçме вăхăт çитсен, аттерен пурпĕрех ирĕк ыйтса илеп.

— Кам машшин шанса патăр сана, праву ăçта?

— Сан ăçта? Унччен права та илĕп-ха.

— Эпĕ те илетĕп.

— Сана Михаля мотоцикл çӳретме вĕрентрĕ-и?

— Вĕрентрĕ.

— Мана та атте вĕрентрĕ.

— Вĕрентрĕ? Çавăнпа çĕтĕк велосипед утланса килтĕн-и кунта?

— Атте мотоциклпа ирех района кайрĕ... Эп Чистайран яла çити, аллă çухрăм, «ЗИСа» хамах тытса килнĕ, эсĕ газик çине те ларса курман пуль-ха.

Хĕрачасене тавлашса çĕнтерме питĕ йывăр, хăш чух пачах май çук. Анюкпа эпĕ текех тавлашмарăм. Колхозри Никкăн механикăн хĕрĕ кирек мĕнле машинăна çӳретме те мĕн пĕчĕкренех пĕлнине кама калăн? Çакă ялта пуриншĕн те тахçанах паллă. Ывăл ачисем çулла, каникула тухнă-тухман, тракторсем çине «утланаççĕ»: хăш чух пĕр-пĕр çын вырăнне, лешĕ сывмар е ерçеймен чухне, хăш чух вара хăйсене те шанса параççĕ. Хĕрӳ вăхăтра, ĕç алли çитмесен, килĕшме тӳр килетех çав.

Тавралăхпа киленсе тăрансан, утрава курса çаврăнас терĕмĕр. Пĕрер икçĕр метртан вăрман пуçланать. Вăрмана кĕриччен катăркас тĕл пулчĕ, пилеш, çĕмĕртсем... унтан — шĕшкĕлĕх. Шĕшкĕлĕхпе иртрĕмĕр те юманлăха лекрĕмĕр. Çӳресен-çӳресен, вĕтĕ ăвăслăхра куян çури куртăмăр. Вăл, пĕчĕкскер, хăрама та пĕлмест, пире курсан тармарĕ, хăлхисене выртгарчĕ те йывăç

çумне лăпчăнчĕ. Анюк ăна «аннӳ патне кай, тилĕ тытса çийĕ» тесе хулăпа хăратса ячĕ. Инçе те мар чĕрĕп нăрхлатать, патне пыма пуçласан, шăтăкне кĕрсе çухалчĕ. Тĕлĕнмелле вăрман ку утрав çинче: тискер кайăкĕсем çынран хăрама пĕлмеççĕ, çын çӳресех каймасть пулас кунта.

Кайăк-кĕшĕк хĕрсех юрă шăратать. Чечексемлĕ пĕр уçланка тухрăмăр та ӳкнĕ йывăç çине канма лартăмăр. Çывăхри турата пилеш кайăкĕ йышăнчĕ, тăрăшсах ытти кайăксене вăрçтарса, шăхăра-шăхăра юрла пуçларĕ. Таçтан муртан чакак вĕçсе килчĕ, Анюкран пĕр хăлаçа тенĕ пек шăлан çырли тĕмĕ çине ларчĕ те, пуçне хăяккăн пăрса, хӳрине çӳлелле-аялалла вылятса илчĕ. «Камсем эсир, мĕн туса çӳретĕр?» — тет-ши ĕнтĕ? Хăрнă ăвăса улатакка таккать. Хĕрсе ĕçлекенскер, вăл пирĕн çине çаврăнса та пăхмарĕ.

Вăрманти пур чĕрĕ чун та ирпе-ирех вăраннă. Хĕвелĕн вăрăм урисем вăрманăн чи тĕттĕм çĕрĕсене çитнĕ, çăра çулçă витĕр тухса хурт-кăпшанкă таранах ăшăтаççĕ. Уçланкăра шурă, сарă, симĕс лĕпĕшсем пĕрне-пĕри хăваласа вĕçеççĕ. Анюк ури патĕнченех харсăр кăткăсен отрячĕ иртрĕ. Пĕри ушкăнран юлса вилĕ шăнана, хăйĕнчен темиçе хут пысăкскерне, çурăмĕ çине çавăрса хучĕ те малалла кайрĕ.

Вăрманта, шăп мар та, тăнăç, канлĕ. Ӳкнĕ хăрăк йывăççем урлă каçа-каçа, вĕтлĕхсем витĕр, хулăм та лапсăркка юмансем хушшипе эпир уçланкăсене темиçе те тухрăмăр, чечек татрăмăр, çырла çирĕмĕр. Хаваслaнмалли те, тĕлĕнмелли те чылай пулчĕ. Утравăн сарлакăшĕ çур çухрăм, тăршшĕ иккĕвиççĕрен ытла мар. Хĕлле кунта сунара килмелле. Куян çеç мар, тилĕ те, пакша та тытма пулать. Тен, ăсан та пур?

Хĕвел çӳлĕрен-çӳле хăпарчĕ. Чăтма çук ăшă. Пирĕн ĕçес килет. Кăнтăрла çитеспе вăрмантан тухрăмăр та шыва кĕме шутларăмăр. Ăшăх вырăнта малтан пĕрне-пĕри хăвала-хăвала, чикелене-чикелене шыв тăрăх чупрăмăр, питрен шывпа сирпĕтрĕмĕр, вара шыв айĕнчен каймалла выля пуçларăмăр. Шыва чăмса Анюк мана ураран вăрттăн пырса тытасшăн, анчах шывĕ питĕ тăрă пирки, аялтан пыни йăлтах курнать. Анюк сиксе тухиччен эпĕ таçта аякка таратăп. Чăмма мана черет çитсен, Анюк «хăлхана шыв кĕчĕ» тесе вĕри хăйăр çине тухрĕ. Пĕччен мана та шывра интереслĕ мар, юнашар тухса лартăм. Хăйăр çинче пĕр вăхăт хĕвелпе пиçрĕмĕр, шыва тепре кĕрсе тухса çерем тăрăх тихасем пек сиккелесе çӳрерĕмĕр. Эпир

пăлхатнă тăрă шыв, самаях пысăк хумсем пулса, çыран хĕрринче хăяккăн выртакан кимме пыра-пыра çулать, майĕпенех лăпланать те, эпир каллех чăнкă çырана хăпаратпăр. Кириле мучи юлнă енне пăхатпăр:

— Килсе тулнă, авă чупкалаççĕ! — иккĕн харăсах кăшкăрса яратпăр утă тавăрма тата ăна паянах купасене хывма иртенпех ĕмĕтленекенскерсем, кӳлĕ хĕрринче аран çеç палăракан кĕлеткесене асăрхаса.

Кимĕ патне анса ăна шывалла сĕтĕрнĕ хушăра çӳллĕ çырана кĕтмен-туман çĕртен, таçтан-муртан, сасартăк этем тухса тăчĕ. Пĕр хулĕ урлă салтак хутаççи çакнă, хура куçлăхпа, çӳçĕ хулпуççи таран, джинсы текен тăвăр шăлавар, шакмаклă кĕпе тăхăннă, сылтăм аллинче — çава. Хутаççипе çавине çĕре хурса, кăкăрĕ çинче çакăнса тăракан биноклĕпе эпир хальрех çеç пăхнă еннелле тăрăшсах сăна пуçларĕ. Пăхса пĕтерсен, пире саламланă пекки туса ал сĕлтрĕ те çав çӳллĕ çĕртех кĕпине, шăлаварне хыврĕ, плавки вĕççĕн çеç юлса (арçын иккен!) вырăсла: «Внизу глубоко?» — тесе ыйтрĕ. «Наверно глубоко», — терĕмĕр эпир Анюкпа вăтанарах. Çынни вырăсха та, пиртен чылай аслăскер, епле вăтанмăн хальччен курман-илтменскер умĕнче? Анюк пушшех те вăтанчĕ. Пăшăлтатса çеç: «Чăнах та сикеет-ши?» — тесе ыйтрĕ манран. Малалла мĕн пуласса чăтаймасăр кĕтетпĕр. Акă йĕкĕт виç утăм каялла чакрĕ, чупса пырса çырантан пуçхĕрлĕ сикрĕ те, сывлăшра кустăрма пек çаврăнса илсе, шыва питĕ меллĕн, ăна нумай та сирпĕтмесĕр, кĕрсе кайрĕ. Кĕрсе кайрĕ те... пачах çухалчĕ. Тăрсан-тăрсан тин пиртен инçе те мар пăнкăлт! сиксе тухрĕ. Куçне-пуçне чаркаласа сывлăш çавăрса ярсан, кулса пирĕн пата пычĕ. Вырăсах пуль çав, малалла та вырăслах пуплерĕ:

— Самаях çӳллĕ иккен, аяла ниепле вĕççе çитме çук.

— Вун метрсем пур пулĕ, — хуравларăм эп, кĕсменсене кимĕ çине хурса, — тен, ытларах та...

— Эсир камсем? — хаваслăн ыйтрĕ йĕкĕт, пĕр хăлхине ывăç тупанĕпе хупласа хăрах уран сикнĕ май.

— Çынсем...

— Çынсемне куратăп-ха. Мĕн ятлă?

— Эпĕ Хумкка... Ку — Анюк.

— Фомка и Анка. Интересно. Брат с сестрой?

— Çук, пĕр ялсем, пĕр класра вĕренетпĕр.

— Понятно. Дама сердца.

— Мĕн вăл — «дама сердца»?

Вырăсла калаçакан йĕкĕт ахăрса кулса ячĕ:

— Боже мой! — терĕ вăл варне тытсах ахăлтатса. — Ну и Томас! Фома тени вăл акăлчанла — Томас. Хушамату ăнсăртран акăлчанла мар пуль те?

— Çук, Фомин. Сирĕн мĕнле?

— Чингачгук. Эп çак утравăн патши, индеецсен харсăр воинĕ, сунарçă тата йĕрлевçĕ. Сирĕнни пек тĕксĕм ӳтлисене тапăнмастăп, шурă ӳтлисене çеç хĕрхенместĕп. Манăн вигвам вăрманти вăрттăн вырăнта, ун тĕлне хам çеç пĕлетĕп. Çитес çывăх вăхăтрах эпĕ хурахсен харсăр ушкăнне пухма пуçлатăп. Чингачгук Йывăр Алă малашне сире хăйĕн чи шанчăклă та çывăх тусĕсем тесе шутлĕ.

Çапла калаçнă май, Чингачгук хăрах уран сикме чарăнчĕ те текех вырăнтан та хускалмасăр, малтан аллисене тĕлĕнмелле авкалантарса-вылятса, унтан хулпуççисене, кăкăрне хускатса, хăвăртран-хăвăрт ташлама тытăнчĕ. Параппан çапнă пек туса тутипе пимп! помп! тесе илет, акă ĕнтĕ пĕтĕм кĕлетки «ташлать» унăн. Тепĕртакран пĕр урине малалла кăшт куçарса унпа каллех малтанхи çĕре пуса пуçларĕ, унтан — теприне. Вара кĕвĕ майĕпе малалла та хыçалалла тайăла-тайăла урисемпе лап-лап! пусса ташларĕ.

Йĕкĕт çапла хитре юптарса калаçни тата индеецсен ташшине ăста ташлани пире питĕ килĕшрĕ. Алă çупса, хамăр та унран курмалăх хуçкаланма-авкаланма пуçларăмăр. Уйрăмах Анюк савăнса ӳкрĕ. Вăйă ăна улăштарсах ячĕ:

— Нимĕнле Анюк та мар эпĕ, — Ненси! — терĕ вăл сасартăк. — Ненси нимĕнрен те хăрамасть!

Ташлама пăрахса, Анюк çӳллĕ çыран çине чупса хăпарчĕ. Чупса хăпарчĕ те:

— Эй, эсир! — терĕ хыттăн, пирĕн енне сылтăм аллине кăнтарса. — Итлĕр те курăр: Ненси шывра та путмасть, вутра та çунмасть. Вăл чи шанчăклă, чăрсăр хурах пулĕ!

Эпир сăмах чĕнсе ĕлкĕриччен виç утăм каялла чакрĕ те пĕрех ярăнса анчĕ шывалла! Чăн та, сывлăшра çаврăнса илесси-тăвасси пулмарĕ унăн, пуçне ыраттарасран аллисене çӳлелле кăнтарса ывăç тупанĕпе ывăç тупанне перĕнтерчĕ те вĕçе пачĕ. Анюк харсăрлăхĕнчен эпĕ кăна мар, йĕкĕт те хытă тĕлĕнчĕ:

— Да-а, — терĕ вăл, сывлăш çавăрса ярса. — Вăт ку номер! Сире паянах хам ушкăна илетĕп. Эпĕ калатăп çакна — Чингачгук!

Чингачгук пирĕнпе çĕр çул паллана çын пек ал тытса уйрăлчĕ, сăмах майĕн çеç, çакă уншăн ниме те пĕлтермен пек, ыйтрĕ:

— Эсир халь, паллах, Джо мучие пулăшма васкатăр? Вăл паçăрах, эпĕ бинокльпе пăхнă чухнех, ывăç тупанĕ айĕнчен кунталла тинкеретчĕ: «Ăçта çухалчĕç ку Томаспа Ненси?» — тет пуль ĕнтĕ.

Эпĕ çакна малтанах ăнланмарăм:

— Мĕнле Джо? — терĕм тĕлĕнсе. — Вăл пирĕн Кириле мучи ятлă, — вара хам анкă-минкĕ сурăх пулнишĕн хытă вăтанса: — Çапла, çапла, Джо, эпĕ мансах кайнă, Кириле тесе урăх старике калаççĕ! — тесе ятăм. Манран Анюк та кулать:

— Санран мĕн хурахĕ пултăр? — тет. — Ытла та тавçăрусăр.

Иксĕмĕр те кимĕ çине кĕрсе лартăмăр, Чингачгук ăна шалалла тĕксе ячĕ:

— Джо мучие хăтарăр та хĕвел анаспа калле килме тăрăшăр, — хушрĕ вăл, пире çула ăсатса. Тепĕр çырана çитичченех эпир, Анюкпа иксĕмĕр, Чингачгукпа индеецсем çинчен тĕрлĕ халап шухăшласа кăларса пытăмăр. Палламан йĕкĕт хуларан канма похода килнĕ пĕр-пĕр студент пуль, терĕмĕр. Ахальтен мар вăл темĕн те пĕлет. Килĕнче унăн, паллах, магнитофон та, транзистор та, сайра тĕл пулакан тем тери интереслĕ кĕнеке те пур ĕнтĕ: ялпа хулана ăçтан танлаштаран. Пире вара утрав çине хăйне унта кичем пулнăран чĕнет...

7

Кӳлĕ хĕрринчи утта тавăрма пĕтĕм шкул тенĕ пек хăпса килнĕ: пиллĕкмĕш класс чанасем пек чакăлтатать, кунта пĕр кĕреплене иккĕн сĕтĕрекен те, кĕрепле утланса лашалла вылякан та, астумасăр кĕрепле шăлĕ çине пусса çамкине çаптаракан та пур; улттăмĕшпе çиччĕмĕш классем хулленрех шавлаççĕ, мучи мĕн калана çавна итлесе, малтанрах çулса пăрахнă паккуссене тавăраççĕ. Вуннăмĕшĕнчен темиçе ача çеç килнĕ, ыттисем пурте ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле вăрман ĕшнисенче çулаççĕ. Кунта килнисенчен ытларахăшĕ — пионервожатăйсем.

Аслăраххисем асăрхаса тăмасан, вĕтĕр-шакăр халăх тем те туса хума пултарать: халĕ çеç, авă, икĕ шакла пуçа кӳлĕрен çавăтса килчĕç — ыттисенчен вăрттăн шыва кĕме тарнă. Инкекмĕн сиксе тухсан, путса вилсен, кама ответ тыттармалла? Çавăнпа та вожатăйсем пуçтахсене алăран вĕçертмеççĕ, шыв ĕçме те, канма та пĕрченшерĕн ямаççĕ. Пирĕн хӳшĕ тавра велосипед, мотоцикл, мопед, бидонсем, сеткăсем, рюкзаксем, салтак хутаççисем, спорт сумккисем, тĕрлĕрен тумтир ерминккери пек сарăлса выртать; хамăрпа пĕр класра вĕренекен Ваççук Алюшĕ кӳлсе килнĕ ватă сарă кĕсре хӳрипе шăна-пăвана хăвала-хăвала хӳшĕ сулхăнĕнче такам тин çеç çулса панă ешĕл курăка çиет. Пырса çитсенех мучи пире апат çырткалама хушрĕ; апат çисе кăшт кансан, сенĕксем тыттарчĕ те утта тавăрма та кирлĕ марри çинчен пĕлтерчĕ. Улăхра çаран вăрман çаранĕ пек мар, курăкĕ те кунта унти пекех йĕпе мар, хĕвел хытă хĕртнĕ май витĕрех типсе пырать, çавăнпа та утта пĕр хĕрринчен пуçтарса купасене хывса пымалла. Купана хывнăскерне вара ăна çумăр та хытах йĕпетеймест. «Çумăрĕ ан çутăр-ха, халь вăл пире кирлех мар, — тет Кириле мучи типнĕ утта тытатыта пăхса. — Анчах каçа кĕвĕлесе яма та пултарать, ахальтен мар паян иртенпех чăтма çук пăчă. Шăмшак та тем йывăрланнă пек, çанталăк улшăнасса сисет вăл...»

Кĕçĕн классем халь паккуссене тавăрса мар, пĕчĕк-пĕчĕк купасем туса хăвараççĕ, вĕсене аслăраххисем пысăкрах купасене пухаççĕ. Аслă классем, мучирен ăс ыйта-ыйта, пысăк купасемех купалаççĕ.

Анюкпа Улайкка хĕрачасен ушкăнне кайса çулăхрĕç; хĕрачисем, питĕ дисциплинăллăскерсем, ним шавламасăр ĕçлеççĕ, темĕн пăшăлтатаççĕ-пăшăлтатаççĕ те ихиклетсе кулаççĕ, унтан ушкăнпа шыв кайса ĕçеççĕ.

Кимĕрен тухсанах мана Ваççук Алюшĕ пырса çыпăçрĕ, малтан хăйĕн чуман лашипе мухтанса тăна илчĕ, унтан утрав çинче мĕн-мĕн курнине тĕпчесе тарăхтарчĕ, халĕ ак хăй çĕркаç ял клубĕнче курнă «Пуççăр юланут» фильм содержанине каласа парать. Çумран каçчен те хăпмасса сиссе, унпа эпĕ сӳрĕккĕн çеç юмахларăм, Чингачгук пирки те, индеецсем çинчен те нимĕн те асăнмарăм, каçпа хамăр каллех утрав çине каясса, унта интереслĕ вăйă вылясса çак чараксăр çăвара пĕлтермерĕм, Анюк хĕрача пулсан та, кунтан шанчăклăрах, çирĕпрех, ăслăрах, пакăлти мар.

— «Пуҫсăр юланутра» мустангсем, тискер лашасем, кăтартаҫҫĕ, — килсе кĕрет хăлхана Алюш сăмахĕсем. — Унта Койот ятлă вăрă-хурах пур; ай, хăрушăскер...

— Тата мĕн пур?

— Тата улма-чăпар ут пур.

— Тьфу! Тата мĕн пур?

— Пĕр хитре хĕр, ҫук-ха, икĕ хитре хĕр...

— Хитре иккенĕ ăҫтан паллă?

— Авкаланаҫҫĕ...

— Тата мĕн тăваҫҫĕ?

— Юланутпа ҫĕмĕрен пек ҫӳреҫҫĕ. Хĕрне каччи ҫуралнă кун ячĕпе тискер лаша парнелесе пачĕ.

— Пуҫсăр юлануччĕ пур-и вара?

— Пур! Пур! Вăл пĕр хĕрĕн шăллĕ, ăна йăнăшпа пĕр офицер вĕлерчĕ.

— Кассий Колхаун капитан-и?

— Эсĕ те курнă-и-мĕн вăл кинона?

— Çук, кĕнекине вуланă: Майн Рид, «Пуҫсăр юланут». Тупса вулама сĕнетĕп. Пăх-ха, лашу вĕҫерĕнсе кайнă, кӳлĕ еннелле сĕнккерĕ.

Алюшăн ват кĕсри чăнах та вĕҫерĕннĕ, анаталла утать. Çакна курсан, йăлăхтармăш тус унталла тапса сикрĕ. Эпĕ тинех ҫăмăллăн сывласа ятăм.

Улăхра майĕпенех утă куписен йышĕ ӳссе пычĕ. Малтан вĕсем виҫҫĕн-тăваттăн ҫеҫчĕ, кăштран теҫеткене, вара ҫирĕме, вăтăра... хĕрĕхе ҫитрĕҫ. Каҫ енне, кĕҫĕн классене яла ăсатсан, мучи юриех шутласа пăхрĕ: ҫитмĕл купа! Пухманни тата кăшт пур-ха... Юлашки паккуссене пуҫтарса купаланă вăхăта алăсем сăрăлтатса тăракан пулчĕҫ, ҫийĕмĕртен шăпăртатса тар юхать, пилĕксем ниепле те авăнасшăн мар. Хамăр пурпĕрех хаваслă, пĕрне-пĕри куҫ хĕсетпĕр, шӳтлетпĕр. Мучи хытă савăнни сисĕнет:

— Çамрăксемпе ăҫта каласа, — тет вăл, йăл-йăл кулнă май шурă сухалне ачашласа. — Хушсан, ту-сăрта тепĕр енне ҫавăрса лартĕҫ.

Алюш ĕҫ пĕтернĕ-пĕтермен ват кĕсрине кӳлчĕ те ман пата пычĕ:

— Кайрăмăр-и? — терĕ вăл ырă кăмăллăн. — Ыран турттарма килмелле пулать, Никкăн виҫ машин ярап терĕ. Тиеме те пирех тӳр килет — пĕтĕм халăх ĕшнесенче вĕт. Канар часрах ҫитсе...

— Пыраймастăп-ха эп.

— Ма?

— Хурала юлатăп. Эс ирхине ҫырткаламаллисем илсе кил, юрать-и? Анюк та пирĕнпе юлать, ашшĕне, Никкăн тетене, кала курсан. Май пулсан, Михаля мотоциклпа килсе кайтăр.

— Михаля килеймест, вăл кĕҫĕр пĕтĕм колхозĕпе дежурнăй, правленинчен, телефон умĕнчен, унăн ҫĕрĕпех ниҫта та кайма юрамасть. Колхоз пысăк, ĕҫ участокĕсем нумай, темрен тем пулас пур.

— Ну, салам кала эппин, Кириле мучине пулăшма юлчĕҫ, те.

— Юрать, эпĕ хам та Михаляна юлташа кайса ларатăп пуль-ха. Алă ылмаш ҫăмăлрах пулаканччĕ.

Ҫакна эпĕ пĕртте кĕтменччĕ — эпир Алюшпа пĕртăвансем пек ăшшăн уйрăлтăмăр. Вăл чуман кĕсрине пушăпа туртса ҫапрĕ те хăлтăр-халтăр урапине ялалла тăнкăлтаттарчĕ, эпĕ хӳшĕ патне таврăнтăм. Пуҫра хамăн пĕр шухăш: «Чингачгук мĕн тăвать-ши халь? Эккей, тăмписменсем: мĕншĕн ăна хамăрпа илмерĕмĕр-ха эпир? Мĕн туса ларать вăл пĕр-пĕччен унта, ҫын ҫӳремен ҫав пĕчĕк утрав ҫинче? Кичемлĕх пуснипе ниҫта кайса кĕреймест пуль? Кунта хуть ҫынсемпе паллашатчĕ, ĕҫлес килсен ĕҫлеме те пулатчĕ. Тен, вăл пĕччен мар?» Шухăша турăхпа пашалу ҫисе ларакан Анюка пĕлтертĕм. Анюк сыпнă турăхне ҫăтса ячĕ те ури ҫине тăчĕ:

— Чингачгук мĕн тăвать тетĕн-и? Пире кĕтет, эпир пыриччен тигрсемпе, крокодилсемпе, ҫĕленсемпе ҫапăҫать. Хальччен, паллах, шайккă пухнă. Пире параппан ҫапса, вут тавра ташласа кĕтсе илеҫҫĕ...

Кириле мучи, утă куписене ытараймасăр, улăхпа тепре ҫаврăнса килчĕ те эпĕ чĕрҫи ҫине ҫĕрулми тултарнине курса хĕвеланăҫнелле кăтартрĕ:

— Утрав ҫинче улма пĕҫерсе пăхасшăн пуль-ха? Ăҫтан каласа кăтартса сана ҫав чуна илĕртмĕш япалана, халь ак унталла ҫеҫ ыткăнса тăратăн. Эх, ҫамрăклăх, ҫамрăклăх... Эхе-хей, эй, алла, эй, турă, тутар каларăшле. Тулккĕ каҫа ан юлăр, хĕвел пĕлĕте ларчĕ, ҫумăрĕ тăвăллă пулсан тем инкек курăр, киммĕр ӳпленсе кайĕ...

Старик тĕрĕсех калать-ха, анчах «чуна илĕртмĕш япала» та хăй патнеллех туртать. Эй, мĕнех сиксе тухтăр ҫав хушăра: ҫитетпĕр те, вут чĕртмесĕрех, улмана Чингачгука парса,

каялла килетпĕр. Сăмах панăскерне улталас мар ĕнтĕ. Тен, хăй пирĕнпе ларса каçĕ? Утă хураллама унпа тата хаваслăрах пулать: хуралта — Чингачгук хăй, Томпа Ненси, Джо тата вĕсене чунран парăннă ăслă йытă... Хулара çавăн пек тус пурри тата мĕнрен япăх?

Чингачгук пире çав çӳллĕ çырантах кĕтсе илчĕ, эпир кимĕрен тухнă-тухман таçта васката пуçларĕ: «Юрать-и çапла кая юлса çӳреме, мĕн тери пысăк ĕç кĕтет, вĕсем пур тин сĕтĕрĕнсе çитрĕç». Пăхатпăр та, умра пачах урăх çын тăнăн туйăнать: юптарса калаçасси те, чăрсăр индеец рольне вылясси те таçта кайса кĕнĕ, васкатать, текех васкатать. Юманлăх витĕр тухса вĕтĕ ăвăслăха кĕтĕмĕр, çаплах васкатать. Уçланкă курăнса кайрĕ. Пĕр хĕрринче, паçăр хамăр канса ларнă çĕртен сылтăмарах, курăка çулнă, уçланкăри пĕртен-пĕр ват çăка патне хӳшĕ тунă, умĕнче вут çунать, каскасем çинче хире-хирĕç арçынпа хĕрарăм лараççĕ. Çывхарнăçем, ума çакăн пек сăн тухрĕ: хӳшĕ çăварĕнчен транзистор акăш-макăш хуçкаланчăк джас çухăртать, унта та кунта пушă кĕленчесем, консерва банкисем йăваланса выртаççĕ, çĕре сенĕк тăрăнтарса хунă, унтах вĕрен, тилхепе çыххи, кĕрепле куратăн. Чи тĕлĕнмелли... пысăк хĕрес, чим, хĕрес мар, лайăхрах пăхрăм та — пуслăх, яштака вăрăм хурăнран такам тинрех çеç якатса тунă пысăк пуслăх, лаша лавĕ валли мар, машшин валли пулас... Айккинчен пăхсан, çак пуслăх çине урлă икĕ сенĕк пăрахнăран, вăл пысăк хĕрес майлах курăнать. Эпир çитсе чарăнсан, хӳшĕ енне çурăмĕпе ларакан тăмаланчăк çӳçлĕ çиллес çамрăк хĕрарăм ура çине тăчĕ; хĕрлĕ çӳçлĕскерĕн, темшĕн, пичĕ те хĕп-хĕрлĕ. Тăмаланчăк пуç пурĕ те пĕр предложени çеç каларĕ: «Ача вăййи вылятăр». Вара тĕреклĕн те йывăррăн пусса вĕтлĕхелле кĕчĕ. Юлташĕ, пуçне шапшакла хыртарнă хăравçă сăнлă арçын, пире хирĕç чупса пычĕ, алран çавăтсах каска çине ларма хистерĕ. Эпĕ ун умне çĕрулмисене шăкăрах тăксан, пушшех хыпăнса ӳкрĕ, вĕсене çавăнтах кĕл ăшне хума васкарĕ.

— Çапла вара, — терĕ Чингачгук каска çине мана хирĕç Анюкпа юнашар вырнаçса. — «Чарлан утравĕ» операцие пуçлатпăр, пуçличчен малтан, этемсен хушшинче сарăлнă йăлапа, пĕрер черкке тытса парар, — каска çумне таянтарнă кĕленчерен вăл икĕ стакан шур эрех ячĕ, пушă виççĕмĕш стакана шуррине яма тăхтаса вут енне кăшкăрчĕ:

— Эй, Хаджи, шампанского!

Хаджи çавăнтах йăпăр-япăр çитсе тăчĕ, хӳшĕрен пысăк хура кĕленче илсе тухрĕ:

— Стакан кирлĕ мар-и?

— Кирлĕ мар, куçу-пуçу ахаль те тăманалла пăхакан пулнă.

Хаджи хирĕçмерĕ, кĕленчене Чингачгука тыттарса каллех вут патне кайрĕ. Пăккине шаплаттарса кăларса, кăпăкланса тăракан эрехне стакана янă чух пирĕн çĕнĕ тус пĕрехмай шӳтленçи турĕ, куç хĕсрĕ, вăрттăнла ăнланмалла мар паллăсем пачĕ. Вăл сисмен хушăра эпĕ те Анюка куç хĕсрĕм. Куçпа куç тĕл пулчĕç те, Анюк: «Эс мана питех айван тесе ан шутла, пуслăхсемпе вĕренсем мĕн тума кирлине эпĕ паçăрах аван туйрăм», — тенине ăнланса илтĕм.

Ав мĕнле туристсем иккен вĕсем — канма кĕреплесемпе, сенĕксемпе çӳреççĕ, Хаджи текенни вара вырăсла пирĕн ялтан вуник çухрăмри Ялттан текен аул тутарĕ пек хуçкалантарса калаçать. Эрехе Чингачгук стакана вĕçкĕнле виç пӳрнепе тытса: «Паллашнă ятпа», — тесе ĕçсе пачĕ. Вара эпĕ ĕçессе кĕтмесĕрех «операци» планне калама пуçларĕ:

— Старик патне каçатăр та...

— Джо патне...

— Джо патне каçатăр та ăна киле яратăр, вăл кайсан пире пĕр машина утă сутатăр...

Эпĕ мĕн пулин хуравлама ĕлкĕриччен Чингачгук мана пилĕк тенкĕлĕхсене пĕр тĕрке укçа тыттарчĕ:

— Ку халлĕхе... аванс, хĕрĕх тенкĕ...

Сăмсаранах тĕксе панипе укçана тытма тӳр килчĕ. Çапла туни калама çук пысăк йăнăш пулса тухнине темиçе çеккунтран туйса илтĕм, çывăхрах фотоаппарат çути çине-çинех çутăлса илчĕ, Хаджи ихĕлтетсе кулса ячĕ:

— Тата ӳкерес-и? Ĕмĕр асăнмалăх!..

Хытă тарăхнипе эпĕ тепĕр нихăçан каçармалла мар йăнăш турăм: эрехпе Чингачгука питрен сапрăм, укçисене пĕрерĕнпĕрерĕн çурса таткаласа вута ывăтма пуçларăм. Çурма ĕлкеренненнисене Чингачгукпа Хаджи тăпăлтарса илчĕç. Мана пулăшма Анюк сиксе ӳкрĕ, ăна тăманланчăк пуçлă хĕрарăм çӳçĕнчен çавăрса тытрĕ те çăка патне сĕтĕрсе кайрĕ.

— Кĕрт йытти, — терĕ вăл таврăнса таса чăваш чĕлхипе, — алă ӳтне ашĕ-мĕнĕпе çыртса татса илчĕ.

Эпĕ, икĕ арçын пусса выртнипе, пуçа Анюк енне ниепле çаврăмастăп. Çавăртăм та хăранипе тата çӳçеннипе хаярăн

кăшкăрса макăрма, урса кайса тапкаланма, çапкаланма, тăрткаланма пуçларăм, иккĕшне те ывăтса ярса Анюк патнелле ыткăнтăм. Анюка аллисене хыçалалла пăрса çăка çумне çыхса хунă, çăварне çĕтĕк татăкĕпе пăкăланă, сăмсинчен шăпăртатса юн юхать. Хĕрача патне çитесси пулмарĕ, çула хĕрарăм пӳлчĕ, ура хурса ӳкерчĕ те пусса выртрĕ, вара ыттисем çитрĕç.

— Ухмахланма пăрах, — терĕ Чингачгук йывăррăн сывласа аллăмсене хыçалалла пăрса çыхнă май. — Укçана кĕсйӳне пĕтĕрсе чик те, кайрăмăр. Эпĕ хушнă пек тусан санăн пĕр кĕсъе укçа пулать. Ху пек тусан — шиш. Впрочем эп сана çур пус памасан та пултарап, мĕншĕн тесен пирĕн пленка, документ, пур. Тăмана ан пул, шутла. Пире пурĕ те пĕр машшин çеç кирлĕ...

Килĕшсен те, килĕшмесен те серепене çирĕп çакланнине яр-уççăн куратăп: вĕсен аллинче эпĕ Чингачгукран укçа илнине ӳкернĕ кадрсем. Унта эпĕ çеç мар, Анюк та пур. Килĕшнĕ пек туса Кириле мучи патне хамăр çеç каяймастпăр ĕнтĕ халĕ, çакăн пек тĕркĕшӳ хыççăн Анюкпа иксĕмĕре çеç ниепле те ямаççĕ, пĕрле ларса пыраççĕ те мучие çыхса пăрахаççĕ, утта тиесе каяççĕ, кайран йĕрлесе тупас-тăвас пулсан: «Эпир ним те пĕлместпĕр, старикпе йĕкĕт утă сутма хăйсем тахçанах систерсе хунăччĕ, хамăрăн ытлашшине сутатпăр, терĕç», — тесе суйма пултараççĕ. Çапла шутларăм та ним тума çуккипе чикĕсĕр тарăхса вăрăсен пуçлăхне куçран суртăм. Кĕленчепе пуçран çапрĕç, çĕр пуçхĕрлĕ çаврăнса кайрĕ.

Тăна кĕрсен, хам ăçта выртнине нумайччен ăнланаймарăм. Пуç халь-халь çурăлса каяссăн ыратать, шăмшак ийе чăмланă пек лăнчăрах кайнă. Таврара пăч-тĕттĕм, нӳхрепри пек сулхăн та шăп. Тӳпене хура пĕлĕтсем карса илнĕ, çанталăк пăсăласшăн пулмалла. Эпĕ тăнсăр чылай выртнă, çакă хĕвел анса тĕттĕм каç хуплама ĕлкĕрнинчен те, кăвайт сӳнес патне çитнинчен те аван курнать. Калама çук ĕçес килнипе хӳшше кĕресшĕнччĕ, хӳхлесе йĕнĕ сасă чуна çурса кайрĕ: «Анюка çăка çумне çыхнипех хăварнă иккен çынçиенсем».

Шăнса кӳтнипе Анюк калаçаймиех пулнă, алли-урине çыхса тăлланă кантрана шăлпа кăшласа салтрăм, пăкăланă çĕтĕкне туртса кăлартăм, хĕрача нимле сăмах та калаймасть, пĕтĕм кĕлеткипе сиксе чĕтрет, хăй пĕрехмай хамăр килнĕ еннелле кăтартать. Кантра-пăява çĕре çĕклесе çапрăм та Анюка алăран çавăтрăм:

— Мĕн пулсан пулать, мучи патне каçатпăр. Мĕн те пулин тумаллах.

Мĕн тумалла? Çакă вара хама паллă мар. Çыран хĕрне çитнĕ çĕре самаях ăшăнтăмăр. Кимĕ ăçта? Çук кимĕ! Тен, эпир ăна кăшт сулахаярах туртса кăларнăччĕ? Сулахаярах мар, çакăнтах. Çĕре пĕшкĕнсе пăхрăм, хăйăр çинче йĕрсем те палăраççĕ. «Кимĕпе вĕсем ларса каçнă, ăçта-тăр хăйсен те пулнă, пирĕнне вара эпир ан каçайччăр тесе илнĕ», — çапла шухăшларăм та эпĕ, çиллĕм капланса килнипе тата ним тăвайман енне, шăла шăтăртаттартăм. Çак вăхăта Анюк юнлă пит-куçне кӳлĕ шывĕпе çуса тасатрĕ, йăлтах лăпланса, ӳпкевлĕн каласа хучĕ:

— Тытмалла марччĕ çавсен укçине, мемме пăру эсĕ, тăну вара çерçинни чухлĕ те çук.

Анюка хирĕç эпĕ нимех те калаймарăм. Вăл çӳллĕ çырана хăпарчĕ те леш енне пăха пуçларĕ.

— Куратăн-и? — терĕ тепĕртакран. — Павăл хăртнинчен машин анать, çутине сӳнтерчĕ, çакă вăл улăхалла пăрăннине пĕлтерет. Вăрă. Вăрă пулмасан, фарăсене сӳнтерес çук, тата машшин пĕрремĕш те мар: е иккĕмĕш, е çавах тепĕр хут килет.

Епле тĕмсĕлсе пăхсан та, эпĕ машшин çутине асăрхаймарăм, пăхма пуçличчен сӳнтерчĕç пулмалла. Леш енчи çыранта кăвайт çеç йăвашшăн мĕлтлетет.

Анюк çӳллĕ çырантан чупса анчĕ те паçăр кимĕпе хамăр килсе аннă тĕлте аллине татах шыва чиксе пăхрĕ:

— Шыв хуранта ăшăтнă пек ăшă... — шыв шăмпăлтатса илчĕ, Анюк шыва кĕрсе кайрĕ пулмалла, чылай шалта, пӳ çитме пăрахнă вырăнта, сасси каллех илтĕнчĕ:

— Ман хыççăн иш, маларах ывăнакана ывăнманнин пулăшса пыма тӳр килет.

Эп шартах сикрĕм:

— Ан ухмахлан, Анюк! Кунтан леш енне çитме ик çухрăма яхăн, путса вилетпĕр.

— Иш теççĕ сана! Кириле мучи тĕрме тĕпĕнче ан çĕртĕр тесен, иш. Путса вилсен, мĕнех вара, таса чунпа вилетпĕр...

Анюк тата темĕн каларĕ, ишсе кайрĕ те, шыв шăмпăлтатнипе мĕн каланине уйăраймарăм.

— Вут çути çинелле иш, мана хуса çит.

Эпĕ хуса çитнĕ чух Анюк месерле выртса ишетчĕ, ывăнса çитес пулсан мана та çапла ишме хушрĕ. Капла малалла хытах кайма çук та, самаях канса илме пулать.

Шывра ишнĕ малтанхи самантра вăй кĕнĕн, пуç кашласа ыратма чарăннăн туйăнчĕ, анчах кăштран эпĕ самаях хулленлентĕм, уйрăмах сулахай хул, Чингачгук шатăртаттарса хыçалалла пăрса хуни, çĕкленесшĕн мар. Анюк çывăхах ишсе çитрĕ, пĕр самант мана пулăшса пычĕ, хытă калаçма чарчĕ. Çывхарса пыратпăр пулас.

Хăйçути мĕлтлетет-ха, сӳнмест. Темме, шывра ишетĕп пулин те, ыйăх пуса пуçларĕ, алăсене хулленрен-хуллен хăлаçлатăп.

— Сулахаярах, сулахаярах, — тет Анюк пăшăлтатса тенĕ пек, — унта ăшăх вырăна часрах тухма пултаратпăр.

Сулахаярах ишетпĕр. Вут çути сылтăмран мĕлтлетет, мĕлтлетет тени тĕрĕсех те мар-ха вăл, самаях хитре çунать. Умĕнче мĕлкесем пур пек... Тата темиçе хут хăлаçлантăм та савăннипе чутах кăшкăрса яраттăм: ура кӳлĕ тĕпне лекрĕ!

— Анюк!

— Мĕн? Мĕскер çухăран?

— Тĕпĕ...

— Çапла, тĕпĕ... шыва хулленрех шăмпăлтаттар...

Хăмăш хушшипе çырана тухсан, пĕр вăхăт сывлăш çавăрса яраймасăр выртрăмăр, сывлăш çавăрса ярса кăшт кансан, çакăн пек канаш турăмăр: епле тĕттĕм пулин те, Анюк каç тĕттĕмĕпе усă курса машшин патне йăпшăнса пырать, номерне уйăрса илме тăрăшать, номерне уйăрса илсен, çав самантрах тӳрĕрен яла чупать, эпĕ вара хӳшĕ патне кайса мучие шыраса тупатăп, ăна епле те пулин мăшкăлтан хăтарма хăтланса пăхатăп.

Анюкпа уйрăлса кăшт утсан, темле çемçе япаларан такăнса ӳкрĕм. Тытса пăхрăм та, йытă вилли! Улайкка... Чĕрĕ юн шăрши сăмсана кӳ! килсе кĕчĕ. Вут патне шуса çывхартăм: мучи те, никам та çук. Шăплăх. Анюк кайнă енче çеç çынсем хытах мар темĕн каланисем вăхăт-вăхăт илтĕнеççĕ тата хытă япала хытă япала çумне лексе пулнă сасă килет. Шăппăн, çутăсăр ĕçлеççĕ вăрăсем.

Хӳшше ĕселенсе кĕтĕм, анчах ним тума ĕлкĕреймерĕм, ура сассисем, çын мăкăртатса калаçни, сенĕк-кĕрепле пĕрпĕрин çумне лексе кăларнă сасăсем сасартăках çывхарчĕç. Туятăп: мучи кунтах выртать, йăшăлтатнине, сывланине илтетĕп, çăварне пăкăланă, хăйне çыхса пăрахнă пулмалла.

— Мучи, эпĕ ку, ан хăра, — терĕм хăвăрттăн пăшăлтатса, — укçа пачĕç-и? Çăварне шыраса тупса пăкка туртса кăлартăм.

— Пачĕç те илмерĕм, анчах шакла пуçли картăчкă ӳкерчĕ эпĕ укçа тытса тăнă чухне, тем тăвасшăн ĕнтĕ...

— Эх, мучи, мучи, пысăк йăнăш тунă эсĕ...

Урăх нимĕн те калаçса ĕлкĕреймерĕмĕр: пĕри, вутпуççи тытнăскер, хӳшĕ патне çывхарчĕ, эпĕ старик çăварне часрах паçăрхи çĕтĕке чикрĕм те хӳшĕри утă ăшне чаваланса кĕтĕм:

— Ну, мĕнле? — терĕ вутпуççиллĕ вăрă чăвашла. — Ăслăлантăн-и-ха? Тунмастăп: вăрман урлăри Таркăнтан эпĕ, Пуян Кантратти йăхĕнчен, поэтла каласан, «пепел Клааса стучит в мое сердце», тăм çамка — çакна эсĕ ĕмĕрне те ăнланас çук, çĕр хурчĕ, ăман, асаттене эсĕ вĕлертĕн-и, падло? Хĕресне те эсĕ кăларттарса пăрахрăн-и вăрçă вăхăтĕнче? Не выйдет, хамăр вилмесĕр не позволим... çĕнĕрен-çĕнĕ хĕрес ларĕ асатте тăпри çинче, эсĕ тĕрме тĕпĕнче çĕрĕн, ху ухмахлăхна пула.

Чингачгук, ку чăнах та çавăччĕ, вутпуççине кăвайт çине ывăтрĕ те пĕшкĕнсе мучие урисенчен ярса тытрĕ, каштăртаттарса вут патне сĕтĕрсе кайрĕ. Унта унăн аллине те, урине те салтрĕç, çăварĕнчен пăккине кăларчĕç.

— Ватăлмалăх кунунта лăпкă пурнассу килсен, çăварна шыв сып та çур çынна çур сăмах ан кала çак ĕç çинчен, çавăн чуль утăран темиçе купа çухални вăл паллă та мар. Укçа паратпăр — ил, ан йĕрĕн, кирлĕ пулĕ. Чингачгук нихçан та вăрламасть, сутăн илет. Хальхинче вара эпĕ хăвна та сутăн илтĕм — ак çакăнта эсĕ, мана утă сутса ларатăн. — Чингачгук Хаджи мăйĕнчен çакăнса тăракан фотоаппарата шăкăртаттарса кăтартрĕ. — Ну, мĕнле, пĕрер вун тенкĕ чăнах та парас-и, карчăкна йĕм туянса тăхăнтартăн, е парас мар?

Чингачгук кĕсйинчен вуннăлăх çĕнĕ укçа кăларчĕ те саркаласа мучие сăмсинчен çапрĕ. Мучи укçана илмерĕ, çатăркка хут вут çине ӳкрĕ. Ăна Хаджи йăпăр-япăр илсе чикрĕ. Тăмаланчăк пуçлă хĕрарăмпа тепĕр арçын, палламанскер, çитрĕç. Арçын вăрăсене çитсенех васката пуçларĕ, тул çутăличчен шанчăклă вырăна пытанасчĕ, терĕ. Ыттисем çула тухас умĕн апат çырткалас кăмăллă иккенне курса, хыпăнса ӳкнĕ пек пулчĕ: «Эпĕ унта машшина сӳнтермесĕрех...»

Этем сăмахне каласа пĕтереймерĕ, Анюк кайнă енче «ЗИС» моторĕ хăватлăн мĕкĕрсе ячĕ, таçта çити фара çути ӳкрĕ. Пурте, çав шутрах Кириле мучи те, урисем çине сиксе тăчĕç. Вăрăсем, команда панă пек харăс, япала-хатĕрĕсене ярса илчĕç

те тискер кайăксем пек ӳлесе унталла тĕпĕртетрĕç. Вут умĕнче Кириле мучи çеç Макаров адмиралăнни пек шурă кĕреçе сухалне каçăртса шак хытса тăрса юлчĕ. Савăннипе эпĕ ун умне шуйттан çури пек сиксе тухрăм, мучие аллинчен çавăтса, ахăрса та кулса, вут тавра тискер ташă ташлама пуçăнтăм, вара сасартăках лăпланса Эстун Кирилине тутинченех чуптуса илтĕм. Анюк çав хушăра ялалла каякан çула тухрĕ, такăр çулпа чĕкеç пек ярăнса иртрĕ те пăрăнса сăрт хыçне çухалчĕ. Тепĕртакран вăрăсем çĕмĕрттерсе çитрĕç. Ăнсăртран мучие çапса ан пăрахчăр тесе, сых ятне алла пуртă илтĕм, ун умне мала тухса тăтăм:

— Чингачгук, кĕçĕр эсĕ мĕн калаçнине комсомол посчĕ магнитофон çине çырса илнĕ, машшинăра арестленĕ, парăн, ан ухмахлан, касса пăрахатăп!

Чингачгук çывхарма хăтланчĕ. Çума мучи пырса тăчĕ, аллинче — çава.

— Пуçăра касса тататăп, паçăрхи пек систермесĕр çапса антараймăр. Аслаçуна вара, чăнах та, эпĕр...

Çапла каларĕ те мучи мана пуçран шăлса илчĕ:

— Сана кăштах суйма тӳр килчĕ, каçар ĕнтĕ, çын вĕлерекен тесе ан ятла... Юнĕçенччĕ те, пурпĕр этем, халĕ те каçкаç куçа курнать.

— Итле, старик, — терĕ çав хушăра Чингачгук йăваш сасăпа. — Эпир шӳтлерĕмĕр, уттăра пачах та тиемен, сирĕн çыннăр, вăрттăн паттăр, пуш машшина хăваласа кайрĕ, слушай, ку — хулиганство, эпир кунта çул май кĕнĕччĕ. Тата эп пачах та Таркăнтан мар, Чистайран, эс тахçан Кантратти пуяна вĕлернине ăнсăртран пĕр шофертан пĕлтĕм.

— Пĕлетĕп эп эсĕ камне: Таркăнти Кантратти Хĕлипĕн кĕçĕн ывăлĕ, аçу Çĕпĕртен каялла хăçан таврăннине те аван астăватăп, вăл таврăнсан нумайран та мар ик вăрман хушшинчи хура хĕрес çĕнелчĕ.

Чингачгук нимĕн те чĕнмерĕ. Вăрăсем пĕр-пĕринпе пăшăлтата пуçларĕç, виççĕшĕ, Чингачгук (Кантратти Хĕлип ывăлĕ), Хаджи тата Тăмаланчăк пуç, кӳлĕ хĕрринелле кайма тăчĕç, анчах çав самантра кĕтмен япала пулса иртрĕ: шофер, çӳллĕ те патвар йĕкĕт, Чингачгука çухаран çавăрса илчĕ:

— Пăттуна пĕçертĕн пулсан, çимесĕр ăçта каятăн, пĕччен çиме мана йывăр пулать. Утта сутăн илтĕмĕр терĕр, хăвăр вара старике çыхса пăрахнă...

Шофер патне эпĕ пытăм:

— Мучие çыхса пăрахнă, хĕнесе пĕтернĕ, Улайккана вĕлернĕ, мана пуш кĕленчепе çапса анратнă, Анюка çăка çумне çыхса хăварнă, — терĕм çилĕллĕн. Çак сăмахсене илтсен, шофер пушшех тарăхса кайрĕ:

— А-а?! Эсир чăн-чăн вăрă-хурахсем-çке, фашистла элементсем — уголовщина!

Çӳллĕ йĕкĕтпе Чингачгук çыхланса ӳксе çапăçма тытăнчĕç, Тăмаланчăк пуçпа Хаджи анаталла тарчĕç, тепĕртакран вĕсен сассисем кӳлĕ çинче илтĕнчĕç, фотоаппарат Хаджи мăйне çакăнса «Чарлан утравнелле» ишрĕ. Шоферпа иксĕмĕр, мучи пулăшнипе, Чингачгука, Кантратти Хĕлипĕн, Эстонири Чарлан утравĕ çине пытарнă Ехрем шăллĕн кĕçĕн ывăлне, вăл мĕн ятлине Эстун Кириле те, шофер та пĕлеймест, вут умне пырса лартрăмăр. Эпĕ ун умĕпе мăнкăмăллăн утса иртрĕм:

— Чингачгук Йывăр Алă мар эсĕ, Йĕпе Сăмса, мемме пăру, — терĕм юриех хыттăн. — Çакна эпĕ калатăп: Томас — Океансен Çаврăçилĕ... — вара вутпуççипе çутатса Улайкка виллине шырама утрăм, Чингачгук пуçне усса ларса юлчĕ. Ял енчен умлăн-хыçлăн виçĕ çутă уйрăлса кунталла çиçĕм пек хăвăрт çывхара пуçларĕ. Эпĕ Улайккана тупса вут патне илсе пынă çĕре ун çывăхне виçĕ «Урал» мотоцикл çитсе чарăнчĕ, сăпкасемпе ларкăчсем çинчен тăххăрăн шăкăрах анса тăчĕç: чи малта — Анюк ашшĕ, Никкăн механик, ун хыçĕнче — атте, аттене лартса килекен Михаля. Никкăн, Михаля тата атте, ытти тăватă çынпа пĕрле, вăрăсене хупăрласа илчĕç, Анюкпа Алюш манпа Улайкка патне чупса пычĕç. Улайкка чĕлхине кăларнă, нимĕн хускалмасăр выртать. Хĕрача ун патне пĕшкĕнчĕ те ăна сăмсинченех чуптуса илчĕ, йытта шелленипе сасăпах макăрса ячĕ. Хамăр сисмесĕрех эпир те, Алюшпа иксĕмĕр, çанăпа куççуле шăла пуçларăмăр: питĕ шел Улайккана, лайăх тусчĕ, ăслă йытăччĕ...

1973

Новелла-калав

МАЛТИКАС АЧИ

Малтикас тесе эпир Саврăшпуçĕн çуррине, ялăн хĕвел тухăç енчи пайне, калатпăр. Унта, сăртлăрах çеремлĕ вырăнта, типтерлĕ пĕчĕк пӳртре, Пăлаки ятлă карчăк пурнать. Вăл тахçантанпах ĕнтĕ кĕтӳрен качакине те хăех кĕтсе илет, шывне те хăй кӳрет, вутшанкине те хăех татать. Пахчинче те пĕчченех аппаланать.

Пĕр вăхăтра ун пӳрчĕ питĕ юхăнса кайнăччĕ: хăрах кĕтесси чалăшса çĕре путса кĕнĕ, пĕренисем çурăлса пĕтнĕ, тĕлтĕл вĕсен пуçĕсем татăлса ӳкнĕ. Аттепе кӳршĕ Çеркей кайса сиплекелесе парсан, «пӳрт ку хĕл ăшă пулчĕ-ха», тесе калатчĕ, тет. Пирĕн атте, иртнĕ вăрçăра тем тĕрлĕ нуша та курса пĕтнĕскер, сывлăхĕ чаплах мар пулин те, хăрах алăллăскер, колхоз правленинче: «Çак тăлăх карчăка, пурте пĕр пулса, çурт пекки çавăрса параймăпăр-ши? — тенĕ. — Вăрманĕ ал айĕнче, ялпа пухăнса пĕр мунча пек пӳрт пураса лартас. Пĕччен çынна хальхи саманара çапла пурăнтарни чĕр мăшкăл», — лăпланаймасăр сике-сике тăнă атте. Ун чух колхоз председателĕнче Типшар Куçми, куштан та чее çын, халăх пурлăхне хăйĕнни пек тыткаланăшăн каярахпа тĕрмене çакланнăскерччĕ. Аттене хирĕç çакă: «Никита Алексеев, Пăлаки ывăлĕ, вăрçăра хыпарсăр çухалнă. Хыпарсăр çухалнă тени вара вăл хăш чухне иккĕллĕ те шухăшлаттарать. Ăçтан пĕлес, тен, Мĕкĕте тăшман енне хăй ирĕкĕпе каçса, чикĕ леш енче халь те пулин сып-сывах çӳрет? Çавăнпа та, çиччĕ виçсе пĕрре касни авантарах мар-ши, Иванов юлташ?» — тенĕ иккен.

Кунта ĕç тухмасса курса, аттепе Çеркей ял Совет председателĕ Якку Тимофеевпа ларса канашлаççĕ. Якку ял Совет делянкинчен пĕрене суйлама ирĕк парать. Аттепе Çеркей, хамăр касри арçынсене пухса кайса, часах пӳртлĕх материал хатĕрлесе те çитереççĕ. Пурине вăрмантах пуранă. Хирти ĕççем пĕтсен, кĕркуннехи уяр кунсенче, ниме туса, ăна вуник лавпа турттарса килчĕç. Кĕскен каласан, çав кĕркунне Пăлакие ишĕлсе анас пек ларакан çĕтĕк пӳртрен арча пек тăп-тăп та хитре çĕнĕ çурта куçарчĕç. Анне пирĕн савăннипе йĕрсе те илчĕ: «Халь те ялта Якку, совет влаçĕ, пур, вăл пулмасан, Типшар Куçмисем пирĕн пеккисене вилме выртсан та пĕр татăк çăкăр парас

çук», — тесе такмаклать хăй. «Пирĕн пеккисене» тесе вăл тĕрĕс каланă: ачапча нумайийипе тата ун чух çăкăрĕ те хĕсĕккипе эпир пурнăçа, чăнах та, аран сыпăнтаркаласа пыраттăмăр.

Кăшт самайланарахпа, анне пире Пăлаки аппа патне пулăшкалама яра пуçларĕ. «Тăван-пĕтенех мар та, таçтан, хурăн тăрринчен, хурăнташ пекки тивет-и, пурпĕрех ал çитнĕ таран пулăшмалла ват çынна, — тет анне. — Хамăр та тем курасси пур, инкек куçа курăнса килмест, теççĕ. Пулăшнăшăн-мĕншĕн парас тесен, ним те ан илĕр», — мĕн хапхаран тухичченех хытăрлать вăл.

Пĕррехинче çапла, пурăнсан-пурăнсан, пĕтĕм халăх Брест крепоçне хýтĕленĕ паттăрсем çинчен калаçма тытăнчĕ. Кăштран кĕнекесем те тухрĕç. Эй, тĕнче! Нумай пурăнатпăр-и, сахал-и, ял Совет председателĕ Якку Тимофеев яла тĕлĕнсе хытса каймалла хыпар пĕлтерет: Брестри ишĕлчĕксем айĕнчен, ытти япаласемпе пĕрле, Никита Алексеев хучĕсене тупнă! Апла пирĕн ентеш йĕксĕк Типшар лĕпĕртетнĕ пек çухалман иккен, тăшман енне куçман, куçма мар, тăшмана хирĕç юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçнă.

Кама мĕнле-тĕр те, çухалнă ывăлĕ «тупăннăшăн» Пăлаки аппа савăнмарĕ. Кунтан та ытларах, вăл ывăлĕн хучĕсем Брест ишĕлчĕкĕсем айĕнчен тупăннине пач ĕненесшĕн пулмарĕ. Хыпар пĕлтерме пынă Якку ним калама аптраса тăчĕ. «Урăх çын пуль этемми, — тет карчăк, — Мĕкĕте мар пуль, çýрет пульха ăçта та пулин, Америк теççи-ха, çавăнта, чикĕ урлă каçса килеймесĕр...» Ывăлĕшĕн пенси килме тытăнсан та нумайччен ýкĕте кĕртеймен советрисем карчăка. Бреста хýтĕлени çирĕм çул тултарнă тĕле ывăлне вилнĕ хыççăн панă Хĕрлĕ Ялав орденне те Пăлаки аппа çавăркала-çавăркала пăхрĕ, тет те: «Хитре. Ха, епле йăлтăртатать, — тесе каларĕ, тет, Яккăва каялла тавăрса парса. — Çук-ха, кăшт кĕтсе пăхар, тен, хăй килĕ, килсен хăйне парăн», — тесе çынна йăлтах аптрана ертрĕ, тет.

Вăрçă çинчен кăтартакан пĕр кинопа спектакле те, ятарласа çырнă пĕр кĕнекепе брошюрăна та сиктерсе хăварманскер, эпĕ çак хыпара илтсен, хамăр ял ачин паттăрлăхĕпе калама çук хавхаланса кайнăскер, çав паттăрлăх çинчен тем тĕрлĕ те шутласа пăхрăм, фантазие ирĕке ярса, тăрăша-тăрăша, эхлете-эхлете, çич хут тар тăкса, калав пекки çыртăм. Вăл, паллах, пичете юрăхсăр пулчĕ. Мĕн унта, кýршĕ-аршăсене вуласа парсан та, вĕсем те: «Кунта çырни тĕрĕсех пулĕ-ха та,

анчах вăл темле çĕкленӳсĕртерех пулса тухнă, туртсах каймасть», — тесе кăна хучĕç.

Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Апла пулин те, Никита Алексеев паттăрлăхĕ çаплах куç умĕнчен каймасть. Эпĕ ăна паян кун та çавăн чухнехи пекех курса тăратăп.

Кунĕпе хытă ĕшенет пулсан та, çуллахи уяр каçсенче çамрăк салтак шăплăхра шухăша каять те шурăмпуçченех сывăраймасть...

Никита Алексеев, стрелковăй полкăн пулеметчикĕ, ир енне çеç тĕлĕрсе кайрĕ. Вăл тĕлĕк курчĕ: таçтан музыка илтĕнет, хулленрен те хулленскер, лайăхран та лайăхскер... Акă вăл сывхарчĕ, уççăн илтĕнекен пулчĕ, хыттăн илтĕнет, аванмарланчĕ — хăлхана çурать. Акă аçа çапнă пек кĕрлесе кайрĕ! Тепре çапрĕ! Ах! Хăранă та тарăхнă Никита ура çине сиксе тăчĕ. Анчах хăватлă сасăсем тĕлĕкре кăна пулмарĕç иккен. Никита хăвăрт ăнланса илчĕ: ку — тӳпере моторсем мĕкĕрни, хула енчи взрывсем.

Хула сывăхĕнчи казармăна рота командирĕ Артемов лейтенант персе çитрĕ:

— Атьсемĕр, вăрçă! Нимĕçсем крепоçе çĕмĕреççĕ!.. Хӳтĕленер! Хăвăртрах! — сывлăшне аран çавăрса, кăшкăрчĕ вăл.

Ыраш хирĕнче вăрмантан инçе мар оборона йышăнчĕç. Нумай та вăхăт иртмерĕ, бомбăсемпе снарядсем çывăхрах çурăла пуçларĕç. Мурджикнели пулеметчик выртакан тĕлте тем пысăкăш варинкке пулса тăчĕ. Çапăçу хирне пăхма та хăрушă. Çĕр çунать, ир умĕнхи сывлăш çунăкпа тĕтĕм, какай-юн шăршипе тулса ларнă. Кĕске вăхăтрах тăшман ротăна салатса-çĕмĕрсе тăкрĕ. Чĕрĕ юлнисене Артемов пĕрченшерĕн вăрманалла чакма приказ пачĕ. Хăй вăл, çĕтĕлсе-аманса пĕтнĕскер, пуринчен кайран шуса кайрĕ.

Никита Алексеев хăйне çирĕп тытрĕ. Йĕркеллĕ чакма пулăшас тесе, вăл текех çара тинрех килнисен хушшинче пулчĕ. Вăрман хĕрне çитсен, Никита миномет взвочĕн командирне асăрхарĕ. Çап-çамрăкскер, училищĕрен вĕренсе кăна тухнă лейтенант, пуçран аманнă. Аллă метра яхăн вăрманалла сĕтĕрсе кĕрсен, салтак ун суранĕсене çыхса ярасшăнччĕ, анчах ĕлкĕреймерĕ. Лейтенант пуçĕ, пичĕ-куçĕ хăвăрт шыçăнса-тулса кайрĕ. Вăл тăна кĕреймесĕрех вилчĕ. Ун пистолетне Алексеев кĕсъине илсе чикрĕ, планшеткине çĕрпе хуплама шутларĕ.

— Мĕн чаваланса тăратăн? Пурте кайса пĕтрĕç вĕт! — (Алексеев ротăри политрука палласа илчĕ). — Атя крепоçе, тен, ĕлкĕрĕпĕр!

Вĕсен çумне тата икĕ боец хушăнчĕ. Крепость патне çурçĕр енчен тухрĕç.

Тăшман самолечĕсем таврăнса, питĕ аялтан вĕçсе, пирĕн боецсене пулеметсенчен печĕç. Шоссе урлă чупса каçсан, политрук çĕр çине лапах тăсăлса ӳкрĕ: пуля ураран тиврĕ.

— Хамах çыхатăп, патронсемпе гранатăсем хăвар, — терĕ вăл, ыратнипе шăлне çыртса, хăй патне пĕшкĕннĕ Никита Алексеева.

— Политрук юлташ?!

— А ну, живо! Эпĕ сире хӳтĕлесе тăрăп...

Политрукăн сăмахне каласа пĕтерме те вăхăчĕ çук: вăл ятлаçа-ятлаçа суранне çыхать. Çав хушăра хăй пĕрехмай хула еннелле пăхать. Акă кăкăрĕ çумне ручной пулемет пăчăртарĕ, чĕнмен хăнана кĕтсе илме хатĕрленсе юлчĕ.

Çурçĕр енчи хапхасем патĕнче — валсем çинче те, вал ку енчи обводной каналăн çыранĕсенче те — совет стрелокĕсем пытанса выртнă. Тепĕр çыранти вĕтлĕхелле вара пĕшкĕнепĕшкĕне тăшман автоматчикĕсем чупаççĕ. Алексеевпа икĕ боецца хамăрăннисем те, нимĕçсем те асăрханă. Пĕшкĕннĕпĕшкĕнмен пырасси пирки шухăшламалли те çук. Хырăмпа шуса кайрĕç. Кĕпер патне çитсен, Никита:

— Тавай, тавай, хăюллăнрах! А ну-ка, атьсене пулăшар! — тенине уççăнах илтрĕ.

Стрелоксем тăшман çине тăхлан çумăрĕ çутарчĕç. Крепоçе кĕрсен, «таркăнсем» темле майор салтаксен сапаланса кайнă ушкăнĕсене пĕр çĕре пухма хăтланнине курчĕç. Майор çакна тума пĕтĕм вăйран тăрăшать. Алексеев ун патне пычĕ.

— Майор юлташ, эпир ют полкран та-ха, пулемет тупăнмĕши сирĕн? — хĕрсе кайнă çапăçу шавне çĕнтерес тесе, хăлхинченех кăшкăрчĕ Никита...

Çавăнтах виçĕ рота йĕркелерĕç. Майор приказĕ тăрăх вĕсем виçĕ çĕрте оборона йышăнчĕç.

Алексеевăн пулеметне засадăна пытарса лартнă. Никита Буг урлă каçакан нимĕç автоматчикĕсене çывăхранах çавапа çулнă пек çулать. Икĕ боец (вĕсен ячĕсене Алексеев çапăçу вăхăтĕнче пĕлчĕ: пĕри — ентеш, Хусан ачи, Василий Кутаин, тепри — Егоров) хыпалансах запас лентăсем хатĕрлеççĕ, виççĕмĕшĕ —

Рыбальченко — патронсем кӳрсе тӑрать. Вӗсенчен инҫех мар Сапожников ручной пулемечӗ ҫатӑртатать. Анчах юлташӑн сасси часах илтӗнми пулчӗ. Алексеев, Рыбальченко тата Сапожников крепоҫе пӗрле чакса кӗнӗччӗ. Унччен лӑпкӑскер, Никита хӗрӳленме пуҫларӗ:

— Мӗн ҫывӑран? Патронсем! — хӑрӑлтатакан сасӑпа хушать вӑл Василие. Лешӗ те темӗскер калать тата патронсем илсе килекен енне кӑтартать.

— Рыбальченко... — килсе кӗрет Алексеев хӑлхине. — Тем пулнӑ ӑна, выртать ав...

Алексеев юлташӗ патне хыҫалалла калта пек хӑвӑрт шуса каять. Ӑна хӑрушӑ япала курма тӳр килчӗ: лешӗн пуҫӗ... йӑлтах саланса кайнӑ. Вилнӗскере боец хӳтӗрех ҫӗре сӗтӗрсе кӗчӗ те ал айне лекнӗ ҫӗтӗк шинельпе витсе хучӗ. Документчӗсене кӑларса илсе засадӑна таврӑнсан, Никита пулемет гашетки ҫине татах та хаярланарах пусрӗ. Патронсем илме хальхинче Егоров кайрӗ.

Тӑшман епле сӗмсӗр пулсан та, пӗр сехет ҫурӑран ӑна чарчӗҫ-чарчӗҫех, унӑн атакисем пирӗн боецсен вучӗ айӗнче путлана-путлана ларчӗҫ. Ҫур кун иртсе кайрӗ. Нимӗҫсен артиллерийӗ ҫаплах вӑйлӑн персе тӑрать, «юнкерссем» сывлӑшран штурмлаҫҫӗ, пехота та тӑтӑшах атакӑлать. Каҫ енне наступлени вӑйсӑрланчӗ, ҫӗрле вӑл чарӑнсах ларчӗ. Сывлӑш ҫавӑрса илмелли кӗске вӑхӑт ҫитрӗ. Унпа усӑ курса, командирсем хӑйсен оборона участокӗсене пӑхса ҫаврӑнчӗҫ, патронсем-пе ытти ҫапӑҫу хатӗрӗсене шута илчӗҫ, ҫынсене тӗрӗсрех вырнаҫтарса тухрӗҫ. Хӗвелпе тата вутпа хӗрнӗ ҫӗре чавса, хӳтлевҫӗсем ҫапӑҫура вилнӗ юлташӗсене пытарчӗҫ. Хӑшпӗр ҫӗрте кӳршӗллӗ подразделенисем пӗр-пӗринпе ҫыхӑну тытма май тупнӑ. Савӑнӑҫлӑ хыпар та илтрӗҫ: хулан тӗп пайне хӳтӗлекен боецсем нимӗҫсене ҫирӗп вырнаҫса ларнӑ ҫӗртен, чул клубран, ҫапса кӑларнӑ!

Алексеев, Кутаин тата Егоров ҫӗрӗпех куҫ хупмарӗҫ. Каҫ тӗттӗмӗпе усӑ курса, тӑшмансем ҫывӑхранах систермесӗр атакӑласран питӗ сыхӑ тӑма тӳр килчӗ.

Ирхине пурте ҫӗнӗрен пуҫланчӗ. Артиллери крепоҫе снарядсемпе хуплать, пикировщиксем хӑрушшӑн явӑнаҫҫӗ. Ҫӗнӗрен пурте тӗтӗм ӑшне путрӗ, унта та кунта пушарсем тухрӗҫ, оборонӑн пӗтӗм линийӗ тӑрӑх пулемет, автомат тата винтовка шатӑртатать.

Валсем ҫине чаваланса кӗрсе ларнӑ ротӑсем пӗр атакӑна теприн хыҫҫӑн сире-сире ывӑтнине пула, гитлеровецсем ниепле те, Бугпа обводной канала каҫса, валсем ҫине улӑхаймаҫҫӗ.

Танксене боецсем ҫывӑхах яраҫҫӗ те гранатӑсемпе пӗтерсе хураҫҫӗ.

Алексеев пулемечӗ ҫав участокрах-ха. Кӑнтӑрларан засадӑра ларма май юлмарӗ. Патронсем илме кайнӑ Егоров таврӑнаймарӗ — Кутаин кайрӗ. Вӑл та ҫухалчӗ. Алексеев ҫывӑхне аллине автомат тытнӑ командир выртрӗ:

— Пулеметӑра форта сӗтӗрсе кӗрӗр. Эпӗ хӳтӗлесе тӑрӑп.

Форталла пынӑ чух Никита хӑйӗн ентешне, Василий Кутаина, тупрӗ. Лешӗ, икӗ уринчен тата кӑкӑртан аманнӑскер, тӑнсӑрччӗ. Ҫамрӑк медсестра ӑна хӳтӗ ҫӗрелле илсе кайрӗ. Алексеев ҫитсе ӳкнӗ форт хапхасем еннелле каякан ҫулран хӗвеланӑҫнерех. Валсене такан евӗр купаланӑ пулнӑ, вӗсен хушшинче — ансӑр картиш, ун варринче — капмар ҫурт, валсем ӑшӗнче — касаматсем. Кунта — оборонӑн тӗп пункчӗ.

Каҫ енне ҫапӑҫу кӑштах лӑпланчӗ. Тӗрлӗ ҫӗрте нимӗҫсен хытӑ калаҫакан радио установкисем ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Тыткӑна хӑй ирӗкӗпе парӑнакансене нимӗн те пулмасть имӗш, аманнисене апат параҫҫӗ, сиплеҫҫӗ иккен.

— Ҫапла пулмасӑр вара... «Апат та, сиплесси те», фу! — Юлашки сухари татӑкне пӑтранчӑк шывпа йӗпетнӗ май шухӑшларӗ Никита. — Кӗрӗр-ха, эппин, ҫиччас кӑтартӑп сиплевпе апат.

Акӑ ӗнтӗ шӑплӑх каллех пӗтрӗ. Никам та парӑнманран, фашистсем урсах кайрӗҫ. Крепость ҫине тупӑсемпе минометсен вучӗ тӑкӑнать, сывлӑшран бомбӑсем анса тӑраҫҫӗ. Тупӑпӑшал пеме тытӑнсанах, взрывсемпе ҫӗкленнӗ, йӳҫӗ тар ҫунӑкӗпе тулнӑ типӗ вӗри тусан пӗлӗчӗсем тӗтӗм ҫиттийӗпе пӗрлешеҫҫӗ. Тусанпа тӗтӗм пыра, ҫӑвара типӗтет, ӳсӗрттерет, чӑтма ҫук шыв ӗҫес килтерет.

Алексеев хӑйӗн пулемечӗпе вал ӑшне кӗрсе ларчӗ. Нумаях пулмасть-ха вӑл шыва аса илтерекен темле шӗвекӗн юлашки тумламӗсене ӗҫсе ячӗ. Кун хыҫҫӑн ӗҫес килни, иртме мар, темиҫе хут вӑйланчӗ.

Тӑшман ку хутӗнче те ишӗлсе пӗтнӗ, хӑрушӑ вутпа ялкӑшакан путвалсемпе касаматсене парӑнтараймарӗ.

Каҫхине Никита, шыв тата патронсем ҫуккипе, пулеметне пӑрахрӗ. Ҫӗрле гитлеровецсем наступлени тумаҫҫӗ. Аманнӑ

палламан боец пуҫĕ вĕҫĕнче ларса, Алексеев шыв ăҫтан тупасси пирки шухăшларĕ: «Мĕн тумалла? Ăҫтан илмелле шыв? Юлташ асапĕсене епле кăшт та пулин чакарас?..»

Виҫҫĕмĕш кунĕнче, пуҫласа, тăшманункине татса тухма хăтланса пăхрĕҫ. Хула хыҫĕнчен хĕвелтухăҫнелле хура вăрмансемпе пырса кĕме май çук шурлăхсем тăсăлаççĕ. Крепоҫрен çурçĕр-хĕвелтухăҫнелле вара темиҫе теҫетке çухрăмранах пысăк вăрман чăтлăхĕсем пуҫланаççĕ. Унта ĕнтĕ, паллах, партизансемпе пĕрлешме май пулĕччĕ. Анчах татса тухма хăтланнисем ăнăҫсăр вĕҫленчĕҫ: çĕрлехи атакăсем тăшман пулемечĕсен вучĕ айĕнче шăплана-шăплана ларчĕҫ.

Йывăр çапăҫусем июнĕн юлашки кунĕсенче вĕҫĕ-хĕррисĕр пулса пычĕҫ. Вĕҫĕмсĕр атакăласа, нимĕҫсем оборонăна çурçĕр енчен татса кĕчĕҫ. Хĕвеланăҫ енчи фронт тĕп вăйсенчен татăлса юлчĕ. Гитлеровецсем хӳтĕлевҫĕсен умне ультиматум тăратрĕҫ: кĕске вăхăт хушшинче хĕҫпăшала пăрахмасан, тĕпĕ-йĕрĕпе пĕтерсе тăкаççĕ. Ультиматум хыҫҫăн шăплăх пуҫланчĕ.

Çапăҫусен тамăкĕнче Алексеевăн вилĕм е тыткăн çинчен шухăшлама мехел те пулман. Вăл пĕрмаях хамăр чаҫсем хĕвелтухăҫĕнчен килсе тухасса шанса тăчĕ. Халĕ вĕсем вăрттăн тапăнса кĕнĕ тăшманăн оборонине ватаççĕ-ха, вăй пухаççĕ, вара пĕтĕм хăватпа килсе çапаççĕ те фашистсене хăрушшăн пĕтерсе тăкаççĕ... Хамăр çарсем таврăниччен епле те пулин тытăнса тăрасчĕ, тенĕ ун чух кашни боецах.

Халь, ультиматум хыҫҫăн, питĕ начарланса кайнă, вараланса, çипуçĕ çĕтĕлсе пĕтнĕ Никита касамат стени çумне çурăмĕпе тĕренчĕ те çапла шухăшларĕ:

«Ультиматум... Ку ĕнтĕ вăл чĕр çынах тăшман патне ачашласса кĕтме каймалла тени пулать. Мĕн вĕсем анкă-минкĕленнĕ-и? Эпĕ фашист йытти патне каçару ыйтма каймалла-имĕн? Мĕншĕн вара?»

Шухăшра çарти юлташсемпе туссем, инҫетри тăван ял, ырă кăмăллă та лăпкă амăшĕ шуса иртеҫҫĕ. Хăй кама юратнă тата хисепленĕ — çавсем пурте аса килеҫҫĕ...

— Манкăра çулăр! — терĕ те Алексеев çилĕллĕн, бетон урайне лачлаттарса сурчĕ. Пысăк çырă куçĕсем ун, хаярлăхпа тулса, чарăлса кайнăччĕ.

Пĕр сехетрен ультиматум срокĕ тухрĕ. Аллисене çӳлелле çĕкленĕ, шурă ялав йăтнă хӳтĕлевҫĕсене нимĕҫсем кĕтсе илеймерĕҫ. Артиллери вут тăкма пуçларĕ, пуҫсем çинче самолетсем

явăнаççĕ. Халиччен пулман бомбардировка тапранчĕ. Форт ишĕлсе-çĕмрĕлсе пĕтрĕ, пĕтĕм шалти картиш çулăм ăшне путрĕ, нимĕçсен ротисем валсемпе форт касамачĕсене çавăрса илчĕç. Хĕрарăмсемпе ачасем, аманнă салтаксемпе çапăçусенчен халтан кайнă, нумайăн мар сывă юлнă боецсем тыткăна лекрĕç.

Никита Алексеев фашистсен аллине çакланмарĕ. Вăл чылайччен тăшмана хирĕç печĕ. Автоматра юлашки диск пушансан тата гранатăсене ывăтса пĕтерсен, боец, тĕттĕмрен те тĕттĕм касамата кĕрсе, хăйăртан купаласа тунă вал ăшне чаваланса пытанчĕ.

Çав шăтăкра темиçе кун та ирттерчĕ вăл. Чăтма çук шыв ĕçес тата çиес килет. Чĕлхипе касамат стенин кирпĕччине çулать те, шыв ĕçес килни кăшт лăпланнă пек туйăнать. Тĕлĕрни выçлăха, ĕçес килнине мантарать. Анчах çывăрма та хăрамалла: ункайсăр хускалса е йынăшса ярса ху ăçтине пĕлтерме пулать. Ют чĕлхепе калаçни пĕрре çывăхра, тепре аякра илтĕнет.

Темиçе кунтан политрукăн пистолетне хатĕр тытса хăйăр ăшĕнчен касамата тухсан, Никита фортăн ансăр картишнелле асăрханса пăхрĕ. Унта никам та çукчĕ. Шурăмпуçĕ çывхарса килет. Вал çинче кăна такам мĕлкисем палăраççĕ. Вăрттăн вĕсем патне шуса пырсан, Алексеев тĕлĕнчĕ: хамăрăннисем-çке... Хумханни иртсе кайсан, пытаннă çĕртен тухрĕ. Ун пекех тата темиçе боец çăлăнса юлнă иккен.

Тăшман тапăнни вунсаккăрмĕш талăка çитсен, шăммипе тирĕ кăна тăрса юлнă, вăйран кайнă Никита питĕ ыйăхлакан пулчĕ. Сасартăк çывăхрах кăшкăрнисем, граната çурăлнисем илтĕнчĕç. Асăрхаса та ĕлкĕреймен — форта автоматчиксен ушкăнĕ пырса тухнă. Малтанхи атакăна сирсе ячĕç. Нимĕçсем орудисенчен тата миномĕтсенчен пеме тытăнчĕç. Алексеевран инçех мар мина çурăлчĕ. Салтак аванрах пытанасшăнччĕ — ĕлкĕреймерĕ. Осколкăсем сулахай урине шăтарчĕç. Никита саланнă атă пуçĕнчен чĕп-чĕрĕ юн юхнине курать, сурана çыхма вара вăхăт çук. Фашистсем усаллăн та хаяррăн хĕстереççĕ. Ак Алексеева пуçран тимĕрпе çапнă пекех туйăнчĕ. Куçĕсем нимĕн те курмаççĕ. Боец такан евĕрлĕ купаласа тунă укрепленин сылтăм «ури» патĕнче, тăвăр картишĕнче, касамат алăкĕ умĕнче, йăванса кайрĕ. «Аннеçĕм... каçарсам...» — пулчĕ ун ӳкнĕ чухнехи сăмахĕ.

Çапла...

Анчах ăна амăшĕ, Пăлаки аппа, илтеймен çав, аякра пулнă, питĕ те аякра. Вăл халĕ те пулин, унтанпа çирĕм çул иртнĕ пулин те, Мĕкĕти таврăнасса кĕтет, «вилмен вăл, таврăнатех», тет, отпуска килнĕ пĕр-пĕр çамрăк салтак урампа иртмессерен, хыпăнса ӳкет, тула чупса тухать.

Кĕпер урлă каçса уй хапхинчен те сехечĕ-сехечĕпе пăхса тăнă Пăлаки аппа, макăрма вара ниçан та макăрман. Мĕншĕн макăрмалла: ывăлĕ вилмен, сывах, часах таврăнать. Анчах пĕр çул иртнĕ, иккĕ, вуннă... Пăлаки аппа çаплах кĕтет: паян килмесен, тен, ыран килĕ, кăçал ерçеймесен, тепĕр çул... Кăвак çӳç пайăркине хура тутăр айне тирпейлесе чикет те, хăштах сывласа ярса, килнелле утать. Куççуль кăларнине ниçан никам курман ăна. Тен, ĕлĕк макăрнă та пулĕ, халĕ макăрмасть. Тутине тăп тытса, шăппăн килнелле таврăнать.

1961

УШКĂН-УШКĂН ШУР ПĔЛĔТ...

Эпĕ тӳпенелле пăхатăп. Унта ушкăнăн-ушкăнăн та майпен шурă пĕлĕт юхать. Вăхăта епле те пулин хăвăртрах ирттерес тесе, пĕлĕтсен вăрах вăййине калава çавăрма хăтланатăп. Эпир ача чух çапла тăваттăмăр. Ун чухне эпир шӳтлесе мар, чăнласах темĕн-тепĕр шутла-шутла кăлараттăмăр: таçтан муртан патшасемпе тухатмăшсем, шап-шур пӳрт-çуртсемпе керменсем киле-киле тухатчĕç, хăранипе çурăм сăрăлтатса каятчĕ. Халĕ вара... Капан пек шап-шурă пĕлĕтсем юхаççĕ те юхаççĕ. Пурте пĕрешкелрех. Хăйсене пурне те хĕвел витĕр çутатать. Апла пулин те, вĕсем çине пăхма пит хаваслах мар.

Астăватăп-ха, çакăнтах, çак пысăк чул çинчех, Аленка ятлă хĕрачапа час-часах пĕрле лараттăмăр. Вăл пирĕн кӳршĕре пурăнакан ватă çыннăн мăнукĕччĕ, сĕм тăлăхскер, аслашшĕпе çеç тăрса юлнăччĕ. Пĕлĕтсем шунă май, Аленка, куçне чалăртса, хăрушă япаласем каласа кăтартма, шухăшласа кăлармa пуçлатчĕ. Манăн сехĕрленнипе çӳç-пуç вирелле тăратчĕ темелле, кĕпем тарлă çурăм çумне çыпăçса ларатчĕ. Хĕрача, аллине хĕрӳн сулса ярса, сцена çинче чаршав уçнă пек тăватчĕ, вара тӳпене чун кĕретчĕ: шурă пĕлĕтсем юмахри тĕлĕнмелле сăнарсем пулса тăратчĕç, Аленка хăй асамăç çаврăнатчĕ. Эпĕ ăна пĕррехинче:

— Эсĕ чисти патша хĕрĕ пекех, — терĕм те, манăн сассăм çĕтрĕ, вăл вара хăлхи таранах хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайрĕ.

Шурă пĕлĕтсем тӳпене талккишпех хупласа юхаççĕ. Хупламан çĕртен хăш чух хĕвел сиксе тухать те çав тери хытă пĕçертме пуçлать. Сывлăш тăп-тăрă, унăн сенкерлĕхĕ те туйăни-туйăнми кăна тес пулать: шутлатăн та, хĕвел тӳперен татăлса анассăнах туйăнса каять.

Аленăпа эпир хĕлле, ирхине ирех, ăнсăртран паллашнăччĕ. Ăна эпир, хĕрачана, ун чухне аннепе иксĕмĕр пулăшрăмăр. Çавăнтанпа паллатăп та. Хĕл вăл çул хаваслах марччĕ, типĕ юрлăччĕ, кутсăр-пуççăр çилĕ-тăманĕ, пĕрре тапрансан, чарăна пĕлми алхасатчĕ. Сивĕ тӳпи сĕт тĕслĕччĕ...

Каçхи урамра хунарсем тĕксĕм, йăваш, ват çын куçĕ тейĕн, çул ик айккипе тăрса тухнă. Хула театрне тăкăрлăкпа пымалла. Тăкăрлăкри çăкасем çинçешке те çап-çара, тĕл-тĕл кунта кĕрт хĕве-хĕве лартнă.

Шăп. Таçтан çил килсе тухать те юра çĕклет, сывлăша пăтратать. Такам, темле элес-мелесскер, шурă халатлăскер, тĕттĕм çуртсем хушшипе вĕçтерсе çӳрет пек, кантăксене хыпала-хыпала пăхать, питĕрнĕ алăксене пыра-пыра шаккать.

Каллех шăп. Çаврака хунарсен тĕлĕнчен çеç, çутăра çиçсе илсе, кĕве ушкăнĕ евĕр, юр вĕçсе иртет.

Ир те пулса çитмен-ха. Кантăксенче — сенкер юр çути.

Лутра мачча айĕнче ылттăн çаврашкаланса лампочка çунать.

Манăн анне хулăн тутăр çыхнă, куçĕсем кăна курăнаççĕ. Тутăрĕ сăрă тĕслĕ, çавна пула пӳлĕме те сăрă сĕм çапнă. Тулта та, чӳрече леш енче, кичем, юрлă-мĕнлĕ.

Пирĕн кашни кунăмăрах çапла пуçланать.

Эпĕ мăя шарф çавăрса çыхатăп, çие кухвайккă, урана çăматă тăхăнатăп та анне çумне пырса тăратăп: ун çӳллĕшех эпĕ, çурăм тӳрĕрех те сăн шуранкарах çеç манăн. Эпĕ вунтăватă çулта.

Çенĕкре сарлака йывăç кĕреçесем илсе, тулта юр кăчăртаттарса пыратпăр: юр хыраканçăсем ĕнтĕ — эпĕ пуçа хăлхаллă çĕлĕк тăхăннă, анне виçкĕтеслетсе тутăр çыхнă, алсатульсем шалпар, пӳрнисем кăнтарса тăраççĕ. Аннен йĕрĕ тарăнрах, эп путмасăртарах утатăп, шалта, юр айĕнче темле чĕрĕ чун выртать тейĕн — çавна таптасран хăратăп пулас.

Юра пĕрне-пĕри хирĕç кĕрсе хыратпăр, малтан çăмăлраххăн, хăнăхса, майлашса та мелленсе, унтан — кĕреçене хытăрах пусса. Хырса пухнă юр çеп-çемçе юр кĕрчĕсем пула-пула тăрать.

Пит çунать, çăвар типет. Çӳçе, куç хăрпăкне пас тытать.

Тăкăрлăка ыйхăллă, куçĕсем уçăлсах çитмен машшинсем чупса тухаççĕ, юра таптаса лапчăтаççĕ, тулхăрса илеççĕ те, кустăрмисене юрпа вараласа, малалла вĕçтереççĕ, халĕ ĕнтĕ, такăр йĕрпе пынă май, тикĕсрех сывлаççĕ.

— Канса илер-ха, анне...

— Канса илер, Ваня...

Кĕреçесем çине таянса, урамалла лăпкăн пăхса тăратпăр.

Таса юр сĕмĕнче пирĕн сăн-пит те тасарах, çутăрах курăнать.

Юнашарти участокра паян ватă мучи вырăнне темле хĕр пĕрчи аппаланать: тӳрех курнать — пултараймасть. Йывăррăн сывлать, час-часах чарăнса тăрать — канать. Пĕр вуннă-вуниккĕсенче. Унтан ытла мар. Эпир аннепе иксĕмĕр ăна пулăш-

ма шутларăмăр. Çав хушăра мучи пирки те ыйтса пĕлĕпĕр терĕмĕр. Малтанах анне сăмах хушрĕ:

— Турă пулăштăр сана, хĕрĕм.

— Тавах, аппа, сире те пулăштăр.

— Мĕн-им, элле мучи ĕçрен тухса кайнă-и?

— Вăл чирлесе ӳкрĕ, ун вырăнне эпĕ, мăнукĕ, Алена, килтĕм...

Акă ĕнтĕ виççĕн тан кĕреçесемпе юр хыратпăр. Хытă ĕçленипе хамăртан пăс тухса тăракан пулчĕ.

— Аппа, аппаçăм, манăн атте те, анне те урăх нихăçан та пулмасть-и ĕнтĕ?

— Мĕнле калас сана... мĕн тес? Эсĕ самаях пысăк, ăнланма тивĕç...

Аннен куç харшийĕсем çинçе те кăмăллă. Анне ялан лăпкă пăхать, çилĕллĕ чухне те куç харшисене пĕрсе хаярлатмасть. Унăнни пек куç харши никамăн та çук. Куçĕсем те аннен пысăк, çутă. Куç харшисене пас тытнă. Анне юра ирĕклĕн, анлăн хырать, пысăк та сарлака кĕреçе çинче пачах та юр мар, шурă акăш мамăкĕ тейĕн. Эпĕ те пĕтĕм вăйран тăрăшатăп, Алена вара васкаса хырма хăтлананçи пулать те часах сывлăшĕ пӳлĕнет, хăвăрттăн-хăвăрттăн сывлама пуçлать. Анне ăна, хăйĕн хĕрне каланă евĕр, хуллен çеç калать:

— Канса ил-ха эсĕ кăштах. Шет, йăлтах халтан кайрăн пуль. Эпир кунта ĕçе сансăрах туса çитерĕпĕр.

— Çук-çке... эп ним чухлĕ те ывăнман. Эп, ак, часах ӳссе çитĕп. Нумай юлмарĕ. Пач сахал юлчĕ. Ун чухне эпир урам шăлмăпăр вара, эпĕ завода ĕçлеме кайăп...

Каярахпа пĕлнĕ тăрăх, Аленка манăн аннене тата тепĕр япала, чи кирлине, каласшăн пулнă. Тӳрех, ним тытăнса тăмасăр: «Эпĕ артистка пулма вĕренесшĕн», — теме хăтланнă, анчах та калайман: калас сăмахĕсем, тути çумне шăнса ларнă тейĕн, ниепле те çăварĕнчен вĕçерĕнсе тухасшăн пулман — ытла та хĕн пулнă вĕсене каласа яма.

Ак вăл çенĕкне кĕрĕ те кĕреçине хăйĕн яланхи вырăнне тăратса хурĕ, вара вутă илме тухĕ, пӳртĕнче кăмакине хутса ярĕ. Вут чĕрĕлсе çуна пуçласан, Аленка бидона хăлăпĕнчен ярса тытĕ, пӳрни тавра сетка явалĕ.

— Эпĕ сĕт патне, асаттеçĕм... Çăкăрĕ те çукрах пирĕн!

Аслашшĕ, Ваçка кушак аçи пекех, вутуççинелле тĕршĕнет. Чирлĕ вăл — ӳсĕркелет те, апчху та тăвать. Пӳртĕнче тулти пекех, питĕ сивĕ.

Васкамалла Аленкăн: каллех юр çине вĕçсе тухрĕ, магазиналла чавтарчĕ. Мĕнех, шăнĕçин аллисем, тăрин хăлхинче шав. Иртет. Кун пек çеç пулнă-и?

Таврăнсан, кĕнекисене уçкаласа пăхĕ, вара шкулалла чуптарĕ. Тинех канать Аленка шкулта, пуçне аллисем çине хăяккăн хурать те тĕлĕрсе каять.

Аленка каç пуласса чăтăмсăррăн кĕтет. Кунĕпех кĕтет ăна. Каçхине, юписем тавра сарă ункăсем сарса, хунарсем çутăлаççĕ. Ирхине хырса тасатнă тăкăрлăкпа, урисене пăр çийĕпе мăнаçлăн иле-иле пусса, театр патнелле çынсем туртăнма пуçлаççĕ. Аленка инçех те мар, çул айккинче тăрать. Пăхать, пăхать вăл яр уçă алăксенчен çынсем куçа шартаракан çутă çинелле мĕнлерех кĕре-кĕре кайнине. Чунĕпе вăл та унталла, лампочкăсем нумай тата духи шăрши кĕрекен çĕрелле туртăнать. Чылайччен тăрать çапла Аленка шăнса кӳтнĕ пӳрнисене пĕчĕк чышка чăмăртаса, театр умĕнче пĕр никам юлмичченех тăрать. Вара килне таврăнать, чей ĕçкелет, тин çеç кăтăш пулнă чирлĕ аслашшĕн ури вĕçĕнче кăштах сĕнксе ларнă хыççăн хăй те, утиялпа витĕнсе, çывăрса каять. Ыйхинче вăл илемлĕ, яланах пĕр евĕрлĕ тĕлĕк курать: кĕске юбки Аленкăн веер пек сарăлса, вĕçсе тăрать, туфлийĕсем хĕрачан шурă; театрти зал ун çине пĕрпĕтĕм хура пысăк куç пулса мăч та тумасăр пăхать...

Пилĕк çул каяллахи пекех, эпĕ килкартинчи капмар чул çинче ларатăп, Аленкăна кĕтетĕп. Халĕ ĕнтĕ эпĕ журналистика факультетĕнчи виççĕмĕш курс студенчĕ, Алена вара темиçе кун каялла çеç Ленинградри театр институтне пĕрремĕш курса вĕренме кĕчĕ.

Картиш пирĕн пысăках мар. Кунта пурĕ те виçĕ пӳрт кăна кантăкĕсене йăлтăртаттарса, хире-хирĕç лараççĕ. Шаларах хăрах уралла сĕтел курăнать. Каçпа ун тавра домино çатлаттарма юратакансем пухăнаççĕ, кăнтăрла ун çинче пулă тасатаççĕ, кипке-тĕр-мĕн-тĕр çăваççĕ. Çуртсем — хĕлле, юр хӳсе кайнăскерсем, курпунĕсене кăларнă, мăрйисенчен тĕтĕм тĕтĕреççĕ, чӳречисенчен каçхине кĕртсем çине çемçе сарă çутă ӳкет. Çулла вара, халь, тĕссĕрленнĕ те шупкаскерсем, вĕсем сцена хыçне, кулисăна кăларса пăрахнă никама та кирлĕ мар тусанлă декораци хатĕрĕсене аса илтереççĕ.

Эпĕ Аленкăна кĕтетĕп. Паян эпĕ хам ăна епле хытă юратнине пĕлтересшĕн. Вăл манпа пĕрле сулхăн çенĕке кĕрĕ, эпĕ ăна хулĕнчен тытăп, вара... Пӳртре питĕ шăп та хĕвеллĕ пулĕ...

Суккăр хĕвел каçăхса кайса çунтарать.

Манран инçех те мар, тенкел çине мучи пырса ларчĕ. Çак çулсенче кӳршĕ питĕ ватăлса кайрĕ. Вăл сайралнă шур çӳçлĕ, хĕсĕкрех кăвак куçлă. Мучи яланах уççăн та кăмăллăн пăхать.

— Ăшăнса ларатпăр-и? — ыйтать вăл сапăррăн.

— Ăшăнса ларатпăр! — çирĕплететĕп эпĕ.

Калинкке уçăлса, чĕриклетсе илĕ акă. Мучи картах сиксе, хыпăнса ӳкĕ. Çав хушăра эпĕ калинкке еннелле пăхса илĕп те Аленăна курах кайăп. Вăл, витĕр курăнакан кофта пекки тăхăннăскер, çунса-çиççе тăрĕ.

Халлĕхе вара... халлĕхе... юхаççĕ те юхаççĕ шурă пĕлĕтсем. Çунтаракан типĕ шăрăх пĕр хускалмасăр тăрать: сывлăшра вĕри хĕвел сирпĕнчĕкĕсем хытса ларнă тейĕн. Пĕлĕтсем темле витĕр çутатакан иксĕлми çутăпа çунаççĕ, тĕрлĕ майлă пухăна-пухăна, пĕрлеше-пĕрлеше инçете-инçете юхаççĕ. Вĕсен айĕнче, хура пăнчăсем пек курăнса, чĕкеçсем хăвăрттăн мĕлтлете-мĕлтлете вĕçеççĕ.

Эпĕ, пĕлĕтсем çинелле пăхса, Алена çинчен шухăшлатăп...

1962, Çарăмсан.

АШШĔСĔР ӲСЕТ

Вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнчех шкултан хăваласа кăларса янă Михаил Серде, вăта касри Серте Мишши эппин, ялта пачах курăнми пулчĕ, çĕр çăтрĕ тейĕн: кайрĕ те çухалчĕ. Шкулта ун çине педагогсемпе текех тавлашать, çав майпа ытти ачасене пăсать, «ухмаха ертет», тесе тарăхатчĕç. Пĕр ĕç пулса иртнĕ хыççăн директор тӳссе тăраймарĕ текех, педсовет пухса канашларĕ те приказ кăларса та çапрĕ: «Уроксем нумай сиктернĕшĕн тата нимĕç чĕлхи преподавательне, Николай Елисеевич Кучукова, физически те, моральнă та кӳрентернĕшĕн вуннăмăш класс ученикĕсен списокĕнчен кăларас»...

Списокран кăларнин амăшĕ иккĕ те пычĕ Елисей Мурзич Кучуков, Мăрса Элеçĕ, патне: директор хăй сăмахĕнчен пĕртте чакмарĕ, ăна çирĕп тытрĕ, пĕр шит те каялла тумарĕ. «Пире преступниксем кирлĕ мар, — терĕ вăл шăл витĕр, — ывăлна пăхса ӳстерессине ĕçпе сахал çыхăнтаратăн пулмалла, и вот пожалстă».

— Елисей Мурзич, учителĕр вĕт хăй малтан...

— Шанма пултараймастăп, тем те суйса пама пĕлĕ пăсăлса кайнăскер. Ашшĕсĕр ӳсет, ашшĕ пулсан...

Вера Гавриловна, Мишша амăшĕ, Верук аппа, хумханса ӳкрĕ, хут пек шурса кайрĕ. Выртса макăрсан та ним усси те пулас çуккине курса:

— Эх, эсир те çав, — терĕ шăппăн, — директорта ларатăр, пысăк çын тетĕр хăвăра, арçын çулне çитнĕ ывăлăр хутне кĕрсе ман ачана пĕтеретĕр.

Çӳлерех эпир Серде, шкултан кăларса янă хыççăн, таçта кайса çухалчĕ терĕмĕр. Унтанпа ĕнтĕ икĕ хĕл те иртнĕччĕ. Вăл ăçтине амăшĕ кăна тĕплĕн пĕлет-и, тен...

Нарăсри пĕр ăшă каç турчкакасси урамĕсемпе Культура çурчĕ патнелле ушкăнăн-ушкăнăн халăх утма пуçларĕ. «Хусантан писательсемпе музыкантсем килнĕ. Музыкăпа литература каçĕ пулать», — сарăлнăччĕ хыпар. Группа руководителĕ паллă писатель иккенне илтсен, ял çыннисем пушшех те хытă савăнса ӳкнĕ пулас.

Зала халăх тулнăçем-тулса пырать. Алăкран кĕнĕ çĕрте çирĕп хул-çурăмлă, хумланса тăракан тĕксĕм çӳçне «канадски полька»

модăпа кастарнă яштака çамрăк йĕкĕт икĕ юлташĕпе калаçса тăрать. Çийĕнче хура костюм ун, юр пек шурă кĕпе çухави çинчен галстук çыхса янă. Шĕвĕр сăмсаллă пушмакĕсем куçкĕски пек йăлтăртатса тăраççĕ. Пырса кĕрекенсем ăна малтанах палламаççĕ, тинкеререх пăхаççĕ те, тĕлĕнсе, аллисемпе пĕççисене шарт! çапаççĕ:

— Эккей, Мишша мар-и çак! Епле майпа?

— Питĕ те ансат, — тет лешĕ, тараватлăн сывлăх сунса, — турă майне пачĕ те, çавăрăнса çитрĕм.

— Юрать, юрать, атту аму тăр пĕчченччĕ-ха.

Мишша, икĕ юлташĕпе калаçса тăнă май, тек-текех алăк çине пăха-пăха илет. Акă алăк татах уçăлса кайрĕ. Лена, çăлтăр куçлă Лена кĕрсе тăчĕ. Вăл фойере салтăннă та, халĕ бал платьйи вĕççĕн çеç-мĕн. Ытарма çук Лена: çӳçĕ тĕксĕм пĕлĕт пек явăнса юхать, куçĕ çиçет, хĕм сирпĕтет. Панă та çав çынна çутçанталăк пӳ-сипе сăн-сăпат... Хулĕнчен пикене шкулти нимĕç чĕлхин преподавателĕ, никам та мар, çав Николай Кучуковах, çавăтнă. Мишшан сăнĕ сасартăках улшăнчĕ, тĕксĕмленчĕ. Çумĕнче тăракан тусĕсем ун куçĕ хĕм сапса йăлкăшма пуçланине асăрхарĕç. Хăйпе танлашсан, Мишша, сылтăм урине маларах куçарса, Ленăна такăнтарчĕ. Лена нимле мар пулса кайрĕ.

— Мĕнле намăс мар, Серде.

— ...де Серде. Мишель де Серде. Силь ву пле, пардон, мадемуазель.

Хĕр, пулăшу ыйтнăн, çумĕнчи савнийĕ çине пăхса илчĕ. Лешĕ çăварне карса пăрахнă та ним калама аптраса тăрать.

— Абер... Йунгер манн, — терĕ ăна Мишша, Ленăран çакланса тăракан «нимĕçе», — ауфшперрен зи дайне мунд нихт, махен цу (эккей, ун пекех ан уç çăварна, çамрăк çыннăм, хупсам ăна)...

«Нимĕçе» тинех чун кĕчĕ.

— Пăрăнар, Леночка, çапкаланчăкпа мĕн калаçса тăмалли пур, — терĕ йĕрĕнчĕклĕн.

— Ауфвидерзеен (тепре куриччен), — Мишша телейлĕ мăшăра сивĕ куçпа пăхса ăсатса ячĕ, кĕçех, кăшт тăрсан, икĕ юлташĕпе пĕрле сцена хыçне тухмалли алăкран кĕрсе çухалчĕ.

Залра — музыка. Хăнана килнисем хатĕрленсе çитрĕç пулмалла, микрофон умне конферансье тухса тăчĕ. Пурте алă çупса ячĕç.

— Студентсенчен пухса йĕркеленĕ литературăпа музыка группинчен хĕрӳллĕ салам! Çĕнĕ çула килсе çитейменшĕн каçарăр: пуç çинче сесси-экзаменсемччĕ... Концерта пуçлатпăр. Умĕнхи сăмах...

Чаршав хуллен уçăлать. Çавăн май залри çутта сӳнтерчĕç, эстрада çинчине кăна хăварчĕç... Чуна кайса тивекен кĕвĕ... Акă вăл хулленленет те, микрофон умне чăвашсен паллă писателĕ тухать. Ун сăмахне пĕтĕмпех çырса кăтартни кирлех те мар пуль. Пĕр тĕлте кăна чарăнса тăрăпăр эпир.

— Михаил Серде. Серте Мишши. Университетри пĕрремĕш курс студенчĕ, çамрăк поэт хăй сăввисене калать...

Писатель сăмахне пĕтерсе сцена хыçне кайсан, музыка вăйланчĕ, каллех конференсье килсе тухрĕ:

— Михаил Серде. Лирика. «Инçетрен». Вулать автор.

Мишша сценăпа хăвăрттăн утса иртрĕ. Чарăнсан, кĕлеткине тăп-тăп тытса, пуçне кăшт каçăртарах, зал çине шухăшлăн пăхса çаврăнчĕ.

Мана курсассăн, çуталать сăн-питĕр ăшшăн.
Калаçнă-тăршшĕсем — чăн тăванла, чипер, —

пуçларĕ вăл ытла хытах мар, анчах та çирĕп те кăмăллă сасăпа. —

ентешĕмсем, сире хисеплĕн Мишшăр
салам ярать паян Çĕн çулăн ячĕпе.

Пĕрне сиртен çав хушăра мĕскер çитмест-тĕр:
тăшман тесе шутлать мана — айван этем.
Шутлатăрах, эп чĕптĕм çилленместĕп.
Салам ăна та. Урăхла мĕн тем?

Тата... Тен, салама пĕр хĕрача илтеймĕ.
Кам иккенне пĕлен юлташăмсем,
кĕрсе пĕлтерĕр, салам янă, тейĕр,
сăлтавсăр ан çӳретĕр çилленсе...

«Асаилу» вальса духовой оркестр хытăрах та хытăрах каларĕ. Итлекенсем малтан ним тума аптăранă пек пулчĕç. Унтан хыттăн ал çупни, кăшкăрнисем, кăштран алăсене харăссăн шаплаттарса çупни илтĕнме пуçларĕ.

— Би-ис! Мишша!

— Серде-е!

Мишша айăплăн пуçне таять, виçĕ еннелле те таять. Пăлханать вăл. Савăннипе тата хурланнипе пăлханать. Мĕн чухлĕ халăх залра!

Малти ретре ларакансем унăн пысăк çутă куçĕсенчен пăчăртанса тухнă икĕ куççуль шăрçин йăлтăрккисене уççăнах кураççĕ. «Мăнтарăн ачи, ашшĕсĕр ӳсет», — терĕ Лена çумĕнче ларакан ватă хĕрарăм, Упруççа мăнаккаччĕ пулас.

Лена урăх тӳссе ларма хăват çитереймерĕ: унăн сывлăшĕ пӳлĕнчĕ, чĕри сиксе тухас пек шаккарĕ. Куççулĕ капланса килнине туйса, вăл хăйĕнчен сылтăм енче ларакан Кучуковăн аллине çилĕллĕн сирсе ячĕ, яштах тăчĕ те хăвăрттăн залран тухса кайрĕ. Мишша çаплах эстрада çинчеччĕ-ха, пуç таятчĕ... «Нимĕç» тĕлĕнсе хытса, тăм кĕлетке пек, ларса юлчĕ.

Лена килĕнче те чылайччен куççульне чараймарĕ. Чунĕ кӳтсе çитни ниепле те иртмест.

— Пĕтĕмпех эпĕ айăплă, пĕтĕмпех. Юрататтăм, темле сăлтава пула калаймарăм, хам телее хам çапса хуçрăм...

Амăшĕ, Лена çапла сасартăк чирлесе ӳкнĕрен, хытă тĕлĕнчĕ. Хĕрĕ: «Анне, Серде ашшĕне кам пĕрехмай хĕсĕрлетчĕ ĕлĕк чух, кам концлагере ăсаттарнă ăна?» — тесе ыйтсан, тата ытларах аптăраса ӳкрĕ.

— Елисей Мурзич Кучуков, — пăшăлтатрĕ вăл ним тума пĕлмесĕр. — Лăплан, хĕрĕм, лăплан, çывăр...

1962

СОЧИНЕНИ

«Çумра юлташ пулсан...»

Ку тема океан пек аслă. Ку темăпа çĕршер произведени çыраççĕ. Паян эпĕ вĕренме кĕме сочинени çыратăп. Университетра вĕренесси епле пархатарлă та чыслă ĕç, вăл манăн çутă ĕмĕт пулни çинчен шухăшлатăп. Мĕнле-ха вара эпĕ çавăн пек чăрсăр шухăш тытма пултартăм? Мĕншĕн эпĕ кунта? Çумра юлташ пулнăран. Халлĕхе çакă ăнланмалла мар илтĕнет. Çавăнпа та эпĕ йĕркипе каласа кăтартăп. Ку тема манăн кăмăла тахçанах пăлхатнă. Халĕ вара пушшех те пăлхатса ячĕ. Эпĕ шухăшсемпе ачалăха куçса ӳкрĕм. Ĕçĕ ак çапла пулнăччĕ...

Çичĕ класс пĕтерсен, эпир хамăр ялти Смирнов Петĕрпе Чистайри техникума вĕренме кĕтĕмĕр. Хĕлле, çур çулшăн экзамен тытсассăн, каникула килме тухрăмăр. Яла çитме 20 çухрăм юлсан, çанталăк пăсăла пуçларĕ. Çул çинче мĕн чухлĕ кĕтсе тăрсан та, эпир ялалла каякан лав тĕл пулаймарăмăр. Лайăх лаша кӳлнĕ чаплă каçăр çуна пире лартмарĕ. Çакна пула Петĕр питĕ хытă çилленсе кайрĕ:

— Чĕрçи Хĕветĕрĕ ку. Путсĕр.

Петĕр, сарлака хул-çурăмлă çӳллĕ ача, хутаçне меллĕрех çакрĕ те ман пата çывăхарах пычĕ.

— Итле-ха, Марье, нивушлĕ çав Хĕветĕр хурри пулса тăратпăр. Атя паянах персе çитер яла. Клуба каяр. Хĕветĕрĕн вĕçкĕн Валерийĕпе те пĕр ĕç çинчен калаçмалли пурччĕ-ха манăн...

Эпĕ, лутра та çинçешкескер, Петĕр хулпуççийĕ çӳллĕш те çук. Петĕр çине шанмасăр пăхатăп.

— Эс мана пăрахса ан хăвар. Куратăн-и, епле тăман çĕкленет.

— Эх, ачам, — терĕ Петĕр çĕлĕк хăлхисене антарса тата фуфайкине чĕн пиçиххипе хытăрах туртса çыхса. — Эсĕ мана Чĕрçи Хĕветĕрĕ йышши тетĕн-и?

Петĕр хĕтĕртсе калани ман ума анне сăнне кăларса тăратрĕ. Манăн та киле хăвăртрах çитсе аннене мăйĕнчен ыталас килсе кайрĕ.

Хĕллехи кунсем питĕ кĕске. Эпир вунă çухрăм пек утсан, телефон юписем пирĕн çулран пăрăнса мăн çулпа «танккарĕç».

Тĕнче тĕксĕмленнĕçем тĕксĕмленсе пычĕ. Каç пулса çитрĕ. Эпир сылтăмалла çул тытрăмăр. Тата тăват-пилĕк çухрăмран вăрман пулма кирлĕ. Чакак пуçĕ пек юр çăвать. Çил питрен вĕрет. Куçа уçса пăхма та çук. Ниçталла кайма аптрамалла — йĕри-тавра шап-шурă юр. Çула паçăрах çухатнă ĕнтĕ эпир. Çăматă кунчинчен юр кĕнипе урасем йĕп-йĕпе. Çил тата вăйлăрах вĕрме тытăнчĕ.

— Марье! кăшкăрать Петĕр. — Ман патарах кил, ман çурăм хыçĕпе, ман йĕрпе пыр.

Эпир çаплах çиле хирĕç утатпăр.

— Ывăнмарăн-и? — тет Петĕр. — Акă сахăр катăкĕ, çисе яр. Вăй кĕртет вăл.

— Петĕр, атя-ха кăшт канар...

Мана ĕнтĕ хамăн сасă хама та тĕлĕкри пек çеç илтĕнет. Эпĕ питĕ ывăннă. Çурăм хыçĕнчи хутаççа та паçăрах Петĕр йăтса пырать. Çурăм йĕп-йĕпе, питрен тар юхать.

— Петĕр, — терĕм те эпĕ, çурăма çил енне туса, юр çине лартăм, — урăх каяймастăп.

Мана питĕ канлĕ, ăшă, çемçе. Мĕн чухлĕ тĕлĕрнине пĕлместĕп. Тĕлĕк тĕлленнĕ. Тĕлĕкре те çывăратăп хам, аннене мăйĕнчен ыталаса çывăратăп. Вăранма эпĕ хыттăн кăшкăрнипе вăранса кайрăм.

— Ау, у-у! Урра! Вăрман!..

Эпĕ аннене мар иккен, Петĕре мăйĕнчен ыталанă. Вăл мана, пĕчĕк ачана йăтнă пек, пĕр çĕклем туса тытнă та талпăнать кăна малалла.

— Марье, урра! — терĕ вăл эпĕ вăраннине туйса. — Илтетĕн-и, сасă каялла таврăнать. Ахăрăм ку. Сасă вăрмана пырса çапăнать те пирĕн пата каялла килет.

Петĕр те халтан кайни курăнать.

— Акă ил юлашки сахăр катăкне, — тет вăл йывăррăн сывласа. — Вăрманта лайăх кăна канăпăр та малалла кайăк пек вĕçĕпĕр...

Яла эпир каçхине сакăр сехетре çитрĕмĕр. Петĕр мана килех кĕртсе хăварчĕ. Çил лăпланнăччĕ ĕнтĕ. Юр лапка-лапка çăватчĕ. Анне чей ĕçме мĕн тери лартас тесен те, Петĕр лармарĕ.

— Чĕрçи Валерине клуба çитсе ĕнсе чикки памалла-ха, — терĕ мана хăлхаран, чеен кулкаласа. Вара анне енне çаврăнса ыйтрĕ:

— Мĕнле унта, Марине аппа, сывах-и пирĕн çемьесем?

— Сывах, сывах.

— Ну каям-ха, эппин. Ырă каç пултăр.

Çавăн чух Петĕр Валерие чăнах та тăн кĕртнĕ, тет. Саккăрмĕш класра вĕренекен манăн тантăш пирки лекнĕ имĕш ăна.

Сăмаха вĕçлеме те вăхăт ĕнтĕ. Хăвăрах куратăр: эпĕ сыпсывах, университета вĕренме кĕме пикеннĕ. Смирнов Петĕр вара... Салтакра чухне чикĕ урлă каçса кĕме хăтланнă тăшмансемпе тытăçнă вăл. Хăй вилнĕ. Ахмет ятлă юлташне çăлса хăварнă. Петĕр пек çынсем çинчен манăн халăха тĕлĕнмелле, хăватлă, ĕмĕр асран каймалла мар каласа парас килет. Петĕр пек çынсен ячĕпе лартнă палăк пултăрччĕ манăн пĕтĕм пурнăçăм.

* * *

Çакăн пек сочинени çырнă журналистика уйрăмне кĕме экзамен паракан абитуриентка Мария Щепина. Хăшпĕр çĕрте чарăну паллисене тĕрĕсех лартман тесе, сочинение «вăтам» хак панă. Анчах та Марье парăнма шутламасть. Вырăс чĕлхипе СССР историйĕшĕн «тăваттă» илнĕ.

— Ют çĕршыв чĕлхи юлчĕ тата. Мĕнлеччĕ-ха çав, вас хрӳккĕн зиччĕ-и-ха? — терĕ вăл шӳтлесе, унтан салхуллăн хушса хучĕ: — Петĕр питĕ ăста калаçатчĕ нимĕçле, мана яланах пулăшатчĕ.

1962

ФАРАОН

Шыв ҫийĕн йывăр сăрă кĕпер ҫакăнса тăрать, тĕрĕсрех каласан: ҫырма ҫийĕнче курпунне кăларса тăрать. Ҫирĕп, нумай ҫуллăха, тахҫанах тунă ăна. Хăвăрт кусакан кустăрмисемпе тикĕсех мар ҫĕрсене тикĕслесе машшинсем иртеирте каяççĕ, асфальт ҫине таплаттарса пусса ҫынсем утаççĕ, кĕпер те этемĕн васкавлă пурнăҫĕпех пурăннă: ҫумăрсемпе ҫăвăннă, тирексем ҫинчен кĕркунне вĕҫекен тип ҫулҫăсемпе витĕннĕ, хĕлле ун ҫине шурă юр ҫăва-ҫăва кайнă, ҫуркунне вара вăл каллех юртан-пăртан тасалнă.

Каҫхине, хунарсем ҫутăлсан, кĕпер ҫине иккĕн пычĕҫ, пĕрне-пĕри ҫывăх перĕнсе чылайччен аялалла пăхса тăчĕҫ. Каччи пирус туртрĕ, шăрпăк чĕрте-чĕрте кĕпер айнелле пăрахрĕ. Ҫутнă шăрпăк, аялалла вĕҫнĕ май, тӳрех сӳнмест-мĕн, тĕттĕмре ҫутă йĕр хăварса пырать. Хĕрĕ, курткин ҫухавине тăратнăскер, шывалла савăнса пăхаканскер, ахăлтатать, кăшкăракăшкăра ярать:

— Епле селĕм! Ай, епле аван! Тата ҫутса пăрах-ха... Эс сикейнĕ пулăттăн-и ҫак кĕпер ҫинчен? — ыйтать вăл. — Хăрушă.

— Мĕнех вара? Сикме те пулать, — каччă каллех шăрпăк ҫутса аялалла пăрахать.

— Енчен те шыва вĕҫсе ҫитиччен сӳнмест, ĕмĕтĕмĕр пурнăҫланать... Ҫук, вĕҫсе ҫитичченех сӳнчĕ... Тата пăрах.

— Шăрпăк пĕтрĕ, — терĕ каччи.

Вара вĕсем сасартăк шăпланчĕҫ, чĕнмесĕр нумайччен хура шыв ҫинелле пăхса тăчĕҫ...

...Ҫакăн пек уйрăлнăччĕ эпир кĕпер ҫинче пилĕк ҫул каялла: эпĕ — пĕрремĕш курс студенчĕ, вăл — университет тин ҫеҫ вĕренсе пĕтернĕскер. Вăл, «филологиня», ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентме яла тухса кайрĕ. Кайрĕ те, шыва путрĕ тейĕн, пач ҫухалчĕ. Эп ҫыру кĕтетĕп, ҫыру вара ҫук. Япăх вăл, ҫыру ҫук пулсан. Пĕр кун... икĕ, виҫĕ кун... эрне... уйăх ҫук... Тен, ҫулла юр пулман пек, ҫыру пачах та пулмĕ. Анчах та эпĕ кĕтетĕп. Эпĕ аялти хутра вахтăра ларакан Уках аппа патне анатăп:

— Ĕҫсем-пуҫсем мĕнлерех? — тесе кăсăкланатăп.

— Ҫук сана валли ҫыру, ҫӳрех ирĕкре, — хуравлать кăмăлсăррăн кинемей. Вăл тăйлăк-тайлăк тенкел ҫинче хаҫат пăхкаласа ларать.

Эпĕ алăка шаплаттарса хупса урама тухатăп. Ман хыçранах общежити пусмин картлашкийĕ çинчен Наташка, вуннă-вуниккĕсенчи хĕрача, сиксе анать. Кулмасăр тыткаласшăн хăйне. Çӳçне шурă бант çыхнă. Пальтти çинче тӳмисем йăлтăртатса тăраççĕ. Хĕвел çине пăхса илет те кулмасăр чăтаймасть, кăшкăрса ярать:

— Тетеçĕм, тумла пăрĕ татса пар-ха!

Кĕленче пек витĕр курăнакан пăр катăкне алсишĕпе ярса тытичченех, вăрах çухăрашать çапла, вара çурт кĕтессине пăрăнать те пăра вĕтĕ те шурă шăлĕсемпе кăшлама пуçлать.

Юртан тасалнă вак чул купинчен çурхи ăшă пăс тухса тăрать, тӳпере шур пĕлĕт ушкăнăн-ушкăнăн иртет.

Çыру вара çаплах çук...

Наташка тумла пăрне чул çине çапса çĕмĕрет, пур еннелле те сирпĕннĕ ванчăксене куçне хĕссе сăнать, вара хулăн та йывăр алăка пырса тапăнать.

— Кукамай, çуркунне çитрĕ! — çуйăхать Наташка.

Анчах та кукамăшĕ çакна илтмĕш пулать, хаçатпа хупланса йăл кулса илет. Наташка сĕтел çине улăхса ларать те пĕр чарăнми пакăлтатать, куçне-пуçне хăрушшăн чалăртать, кукамăшне хаваслантарса савăнтарать. Шăрпăк чăр-чар! çута-çута ухмах Йăван çинчен халлап каласа кăтартать.

Çыру çаплах çук.

Эпĕ васкамасăр çӳлти хуталла хăпаратăп.

— Фараон! — кăшкăрать аялтан Наташка.

— Фараон! — янраса каять общежити тăрăх.

Ку вăл — Наташка мана çапла йĕкĕлтесе вăрçтарать. Ăна пурте кулăшла та çутă — çуркунне! Тулта тумла пăрĕсем татăла-татăла анаççĕ, чăлпар! ӳксе саланаççĕ...

Хĕлле Наташка вăрăм кунчаллă çăматăпа чупса çӳретчĕ, кунчисем пальто арки айнех пытанатчĕç. Тата вăл пысăк тутăр çыхатчĕ. Тутăрне ăна кукамăшĕ çыхса яратчĕ — çурăмĕ хыçне хĕреслетсе, шултра тĕвĕ туса. Наташка урампа пынă чух çав çыхă чĕрĕп пек йăшăлтататчĕ.

Хĕрача пĕррехинче пирĕн пата кĕрсе тăчĕ, ирĕлнĕ юра çӳçĕ çинчен силлесе пăрахрĕ те, çурăмĕпе Федька, пӳлĕмре манпа пĕрле пурăнакан тус, енне çаврăнса команда пачĕ:

— Салтăнтар...

Унтан çапла ыйтрĕ:

— Чей ĕçтеретĕр-и?

Федька сарлака ывăç тупанĕсемпе ун аллисене ăшăтрĕ, шăнса кӳтнĕ пӳрнисем çине вĕрчĕ, Наташка вара савăнса, кулса тăчĕ:

— Ху мĕнле пысăк, Федя тете, сухалу-уссийӳ вара çук.

— Ак, лар та çакăнта, ан шавла. Фараон урок вĕренет, — тет Федька сассине хулăмлатса тата ман çурăм çинелле пӳрнипе тĕллесе. — Ун çав тĕрлĕрен çекĕлĕсем-мĕнĕсем, паллисем — шуйттан пĕлсе пĕтереет-и пĕтĕмĕшле илсен, тухсах пĕтеймеççĕ. Ăнкар. Фараон ĕнтĕ пĕр сăмахпа каласан...

Наташка «ăнкарать» те, аллисене чĕркуççи çине хурса, мăштах пулать, шăпланать.

— Ну эп часах. Пĕр ура кунта, тепри магазинта. Эс унччен юмах шухăшласа хур, килсен каласа кăтартăн... Сана валли мĕнлерех канхветне туянас?

— Тăлăп тăхăннине.

Федька коридоралла сирпĕнсе тухрĕ.

Ман çурăм хыçĕнче шăп пулса тăчĕ. Наташка, тарăннăн сывла-сывла илет пулин те, ним те чĕнмест, шарламасть.

— Фараон! — сасартăк илтĕнсе кайрĕ ун сасси.

— Мĕн кирлĕ? — кăмăлсăррăн хирĕç чĕнтĕм эпĕ.

— А эсĕ мĕншĕн пит çиллес, фараон?

— Ан кансĕрле.

— А санăн хăлхусем çап-çаврака та хĕп-хĕрлĕ. Эс вĕсене сăрларăн-им?

— Сăрларăм...

Пирус туртма тухас тесе, эпĕ Наташка умĕпе коридоралла утса иртрĕм.

Федька таврăнсан, вĕсем тумбочка патне вырнаçрĕç те фарфор чашăксемпе чей ĕçрĕç.

— Эс юмах шухăшласа хутăн-и? — ыйтрĕ Федька.

— Шухăшласа хутăм... фараон çинчен... анчах та халь мар, каярахпа каласа кăтартăп. Ак чей ĕçсе тăранăп та каласа парăп, — унтан, Федька çумнерех тĕршĕнсе, çапла пăшăлтатрĕ: — Пĕлетĕн-и эсĕ, Федя тете, фараонăн хăлхисем çап-çаврака та хĕп-хĕрлĕ. Епле...

Федька ахăлтатса илчĕ.

Çавăнтанпа Наташка мана «фараон» тесе тăрăхлать...

Çыру халĕ те çук.

Кĕтетĕп эпĕ, шухăшлатăп... пуçа вататăп...

Çапла, эпĕ чăнах та хыт сухари пек, чунсăр интеграл пек. Фараон, пĕр сăмахпа каласан...

Хула витĕр пуйăссем шăхăрса иртеççĕ. Кустăрмисен айĕнчен рельссем юхаççĕ. Кустăрмасем вĕсене çăтаççĕ, вĕсем вара юхаççĕ те юхаççĕ. Юрататăп эпĕ каçхи хула витĕр пуйăссем шăхăрса иртнине. Эпĕ чӳречене яриех уçса яратăп.

Пысăк хура тутăр пĕркенсе, хула ыйăха путнă. Таçта аялта, ешĕл сăрт айĕнче кустăрмасене пула рельссем кĕрлесе тăраççĕ. Вĕсем çĕре хуласемпе çыхăнтараççĕ. Рельссем, ăслă алăсем тейĕн — чĕрĕ алăсем. Кустăрмасем — вĕсен юн таппийĕ, пульсĕ.

Кунсем-çулсем те рельссем пекех юхаççĕ.

Ача чухнехи йăлапа эпĕ халĕ те пуйăс иртнĕ сасса итлеме юрататăп: чӳречене яри уçса яратăп та итлетĕп. Тавралăх шăп чухне, çĕрле, итлеме питĕ аван. Хăш чух, ачалăхри пек, пуйăс хыççăн чупас килсе каять, анчах та эпĕ йăл кулса çеç илетĕп, пируса туртса пĕтеретĕп те çывăрма выртатăп. Тĕлĕкре вара мана проводница аллинче вĕçсе пыракан сарă тĕслĕ кайăк курăнать...

Мĕн-тĕр çитмест мана. Пурнăçăмăн йĕрки йăлтах виçеллĕ те сехет пекех тĕрĕс пек ĕнтĕ. Манăн кунăмсем — общежити, университет, вулав залĕ, хăш чухне ташă каçĕ тата ытти те. Анчах та мĕн-тĕр çитмест. Ах, яшă чĕремçĕм, мĕншĕн пăлхататăн чуна? Вара куç умне яланах темшĕн ĕнтĕ леш (ялти) мар, шур бант çыхса янă, кăнтарса тăракан пĕчĕк çивĕтсемлĕ, кĕçĕн класра вĕренекен Наташка тухса тăрать. Ытла та кулăшласкер вăл. Вахтĕрта ĕçлекен ватă кукамăшĕпе çеç пурăнать, ашшĕ çук унăн, ашшĕ таçта тарса çӳрет. Амăшĕ вара пачах çук. Вилнĕ. Шур çӳçлĕ пĕртен-пĕр кукамăшĕ кăна пур. Ашшĕне троллейбусра мĕнле тĕл пулнине Наташка мана кулмалла каласа кăтартнăччĕ. Наташка мороженăя пĕчĕк патак авăрĕнчен тытса тăнă. Ăшăпа ирĕлме пуçланă вăл.

— Хĕрача, эс мана мороженăйпа вараласа пĕтересшĕн-и?

Наташка пуçне çĕкленĕ те, ăна, ашшĕне курах кайнă. Ăна вăл кукамăшĕ матрац айĕнче пытарса усракан сăнӳкерчĕк тăрăх палласа илнĕ. Ашшĕ ларкăчăн çутă хĕрринчен тытса пынă, кондукторпа ятлаçнă. Наташка унăн ури çине пырса пуснă. Ашшĕ ăна:

— Эсĕ лайăх мар хĕрача, — тенĕ.

Наташка ашшĕне:

— Санăн вара сăмсунта икĕ шăтăк! — тенĕ. Троллейбусрисем пурте кулса янă. Наташка анмалла мар çĕртех анса юлнă та чут çеç йĕрсе яман.

Мĕнле-тĕр, пĕррехинче эпĕ Наташкăна шоколад туянса патăм. Вăл, манпа юнашар вырнаçса ларса, шоколад çирĕ.

— Фараон тени мĕн тени пулать у? — кăсăкланчĕ Наташка.

— Мĕнле калас сана? Пĕлетĕн-и, çавăн пек корольсем пулнă...

— Хура сухаллă-и?

— Аха. А эпĕ шутлама, тĕрлĕрен паллăсем ӳкерме юрататăп... Вĕсем «икс» ятлă. Вĕсене кунĕпех ӳкерме те пултаратăп... Вăт Федька ман çума фараон ят çыпăçтарса та хучĕ.

— Эс çилленмерĕн те-и?

— Çук.

— А кам сан патна çыру ямалла?

— Ну, пур пĕрскер...

— Эпĕ те çырăп çыру, пурин патне те... Ман пата та кам та пулин çырĕ.

Çакăн хыççăн Наташка та манпа пĕрле çыру кĕтме пуçларĕ. Килнĕ çырусене стена çумĕнче çакăнса тăракан ещĕкри сентресем çине вырнаçтарса хураççĕ. Ман пата килес çырусем хăш тĕлте выртассине Наташка пĕлет. Мухтанса илме те манмасть вăл:

— Ман пата та килĕç, ак, çырусем, кукамай калать... Çуралнă кун çитет час, вуниккĕ тултаратăп, çавăн чух килĕç... Анчах та кам ярĕ вĕсене — пĕлместĕп.

Наташка кашни ир аллине ещĕке чиксе пăхать. Пĕррехинче вăл мана эп ырми-канми кĕтнĕ çырăва килсе тыттарчĕ. «Лёшка, ан кил ман пата, — çырать ялтан манăн савни, ачасене чĕлхе тата литература вĕрентекен учительница, — эсĕ ху калаттăн мар-и кунсем-çулсем рельссем пек тесе? Рельссем, ăслă алăсем тейĕн — чĕрĕ алăсем. Вĕсем çĕре хуласемпе, мана санпа çыхăнтарса-çыхса тăраççĕ. Куна эсĕ çапла калаттăн. Анчах та рельссене ик еннелле уйăрса ярсан, пуйăс йĕртен тухса сирпĕнет, арканса каять. Хам та пĕлместĕп, мĕн пулчĕ мана... Пĕлместĕп эпĕ, Лёшка. Астăватăн-и, эс мана проводница аллинчи сарă тĕслĕ кайăк çинчен каланăччĕ? Астăватăн-и? Эпĕ вăл вĕçсе кайса ан çухалтăрччĕ тетĕп...»

...Эпĕ кĕтетĕп. Ирсерен университеталла утатăп. Вăрах вăхăт хушши утмалла-ха унталла манăн, тăватă çул ытла, çавăнпа та эпĕ чăтăмлăн кĕтме хăнăхатăп.

Сирень те çеçкене ларчĕ ĕнтĕ. Унăн чи илемлĕ турачĕсене хуçса, ачасем шкула çыххи-çыххипе сирень илсе пыраççĕ. Çамрăк ачасен те вĕçсе каякан сарă тĕслĕ кайăк пур. Анчах та

эпĕ ăна ачалăхра юлашки вакун çинче хăвартăм пулмалла — мана çапла туйăнса тăрать.

Хĕрсе кайнă асфальт çинче вăрăм ураллă Наташка сике-сике класла вылять, шурă тетте катăкне вăл асăрханса малалла тапса куçарать.

Эпĕ чӳречерен пуçа кăларса кăшкăратăп:

— Наташка, кил-ха кунта, канхвет паратăп!

Вăл пуçне çĕклет, майккине тӳрлеткелет.

— Пĕрре-и?

— Иккĕ.

— Пымастăп. Виççĕ пулсанччĕ... — Вăл каллех теттене ури пуçĕпе тапса шутарма пуçлать.

— Наташка, санăн хыçал енче хӳре, пуçу тăрринче хăлха.

— Эсĕ яланах суятăн. Санăн хăвăн пуçу çинче — кастрюль.

Парăнма пĕлмен Наташка.

— Футбол курма каятпăр-и?

— Билетне кам туянать?

— Эпĕ туянатăп.

— Итле, улталас пулсан вара... Эп сана кăтартатăп-тăк кăтартатăп... çуртна сывлăша сирпĕтсе яратăп.

— Атя, Наталья, кайрăмăр, пуçтарăна пуçла.

— Эпĕ часах... эсĕ кăштах кĕтсе тăр çеç.

Акă вăл тетте катăкне хĕвне пытарать те килне чупса кĕрет.

Эпĕ çие таса кĕпе тăхăнатăп. Эпĕ чертёжсене пуçтарса хуратăп. Эпĕ паян ним çинчен те шухăшлас теместĕп.

— Лёшка! — çуйăхать алăк хыçĕнче Наташка. — Ну, Лёшка, эпĕ хатĕр ĕнтĕ. Кайрăмăр.

Эпĕ Наташка çине тĕлĕнсе пăхса тăратăп. Вăл кĕске çӳхе платье, илемлĕ туфли тăхăнса янă, çивĕтне шап-шурă бант çыхнă.

— Эс ытла капăр.

Наташка хĕрелсе каять, пӳрнипе стенана хыркалать.

— Кайрăмăр эппин, королева.

Эпир общежити тăрăх утатпăр. Эпĕ Наташкăна аллинчен тытнă. Унăн пĕчĕк çивĕтĕнче пысăк шурă бант чӳхенкелесе пырать.

Хĕвел урамсене хăйĕн çутипе хупласа хунă. Вăл çуртсем çийĕн йăлт-ялт! сиксе вылять, кĕленче-кантăк çийĕн хĕлхем пулса саланать. Шăрăх.

— Мана мороженăй туянса пар-ха... Атя футбол курма каймастпăр, ун вырăнне мороженăй кĕрсе çиетпĕр. Укçу çитет-и сан?

— Çитет.

Эпир кафене кĕрсе тăратпăр. Наташкăн алли пĕçерме пуçлать. Вăл мана пӳрнерен ярса тытнă. Эпир креслăна лаштах анса ларатпăр. Пирĕн паталла тутине писев сĕрнĕ официантка юхса килет.

— Ашшĕпе хĕрĕ мороженăй çиесшĕн... — тет официантка, вара унăн тути аквариумри пулă евĕр курăнса каять.

— Саккас пар, Наташка...

— Аппаçăм, эсĕ йăнăшрăн. Ку Лёша тете, атте мар, — сасартăк хуллен çеç каласа хурать Наташка, пуçне айккинелле пăрать. Куçĕнче унăн куççуль йăлтăртатса илет.

— Эпир суйласа илеймерĕмĕр-ха, — хыттăн калатăп эпĕ «аппана», — суйласа илсенех чĕнетпĕр сире.

Наташка нимĕн те шарламасть. Вăл çутă чӳречерен урамалла пăхать, шăрăх пулин те, унта пурнăç вĕресе çеç тăрать.

— Илсе килĕр-ха пире валли тăватçĕршер грамм çырлаллине, — тетĕп эпĕ официанткăна.

Наташка аллисене сĕтел çине хурать, йăл кулать, мана урипе ураран тĕкет.

— Фараон, мороженăйне эсĕ ытла нумай илетĕн... Эпĕ нихçан та ун чул çимен. Эпĕ яланах çиесшĕнччĕ, анчах та мана никам та туянса паман.

— Санăн пуçу тăрринче хăлха, хыçал енче вара ура тупанĕ, Наташка.

— А эсĕ фараон...

Вара эпир кулса яратпăр. Кӳршĕри сĕтелсем хушшинчен пирĕн çине çынсем çаврăна-çаврăна пăхаççĕ.

— Лёшка, ма сана каллех çыру çук?

— Аппа урăх хулана куçса кайнă... Вăт çавăнпа.

— Эпĕ вара пурин патне те, пурин патне те çырнă пулăттăм... кирек хăш хуларан та...

Наташка салхуланать.

— Паян эпĕ çуралнă... Паян эпĕ вуникĕ çул тултартăм, а эсĕ?

— Эпĕ часах вунтăххăр тултаратăп. Кĕркунне...

Эпĕ унăн çӳхе платьйи çине, вăрăм куç хăрпăкĕсем çине ытарайми пăхатăп — Наташка мана тăван йăмăк пек туйăнать.

...Алран-алла тытса общежитинелле таврăннă чух Наташка кулса илчĕ те çапла каларĕ:

— Ну çирĕм те паян мороженăй, ун чухлĕ эпĕ нихăçан та çисе курманччĕ.

Анлă урам патĕнчен тӳрех, аялта, симĕс типвар тĕпĕпе пуйăс пĕчĕк ҫырма пек юхса чупать.

Наташкăна эпĕ, аллинчен туртса, ҫывăхарах илсе пыратăп.

— Пăхсам, куратăн-и проводница аллинче пĕчĕк ялав?

— Куратăп, Лёшка! — кăшкăрса ярать Наташка сиккелесе.

— Вăл сарă тĕслĕ кайăка асилтерет.

— Асилтерет, Лёшка... Кашни вакунĕ ҫинче — кайăк.

Пуйăс чул кĕпер айне сулхăна кĕрсе каять те, кайăк ҫухалать, анчах та, васкавлă вакунсем хĕвел ҫине каллех чупса тухсан, юлашки вакун проводницин аллинче ҫав-ҫавах сарă тĕслĕ кайăк вĕҫсе пыни курăнать.

* * *

...Вĕҫсе кайрĕ кайăк, вĕҫсе иртрĕҫ ҫулсем, тăватă ҫул, кĕпер айĕпе те шыв нумай юхса иртрĕ ҫав хушăра.

Эпĕ галстук ҫыхатăп.

Эпĕ вăтам шкула сывпуллашу каҫне каятăп.

Эпĕ шăпланнă зал умне тухса сăвă калатăп, Наташка ҫине вăрттăн пăха-пăха илетĕп. Вăл Федьăпа юнашар ларать, ман енне пăхса йăл кулать.

Вара — музыка. Ташă. Эпир виҫсĕмĕр те уҫă чӳречерен патĕнче тăратпăр. Виҫсĕмĕр те ӳссе ҫитĕннĕскерсем, ҫамрăк та илемлĕскерсем, маттур яш-кĕрĕм. Наташа, сирень туратне ҫавăркаласа, унта пилĕк ҫеҫкеллĕ телей-ăрăскал шырать.

Музыка хăлхана ҫурасла кĕрлет...

Эпир виҫсĕмĕр те урама тухса каятпăр.

Шыв ҫийĕн йывăр сăрă кĕпер ҫакăнса тăрать.

Эпĕ юри каярах юлатăп. Эпĕ калатăп:

— Кайăрах, эпĕ сире хуса ҫитетĕп...

Эпĕ чукун карлăк урлă уртăнатăп. Эпĕ аялалла пăхатăп, пирус чĕртсе яратăп та ҫутнă шăрпăка кĕпер айнелле пăрахатăп — вĕсем, каҫхи тĕттĕмре ҫутă йĕр хăварса, тӳрех сӳнмеҫҫĕ, эп ҫутнă шăрпăк пĕрчисем. Мана такам: «Эс кĕпер ҫинчен сикнĕ пулăттăн-и?» — теннĕнех туйăнать.

Эпĕ ҫапла картса хуратăп: ҫунакан шăрпăк пĕрчи шыва вĕҫсе ҫитейсен, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕм пурнăҫланатех.

Анчах та шăрпăк йĕнни пуш-пушă, кĕпер айĕ сĕм-тĕттĕм.

Илтетĕп эпĕ, кĕперĕн тепĕр вĕҫĕнче Наташа, шăнкăрав пек сассине янратса, хавассăн кулать...

1963

МОЦАРТ ҪЫРНĂ РОНДО

1

Хулари акăш-макăш эрешлесе пĕтернĕ парк мар ку. Ял варринчи ҫĕнĕ клуб тавра рейка ҫапса карта тытнă та усăсăр выртакан ҫеремлĕ лаптăка сад тунă. Йывăççисем ҫамрăк-ха, хунав. Паркăн ташă площадкине те халлĕхе электролампа мар, «асатте хунарĕ» — пысăк ҫаврака уйăх ҫеҫ ҫутатать.

Паян, шăматкаҫ, вунултă ҫула ҫитменнисене те парка кĕртеççĕ. Ытти саккăрмĕш класс хĕрачисемпе пĕрле площадкăна Надя та килчĕ. Амăшне вăл: кинона каятăп, тесе хăварчĕ. Вăйăа тухас умĕн Надя ҫырă ҫӳҫне тураса якатрĕ, ҫивĕт вĕҫĕсене пысăк шурă лĕпĕш пек бантсем ҫыхса лартрĕ. Ҫухависем те шурă унăн. Платйи хăмăр, шкул форми. Хуҫи ӳсерех кайнипе кĕпи кăшт кĕскелерех юлнă та, аптрамасть-ха, йĕркеллех курăнать.

Хурăнсем тин кăна ҫулҫă кăларнă. Надя ҫурт умĕнчи пахчара ӳсекен ҫамрăк хурăнăн пĕчĕк туратне хуҫса илчĕ. Ах, епле тутлă шăршăллă тин тухнă ҫулҫăсем... Хурăн тураттине чечек вырăнне тытса, Надя вăйă патне ҫитрĕ.

Каҫĕ сулхăн, анчах та сивĕ мар. Пĕр-икĕ ҫаврăм ташласан, нимĕнле ҫӳҫенӳ те юлас ҫук.

Вихтăр Вани баянпа танго калать. Бассем тĕлли-паллисĕр мăрăлтатса кĕвве йăлтах хупласа хураççĕ. Мăшăр-мăшăр ҫамрăккĕрĕм, ахаль тăрас мар тенĕрен кăна, шуҫкаласа ҫӳрет.

Янкăр тӳпери уйăх куҫне ҫĕр ҫинелле чарсах пăхать. Ташă площадкинчи ҫамрăксене те курать ĕнтĕ вăл. Надя, пăрăнса, решетке ҫумне таянчĕ. Питне уйăх енне ҫавăрнăран, ун вăрăм хăрпăклă пысăк куҫĕсенче те уйăх пур. Сăнĕ Надьăн шурă курăнать, ҫӳҫĕ — ҫутă. Таврара Вихтăр Вани баянпа кăларакан йĕркесĕр кĕвĕ сасси, ҫывăхри ращара — каҫса кайсах юрă шăрантаракан кайăк. Инҫетри шоссепе машинăсем иртеççĕ. Фарăсен ҫутисем, уйăха пула, сарă шарсем пек туйăнаççĕ. Акă таҫтан мотоцикл кĕрлени илтĕнсе кайрĕ. Шăпланчĕ. Моторне сӳнтерчĕҫ пулмалла. Каласа сасăсем хăлхана килсе кĕчĕҫ. Мотоцикл ҫитсе чарăннине ытти хĕрачасем те илтнĕ иккен.

— Петя, пирĕн Петька ҫитрĕ! — савăнăҫлăн кăшкăрса ячĕҫ вĕсем. Ҫивĕтсенчи пысăк лĕпĕшсем харăссăн хускалса илчĕҫ. Вĕсем ак, хĕрачасемпе пĕрле, калинкке еннелле вĕҫсе кайрĕҫ.

— Петя! Ăҫта ҫӳретĕн хальччен?

Петя, атлетăнни пек хул-ҫурăмлă вунпилĕк ҫулсенчи яштака ача, калаҫма ытла ухатах мар пулас, йĕпкĕн хура ҫӳҫне айăплăн вирелле сăтăрса, куҫĕсене йăлтăртаттарса тăрать.

— Юрать эсир кунтах пурăнатăр та...

— Санăн та килӳ виҫĕ ҫухрăмра ҫеҫ. Эх, спортсмен!

— Кӳршĕ яла ташлама ҫӳреме директортан ирĕк илмен те.

— Пе-етя! — йынăшса ячĕҫ хĕрачасем. — Сăмах паратăн тата ху!

— Пĕлнĕ пĕтĕм кĕвĕ пуҫран тухса вĕҫнĕ, Чистай аэродромĕ ҫитмĕл ҫухрăма яхăн та кунтан. Ҫапла вĕт, Левка?

Хĕрачасем, Петьăна ҫыпăҫмаллипех ҫыпăҫнăскерсем, астуман та: мотоцикла тĕренкĕҫсем ҫине лартакан, хăйсемпе пĕр класра вĕренекен ача леш енче юлташĕ те пур иккен.

— Ырă каҫ пултăр, хĕрсем, — терĕ вăл, рюкзакне пĕр хулпуҫҫи ҫинчен теприн ҫине куҫарса, кубинецсенни пек беретне аллипе тĕртсе илсе. Лайăхрах курас тесе, Надя ун патнерех пычĕ те тĕлĕнсех кайрĕ: Петьăн юлташĕ Петя сăнлах-мĕн! Тунсăхлăрах тата кăшт лутрарах пулнăран ҫеҫ вăл Петьăран уйрăмрах пулас.

— Кĕҫех каятпăр-и? — Петя еннелле ҫаврăнса тăчĕ палламан йĕкĕт.

— Ĕлкĕретпĕр-ха. Пит ытлашши ан васка, Лева.

— Эпĕ ирхине улттăра вĕҫсе каятăп.

— Аэродрома ҫул лайăх, ĕлкĕретпĕр. — Петя хура ҫăра ҫӳҫне вирелле сăтăрса илчĕ. Те чăнах та пĕтĕм пĕлнĕ кĕвви пуҫĕнчен тухса вĕҫнĕ, те урăх сăлтавпа, паян купăс калас хавасĕ ҫук унăн. Баяна вăл тытса та пăхмарĕ тесен, тĕрĕсех пулмĕ, аллине илчĕ ăна вăл, анчах... Хăй лартса килнĕ палламан ҫамрăка пырса пама кăна иккен. Лешĕ хирĕҫлесе-туса тăмарĕ: инструмент чĕнĕсене хăйне юрăхлă майларĕ те меллĕрех вырнаҫса ларчĕ, пӳрнисене вĕрсе ăшăтса илчĕ, унтан вĕсем клавишсем тăрăх чупса кайрĕҫ.

Ыттисем пекех, Надя та музыкантăн кĕвĕ пуҫлас умĕнхи хăтланкаларăшне сăнарĕ. Уйăх ҫаплах куҫне чарса пăхать-ха. Ҫывăхри ращара каҫса кайсах паҫăрхи кайăк юрă шăратать. Надя куҫĕсемпе уйăх ҫинелле, унтан айлăмри хирсем ҫинелле йĕрлесе пăхрĕ. Мĕн тери уяр та ăнланмалла мар тĕнче... Сасăсăр музыка, илтĕнми музыка ҫупăрлать чĕрене. Таҫта инҫетре вăл, ҫывхарать... Акă! — Карт сикрĕ Надя. Таврара вăл туйнă мелоди калама ҫук хĕрӳллĕн, питĕ вăйлăн, уҫҫăн, ҫав тери кăмăла

çĕклентермелле янăрама пуçларĕ. Ку палламан çамрăкăн пӳрнисем клавишсем тăрăх чупса кайнă самант пулчĕ. Никам та ăна ташă кĕвви каламаншăн кӳренмерĕ.

Вĕрин сывлать баян, кĕвви те, ăна калаканĕ те юмахри пек туйăнаççĕ. Надя çак музыкăна аслă асамçă Моцарт, вилĕмсĕр Моцарт, хирсемпе вăрмансенчен, тусемпе шывсенчен, ытармалла мар çут тĕнчерен илсе, çынсене парнелесе панине пĕлмест. Тен, ăна ташă площадкине пынисенчен нумайăшĕ пĕлмеççĕ-тĕр. Надя туять: ку музыкăна никам та çырман, вăл ун чĕринче çуралчĕ, кĕçĕр, халь... Кĕвĕ паçăрах ĕнтĕ урăххипе улшăннă. «Хурăн». Надя аллинче те — хурăн... «Шкул вальсĕ». Мĕн тума ку çамрăк йĕкĕт вальссен хумĕсене ытларах кăмăллать вара? Мĕншĕн ун сăнĕ ыттисеннинчен уйрăм: тунсăхлă, темле кулянуллăрах?

Надя ташламасть. Айккинче, решетке çумĕнче, тăрать. Таçтан халиччен ниççан та тĕл пулман, сăнĕпе Петя Максимов майлă çамрăк килсе тухрĕ. Хăйпе пĕрле тĕлĕнмелле ырă музыка тĕнчи илсе килчĕ. Петя авă, калаçма юратсах каймасть пулин те, Зинăпа çаврăнать. Пурте телейлĕ.

Надя ташламасть. Вăл уйăха кӳренчĕклĕн пăхса илчĕ, çӳлтен, пуç çинчен, иртекен самолетăн симĕспе хĕрлĕ çутине тинкерсе ăсатрĕ.

— «Ирхине улттăра вĕçсе каятăп», — терĕ вăл такама витленĕн.

2

Август. Надьăсен класĕ тăххăрмĕшне куçнă. Каникулра колхоза пулăшаççĕ. Бригадир вырăнти радио тăрăх наряд панă чухне 9-мĕш «А» класа пĕрремĕш бригадăна кайма ыйтрĕ. «Ĕçлекен çĕре леçекенĕ Павăл пичче, Максимов, пулать», — терĕ.

Шкул ачисем радиоузел умĕнче машина кĕтеççĕ. Класĕпех кунта, Петя çеç çук. Ашшĕпе ларса килет ĕнтĕ.

Надя ĕç патне тренировка костюмĕ тăхăнса янă. Шурă явлăкне чăвашла çавăрса çыхнă. Аллинче — витре. Тăххăрмĕш класс тĕп йĕтем çине тырă тасатма каять.

Ачасем, тырă пăтратмалли йывăç кĕреçисене пăрахса, пĕрпĕринпе пытанмалла выляма тытăнчĕç. Унччен те пулмарĕ, тăкăрлăкран грузовик сиксе те тухрĕ. Пурте хаваслăн кăшкăрса ячĕç.

— Павăл пичче, Максимов!

Грузовик вĕҫтерсе ҫитсе ачасен умне вĕҫкĕннĕн чарăнса тăчĕ. Кабина уҫăлчĕ те, унтан Павăл пичче мар... Петя тухрĕ. Никам та мар, ҫав хăйсемпе пĕрле вĕренекен, атлетăнни пек хул-ҫурăмлă Петьках.

— Пире эсир каҫарăр, атте чирлесе ӳкрĕ. Механик машина шанса парасшăн марччĕ мана, пиччен прави пуртан ҫеҫ...

Петя чиканăнни пек хура та ҫăра ҫӳҫне яланхилле вирелле сăтăрса илчĕ. Ҫав вăхăтра кабинăн тепĕр алăкĕ уҫăлчĕ те... Надя ҫуркунне курнă ҫамрăках тепĕр хут курчĕ. Сăнĕ ҫавăн чухнехи пекех тунсăхлă, ывăннă майлăрах. Ав кам иккен вăл! «Пичче» тет ăна Максимов Петя.

Йĕкĕт куланҫи турĕ.

— Аван-и, ачасем?

— Сывах, сывах. Хăҫан ҫитрĕн, Лева?

Левка кабинăран ҫĕре анса тăчĕ.

— Ҫĕркаҫ вунпĕр сехетре.

— Нумай тăрасшăн-и?

— До шести вечера, — вырăсла каларĕ Лева.

Максимовсен амăшĕ вырăс, ашшĕ чăваш пулнипе, ҫемьере чылай чухне вырăсла калаҫаҫҫĕ. Ачисем вара ял ҫыннисемпе яланах чăвашла пуплеҫҫĕ. Левки, килĕнче сайра пулать те, тепĕр чухне асăрханаймасть, пăтраштарать.

Хĕрачасем Петьăна ҫавăрса илчĕҫ.

— Ларт пире кабинăна.

— Миҫен? Вуннăн юрамасть.

— Виҫҫĕн.

— Юрать. Лева, эсĕ — кузова!

Машина ҫил кăларса урам тăрăх вĕҫтерчĕ. Аван тыткалама вĕреннĕ иккен машинăна шофер ывăлĕ.

Левăн кузовра Надя ҫумне ларма тӳр килчĕ.

— Эсир мĕн ятлă? — терĕ вăл ăна.

— Надя... Бурьянова.

— Аван ят.

Урăх нимĕн те каламарĕ. Машина йĕтем ҫине ҫитсе чарăнсан, Лева темиҫе хĕрачана анма пулăшрĕ. Надя хăех анчĕ. Урăх пĕрре те Лева патне пымарĕ. Лешĕ кăнтăрлаччен водитель пулса ҫӳрерĕ, Петя — кузовра, грузчик; кайран Лева тырă тасатакан машина патĕнче ĕҫлекелерĕ те айккине кайса блокнот ҫине вăрахчен темĕн ҫырчĕ.

— Мĕн туса çӳрет вăл? Мĕн çырать? — ыйтрĕ Люся Егорова Надьăран. — Çав тери вăйлă хăй, грузовик çинчен антарнă чух мана пукане йывăрăшне те хумарĕ.

Надя чĕнмерĕ.

— Мĕн пулнă сана, эсĕ йăлтах сăнран ӳкнĕ?

Надя каллех чĕнмерĕ. Йăвашшăн кăна кулса илчĕ. Кăштран акă çапла каларĕ:

— «До шести вечера». Темле вĕçкĕнскер.

Машинăпа Петя çитсе чарăнчĕ. Çӳçĕ хăйĕн çамки çумне çыпăçнă, пичĕ тăрăх тар юхать. Радиатора шыв ячĕ те класĕ патне пычĕ.

— Ну, ĕçсем мĕнле? Левка ăçта?

— Авă, тырă кăшăлĕ çинче темĕн çырать.

— Ăм-м... «темĕн» мар, репортаж пулĕ-ха. Командировкăна килнĕ, кӳршĕ района. Çула май киле кĕчĕ.

— А кам вара вăл?

— Студент, журналиста вĕренет.

— А-а...

— Миçе сехетрен киле каятпăр, Петя?

— Ывăннă пулсан, халех юрать. Эпĕ каçсăр каймастăп-ха. Лева таврăнчĕ.

— Манăн каймалла. Киле çитерсе хăвар çула майăн. Сывă пулăр...

Хĕвел, теме сиссе, чăтмалла мар хытă хĕртет. Тăххăрмĕш класс аллине, тутрине сĕлтсе юлчĕ. Унта Надьăн тутри те пур. Грузовик тĕтĕм пек тусан мăкăрлантарса сăрт хыçне пытаничченех сулчĕ вăл тутрипе. Сасăсăр музыка, илтĕнми музыка çупăрлать чĕрине. Таçта инçетре вăл. Çывхарать... Çитрĕ! — Картах сикрĕ Надя. Унăн тути акă мĕн пăшăлтатрĕ:

— «До шести вечера». Яланах çавăн пек.

3

Ку урок Максимовшăн пĕр ĕмĕр тăршшех туйăнчĕ. Учитель класран тухса пынă вăхăт вара икĕ ĕмĕре те çитрĕ пулĕ. Вăл (Максимов ĕнтĕ) тухса шăвăнма çеç тăнăччĕ:

— Петя, виç урок хыççăнах ăçта васкатăн? — тени пырса кĕчĕ хăлхине. Куна Бурьянова ыйтать-мĕн.

— Пĕлетĕн-и, Надя, пичче килет, виçĕ кунлăха, — шăппăн пĕлтерчĕ Петя. — Мотоциклпа Чистай аэродромне çитмелле.

— Петя.

— А?

— Манăн аэродром курас килет те çав...

Надя çапла каланă хыççăн Петя хăрах куçне мăч хупрĕ, вăрăммăн шăхăрса илчĕ.

— Итле-ха, Петя, эпĕ те пырам-и санпа?

— Атя. Хаваслăрах пулĕ.

Петя Максимов, вĕренӳре отличник пулнине пăхмасăрах, «питĕ кирлĕ ĕç» сиксе тухсан, урокран «вĕçессине» ытлашши тиркесех каймасть. Çакна шкулта çĕнĕ япала вырăнне шутламаççĕ. Хальхинче вара хăй «çĕтнипе» кăна çитмен, Надя Бурьяновăна та ертсе тухса кайрĕ. Надьăн амăшĕ, истори преподавателĕ Любовь Николаевна, пĕлсен, куншăн пĕтерет ĕнтĕ вĕсене...

Кунĕ сулхăн. Тӳперен пирвайхи юр мамăкĕсем майĕпен вĕçе-вĕçе анаççĕ. Вĕсем ана-ана выртнăçем çĕр пичĕ шуралса, хитреленсе пычĕ.

Амăшĕ çуккине пĕлекен Надя килне кĕрсе хĕрсем тăхăнаканкан хăлхаллă çĕлĕк, кĕрĕк илсе тухрĕ. Петьăна сахăр катăкĕсемпе сыр тыттарчĕ.

— Чик, кирлĕ пулĕ, — терĕ вăл, йĕри-тавра шиклĕн пăхкаласа.

Мотоциклне Петя Надьăсен кӳршинчех тăратнă-мĕн. Вĕсем сăпкаллă «ИЖ»-а наччасах урама тĕртсе тухрĕç. Тр-р-р! турĕ те мотор ĕçлеме те пуçларĕ.

— Брезентпа пĕркенсе лар! — Петя сăран шлемне, алсине тăхăнчĕ, куçлăхне майлăрах лартрĕ.

Шоссе çине тухсан, мотоциклĕ вĕсен тата хытăрах ыткăнчĕ. Пирвайхи юр таврана шап-шурă çитĕпе витет. Çăвать шурă юр, çăвать. Мамăксем вĕççе аннă май, инçетрен-инçетрен, чĕре патнелле, хăватлăн çĕкленекен мелоди хăвăрттăн çывхарать. Надя куçĕ умне тунсăхлă, ывăннăрах сăнлă çамрăк тухса тăрать. Çӳçĕпе куçĕсем унăн руль тытса пыраканăнни евĕрлех.

Пысăк хăвăртлăхран пулакан çил Надьăна çӳçентерет.

— Петя, миçе çулта Лева? — брезентпа лайăхрах пĕркеннĕ май кăшкăрать вăл.

— Вунсаккăрта.

— Вăл мĕнле кĕвве питĕ юратать?

— Моцарт çырнă рондăна! — тавăрать нимĕн те сисмен мотоциклист.

1963

ÇУЛÇĂСЕМ ТĂКĂНАÇÇĔ

Ăш вĕçнĕ пирки эпĕ каллĕ-маллĕ утатăп. Кантăкран урайне уйăх çути ӳкет. Чӳрече каррисем те тĕрĕленсе урайне ӳкнĕ. Уйăх çути темле кăвакрах, чуна шăнтакан тĕслĕ. Тулта тапхăр-тапхăр кĕрхи çил ассăн сывласа иртет, пăшăрханать çил, темшĕн хытă хуйхăрать. Эпĕ çапла алăкăн-тĕпелĕн утсан-утсан, анне вăранса кăмака çинчен сас пачĕ:

— Пĕрер курка шыв ĕç, пуçу сивĕнтĕр. Мĕн, вăрă пек, тĕттĕмре çӳретĕн?

Анне ахлаткаласа, ĕхлеткелесе кăмака çинчен анма тăчĕ, урипе пукан шырарĕ. Эпĕ пукан пырса лартрăм.

— Хăй çут-ха, ӳксе пуçа та çурăн капла... — текелесе, алăка хăлтăртаттарса, пăлтăра тухрĕ. Пăлтăрта темрен такăнчĕ пулмалла та: — И хĕртсурт, кам çакăнта тăма хушнă сана, — тесе, тем кĕмсĕртеттерчĕ, тем ӳкерчĕ. Унтан килкартинелле анчĕ: килкартне тăрăххăн выртакан валашкана урлă çавăрса лартрĕ, мунча патнелле кайса килчĕ, çил уçса пăрахнă пахча алăкне хупса килкарти варринче чарăнчĕ — уйăх çинелле ывăç тупанĕ айĕнчен пăхать иккен.

— Хă, апла-çке, апла...

Анне мĕн мăкăртатать-ши тесе, пусма çине тухса тăтăм:

— Мĕскер — «апла»? Кампа калаçатăн?

— Йăмăкупа, Марьепе.

— Марьепе?

— Марьепе çав.

— Анчах та вăл вунвиçĕ çул каяллах, тăхăр уйăхра чухнех вилнĕ тетĕн-çке?

— Камшăн вилнĕ пуль те, маншăн вилмен...

Эпĕ ним калама аптăраса анне çине пăхатăп: аллисене çурăм хыçне тытнă вăл, çĕре çирĕп пусса тăнă.

— Паçăр кăна тĕлĕкре куртăм — Уйăхпи пек йăрăс пӳллĕ, — анне уйăх çинелле аллипе тĕллесе кăтартрĕ, — кĕвентинчен ик витре çакса çăлалла утрĕ пек. Çивĕчĕсем вă-ăрăм.

Нихçан çука çакăн пек юмахлама тапрату мана шалтах тĕлĕнтерчĕ. Анне: — Кĕр ĕнтĕ, шăнса ан тăр, — тесе пӳртелле утсан çеç эпĕ вăл кĕçĕр тĕлĕк курма мар, куç та хупманнине тавçăрса илтĕм.

Анне, анне...

Пирĕн ăш вĕҫсен, санăн та ăшунта ҫил-тăвăл тапранать иккен. Эпир савăнсан — савăнатăн, эпир хурлансан — хурланатăн, чирлесен — чирлетĕн; эпир ҫут тĕнчерен кайсан та эсĕ пирĕнпе чĕрĕ ҫынпа калаҫнă пекех калаҫатăн иккен. Хамăр вилсен те эпир — санпах.

Ҫапла шухăшласа, манăн ăш вĕҫни лăпланмарĕ, пушшех те алхасса кайрĕ. Туятăп ĕнтĕ: анне пӳрте кĕчĕ, ассăн сывласывла, хăй ҫутмасăрах манăн арăш-пирĕш тусăнса выртакан вырăна майларĕ; пукан, арча, чӳрече, сĕтел ҫинче тĕлли-паллисĕр сапаланса выртакан кĕнекесемпе хаҫат-журналсене, урайне ҫура-ҫура пăрахнă хутсене пуҫтарса хучĕ, таса хут листисене — пĕр ҫĕре пухса тирпейлерĕ. Пĕртен-пĕр ачи те пулин «этемле тĕрĕс-тĕкел» пулманран мĕн чуль кулянмасть-ши вăл. Ара, ялта кам ачи темиҫе ҫулта пĕрре киле таврăнса ҫапла ҫĕрĕ-ҫĕрĕпе куҫ хупмасăр хăйне хăй ҫиет? Ҫамрăклах хăйне хăй пĕтерсен, ухмаха та ерсе кайĕ. Ҫамрăк чухне ăна ҫывăрас, канас пулать, ватăлăхра та ыйхă вĕҫсе нумай терт курасси пур-ха. Ара, ҫавăн чуль вĕренсе те, ăс кĕрес вырăнне, ухмаха ҫеҫ тухса пырать пулсан, мĕн ыррине кĕтмелли, мĕн кĕтмелли? Ăҫтан пуҫ чăттăр... Пĕлетĕп ĕнтĕ: анне ҫапла каласа, воспоти памилуй тесе, хуйхăрса ҫӳрет; аннене тата хама шеллянипе кăмăл пушшех те пăлханать, пуҫ шавлать, йĕрес килет. Ҫакă вăл ăш вĕҫнин тĕп ҫăлтавех те мар-ха. Ҫăлтав тени вăл нихăҫан та пĕр-пĕччен пулмасть: тĕп пысăк ҫăлтав ҫумне яланах пĕчĕк-пĕчĕк ҫăлтавсем хушăнаҫҫĕ. Халĕ те, акă, мана кĕрхи ҫутă-сивĕ уйăх, кассăн-кассăн иртекен кĕленче чĕреллĕ ҫил пусса тăраҫҫĕ. Чуна хĕссе, кăмăла арман чулĕ пек пусарса. Анчах тĕп ҫăлтавĕ кусем мар-ха. Туясса эпĕ ăна лайăх туятăп, халлĕхе уйăрса кăна илейместĕп.

Эпĕ, ниҫта ларса-тăрса канлĕх тупайманскер, йывăҫ пахчине кĕтĕм. Ҫулҫă тăкăнать. Пĕр чарăнмасăр, вĕлтĕртетсе те ҫаврăнса. Чăштăртатать, ҫатлатать ҫулҫă. Кăнтăрла та ҫаплахчĕ. Хурăн, пилеш, ҫĕмĕрт, хурама, улмуҫҫи ҫулҫисем вĕҫетчĕҫ. Пĕтĕм ҫурт тавра. Пирĕн кăна мар, кӳршĕсен те, кӳршĕсен кӳршисен те. Урамĕпех, ялĕпех... Хĕрлĕ, сарă, шурă, симĕс, кăвак тата тем тĕрлĕ ҫулҫă. Юр ҫунă пекех ҫăвать. Эпĕ лайăхрах пăхрăм та ҫав тĕрлĕ тĕслĕ «юр» витĕр кĕтмен ҫĕртенех пурнăҫăмри пĕр саманта куртăм. Куртăм та ăнлантăм. Акă ăҫта иккен ăш вĕҫнин тĕп ҫăлтавĕ! Акă ăҫта! Ҫулҫă тăкăнать... Ҫулҫă тăкăнни вара...

Уйăх, уйăхпи, йăмăк... анне... кĕрхи синкерлĕ каç... Шăвать-
çке вăхăчĕ, шăвать. Çĕр иртет те кун пулать. Ак эп шкул
пĕтерни те тăватă çул çитрĕ. Çапла... Кашни çулах çулçă çурă-
лать, шавлать-шавлать те тăкăнать. Халĕ ĕнтĕ, тем тума, çулçă
çурăлни мар, тăкăнни çеç куçра, çулçă хурланса чăштăртатни
çеç хăлхара. Вунвиçĕ çул каялла вилнĕ йăмăк та часах вунтă-
ваттăра пулать.

Йăмăка аса илтĕм те куç умне ачалăхри пĕр кĕрхи сивĕ
кун тухса тăчĕ. Пĕчĕккĕ-ха эпĕ, пиллĕксенче пулĕ. Анне те
макăрать, мăн акка та йĕрет, кӳршĕри Марук аппа та ĕсĕклет.
Пӳрт тулли çын — пурте макăраççĕ.

Виçĕ эрне пĕр чарăнмасăр кăшкăрнă пĕчĕк Марье сасартăк
шăп пулсан, малтан эп тĕлĕнсе çӳрерĕм. Аннерен: — Халĕ
ĕнтĕ Марьен варĕ ыратмасть-и? — тесе ыйтрăм. Анне, чыхă-
на-чыхăна ĕсĕкленипе нимех те каламарĕ, пуçăмран шăлса
илчĕ çеç. Юнашар тăракан кӳршĕ Марук аппа: — Ыратмасть
ĕнтĕ, урăх ыратмасть, — терĕ, — инçе каять пиртен, ыратман
çĕре каять.

Марьене тупăка выртгарсан тин, эпĕ йăмăка чăнах та таç-
та илсе каяссине пĕтĕм ӳт-пӳпе туйса илтĕм, хаярăн çухăрса
ярса урай тăрăх йăвалана-йăвалана макăрма тытăнтăм. Туртка-
лана-турткалана йĕп-йĕпе тара ӳкнĕскере, пите сивĕ шывпа
уçăлтарнă хыççăн, тумлантарса тула илсе тухрĕç. Тулта пи-
лешсенчен, хурăнсенчен, çĕмĕртсемпе улмуççисенчен çулçă юрĕ
çăватчĕ. Вĕлтĕртетсе те çаврăнса, чăштăртатса та çатлатса. Пĕтĕм
çурт тавра. Пирĕн тавра кăна мар, кӳршĕсем тавра та. Ӳкнĕ
çулçăсене çил шăхăрса, ахлатса урам тăрăх хăваласа каять.

Мăн аккасем патĕнче эпĕ çывăрса кайнă. Тепĕр кун мăн
акка çĕнĕ кĕпе çĕлесе пачĕ. Тата тепĕр кунне киле пытăм та
пӳртре çынсем те, тупăк та, пĕчĕк йăмăкăм Марье те çукчĕ.
Хура кĕпе тăхăннă, хура тутăр çыхнă аннерен: «Марье ăçта?» —
тесе ыйтрăм та, «Инçе илсе кайрĕç, пысăклансан килет», —
терĕ. Пĕр-икĕ çул кĕтрĕм те ĕненме пăрахрăм. Шкула каяс
умĕн вара кӳренсе аннене çапла каларăм: «Марье вилнĕ, вилнĕ
çынсем нихçан та чĕрĕлмеççĕ...»

Атте, вăрçăран питĕ япăхланса килнĕскер, тата маларах вилнĕ.

Анне «пысăклансан килет» тесе тĕрĕсех каланă иккен йăмăк
пирки. Унпах, аннепех-мĕн вăл халь те, — халĕ пĕчĕк пепке
мар ĕнтĕ, ӳссе çитнĕ çăлтăр куçлă, йăрăс пӳллĕ пике. Уйăх
çути витĕр вăл мана та курăнать. Тăкăнакан çулçă витĕр курă-

нать мана йӑмӑк. Уйӑхпа çулçӑ витĕрех эп хама та куратӑп. Йӑмӑка кĕте-кĕтех, çулçӑ юрне-çумӑрне çулсерен итле-итлех эпĕ канӑçа яланлӑхах çухатрӑм. Манӑн чун, вилнĕ йӑмӑк пирĕн пата нихçан та килмессине пĕлекен пулнӑ хыççӑн та, пĕрмаях ӑна кĕтет, ӑна шырать. Çулçӑ тӑкӑнма тапратсан — пушшех те çапла.

Эпĕ калиткене уçса урама тухрӑм. Леш касра йытӑ вĕрет, вӑрӑммӑн йынӑша-йынӑша илет. Çур çĕр иртсе пĕр сехетсем те пур-ши элле? Пĕр-ик çĕрте автансем сас пачĕç. Вара анчӑк та, автансем те шӑпӑртах пулчĕç. Çил çеç чуна хӑратмалла сывла-сывла ярать, такама ӳпкелет, такама кӳренет. Уйӑх çеç, сивĕ те янкӑсскер, янкӑр тӳперен шӑрантарса пӑхать; хуйхӑратпӑр-и эпир, кулянатпӑр-и, çĕр çывраймастпӑр-и, ун ĕç те çук, пӑхать те пӑхать. Çулçӑ çуратпӑр-и эпир е çулçӑ тӑкатпӑр-и, уйӑхшӑн пĕрех, — пӑхса пултӑр. Уйӑх çутипе шкул çивиттийĕн кӑнтӑр енĕ кĕленче пек ялтрать. Шкул сачĕ, унти аллейӑсем курӑнаççĕ. Эпĕ тӑватӑ çул каялла вĕренсе тухнӑ шкулӑн пысӑк сачĕ... Эй, çутӑ тĕнче, мĕншĕн эсĕ ытла та хӑвӑрт çаврӑнатӑн-ши?

Çил тепĕр ӑстрӑм вĕрсе иртрĕ те таçта кайса çухалчĕ. Сад çумĕпе пынӑ май, сасартӑк кулӑ сасси илтрĕм. Каллех — шӑп. Татах хытах мар кулса илчĕç. Садра пулас. «Камсем кулаççĕ-ши?» — тесе, шала кĕретĕп. Йывӑç айĕнчи сак çинче лараççĕ иккен.

— Валя... çитет алхасса, плащна ман çинчен веçех туртса илтĕн, апла-тӑк эп киле каятӑп, — тет хĕрача сасси. Тепĕр сасси те хĕрачаннах, кӑшт хулӑнрах çеç:

— Ай-уй, ан кай, ан кай, шеллес ĕнтĕ, кил çумарах, кил, кил!

Малтанхи сасӑ каллех йынӑшса ярать:

— Ва-аля!

Эпĕ пырса тухсан, вĕсем шӑпӑртах пулчĕç.

— Мĕн туса ларатӑр кунта çĕр хута?

— Ваççаран тартӑмӑр.

— Мĕнле Ваççаран?

— Хамӑр класри Ваççаран! Кино тин пĕтрĕ те, Ваççа...

— Ну, юрĕ, — терĕм эпĕ, — хӑвӑр кам пулатӑр-ха эсир?

— Пĕл. Эпир сана пĕлетпĕр — Марье пиччĕшĕ. Ă-ă, Марье вӑл халь çук-ха ĕнтĕ, пĕчĕклех вилнĕ, анне калать: эпĕ сирĕн Марьепе пĕр кун çуралнӑ, тет. Манӑн ят та Марье. Эпĕ Леон-

тьевсен. Ак ку — Тарасовсен, Валя. Пурăннă пулсан, Марье те пирĕнпе çӳремеллеччĕ, вĕренме те пирĕнпех вĕренетчĕ ĕнтĕ, пĕрлех ларнă пулăттăмăр. Санăн та йăмăк пулатчĕ, пирĕн те — тантăш. Вăл халь те пирĕнпех-ха та... анчах та, мĕнле калас... Якку пичче, сана йăмăксăр пĕрре те килĕшмест. Сан йăмăку пур пекех туйăнать, таçта кайнă пек те темшĕн халĕ те таврăнаймасть пек.

— Мĕншĕн ун пек шутлатăр?

— Пире хамăра та пиччесем пур пекех туйăнаççĕ. Пирĕн те пиччесем пулмаллах, таçта кайнă, ай кичем вĕсемсĕр, тахçан таврăнаççĕ ĕнтĕ, вĕсем таврăнсан Ваççа та текех хăратаймĕччĕ.

— Таврăнаççĕ, — терĕм эпĕ татăклăн, — таврăнаççах. Кĕтме çеç ан пăрахăр. Анчах та ăçтан воображени текенни çапла терех вăйлă ĕçлет сирĕн?

— Во-ображени. Мĕн вăл воображени?

— Ну, эппин, — пуçра сăнарласа куç умне кăларса тăратас пултарулăх.

— Çук, çук, нимле воображени те çук пирĕн. Вăл пурри мĕнрен курнать вара? Пире пичче кирлĕ, пичче. Пичче пулсан, питĕ аван пулмалла.

Çапла каларĕç те вăтанчĕç хăйсем. Çинçерех сасăлли, ури çине тăрса кĕпине, çӳçĕнчи шурă хăюне тӳрлетрĕ те, çӳçне çамки çинчен сирсе, ман умах пырса тăчĕ:

— Пире киле ăсатса яр-ха, Якку пичче. Атту Ваççаран хăратпăр.

— Эх, пикесем... хăвăр урама çӳретĕр, каччăран хăратăр.

— У-у, мĕнле каччă вăл Ваççа, усал! Эпир саккăрмĕш класра çеç-ха, неччу пирĕн хыçран çӳреме.

— Эсир хăвăр та питĕ усал-çке!

— Эпир санпа, Якку пичче, усал пулмăпăр.

Хĕрачасем мана хулран çавăтрĕç те, урамалла утрăмăр. Марье ятли чарăна пĕлми каласать, Вали итлерех пыма юратать. Юрă та юрласа кăтартрĕç, такмак та каласа пачĕç, шӳтлесе те илчĕç. Мана «пичче» çине «пичче» хураççĕ. Тăват çул ялта пулманскер, эпĕ çак хĕрачасем хăш хушăра ӳссе кайнинчен шалт тĕлĕнсе пыратăп. «Йăмăксене» ăсатма пысăк ялăн леш вĕçне çитсе килмех тӳр килчĕ. Каялла таврăннă чух кĕрхи çилпе çулçă тăкăнни çуркунне садсем çеçке çурнă пек туйăна пуçларĕ темшĕн. Уйăхĕ те çӳл тӳперен çурхилле шăрантарса пăхать пек. «Йăмăкăмсем, — тетĕп хам, — йăмăкăмсем... Пурнăçăр

ҫутă пултăрччĕ, ĕмĕтĕрсем ҫитсе пыччăр. Хам та сирĕншĕн тăван пиччĕр пекех пулма тăрăшăп».

Эпĕ савăнăҫлăн шăхăркаласа пырса кĕнĕрен-и, кăмака ҫинчен анне пуҫне ҫĕклесе пăхрĕ.

— Ăҫта ҫĕтсе ҫӳретĕн ҫĕр хута? — терĕ вăл мăкăртатса, эпĕ ытла та хаваслăран кăмăлсăр пулса. — Элле лавкка будкине Якур хуралҫă патне ҫитсе килтĕн-и? Ĕҫ ĕнтĕ, ĕҫ. Тата ҫавна курмалла юлчĕ иккен-ха, эх, пурнăҫ...

Анне патне кăмака ҫине улăхса лартăм.

— Шкул садӗнче Марье йăмăка куртăм, — терĕм, — хаваслă хăй, юрă та юрласа кăтартрĕ, такмак та каласа пачĕ, шӳтлесе те илчĕ.

Анне юнашар тăрса ларчĕ.

— А-а... леш вĕҫри Валюшпа Маруҫ пуль-ха... виҫҫĕн пĕр кунта ҫуралнăччĕ. Ха, такки сĕмленме пăрахмаҫҫĕ иккен. Эс ҫук чух килкелетчĕҫ-ха, халĕ тем килми пулчĕҫ, те санран ютшăнаҫҫĕ...

— Тек ĕнтĕ ютшăнмаҫҫĕ, — терĕм эп аннене, ĕнентерсе. — Малашне кашни кунах килме пулчĕҫ. Виҫĕ йăмăк манăн халь. Вунвиҫĕ ҫул каялла куҫ хупни те вĕсемпех. Тулта та, садсенче, ҫулҫă тăкăнма чарăннă, йывăҫсем ҫеҫке ҫураҫҫĕ, уйăх янкăр тӳперен ҫурхилле шăрантарса пăхать, ҫил ăшă та ачаш. Тĕлĕрсе илсем, анне, ҫутăласси инҫе-ха...

Пӳртре шăп. Кăмака хыҫĕнче шăрчăк чĕриклетет. Тата анне лăпкăн та тикĕссĕн сывлани илтĕнет. Аннем, ватă карчăк, хул ҫумне таянса, пĕр саманта кăтăш пулчĕ. Тĕлĕкĕнче вăл чечекри садсене, унта чупса ҫӳрекен шăнкрав сассиллĕ яштака та маттур хĕрне курать. Хĕрĕ, манăн йăмăк, уйăх ҫинчен ик витрепе шыв ăсса аннă пек...

1964

АСАМЛĂ ХУНАРСЕМ

Эверин каласа пани

Ĕлĕк манăн асатте Шупашкартан Хусана кайнă чух Мускава кĕрсе тухнă, тет. Мăнукĕн те ун пек самантсем пулкалаççĕ. Çĕнĕ Çула Хусанти туссемпе пĕрле кĕтсе илес ĕмĕтпе çула тухнăскер, эпĕ тепле майпа Шур Шыва пырса ӳкнĕ. Декабрĕн вăтăр пĕрмĕшĕнче кăнтăрла иртсен икĕ сехетре, Гурий тусăм каларăшле, хамăн «хӳхĕм кĕлеткене» сала урамĕсене кăтартса иртрĕм те çырманалла анма пуçларăм. Кунтан тăван ял — Анатри ял — пилĕк çухрăм, Хусантан вара — икçĕр утмăл.

Эпĕ ĕнтĕ хам Шур Шывран тухса çырманалла анни çинчен каларăм. Ĕçĕ унта мар, пысăк ялтан тухса çырманалла пиртен кам анман пулĕ. Ĕçĕ акă мĕнре: мана хирĕç пăтавкка пек пысăк витресем çакнă кĕвентеллĕ çын хăпарать. Тĕрĕсрех каласан, хĕрача. Унăн пуçĕнче çăлтăрлă çĕлĕк, çийĕнче — пакунлă бушлат, уринче... туфли. Эпĕ тĕлĕнсе хытса тăтăм: кăсăкла тум...

Хĕрача питĕ асăрханса пуса-пуса хăпарать. Бушлатне йӳле янă. Пĕррелле çивĕтлесе малалла уснă сарă çивĕт тĕксĕм платье çийĕпе юхса тăнăн туйăнать. Платье çийĕпе мар, çивĕт мар, хура вăрмансен хушшипе ылтăн çырма сиккипе чупать. Хĕрача мана асăрхамасть-ха, тĕреклĕрех пусма тăрăшса, текех сукмака тинкерет. Инçе-ха хăпарса çитме. Ункайсăр пусмассерен шăппăн кулса илет.

— Салтак юлташ, — терĕм эпĕ, чăтăма çухатса, ун умнех пырса тăрса. — Сăнатăп та, сирĕн ĕçсем чаплах мар пек.

— Малалла мĕн калăр? — ыйтрĕ «салтак», ман сăмаха татса. Харсăрлăхăм самантрах таçта кайса çухалчĕ. Чĕлхене «çăтса ятăм». Хĕрача пуçне çĕклесе мана куçран пăхсан çапла пулчĕ ку. Куçсем, куçсем... Куçсем пирки мĕн чул чаплă та мухтавлă йĕркесем çырман пулĕ, мĕнпе кăна танлаштармаççĕ вĕсене. Хура пĕлĕт айĕнчен шуса тухнă икĕ шултра çăлтăрпа, тăрă та çутă çăлкуçĕпе, вăраххăн çеçке çуракан юмахри чечекпе тата ыт. те.

Эпĕ вара хальхинче акă мĕн куртăм: хура плащпа пĕркеннĕ икĕ асамăç хунарсемпе чунăн тĕпне витĕрех çутатса пăхрĕç. Чылай çутатса тăчĕç. Унтан хунарĕсене пĕр вăхăта харăс

сӳнтерчӗҫ те каллех ҫутатрӗҫ... Кун пеккине эпӗ курманччӗ. Эпӗ вӑл куҫсене, ҫав асамӑҫсемпе вӗсен хунарӗсене, ҫӗнеймерӗм. Чылайран тин:

— Салтак юлташ, — терӗм тӗнчери чи анкӑ-минкӗ ҫын пек, хам сӑмахсенчен хам ҫӗр тӗпне анса каясла вӑтанса, — сире пулӑшмалла мар-и?

— Мӗнех вара, кӑмӑлӑр пулсан, пулӑшӑр, — юрларах каларӗ кӗвентеллӗ хӗр.

Сӑрт хыҫӗнчен е вӑрман хыҫӗнчен уйӑх час-часах ҫӗклене нет, вӑл ҫӑл патӗнчен салтак тумӗпе хӑпарнине курманччӗ-ха эпӗ, паян куртӑм; кӑнтӑрла иртсе икӗ сехетре ҫырмаран хӗвел тухнине те курманччӗ, паян курма тӳр килчӗ. Хунарпа ҫутатса халиччен никам та манӑн чун тӗпне витӗр ҫунтарса илменччӗ-ха, паян ҫунтарчӗҫ... Хальччен эпӗ эрех ӗҫмесӗрех ӳсрӗлсе курнӑ, кун пек хытӑ ӳсрӗлменччӗ.

Кӗвентеллӗ хӗрача ҫуртсемпе хуплансан та, ҫӑвара карса чылайччен юпа пек хытса тӑтӑм. Киле ҫитичченех тӑна кӗреймерӗм. Юлашкинчен эпӗ акӑ мӗн патне пырса тухрӑм: кӗҫӗр Ҫӗнӗ Ҫул бал-маскарадне Шур Шыва килетӗп.

...Шур Шыва каялла таврӑннӑ ҫӗре сехет чут кӑна вуниккӗ ҫитмерӗ. Ҫур ҫул килте пулманскере, анне малтан, киле пырса кӗрсенех, мунчана хуса ячӗ. Унтан таврӑнсан, варенипе чей ӗҫтерчӗ, хӑймапа икерчӗ ҫитерчӗ. Кӗҫех аттепе пӗртӑванӑн ывӑлӗ арӑмӗпе пырса кӗчӗ. Унтан аннен Павӑл кумӗпе Аниҫҫе куми кӗрсе тӑчӗҫ. Унтан, унтан... Кӗскен каласан, сисмерӗм те вун сехет ҫитсе тӑнине. Хӑнасемпе аран-аран сывпуллашса хӑвӑрт кӑна тумлантӑм та, аннене ялти клуба бала каятӑп тесе хӑварса, Шур Шыва тухса вӗҫрӗм.

Маскарада пырса кӗтӗм те, унта вуншар мулкач, мушкетер, упа, космонавт, Онегин, куҫӗсене хура маскӑпа хуплана ҫинҫе пилӗклӗ балерина, Хӗлмучи тата ытти тӗрлӗрен халӑх кӗшӗлтетет. Хайхи хӗрача бал-маскарада Юрпике тумӗпе килнӗ. Эпӗ ӑна йышра часах уйӑрса илтӗм.

— Офелия, — терӗм эпӗ пушар пек хӗрлӗ ҫӳҫлӗ пӗр ҫинҫешке «балеринӑна». — Каламӑр-ши, ҫав ҫӑлтӑрпа ҫурхи каҫ тӳпи сенкерӗнчен тӗртсе тунӑ кӗпеллӗ, сӳнми ӗмӗт пек ҫутӑ та таса сӑнлӑ яштака пике кам пулать?

— О, принц, — мана маска витӗр куҫран пӑхса хуравларӗ хӗрлӗ ҫӳҫ, — эсир ку таврара пачах пулман курӑнать.

— Пӗрремӗш хут.

Эпĕ кăшт тайăлса пушар пуçлă хĕрачана вальс ташлама чĕнтĕм.

— Эсир калама çук çăмăл ташлатăр-çке, принц, — чĕвĕлтетрĕ вăл манпа çаврăннă май. — Люся Алтынбаш та çăмăл та ăста ташлакансене питĕ хисеплет. Юрпике вăл — Люся Алтынбаш.

— Люся?

— Аха, Люся. Шур Шыври чи чаплă пике. Халĕ унпа ташлаканĕ, космонавт тумли, унăн каччи, ĕнер çеç салтакран таврăннă. Лутрараххи, маскарада Онегин пулса килни, Люся пиччĕшĕ.

Эпир елка тавра тепре çаврăнсан, хĕрача вăрттăн сасăпа çапла хушса хучĕ:

— Тĕрлĕрен калакансем пур: Люсьăна çураçса та хунă, тет, ĕнтĕ, шкул пĕтерессе çеç кĕтеççĕ, тет.

Эпĕ çакна илтмĕш пултăм, ăшăмра вара хамăн тăвăл çĕкленчĕ.

Вальс хыççăн фейерверк ячĕç. Провод чăшăлтатса çунса пĕтĕм енне ылтăн-кĕмĕл вут сирпĕтнине эпĕ хавассăр пăхса тăтăм. Фейерверк хыççăн халăх чарльстон «çунтарма» пуçларĕ. Эпĕ ташламарăм.

— Штраус. «Кăвак Дунай». Хĕрсем атьсене вальса чĕнеççĕ! — илтĕнчĕ оркестр вырнаçнă тĕлтен.

Эпĕ Люся патнелле васкарăм.

— Принц, — терĕç мана тăрăхласа, — эсир питĕрех те «асăрханса» тытатăр хăвăра.

Мана курсан, Люся кулса ячĕ. Эпĕ, те шурса кайрăм, те хĕрелсе, пĕлместĕп, мĕншĕн тесен хам сăна хам курма пултараймарăм. Люся реверанс турĕ. Унтан çăмăллăн çывхарса сулахай аллине ман хулпуççи çине хучĕ. «Кăвак Дунай» хумĕсем пире пĕтĕмпех çавăрса илчĕç. Анчах та эпир нумаях ташлаймарăмăр. «Почта» сасартăк усал хыпар илсе килчĕ. Вуласа пăхрăм:

«Кăтра пуç, ятна пĕлместпĕр, мĕншĕн тесен пуçласа куратпăр, Юрпике çывăхне урăх ан пырсамăр».

Эпĕ çÿçенсе кайрăм, тарăхнипе «вĕреме кĕтĕм». Çыраканĕсем часах хăйсем те çитрĕç.

— Каяр, Люся, — терĕ «космонавт» çемçе сасăпа, пикене пилĕкĕнчен çавăтса. Люся куçран чăрр пăхрĕ те пăрăнчĕ. Çав вăхăтра пĕтĕм зал манран кулнă пек туйăнчĕ. Эпĕ — анра-сухра.

Хама хам ниепле алла илеймесĕр тата тепĕр ухмахла ĕç туса хутăм: халăх маскарадран килне саланма тапрансан, сасартăк Люся умне «шăтса тухрăм». Вăл хăраса ӳкрĕ.

— Мĕн кирлĕ сире манран? — терĕ шăппăн. — Пăрăнăр, сире япăх пулать...

— Çамрăк çыннăм, эсĕ питĕ те тăнсăр-çке, — илтĕнчĕ хăлха патĕнчех паçăрхи сасă. Эпĕ Люся савнине, унтан пиччĕшне куртăм.

— Люсила, эс инçех ан кай, пире кĕтсе тăр. Эпир çак каччăран вăл кам иккенне ыйтса пĕлес тетпĕр.

Калама çук çемçе сасăра мĕн пытанса тăнине эпĕ аван ăнлантăм. «Вĕсем иккĕн, эпĕ пĕччен», — вĕлтлетрĕ пуçра шухăш. Мĕн вĕçне çитичченех паттăррăн хирĕç тăрас. Самбо, терĕм хама, ахаллĕн эпĕ вĕсене çĕнеес çук.

Люся пăрăнсан, савнийĕ тискерленчĕ.

— Кайрăмăр, — терĕ вăл мана тĕртсе ярса, — паллашăпăр.

Хĕрача инçе кайманнине эпĕ аван сисрĕм. Тарса хăтăлма пуçласан, вăл курассăнах, йĕрĕнсе пуçне пăрассăнах туйăнчĕ. Эпĕ паттăррăн çапăçса кĕрешӳрен çĕнтерӳпе тухма шутларăм.

— Ăçтан вĕçсе килнĕ кайăк çак эсĕ? — ыйтрĕ «космонавт», ман хулсене хыпаласа. — Э-э, вара мĕншĕн çаврăнса пăхмасăр тармарăн паçăр, май пур чух? Славик, эс кунтарах тăр, ачана ӳкме ан пар. Иккĕмĕш хут çапмашкăн шыраса тупма çăмăлтарах пултăр.

«Космонавт» калаçнă май эпĕ сăран перчеткене лайăхрах туртса тăхăнтăм. Ун лăпкă та наркăмăшлă сасси мана калама çук уртарса ячĕ. Ниепле те хама хам алла илейместĕп. Эпир Культура çурчĕн кĕтессине çитнĕ ĕнтĕ. Таврара пĕр чун та çук. Киле саланакансен сассисем аяккарах та аяккарах кайса пыраççĕ. Васкамасăр вĕçе-вĕçе анакан юр мамăкĕсем витĕр уйăх çутатать. Эпĕ йĕкĕтсем мана мĕншĕн халĕ те çапса ӳкерменнине лайăх пĕлетĕп: сиксе чĕтрекен çын çине пăхса савăнса, чунĕсене тăраничченех йăпатасшăн ĕнтĕ.

— Ӳкĕнмелле ан пултăр, — терĕм эпĕ хуллен.

— Вăрăмтуна. Ăçта сан мускулусем? Бицепс текеннисем? — «космонавт» сассине тата çӳлерех хăпартрĕ. — Акă сукмак, тӳрех Анатри ял еннелле каять, а ну пĕçерттер, живо!

Вăл мана хыçалтан тĕртсе-танкăлтаттарса пычĕ-пычĕ те чĕркуççийĕпе нăк! тутарчĕ.

— Вĕçтер! Ку таврара урăх нихçан та ан курăн.

Çапла каланипе тарăхнăскер, эпĕ шутсăр чăрсăрланса кайрăм.

— Акă, эппин, акă!

Салтакăн çĕлĕкĕ ыткăнса кайрĕ. Пĕр алăпа эпĕ çӳçрен çавăрса илнĕ иккен, тепĕр алă лаппин тӳртĕшпе мăйран, ыйхă артерийĕ тĕлĕнчен «çемçететĕп». Çакă питĕ хăвăрт пулса иртнипе Славка ним тума та ĕлкĕреймерĕ.

— Санăн та çывăрас килет-и? — алчăраса кайса çывхартăм ун патне, лешне юр ĕшне чăмтарнă хыççăн. — Ну? Ма чĕнместĕн?

Манăн сывлăш пӳлĕнчĕ. Эпĕ, шывран вĕри хăйăр çине кăларса пăрахнă пулă пек, антăха-антăха сывлăш çăтрăм, вăйсăрланса чĕре тĕлне хыпалама пуçларăм. Славка юлташĕ патне ыткăнчĕ.

— Лешка, а Лешка, ăçтан чикрĕ? Ăçтан?

Эпĕ аран-аран сывлăш çавăрса ятăм та вĕсем патне пытăм.

— Каларăм вĕт эп сире... чикмен... самбо, — терĕм, куç-çуль юхтарса.

Алеша çаплах тăна кĕмерĕ.

— Кай, тархасшăн кай, — йăлăнчĕ Славка, — тăна кĕрсен, вĕлерет, тархасшăн кай.

Эпĕ ӳсĕр çын пек тайкаланса паçăр Алеша кăтартнă енне-лле уттартăм. Киле кайнă чух çул тăршшĕпех ума е ун сăнĕ, е Люся туха-туха тăчĕ. Люся манран йĕрĕнсе пуçне пăрать пек. Çавăнпа та эпĕ питĕ намăслантăм. Шупашкара таврăнни икĕ эрне иртрĕ ĕнтĕ, çаплах лăпланаймастăп-ха.

...Экзамен вĕçленичченӗх таçта тухса кайма шутланине пĕлсен, Гурий тусăм хытă тĕлĕнчĕ.

— Эверин, — шеллесе каларĕ вăл, — тăна кĕр, пĕрремĕш курсра çеç вĕт-ха эсĕ. Пĕр экзамен тытаймасассăнах кăларса çапаççĕ...

— Гурий, — ответлерĕм эпĕ ăна. — Пултараймастăп. Кун чухлĕ чăтрăм — çитет. Ăш çунать. Апат хыпса апат анмасть, çывăрма выртсан, ыйхă çук.

Вун тенкĕ кивçен илтĕм те каллех çула тухрăм. Автобус Чакак тăвĕсем патнелле хавассăн ыткăнчĕ. Манăн шухăшсем вара автобусран таçта малта вĕçсе пычĕç: «Чистая каçхине пилĕк сехетре çитейсен, Шур Шывалла каякан юлашки автобуса ларатăп та çиччĕре унта пулатăп. Люсьăна кĕçĕрех куратăп».

Çанталăк тĕксĕмми мана пăлхантармасть. Эпĕ çумăрлăхутăшлă юр автобус чӳречине епле çаптăртатса çапăннине,

çул айккинчи çамрăк хурăнсем вăйлă çилпе çĕре çитиех авăннине хĕпĕртесе пăхса пыратăп.

Асфальт яп-яка пăрпа витĕннĕ. Чакак тăвĕсем патне çитеспе автобус вăрт çеç çаврăнчĕ те çула урлă тăчĕ, унтан сăпайлăн кăна кювета анса ларчĕ. Эртелпе çур сехет тапаçланнă хыççăн тин, хăйĕн моторĕ пулăшнипе, çула тăрăх тăратрăмăр. Чакак тăвĕсем патне çитсен, Кама тĕпне анса ларасран хăраса, шофер пăр çине ним парсан та кĕмерĕ.

— Машинăна мар, лашана та кĕме хăрушă халь унта, — терĕ вăл.

Кама урлă çуранах каçма тӳр килчĕ. Ураран ӳкересле хăватлă çил витĕр пăр тăрăх эпир иккĕн утатпăр. Çил вĕçтерсе каяскран алла-аллăн тытăнтăмăр. Ман юлташ Пермьрен Пӳлере шăллĕн туйне килет-мĕн.

Кама варрине çитсен, çил йăвашланать те çумăр чашлаттарса ярать. Иксĕмĕр те лачкам йĕпенетпĕр. Çыран хĕррине çитнĕ çĕре эпĕ шăнса кӳтсе калаçайми пултăм. Юлташ хĕвĕнчен çур литр «çуттине» туртса кăларчĕ.

— Мме, ссып мĕн пултарнă таран, — тет вăл, шăлне шаккаса, — ахаллĕн шăнса пăсăлатăн, ы-ы... шак-шак-шак... ӳфф!

Эпĕ çӳхе пальтопа кăна, ман шăнса пăсăлас килмест, çавăнпа та эпĕ çур кĕленчене йăлтах «сыпса» яратăп. Çуррине эрех хуçи ĕçет.

— Ăçта каятăн? — тет вăл, эрехе пула питне-куçне пĕркелентерсе. — Эх, мăнтарăн московски, пур-ши унран сиплĕреххи...

— Анне вилнĕ, çавна пытарма каятăп.

— Хусантах çур литр ĕçнĕччĕ. И-эх... — юлташ ман сăмаха итлемесĕр, пăр çийĕпе çиле май эрех кĕленчи кустарать. Чистай автобусĕ ăшне кĕрсе ларсан, манра шуйттансем выляма тапратрĕç. Манăн кулас, юрлас килет. Хыттăн кăшкăрса калаçатăп. Юлташăн та — çавах иккен.

Тăварăр, тварăр утăрсене,
çĕр каçатпăр çакăнтах, —

хулăммăн пуçлать вăл. Эпĕ ăна тенорпа пулăшатăп:

Тухĕ-ши, тухмĕ-ши сар хĕр
ик витрепе шыв ăсма!..

Чистая кĕрлеттерсе пырса кĕнĕ самантра эпир ĕнтĕ иксĕмĕр те «курăс хуп сĕтĕрнĕ». Тĕлĕкре эпĕ Люсьăпа каллех балра

ташлатăп. Вăл манпа таттисĕр калаçать, кулать. Оркестр «Кăвак Дунай» калать...

Шур Шыва эпĕ тепĕр кун кăнтăрла иртсен тин çитрĕм, çывхарнăçем сывмарланса та сывмарланса пытăм. Пуç çаврăнать, кăмăл пăтранать. Çамкана тытса пăхрăм та — вĕри çатма! Çурăм такам çĕçĕпе чикнĕ пек туртса ыратать. Тарăннăн сывлас тесе сывлăш туртса илетĕп те, ӳпке-пĕвере темĕн пăраланипе, йынăша-йынăша яратăп.

Шур Шыва çитсе аниччен Люсьăран вăтанмастăм-ха. Çитсе антăм та шкулĕ еннелле çул тытрăм. Шкул патне çитеспе вара, хĕртен калама çук именнипе, куç хуралса кайрĕ. «Тĕл пуличченех çапла та, тĕл пулсан мĕн хăтланăп», — шухăшларăм эпĕ. Юлашкинчен пĕтĕмпех хăравçăланса лартăм. Шкул садĕнчен çинçе сукмак тăрăх аран-аран утса тухрăм. Хыçалта сасартăк хĕрача сассисем илтĕнсе кайрĕç.

— Люся! — терĕ такам манран инçе те мар, йывăççем хушшинче. — Тăхта, пĕрле кайăпăр!

Эпĕ картах сикрĕм, чупса тарма тăтăм. Анчах пултаймарăм. Такам эпĕ сывлакан сывлăша йăлтах туртса илчĕ, пуçран чукмарпа кĕрĕслеттерчĕ. Сад хапхи пуç-хĕрлĕ çаврăнса кайрĕ, эпĕ таçталла, çĕр тĕпнелле, çĕмĕрĕлсе антăм. Малалла мĕн пулнине пĕлместĕп, мĕншĕн тесен эпĕ «вилнĕ». «Вилнĕскер» малтан нимĕн сывламасăр выртнă. Кăштран, сывлăш кĕрсен, çăвартан кăпăкпа хутăш юн киле пуçланă. Çур çĕр тĕлĕнче лăпкăрах сывлама тытăннă, мăкăртатма пăрахнă. Ир енне куçа уçса пăхнă та: «Гурий, шыв», — тенĕ. Вара каллех «вилнĕ»...

Ирхине эпĕ «чĕрĕлтĕм». Ăçта выртнине малтан ăнланмарăм.

— Гурий, — терĕм куçа уçсанах, — эпир лекцине çывăрса юлман-и?

Хуравлакан-тăвакан пулмарĕ. Тинкеререх пăхрăм та тĕлĕнсех кайрăм: çамка çинче йĕпе марля, çумра, пукан çинче, стаканпа шыв, хампа юнашар резин çытар, çытарĕнчен темле кĕпçе тухса тăрать.

— Эх, апăрша, — терĕм, тавçăрса илсе, — ара, эпĕ пульницара-çке!

Мĕн пулса иртни вара майĕпен йăлтах куç умне тухса тăчĕ. Унтан куçа каллех хупрăм. Хальхинче ĕнтĕ «вилмерĕм»...

— Ывăлăм, пĕрер кашăк шӳрпе сыпса пăхмастăн-ши? Каçхи апат вăхăчĕ те çитрĕ, эсĕ вара çаплах нимĕн те хыпман-ха.

Эпĕ сасă енне çаврăнтăм та шурă халатпа шур калпак тăхăннă çӳллех мар ватă хĕрарăм турилккепе шӳрпе тытса тăнине куртăм. Пукан çинче сĕтлĕ стакан ларать.

— Эмелпе кăна чĕрĕлейместĕн, ачам, çиес пулать. Апат — чи ырă эмел.

Эпĕ пĕр çăвар вĕри сĕт сыпрăм, вăйсăррăн пуçа пăркаларăм.

Ирхине те çав хĕрарăмах пырса тухрĕ.

— Эпĕ сана эмеллекен тухтăр Варвара Григорьевна. Чир историне çырман-ха санăнне, хушаматупа яту кирлĕ, унтан тата хăшпĕр вак-тĕвек. Люсьăран...

«Люсьăран» тесен эпĕ вĕри шывпа пĕçертнĕ пек шартах сикрĕм.

— Эсир ăна ăçта курнă?

— ...Люсьăран ыйтрăм та, паллама паллатăп, ятне пĕлместĕп, тет. Вăл пулман пулсан, халь эсĕ манпа калаçаяс та çукчĕ, вилсе выртаттăн.

Варвара Григорьевна эпĕ тăнсăр вăхăтра хама епле тыткаланине, аташса-нăйкăшса выртнине йăлтах каласа кăтартрĕ.

— Люся сана, ачам, ӳсĕр пуль тенĕ, эсĕ чирлĕ иккенне пĕлеймесĕрех кайрĕ, — вĕçлерĕ карчăк хăй калавне.

Эпĕ шутсăр хăраса ӳкрĕм.

— Люся Алтынбаш-и? — ыйтрăм, утияла сирсе ывăтса тата ура çине йăпăр-япăр сиксе тăрса. — Варвара Григорьевна! Ăçта ман кĕпе-йĕм? Эпĕ ĕнтĕ сып-сывах!

Ман çăмăлттайлăх тарăхтарса янипе карчăк малтан шак хытса тăчĕ. Унтан кăвакарса кайса ятлама тытăнчĕ:

— Айван! — çинçе сасăпа хаяррăн каларĕ вăл. — Тăнсăрпуçсăрскер! Халех выртнă пултăр.

— Варвари аппа, — çаплах харсăрлантăм эпĕ, тухтăр пулăшнипе утиял айне каялла кĕнĕ май. — Варвара Григорьевна...

Вара вăйсăрланса, хутланса кĕрсе, йывăррăн ӳсĕрме, унтан юн сурма пуçларăм.

Çамка çине сивĕ тар тапса тухрĕ.

Люся Алтынбаш çырса пынинчен

Декабрĕн вăтăрмĕшĕ.

...Каникула тухма тепĕр кун юлчĕ. Çур çула «отлично» паллăсемпе вĕçлетĕп. Кружокра та ĕçсем аван пыраççĕ. Эй, сĕрмекупăс, сана шухăшласа тупаканĕ вăл кунти мар тĕнче-

сен ӑрӑмçи-хӑвачĕ, этемлĕх чун-чĕришĕн çуралнӑ генийлĕ пĕртен-пĕр талант пуль? Сĕркĕчпе хĕлĕхсене перĕнетĕн çеç, пĕтĕм юн вĕреме пуçлать. Хĕлĕхсенче — куçа курӑнми хĕлхем, тӳлеклĕх, çав вӑхӑтрах темле канӑçсӑрлӑх та... Кулӑш. Эпĕ те çапла çунатланса калаçма пултаратӑп иккен.

Каллех кулӑш. Юлашки вӑхӑтра ман тĕллĕн темшĕн кулӑшсем йышлӑланчĕç-ха. Паян пирĕн тренер: «Сире конькипе пӑр çинче вальс ташлама вĕрентетĕп-ха», — тет. «Ӑçта, Владимир Николаевич, кӳлленчĕк пек Шур Шыв çырмин яка пӑрĕ çинче-и?» — терĕм те, пурте кулса ятӑмӑр.

Çамрӑк Блока эпĕ ӑнлансах çитерейместĕп. «Стихи о Прекрасной даме». Çуррине вуларӑм та пӑрахрӑм...

Паян манӑн пысӑк савӑнăç: виç çул ывӑнма пĕлмесĕр кĕтни çитрĕ, Алешӑпа эпир каллех пĕрле. Паттӑр салтакӑм, манӑн князь... Виç çул кĕтрĕм эпĕ çак куна юрӑра каланӑ евĕр:

Сире кĕтĕпĕр эпĕр хĕрӳллĕн
аннесем çамрӑк чух кĕтнĕ пек...

Вӑл халĕ те пирĕн патрах-ха, Славкӑпа иккĕш коньяк ĕçеççĕ. Эпĕ те пĕрре сыпса пăхрăм, чыхӑнса кайрăм та урăх ĕçмерĕм. Славка та, Алеша та ахӑлтатсах кулчĕç. Мана лайăх мар пулчĕ. Алеша салтакран тата çепĕçрех калаçма вĕренсе килнĕ. Культурăллă, ăслă...

Декабрĕн вăтăр пĕрмĕшĕ.

Анне мана темшĕн:

«Ытла та ир çитĕнсе çитрĕн эсĕ, хĕрĕм», — терĕ. Çĕнĕ çул каçне эпир шкулта мар, Культура çуртĕнче кĕтсе илессине пĕлсен каларĕ вӑл çакна.

Алеша мана паян шкултан кĕтсе илме пынӑ. Звонок пуличченех аллея тăрăх уткаласа çӳренĕ. Вӑл ман пата çывхарсассăнах, юлташ-хĕрачасем таçталла сапаланса пĕтрĕç. Сапаланччăрах.

Каç енне эпĕ Алеша тумне илсе салтакла тумлантăм та аната çăл шывĕ ăсма антăм.

— Салтак туфлипе çӳремест çав, ачам, — тет Славка, çĕрулми шуратса пĕтернĕ май, — кирза атăпа çӳрет.

Алеша ĕхлетсе сăмавар чĕртет. Анне дежурствăра.

Мансах кайнӑ, çăлран хăпарнӑ чух чут çеç шуса ӳкмерĕм. Темле ача пулăшрĕ. Салтак юлташ, терĕ те хăй панулми пек хĕрелсе кайрĕ. Хĕрача тейĕн. Вуннăмĕш класра вĕренет пулмалла, анчах хăш шкултанне пĕлейместĕп. Тен, Чистайран...

Маскарада мĕнле костюмпа тухасси пирки тавлашса кайрăмăр. Славка: Юрпике пул, тет. Алеша, хăй пекех, космонавтла тумлантарасшăн.

Эпĕ Алешăпа килĕшмерĕм. Вăл хирĕçмерĕ.

Январĕн пĕрремĕшĕ.

Бал-маскарада халăх чаплă хатĕрленнĕ. Духовой оркестр. Елка. Костюмсем, вăйă-ташă... Пурте савăнăçлă. Эпир — эпĕ, Алеша, Славка — çĕрĕпех пĕрле пултăмăр. Тĕлĕнмелле: пирĕн Славка пĕр ташă та ташла пĕлмест. Слон. Анне те: «Кама хывнă вăл манăн», — тесе кулянать. Алеша вара — чăн-чăн кавалер. Кĕвĕçӳллĕ, çепĕç, маттур. Унăн бала Болконский князь е принц пулса пымаллаччĕ. Принцĕ, паллах, Гамлет мар ĕнтĕ, урăххи, трагедисĕрри.

Каç питĕ хавас, пĕлĕтсĕр иртмеллеччĕ. Пĕр япала пĕтĕм ĕçе пăсса хучĕ. Вунпĕр сехет тĕлнелле балра хайхи мана туран хăпарма пулăшнă ача курăнса кайрĕ. Пăхатăп та, зал леш вĕçĕнчен, çынсемпе такăна-такăна (тен, çынсене пур тесе те шутламасть пуль), ман паталла килет. Шăпах хĕрсен ачасене ташша чĕнмелли кĕвĕччĕ. Эпĕ ăна хирĕç кайрăм. Нумаях ташлаймарăмăр унпа, шурă-шурă шăлĕсене кăтартса хура хĕвел пек (мĕншĕн тесен çак ача негр евĕр хура сăнлă) ялкăшса пынă çĕртенех ман партнер тĕксĕм пĕлĕт пулса тăчĕ. Алеша çырнă хут çапла улăштарчĕ ăна. Унта мĕн тенине эпĕ пĕлместĕп, анчах та çын калама çук пăлханса кайрĕ. Унăн хăмăр куçĕсенче çиçĕм çиçме тапратрĕ. Йĕкĕт аллăма хыттăн пăчăртарĕ. Хăй ĕнтĕ вăл, паллах, çакна нимĕн чухлĕ те асăрхамарĕ. Хальччен кун пек этем курманччĕ-ха эпĕ. Темле асар-писер. Эрех ĕçнĕ çын пек...

Маскарадран киле саланнă чух мана алăк патĕнче чарса тăратрĕ. Темĕн каласшăн пулчĕ. Тĕнчере Алеша та, Славка та, маскарадри халăх та çук тейĕн çав. Анчах каласа ĕлкĕреймерĕ. Кайран, урамра, Алешăна темĕнпе çапнă. Эпĕ чупса çитнĕ çĕре Алеша тăнне çухатнăччĕ. У, епле йĕксĕк.

Январĕн иккĕмĕшĕ.

Ĕнер те, паян та Алеша пирĕн пата килмерĕ. Манăн кăмăл питĕ начар. Славкăпа кунĕпех вутă татрăмăр. Анне куккасем патне кайрĕ.

Январĕн виҫҫĕмĕшĕ.

Эпир Алешăпа паллашни тăваттăмĕш çул. Салтака кайиччен вăл мана пĕр усал сăмах та каламан, халĕ те каламасть. Салтакра чух виҫĕ çул çыру çӳретрĕмĕр. Çырăвĕсенче пĕр суя сăмах та çук пек туйăнатчĕ. Паян вара питĕ кӳренмелле пулса тухрĕ: çав палламан ачапа эпир тахҫанах юлташлă имĕш... Эпĕ питĕ тарăхса кайрăм. Анчах çакна никама та систермерĕм. Пуç ыратни çине ярса хам пӳлĕме питрĕнсе лартăм, пин тĕрлĕ шухăш çаврăнчĕ пуçра. Нумай шухăшланипе пуç чăнах та ыратма пуçларĕ.

Январĕн тăваттăмĕшĕ.

Çĕркаç çĕрĕпех Блока вуларăм. Алеша паян ирех кĕрсе тухнă. Мана вăратман. Эпир Славкăпа апат пĕçертĕмĕр. Анне дежурствăра. Славкăпа иксĕмĕр, йĕлтĕрсем сырса, вăрмана кайрăмăр. Каç енне Славка аран-аран пĕр мулкач тытрĕ. Питĕ ывăнтăмăр. Пичче киле çитсен коньяк ĕçрĕ те вилнĕ пек çывăрса кайрĕ. Вăл ĕçме Кама çинче рулевойра çӳренĕ вăхăтра вĕреннĕ. Анне çакăншăн питĕ хуйхăрать.

Январĕн пиллĕкмĕшĕ.

Эпĕ дневник çырма хăнăхса пыратăп. Паян Славкăпа кунĕпех килте. Вăл кăнтăрлахи апат умĕн пĕр стакан коньяк ĕçрĕ те ман пата пычĕ.

— Эх, Люся, сĕлеке çăвар сан Алешу, эс ан çиллен те...

Урăх нимĕн те каламарĕ. Гитара тытса ларчĕ. Манăн пичче хăйне пурнăç курса йăлăхнă çын, тет. Эпĕ вара, вăл каланă тăрăх, ача-пăча. Мĕнле те пулин канаш парсан, вăл: «Эсĕ пĕчĕкçĕ-ха, нимĕн те пĕлместĕн», тет. Алеша пирки çапла каланăшăн эпĕ хытă тарăхрăм. Кăштран Славка таçта тухса çухалчĕ. Тĕттĕмленсен, конькисем çакса, Алеша пырса кĕчĕ. Вăл ним пулман пек савăнăçлă. Паян шкул спортплощадкинче кунĕпех хĕрӳ ĕç пынă иккен. Тикĕс вырăна ирех юртан тасатнă, пушар сӳнтерекенсем килсе площадкăна шыв сапса панă. Пăр шăнма та ĕлкĕрнĕ.

Алеша иртнĕ сăмахĕшĕн каçару ыйтрĕ.

Январĕн улттăмĕшĕ.

Пирĕн тренер Владимир Николаевич икĕ çул каялла физкультура факультечĕ пĕтернĕ. Вăл тăрăшнипе шкулта спорт ĕçĕ питĕ лайăхланчĕ. Халĕ ак Владимир Николаевич ертсе пы-

нипе каток тунă. Эпир каток çинче вунă сехетчен ярăнтăмăр. Эпĕ ĕнтĕ Алешăна çилленместĕп. Электричество ламписем каток тавра хавассăн кулаççĕ. Анчах та вĕсен куллине эпĕ çеç илтетĕп. Алешăна çавăн çинчен каларăм та, вăл мана айван тесе тăрăхларĕ. «Айванлăх, лирика», — тӳрлетрĕ Алеша хăй сăмахне. Эпĕ кӳренме пăхрăм, анчах та май килмерĕ: Алеша анекдот каласа култарчĕ.

Январĕн çиччĕмĕшĕ.

Паян пирĕн тĕлĕнмелле кун. Анне те, Славка та килте. Чи тĕлĕнмелли япала вара — Славка иртенпех тумлам та эрех сыпманни. Анне каланă тăрăх, вăл унпа пĕрлех, вут хутнă чухнех тăнă. Анне кăвас çăрнă, пичче вут хутнă. Анне апат пĕçернĕ самантра кăранташ вĕçне хуçа-хуçа темĕн çырнă.

— Ее величество, апата кунтах кӳрер-и, е хăвăр çĕкленĕр-и? — терĕ вăл ирхине сакăр сехет тĕлнелле мана вăратса. Каçхине, пичче килтен тухса кайсан, анне мана савăнăçлă хыпар пĕлтерчĕ: Славка шыв çине урăх каясшăн мар. «Кама тăрăхĕнчи пĕтĕм эрехе пурпĕр ĕçсе пĕтереес çук, çитет, икĕ çул ĕçрĕм, ăса кĕме те вăхăт», — тенĕ вăл.

— Ăçта каясшăн вара? — хытă тĕлĕнсе ыйтнă анне.

— Университета.

Малалла анне акă мĕн каласа пачĕ: «Темтепĕрле такмаксемпе юрăсем çырма тапратнă. Пĕрне итлесе пăхрăм та вăйран кайрăм. Çеçпĕл Мишши поэта вăхăтсăр çĕре кĕртнĕ йĕксĕк этемсене питлет. Çӳç-пуç вирелле тăрса кайрĕ: «Хура юнсем» тесе хăртать».

Эпĕ анне çине чăрр пăхрăм. Анне питĕ те хыпăнса ӳкни курăнать. Вăл сăмахне каласа пĕтермен иккен-ха:

— Алешуна та йĕксĕк тесе вăрçать. — Анне сассине тем тума тата антарчĕ. — Мунчалаланса пурăнма пăрахатăп малашне, кĕрешӳ, пĕтĕм йăх-яхсемпе кĕрешӳ пуçлатăп, — тет. Ах тур-тур, хĕрĕм, мĕн пулнă ăна. Ачи ачахчĕ, халĕ вара тем амакĕ çакланнă.

Анне Алеша çинчен асăнсан, манăн юн вĕриленсе кайрĕ. Аннепе тавлашма, Славкăна хăртма пуçларăм. Юлашкинчен хамран хам именсе, алăка шалтлаттарса хупса, килкартине тухрăм.

«Мĕн пирки вара çав териех? Мĕн пулнă? Мĕншĕн Славка Алеша килсенех «ĕç пурччĕ-ха» тесе урамалла шăвать. Ăçта кайса кĕнĕ вĕсен туслăхĕ?»

Январĕн сакăрмĕшĕ.

— Славик, кил-ха ман пата!

— Тата мĕн пулчĕ?

— Кил-ха, кил, калаçмалли пур. Эс паян мĕн мар-и?

— Мĕн мар, ачам, ĕнертенпе пуçĕпех пăрахрăм.

— Вăт итле-ха, Славка, мĕншĕн эсĕр Алешăпа йытăпа кушак пек пурăнатăр? Епле туслăччĕ, астăватăн-и?

— Мĕншĕн тесен эпĕ унпа вăл ырă, йĕркеллĕ ача чух туслашнă, унтанпа вара шăп кăна тăватă çул иртсе кайрĕ. Унтанпа вăл чылай йĕксĕкле ĕçсем тума ĕлкĕрнĕ. Çав ĕçсене пĕличчен эпĕ вăл камне чухласах илеймерĕм. Воински чаçран арăмĕ килсе кайсан, тĕрĕсрех каласан, вăл арăмех те мар-ха, ну, пĕлетĕн-и, эсĕ пĕчĕкскер ун пек-кун пеке чухлаймастăн-ха, кĕскен каласан, Алеша кунта килсе çӳремесен питĕ аван пулмалла. Анчах та эсĕ эпĕ сана приказ паратăп тесе ан шутла...

Эпĕ пичче çине тĕлĕнсе пăхрăм:

— Славка, мĕн пулнă сана, мĕн аташатăн эсĕ?!

— Аташатăп-и унта, çук-и, анчах та пӳлĕме унпа пĕччен нихçан та ан юл. Пĕлетпĕр эпир ун йышшисене.

Эпĕ уласа йĕме пуçларăм. Пиччене «ухмах», «идиот», «эрех пички» тата темтепĕр каласа тăкрăм.

— Пиçиххипе пĕçертĕттĕм те эпĕ сана, — терĕ мана пичче, — ытлашши ханттар, çын çине алă çĕклесси те лайăх япала мар, ăна сан Элекçейӳ юратать, ун пек ĕçе...

Январĕн тăххăрмĕшĕ.

Славка таçта кайса кĕчĕ. Çĕркаç киле килмерĕ, паян та çук. Манăн питĕ те пуç ыратать. Больницăна анне юлташĕ Варвара Григорьевна тухтăр патне кĕрсе тухрăм. Пирĕн Славик вĕсен Юрийĕпе уйрăлма пĕлмест, тет, иккен, иккĕшĕ те çĕрĕпех кĕнеке вулаççĕ, тавлашаççĕ, ятлаçаççĕ, имĕш. Кашни сăмахĕ урлах «революци», «поэзи», «Ленин» тесе калаççĕ, тет. Варвара Григорьевна Юрине авлантарасшăн сăмах хускатнă пулнă та, лешĕ ахăлтатсах кулнă.

— Шалтах аптрарăм, Люся, шалтах, — тĕлĕнет карчăк, мана эмел парса. — Халĕ ĕнтĕ çывăрма та пĕрлех çывăраççĕ. Славикĕ Юрике эрех ĕçме вĕрентесрен чунăм çукчĕ малтансенче, ĕçмест, яланлăхах пăрахрăм, тет...

Каç та пулчĕ. Пичче çаплах çук. Анне дежурствăран та таврăнчĕ. Вячеславĕ иккĕмĕш талăк киле килменнишĕн пĕрре те пăшăрханмасть вăл:

— Варвара Григорьевнăсем патĕнче, кĕрсе тухрăм, каникулу вĕçленмесĕр те киле таврăнасшăн мар, — тет.

— Вăл мана, анне, хытă кӳрентерчĕ.

— Тĕп-тĕрĕс каланă. Воински чаçран...

Анне малалла мĕн тенине эпĕ итлемерĕм, урама тухса сирпĕнтĕм: пальтона килкартинче тăхăнтăм, тутăра урамра çыхрăм. Манăн кĕçĕр епле пулсан та Алешăна курмаллах. Эпĕ шкул патнелле утрăм. Аллейăпа тухсан — спортплощадка. Каток тавра электричество хунарĕсем çаплах хавассăн кулаççĕ. Çакна пĕр эпĕ çеç илтетĕп, куратăп-и, тен. Мĕншĕн тесен, каток çинчисем кăшкăрашса, юрласа, шăхăрса пăр тăрăх вирхĕнеççĕ. Пур-и, çук-и кунта Алеша? Пур! Акă! Вăл мана асăрхарĕ те ĕнтĕ.

— Люсила! — терĕ вăл çемçе те хаваслă сасăпа. — Мĕншĕн конькисемсĕр?

— Эпĕ ярăнма килмерĕм.

— Пăрах-ха эсĕ оригиналланма. Куратăн-и, пурте ярăнаççĕ, пурте хаваслă, пурте телейлĕ.

— Эпĕ вара телейсĕр.

— Ну, Люся, пăрах-ха эсĕ...

Хам мĕн каланине эпĕ тин тавçăрса илтĕм. Кулас килмен çĕртенех йăл култăм. Вара алла-аллăн тытăнса хамăр юлташсем патне кайрăмăр. Уйрăлнă чухне Алеша мана аллейăра, садран тухас умĕн, пирвайхи хут чуптуса илчĕ... Анчах эпĕ нимĕн те туймарăм. Кĕнекесем çинче пирвайхи чуптунисем çинчен çырнине çак самантран ĕненме пăрахрăм.

— Ыран каçпа пыр, — терĕм эпĕ лăпкăн, кăмăл сӳрĕлнине кăтартасшăн мар пулса, — кинона кайăпăр.

Тепре чуптума памарăм.

Январĕн вуннăмĕшĕ.

Алеша салтакра чухне улталанă хĕр килсе кайнине паян Варвара Григорьевнăран та илтрĕм:

— Ашшĕне хывман... Пĕр ывăл — ачаш ӳсрĕ... — кулянса каларĕ Варвара Григорьевна, ман çине пăхмасăр. — Хĕрачине, мĕскĕне, хам куртăм, шкулта вĕреннĕ вăхăтрах çуратса панă...

Манăн çакна ниепле те ĕненес килмерĕ. «Паян пĕтĕмпех паллă пулать, — çаврăнать пуçра шухăш, — паян йăлтах паллă пулать».

Алеша пирĕн пата хаваслăн калаçса пырса кĕчĕ.

— О, пĕчченех иккен эсĕ? Вячеслав Сергеевич ăçта вара? Юрийпе пулĕ-ха?

— Пĕчченех. Салтăн, лар. Анне дежурствăра, Славик улаха çĕр выртмаллах кайнă. Пĕчченех эпĕ кĕçĕр. Çиес килмест-и?

Алеша салтăнчĕ, куçран пăхать, ăшшăн кулма пăрахмасть, апат çиме килĕшмерĕ.

Эпĕ алла сĕрмекупăс тытрăм. Хĕлĕхсен ĕнерĕвне тĕрĕслеме пуçларăм.

— Мĕн калас? Аха... Штраус. Акă итле.

Хĕлĕхсенче — куçа курăнми хĕлхем, тӳлĕклĕх, çав вăхăтрах тĕлĕнмелле канăçсăрлăхпа асамлăх.

Эпĕ Алешăна юриех куç сиктермесĕр сăнатăп. Мĕн чул тăрăшсан та, итлекен сăнĕнче вăл пĕр вăхăта та пулин чаплă Штраус музыкин пурнăçĕпе пурăннине курмастăп. Алешăн илемлĕ сăнĕ йывăçран тунă пекех ним хускануçăр. Эпĕ нумайччен сĕрмекупăс каларăм. Анчах та Алеша музыкăпа савăннине, пăлханнине, шуралнине е хĕрелнине асăрхаймарăм. Мĕн тери хытă чун иккен вăл! Ун сассипе чунĕн уйрăмлăхĕ мĕн тери пысăк: чунĕ — чул, сасси — сар çу... Эпĕ калама çук тарăхса кайрăм. Сăмахпа вара хам, çакна калама мĕн тери йывăр пулсан та, веçех урăхла шухăш каларăм:

— «Юмахсем». Темех мар...

Сĕрмекупăса пăтана çакса Блок томне алла илтĕм.

«Александр Александрович Блок. Вырăссен аслă поэчĕ. Шел, шкулта вĕрентмеççĕ. «Айванлăх, лирика», — терĕ Алеша ăшĕнче, анчах сăмахĕсем ак çапла пулчĕç:

— Леш, «Двенадцать» çыраканĕ-и? Унăн тата «Я пьян давно, мне все равно» текен сăвви те пур-ха. Поэтсем вĕсем ĕçме юратаççĕ çав.

Эпĕ хальхинче те Алешăна кураймиех пулнине палăртмарăм, пĕчĕккĕнех актрисăна тухса пытăм. Епле йывăр роль пулчĕ маншăн çакă, пĕрремĕш роль! Чи йывăрри вара малта-ха...

Кинора «Çамрăк гвардисĕ» куртăмăр. Олег Кошевоя шахта шăтăкне тĕртсе ярсан, эпĕ нăшăкласа йĕтĕм. Алеша мана лăплантарать.

— Артистсем вĕт вĕсем, мĕн макăрмалли пур. Вăт тĕлĕнтермĕш...

Манăн чышкăсем чăмăртанчĕç: «Кăтартатăп-ха эпĕ сана «кино», — шухăшларăм эпĕ шăла çыртса.

— ...Пурнăçра ун пекех пулман ĕнтĕ вăл, ӳстереççĕ, патриотла воспитани параççĕ.

Алеша «мăка» иккенĕ куç умĕнче. Эпĕ çакна лайăх ăнланатăп. Анчах та туйăмсем ниепле те ĕненесшĕн мар: «Виçĕ

çул, виçĕ çул, — çаврăнать шухăш пуçра. — Виçĕ çул ĕненнĕ, кĕтнĕ, хама тĕнчере чи телейлĕ çын тесе тăнă!»

Киле çитрĕмĕр. Чи юлашки, чи хăрушă роль. Эпĕ Алеша салтăннă вăхăтпа усă курса хам пӳлĕмре кĕтесре тăракан Славка пăшалĕнче патрон пуррипе çуккине пăхрăм. Çук... Алеша «салтăн» темесĕрех салтăнчĕ. Пушмакĕсене хывман.

— Урусене те хыв.

Сассăм вăрттăн та япшар тухрĕ.

— Хатĕр-и?

— Хатĕр, — илтĕнчĕ çепĕç сасă. Манăн чĕре картах сикрĕ.

— Сволочь!!! А ну тасал!! Выльăх!

Эпĕ пĕчĕк калибрлă винтовкăн затворне кăпăр-капăр туртса лартрăм, Алешăна кăкринчен тĕллерĕм. Вăл кулан пекки турĕ, кулли вара питĕ те мĕскĕнччĕ.

— Тасал, — терĕм эпĕ йăлтах лăпланса, Алеша тухса кайнă хыççăн алăка тачăрах хупса.

Эверин каласа панин малалли

Люся ман пата пĕрре те пымарĕ. Эпĕ те ăна манма пуçларăм. Питĕ те хытă çиллентĕм эпĕ ăна. Кăмăла темĕнле йӳçĕлĕх капланчĕ. Чун ыратать, кӳренет.

Больницăна кĕнĕ хыççăн темиçе кунтан мана палатăра хампа пĕрле выртакансем çĕнĕ рекорд тунă ятпа хĕрӳллĕн саламларĕç. Кӳршĕм Витя Новиков акă мĕн кайса пĕлнĕ «чир историйĕнчен»: унта манăн ултă чир — пневмони (ӳпке шыççи), миокардит (чĕре мышцисен шыççи), полиартрит (шăмă сыпписен чирĕ), фолликулярлă ангина е тонзиллит (пыр шыççи), нефрит (пӳре шыççи), невроз (ку вара нервăсен тĕлĕшпе). Кун чухлĕ чир пирĕн палатăра никамăн та çук.

Малтан эпĕ çак чирсене пĕлме мар, хăшпĕри çинчен пачах та илтменччĕ: те пулнă ун ятлă чир-чĕр тĕнчере, те çук. Тĕпчеве пĕр эрнерен, сывлама кăшт çăмăллана пуçласан, тытăнтăм. Пневмони текенни мана пуринчен те ытларах илĕртрĕ, мĕншĕн тесен эпĕ сывлăш çитменрен калама çук тилмĕрсе, хурланса выртатăп, пуç çĕмрĕлсе ыратать, сар хĕвеллĕ çутă кун пăч-тĕттĕм çĕр пек туйăнать, тĕттĕм çĕрĕ вара вилĕм кĕвви калать. Путсĕр, йĕрĕнчĕк кĕвĕ...

Эпĕ «главнăй инженер», «главнăй агроном» текен должноçсем, вырăнсем, пуррине илтнĕ, çавăнпа та туяннă чирĕм-

сем хушшинче те аслăраххисем, «главнăйраххисем» пулма кирлех. Питĕ тĕплĕн тĕпчесе тухнă хыççăн аслисен шутне эпĕ иккĕшне картрăм: икĕ енлĕ ӳпке шыççи тата пыр шыççи е пневмонипе тонзиллит. Чи главнăйĕ, паллах, пневмони. Тонзиллит тени, епле илемлĕ илтĕнсен те, заместителĕ анчах. Мĕншĕн тесен ӳпкесем организма кислород кӳрсе тăраççĕ, каялла — çинĕ апат ăшра çунса пулакан организм сĕрĕмне (CO_2) тапса кăлараççĕ. Организма сывлăшпа пĕрле кислород пымасан çыннăн ăша илнĕ апачĕ ирĕлсе, «çунса» юна куçма пăрахать. Юн çĕнелме, организм тăрăх çӳреме пăрахсан вара çыннăн леш тĕнчене каймалли анчах юлать. Манăн халех унта каяс кăмăл çук-ха, ытла та ир-çке.

Ӳпке шыççине сăнласа пама эпĕ пултараймастăп мар, хал та, пĕлӳ те çитмелле, анчах та çакă итлеме питĕ кичем. Сăмахăм урăххи çинченччĕ, çавăнпа та пневмони «заместителĕ» пирки кăштах калам та малтанхи йĕре таврăнам. Ангина е тонзиллит заместительре саккунлă, тивĕçлĕ лармасть. Пысăк вырăнти пуçлăхсене йăпăлтатса, взятка парса кун курать вăл. Мĕншĕн тесен ангина тăвакан ĕçех пневмони те, нефрит та çителĕклех туса пыма пултараççĕ. Ман шутпа, ăна тахçанах штатран кăларса пăрахмалла.

Кашни чирлĕ çынах хăйĕн чирĕ пирки шухăшлать. Часрах, яланлăхах сывалас килет унăн. Эпĕ те шухăшла-шухăшла пуçа нумай ватрăм. Юлашкинчен ывăнса çитрĕм те ларса пĕрле вĕренекен туссем патне Шупашкара çыру çыртăм: аннене эпĕ кунтине ан пĕлтерĕр, ахаль те аран-аран пурăнкалать, терĕм. Больницăра ман чирсем йăвашланса, сӳнсе пычĕç. Эпĕ больница коридорĕсем тăрăх чиперех çӳреме пуçларăм.

Пĕррехинче акă мĕнле вывод турăм: йĕпе те сивĕ çанталăкра ӳсĕр пуçпа урама тухса каяс пулмасть, уйрăммăнах, çие çӳхе тăхăнса тухмалла мар. Мĕншĕн тесен çын алкоголь ĕçсен, организм ăшша хăйĕнчен перекетсĕр, хăвăрт кăларать. Çын, çакна туймасть пулин те, хытă шăнать.

Уйăх çурă ытла сипленĕ хыççăн Варвара Григорьевна мана çĕнĕрен тĕпĕ-йĕрпе тĕрĕслерĕ.

— РОЭ картне ларса пырать, лейкоцитсем те йĕркене кĕме тивĕçлĕ, — терĕ вăл. — Юнун хĕрлĕпе шурă çаврашкисем вĕсем. Сывлăху юсанчĕ. Тунтикун тухатăн пулĕ. Кире пуканĕсем йăтма, конькипе ĕрĕхме, турник çинче «хĕвел» тума халлĕхе юрамасть тейĕпĕр, йĕлтĕрпе уçăлса çӳреме, çунашкапа ярăнма юрать.

Шур Шыв больници алăкĕнчен эпĕ çуркуннен пирвайхи кунĕнче, кăнтăрла иртсен тухрăм. Кăнтăрлахи апат çитермесĕр

ямарĕ-ямарех Варвара Григорьевна. Кунсăр пуçне тата хăйсем патне кĕрсе ывăлĕпе паллашма, кăмăл пулсан, пĕрер эрне пурăнма ыйтрĕ. Эпĕ ырă карчăка чĕререн тав турăм та, палатăри юлташсемпе сывпуллашса, урама тухрăм. Уçă сывлăша сасартăк тухнăран-и, пуç çаврăнса, куç хуралса кайрĕ, кăшт çеç ӳкмерĕм. Темиçе хутчен тарăннăн сывласа ярсан тин йĕркеллĕ утма пуçларăм. Çулпа пынă май çынсене, лашасене, йыт-качкана, машинсене, йывăççене çурт-йĕре хальччен курман пек тинкеретĕп. Çанталăк ăшă. Майĕпен юр пĕрчисем вĕçе-вĕçе анаççĕ. Чунăм манăн темшĕн ыррăн туртса ыратать, темшĕн хĕпĕртетĕп, темшĕн йĕрес, çав вăхăтрах çепĕç юрă юрлас килет. «Хӳхĕм пĕвĕме» (Гурий тусăм каларăшле) Шур Шыв хĕрĕсене кăтартса сала вĕçне çитсен, çырманалла анма пуçларăм. Анчах та... турăçăм, хам куçа хам ĕненместĕп, мана хирĕç каллех пысăк витресем çакнă кĕвентеллĕ çын хăпарать. Çарапуçăнах, çийĕнче çурлăкĕрлĕ тăхăнмалли çăмăл сенкер пальто, урисенче — шурă туфли... Питĕ асăрханса пусать хăй. Пальтине йӳле янăран, пĕррелле çивĕтлесе малалла уснă çивĕт хура платье çийĕпе юхса тăнăн туйăнать. Платье çийĕпе мар, каçару ыйтатăп, тĕттĕм вăрманта ылтăн çырма сиккипе чупать. Хĕрача мана асăрхамасть-ха, тĕреклĕрех пусма тăрăшса, текех сукмак çинелле пăхать.

— Люся, — терĕм эпĕ, чăтăма çухатса, ун умнех пырса тăрса, — пулăшас мар-и?

Люся савăннă пек пулчĕ. Хура плащпа пĕркеннĕ икĕ асамăç хунарĕпе чунăн тĕпне витĕрех çутатса пăхрĕ, çунтарса илчĕ.

— Çук, кирлĕ мар, — хуравларĕ Люся, — эпĕ хамах... Епле палламалла мар улшăннă эсир.

— Эсир те питĕ улшăннă...

Эпĕ, тен, хĕрелсе, тен, шурса кайрăм пуль, хам сăна хам курма пултараймарăм. Çав хушăра Люся, ури шуса кайнипе, чут çеç ӳкмерĕ. Эпĕ ун патне чупса анса витресене вĕçертсе илтĕм. Çӳле çĕклесе хăпартрăм та хĕрачине те хăпарма пулăшрăм.

— Шыв патне çӳреме кансĕр кунта сирĕн...

— Кансĕртерех çав... Мĕн-и, йăлтах сывалтăр-и?

— Йăлтах сывалтăм.

— Эпĕ те...

— Мĕнрен?

— Айванлăх чирĕнчен...

Эпĕ, Люся сăмахне пĕтĕмпех ăнланса пĕтереймерĕм пулин те, пурпĕрех, ăнланнă пек туса, килĕшсе, пуç сĕлтрĕм.

1964

ÇУРХИ ТĂМАН

Ял тарăн ыйхăра. Çурхи каç шăплăхĕнче курак тăманĕ çăвать. Тĕттĕм урам ытла та тăнăç пулнипе, тăнлаври юн тымар таппи, тавралăх питĕ лăпкă чухне хăлхара йăнласа тăракан сасă тата хушăран лапка-лапка юр нăтăртатни илтĕнсе тăрать. Юпасем çинче, леререх, йăвашшăн кулакан хунарсен çути юр витĕр тĕлĕнмелле тӳлек те ачаш курăнать куçа, пĕтĕм ӳт-пĕве, чун-чĕрене канлĕх парать, шухăша ярать. Каçхи тĕнче — асамлă, кăмăл — уçă.

Эпĕ шкул крыльци çине хăпарса тăтăм. Пĕр касă çил вĕрсе иртрĕ. Юр сасартăк чӳхенме пуçларĕ. Инçех те мар юпа çинче çакăнса тăракан хунар тĕлĕрнĕ çĕртен вăранса силленсе илчĕ, унтан майĕпен сулланма тытăнчĕ. «Турăçăм, — терĕм эпĕ тĕлĕнсе, — ун чухнехи пекех-çке, пĕлтĕрхи пекех!» Ман чуна тем хĕссе лартрĕ, куç хуралса килчĕ. Асаилӳсен хумĕ сулăмлăн çапнипе, тайăлса кайрăм, чут çеç ӳкмерĕм. *Вăл* каллех манпа юнашар тăрать пек, хура та çăра хăрпăклă пысăк куçĕсене ман куçран вĕçертмесĕр, питĕнчи куççуль шăрçисене шăлмасăр, мана юратасшăн пулни, анчах та юратма пултарайманни çинчен ĕсĕклесе калать пек; сылтăм аллипе мăйран уртăнса, сулахай аллин çинçе те вăрăм пӳрнисемпе ман куçхаршисене, тутана, пите хыпашлать. «Иоланта*, — тетĕп эпĕ, — эсĕ куçлă, куратăн, анчах та çапах — Иоланта. Эпĕ сан куçна уçма пултараймарăм, эсĕ куçлă пулсассăн та суккăр, тăванăм, юр пĕрчийĕм... ахалех йĕретĕн... кирлĕ мар, вырăнлă мар». Эпĕ ăна тутинчен чуптăвасшăн — пăрăнать, ирĕк памасть. Таса куççуль шăрçисене чуптăватăп. Куççулĕ сивĕ те кăшт тăварлă.

Асаилӳсен хумĕ! Ах, епле хуйхăллă та телейлĕ самантчĕ пĕлтĕр çак вăхăтра çакăнта, çурхи тăманлă каç, шкул крыльци çинче тăнă самант! Хуйхăллă та телейлĕ! Тĕлĕнмелле этем чун-чĕринчен, ăнланма йывăр ăна, тепĕр чух пачах та ăнланма çук. Сĕм-сĕм вăрман, хура вăрман вăл хăш чух, тепĕр чух ялкăшакан çутă çурхи кун.

Асаилӳсен хумĕ! Асаилӳсен асапĕ! Асаилӳсен асамĕ! Эсир манра йăлтах пĕрлешсе кайрăр. Пĕрлешсе кайрăр та суллана-кан хунар çутинче çурхи тăман пулса чӳхенетĕр. Асап та тунсăх,

* Чайковский оперинчи хĕр, суккăрскер, ытла та хытă юратнипе вăл куракан пулнă.

хаваслăх та телей! Тунсăхĕ асапа куçать, асапĕ, епле йывăррине пăхмасăрах, чун-чĕрен тутлă ыратуне, ыратăвĕ хаваслăха, хаваслăхĕ телее куçать, пĕтĕмпе вара çакă — юрату хĕвелĕ. Чĕрене йывăр килнĕ вăхăтра, вăл юратнă, сурнă, тĕмсĕлнĕ вăхăтра, асаилӳсем ăна уçăлтараççĕ, чун кĕртеççĕ, — сулхăн каçра, калама çук шăрăх кун хыççăн килнĕ сулхăн каçра, кăнтăрла хĕвел пĕçертнипе çунса кайнă мĕскĕн чечеке шăваракан, уçăлтаракан, чун кĕртекен сывлăм пек.

Вĕсем икĕ хĕрачаччĕ: пĕри — Наташа, тепри — Дина. Лайăхрах хатĕрленсе университета кĕрес шухăшпа икĕ уйăхлăха яла таврăннăскер, эпĕ кăнтăрла вырăнтан хусканмасăр нӳхреп çинчи хӳтлĕхре истори, вырăс литератури, нимĕç чĕлхи вулаттăм, каçхине вара çамрăк учитель тусăмпа кӳршĕ яла — Савкаçа — вăйăа каяттăмăр. Тусăм Сергей (Сергей Егорович), Дина уйрăмах химие лайăх пĕлет, саккăрмĕш класри хĕрачасенчен чи сăпайли, чи ăсли, чи маттурри тесе, мана унпа паллашма сĕнчĕ. Вăйăсенче Дина хăйне, чăнах та, тĕлĕнмелле маттур тытать. Йăрăс пӳллĕ те çутă куçлăскер, янравлă сассипе юрласа ярсан, е хавассăн кулсан, ырăн çӳçенсе илетĕн, — çав таранччен чуна килентерет, итлес те итлес килет Динăн юхăм шыв пек юхакан сассине, курас та курас килет хăва хулли пек йăрăс та пиçĕ пӳне. Авкаланать-хуçкаланать хĕрача, юрлать-ташлать, ним чухлĕ те сăпайсăр туйăнмасть. Малтан эпĕ Дина сăпайлăхĕн сăлтавне чылайччен пĕлеймерĕм, пăхрăм-пăхрăм та тĕлĕнсех кайрăм: ара, курнăçланăвĕ çук-çке пачах та, мĕн туни пурте — уçăмлă та ансат. Ачалла, чунран савăнасси, ырă кăмăл, кăшт вăтанарах куласси чуна çавăрса илет иккен Динăна сăнаса тăрсан.

— Ну мĕнле? — ыйтать Сергей. — Кăмăлна килет-и? Паллаштарас-и?

— Паллаштар.

— Сана вырăс чĕлхин грамматики кирлĕ. Тăхта кăшт...

Тепĕр каç Дина фонетикăпа морфологи чăтлăхне кĕме хатĕрленекене хăй шыраса тупрĕ те кĕнекине алăранах тыттарчĕ. Ĕнтрĕкре куçĕ-пуçĕ йăл-ял çиçнисĕр пуçне нимех те асăрхаса юлаймарăм, тавтапуç тесе те ĕлкĕреймерĕм. Вальс ташлама чĕнесшĕнччĕ — хăюлăх çитереймерĕм. Тепĕр эрнерен çеç, кĕнекине тавăрса панă чух, тав турăм тата кăштах каласкаласа илтĕм. Вăйă хыççăн хĕре кил хапхи умне çити ăсатас йăла пур пирĕн енчи йĕкĕтсен. Эппин, ăсатасчĕ. Анчах мĕн сăлтав тупса

пырса çыпăçас-ха çумне? Эп çапла ним тума аптраса тăнă чух «Вальс-хурах» — арçын ачасем арçын ачасенчен хĕрачасене ал çупса уйăрса илес ташă — пуçланчĕ. Умра пĕр мăшăр çаврăнать: пăхатăп та — Сергей Егоровичпа Дина. «Ал çуп!» — чĕнет Сергей. Эп ал çупатăп та, юлташ пăрăнса каять. Эпир Динăпа çăмăллăн çаврăна-çаврăна, кула-кула ун çинчен пачах манатпăр.

— Эсир лайăх ташлатăр, — тет Дина.

— Эсир те...

— Эп мĕн-ха, чаплах мар. Вăт ман тантăш, Наташа — царица бала. Ната, эй, Наташа, кил пирĕн пата!

Сергей Егоровичпа Наташа пирĕнпе танлашаççĕ.

— Паллашăр: Наташа Гурьянова — «А» класри чи лайăх вĕренекен тата ташлакан, — тет тусăм. Хĕрача пуçне кăн! ывăтса хулпуççи çинелле çемçе пурçăн пек хумлă-хумлă ӳкекен çутă çӳçне сулахай аллипе пăлхатса илет, хаваслăн кулса ярать.

— Ой, Сергей Егорович, эсир пире пурне те чи лайăххи тесе мухтатăр. Хăвăра мĕн чул тарăхтармастпăр-ши хамăр.

— Вăл тем мар. Пӳртри çӳп-çапа тула кăларар мар-ха.

Хĕрачасем вăййа кашни каçах тухмаççĕ иккен, эрнере пĕрре — вырсарникун çеç — самантлăха курăнаççĕ вăйăра. Хĕрӳ вăхăт, тет-мĕн, экзамена хатĕрленеççĕ. Çав каç эп Динăна ăсатрăм-ăсатрăмах. Мĕн калаçрăмăр-ши эпир? Нимĕнех те пулас. Уйрăлнă чух Дина мана: «Текех ăсатма килмелле мар», — терĕ. Каччăсем çинчен шухăшлама иртерех, имĕш. Çакăн хыççăн хĕрача пушшех те асăмран тухмарĕ, каç пулассине кĕтекĕте хăшкăлакан пултăм. Вырсарникаçа аран-аран кĕтсе илетĕп. Пуçа вырăс глаголĕсем те, нимĕç артиклĕсем те кĕмеççĕ: шухăш унта мар, урăх çĕрте. Кĕтсен-кĕтсен, вырсарникаç çитрĕ-çитрех. Малтанах, пăхатăп та, Дина пур пекчĕ, кулли те, юрри те илтĕнетчĕ. Ăсатса ярас тесе пытăм та: «Çук», — теççĕ. Паçăрах кайнă-мĕн. Çапла вара, Динăна ăсатас вырăнне Наташăна ăсатмалла пулса тухать. Килĕ тĕлне çитсен, Наташăпа пурнăç пирки юмахласа чылай тăратпăр. Дина халиччен никампа та «калаçса» курман, тет, иккен. Яланах: «Ир-ха», — тесе пăрăнма тăрăшать, тет. Наташа каласа кăтартни шухăша ячĕ. Калаçас кăмăлĕ пачах та пулмасан, мĕншĕн-ха унăн куçĕ темле ытла та çуттăн ялкăшрĕ? Мĕншĕн-ха вăл куçран пăхма ытла та именчĕ? Тата мĕншĕн малтанхи каç ăсатма ирĕк пачĕ? Хама

хам çапла ыйту пара-пара эпĕ аптăраса çитрĕм. Ĕçсем малашне те йĕркеллех пымарĕç. Ташша чĕнетĕп, Дина ташша тухмасть, ун вырăнне Наташăпа ташлама тивет, ăсатма тăрап та — Дина вăйă саланиччен тахçан малтан килне «вĕçнĕ». Юлашки экзаменне те тытрĕç ĕнтĕ, уйрăлу каçĕ те пулса иртрĕ, эпĕ çаплах Динăна ăсатас вырăнне Наташăна килне çитерсе яратăп. Калас пулать, Наташа та питĕ чипер те маттур хĕрача, ман хуйха çур сăмахранах ăнланать. Дина çакăн пек хăтланнине вăл ырламасть: «Ытла мăнкăмăллă», — тет. Динăпа Наташа юлташлă, пĕр-пĕрин вăрттăнлăхĕсене те, ырă енĕсемпе çитменлĕхĕсене те аван пĕлеççĕ курăнать. «Мăнкăмăллă пулсан та, Дина япăх çын мар, чăн-чăн юлташ», — тет Наташа. Унпа эпир хапха умĕнчи сак çинче чылайччен калаçса ларатпăр. Хăш чух юрă та ĕнĕрлекелетпĕр. Киле кайнă чух вăл мана уй хапхине çити ăсатакан пулчĕ: «Халех кĕрсен, пĕрех çыврас килмест, ют шкулта мĕнле вĕренесси пирки шухăшлатăп, ӳссе çитсен кам пуласси те канăç памасть», — тет.

Пĕрре çапла Наташăпа сăртра çирĕк айĕнче тăратпăр. Аялта, çырмара, те вĕтлĕхре, те çăл патнерехри çӳллĕ йăмра çинче, шăпчăк кĕвĕлеме пуçларĕ. Эх, кăрăлтатать-çке, эх, шăхăрать, темиçе тĕрлĕ хуçкалантарать. Каçса кайса, çăвара карса итлетпĕр. Сисмен те, Наташа хулпуççийĕм çумне тĕршĕннĕ, алла çатăр! пăчăртанă, алли вĕ-ĕри хăйĕн, йăрăс пӳллĕ те вăрăм сарă çӳçлĕскер, пысăк куçĕсемпе таçта аяккалла, çырма леш енне пăхать. Чим, унталла пăхать-ши? Çук, тӳпе хĕрринелле пăхать, унталла пăхнине хăй те сисмест — хĕрача тарăн та тутлă шухăша путнă. «Алтынчеч, — тетĕп эп ăшăмра, — каснăлартнă Алтынчеч. Ылтăн çӳç, хăй йĕкĕтне кĕтсе тунсăхланă ылтăн çӳçлĕ пике».

Хăй çине сăнаса пăхнăран, Наташа кăртах сиксе илчĕ, вăтанчĕ: «Пĕлетĕн-и мĕн? — терĕ. — Эсĕ темле хăвна евĕрлĕ çын, кăсăкрах этем, вырăссем ун пек çынна одержимый теççĕ-ха, ялан шăтарас пек пăхатăн, пĕрре пăхса витĕр çунтарса илетĕн. Тата çавна асăрханă-и эсĕ? Ху çынпа калаçатăн, шухăшу таçта инçетре çӳрет. Хăш чухне эс эпĕ çумăнта тăнине те манса каятăн. Кала-ха, мĕн çинчен шухăшлатăн?»

Эпĕ кулса ятăм:

— Юмахри Акăшпи çинчен. Тен, Алтынчеч те...

— Ну, Алтынчеч тата... Эс тутар ачи мар вĕт. Акăшсем çинчен шухăшлах-ха, вăл чăвашсен те пур.

Тухăç ҫутала пуҫларĕ. Сывлăш сулхăнланчĕ. Сывлăм ӳкет пулас. Шăпчăк ҫаплах шăрантарать юррине. Тăрисем вăранчĕҫ, ҫӳл тӳпере чăрăлтатаҫҫĕ. Сасартăк вăн! туса иртрĕ хăлха ҫумĕнченех те чул, те тăпра муклашки. Ывăтаканĕ тĕмеске хыҫне выртрĕ пулас, курăнмасть. Тата тепĕр «граната» пăрахрĕҫ: чĕрĕ патак ҫирĕк вулли ҫумне пырса ҫатлатрĕ.

— Юркка, ан пытан, пурпĕрех палларăм, — терĕ те Наташа тĕмеске патнелле кайрĕ. — Мĕнле намăс мар сана!

Тĕмеске хыҫĕнчен пăхаттир пек мăнттай мĕлке ҫĕкленчĕ. Патнерех пытăм та, Наташа: «Мăкла Юркки ку, трактора вĕренсе таврăнчĕ», — терĕ. Хĕрача аллисене ҫурăм хыҫне тытнă та ним пулман пек тӳррĕн пăхса тăрать:

— А ну, каҫару ыйт. Хăй мана тус тăвасшăн, хăй вара ман юлташсене чулпа перет. Эх, эгоист...

Наташа Юрккана йăлтăр-ялтăр ҫутăлтарса ячĕ. Пăхаттир, вăтанса пуҫне чикнĕскер, тытас килмен ҫĕртен тенĕ пек, хĕрачан ҫинҫешке аллинчен ярса тытрĕ. Ҫупкă витрĕ-и, ҫук-и, е слона вăрăмтуна ҫыртнă пек ҫеҫ пулчĕ-и, Наташа сиксе сулахай аллипе ҫапма тăрсан, ахăрса кулса ячĕ те тапăнакана вашт! пĕлĕте ҫĕклерĕ.

— Ҫырмана пăрахам-и? — ҫаплах кулма чарăнаймарĕ тапаланакан-ҫыртаканскере алă ҫинче утьăкка сиктернĕ май.

— Яр ĕнтĕ, ҫитет! Шуйттан, упа. Турă пӳ панă та, ăс паман.

— Ҫакă-и савнийӳ? — терĕ ҫав хушăра улăп ман енне ҫаврăнса тата Наташăна ҫĕре тăратса. — Эпĕ кăшт самайрах тесе, малтан артподготовка тăвас терĕм.

— Юркка, — чĕнтĕм эпĕ ун патнех пырса. — Тайма пуҫа хĕҫ витмест, эп сана хисеплесе пуҫ таятăп, ҫилленместĕп, эсĕ те ҫилленсе ан ҫӳре. Мир, — терĕм шӳтлерех.

Улăп малтан шанмасăр, иккĕленсе тăчĕ. Эпĕ ăна куҫран тӳрех пăхрăм.

— Мир, — терĕ вăл, алла хыттăн чăмăртаса. Вара Наташăпа иккĕшĕ мана пĕрремĕш тарăн вар патне ҫити ăсатрĕҫ.

...Халĕ ĕнтĕ Динăсен кил-ҫурчĕ тавра виҫҫĕн ҫаврăнса ҫӳретпĕр: Юркка, Наташа тата эпĕ. Наташăпа Юркка нимĕнех те калаҫмаҫҫĕ пулас, пĕрле ҫӳреҫҫĕ анчах. Ҫӳреҫҫĕ-ҫӳреҫҫĕ те вăхăт ҫитсен уйрăлса каяҫҫĕ. Хĕрача манпа та, унпа та ăшшăн юмахлать, уйрăлса кайнă чух та иксĕмĕре те пĕр пекех ал парать. Пирĕн капла темле, пĕр хĕрпе иккĕн тан туслă пек,

пулса тухать. Хăш чухне мана Динăсен умне пĕччен тăратса хăвараççĕ те, эпĕ вара, çамрăк тирек çулçисем шĕпĕлтетнине итленĕ май, тарăн шухăша путатăп. Дина, урама тухман пулсан та, халиччен те çывăрса каяйман пек, ман пирки шухăшланă пек, тепĕр вырсарникаç манран тармасть пек туйăнать. Кăмăлламанран мар, ашшĕ-амăшĕ сăмах тăвасран шикленнипе çеç çапла хăтланать пек. Анчах эпĕ ĕмĕтленни каллех харама каять: Дина тепĕр вырсарникаç иртерех тарма мар, вăйăа пачах та пымарĕ. Эпĕ çур çĕрчченех кулянса çӳрени кăлăхах пулчĕ.

Инкек куçа курăнса килмест, тетпĕр эпир час-часах. Тен, çакă тĕрĕсех те пуль, анчах телей те тепĕр чух куçа курăнмасăрах персе çитет иккен. Çакна та малашне ĕненесех пулать пирĕн. Юнкун каç кино курса пĕтертĕмĕр те утатпăр çапла виççĕн: Юркка, Наташа, эпĕ.

— Чимĕр-ха, Динăна кĕтмелле, ăçта васкатпăр? — сасартăк ялт! сиктерчĕ мана Наташа. — Вĕсем малти ĕретре ларатчĕç, кая юлса пычĕç те — вырăн çукчĕ.

— Мана мĕншĕн систермерĕн?

— Пурпĕрех усси пулмастчĕ, пĕр енче — ашшĕ, тепĕр енче — амăшĕ.

— Паппи-мами, тен, халĕ те çумĕнчех?

— Çук... вĕсем иртрĕç ĕнтĕ, паппипе мами... Тăхтăр-ха.

Кăштран Дина пирĕн пата чăнах та çитсе тăчĕ. Хаваслă хăй. Шӳтлесе, алла ним пулман пек силле-силле чăмăртарĕ. Пурсăмăр та ăна ăсатма кайрăмăр. Хапха умĕнче, Юрккапа Наташа пĕр сисмен çĕртен çухалсан, Дина мана ӳпкелеме пуçларĕ:

— Виталий, — терĕ вăл япшар та уçă сасăпа, — мĕн чухлĕ каланă ĕнтĕ эпĕ сана, эсĕ çав-çавах мана итлеместĕн.

— Мĕн каланă?

— Мĕн каланă, тетĕн-и? Турăçăм, вăл ман сăмахсене хăлхине те чикмен иккен.

— Ыран каç та тух, çакăнта манпа çур сехет те пулин тăр, вара мĕнпур сăмахна, каланине те, каламаннине те «хăлхана чикетĕп», чĕре патне вырнаçаратăп.

— Ах, чее-çке эсĕ, Виталий, ах чее...

Кино-тавраш пулмасан та, тепĕр каç Дина вăйăа ир çитрĕ. Эпир ура тĕпĕсем ыратичченех унпа вальс ташларăмăр, чунчĕререн выляса-кулса савăнтăмăр. Вăйă вĕçленес енне кайсан, Динăна юриех çапла каларăм:

— Халĕ ĕнтĕ ман сирĕн хапхăр умне васкамалла. Ахаллĕн эс каллех куçран çухалма пултарăн.

— Хă. Куçран çухалас тесен эпĕ пахча витĕр те çухалма пит маçтăр.

— Эппин, пахча тĕлне кайса тăрас.

— Эпĕ хапхаран кĕретĕп.

— Эппин...

— Эппин, санăн мана халех алăран çатăрласа тытас пулать. Эх, Виталий, Виталий, çавна та тĕшмĕртейместĕн-çке.

Çакăн хыççăн Дина та кашни каç тенĕ пекех — вăйăра. Вăйă салансан, тăваттăн çӳретпĕр-çӳретпĕр те икшерĕн уйрăлса каятпăр, вара пĕр-пĕрин патне çĕнĕрен пырса тухатпăр. Хĕрачасене Юрккапа иксĕмĕр шăхăрма, шăпчăкла юрлама вĕрентрĕмĕр. Тăваттăн пĕрле шăхăратпăр та ахăлтатса кулатпăр. Динăпа Наташа тата ытларах туслашрĕç. Эпир те Юрккапа сăмаха самаях килĕштеретпĕр. Ман университета кайма вăхăт çитрĕ. Автобус çине лартса яма Динăпа Наташа пычĕç. Экзамен çирĕм куна çеç тăсăлать — эп вара хама çирĕм çула ăсаннăн туятăп.

Динăпа Наташа мана акă мĕнле ăсатрĕç. Лăк-тулли автобус лартма мар, чарăнса та тăмассине сиссе, вăл кĕпер урлă каçсанах Дина çул варрине тухса тăчĕ, пуçĕнчи косынккине сĕвсе илсе суллама пуçларĕ. Шофер сигнал парать, пăрăнма хушать. Çакна курсан, Наташа та, эпĕ те Дина патне çитсе тăтăмăр. Наташа хăлхана çурас пек шăхăрать, шофера чăмăрĕпе юнать. Лешĕ, çамрăк ача, машинине тăпах чарчĕ те ытла та хӳхĕм шăхăрнинчен тĕлĕнсе ахăрса ячĕ:

— Ну, шăхăратпăр та хĕрача пуçпа, ай-яй!

— Сана, явăла, тăнлавунтан шăхăртса ямалла, чут çеç таптаса каймарăн!

— Юрать ĕнтĕ, юрать, ларăр, сирĕншĕн çурри чуна...

— Шăл йĕрет тата!

Эпĕ чăматана хăпăл-хапăл автобус алăкĕнчен пырса чикетĕп. Хĕрачасем икĕ енчен иккĕн усăнаççĕ те, эх, çамкаран йăлял! чуптуса илеççĕ. Капла та юрĕччĕ, Наташши тата, питнекуçне юриех мĕскĕнлетсе, мана ураран пуçласа пуç тӳпине çити хĕрес хывать. «Тьфу, тьфу! Куç ан ӳктĕр пирĕн ачана», — тет. Те турă çынни темелле ĕнтĕ ăна, те юмăç карчăкĕ. Хăйсем чăтаймасăр кулса яраççĕ, вара автобус сăрт хыçнелле пытаничченех ал сулаççĕ.

Хусантан таврăнсан, Наташа улшăннине асăрхарăм — куçран сасартăк чăр! пăхакан пулнă, хирĕçет, яланах салху çӳрет. Кĕтмен-туман çĕртен каланă чăрсăр сăмахсем, час-часах йăлăнтарса пăрахса кайнисем мана тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтереççĕ. Пĕррехинче каçхине клуба кайрăм та, кăвак тӳпе тĕслĕ платье, чаплă чăлха та питĕ хаклă шурă çăмăл туфли тăхăннă Наташа, кăлкан пек сарă, çемçе çӳçне шурă та витĕр курăнакан сарлака бантсем çыхнăскер, ман пата чупса пычĕ. Клубра никамах та çукчĕ-ха, вăл çеç темшĕн питĕ ир çитнĕччĕ унта.

— Атя-ха манпа, — терĕ хĕрача вăрттăн сасăпа, — пĕр кăсăк япала калатăп.

Эпир тĕттĕмленсе килекен урама тухрăмăр. Çав вăхăтра çывăхрах купăс калани, такамсем юрлани илтĕнчĕ. Наташа шартах сикнинчен тĕлĕннипе, эпĕ вăл хама ăçталла илсе кайнине те сиссе юлаймарăм. Клуб тĕлĕнчи пĕр пысăк телефон юпи хыçне тăтăмăр, вара, хаваслă ушкăн иртсе кайса клуба кĕрсен, çывăхри тăвăр тăкăрлăкпа анаталла чупрăмăр. Çырма хĕрне çитсе карта çумне тăрсан тин лăштах сывласа яма май килчĕ. Хыçран йĕрлекен çук-и тесе, кăнн итлесе тăнă хыççăн, нимле сас-чĕв те пулманран, пăшăлтатса калаçма пикентĕмĕр.

— Камран таратпăр эпир, Наташа?

— Мăкла Юрккинчен.

— Мĕншĕн?

— Тĕсне-пуçне курассăм килми пулчĕ. «Кавча пыратăн-и?» тесе хăлхана çĕртет. Пымасан, вăрласа каятпăр, тет.

Каçĕ самаях сулхăнччĕ те, урама кĕпе вĕççĕн çеç тухнăскерсем, эпир çӳçенсе пĕр-пĕрин çумне йăпшăнтăмăр. Наташа тĕлĕннĕ пек пулчĕ: «Ха, эпĕ сан хулпуççийӳнтен кăшт çеç çӳлерех иккен», — терĕ. Виçĕнсе пăхрăмăр та, чăнах та çапла. «Çурăму шăнчĕ-и? — тет хĕрача. — Кил, çурăмупа çаврăн, ăшăтам». Тата тепĕртак калаçкаласа тăнă хыççăн эп ăна хапхи умне çитерсе ятăм. Хамăн темшĕн клуба каяс та, Динăпа тĕл пулас та килмерĕ. Куç умне çырма хĕрри, карта, аялта çуталса выртакан шыв тата Наташа тухса тăрать. Хĕрача текех: «Шăнса кайрăн пуль? Кил, çурăмупа çаврăн», — тесе калать пек. Э, чутах манса кайман, çав каç çӳç çумĕнчи икĕ бантран пĕрне таçта ӳкерсе хăварнă эпир, таврăннă чух тĕттĕмре ниепле те тупаймарăмăр.

Тепĕр каç Наташăпа Юркка çулпа пынине катаранах асăрхарăм. Хампа танлашсан, мăшăр ним пулман пек шăкăл-шăкăл

калаçнине, хушăран кула-кула илнине илтрĕм. «Кусем питĕ тату-çке, хирĕçӳ тавраш сисĕнмест-иç», — тесе хытă тĕлĕнтĕм. Эп пырса тухсан, мана хапăл турĕç. Тӳрех: «Дина ăçта, мĕншĕн халь те çук, чĕнсе кăларас», — тесе хучĕ Юркки.

— Чĕнес-тĕк, чĕнес. Тавай, эппин, Наташа, яра пар.

Анчах та Наташа Динăна чĕнсе кăларма ниепле те каясшăн пулмарĕ: «Юркка хăех кайтăр, вăл вĕсен хăтăшĕ». Каччă куçран çухалсан, хĕрача ассăн сывласа илчĕ, нимех те шарламарĕ. Унтан сасартăк: «Атя юрлатпăр», — тесе хучĕ. «Атя», — терĕм эпĕ те, унпа килĕшсе.

В поле, за околицей,
там, где ты идешь,
и шумит и клонится
у дороги рожь, —

пуçларăмăр хуллен. Малалла уççăнрах кайрĕ:

Ой ты, рожь, хорошо поешь,
ты о чем поешь, золотая рожь?
Счастье повстречается —
мимо не пройдешь.
Ой ты, рожь, —

терĕмĕр те юрра сасартăках пат татрăмăр. Тата тепĕр кĕвĕ тăсса ятăмăр. Ăна та юрласа пĕтермесĕрех иксĕмĕр те шăпăрт пултăмăр. Унтан Наташа килне кайма пуçтарăнчĕ. «Паянлăха çитет, — терĕ, — ыран та кун пулать, каçĕ те ниçта та тармасть». Çакăн пек хăтланни ырă мар тесе, эпĕ ăна Юркка килмесĕр ниçта та ярасшăн мар. Юлташ мĕн шутлĕ, ара, — хăй маншăн тăрăшса çӳрет иккен те, эпĕ тухнă тус-хĕрачине те чарса тăрайман. Юркка Динăпа пĕрле çитсе тăрсан, Наташа мана куç айĕн йывăррăн пăхса илчĕ те нимĕн те чĕнмерĕ — ырă та, усал та. Эпĕ Динăпа, Юркка Наташăпа пăрăнса кайрăмăр. Дина хавассăн ырă каç сунсан та, тантăшĕ хирĕç ним те шарламарĕ.

Тепĕр каçĕнче Юркка та, Наташа та урамра курăнмарĕç. Дина çапла пĕлтерчĕ: Наташа каçранах çывăрма выртнă. Юркки вĕсен умĕнче явăнса çӳренĕ-çӳренĕ те, лешĕ тухмассине сиссе, килнелле утнă — тухман çынна туртса кăлараймăн. Тата пуççапса çӳре-çӳре те тинке тухнă ĕнтĕ, ялан çапла ăçтан тӳсеен. Чăтăм тени вăл тимĕр мар, хытă туртсан тимĕр те татăлать. Дина калать: «Наташа манпа та урлă çеç калаçрĕ, — тет. — Манран та темшĕн питĕ ютшăнать. Тем сăмахпа кăмăлне хăвартăм — астумастăп».

Ёнтӗ ак Наташа урама пачах та ҫӳреми пулчӗ. Пӗр эрне курӑнмарӗ, ик эрне. Ҫаплипех, Наташӑпа урӑх калаҫаймасӑрах, Хусана та, Хусантан икӗ уйӑхлӑха Целинана та кайрӑм. Хӑйне юлашки вӑхӑтра тӗл пулаймарӑм пулсан та, кулли, кӑлкан ҫӳҫӗ, яштак та чечен пӗвӗ куҫ умӗнчен ҫухалмарӗ, тата хӗр хамӑртан мӗншӗн писнине пӗлменни канӑҫ памарӗ. Дина, ӑсатса ячӗ пулин те, асра та ҫук, ку вара, юлашки вӑхӑтра хам ҫине питех пӑхсах та кайманскер, тӗлӗкре курӑнса аптӑратать.

Малтан Свердловска, Свердловскран Кургана ҫити пуйӑспа пытӑмӑр. Те ялан Наташа ҫинчен шухӑшланипе, пуйӑсра пӗр сар ҫӳҫлӗ хӗрупраҫ Наташа пекех туйӑна пуҫларӗ: сӑнӗпичӗ, кулли, уйрӑммӑнах кӑлкан пек сарӑ ҫӳҫӗ — унӑнах ёнтӗ. Хӗр Ира ятлӑ иккен. Шадринск текен пӗчӗк хулара анса юлчӗ. Сквера ҫити ӑсатма кайрӑм. Ҫурҫӗр-Казахстанран кив йӗрпех килмелле пулсан, кӗрсе тухма ыйтрӗ, адресне пачӗ, пичче пур — пиччепе паллаштарӑп, терӗ. Хӑй япшарскер, Наташӑран та пӗрер ҫул кӗҫӗнрех пулмалла.

Уйрӑлнӑ чух эпӗ хӗре юриех питӗ сӑнаса пӑхрӑм: каснӑлартнӑ Наташа ёнтӗ, эккей, пулать те вӗт тамаша! — чӗлхи ҫеҫ вырӑс, чӑваш мар, ытти — йӑлтах Наташа, чӑлхи, ҫивӗтри банчӗ, кӗпи те пулин унӑнни пекех. Эпӗ ҫапла тинкерсе пӑхнӑран Ира именчӗ: «Ун пек пӑхма кирлӗ мар, Виталий, хӑратӑп эп ун пек куҫран», — терӗ. Ытла та ансат паллашнӑшӑн, ыйтмасӑрах адрес та панӑшӑн каҫару ыйтрӗ. Хӗрачана эпӗ лӑплантарма тӑрӑшрӑм, кулас шухӑш пуҫра та пулман, йӑлтах тепӗр майлӑ — ансатлӑхра сӑпайлӑх, тесе йӑпатрӑм. «Сана тахҫанах, унччен, палланӑ пек туйнӑран ытла та час ҫывӑхлантӑм, халӗ ёнтӗ уйрӑлас та килмест», — тесе Ирӑна пушшех те вӑтантарса ятӑм... Хам вара темшӗн: «Эп чӑваш ачи, чӑваш ачисем йӗкӗтле ҫирӗп сӑмах параҫҫӗ, ҫав сӑмаха мӗн виличченех тытаҫҫӗ», — терӗм.

Манӑн ҫак суя тупа хальччен ӑша ҫунтарать, мана намӑс, эп ҫав ултавлӑ сӑмахшӑн халь те пулин хама хам туртса ҫурас патне ҫитетӗп. Хам курасшӑн ҫуннӑ курӑну малашлӑхра тулли курӑнтӑрччӗ чӗреме, ку Ира мар, Наташа, тени пулманши ҫав сӑваплӑ ултав? Ҫапла, ӑна эпӗ «сӑваплӑ» теме хӑятӑп. Ларса тӗплӗнрех шухӑшлатӑп та ҫакӑн патне пырса тухатӑп. Ирӑна йӗкӗтле сӑмах парса, эп ӑна та, Наташӑна та, хама та улталаман иккен. Ира Наташа марришӗн, вӑл унӑн «йӗкӗреш хӑраххийӗ» ҫеҫ пулнишӗн эпӗ айӑплӑ мар.

Целинара, инҫетри Казахстан ҫеҫенхирĕсенче канăҫа пачах ҫухатрăм. Ҫитсен виҫĕ кунтан Наташа патне шĕлкăварлă ҫыру ҫырса ятăм. Кӳтсе ҫитнĕ чун епле тĕмсĕлнине, хăй шыранă пĕртен-пĕр хаклă та ҫывăх япалана тинех тупнине ним пытармасăр хут ҫине ҫыртăм. Ҫĕрĕ-ҫĕрĕпе ҫывăраймасăр ответ кĕтетĕп. Хăш чух хĕлле те час-часах ҫумăр ҫăвать, аслати те пулкалать, ҫулла юр ҫунине те курман мар, ман тĕллĕн вара, хальхинче, хаваслă тĕлĕнтермĕш — пĕр чип-чипер кун Наташăран ҫыру илесси — мĕн Казахстанран тухса киличчен те, тухса килсен те пулмарĕ. Ҫав тери йывăрччĕ мана, ыйăх вĕҫнипе тата ӳпке вăйсăррипе ачаран тертленекенскере, кĕрнеклĕ те ҫирĕп сывлăхлă юлташсемпе талăкне вунпĕр сехет кирпĕч йăтма, смена пĕтнĕ хыççăн хаҫат тавраш кăларма, вырăнти халăх умне тухса лекцисем те ирттерме тата ытти обществăлла ĕҫсене пĕр сиктермесĕр туса пыма.

Таврăнсан малтанхи каҫах Наташăна шыраса тупрăм. Пирĕн тĕлпулу вăраха пымарĕ. Тарăхнине кăтартас мар тесе, эпĕ пĕтĕм вăйран тăрăшрăм, ĕҫ тухмарĕ.

— Ҫырăва илтĕн-и?

— Илтĕм.

— Мĕншĕн ответ ҫырмарăн?

— Ҫырас килмерĕ... Ытла та айван эсĕ, Виталий.

— Эсĕ ытла та ҫăмăл шухăшлă.

— Эсĕ — тăм чĕлхе, йĕркеллĕ калаҫма та вĕренеймен.

— Питĕрех те аван-ҫке. Халĕ витĕрех куратăп сана.

— Эпĕ те...

Хусантан хĕллехи каникула килсен, чун чăтмарĕ — каллех Наташăпа тĕл пулса калаҫас терĕм. Вĕсем вĕренекен шкулăн интернатне пырса ҫитетĕп. Дина мана курсан сывлăх та сунмарĕ, вăрт! ҫаврăнчĕ те, никама пăхăнманлăхне ытла та уҫҫăн кăтартса, пуҫне каҫăртса, шăхăркаласа, мăнаҫлăн утса тухса кайрĕ.

— Хăшпĕрисем хĕрача койки ҫинче ларассине паттăрлăх вырăнне хураççĕ, — терĕ те алăка шалт! тутарса ҫеҫ хăварчĕ.

Наташа малтанах манпа калаҫас та теменччĕ. Вырăн ҫинче кĕнеке вуласа выртаканскер, тепĕр май ҫаврăнчĕ те хими учебникне ҫаплах алран ямарĕ. «Хими наукисен гранитне ырмиканми кăшлакансене — мухтав», — терĕм эпĕ юриех тӳрккессĕн.

— Чипертерех калаҫасчĕ, студент... Кăшламастпăр, ан хăра.

— Хăрамантан çумнах лартăм ĕнтĕ. Тен, кăштах канса илетĕр?

— Хĕлĕпех каннă, халь кăшт тăрăшса пăхсан та юрать.

— Студентсенчен вĕренĕр, студент пĕр каçра яппун чĕлхи хатĕрленсе хума пултарать, экзаменсене те ăнăçлах тытать.

— Эпир студент мар çав-ха, шкул ачи çеç.

— Шкул ачисĕр студент çук.

Çакăн пек перкелешӳ малалла та пынă пулĕччĕ-и, пĕр пуçтах кăна хĕрача, Наташа класĕсемех-ха, вĕсен ялĕсемех, ĕçе йăлтах урăхла çавăрса ячĕ.

— Мĕн воображать туса выртатăн ĕнтĕ, юратан вĕт Виталие, куллен çырса пыракан дневникна юри вуласа пăхрăм. Çынни хăвна хисеплесе Хусантан кунта çити килнĕ, эсĕ пур...

Сиссе те юлаймарăм, Галя Наташа кăçаттисене кăмака çумĕнчен илсе ман ума лап! лартрĕ.

— Кăшт арçын пекрех пул — тăхăнтарт.

Пăтаран пальттипе калпакне, шарфне вĕçертсе илсе вĕсене те пирĕн çинелле печĕ.

— Тăхăнтарт, хăюллăрах пул.

Эпĕ ахăлтатса кулса ятăм:

— Маттур, Галя!

– Эп маттурне пурте пĕлеççĕ, сан кăшт маттуртарах пуласчĕ.

...Урамра эпир вăрçмарăмăр, типпĕнрех пулин те, мирлĕ калаçрăмăр.

— Наташа.

— А?

— Сана сивĕ мар-и? Ăçталла каятпăр?

— Сивĕ мар, парк витĕр утар... Эс мана çулла питĕ çиллентĕн-и?

— Питĕ.

— Халь те çилленетĕн-и?

— Урама тухиччен вилес пек кураймастăмччĕ, халь апла мар.

— Эпĕ те.

— Мĕн — «эпĕ те»?

— Кураймастăм.

— Дневник пирки Галя калани мĕн япала?

— Тĕрĕс сăмах. Анчах та эпĕ сана тăвана юратнинчен ытла нихçан та юратман, юратма та пултараймастăп.

— Мĕншĕн?

— Мĕншĕнне хам та пĕлместĕп. Ан ыйт ун пек. Кăмăла пăсса яратăн, туслăха çырăвупа пĕтерсе хунă пек... Çав çыру

хыççăнах эс мана темле ютла туйăна пуçларăн. Тархаслатăп сана, урăх ан хускат юрату çинчен. Тархаслатăп, ыйтатăп, ан хускат. Тăванăм пул, пиччем пул...

Эпĕ ним калама аптăратăп. Ку темăпа урăх чăнах та калаçмастпăр. Уйрăлса кайнă чух Наташа питĕнчен тутапа сĕртĕнме ирĕк парать.

Хусанта кайран камитле хыпар илтетĕп: Динăпа Наташа анăш та тăвăш хытă вăрçă вăрçнă, тет. Пĕрне-пĕри каламанне хăвармасăр хăртнă, имĕш. Наташши вара, çурăлса каясла тарăхнăскер: «Сан Виталийӳ мана кукша çынна тура кирлĕ пекех кирлĕ. Тьфу! Тупнă камран кӳлешмелли», — тенĕ пулать. Лешĕ те парăнакан йышшиех мар çав. Ай-яй-яй! Пĕлетпĕр ĕнтĕ Дина мĕнлине.

— Ха! Мана питĕ кирлĕ. Тăххăр выртса та пĕрре тĕллен-местĕп. Эсĕ ăна вăрттăн пăтратрăн пире. Çынни вăл чипер çынахчĕ. Мăйĕнчен çакăнса çӳрерĕн. Асту, сан пеккисене чике тăршшех лартать вăл.

— Сана вара лартнă та пуль.

— Ха! Эпир сан пекех ямпăлкка мар-ха.

Вара икĕ тантăш, икĕ тус, пĕрне-пĕри вилес пек курайми пулнă. Унтан та ытларах, мана çисе ярас пек тăнă. Çакăн хыççăн эпĕ хĕрачасен умне те курăнма хăрарăм: тытĕç те «туртса çурĕç», сăсăл çеç вĕçĕ. Хăйсен туслăхĕ çапла пăсăлса кайнишĕн эпĕ питĕ те айăплине вĕсем яруççăн курнă. Çиллисем самаях тамалсан, пĕр-пĕрин çине этемле пăха пуçлакан, хайхискерсем иккĕш пĕр тĕрлĕ чаплă вăрттăн шухăш тытаççĕ: Наташа Куля текенскерпе, Дини вара... тăван шăллăмпах, Хветĕрпе, янкăшса çӳреме пуçлаççĕ.

Кули Хветĕрĕн тусĕ иккен, уйăрăлми туссем. Юриех вĕсене суйласа илнĕ ĕнтĕ, шуйттансем, чун шăрпăкĕсем, эпĕ вĕçĕхĕррисĕр юратакан айван та кулăшла çамрăк пикесем. Мана хытăрах витерес, тавăрас тенĕ.

Эпĕ малтан чăнах та хытă тарăхса кайрăм, чĕрене чăтаймасăр йынăша-йынăша яратăп. Хăйсене мĕнле майпа пĕтерсе хурас-ши текен усал шухăшпа пӳлĕмĕн урлăшĕпе тăршшĕне виçетĕп. Анчах урса кайнипе кăна ним ĕç те кăларма çук.

Тупăсем çывăхра кĕрлеме чарăнсан, разведкăна тухса кĕме шутларăм. Пирĕн Хветĕр Дина шанчăклăхĕ пирки иккĕленме те пуçланă иккен ĕнтĕ. «Питĕ йăлăнтармăш, ялан сан çинчен

ыйтать — сан майру пулман пуль вĕт вăл? Пăх-ха эсĕ ăна, шăллĕне çаклатнă, пиччĕшне ытараймасть, — терĕ ытти чух шӳт тума та, калаçма та питех ухата мар Хветĕр, — ил тархасшăн, асăнмалăх парнелесе паратăп, хирĕç качакасемпе çул маях мар-ха мана».

Эп чăтаймасăр кулса ятăм, Динине темле шеллесе кайрăм, тӳрĕ сăмаха вăхăтлă та уççăн хальччен те каламаншăн хама хам хытă ятларăм. Мĕн тăвас тетĕн, хĕре эп юратмастăп мар, анчах, тем сăлтавпа ĕнтĕ, калама та çук пысăк туйăмпа, вилес пек, юратаймастăп. Хушшăмăра Наташа кĕрсе тăман пулсан, тен, Динăран хаклă çын маншăн çут тĕнчипе те тупăнаяс çукчĕ-и. Çак шухăша каласах пулать ăна, урăхла юрамасть.

Вĕсем каллех иккĕш пыратчĕç: Наташа тата Дина. Хулран хула çаклатнă та каçхи урампа клубран килĕсене каяççĕ. Эпĕ сывлăх сунтăм. Хĕрачасем те хаваслансах саламларĕç. Ним пулман пек, уççăн калаçаççĕ. Утнă май, студент пурнăçĕнчен пĕрик юмах ярса патăм, — аптрамасть, кулаççĕ. Малтан Динăпа иксĕмĕр Наташăна ăсатрăмăр, унтан эпĕ — Динăна. «Пулнииртнине ман», — терĕм эпĕ уйрăлнă чух. Вăл чут çеç илтĕнмелле: «Ăхă, — тесе килĕшрĕ, пуç сĕлтрĕ, — эсĕ те манса кай, юрать-и?»

Калас тенине такки калаймарăм вара, çаплипех Хусана ăсантăм, хăйне çав-çавах юратма пăрахмарăм. Кăсăкла юрату, аптрамалла юрату — савние юратнă пек юратма тăратăп та кăмăл таврăнать, сивĕнсе каятăп; йăмăк вырăнне, маттур та ырă йăмăк вырăнне, хуратăп çеç — калама та çук хытă тунсăхлама пуçлатăп; курас, калаçас килет, юрланине-ташланине, савăннине-хуйхăрнине ытараймастăп. Пыр та вĕçне-хĕрне туп ĕнтĕ. Тен, çыннăн чĕрине тепĕр хут ыраттариччен ыраттарманни лайăхрах? Чăн та çапла пуль.

Наташши, асăмран тухма мар, унта тата шаларах кĕрсе ларчĕ.

Яла тепре март вĕçнелле, Хусантан района килсен, пырса лекрĕм. Кивĕ Саврăшран çырма тăрăх Савкаçа çитнĕ çĕре тĕттĕм пулчĕ. Лапка-лапка курак тăманĕ çăвать, пите, тумтире çыпăçать, пĕр самантрах шур упа пулса тăтăм. Клуб тĕлĕнче кăшт-кашт шаккантăм та шала кĕтĕм. Халăх хĕрсе кайса ташша çапать. Мана асăрхаканĕ асăрхарĕ, асăрхаманни асăрхамарĕ те. Паллă çынах мар çав эпир курнă-курманах пурте мăйран çакăнса ыталама. Пĕр ырханкка та хура ачана: «Наташа аппуна туп-ха», —

тесе хушрăм та хам крыльца çине тухрăм. Маттурскер «аппăшне» часах тупнă куран, алăка ярр! уçса ячĕ те: «Авă», — терĕ. Крыльца çинче тĕттĕм. Айккинерех тăнипе, алăк уçсан та шалти çутă ман çине ӳкмерĕ. «Ой, кам вăл çĕрле çӳрекенскер, эс, Ваççа, кĕрсе ан кай-ха, эп пĕччен хăратăп ют çынпа юлма», — текелесе, шиклене-шиклене çывхарчĕ.

— Эпĕ ку, Наташа, командировкăна килетĕп.

— Виталий?!

— Виталий çав. Мĕн эсир мана вилнĕ тесе шутлатăр-и?

— Апла ан кала-ха эс, Витя... мĕн-и, шăнмарăн-и? Кĕрсе кай ĕнтĕ, курса, ăшăнса тух.

— Курмалли — пĕр эсĕ. Шăнма вара — пуç тӳпинчен мунчари пекех пăс йăсăрланать.

— Питĕ ывăннă эсĕ, сиввĕн çеç калаçатăн.

— Çапла, ывăннă.

— Тата виç çухрăм юлать, çулсăр-мĕнсĕр...

Эпĕ Наташа çумнех пырса алла хулпуççийĕ çине хутăм. Габриела Мистралĕн «Сольвейг юррисенчен» темиçе йĕрки аса килчĕ те, эпĕ вĕсене сасăпах вула пуçларăм:

Çĕр ачашлать сана. Мĕн-ма вăл халь те
юлташăма ытамĕнчен ямасть-ха?
Тĕнчен мĕнпур енне çулсем каяççĕ...
Кил, савнă тус, кĕтмешкĕн пăрахмастăп.

Наташа, шăпланса, ассăн сывласа ячĕ.

— Кирлĕ мар, Виталий, эсĕ Пер Гюнт мар, эпĕ Сольвейг* пулаймастăп, хăвах пĕлетĕн. Санăн ман пек шанчăксăр та тӳрккес ял хĕрачисемпе çыхланас та çукчĕ.

— Тĕрĕс мар сăмах. Ăсат мана кăштах, вара ху камне пĕлетĕн.

...Радиоузел тĕлĕпе иртсе шкулпа танлашатпăр. Наташа, хулран тытнăскер, чылайччен темĕн шухăшласа утрĕ. Шкул крыльци умĕпе пынă чух вăл сасартăк чарăнчĕ те каллех ассăн сывласа ячĕ.

— Акă ĕнтĕ шкул та, тăван шкул, пире тек шăнкăравĕпе чĕнмест, таçта, ют çĕрте, вĕренсе çӳретпĕр, Шур Шывра.

— Эпĕ те час хăнăхайманччĕ.

— Университетра мĕнле?

— Хăнари пек. Шкул — килччĕ.

---

* Ибсен драминчи каччăпа хĕр.

— Атя-ха, крыльца çине хăпарса кăшт тăрар.

Шкул крыльци çине хăпариччен лапка-лапка юр пите çат çыпăçатчĕ, çăвара, куçа кĕретчĕ. Халь, электрохунар çутинче, карăнтарнă çип тăрăх шур мамăк чăмăрккисем шуса чупнă пек ӳкет, пире перĕнмесĕр, пире палламасăр. Юр çунине Наташа нумайччен чĕнмесĕр пăхса тăчĕ. Унтан, мана хытă тĕлĕнтерсе:

— Чĕнмест шур юр; ӳкет, ӳкет çĕрле вăл;
мĕн чухлĕ çунă, — алăк та уçаймăн.
Кĕтӳç кăвайчĕсем те сӳннĕ ĕнтĕ;
çулне Пер Гюнт епле, епле тупайĕ? —

тесе хучĕ. — Çук, тупаймасть. Мĕншĕн тесен, эпĕ Сольвейг мар, мĕншĕн тесен, мĕншĕн тесен... Эсĕ...

— Наташа, хĕрхен мана, кирлĕ мар.

— ...мĕншĕн тесен, эсĕ — Пер Гюнт.

— Наташа!

— Çапла, эпĕ — Наташа.

— «Пер Гюнта» Наташа кĕтмест. Мĕне кирлĕ шахвăртса калаçни, кĕтмест-тĕк, ан кĕттĕр.

Хуйхăллă Наташа куçран куçне илмест, пăхать, пăхать вăл, аллине хăй çапах та тартмасть. «Куратăн-и? — тет шăппăн, чӳхенекен тăман витĕр таçталла кăтартса. — «Кĕтӳçсем» ĕнтĕ хирте «кăвайчĕсене» тахçанах сӳнтернĕ. Эсĕ çĕтсе каятăн, Пер Гюнт, çул тупаймастăн. Хăратăп эпĕ сана ал пама та...»

— Эсĕ ан хăра.

— Хăратăп.

Ӳсме ярăннăскер, Наташа, йăрăс та çинçешке, мана шăпах янах таран пулать. Сылтăм аллине хулпуççи çине хучĕ, сулахаййине — кăкăрăм çине. Çемçе çăм тутăрĕ айĕнчен кăлкан пек çӳç пайăрки тухса кайнă. Электрохунартан килекен çутă хĕрачан пысăк куçĕсем çине ӳксе йăлтăртатать. Сăнăм питĕ хаяр курăннă-ши, Наташа çинçе те вăрăм пӳрнисемпе куçхаршисене, тутана, питĕме хыпаласа пăхма тытăнчĕ. Çавăн чух ĕнтĕ мана витĕрех çиçĕм çунтарса илчĕ.

— Иоланта, — ăс арпашнăрах çын пек хам тĕллĕн мăкăртатрăм эп, ывăннăскер, çурма тĕлĕрсе тăнă çĕртен сасартăк вăранса. — Иоланта.

Наташа, паллах ăнланчĕ.

— Çук, çук, — терĕ вăл куçне куçран пĕрре те вĕçертмесĕр. Икĕ çутă шăрçа хĕрачан шурă пичĕ тăрăх кусса анчĕ.

— Иоланта, эсĕ куçлă, куратăн, анчах та, çапах, — Иоланта. Эп сан куçна уçма пултараймарăм, эсĕ куçлă пулсассăн та — суккăр, тăванăм, юр пĕрчийĕм... ахалех — куççуль... кирлĕ мар, вырăнлă мар.

Хĕрача ĕсĕклесе ячĕ. Эпĕ ăна тутаран чуптăвасшăн пултăм — пăрăнать, ирĕк памасть. Таса куççуль шăрçисене чуптăватăп. Куççулĕ сивĕ те кăштах тăварлă, пĕчĕк ачан таса куççулĕ пек...

Асаилӳсен хумĕ!

Акă ĕнтĕ, асаилӳсен хумĕ, чакса каятăн, кайрăн, каях, мĕн тăвас тетĕн, ним тума та çук çав, иртнине каялла тавăраймăн. Халĕ çеç çумра Наташа тăнă пекчĕ, çухалчĕ. Ĕнтĕ йĕритавра каллех — каçхи тăман, хунар, калама çук тăнăç та чĕмсĕр тĕнче, пурте вилсе пĕтнĕ тейĕн, — шăплăх. Хунар, ахалех мĕлтлететĕн, куç хĕсетĕн, никам та никама кĕтмест, мана та кĕтмеççĕ, никама та кирлĕ мар эпĕ... Ман тăлăх чун...

Чим-ха, тăхта-ха.

Çывхарса килекен мĕлкене сăнанă май, хам мĕн тунине хам та астумасăр пулмалла, пирус кăларса хыпатăп, шăрпăк чĕртетĕп. Мĕлке пĕр вунă утăмра чарăнса тăрать.

— Эй, кам унта, крыльца çинче? — ыйтать те арçын ача, те хĕрупраç сасси. «Этемех-çке, йыт-качка мар», — тетĕп ăшăмра.

— Эпĕ ку, çулçӳрен, канма чарăнтăм.

Мĕлке савăнса кайса крыльца çине чупса хăпарать.

— Виталий!

— Наташа!..

Çак ытарайми саманта мухтав юрри юрлатăп.

Хаклă тусăм, вулаканăм, каçар мана, сăмаха вĕçлеймерĕм. Наташа пулчĕ ку, манăн Наташа! Мĕнле пурнать-ши, ыйтса пĕлем, вара, каярахпа, тен килне те ăсатăп. Каçарсам ĕнтĕ хăвпа пуплесе пĕтерейменшĕн, пĕлĕшĕм...

1964

УЙĂХ ÇУТИ

Вечером синим, вечером лунным
был я когда-то красивым и юным.
Неудержимо, неповторимо
все пролетело... далече... мимо...
Сердце остыло, и выцвели очи...
Синее счастье! Лунные ночи!

Сергей Есенин.

Кĕпитун мучи çенĕк алăкне чĕриклеттерсе уçрĕ те пусма çине тухса тăчĕ. Тулта кăнтăрлахи пекех çутă иккен. Çутта хăнăхиччен ывăç тупанĕ айĕн пăхса, старик тавраналла тинкерсе пуçларĕ. Пусма çинчен тĕнче таçта çити курăнать. Вăрттăнлăхлă та мăнаçлă тĕлĕнмелле чаплă каç! Йăваш, çемçе çутăпа пĕркеннĕ пĕчĕк садра çамрăк чиесемпе улмуççисенчен сукмак çине тĕрĕленсе хитре эрешсем ӳкнĕ. Пӳрт çумĕнчех ӳсекен лапсăркка çĕмĕрт тĕмĕнчен сăмсана ыррăн кăтăклакан çеçке шăрши, тутлă шăршă, килет.

Тула аялти кĕпе-йĕм вĕççĕнех тухса тăнăскер, Кĕпитун мучи йĕтĕн çӳçне шăлкаласа, кĕмĕл сухалне каçăртса çурхи сипетлĕ сывлăша, ĕçке юратакан çын эрех ланкканă пек, сĕлтен кайса çăтать. Халĕ ĕнтĕ вăл хăй ырăн çинчен мĕншĕн çĕкленнине те манчĕ пулмалла, тӳлек те капăр сенкер каçăн илемĕпе ватă чунне çăмăллатса, хăраса та тĕлĕнсе, урамалла лăкăштатрĕ. Кĕпитунăн витĕрех мар куçĕ, унччен ытла инçетринех палăртма пултарайманскер, уççăнрах кура пуçларĕ пек. Калиткине шăлтăрт хупса хăварса, мучи, ырханккаскер, калушне астукаласа, сылтăм ывăç тупанне çаплах куç çинчен илмесĕр, айлăмалла пăха пуçларĕ.

Уйăх пĕтĕм айлăма çап-çутă çутатать. Çемçе те ачаш çутă ăшĕнче, кĕмĕл тĕтрере, айлăм, вĕçĕ-хĕррисĕр анлă туйăнаканскер, тӳлеккĕн канать.

Мучин ĕнтĕ хăлхи те чаплах мар; хăш чух пĕрре чĕнсе мар, иккĕпе те çаврăнса пăхмасть вăл. Халĕ вара тĕлĕнмелле: çырмара, тулса çитнĕ сарлака пĕвере, йăлтăртатса-çиçсе выртакан шывра «экке-кей, экке-кей! ква-ка-ка, ква-ка-ка! кăвапа!» тенисем, «и-ях, и-ях! тăрăлл!» тесе витленисем, шапа чĕлхипе çухăракан тата ытти тĕрлĕрен саламлă сасăсем Кĕпитун хăлхине чанках пырса кĕреççĕ. Старик кăшт çеç палăрмалла, тутапа сухал вĕççĕн çеç, кулса илет те çав янăравлă кон-

церта тимлесех итлеме пуҫӑнать. Ҫирӗклӗхре, шапасенчен кунтарах, шӑпчӑксем тупӑшмалла шӑрантараççӗ. Юррине тӗрлӗ майлӑ хуҫкаласа, сапаласа ярса, шӑхӑрса та кӑрӑлтатса кӗрлеççӗ шереметсем. Ҫакӑн пек чухне пулӗ ӗнтӗ йывӑр шухӑшсем манӑҫаççӗ, чуна ҫутӑран та ҫутӑ, тасаран та таса ӗмӗтсем ҫавӑрса илеççӗ, ҫыннӑн юрлас килет, юратас килет, пурӑнас килет. Уйӑх ҫутиллӗ ҫурхи тӗнче мӗнле кӑна ырлӑх сӗнет, пурне те чун-чӗре витӗр кӑларас, чун-чӗре витӗр кӑларса ӗмӗрлӗхе асра хӑварас, ҫав ырлӑхпа халтан кайиччен киленес туйӑм ҫуралать.

Ҫичӗ ача ӳстерсе тӑр-пӗччен тӑрса юлнӑскер, Кӗпитун мучи ачисене мар, вунӑ ҫул каялла вилнӗ карчӑкне, Сухвие, аса илчӗ. Шӑп кӑна аллӑ ҫул ӗлӗкрех ҫак ҫырана, ҫуркунне, ҫакӑн пек ӑшӑ та уяр каҫ Кӗпитун Сухвипе килнӗччӗ. Мӗн ҫинчен калаҫнине халӗ астумасть ӗнтӗ, чуптӑвасси-ыталашасси те ун чухне йӑлара марччӗ-ха, пӗр-пӗринчен вилесле именнӗ, турӑран хӑрани сехӗрлентернӗ-тӗр, шӑпчӑксене тата шапасене ҫӑвар карсах итлени вара халь те асра, уйӑх ҫути те асра, Сухви аллин хӗрӗвӗ асра юлнӑ, ҫирӗп те пӗҫерекен алӑччӗ вӑл. Уйӑх ҫутипе, шӑпчӑк юррипе киленсе ҫӳреме вӑхӑчӗсем хӗсӗкрехчӗ те, Кӗпитунпа Сухви килкелетчӗҫ ҫак ҫыран ҫине. Аялта, ҫыран тӑрӑх, хӑвалӑх ӳсетчӗ. Авкаланса юхса выртакан шыв ҫийӗн, ҫӳлтен ҫӑвакан уйӑх ҫутине хирӗҫ ҫӑмӑлкка шурӑ тӗтре ҫӗкленетчӗ. Халь хӑвалӑхӗ курӑнмасть, касса пӗтернӗ, е, пӗвене шыв тулнӑран, аяла юлнӑ.

Ҫӳллӗ ҫыранта шуралса кайнӑ хӑрӑк йывӑҫ пек тӑракан Кӗпитун мучи иртнисем аса килсен ача пек савӑнчӗ. Унӑн ватӑ чӗри, ахаль чух анасласа та ҫывӑрса ҫӳрекенскер, тӗннӗскер, яштах вӑранчӗ, ҫӗн вӗллешӗн хӗпӗртенӗ шӑнкӑрч пек ҫунат ҫапса юрла пуҫларӗ. Такӑнса ӳкесрен асӑрханса, калушне ҫаплах астукаласа, ватӑ ҫын ҫыранпа тата кӑштах пычӗ те айлӑмах ҫитсе килме шухӑшларӗ. Шухӑшӗ вӑл акӑ мӗн пирки ҫитсе ҫапӑнчӗ-тӗр: Сухвипе ҫыранта миҫе хутчен ҫӳресен те, Кӗпитун ӑна ҫаран ҫине, айлӑма, илсе анайманччӗ. Мӗн тери анас килетчӗ йӗкӗтӗн хӗрпе ҫав ҫутӑ тӗтрелӗхе! Юмах тӗнчинче ҫӳрес килни кайран тӗлӗкре курӑнса мӗн чуль тилмӗртмен пулӗ Кӗпитуна! Улӑха анасшӑн мӗнле хытӑ ҫынни ҫакӑнтан та паллӑ ӗнтӗ: унтанпа аллӑ ҫул, пӗр этем ӗмӗрӗ чухлӗ вӑхӑт, иртнӗ, куҫӗ курми, хӑлхи илтми, йӗмӗ тӑхӑннӑ ҫӗрте тӑми пулнӑ, пурпӗрех манаймасть ҫавна. Мӗн тери кирлӗ япаласем манӑҫнӑ пуль, ку — ҫаплах асра.

Темле чут ҫеҫ палăракан пăшăрхану, иккĕленӳ ҫавăрса илчĕ старике: мĕншĕн питĕ шикленнĕ вара Сухви, хăй чунран килĕштерекен Сухви унпа улăхра уҫăлса ҫӳреме? Авланса арлăарăмлă пурăннă, ҫич ача ҫуратса ӳстернĕ, ĕмĕр куҫ уҫайми ĕҫре, нушара иртсе кайнă. Юрăри пек калас-тăк, ҫывăрмасăр курнă тĕлĕк пек иртсе кайнă. Ытла та кĕске иккен этем ĕмĕрĕ!

Ҫакăн пек ăслă та тĕрĕс шухăш пуҫне пырса кĕнипе Кĕпитунăн пăшăрханăвĕ пушшех ӳсрĕ. Пирĕн ыйха маннă, поэтланса кайнă ват ҫын пĕве урлă каҫса ҫаран ҫине те кĕчĕ ĕнтĕ. Ҫирĕк, хăва, ҫĕмĕрт, катăркас, пилеш тĕмĕсем хушшипе вĕҫĕхĕррисĕр уҫлăха, тип-тикĕс тӳремлĕхе, кăштăртатса тухрĕ. «Ырă турă! — ҫапла ахлатса каларĕ мучи, ывăҫ тупанĕ айĕнчен кĕмĕл тĕтреллĕ инҫетелле тинкерсе. — Ырă турă! Аллă ҫул ҫывăрнă иккен эпĕ ыйхăма ытараймасăр, аллă ҫул... Хĕрĕх ҫул арăмпа пурăннă, парăм мĕн иккенне ҫеҫ пĕлнĕ, ҫич ача ҫуратса ӳстернĕ, вĕсем ӳснишĕн савăннисĕр пуҫне урăх нимĕнех те туйман. Сухвипе, ачасем пулсан — ачасемпе, ҫакăнта аллă ҫулта пĕрре те пулин уйăх ҫути тухса курма ăс ҫитереймен».

Уйăх, таса сăнлă та пысăкскер, мучи ӳкĕнĕҫне ăнланнă пек, янкăр тӳперен ҫурхи тĕнчене тата тăрăшарах ҫутатать, ҫутă пайăркисем старикĕн йĕтĕн ҫӳҫне, кĕмĕл сухалне хыпаласҫҫĕ, хĕвне кĕреҫҫĕ, шурă йĕмĕпе кĕпи ҫинче ҫиҫсе выляҫҫĕ, тутинчен, куҫĕнчен чуптăваҫҫĕ. Сенкер каҫ мучие сенкер юрату ҫинчен сенкер юмах калать. Мучи ăна ĕненет, иртсе кайнă ĕмĕрĕн сĕм вăрманĕнчен тухса ҫурхи уйăх ҫути таттисĕр тăкăнакан вĕҫĕ-хĕррисĕр тӳремлĕх тăрăх йăмăхнă ĕмĕчĕ хыҫҫăн утать.

Эй, ҫутҫанталăкăн иксĕлми илемĕпе вăй-хăвачĕ, айăп ан тăвăр ҫак ватă ачана, хĕрхенĕр, — пӳ кивелет те чун кивелмест теҫҫĕ ҫав. Уттăрах, эппин, ĕмĕчĕ хыҫҫăн, уттăрах...

1964

ГОРИЗОНТРИ КĂВАК КОМЕТА

Мускав, Ростов, Тбилиси те Хусан,
Баку та Томск пире çула ăсатрĕ.
Çеçенхирте тытма хĕрӳ экзамен
пĕр харăс килтĕмĕр тухса.

Вутла çунтарчĕ Казахстан хĕвелĕ.
Питрен хĕнерĕç сивĕ çумăрсем.
Хăш чух ывăннипе пăхсассăн та ӳркевлĕн,
пуçа усмарăмăр, тусăмăрсем.

Çул айккипе Студент урамĕ вăрăм
хастарлăн ӳссе ларчĕ шур чултан.
Çунатлă юрă вĕçрĕ хир-хир тăрăх.
Çĕн çĕрсене юратрăмăр чунтан.

Студентсен юрринчен.

Целина планета...

Мĕнле галактикăра, хăш çăлтăрсен ушкăнĕнче вăл, çакă планета? «Уйăх çинче пурнăç çук, — тетпĕр эпир, — пулма та пултараймасть». Юпитерпе Венера та пĕр чĕрĕ клетка та çуратайман-ха. Марс пирки хĕрсех тавлашу пырать. Ăçта-ха вăл, çапах та, планета Целина? Пур-и унта пурнăç? Пур пулсан, мĕнлескер вăл? Камсем пурнаççĕ унта? Мĕн тăваççĕ? Кам уçнă ăна, хăçан? Интереслĕ-и унта кайса çӳреме?

Целина планета — Совет Союзĕ ятлă «галактикăра», Çĕпĕрпе Казахстан, Алтай «çăлтăр ушкăнĕсенче». Ăна çак ĕмĕрĕн çурринче совет çыннисем уçнă. Унта пурнăç малтан та пулнă-ха, анчах... вĕресе тăман. Целинан вĕçĕ-хĕррисĕр, пушă çеçенхирĕсем, уçман çеремĕсем, тĕкĕнмен вăрманĕсемпе сăрт-тăвĕсем вĕрин сывланă, тунсăхланă.

Тургай çеçенхирĕ... Казахстан... Çурçĕр Казахстан... Целина крайĕ, Целина планета... Çак вырăнсем, Çумăрсен Тинĕсĕ, Лăпкăлăх Тинĕсĕ тенĕ пекех, çынна илĕртнĕ, ун хăлхинче асамлăн янăранă, çула чĕннĕ.

Йĕри-тавра — куçпа виçейми çеçенхир. Тĕлĕ-тĕлĕпе типтикĕс, тĕлĕ-тĕлĕпе сăртлă. Хăшпĕр çĕрте сап-сарă кăлкан тинĕсĕнчен улăп тăприсем тухса, çĕкленсе тăраççĕ. Вĕсем кунĕн те çĕрĕн, ниçта каймасăр, таврара мĕн пуррине сăнаççĕ. Çеçенхир малтанлăха кăна вилĕ пек туйăнать. Пиншер кайăк хурсемпе кăвакалсем кӳлĕ хĕрринче хĕвĕшеççĕ, шурă акăшсем лăпкă шывсенче илемлĕн ишсе çӳреççĕ, чăпар чарлансем

чӗмсӗррӗн шывалла пăхса тăраççӗ; парттас пулă хӳрипе шыва çапать, мăн уланкă вӗтӗ пулăсене хăратса иртет; никам тытманнипе ватăлса çитнӗ çăрттан ăшăнма хăйăр юшкăнӗ çине тухса выртнă.

Хирӗн хăйне тӗрлӗ пурнăç. Е, пырсан-пырсан, сурăх кӗтӗвӗ курăнса каять, е — кӗтӳçӗн тăлăх юрти. Кун пекки вăл сайра пулать-ха, хăш чух вуншар çухрăм каятăн — никама та тӗл пулаймастăн. Анчах та сыхлăхна ан çухат: ак хăмăш чăштăртатса илчӗ, хир сысни шыв ӗçме анать иккен. Горизонтра сарăрах выльăх кӗтӗвӗ чупать. Кусем — хир антилописем. Вӗсенчен хăрамалли çук: пинӗ-пинӗпе чупса çӳреççӗ пулсан та, çынна тивмеççӗ.

Çеçенхир те çеçнхир. Сайра-хутра таҳçанхи кивӗ çул çине пырса тухатăн. Çак çулпа темиçе ӗмӗр хушши хорезмпа бухар купцисем Ирбитпа Тобольск ерминккисене каравансем çӳретнӗ, унта тӗрлӗ таварпа каçса кайсах суту-илӳ тунă.

Çеçенхир тенӗрен, çак тӗлӗнмелле вырăнсенче вăрмансем те тӗл пулаççӗ. Мӗнле кăна йывăç çук унта! Хурăн, çăка, юман... Хырсем те ӳсеççӗ! Çăра курăк — пилӗк таран. Хăйăр кăлканӗпе, тырсикпе юнашар çурçӗр енчи шурлăхсенче çеç çитӗнекен кӗтмел тӗмисем курнаççӗ.

Вăрман пӗтет те каллех çеçенхир пуçланать. Май—июнь уйăхӗсенче симӗсскер, чечекрескер. августра—сентябрьте хăмăрланать.

Çӳлте, тӳпере, çеçенхирсем çийӗн, теме систерсе хурчăка явăнать.

Ку вăл ӗлӗк çапла пулнă. Ун чухне те çынсем, халӗ çак Целина текен «планетăна» уçма хăтланса, нумай вăй хунă. Вунсаккăрмӗш ӗмӗр варринче вырăс çыннисем Ишимăн сылтăм çыранне крепость туса лартаççӗ. Çав вăхăталлах Яикрен Иртыша çити тăварлă кӳлӗсем хӗррипе тӗрлӗрен укрепленисем, маяксем, çӗр купаласа тунă хӳмесемпе редутсем ӳссе лараççӗ. Пӗр йӗрпе тăсăлакан çак укрепленисене Йӳçӗ Лини тесе ят параççӗ. Çакăнта пурăнакан Çӗпӗр казакӗсем — кунти малтанхи çӗрӗçлекенсем. Çӗр ӗçлесси, темшӗн, питех ăнăçмасть, тыррине мӗн чул акнă çавăн чул çеç илеççӗ. Пурăнма казаксене йывăр пулнă. Ана сухаланă самантрах тăшман тапăнса кӗнӗ те, ут утланса вăрçа çӗкленме тивнӗ. Петропавловскран Кокчетава, Акмолинскран Каркарала çити çеçенхире таканлă ут урисем таптанă. Каярахпа та лини казакӗсем

çĕр ĕçлесшĕн питех çунман, ирĕк пурнăç, походсен романтики илĕртнĕ.

Вунтăххăрмĕш ĕмĕр вĕçĕнче Раççейре пурнăç ытла та хĕсĕнсе çитет. Кашни ик-виç çулта пĕрре выçлăх килсе хуплать, утмăл кĕпĕрне таран выçă ларать. Çавна пулах-и, тен, инçетри Акмолинск çеçенхирĕсене куçса кайма патшаран ирĕк тухать. Вуншар пин выçă хресчен çемйи ĕмĕртен пурăннă вырăнсенчен хăпса «акмасăрах тырă пулакан» енсене çул тытать. Пин те сакăрçĕр тăхăрвуннăмĕш çулхи çулла Акмолинск таврашĕнче вунсакăр пине яхăн килсĕр-çуртсăр çын пухăнать. Тамбов, Курск, Пенза хресченĕсем казак салисене пырса тулаççĕ. Влаçсем вĕсене ниçта вырнаçма та ирĕк памаççĕ. Кĕр енне çав ушкăнтан пĕр пайĕ çеç аран-аран вырнаçкалать. Вырнаçтараканĕсем куçса килнисене чи начар вырăнсене яраççĕ: ăçта пăхнă унта типсе çунса кайнă шывсăр çеçенхир, тăварлă тăпра. Çакăнта пырса вырнаçнă çынсен çулталăкранах çĕн вырăнсем шырамалла пулнă. Ниçта та вырнаçайманнисен шăпи вара тата мĕскĕнрех килсе тухнă. Хĕллене пĕр пус укçасăр, пĕр татăк çăкăрсăр тăрса юлнă килсĕр-çуртсăр çемьесем ниçта кайса кĕреймесĕр пушă çеçенхирсем тăрăх сĕтĕрĕннĕ, лини çинчи казак салисене пыра-пыра кĕнĕ. Казаксем хăйсен çĕрĕсене туртса илесрен шутсăр хăранă. Лини çĕрĕсене хапсăннăшăн тарăхса, мĕскĕн мужиксене вилес патне çитиччен хĕне-хĕне саласенчен хăваласа кăларнă. Телей шыраса ывăнса çитнĕ выçă та çĕтĕк çынсем çеçенхирсем тăрăх куçса çӳрекен казахсемпе те хутшăнма хăтланса пăхнă, ĕç тухман. Лешсен хăйсен те пурнăçĕ чăтма çук сивлек пулнă. Вĕсене хăйсене те унччен лини казакĕсем лайăх çĕрсем çинчен хĕссе кăларнă. Хаяр та сивĕ çилсенче, çапса çăвакан çумăрсенче Раççейрен куçса килнисем хăлтăр-халтăр ӳплесене пытаннă, унта шăнса пăсăлса, выçăхса çитсе виле-виле выртнă. Çук, йышăнман вĕсене чĕрĕ чух кунти тулăх çĕр, вилсе выртсан çеç йышăннă... Ку — ĕлĕк çапла пулнă.

Халĕ — Целина планетăн юн тымарĕ урăхла, çĕнĕлле, хăватлăн тапать. Гитлера çапса аркатнă хыççăн темиçе çултан Целина планета çине техника, строительство материалĕсем килме тытăнаççĕ. Çаврăнăçуллă та хастар çынсем çеçенхирсенче çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлеме тапратаççĕ. Унччен улăп тăприсем çеç курăнкаланă пуш хирсенче пурăнмалли çуртсем, производство хуралтисем ӳсе-ӳсе лараççĕ. Тăпра тĕпчекенсемпе çĕр

йĕркелекенсем сухаламалли анасем каса-каса илеççĕ. Механизаторсем унта хăйсен хурçă учĕсене ĕрĕхтерсе тухаççĕ. Çул юсакансем, связистсем, автомобилистсемпе кооператорсем, сывлăха сыхлав работникĕсемпе культура, халăха çутта кăларас ĕç работникĕсем хĕрсе ĕçе тытăнаççĕ. Çĕнĕ пурнăç тăвас опыт пысăк пулнипе Целина пуçласа яраканĕсем, малтанлăха епле йывăр килсен те, пуç усмаççĕ. Эпир çĕнтерме вĕреннĕ, çĕнтеретпĕрех, теççĕ. Пушă та çара Целина планета пурнăç вĕресе тăракан ен, çынсене вĕçĕ-хĕррисĕр телей паракан ен пулмалла, теççĕ... Унта та кунта совхозсем ӳсе-ӳсе лараççĕ. Ак, Мире юратакансен совхознех илер. Ку вырăнта малтан кăлкан çеç хумханнă. Ниçта ни юпа, ни хуралтă курăнман. Пĕр çулхине май пуçламăшĕнче ятсăр кӳлĕ хĕррине темиçе автомобиль çитсе чарăннă. Çĕре темиçе çын анса тăнă та машинсене пушатма тытăннă, брезент палатка карса хунă, вăхăтлăх столовăй пекки тунă. Кусем çĕнĕ çĕре куçса килнĕ энтузиастсем пулнă.

Часах хирти çулсем çинче тусан тĕтĕм пек мăкăрланма пуçлать. Çĕр çухрăмри станцинчен йывăç, шифер, кирпĕч, цемент, тракторсем, куçса çĕрекен электростанцисем, плугсем, çăкăр, пахчаçимĕç, кĕрпе килет. Çынсем те килсех тăраççĕ. Вĕсенчен хăшĕсем пуçĕпех куçнă, хăшĕсем пĕр-ик çула тесе тухнă та кунта яланлăхах юлнă.

Çынсем никĕс валли шăтăксем чаваççĕ, пурăнмалли çуртсен каркасĕсене лартаççĕ, кӳлĕсем çинче хăмăш çулса стенасем тума маттă прессласаççĕ. Кĕркуннене вунтăхăр пин гектар çереме уçнă, çĕр хĕрĕх хваттер, общежити, механика мастерскойĕ, кантур çурчĕ, столовăй, магазин маçтăрласа хунă.

Çукчĕ совхоз, халĕ пур, Мире юратакансен совхозĕ.

Целина планета...

Анчах ăна «уçнă» хыççăн та нумай вăхăт хушши кун пек чĕнмен-ха. Пĕррехинче çĕнĕ çĕрсене студентсен ушкăнĕ килсе анчĕ, тет те, пĕр яштака та сарă хĕрачи, кăвак куçлăскер, тавраналла ывăç тупанĕ айĕнчен тинкерсе: «Здравствуй, планета Целина! Сывă-и, Целина планета!» — тесе каларĕ, тет, çинçе сасăпа. Çумĕнче патвар каччи те тăнă. Çакă та: «Здравствуй, планета Целина!» — терĕ, тет, баспа. Çавă самантран сопранăпа бас пĕрлешсе каяççĕ те паян кунчченех «планета Целина», «планета Целина» тесе янраса тăраççĕ. «Планета Целина» тени халь кашни утăмрах илтĕнет.

...Эпĕ, студентсен отрячĕн боецĕ Тамара Алексеева, хамăр тăвакан пилĕксĕр хĕрĕх ача вырнаçмалăх шкулăн пĕрремĕш хутĕнчен поселок çинелле интересленсе пăхатăп. Иккĕмĕш хутне хăпарăттăм та, унтан тавралăх тата аванрах курăнмалла, май çук-ха, купаласа ĕлкĕреймерĕмĕр: кирпĕч пĕтсе ларчĕ, хуть те çурăлса кай. Студентсен отрячĕн замполичĕ Толя Кармаков çав нушапа таçти шуйттан шăтăкĕнчи, Копейск хулинех çитсе килме тухса кайрĕ. Толя çитмелли çĕре çитнĕ, ĕç кăларнă курăнать: çĕр çухрăмри Мамлютка станцине кирпĕч составĕ-составĕпе киле пуçланă. Отрядри тăватă машина та хĕвел тухсанах станцинелле çул тытрĕ. Кунне иккĕ хутласа шоферĕсем сĕлтен кайнă, виççĕшĕ столовăйĕнчех, чей ĕçсе ларнă çĕртех, сĕнк пулчĕç. Çак кун тата тепре рейса кăларса яма шикленчĕç отряд пуçлăхĕсем, — темрен тем пулас пур, ирхине иртерех кайĕç, капла, кăнтăр кунĕнче, çӳреме те ансатрах, ахаль те ырми-канми чуптараççĕха «газикĕсене», хĕрхенме пĕлмеççĕ хăйсене те, машинĕсене те.

«Хĕрхенме пĕлмеççĕ» тенĕрен, пĕлеççĕ-ха ăна ачисем, хытах хĕрхенеççĕ, çӳреме юрăхсăр тенĕ пек япаласенех майлакаласа самай аван çӳретекен турĕç, карбюратор таран улăштарса хăтланчĕç. Пĕри тата кайри мостне те улăштарчĕ. Тĕрĕссипе каласан, çĕнетрĕç «ГАЗ-51» автомашинăсене, «çăпатисене» те пулин çĕнĕ тупрĕç, çĕтĕк «çăпатапа» епле çӳрĕн-ха, часах «ура уксахлакан» пулать. Тăваттăмĕшĕ вара, куç айĕн, вăкăр пек, пăхакан Этнер, Ильин хушаматлăскер, Толя Кармаковпа тата манпа чăвашла калаçса киленекен йĕкĕт, «ЗИЛпа» ĕрĕхтерсе çӳрет. Тултан пăхма кăна сивлек курнать вăл, вăхăт-вăхăт култарма пуçлать те, хырăма тыта-тыта ахăлтататпăр.

Акă, сăмахран, çакăн пек камитле ĕç: машинсем шанса парсан темиçе кунтан кусем студентсен облаçри штабĕ вырнаçнă Петропавловск витĕр иртсе пынă; Ишим урлă каçса кăна çитеççĕ, хулана кĕрес умĕн Этнерĕн хыçалти кустăрми, унччен те «ак-ак çурăлса каятăп» тесе çӳрекенскер, шап! тăвать, унтан чăшш! туса илет те, шофер кабинăран тухса тăрать. «Ăнлантăм, — тет вăл хăй тĕллĕн, — автоколонна начальникĕ Шелудько хăнана чĕнет...»

— Эй, кăйкăрсем! Шелудько чей вĕретсе хунă пулмалла, хăнана чĕнет, куратăр-и? — кăтартать Этнер лапчăнса ларнă кустăрма çине. Ыттисем те хăйсен якалса-çийĕнсе пĕтнĕ покрышкисене тапа-тапа пăхса машинăсем тавра утса çаврăнаççĕ. Ачасем кĕпĕрленсе пырса кĕнĕ чух Шелудько чăнах та чей ĕçсе ларнă.

— Ырă кун пултăр, начальник.

— Здоровеньки булы, — тавăрать леш те. — Як дойыхалы?

— «Дойыхалы»-мĕнĕ... баллон çурăлса кайрĕ-ха.

— Баллон?

— Баллон çав.

— А-а, баллон... Чей ĕçместĕр-и? Ĕçместĕр? Шел... — тет сĕтел хушшинчен тухса, йĕкĕтсем шăрт тăратнине асăрхаман пек пулать, украинец вĕт, шӳтлесе илмесĕр чунĕ чăтман-чăтманах. — Так вот, — тет ним кулмасăр, арăш-пирĕш сарăлса выртакан темле хутсене майланă май, — кхм... студентсен автоколоннин проблемисем... Студентсем целинана улттăмĕш çул килеççĕ ĕнтĕ. Автоколоннине вара кăçал çеç йĕркелерĕмĕр. Çитменлĕхсем нумай, нумай, мĕн каламалли. Саккунпа пире ултçĕр-çичçĕр машина кирлĕ, пирĕн вара пурĕ те икçĕре яхăн çеç. Апла пулин те, эпир июлĕн çурринчен пуçласа августăн вуннăмĕшĕ тĕлне плана чут çеç тултараймарăмăр. Тӳсме çук йывăр условисенче автоколонна вунă пин тонна груз тиесе пилĕкçĕр аллă пин тонна-километр рейс тунă. Ку мĕне пĕлтерет-ха? Акă мĕне пĕлтерет: машинăсем тӳсейменнипе саланса каяс патне çитиччен ĕçленĕ, запчаçĕсем вара — çук, çук, инструментсем те, ытти материалсем те çук.

— Пире запас пайсем кирлĕ мар, «çăпатасем» тупса пар.

«Çăпатасем» тесен, Шелудько пĕр вăхăта кăнн! хытса каять, унтан, ачасене шартах сиктерсе, кăшкăрса ярать:

— Эврика! Сирĕнтен кам та пулин кино ӳкерекен аппарат курнă-и?

— Ну, курнă пултăр, — тет Этнер. — Вара мĕн?

Çав хушăра Валерий темле алăкран пуçне чикет те кино ӳкерекен аппарат йăтса килет.

— Ак сире адрес: Маркс урамĕ, вуннăмĕш çурт, автотрест, директорĕ Дегтярев Степан Федорович. Ку аппарачĕпе ӳкерме пĕлни те кирлĕ мар, шăлт-шалт! чăр-чарр! тутарма çеç пĕлĕр тата директорне вĕçĕмсĕр ыйту парса тĕрлĕ майлă лартма ан манăр. Кайса килĕр. Шантарсах калатăп, покрышка ыранах пулать. Таганрогри радиотехника институчĕн «киношникĕсем» çапла турĕç иртнĕ эрнере, вĕсене те «çăпата» кирлĕ пулнă. Степан Федорович «Фитиль» çине лекесрен шуйттанран хăранă пек хăрать. Покрышкисем вара пур унăн, пур...

Çакăн хыççăн тепĕр куннех Шелудько тулли лавпа пырса çитрĕ.

Çапла çав, шкула хăвăртрах туса лартас тетпĕр, каçченех ĕçлетпĕр. Ак ĕнтĕ ĕç кунĕ пĕтрĕ, стена купалакан хĕрĕх çынран пĕр эпĕ çеç тăрса юлтăм кунта. Пурте столовăйнелле каçхи апата утрĕç. Эпĕ çеç чарлан пек пĕр вырăнта хытса, мăя тăсса поселок çинелле пăхатăп, Этнер Ильин таврăнмалли ене, горизонта, тинкеретĕп. Çак пысăк шкула туса пĕтерсе, унти пирвайхи шăнкăрава та илтесчĕ-ха. Ман тепĕр ĕмĕт те пур. Ун пирки çăвар уçма халь иртерех пуль-и... Тепĕр тесен, Этнерпе калаçрăм та ĕнтĕ ун пирки. «Маттур, — тет, — юлах çав, — тет. — Вара чуну каниччен хăвăн çăлтăрусене сăнаса киленĕн». Эпĕ астрономие чуна панăран тĕксе калать ĕнтĕ. Калатăрах. Тупатăпах эпĕ ăна, хамăн кăвак кометăма, тупатăпах. Анчах та, халлĕхе, кунсем пĕр тĕрлĕрех иртеççĕ-ха манăн.

— Тамара! Алексеева! Раствор! — теççĕ кашни кунах.

Ку ĕнтĕ мана кăшкăраççĕ. Эпĕ тăратăп та наçилккене раствор тултаратăп, ăна юлташпа иккĕмĕш хуталла çĕклесе хăпартатпăр. Р-раз! Ай, илемлĕ ĕçлетĕр-çке, тет тахăшĕ шăл йĕрсе. Ах, куласшăн-и-ха вăл пиртен! «Асту, раствор хыптаратпăр, — тетпĕр шӳтлесе эпир те. — Кирлĕ мар-и?» Çăварта хăйăр кăчăртататать. Ла-йăх кăчăртататать, эсремет. Никĕс хунă чух тата мĕнле аванччĕ: чи ансат формулăпа ĕçлетĕн, «ил те пăрах» текеннипе! Нумайрах ил те инçерех пăрах. Стена купаласси вара йывăртарах. Ак, кайса тăр-ха пĕри çӳле, эпĕ аялтан кирпĕч парам. Мĕнле телей вăл кашни кирпĕче, вĕçсе çитнĕ-çитмен, траекторин вилĕ точкинчен тытса илесси. Чăнах та, «вилĕ точка» ĕнтĕ: кирпĕч çӳлелле вĕçме чарăннă, аялалла анма та пуçламан-ха.

Эпĕ малтан шутланă тăрăх, целина вăл пушă çеçенхирпе çын сăнĕ пĕтнĕ этемсем. Çапла темесĕр! Целина вăл чи малтанах — стройка! Антив опера театрĕсемех курăнмаççĕ-ха таврара халлĕхе, балет та çук тейĕпĕр, целина сывлăшĕ пур! Тĕлĕнмелле ырă та сиплĕ сывлăш! Маншăн кунта шурă кирпĕч поэзи пулса тăчĕ. Шурă, чыс пек таса кирпĕч. Тата хамăр купаланă стенасем, шурăскерсемех.

— Алексеева! Тамара!

— Раствор-и?

— Ĕхĕ.

Тăратăп та утатăп. Малтан наçилкке патне, унтан трап тăрăх — пулас иккĕмĕш хута. Пăрăнма епле кансĕр! Кăшт йăнăш пуссанах, персе анма пулать. Растворне сахалрах хума та юрамасть.

— Тамара, пин ыйтăва хирĕç пин ответ пама пултаратăн-и? — тесе ыйтаççĕ арçын ачасем.

— Ухмах ыйтусем çине ухмах ответсем памалла пулсан, пултаратăп.

— Целинана хĕвелпе пиçме, мышцусене çирĕплетме е укçа ĕçлесе илме килтĕн-и?

— Çынсем умĕнче мухтанас шутпа килтĕм.

— Пурнăçа эсĕ ма пурнатăн?

— Пурнăçа-и? Сăвăлла калам-и?

Пĕлетпĕр эп те, эс те, тусăм:
мĕн — пурнăç? Вăхăтлăх телей.
Вара... вара пире çĕр пусĕ...

— Ай-ай! Хăвах çыртăн-и?

— Шекспир кукку. Çавахчĕ пулас... урăххи пулмасан.

Çакăн пек татса хурсан тин ачасем «ыйту пама» пăрахаççĕ.

Хĕвел анаспа общежитинелле таврăнатпăр. Таçтан Чайковскин романсĕ илтĕнет. Кĕвĕ янăранă май кантăк умĕнчи çамрăк хурăнсем çилпе чăшăлтатса илеççĕ. Пире, ĕçрен ывăнса таврăнаканскерсене, шăппăн юмах калама пуçлаççĕ. Хула, университет аса килет. Костя Бердичевский куç умне тухса тăрать. Вăл сăвă калать, сăввине ачасем кĕвĕлесе юрлама та тытăннă ĕнтĕ:

Çăлтăрсем пĕрне пĕри лексе кăчăртатаççĕ.
Кăчăртатчăрах-иç, çук вĕсен ăшши.
Халь тус-тантăшсем Казахстанра утаççĕ, —
Ашшĕсĕр те амăшсĕр епле пурнаççĕ-ши?

Каç çывхарсах килет. Çӳлте-çӳлте çутă та шултра çăлтăрсем çутăлаççĕ. Куç умне, хăй кунта çук пулсан та, Этнер тухса тăрать.

— Ку Кассиопея, ак ку вара — Акăш Альфи, — тетĕп эпĕ ăна. — Хăçан та пулсан эпĕ сана Андромедăна та кăтартăпха. Ун патне çитме сакăрçĕр пин çул çеç каймалла, инçех мар... Пĕр вăхăтра ман çĕр аллă хут ӳстерсе кăтартакан телескоп тăвас кăмăл пурччĕ. Линзисене те тупрăм. Тĕрлине. Вулама та нумай вулатăп. Тума, хăтланса пăхрăм та, тăваймарăм. Астăватăп-ха, саккăрмĕш-тăххăрмĕш классенче эп тĕлĕк курнăччĕ. Урампа пыратăп пек, пăхатăп — тӳпере тем чухлĕ комета. Питĕ нумай. Мана вара пĕри çеç кирлĕччĕ. Мĕншĕн-тĕр,

çав комета кăвак пулмалла, манăн комета. Кусен хушшинче кăвакки çукчĕ. Кăвакки пурах тесе, эпĕ нумайччен шухăшласа çӳрерĕм.

— Халĕ вара мĕнле?

— Халĕ... Пĕтĕмĕшпе илсен, халĕ нумаях юлмарĕ ĕнтĕ. Пиллĕкмĕш курс. Практика. Диплом. Унтан ĕçлеме пуçлатăп. Ăçта кăна ĕçлеме ан тивтĕр, мĕнле ĕç кăна ан лектĕр, кăвак кометăма шырама пăрахмастăп. Пĕлетĕн-и, тен, ун пек комета тӳпере çук та пулĕ. Эп пурпĕрех, пурнăçра мĕнле йывăрлăхсем, хуйхă-суйхă курма тӳр килсен те, ĕç епле ăнмасăр тертлентерсен те, хамăн кăвак кометăма шырама пăрахмастăп. Кунта, Целинара, ун координачĕсем темшĕн уççăнрах та çывăхрах палăра пуçларĕç, эпĕ çав кометăна халь-халь тупас пекех...

Хампа хам çапла калаçса тăрса, сисмен те, таврана чăнах та каç хупăрласа илнĕ. Кăнтăр енчен тӳпе хуралса килет, таçта инçетре çиçĕм çиçе-çиçе илет. Общежитинчен инçех мар хурăн кати хĕрринче кăвайт ташла пуçларĕ. Ун тавра пухăнса студентсем халап çапаççĕ. Кӳлĕрен пăс хăпарать. Пăчă.

Эпĕ столовăйне кĕрсе апат çиетĕп, Этнер валли те каçхи апат илсе, общежитине каятăп. Çитеймерĕ-ха тем... çулĕ йывăр çав, уйрăмах — виççĕмĕш рейс... Лăпкă пӳлĕмре вырăн çине тăсăлса выртсан та, кунĕпе хытă ывăннине пăхмасăрах, ниепле те çывăрса каяймастăп. Кăвак комета... Этнерĕн те хăйĕн комети çук-ши? Антив кăвак ан пултăр, симĕс пултăр, е — кĕрен. Тен, унăн комета вырăнне горизонт? Горизонт хыçне часрах çитсе курас килни. Çапла, Этнерĕн кăвак комети — инçет, горизонт. Ахаллĕн çын каça хирĕç, пĕччен çĕр çухрăма тухса каймĕччĕ.

О, ку этем! Хăватлă çын! Ăна горизонт ырми-канми хăвалать. Горизонт хыçĕнче мĕн пулса иртнине вăл часрах, епле пулсан та, çитсе курасшăн. О, ку тĕлĕнмелле çирĕп те шанчăклă, çунатлă çын!.. Эпĕ каллех Этнере «куратăп»: вăл халь станцире ĕнтĕ. Килме те тухать пулĕ.

Кузова юлашки кирпĕчне хурсан, кузов тулсан, вăл çаннипе тарлă çамкине шăлса илчĕ пулĕ. Анма васкакан хĕвеле куç хĕссе: «Питех ан васка-ха, манран пĕрех тараймăн», — терĕ пуль. Ак ĕнтĕ кабинине те шалтлаттарса хупнă, майлашса ларса зажиганине те пăрнă, машинăна çăмăллăн шоссе патнелле илсе тухать. Çуртсем, юпасем мĕлтлете-мĕлтлете юлаççĕ. Кĕпер, кĕпер хыççăн — темле будкăсем, Ишимра ачасем çуйăха-çуйăха шыва кĕреççĕ. Часах хула сăрт хыçне

пытанать. Умра — тем анлăш çеçенхир, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ тĕлте — çавра ала пек пысăк, хĕрлĕ хĕвел. Машина хытă пынипе кабинăра уçă, юрлас, калаçас килет. Паçăр пусса илнĕ шăмшака йывăрлантаракан туйăм сирĕлчĕ. Хĕвеле анса ĕлкĕриччен хуса çитес, часрах горизонт хыçне кĕрлеттерсе тухас кăмăл çуралчĕ. Эх, мăнтарăн йĕкĕт, хĕвеле эсĕ ниççан та хуса çитеес çук, мĕн чул кайсан та, епле хăвăрт пырсан та, горизонт вăл горизонтах ĕнтĕ, вăл ялан малта, инçетре пулать. Малалла ăнтăлакан ĕмĕт, паллах, çакна пĕлесшĕн мар. Ăна хĕвеле хыçран хăваласа пултăр, горизонт хыçне тухасшăн çунса пултăр. Горизонтра — унăн тусĕсем. Ăна кĕтеççĕ. Вăл ырана валли тата тепĕр машина шурă кирпĕч илсе пырать. Кирпĕчрен стена, стенасенчен çурт, çуртран шкул пулать. Шкулĕнче вара çăлтăр шутлакан айвансем, хам пеккисем, канăççăр Тамара пеккисемех ĕнтĕ, тăп-туллиех пулĕç. Тамари вара çак шкула учителе юлма шут тытнă иккен те, пурне те çăлтăр шутлама вĕрентет, кăвак комета шыраттарса тинкисене кăларать...

Çапла шухăшлать-и, çук-и Этнер баранкине унталла-кунталла пăркаласа пынă май, манăн ăна чăнах та çапла шухăшлаттарас килет.

Хĕвел горизонтра çурри кăна курăнать ĕнтĕ, пĕр хĕрри çеç юлчĕ... Мотор тикĕссĕн кĕрлет. Кун çути чакса-чакса пырать. Анăç теме систерсе талккишпех кăвар пек ялкăша пуçларĕ. Кабинăра — тĕттĕм. Этнер приборсем çине пăхса илес тенĕччĕ — курăнмаççĕ, çутă çутас пулать. Включателе пусать те, циферблатсем çинчи пĕчĕк лампочкăсем çутăлаççĕ. «Шыв», «бензин», «çу» тенисем тĕлĕнче стрелкăсем вĕттĕн чĕтрени курăнать. Спидометр утмăл кăтартать.

Айлăмсенчен явăна-явăна тĕтре хăпарать. Сăртлăрах тĕлсем тӳрем вырăнсемпе пĕрлешрĕç. Унта та кунта пĕччен çутăсем мĕлтлетеççĕ. Машинăна каç тĕттĕмĕ хупăрласа илчĕ. Этнер, хăйне океан айĕнчен çӳрекен кимĕ командирĕ пек туйса, тепĕр хут приборсене тĕрĕслерĕ. Тĕрĕслесе тухрĕ те кăмăлĕ тулнипе йăл кулчĕ. Фарăсене çутрĕ. Шофер ĕçне ăна ашшĕ, ватă водитель, вĕрентнĕ. «Машинăна ху организмна туйнă пек туйма хăнăх, ăçта шаккама, ăçта чĕтреме пуçлать, ӳсĕрсе-чыхăнса илет-и вăл, — йăлтах асăрха, лайăх тăнла, мотора хăв чĕрӳ таппине итленĕ пек итле, — тетчĕ ашшĕ. — Машинăна хускатса ун рычагĕсемпе çыхăннă хыççăн вăл вилĕ япала мар, тимĕр купи мар ĕнтĕ, вăл чĕрĕ организм, сана вăйлăрах пул-

ма май паракан организм. Апла-тăк, хăвăн организмушăн ху тăрăш, чирне вăхăтра асăрхаса, вăхăтра юсан». Нихçан та асĕнчен ямасть Этнер тахçан ашшĕ вĕрентнине. Çапла, Этнерпе машина — пĕрпĕтĕм организм.

Фара çутисем инçе ӳкеççĕ. Çав çутăсемпе «ЗИЛ» каç тĕттĕмне касса-çурса пырать. Çук, машина пĕр выркăнтах тăрать пек, каç океанĕ ăна çăтса ярассăн, сăвăрса кĕрессĕн хуплать, пусать, фара çутисен айккипе сăтăркăнса хыçалалла куçать. Шоферпа автомашина, хăйсен каçхи вахтине чăтăмлăн тӳссе, шухăша кайнă: авă малта, анăç ялкăшса сӳннĕ енче, вуткуçĕсем унта та кунта мĕлтлетеççĕ. Ав çăлтăр пек пĕр хăйçути. «Чим-ха, çав çутăсем çынсем вĕт, — терĕ Этнер хăй ăшĕнче, — кашни çуттăн хăйĕн чĕнĕвĕ, ăшши, хуйхи пур»... Авă, пĕр çути сӳнчĕ, ку ĕнтĕ вăл е кĕтме пăрахнине, е кĕтсе илнине, çавна пула кăмăл тулнине, икĕ чун пĕрлешнине пĕлтерет. Е тата çав çутă сӳнни — шанчăк сӳнни. Хăйçутине сӳнтернĕ пӳрт тулашри тĕнчене сигнал яма пăрахнă. Тĕттĕм çеçенхирте машинăра ларакан шофер çав килме пăрахнă сигналсене чĕрипе туять, вĕсене хирĕç хăвăрттăн малалла пырать. Пӳртĕнче хăйçутса хунă çынсем çав çутă пĕр вĕсен сĕтелне çеç çутатать теççĕ пуль. Вăл вуншар çухрăма курăнса инçетри çулпа иртекен пĕччен шофера хавхалантармасть, чун ăшшине парса хăй патне туртмасть, теççĕ пуль. Апла мар çав, йăнăшаççĕ вĕсем. Е тата Этнер тусĕсене илер: вула, йышăна пĕлмеççĕ виçĕ юлташĕ, нимле çутта та, нимле сигнала та! Пăхăр-ха эсир вĕсене, икĕ рейс турĕç те ирĕлсе анчĕç, унччен епле паттăрччĕ, — туртсан тимĕр татас пек. Этнер вĕсене йăлăнса тăмарĕ, пĕчченех çула тухрĕ, мухтанас-вĕçкĕнленес шутпа мар, горизонт чĕннипе, каçхи çутăсен музыкине, шăплăх музыкине итлеме, моторăн каçхи сассипе киленме... Çывраççĕ пулĕ ĕнтĕ халь, арлансем. Çывăрччĕрех, канччăр. Ма ӳплекес: нормăна тултарнă вĕт, каçхи тĕнче музыкине юратман туссем, çывăрăрах — паппине-нянине... Пĕр тус пур ман, шофер мар, çăлтăр шутлакан, вăт ку çывăрмасть пуль, хăйĕн кăвак кометине шырать ĕнтĕ. Вăт ку каçхи çутăсен çеммине аван ăнланать, сигналсене маттур вулать...

Çапла шухăшлать-и, çук-и Этнер, ман ăна шухăшлаттарасах килет, ахаллĕн вăл çеçенхирте çухалса кайма та пултарĕ. Шухăшлатех пуль-ха, ун пек шухăшлама пĕлмен çын каçа хирĕç, пĕр-пĕччен, хăй ирĕкĕпе, çĕр çухрăма ăсанмĕччĕ. Çу-

лĕсем çине тухса пăхсанах хăранипе çӳç-пуç вирелле тăмалла вĕт, уйрăмах çапса çăвакан çумăр хыççăн. Унта та кунта лакăм, путăк-шăтăк, тинĕс пек шыв. Ăçта пырса ан кĕр, унта путса ларатăн. Çулĕсем типсен те, вĕсем тăрăх çӳреме ай-яй ансат мар: машинуна пĕрре çӳлелле ывăтса ярать, тепре аялалла перет. Ахальтен мар ĕнтĕ пĕри, пирĕн пеккиех пуль-ха çулсене халалласа тĕлĕнмелле лайăх сăвă çырнă, чуна кайса тивет. Вăл сăвва эпĕ пĕрре мар вуласа тухнă. Ытарайманнипе, пăхмасăр калама та вĕрентĕм.

Çеçенхирти çулсем, выртатăр
ăçтан ăçта çити? Апап! —

тесе пуçлать сăввине Целина поэчĕ. —

Эп — кузовра сиксе ташлатăп,
çул хĕрринче ташлать — юпа.
Сиктернипе чутах ӳкмесĕр,
кабинăна ыталаса,
ташлатăп эп. Çула виçесĕр
вăрçса пыратăп, ылханса:
«Епле асаплă йăлăхтармăш,
хăпма пĕлмен палкавçă пек...»
Шофер,
машина,
эп пĕр ташă
ташлатпăр, — пĕтĕм машинпех.
Пăхма хăрушă сăнлă «шуххăр»
вĕçет ним çулсăр-мĕнсĕрех.
Пĕрре ăна çиет ман шухăш,
тепре — çул юсакансене.
Çапах та, тарăху иртет-мĕн.
Эп çитрĕм, ман анас пулать.
Водитель, тек сăмах илтеймĕн,
сан малалла ташлас пулать.
Ташлас пулать сан хир-хир урлă,
çатăрласа тытса рульне.
Сӳтес пулать сан пултаруллăн
хирти çулсен çăмхисене.
Тата мĕн чухлĕ çĕн çул хывĕç,
юлташăм, сан пек маттурсем.
Сире хăш чух чăтма çук йывăр.
Мĕн тăвăн, кирлĕ çул-йĕрсем...

...Общежити паçăрах шăпланчĕ. Сĕтел çинче чиклетсе ларакан будильникĕн çутатакан циферблачĕ вунпĕр çитесси вунă минут юлнине кăтартать. Манпа пĕрле пурнакан виçĕ студентка

таврăнса ыйха путрĕç. Тулта сасартăк çил хускалчĕ. Чӳрече умĕнчи çамрăк тирексен çулçисем хыттăн чăшăлтатса шавлама пуçларĕç. Тахăш пӳлĕмре лайăхах хупăнайман кантăк уçăлса кайса шалтлатни, ыйхăллă сасăпа такам такама ятласа илни илтĕнчĕ. Унтан çĕр çурса çиçĕм çиçсе ячĕ те тĕнчене ишсе антарас пек аслати кĕрслетрĕ. Çакăн хыççăн кантăка, икĕ чăмăрпа харăс шаккана пек, çумăр çапса çума тытăнчĕ. Çумăр ытла та хытă çунипе тимĕр витнĕ çивитти кĕрлесе çеç тăрать.

Куç умĕнче татах — инçе çулти Этнер. Те инкек ытла та кĕтмен çĕртен килсе тухнипе, пуçа тем хĕссе лартрĕ, пуç мимине «Хурал-Ту, Хурал-Ту» тени пăралать. Чим-ха, мĕн-ха вăл Хурал-Ту? Этнер килмелли çулпа çӳрекен кашни шоферах ылханакан тип çырман çӳллĕ çыранĕ! Çумăрта тип çырминче шыв шарлаттарса юхма пуçлать. Каççа ĕлкĕреймерĕ пулсан, пĕтрĕ-çке Этнер! Эпĕ ĕнтĕ çиçĕм çиçнине те, аслати авăтнине те, çумăр чашлаттарса çунине те асăрхамастăп, тĕттĕмре мĕкĕрекен «ЗИЛ-а» çеç куратăп умăмра. Шофер кабина кантăкĕсене тачă хупса лартнă, умри «дворниксем» çапса çăвакан çумăра кантăк çинчен ырми-канми шăлаççĕ, тасатса ĕлкĕреймеççĕ. Кантăкĕ витĕр мĕн те пулин курма май пулсан та, çумăрĕ витĕр нимĕн те курăнмасть: малта те путăк, те шăтăк... пĕлме çук. Машина сасартăках малалла ӳпĕнет. Шофер тормоза пĕтĕм вăйран пусса лартать, хăвăртлăх улăштармалли рычага шăкăл-шакăл калаçтарса илет. Тӳремрех çĕре анса тăрсан, машинăна чарать те фарăсен çутинче çул пăхма каять. Пĕрер вун утăмра васан пекки иккен, хăвăрт ĕрĕхтерсе килсен, тен, каççа та кайĕ. Вара каллех аялалла анмалла. Унта тепĕр васан пулма кирлĕ, ун урлă каçма пӳрсен, Хурал-Ту пуçланать. Ăна мĕнле çĕнесси шоферĕнчен, машинăран тата... турăран килет. Турри вара, паллах ĕнтĕ, çук... Машина, чуна ыраттарса йынăшса, пĕрремĕш васан патнелле тапранать. Васан варне çитсен çӳлелле туртăнма çеç тăрать, пăлханнипе шофер хăвăртлăха улăштарас вырăнне сцепление вĕçертет. Мотор урнă пек уласа илет, чах! пах! туса сӳнсе ларать. Мотор трубине пылчăк лекрĕ пуль тесе, машина айне кĕме тӳр килет. Чăнах та çапла иккен: пылчăк тулнă. Мотор çĕнĕрен уласа ярсан, тарăхнипе шăлне çыртса, шофер машинăна унталла-кунталла ярăнтарать. Малалла каяс пекки кăшт сисĕнсен, акселератора пĕтĕм вăйран пусса, мекеçлене-мекеçлене васанран ĕселенсе тухать. Савăн-

нипе Этнер каллех хăвăртлăха улăштарас вырăнне сцепление вĕҫертет, анчах машина урăх сӳнмест, ҫĕнтерӳллĕн малалла пырать. Лачкам йĕпеннĕскер, пылчăкпа вараланса пĕтнĕ аллисемпе руле унталла та кунталла та пăркаласа, хăш чух рулĕ итлеменнипе ун ҫумнех ҫыпҫăна-ҫыпҫăна ларса тепĕр васан патнелле анать. Кустăрмасем тормоза итлемеҫҫĕ, пылчăк тăрăх йĕлтĕр пек шăваҫҫĕ. Машина хăяккăн пыма пуҫларĕ, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтресе илчĕ, руль чут ҫеҫ шофер аллинчен тухса каймарĕ. Ăна аран-аран пăрса илсен тин машина ҫул хĕрринелле шума чарăнчĕ. Ҫакăн пек пырса алăсем ним пĕлми пулчĕҫ, йывăҫран тунă пек хытса ларчĕҫ, куҫ хуралса килет, сывлама сывлăш ҫитмест. Хал ҫук. Шофер, ҫутта сӳнтерсе, мотора чарса, сывлама пĕр вăхăт ҫумăр айне тухса тăрать. Ҫумăр иртес енне кайрĕ пулмалла, вĕтелчĕ, ҫапсах ҫуми пулчĕ. Аслати те аякра ĕнтĕ. Тĕттĕм, пăчă-тĕттĕм. Кăмăл пăтранни иртсен, Этнер мотора хута ярать. Фарăсен ҫутинче иккĕмĕш васанра юхакан шыв хуран курнать. Шофер ку васана та тĕрĕслесе килет: лешĕн пекех хăрушă мар иккен, водительсем кунта сахал мар тертленнĕ куран та, тĕпне чул сарнă... ҫӳлтен аннă хăватпа малалла ăнтăлса васана кая хăварчĕ. Ҫӳлелле, ҫӳлелле... Анчах ҫӳлтен аннă хăват пĕтсе-пĕтсе пычĕ, машина чарăнса лармах тăчĕ, иккĕмĕш хăвăртлăх ҫине куҫни те пулăшаймарĕ, пĕрремĕшĕ ҫине куҫма тиврĕ.

Этнер ҫурăм ҫинех выртнă темелле, баранкине икĕ аллипе те ҫатăрласа тытнă, акселераторне урара мĕн чул вăй пур — ҫав вăйпа пусса, шăлне ҫисе, ҫӳлелле улăхасшăн. Вырăнтан та тапранаймасть: кустăрмасем пĕр вырăнта ҫаврăнса тăраҫҫĕ, машина хăяккăн пăрăна пуҫларĕ.

— Тата кăшт ҫеҫ! Ну, кăшт ҫеҫ кирлĕ! — кăшкăрать Этнер. Мотор вăраххăн йынăшнă ҫĕртен чăнкăртатса чĕтреме тапратрĕ, темĕскерĕ татăлса кайрĕ-и, шаплатса сӳнсе ларчĕ. Этнер кабинăран сиксе тухса кузова улăхрĕ, ҫĕре шурă кирпĕчсем пăрахса тултарчĕ. Кустăрма айне кирпĕчсем хурса ҫăлăнасшăн ĕнтĕ. Ҫурăлса каяс пек тарăхнăскер, мотора хускатса урнă пек улаттарма тытăнчĕ. Хыҫалти кустăрмасем шăхăрса ҫаврăнаҫҫĕ. Анчах «ЗИЛ» вырăнтан та хускалмарĕ, кирпĕчсем пылчăк ăшне пулса пĕтрĕҫ...

Ҫакна куҫ умне кăларса тăратрăм та эпĕ шартах сикрĕм. Ҫав вăхăтра пӳлĕм алăкне такамсем килсе шаккарĕҫ:

— Эй, чĕррисем пур-и кунта? Тамара!

Ку — мана чĕнеççĕ-çке! Сиксе тăрса алăк çекĕлне вĕçертетĕп. Алăкра отряд командирĕ Марсель Еникеев, замполит Толя Кармаков тата... эй, турă, Этнер Ильин тăраççĕ.

— Тамара, юлташ-хĕрачусене тăрат та пирĕнпе атя-ха, кирпĕчне паянах тирпейлесе хурсан аванччĕ. Атту Этнер ирех çула тухасшăн, — тет Толя ăшшăн.

Эх, Толя, Толя... Паллах, пушататпăр, паллах, тирпейлетпĕр, халех, халех.

— Ну мĕнле, хĕрĕм, — тет Этнер Ильин мана шӳтлĕн çурăмран лăпкаса, — çумăр витĕр çăлтăрсем курнаççĕ-и? Е эсĕ вĕсене тĕлĕкре çеç куратăн-и? Халсем мĕнле, Алексеева юлташ, аякри тус, горизонтри кăвак комета?..

...Аслатиллĕ çумăр Этнер Ильина, студентсен отрячĕн чăрсăр боецне, чапа кăларчĕ. Тепĕр кунне черетсĕр рейса унпа пĕрле ытти юлташĕсем те тухса кайрĕç. Вĕсене Этнер çумăр килсе хупласан хăтăлса тухма кустăрмасене яваламалли сăнчăрсем, хăма татăкĕсем туптарчĕ, машинисене техуход тутарттарчĕ.

Студентсен çарĕ Целинара çитмĕл пилĕк кун, çуллахи каникул пĕтиччен пулать. Кăçал Çурçĕр Казахстанра сакăр республикăри вунă хуларан килнĕ вăтăр пин студент ĕçлет. Студентсен строительство отрячĕсене аслă шкулсенчи комсомол организацийĕсем йĕркелеççĕ. Отряда кашни студентах илмеççĕ. Лайăх вĕренсе пыракан, общество ĕçне хастар хутшăнакан çирĕп сывлăхлă примерлă комсомолецсемпе çамрăксене, вĕсем строительствăра унччен те пулса курнă пулсан çеç илеççĕ. Отрядсене йĕркелес ĕçе ВЛКСМăн Тĕп Комитечĕ ертсе пырать. Отрядри кашни боец ĕçе коммунистла тумалла, ĕçре пĕрне-пĕри пулăшса, çитменлĕхсем пирки куçран калама пултармалла. Комсомолпа производство, отряд йĕркисене çирĕп пăхăнас пулать. Совхозсенче пурнакансемпе туслăха ӳстерес, вĕсене вăй çитнĕ таран пулăшас тесе ырми-канми тăрăшмалла: агитациллĕ, политикăллă тата культурăллă-массăллă ĕçе, спорт ĕçне анлăн сарса ямалла. Кĕскен каласан, кунти халăх пурнăçне студентсен шефа илмелле. Ватти-вĕтти таранах. Боецăн норма тултарман пĕр кун та пулмалла мар, ĕçĕн пахалăхне ӳстерсех пымалла, ĕç хатĕрĕсене, техникăна, совхозпа отрядăн япалисене упрамалла. Пуринчен те ытларах çынсен пĕрне-пĕри, хăйсене хăйсем упрас пулать. Йывăрлăхсене тӳсĕмлĕн чăтса ирттермелле, ăмăртса ĕçлемелле, яланах вăр-вар, тирпейлĕ çӳремелле, çипуç та, сăн-пит те таса пултăр. Сухалпа çӳçе пуп

пек ӳстерсе яма ниепле те юрамасть. Эрех ĕçни тата картла выляни чи пысăк преступленисемпе тан шутланать...

Çак «çитмĕл çичĕ» требование кулленхи пурнăç норми туса хума пултаракансен çеç Целинари строительство отрячĕн боецĕ ятне илме тивĕç пур. Ахаль, рядовой, боец ятне илме. Талăкне тăват-пилĕк сехет çывăрса, ытти вăхăта производствăпа обществăллă ĕçре çунса ирттерме хал çитсен... Этнер Ильин ахаль боец мар, гвардирядовойĕ. Этнер Ильин — манăн идеал.

Кулленех, ĕç вĕçленмессерен, эпĕ хамăр тăвакан шкул çинче çав-çавах пĕччен юлма юрататăп. Халĕ ĕнтĕ поселока малтанхи пек пĕрремĕш хутран мар, иккĕмĕшĕнчен пăхса савăнатăп. Унăн çĕнĕ çурчĕсемпе урамĕсем кунтан ывăç тупанĕ çинчи пек курăнаççĕ. Авă — пирĕн общежити, ун çийĕн ялав вĕлкĕшет, пирĕн ялав; леререх — МТМ, мунча; пырсан-пырсан — магазин, клуб. Поселок хĕрринче — больница... Хурăн кати... Хурăн катинчен инçех мар — ятсăр кӳлĕ. Кӳлле хăмăш хупăрласа илнĕ. Çил çуккипе вăл та, кӳлĕ шывĕ те пĕр хускалмасăр тăрать. Сылтăмра, вашмăк çыран хĕррипе — каçма пекки.

Акă çав каçма çине иккĕн пычĕç: хĕрпе каччă. Ку кӳлĕре шыв тăварлă мар та, çăвăнма шутларĕç пуль-и... Çук-ха, шыв сирпĕтсе выляма тапратрĕç. Вĕсем çуйхашнипе хуйханнă чарлансем çĕкленсе кӳлĕ çийĕн хыттăн кăшкăрса явăнма тытăнчĕç. Кӳлĕ айккинчи сукмакпа тата иккĕн утаççĕ. Юрлани илтĕнет. Хăлхана:

Тепре тĕл пуличчен, хирсем,
тепре тĕл пуличчен.
Татах килетпĕр, Целина, —
Шăпах пĕр çул иртсен. —

тени уççăнах килсе кĕрет. Студентсен юрри. Студентсем хăйсемех хывнă юрă. Вăл каçхи шăплăхра çеçенхире таçта инçене вĕçет. Алла-аллăн тытăнса утаççĕ хĕрпе каччă, анакан хĕвелпе пĕрлешсе утаççĕ. Хĕвел канма каять, кусем — ăна ăсатма, лăпкă çеçенхирте шухăшлама, ĕмĕтленме, мĕн виличченех пĕрле пулмашкăн сăмахсăрах тупа тума. Вĕçĕ-хĕррисĕр сарăлса выртакан Целина планета вĕсене ырлăх, сывлăх сунать, хăй арки çинче ачашласа сиктерет, вĕсен юррине чĕре патне илет.

Этнерпе юлташĕсем таврăнмалли енчен, горизонтран, тулли те пысăк уйăх çĕкленчĕ. Вĕсем килмелли çула янкăр çутатса хучĕ. Этнер — горизонтри манăн комета, манăн кăвак комета. Ăна уйăх та юратать, ытараймасть, ырă çул уçса парать. Целинан асамлă уйăхĕ...

1965

ПУШАР

Вутпа выляма юрамасть, пушар тухать.
Халăх сăмахĕ.

Антун

Инçете илтĕнет вăйă сасси. Çурхи ака пĕтнĕ хыççăн каçхи уçă сывлăшра çĕрлечченех выляса кулать ялти яш-кĕрĕм. Юррисем е калама çук хаваслă, е чĕрене ыраттармалла тунсăхлă. Ĕмĕртен юрлаççĕ вĕсене пирĕн таврара. Кĕвви-çемми те кивелмест вĕсен, сăвви-такмакĕ те. Ташшисем вара — пĕрре юхăм шыв пек çемçен юхаççĕ, тепре шывсикки пек тапăртатаççĕ.

Акă ĕнтĕ сасă-чĕвĕ лăпланчĕ. Çамрăксем вăйăран салончĕç пулас.

Шухăша кайнă тĕттĕм-хура тĕнче çывăрма хатĕрленет.

...Кулине хапхине шăлтăрт! хупса, Антун мучи урама тухса тăчĕ. Кулине ăна килне çитиех ăсатасшăнччĕ те, вăйăран таврăнакан ачисем тĕл пуласран шикленчĕ. Аван мар... Антунăн вара никамран асăрханмалли те çук — арăмĕ вунă çул каяллах вилнĕ, хĕрĕсем качча кайса пĕтнĕ. Çурчĕ вăл енче мар пулин те, Антун, темшĕн, пĕве урлă сĕнкĕлтетрĕ. Нимĕн те илтмест, нимĕн те курасшăн мар, хăйпе хăй тем каласать.

Пĕвере — шыв шăмпăлтатни. Ăна çирĕксем хупăрласа илнĕ. Леререх çӳçесем шывра çӳçĕсене чӳхеççĕ. Тӳперен пĕвене ӳкнĕ çăлтăрсем сиввĕн йăлтăртатаççĕ. Нимĕскер те курмасть Антун, ĕлĕкхине, яш вăхăта куç умне ӳкерет, нимĕн те илтмест, вунçиччĕри Кулине сассине илтет.

— Эккей! Çапла юрлаççĕ-и «Айлюшинькалю!»* — терĕ тăп чарăнса, ыйхăран вăраннă пек пулса. — Итлетĕп, итлетĕп те... Çук. Мĕн каласса тăмалли пур. Апла мар. Эй, çу-ук. Пĕрин хулăн сасăпа тӳрĕрен, — Антун ку тĕлте пӳлĕне-пӳлĕне мăннăн юрласа илчĕ, — тепĕрин — Кулине пек çавăрттарса... Ейпух çапла. Ма суяс? Ĕлĕкхине çитмест... Çакăнтах çĕр... — Антун иклетсе илчĕ, пĕр вырăнта кăштах сулкаланса тăрса, малалла танккарĕ. Кăвар пек хĕрлĕ пысăк уйăх тĕттĕм вăрман хыçĕнчен мăнаçлăн çĕкленет. Çурри кăна тухнă-ха. Апла та, пĕтĕм тĕнче чаплăн çуталса кайрĕ. Пĕвере хĕлхемсем сиккелеме тап-

* Юрă ячĕ.

ратрĕç. Хура йывăççенчен мĕлкесем тăсăлчĕç. Çывăхрах сасартăк пӳрт курăнчĕ. Антун тĕлĕннипе тăпах чарăнчĕ.

— Чĕлĕм, — терĕ вăл, аллине шăлавар кĕсйине чиксе ярса, сăртран хăпарнипе пашкаса. Алли, кĕсйи çĕтĕк пирки, шăлавар пĕççинех кĕрсе кайрĕ. Чĕлĕмĕ вара атă кунчине аннă иккен. Аттине хывас тесе, Антун пӳрт крыльци çине пырса ларчĕ. Мекеçлене-мекеçлене, сура-сура аттине хывса чĕлĕмне илсен, çăварне хыпса, тепĕр кĕсйинчен енчĕк кăларчĕ. Чăпăкне тĕрĕслем пекки туса пĕр-ик хутчен паклаттарса сăвăрса пăхрĕ. Махорка та чышса тултарчĕ ак чĕлĕме. Халĕ ĕнтĕ вут кирлĕ. Шăрпăкне чарлаттарса çутса чĕлĕм чĕртме тытăнчĕ. Сисмерĕ Антун мучи, хĕрĕнкĕ пуç, шăрпăк пĕрчи сӳнмесĕрех хăма çурăкĕнчен крыльца айне кайрĕ, çĕрĕк пĕрене çумне, çĕтĕк-çурăк, хут, турпас, ытти ăпăр-тапăр патне майлашса выртрĕ.

Вăйă саланать

Пулса курнă-и эсир пирĕн таврара? Тухса курнă-и çурхи каç вăййа? Çӳлтен тулли уйăх шăрантарса пăхать. Куçпа виçейми тӳпе уйăх пăхнăран тата çӳллĕрех пек, анлăрах пек — тарăхрах сывлать, хитререх йăлтăрать. Çĕр кĕмĕл тĕспе витĕннĕ. Сывлăш, уçă та ырă сывлăш, тӳлеклĕ те артаклă аллипе ачашлать сире.

Тем тĕрлĕ тутлă шăршă сарăлать садсенчен, уйсемпе çарансенчен, ял çумĕнчи вăрмантан. Шăпчăк итлесе тăранмалла мар кĕвĕ кĕвĕлет тăрăшсах. Асамлă каç! Куçа шартаракан ытарайми каç! Чĕмсĕррĕн тĕлĕрекен çурт-йĕрсенчен, йывăççенчен тата япаласенчен вăрăм мĕлкесем ӳкнĕ. Пĕве çинче шăп та тĕттĕм. Унăн сивĕ те лăпкă шывĕ çирĕксемпе çӳçесем хушшине пытаннă. Вĕсен çулçисем хăш чух килсе тухакан çил варкăшĕпе шĕпĕлтетсе илеççĕ. Çӳлтен çаплах уйăх шăрантарса пăхать. Шăпчăк хитререн хитре кĕвĕлет. Чун савăнать, вăл анлă та капăр. Ун тĕпĕнче тĕлĕнмелле ырă çутă туйăмсем çуралаççĕ. Чаплă каç, мухтавлă каç...

Ак ĕнтĕ вăйă сассисем илтĕнмеççĕ. Яш-кĕрĕм килĕсене саланать. Антун ларакан крыльца умĕпе иккĕн иртеççĕ. Ăна асăрхаса, патне пычĕç.

— Мучи, — терĕ çамрăк хĕр, — киле каясчĕ сан, çĕр варринче магазин умĕнче мĕн туса ларатăн? Çыврас пулать.

Çамрăк хĕр çак магазинта ĕçлекен Нина иккен.

— Чăнах та, каймалла, — кăна Нина юлташĕ Сергей каларĕ, — ҫитменнине, пусма ҫинчех акăш-макăш чĕлĕм мăкăрлантаратăн.

Антун хускалса илчĕ.

— Чĕлĕ-ĕм? Мĕнле чĕлĕм? эпĕ ниҫт ата каймастăп. Тавах турра... Ĕмм-ĕмм, чĕлĕм... Чим-ха, ку кам пулчĕ-ха? Кулине, эсĕ мар-и?

— Кулине мар ҫав, унăн кĕҫĕн хĕрĕ. Тавай, тавай, килне кай. Лайăх мар кунта ларма.

— Эпĕ каятăп, — ĕхлете-ĕхлете ури ҫине тăчĕ Антун. — Эпĕ каятăп. Чĕлĕм те сӳннĕ.

Сергейпа Нина малалла утрĕҫ. Антун пĕр вырăнта ҫаврăнчĕ-ҫаврăнчĕ, ĕхлете-ĕхлете каллех крыльца картлашки ҫине ларчĕ.

— Ăм-м, ă, нимĕн те ăнланмаҫҫĕ...

Тепĕртакран хĕрпе качча килнĕ енченех велосипедлă ҫын «вĕҫҫе» тухрĕ. Лавкка умĕнче мĕлке курса сасартăк тормозланипе, велосипед урапи ҫула хыттăн сăтăрăнса шăхăрса илчĕ.

— Эй, кам вăл? — терĕ ҫын. — Ҫакăнтан иккĕн иртнине курмарăн-и?

Лавкка умĕ чĕнмерĕ.

Велосипед малалла, ҫырманалла, вĕҫтерчĕ. Ку вăл — Федя. Ним тăвайман енне, Нинăпа Сергей хыççăн, ҫиллине шăнарайманнипе, шăлне ҫисе ҫӳрет. Май пулсан, иккĕшне те хăлха чикки парĕччĕ вăл. Нинине — пĕр вăхăтрах унпа тата Сергейпе калаҫнăшăн, Сергейне — хăйĕн чи ҫывăх юлташĕн савнине туртса илнĕшĕн.

«Лавкка умĕ» чĕнме те пултарайман. Антунăн чĕлĕмĕ ҫаварĕнчен тухса ӳкнĕ. Хăй хутланса ларнă та сĕнк пулнă. Тата икĕ мĕлке курăнчĕ. Кусем Антуна асăрхамарĕҫ. Минтăпайпа Укҫине. Кăштран юрлани илтĕнчĕ. Людăпа Йăван килсе тухрĕҫ тĕттĕм тăкăрлăкран уйăх ҫутине, сăрт ҫамкине.

— Эх, — терĕ Йăван, юрлама чарăнса тата ассăн сывласа, — ҫунатăмсем пулсан, вĕҫсе анăттăм эп ҫакăнтан ҫырманалла.

Люда шăппăн кулса илчĕ.

— Эпĕ мăкăнь чечекĕ пулсан, ывăҫ тупанĕ ҫинче йăтса ҫӳрĕттĕн-и мана?

— Сало пулсан, ăшаласа ҫийĕттĕм.

Люда ҫилленсе кайнă пек турĕ:

— Тьфу, чĕлхӳ-ҫăвару. Кай кунтан, кай, кай.

Вăл магазин крыльци çине пырса ларасшăнччĕ. Уйăх çутинче такам кĕлеткине асăрхасан, шартах сикрĕ.

— Ваня, — йăпшăнчĕ хĕр Йăван çумне, — унта такам... шуйттан.

— Ăçта, ылтăнăм? — хапăл пулчĕ Йăван хĕр ытамне. — Ай, усал, ачана çапла хăратать-и-ха вăл. Эп ăна!

— Ух-х! — терĕ Йăван Антун хăлхинчен. Старик картах сикрĕ. Йĕкĕт ăна çавăтса тăратрĕ, тепĕр енчен Людăна тытма хушрĕ: — Атя-ха, эппин... Тяппа-тяппа утса пăхар.

Çак виçĕ кĕлетке хыçĕнчен тепĕр мăшăр тухрĕ. Алюшпа Укахви иккен, çырма леш енĕсемех...

Вăрттăн итлени

Пĕччен чух хăйне епле паттăр туйсан та, Сергей умĕнче йăвашланать çав Федя. Хăлха чикки те параймасть, çĕçĕ те кăлараймасть. Халĕ те вăл тăкăрлăкрах велосипед çинчен анса, Нинăсен енне йывăççен хýттипе шиклене-шиклене йăпшăнса пычĕ: ним тăваймасан та, мĕн пупленине те пулин итлесе пăхас хуть. Шăплăхра — мăкăртатса калаçни. Федя сывлама чарăнчĕ. Лутра йывăççем хушшинче — шурă япала. «Мĕн ку?» — шухăшларĕ Федя, çывăхарах пырса йывăç тĕмĕ хыçне пытанчĕ. Уйăх çутинче шурă кĕпеллĕ хĕрĕн шурă пичĕ курăнчĕ. Нина... Кофтине хывнă иккен. Сергей Федя енне çурăмпа тăнă, йывăç мĕлкинче кăшт çеç палăрать. Нина Федя ятне асăнни уççăнах илтĕнчĕ.

— Федя-и? Федя манăн çывăх юлташ, лайăх тус, — лăпкă сасăпа каларĕ Сергей. — Хăюсăрри анчах пĕтерет ăна, — Сергей тата темĕн хирĕçлерĕ, ăнланма пулмарĕ. «Пĕлесчĕ ман, мĕншĕн сивĕнчĕ-ха Нина?» — пăшăлтатрĕ хуйхăллăн Федя, хĕре тепре курас тесе тĕм урлă кармашрĕ.

— Ытла мемме вăл, сан юлташу. Эс манран мĕн-тĕр пытаратăн, Сережа. Улталатăн эс мана. Мана эс юратмастăн. Эс мана юратнине эпĕ нихăçан та ĕненместĕп.

— Пĕлетĕп, — килĕшрĕ Сергей, — сан Федьăна та хăв хыççăн çýретес килет, мана та вĕçертесшĕн мар.

— Ытала мана, Сережа, çырă çýçĕм, çăлтăр куçăм, ытала, ăмăрткайăкăм. Ытала мана, — терĕ хĕр пуçне каччăн сарлака та çýллĕ кăкăрĕ çине тĕршĕнтерсе. Хĕр сассинче — салхулăх, пăшăрхану: — Хăратăп эп, Сережа, ай, хăратăп. Сивĕтеççĕ сана манран, курсах тăратăп — сивĕтеççĕ. Темĕн çýçентерет мана, сивĕ...

Сергей Нинăна лăплантарма тăрăшрĕ. Çурăмĕнчен лăпкаса, шӳт тума хăтланчĕ.

— Пăх-ха, — терĕ вăл хĕре, çырма леш енне кăтартса, — пăх-ха, уйăх тухать.

Чăнах та, вăл кăтартнă енчен, каçхи тĕттĕм вăрман хыçĕнчен, хĕп-хĕрлĕ «уйăх» çĕкленет. Нина шартах сикрĕ:

— Ай! Мĕн аташатăн эс, Сергей! Уйăх тахçанах тӳпере! Пушар! Пушар!

...Укçине сак çине тăсăлса выртнă, пуçне Минтăпай чĕрçи çине хунă. Тӳпенелле пăхса выртать.

— Тусăм, эс мана мĕншĕн юрататăп теттĕн-ха?

— Эп сана юратап темен, ю-ю-ратап темен. Эсĕ х-ху калаттăн.

Укçине ассăн сывларĕ.

— Эх кăчухнехи çамрăксемпе... Кил-ха, пĕшкĕн-ха кунталла, пĕр сăмах калам.

Минтăпай, хушнине итлесе, кăтра пуçне Укçине пичĕ çине тайрĕ. Лешĕ ăна кăтринчен ачашласа тутинчен чап! çеç тутарчĕ. Тытăнчăклăн калаçакан йĕкĕт, хĕр ытамĕнчен аран вĕçерĕнсе, хăраса та çухалса кайса, çапла каларĕ:

— Пу-пу-пушар... Пушар.

Хĕр янраттарса савăнăçлăн кулса ячĕ.

— Пушар? То-тă.

Анчах, шăв-шав илтнипе, лайăхрах пăхрĕ те яштах тăрса ларчĕ:

— Миня, чăнах та! Пушар!

Чупрĕç.

Антун мучие хулĕнчен çакса килекен Людăпа Йăван лешĕн пӳрчĕ умне çитсен лăштах сывласа ячĕç.

— Фу, тĕреклĕ-çке ку старик! — качча çаннипе хăйĕн çамки çинчи тарне шăлса илчĕ. — Тыт-ха çак енчен, çакăнта сакки çине тăсса пăрахар, çывăртăр уçă сывлăшра. Милорд, — терĕ хыттăн Антуна хăлхинчен, — йăпансамăр çутçанталăк аркинче, эпир кайса чуптăвашар пĕр-иккĕ.

— Тьфу, чĕлхӳ-çăвару! — çурăмĕнчен çатлаттарчĕ Люда Йăвана. — Ват çын умĕнче намăса пĕлесчĕ хуть.

Йăван ахăлтатса кула пуçларĕ.

— Намăса? Ой! Ойтуру, камит! Ха-ха-ха-ха!

Старик турткалашса илчĕ, кăтăртаттарса хырăмне хыçма тытăнчĕ:

— Э-эх, пасар пойду — хĕр куплю-у-у, у! Кулине, тултар-ха тепре...

Хĕрпе каччă пăрăнса кайрĕç.

— Ваня, — йăпшăнчĕ хĕр йĕкĕт çумне йывăçсен мĕлкине кĕрсен, — пăх-ха мĕн вăл?

Йăван вăл кăтартнă еннелле çаврăнчĕ.

— Чим, Люда... пушар вĕт ку!

Алюшпа Укахви — мунча çумĕнче.

— Кофта тӳммисене ярам-и? — тет Алюш.

— Яр, анчах ан тат, — терĕ Укахви.

Алюш ăшĕнче çапла шухăшлать: «Кăкăрĕсем епле. Пĕççисем тата... Лайăх арăм пулать. Хулĕсем хулăн та çирĕп. Иксĕмĕр кăçал пĕр делянка вăрман касма пултаратпăр эпир. Пĕр кубометршăн тенкĕ те хĕрĕх пус. Мотоцикл туянатпăр, радиола, çăвакан машина, каярахпа «Москвич», пĕр-икĕ пура туса сутсан тата...»

Уках ĕмĕчĕ вара çапла: «Алюш пуян каччă. Çурчĕ чул. Банкăра пилĕк пин укçи пур, тет, шахтăран пуйса килнĕ. Райри пек ыр курса пурăнăпăр».

Çав вăхăтра мунча тĕлĕнчен таплаттарса та кăшкăрса çынсем чупма тапратрĕç.

— Пушар! Пушар!

— Магазин çунать!

...Таçта чан çапаççĕ.

Вут-кăвар тухсан

Антун шăрпăкĕ пусма айĕнчи çĕрĕке, çӳп-çапа тивнĕ, крыльца çунса пĕтсен, çулăмĕ магазина хăйне ярса илнĕ.

Халăх çитнĕ çĕре вăл явăнса çунатчĕ ĕнтĕ. Акăш-макăш пысăк вут чĕлхисем çӳлти пĕренесене çулаççĕ. Çатăртатса, шатăртатса ялкăшать магазин. Çулăм тӳпенелле кармашать-кармашать те çĕре вут-хĕм тăкăнать. Çынсем хĕм ӳксе пĕçернипе çуйăха-çуйăха яраççĕ. Сӳнтерме мар, патне пыма май çук вĕри. Кĕрлет халăх, ним те тăваймасть.

— Пăхса тăрсах çунтаратпăр-и? Ăçта намăс! — кăна чикмек тата пакур йăтса хашкаса çитнĕ Сергей кăшкăрать. Нина та унпа пĕрлех. Аллинче икĕ витре. Сергейпа иккĕш халăх хушшине кĕрсе кайрĕç.

— Ăҫта пожарниксем?!

— Кам пĕлет. Çывраççĕ пуль.

— Чĕнме ярас.

— Федя, вĕҫтер, хăв кӳлсе кил.

— Витреллисем, пурте —пĕвене! Хăвăрт!

— Тавай, тавай, мĕн пăхса тăратăр? Миçе пакур? Тавай, ку енне!

Сергей такамран пуртă туртса илчĕ. Шывлă витрепе Нина çитрĕ. Чаш! тутарчĕ Сергее пуçран тытăнса ури тупанне çити. Пуçне лачкам йĕпе çĕлĕк тăхăнтартрĕç.

— Виçĕ пин, — терĕ Нина Сергее айккинерех пăрса, — виçĕ пин тенкĕ халăх укçи...

Сергей Нинăна магазина вут сахалтарах тивнĕ енне туртса кайрĕ. Чӳречине çапса кăларса шал енчи тимĕр решеткене лумпа хайăрма пуçларĕ. Решетке, чуна ыраттармалла сасăпа хайрăнса, хăпăнса тухрĕ.

— Документсене те ан ман, — теме çеç ĕлкĕрчĕ Нина, Сергей чыхăна-чыхăна шала кĕрсе çухалчĕ.

Укçине Минтăпая сăмах чĕнме те памасăр чӳречерен тĕкетĕке кĕртет.

— Пуçна йĕпе тутăр çых, апăрша, — пĕрре кĕнĕскере кармашса çаннинчен чӳрече патне туртса илчĕ Укçине. — Кăтру çунса кайсан, мĕн тума кирлĕ эс мана!

Йăван çаплипех кĕрсе кайрĕ вута. Люда кăшкăрса макăрса юлчĕ.

— Шуйттан! Нихçан та çынна итлемест! У-у-у!

Часах Йăван тĕтĕм нумай çăтса анраса кайнă Сергее çавăтса тухрĕ чӳрече патне.

— Йышăн, Нина, каччуна! Эккей, мĕн чул хут çатăрласа тытнă хăй, янавар!

Сергей чӳречерен тухса ӳкрĕ. Нина документацине укçатенке уйăрса илсе ял Совет председательне шырама каясшăнччĕ. Лешĕ хăех ахăрашса килет:

— Пăхса тăма вăхăт çук! — кăшкăрать Уксах Якур, совет пуçлăхĕ. — Чик çакăнта, костюм кĕсйине, ытти хаклă япаласене çăлас пулать! Çĕвĕ машинисем, телевизор, ылтăн сехетсем, çăнăх, эрех! Костюмсем!

Пушар сӳнтерекенсем çитрĕç пулмалла. Халăх хыттăнрах кĕрлеме пуçларĕ, вута сӳнтерме пуçăнчĕ. Стена çумне çатăртатса çапăнать насуспа пĕрĕхнĕ шыв.

Çулăм маччана, çивиттине хыпса илчĕ. Магазин ăшĕ çапçутă. Унта кĕлеткесем мĕлтлетни курăнать. Вĕсене асăрхаса ытти пушар сӳнтерекен çынсем те япаласене çăлмаллине тавçăрса илчĕç.

Ăшталаннипе пуçа та пырса кĕмен-çке лавккара тавар пурри! Сергей тăрăх тепĕр витре шыв ячĕç, Минтăпай чыхăначыхăна кайса темĕн кăшкăрать, Укçине арки çине алă сехечĕсем шăкăрах тăкăнчĕç. Люда Минтăпая тулли витре çĕклесе пачĕ. Йăвана «уçăлтарма».

Магазинтан кăларнă таварсене айккине сĕтĕрсе тирпейлесе хума халăх ертсе пычĕ Якур, хуралçăсем уйăрчĕ, — йĕркке пултăр.

Алюшпа Укахви насус патĕнче тĕккелешсе çӳреççĕ. Вута кĕме — ухмах мар-ха... Чим, Федя ăçта-ха? Федя паçăрах ĕнтĕ магазин çумĕнчи склад тăрринче. Насус пыршине çирĕпрен те çирĕп чăмăртаса склада хӳтĕлет вăл. Пĕтĕм тавар складра вĕт, магазинĕнче нумай та мар. Епле ăнланса илмен-ха ыттисем çавна? Кăтартĕ-ха Федя паян Нинăшăн мĕн тума пултарнине. Вăл пулмасан, насус та майлаймастчĕç-ха шеремет пушарникĕсем! Федя чăн-чăн паттăр пекех курăнать çӳлте: кăшкăрать, приказсем парать, пакурпа хăш пĕренине туртса ӳкермеллине кăтартать. Акă вăл хаяррăн çухăрса ячĕ:

— Шалтисем! Çивитти пĕр еннелле шăва пуçларĕ!

Ачасем чӳречерен тапса-сиксе тухрĕç.

Минтăпай кăтрисем ĕнсе кайнă, пичĕ хăрăм кăна, кĕпи те, шăлаварĕ те çунать. Хăй ахлатать. Шыв ячĕç.

Йăван кĕсйинче çур литр эрех. Сулахай алли пиçсе кайнă, ыратнипе вăл шăлне шатăртаттарать. Люда савнийĕн шăлаварĕ çине йĕре-йĕре шыв сапать.

— Тьфу! — терĕ Йăван йĕрĕнсе. — То тамăкри пек пĕçерет, то шыв сапса чуна витереççĕ. Хыв луччă! Йĕмӳ-масару! — Çăнăх миххи çине ларчĕ. — Чим-ха, эрехне хăвар.

Кĕленчене сывă аллипе кăларса пăнкăлт! çĕре пăрахрĕ:

— Хыв, эппин!

Люда, ăна итлесе, çĕтĕлсе-ĕнсе, йăсăрланса тăракан брюкие йăпăр-япăр хывса çапрĕ. Йăван, пиçнĕ çĕрĕсем тӳсме çук ыратнипе, кĕске йĕм вĕççĕнех тапăртатса ташласа тăрать.

— Пар-ха луччă, — терĕ вăл тем аса илсе.

— Мĕн?

— Тьфу!! Эрех пар, уç пăккине!

Ăш хыпнă çын шыв ĕçнĕ пек çур кĕленчене яхăн лăнкăртаттарса ячĕ. Люда эрехе аран-аран туртса илме ĕлкĕрчĕ. Йăван урса кайрĕ:

— Мĕн? Шалккă-и? Çухал куç умĕнчен!

Люда айккинелле пăрахса тарчĕ. Йăван патне Сергей чупса çитрĕ:

— Çивитти анать!

Сергей пĕр ури çине аран çеç пусать. Йăвана çавăтса каялла сĕтĕрчĕ. Магазин çивиттийĕ шалтăртатса, халтăртатса, чашкăрса-кĕмсĕртетсе шуса анчĕ. Ухх! çеç турĕ. Хăрушă взрыв вăхăтĕнчи пек çӳлелле вут-çулăм пĕрĕхĕнчĕ. Федя мĕлки кĕлпе тĕтĕм ăшĕнче çĕтрĕ. Ун патне тата иккĕн-виççĕн улăхрĕç. Качча, чыхăнса кайнăскер, пĕкĕрĕлсе ларнă, ним курми пулнă. Ăна асăрханса антарса шывпа йĕпетрĕç. Çивиттипе мачча ансан, шала кĕме хăрушах мар ĕнтĕ — вут-кăвар пусрăнчĕ. Çунакан пĕренесене пакурпа аяккалла сĕтĕрсе илсе шыв сапса сӳнтереççĕ. Нумайăш çамрăксем çунса пĕтеймен япаласене кăларма кĕрсе кайрĕç. Насус татти-сыпписĕр сирпĕтет, харсăрскерсене çул уçса парать. Вут сассипе пĕрле эрех, одеколон-духи кĕленчисем шаплата-шаплата çурăлни илтĕнет. Таврана одеколонпа ытти шăршă сарăлнă; резина шăршипе çуннă тырă шăрши те пур. Пусма-тавар ĕнни те кӳ! килсе кĕрет сăмсана.

Ещĕкĕ-ещĕкĕпе эрех, миххи-миххипе шурă çăнăх, консерв-варени, кĕпе-тумтир, канфет-пĕремĕк, радио-телевизор сарăлса выртать урамра.

— Ишĕлни аван та пулчĕ-ха, — теççĕ пĕверен витрепе шыв йăтса пушар сӳнтерекен хĕрарăмсем, — вута хупласа хучĕ.

Алюшпа Укахви те вут ăшĕнчен тавар çăлма пикенчĕç. Акă пĕр ещĕк «шампански». Алюш Уках хăлхинчен тем пăшăлтатрĕ. Аякка илсе кайрĕç ещĕке. Пахчана вашт! кĕрсе ларчĕ ещĕк.

— Тата пĕр-иккĕ пулсан аванччĕ, — кăна каллех Алюш каларĕ.

— «Московски» те кирлĕччĕ.

Пилĕк-ултă ещĕк тĕрлĕрен эрех тултарчĕç савнисем. Çăнăх миххисене куç хыврĕç. Сахăр. Хаклă йышши канфет пĕрер ещĕк.

Юлашки çĕклемпе килсен, кăмăл тулнă пек туйăнсан, Укахĕ пахчара юлчĕ — халăха тăн килсе кĕриччен, тул çутăлма пуçличчен, шанчăклă çĕре çитермелле çак пĕтĕм тупрана.

«Ну, вăйлă пулать ĕнтĕ туй!» — Куçран пăхсах ăнланаççĕ пĕрне-пĕри ик савни...

* * *

Пушара сӳнтерсе пĕтерсен, вут-çулăм аснă вырăна асăрхаса тăма çын тăратса хăварсан, халăх саланчĕ. Халтан кайнă, лачкам йĕпеннĕ, хăрăмланса-пылчăкланса пĕтнĕ ыйăхлă çынсем асăрхамарĕç Антуна. Часрах çитсе вырăн çине йăванса каяс шухăш çеçчĕ пуçĕсенче вĕсен. Пушарни шăнкăравĕ шăнкăртатса иртни те вăратаймарĕ, кансĕрлеймерĕ Антуна.

Уйăх ката хыçне анса тул çутăлма пуçласан çеç, ват шăмшаккине ирхи сулхăн çапсан тин, йăшаланса илчĕ вăл, анасласа тăрса ларчĕ.

— Эх-хе-хей, — тепре анасларĕ Антун, — ăçта килсе ӳкнĕ эпĕ? Епле? Çапса вĕлерсен те астумастăп.

Çав хушăра тăкăрлăкран такам кăшкăрса юрлани илтĕнчĕ. Хăлхине чанк тăратрĕ Антун: кӳршĕ ачи Йăван мар-и? Ялан-хи йăлапа чĕлĕмне хыпалама пуçларĕ, тупаймарĕ. Астăваймасть мучи — чĕлĕмĕ те, енчĕкĕ-махорки те лавкка крыльци çине ӳксе юлнă. Вĕсене халь мĕн чул шырасан та тупаяс çук ĕнтĕ Антун. Вунçич çулти яш ĕмĕрне тупаяс çук пекех...

1966

КИВĔ АРМАН

Ыран пирĕн ялта кивĕ çил арманне сӳтеççĕ. Çав çил арманĕ ялăн кăнтăр енче, çырма урлă каçсан, хирте, чĕмсĕррĕн сĕнксе ларать. Ултă çунатран иккĕшĕ çеç юлнă ĕнтĕ унăн, вĕсем те пулин тĕрĕс-тĕкел мар: хăраххин кĕрепли кăна кăнтарса тăрать, унта çапнă çӳхе хăми хăпăнса çилпе вĕçсе пĕтнĕ. Арман тăррин пĕр енне çил сĕвсе пăрахнă. Пĕлтĕрсенче чи çӳлте шăвăç автан çил ăçтан вĕрнине хăйăк! хăйăк! тесе кăшкăрса пĕлтерекенччĕ, пĕсехине çиле хирĕç, хӳрине çиле майлă тытаканччĕ. Кăçал çав «автан» та курăнмасть. Çавна пулах-и, арман çил пур чух та, çук чух та çаплах «çывăрать», уçă çилпе хавасланса çуначĕсене сулкаламасть. Арманăн «мăйĕ» çаралнă, аялти хуралтин «аяк пĕрчисем» туха-туха ӳкнĕ, хапхи яр-уçă: темшĕн ĕнтĕ ăна хупса çаклатакан та çук. Кунта пысăккисем мар, ача-пăча та çӳремест, кичем те тăлăх арманта выличчен çырма хĕрринче е вăрманта чупаççĕ, унта йăлăхсан, улăхра алхасаççĕ. Кĕрлĕçурлă е хĕллехи тăмансенче вичкĕн çилсем çеç киле-киле шăхăраççĕ армана. Арман пурпĕрех вăранмасть, вăл çывăрать, çук, çывăрмасть, вăл вилнĕ. Халĕ вăл арман мар, арман шăмми-шакки анчах. Кӳршĕллĕ тепĕр арман пурччĕ. Вăл «вилсен», ял çыннисем ăна «чĕртесшĕн» чылай тăрмашрĕç, мĕн чул тăрăшсан та, çилпе ĕçлемелле тăваймарĕç: пĕр çĕртен юсаса çитереççĕ, тепĕр çĕртен арканать, çĕнĕ вал хăпартмалла, çуначĕсене улăштармалла. Апла та пырĕччĕ, çĕнĕ чулсем кирлĕ. Мотор лартса пăхрĕç, капла та ĕç питех ăнмарĕ. Кивĕкирĕкпе лĕпĕртетиччен моторпа ĕçлекен тепĕр темиçе арман туса лартас, ку арман пурине сӳтсе силос башни хăпартнă çĕрте усă курас, терĕç те вилнĕскере чĕртесшĕн урăх хыпăнмарĕç. Арман патне кĕме халь çул та çук, трактористсем сухаласа кайнă. Армансене Исмулла арманĕсем тетчĕç. Мĕншĕн апла каланине çамрăксем пĕлсех те каймаççĕ, ваттисем вара лайăх пĕлеççĕ.

Ĕлĕк çав армансем тăватшар чулпа авракан чаплă армансем пулнă. Исмулла пуян патне Саврăш тăрăхĕнчен кăна мар, вăрман урлăрисем те лавĕ-лавĕпе пыра-пыра чарăннă. Авăртса панăшăн илекен «кĕренккесен» шучĕ самай пысăк, хăш чух, таса тулă авăртса мăянлă ыраш çăнăхĕ турттарса каяççĕ, тав-

рари ялсенчи хресченсем пурпĕрех Исмулланах йăлăнаççĕ, аллă çухрăма Чистая сĕтĕрĕнес килмест.

Ваттисем çапла та каласа кăтартаççĕ: Исмулла тăван ял çыннисене тивмен, улталама мар, хăçан ыйтнă, çавăн чух кивçен панă, арман авăртнăшăн хырçă та нумай илмен, арманне юсанăшăн лайăх тӳленĕ. «Эпир, малтикассем, пĕр тĕпрен пулса кайнă, Вăрмантейпе Юмантей йăхĕнчен, — тенĕ, — çавăнпа та пурте пĕрне-пĕри пулăшса тăванла пурăнас пулать, ман армансем — сирĕн армансем, ман лавкка — сирĕн лавкка». Хĕллехи праçниксенче ĕçкĕ-çикĕ тапрансан, Исмуллан хула пек çуртĕнчен ялйыш татăла пĕлмен. Тĕлĕнмелле япала вĕт: çĕрме пуян çын хура халăхпа çапла тату пурăннă, ял çыннисене «тăвансем» тесе укçа та, тырă та хăçан ан ыйт, çавăн чух кĕтсен-кĕтсен пĕтмелле те, вăрахлăха та, процент илмелле те панă. Ютран килнĕ çынна Исмулла тарса илмен, унăн тарçисем — пĕтĕмпех хамăр ялсем, унтан та ытла — тăван-пĕтенĕсем. Исмулла патĕнче тарçăра ĕçлесси хисеплĕ ĕç шутланнă. Çĕрме пуян çын çакăн пек пулнăшăн ял халăхĕ хăй те хытă тĕлĕннĕ: «Тĕлĕнтермĕш хуçа пирĕн, — тенĕ вăл, — мĕн тери ăслă та ырă çын. Искерти улпут, авă, ун пек мар, çыннисене сăмсисенчен юн ана пуçличчен, курпунĕсем тухиччен ĕçлеттерет, йытта хĕненĕ пек хĕнет, пĕр пус памасăр ĕçрен хăвала-хăвала ярать, пăлхавçăсем тесе, казаксем кӳртерет; пирĕн — апла мар...»

Исмулла хуçа Искер улпутĕнчен, чăнах та, ăслăрах, чеерех пулнă. Вăл пысăк тăкак тӳсмесĕрех хăй тавра «рабочи аристократи» туса хунă. «Прибавочная стоимость» мĕн иккенне тĕлĕкре те тĕлленмен тĕттĕм ялйыш Исмуллана чăнчăн ырă çын вырăнне, тăван вырăнне, хурса хисепленĕ, ун патĕнче хура тар юхтарса ĕçленĕ. Арманта-мĕнре урăх çĕртен килсе тара кĕрĕшнĕ рабочисем харкашу пуçарсан, вĕсене лăплантарма Исмулла сутăн илнĕ куштансем персе çитнĕ, лешсене вĕлерес патне çитиччен хĕне-хĕне пĕр пус памасăр ĕçрен кăлара-кăлара ывăтнă.

Революци пулсанах, февральте, Исмулла пĕр çил арманне йӳн хакпа ял общинине тара парса пĕтĕм вулăса тĕлĕнтерет, çуркунне енне чи лайăх çĕрĕсене Искер улпутне сутать. Халăх каллех тĕлĕнет. Пурте Исмулла çинчен çеç калаçаççĕ. Каярахпа çав çĕрсем Искер улпутĕнчен хура халăх

аллине куҫаççĕ. Искер улпучĕ тĕнчери чи ухмах ҫын пулса юлать. Исмулла хăй лавккинче лĕкĕрт ҫеҫ кулса ларать, унта ларса ывăнсан, халăхпа курса калаҫма тесе, арманалла утать, — ăна ҫынсем ҫаплах хисеплеççĕ, ҫаплах ҫывăх кураççĕ. Ку та юрĕччĕ, граждан вăрçи вăхăтĕнче, чухăнсемпе пуянсем хушшинче кĕретех хаяр вăрçă хускалсан та, хăй ĕçхалăх юнне ĕçекен хура ҫĕлен иккенне пытарма мел тупать Исмулла: Пĕкĕлмерен Чистаялла чакакан хĕрлисен кавалери полкне хĕлле, вунтăххăрмĕш ҫул, ҫирĕм лав утă, ĕнепе сурăх тирĕ аллă, ҫĕр пăт ҫăнăх, вунă лаша парать. Ун чаплă ҫуртĕнче хĕрлĕ командир Сандимиров, «чăвашсен патриотне» чысласа, тулли черкке ҫĕклет. Виҫĕ кунтан шуррисем персе ҫитеççĕ. Колчак есаулĕ Казимир та Исмулла патнех чарăнать. Есаул Исмулларан утă та, тир те, ҫăнăх та, лаша та илмест. Сĕм-ҫĕрле казак лавĕсем армана пырса чарăнаççĕ. Хуҫан пĕр тарҫи, иртнĕ вăрçă вăхăтĕнче вилнĕ Пурис, каярахпа каласа панине ĕненес пулсан, Казимирпа Исмулла тата темиҫе казак арман айне аннă пулать, тĕксĕм хунар ҫутинче лавсем ҫине «Максим» пулеметсем, пилĕкҫĕре яхан винтовка, ещĕкĕ-ещĕкĕпе патрон тиенĕ. Ялта шуррисем, хĕрлисем пекех, никама та тивмеççĕ, фронтран аманса таврăннă пĕр ҫынна ҫеҫ, ялти хальхи колхоз председателĕн, Владимир Филипчăн, ашшĕ пулнă Хĕлип матроса, ҫыхса пăрахса, хăйсемпе лартса каяççĕ. Вăл та пулин вĕсенчен вĕҫерĕнсе тарнă-мĕн, граждан вăрçи иртсен пĕрер ҫултан, хăрах алăллăскер, яла таврăннă, коллективизаци тапхăрĕ пуҫланса, колхоз тăвасшăн ҫӳрекен чи хĕрӳ ҫын пулнă. Ăна колхозăн малтанхи председательне те суйланă.

Часах Исмуллан лавккипе чаплă ҫурчĕ патшалăх аллине куҫаççĕ, хăй тимĕрçĕ лаççи уҫса тимĕр-тăмăр ĕçĕпе пурăнма тытăнать. Çак ҫыннăн ҫемйи пысăк пулман: арăмĕ те ҫитĕнсе ҫитнĕ хĕрĕ Эрнепи. Эрнепийĕ часах ялти вулав ҫурчĕн пуҫлăхне Насар комсомолеца качча тухать. Çапла, Исмулла ҫĕрме пуян «чухăна юлнă», колхоз тимĕрçинче ĕçленĕ. Ялти ватăсем калаççĕ, Исмулла арманĕпе ҫĕрĕсене сутсан та, лавккипе ҫуртне патшалăх туртса илсен те, пĕртен-пĕр хĕрĕ пике пек хитре Эрнепи Насар комсомолеца качча тухнăшăн тарăхнă пек тарăхман, уншăн куляннă пек кулянман, хурланнă пек хурланман. Лешĕ ял Советĕнче Насарпа ҫырăшнине пĕлсен, вăл пĕр эрне чарăнмасăр ĕçнĕ, ҫулталăкĕпех вилнĕ пек ҫӳренĕ,

унтан чылай вăхăт чирлесе вырăнпах выртнă. Насар хальхи колхоз председателĕн пиччĕшĕ, Хĕлипĕн аслă ывăлĕ пулнă. Совет влаçĕ «чухăна хăварнăскер», Исмулла çакăн хыççăн хытă хавшаса çитет, çын çине тухса çӳреме пăрахать, лаçăра та текех мăлатук сасси илтĕнмест. Кăштран çынна хăй арманнех хуçа туса яраççĕ. Ăшри çиллине тула кăларманнипе Исмулла вут çине пăрахнă çĕлен пек авкаланать, чашкăрать, пăшăрханать, анчах çакна çынна пĕлтермест, ял умĕнче лăпкă курăнма тăрăшать. Исмулла таса маррине пĕр çын кăна сиснĕ, теççĕ: Хĕлип. Вăл, имĕш, лешĕ нимле сăтăрла ĕç тумасан та, ун çинчен куçне вĕçертмен, яланах сыхă тăнă, ывăлĕсене те çапла пулма хушнă. Тимĕр, хальхи Владимир Филипчă, вуннăрискер, ашшĕ сăмахĕсене хăлха тăратсах итлесе ларнă. Анчах та, акă, нумаях та вăхăт иртмен, вăтăрмĕш çулсенчи пĕр кĕрхи каç Чистай çулĕ çинче Хĕлип председатель çĕр тĕпне анса кайнă пек пач çухалать. Чистайран тухни паллă, ăçта çитсен çухални паллă мар. Эрнепипе Насар, Исмуллапа арăмĕ, пĕрле пухăнса ларса, вĕçĕ-хĕррисĕр куççуль юхтараççĕ. Вĕсем куççуль тăкнине вунă çулхи Тимĕр, хальхи колхоз председателĕ Владимир Филипчă, кăмака çинчен шăппăн сăнать. Хăйĕн ача чĕрипе вăл теме сиснĕ, мĕнне вара хăй те пĕлеймен, ăна çĕрме пуян пулнă Исмулла темле ытла та хытă кăшкăрса макăрнă пек, чăнла макăрсан, ун пек макăрмалла мар пек туйăннă. Йăнăшса шар курасран шикленсе, ача никама нимĕн каламан. Тытман вăрă вăрă мар. Ĕçĕ те таçта инçетре, ялтан аллă-утмăл çухрăмра, пулса иртнĕ. Председателе Насара лартаççĕ. Вунă çул иртет. Çав хушăра «Трактор» колхоз палăрмаллах çĕкленет, тракторлă-комбайнлă хуçалăх пулса тăрать. Колхозниксем ĕçкунĕ пуçне килограмм тĕштырă илме пуçлаççĕ. Ялта çĕнĕ урамсем ӳссе лараççĕ. Çĕнĕ клуб, больница уçăлать. Шкул туса пĕтерсе хута яраççĕ. Тухăçлă тырпул çитĕнтернĕшĕн тата патшалăх планне çулран çул ӳстерсе тултарнăшăн Насар председателе награда пама Хусана чĕнтереççĕ. Ăна пĕтĕм ялпа пехил туса çула ăсатаççĕ. Каласа ĕненмелле мар, виççĕр çухрăмри Хусантан яла килме тухсан, Насар... ашшĕ пекех таçта кайса кĕрет, пач çухалать. Хусанти, Шур Шыври, Чистайри, Элькелĕнчи, тăватă районпа хула милицийĕ ура çине тăнă. Пĕтĕм республикăна тенĕ пек айĕн-çийĕн çавраççĕ, çук, тупаймаççĕ, çын тĕлсĕр-йĕрсĕр, тинĕсе пăрахнă йĕп пек, çĕтет...

Тепĕр эрнерен яла тата тепĕр хăрушă хыпар килсе хуплать: вăрçă! Ял çинче салтак юрри, хĕрарăмсем уласа макăрни, ут кĕçенни, машин сасси илтĕнсе тăма тытăнать. Насар çухални, çак калама çук пысăк хуйхă айне пулса, хулленхулленех манăçа юлать. Вăйпитти арçынсем вăрçа кайса пĕтеççĕ. Ялта — ватă-вĕтĕсем кăна. Районти парти комитечĕ канаш панипе ял çыннисем колхоз председателĕ пулма Тимĕре, çирĕм те тултарман Владимир Филиппова, Насар шăллĕне, суйлаççĕ.

Исмулла вăрçă вăхăтĕнче те арман хуçиех. Ним авăртмалли те çукран, çил арманĕ эрни-эрнипе пушах ларать. Хĕрĕх иккĕмĕш çулхи çулла тĕп йĕтем çинчи çапман капансем çунса кайни колхоза пушшех те хытă сиенлет, юлнă пек тырă патшалăха леçме те аран çеç çитет. Колхозниксем татăк çăкăрсăр юлаççĕ. Йĕтем çинче ĕçлекен хĕрарăмсемпе ача-пăча пушар мĕнле тухни пирки тĕрлĕрен шавлать: пĕрисем «Коммунар» комбайн моторĕ хĕрсе кайнипе хĕлхем кăларнăран, теççĕ; теприсем такам пăрахнă пирус тĕпĕнчен тухнă теме пăхаççĕ; виççĕмĕшĕсем ачапча алхасса улăм купи тăрне ывăтнă вутпуççи çине йăвантараççĕ.

Ултшар ураллă вуникĕ капан, улăм куписем, çапнă тырă кăшăлĕсем, акăш-макăш вăйлă çулăм айне пулса, пĕр сехет хушшинче хура кĕл купине çаврăнаççĕ. «Коммунар» комбайн та вут ăшĕнче пĕтет. Районтан килнĕ Данилкин следовательпе участокри милиционер Ватников пĕр эрне чакаланаççĕ кĕл ăшĕнче, ял çыннисене пурне те тенĕ пек допрос тăваççĕ, пушар мĕнрен, кам айăпĕпе тухнине пĕлеймеççĕ, пĕлеймесĕрех акт пекки çыркалаççĕ. Анчах темиçе кунтан, сых ятне тесе-ши, Владимир Филипчă, иккĕлентермелли нимле паллă та çук пулин те, унченхи кулака, Исмуллана, тепĕр хут допроса чĕнтерме ыйтать. Çук çав, тăрăшни те ахалех-мĕн: пушар тухнă кун Исмулла хире мар, армана та каяйман — вырăнпах чирлĕ выртнă, кăмака çинчен те карчăкĕ пулăшнипе çеç анкаланă, аллă пиллĕкре çын çамрăк мар çав ĕнтĕ, чир-чĕрĕ те тупăнах тăрать, шăмшакĕ те йывăрланнăçем йывăрланать. Çапла, шанмасăр, тепĕр хут ял Советне чĕнтернĕшĕн старик хытă кӳренчĕ, тет; Сандимиров хĕрлĕ командира, хăй тимĕрçĕ лаççинче çĕрĕн-кунĕн колхоз машинисене юсанине, арманĕпе лавккине ял халăхне панине асăнчĕ, тет. Çулленех «Правда» хаçат çырăнса илекенскер,

çулпуç «попутчиксем» пирки калани таран калаçса кайрĕ, тет. Уйрăмах, Тимĕре, хăтăшне, хытă ӳпкелерĕ, тет. Ленин классем çинчен вĕрентнине тĕрĕс ăнланмастăн тесе намăслантарчĕ, тет.

Вăрçă вăхăчĕ — хăрушă та хаяр вăхăт. Колхозра пĕртен-пĕр пĕчĕк трактор çеç; лашасен, апат çуккипе, шăммипе тирĕ кăна, выльăхсене çуркунне ура çине тилхепесемпе çĕклесе тăратаççĕ, сухана лашасене анчах мар, колхозниксен ĕнисене те кӳлсе тухаççĕ. Халăх выçă. Фронт çăкăр ыйтать. «Пурте — фронта, пурте — çĕнтерӳ валли!» — çакăн пек кĕске лозунг çакăнса тăрать колхоз правленийĕнче. Тимĕр председателе кун сиктерсе тенĕ пек района чĕнтереççĕ. Райкомăн пĕрремĕш секретарĕ Цветкова юлташ чăмăрĕпе сĕтеле çапа-çапа фронт валли тырă ыйтать.

Пĕрре çапла, хура кĕркунне, Владимир Филипчă, сĕмçĕрле, çумăр витĕрех вăрман çулĕпе ялалла таврăннă. Ултă çухрăм тăсăлакан вăрман тăрăхĕ кĕрхи çилпе вĕçĕмсĕр кашланă. Вăрман шавне итлесе пырса, председатель тарăн шухăша путнă, шухăшланă май тĕлĕрсе те илнĕ. Шур Шыв енчен килекен квартал пĕтсе Таркăн çулне тухасси те инçе юлман пулмалла, çул чи тăвăр тĕлте, куçран пырса тĕксен те ним курăнман вырăнта, уçă çĕрелле тухас умĕн Орлик, колхозăн çӳрен ăйăрĕ, чипер пыраканскерех, хартлатса илнĕ, тапăртатса кутăн чакма тытăннă. Ялтах сиксе вăранса кайнăскер, Тимĕр, çул урлă йывăç-тăр-мĕн-тĕр ӳкмен-ши тесе, тăрантас çинчен анма тăрать. Анчах уçлăхалла пăхнă май, пĕлĕт фонĕнче лаша пуçĕ патне этем мĕлки кармашнине уйăрса илет. Çав самантрах Тимĕр хăй пуçĕ çине пăяв мăйкăч лап! килсе ӳкнине туять. Çиçĕмле хăвăртлăхпа мăйкăча сирсе ывăтса вăрмана çурмалла ахăрса ярать вăл. Çивчĕ ут сасартăк илтĕнсе кайнă тискер сасăран хăраса темиçе метр малалла сиксе ӳкет, пуçĕнчен çакăннă мĕлкене силлесе ывăтса хăварать. Пуç çине мăйкăч ывăтаканни тăрантас çине сиксе ларма тăрать. Тимĕр, çăмăл шăмшаклăскер, ăна хыçалалла месерле çавăрса çапать. Лешĕн аллинче сулмаклă япала пулнă. Унпа вăл Тимĕре темиçе те çапма хăтланать, тĕттĕмре тĕл тивертеймест. Орлик — начар лаша мар. Мирлĕ вăхăтра районта ирттерекен ăмăртусенче вăл яланах пĕрремĕш преми илнĕ. Виçĕм çул та, вăрçă умĕн, «Маяк» колхозăн чи чаплă ăйăрне çухрăм çурă кая хăварса мала тухнă.

Тӗрмешнӗ чух Тимӗр чут ҫеҫ тӑрантасран тухса ӳкмест, тытӑнса юлса лашана саламатпа ҫунтарса илет. Орлик ҫӗмӗрен пек малалла вирхӗнет. Хыҫалта, вӑрмана янратса, пӑшал сассисем кӗрлесе каяҫҫӗ. Тимӗрӗн сулахай хулӗ, хӗртнӗ пӑшатанпа чикнӗ пекех пӗҫерсе, лӑштӑрах усӑнса анать, сӑмсана чӗрӗ юн шӑрши кӳ! килсе ҫапать.

Тепӗр кун, ирхине, Владимир Филипчӑ инкӗшӗнчен, Эрнепирен, хӑтӑшӗ Исмулла аслӑк ҫинчен ӳксе икӗ аяк пӗрчине хуҫнине пӗлет. «Инкек ҫине синкек, — мӑкӑртатса ҫӳрет инкӗшӗ, — пӗлтӗр Насара ҫӗр ҫӑтрӗ, ҫӗркаҫ сана кӗҫ-вӗҫ тирпейлесе хуман, паян, авӑ, атте... Эй-яй-яй, мӗн курӑпӑр ӗнтӗ малашне, мӗн курӑпӑр...»

Таркӑн вӑрманӗ урлӑ каҫма мирлӗ вӑхӑтра та ҫӗрле хӑрушӑ шутланнӑ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче вара ҫав аслӑ вӑрманта таркӑнсен пысӑк ушкӑнӗ йӑва ҫавӑрнӑ имӗш. Тимӗр ҫине те ҫавсем тапӑннӑ пуль тесе шутлаҫҫӗ. Ҫак ӗҫ халӑха чылай шавлаттарать. Шавласан-шавласан, лӑпланаҫҫӗ. Мӗн кӑна пулмасть пуль те тӗнчере, кашнинех асра тытса, унпа ӗмӗр тӑршшӗпе пуҫ ҫӗмӗрсе ларсан, ҫынна пӗр пуҫ мар, тӑххӑр та ҫитмӗ. Уйрӑмах — тӗнчере акӑш-макӑш хӑрушӑ, юнлӑ вӑрҫӑ пынӑ чух.

Вӑрҫӑ пӗтнӗ тӗле Исмулла утмӑлалла ҫывхарнӑ тӗреклӗ хитре арҫын пулнӑ. Ҫӳҫӗнче те, сухалӗнче те пӗр кӑвак пӗрчӗ те палӑрман-ха. Шурӑ вӗтӗ шӑлӗсем ӳкме мар, силленмен те, пурте тӗрӗс-тӗкелех ларнӑ. Исмулла — пӗртте чее те выҫкӑн сӑнлӑ мар, темле салхурах та тунсӑхлӑрах пит-куҫлӑ этем. Ӑна ҫын хушшине тухса ҫӳременскер, ҫынна юп курманскер теме те май ҫук. Вӑл колхоз пухӑвӗсене пырах ҫӳренӗ, пырсан хӑшпӗрисем пек таҫта хыҫала, шӑпӑр шӑтӑкне, ларман, мала иртме юратнӑ. Пухура, тухса калаҫниех пулмасан та, ыйту час-часах паркаланӑ вӑл. Вӑрҫӑ хӗрсе пынӑ чух, сӑмахран, Сталинград патӗнчи ҫапӑҫу умӗн, пӗр пухура Исмулла докладчикран ҫапла ыйтнӑ: «Сталинграда нимӗҫсем илеҫҫӗ-и, ҫук-и?» Вара лешӗ ответлессе кӗтмесӗрех каласа хунӑ: «Ҫук, илеймеҫҫӗ». Мӗншӗн илеймеҫҫӗ, ма илеймеҫҫӗ, — ҫакӑн ҫинчен вӑл ним те шарламан, «ҫук, илеймеҫҫӗ», тенӗ те вырӑнне кайса ларнӑ. Колхоз пурнӑҫӗпе Исмулла интересленмен, пухусенче ун пирки нимлӗ ыйту та паман, нимле сӑмах та хускатман. «Хӑй арманӗпе» вара... питӗ те интересленнӗ! Кашни пухурах арманӗ валли вӑл мӗн те пулин ыйтнӑ: арман ҫуначӗсем кивелчӗҫ, — ҫӗнӗ тӑвасчӗ, чул-

сем якалса кайрĕç, — шăлласчĕ, пӳлмесене тасаттарасчĕ тата ыт. те. Колхозра ун арманĕпе аппаланнисĕр пуçне урăх ĕç те çук тейĕн çав. Владимир Филипчă вара, колхоз председателĕ, ĕлĕк çĕрме пуян шутланнă Исмулла, хальхи тăрăшуллă колхозник, колхоз арманĕшĕн çапла хыпса çуннине курса хытă савăннă, вăл ыйтнисене пурнăçламасăр нихçан та хăварман. Çавăнпах ĕнтĕ Исмулла арманĕ вăрçă вăхăтĕнче те питех юхăнман, чиперех курăннă. Ватăрах çынсем Исмулла яштака кĕлеткине тӳп-тӳрĕ тытса арманалла утнине ытараймасăр пăхса юлнă: «Ха, Исмулла хăта халь те каччă пек-ха, еплерех хӳхĕм пырать», — тенĕ. Яш-кĕрĕм вара ăна пĕр япалашăн хытă хисепленĕ: старик сĕрмекупăс калама питĕ ăçта пĕлнĕ. Çамрăкрах чух вăл сĕрмекупăсне туйсенче те каланă, ватлăхалла сулăнсан, çын çук чухне çеç киленче е арманта ытармалла мар кĕвĕсем шăрантарнă. Исмулла шкулта нумаях вĕренмен, анчах та кĕнеке нумай вуланă. Уйрăмах философипе, политикăпа интересленнĕ, çулленех «Правда» çырăнса илнĕ. Апла пулин те, политика пирки никампа та сăмах хускатман. Владимир Филипча çеç хушăран питĕ кăткăс ыйтусем парса хытă тĕлĕнтернĕ. Сăмахран, вăл пĕрре Тимĕртен: «Эсĕ Ленина мĕншĕн юратан?» — тесе ыйтнă. Хăтăшĕ çакна хирĕç ним калама аптранă. «Эсĕ ма юратан?» — теме çеç пултарнă вăл. Кăна хирĕç Исмулла нимĕн те чĕнмен, арман пирки калаçса кĕрсе кайнă.

Вăрçă хыççăн Исмулла арманĕ тăрне çĕнĕ вал хăпарттарать, Таркăн вăрманĕнчен çичĕ хăлаçлă, типсе кĕленче пек çуталнă хитре юман тупса килеççĕ. Арманăн ултă çунатне те вĕр-çĕнĕ тăваççĕ, тăватă чулран иккĕшне хăварса пĕрне улăштараççĕ. Исмулла армантан туха та пĕлмест, çавăнтах пурăнать. Ĕçрен пушаннă вăхăтра, ĕçлекенсем çук чух, арман таврашĕнче çӳрекен виç качакипе вунсакăр чăххине тата сар автанне сĕрмекупăс каласа тĕлĕнтерет. Чăххисем курăк хушшинчен хурт-кăпшанкă сăхма пăрахса купăсçă çине кăн! пăхса тăраççĕ, автанĕ пĕсехине паттăррăн каçăртса куккареку! тесе авăтса ярать. Çакна илтсе качакасем те курăк чĕпĕтме пăрахаççĕ, мĕтĕртетсе Исмулла патне пыраççĕ. Лешĕ, качакисем пырса сĕрмекупăса шăршлама пикенсен, шăршласан-шăршласан, чĕлхисемпе те çуласа илме хăтлансан, сĕркĕчне хĕлĕхсем çинчен илсе чĕлхесĕр янаварсене курăк çиме кайма ӳкĕтлет, сĕркĕчĕпе хăмсарать.

Пĕрре çапла, вăрçă иртсен ĕнтĕ, Исмулла мучи выльăхчĕрлĕхне сĕрмекупăс каласа савăнтарнă самантра ун патне Владимир Филипчă пырса тухать. Старик хаваслă кĕвĕ каламан, питĕ те хурлăхлă кĕвĕ каланă. Владимир Филипчă чарăнса тăрсах кĕвве вĕçне çитичченех итлесе пĕтернĕ. Мучи патне ырă хыпарпа килекенскер, леш салхуллине курса, патне пыма чылайччен иккĕленсе тăнă. «Мĕн пит тунсăхлă, хăта? — тет Владимир Филипчă, сăмах пуçарса. — Кĕвви те таçта илтнĕ пек, пытару кĕвви майлăрах илтĕнет», — тет. Исмулла кулмасăрах çапла тавăрать:

— Пытару кĕввийĕ пытару кĕвви майлăрах илтĕнет çав ĕнтĕ.

— Кам вилнĕ вара? Качаку е пĕр-пĕр чăхху ӳксе вилмерĕ пулинех?

— Çук, хам вилтĕм, шăллăм, хам. Манра чĕрĕлĕх сывлăшĕ пĕтрĕ, йăлтах пĕтрĕ...

— Иртерех пуль-ха апла калама, Исмулла пичче, тăнлавунта пĕр кăвак пĕрчĕ те курăнмасть-ха, каччă пек çӳретĕн-ха.

— Суя курăну, шăллăм, чун — вилĕ.

— Э, çук-ха, халех вилме юрамасть, пурăн-ха тата пĕр çирĕм-вăтăр çул, ытларах пурăнсан та пăсмĕ...

Владимир Филипчă старик патне ăна совет правительстви, вăрçă вăхăтĕнче хастарлă ĕçленĕшĕн ытти пиншер çынна панă пекех, «За доблестный труд в Великой Отечественной войне 1941—1945 гг.» медальпе наградăлани çинчен пĕлтерме пынă иккен. Çакă япала старикшĕн те, Владимир Филипчăшăн та пысăк савăнăç пулнă ĕнтĕ: пурнăç ав мĕн таран çаврăнса кайма пултарать! Ĕлĕк çĕрме пуян тенĕ çын — малта пыракан ĕçчен колхозник! Ял çыннисем те, колхоз председателĕ те çаплах шутланă ун чухне. Исмулла çав вăхăтра чăннипе мĕн шутлани каярахпа çеç палăрать, çирĕм пилĕк çултан, старик вилме выртсан... Çук, урăхларах шутланă награда пирки Исмулла, савăнман, хурланнă. Пуçне йăтайми хурланнă. Чунĕ вилни пирки те вăл Владимир Филипча ун чухне ахальтен каламан. Çирĕм пилĕк çултан, чăннипех, чунĕпе те, ӳчĕпе те вилес умĕн, тăхăрвунналла çывхаракан старик, кăвак çӳçлĕ, чалланнă сухаллăскер, шăл-çăварĕ те тĕрĕс-тĕкелех марскер, инфаркт приступĕ хыççăн турткалашса выртнă май, чĕлхерен юлсан, Владимир Филипча аса илет, ăна чĕнсе килме хушать... Çук-ха, капла

эпир ытла мала иртсе кайрăмăр. Чим, йĕркипе каласа кăтартар, ытла васкар мар.

Вăрçă суранĕсем питĕ йывăрпа, хуллен-хуллен, юсанаççĕ. Икçĕр киллĕ ялта икçĕр аллă арçын вăрçăран таврăнайман, таврăннисем те нумайăшĕ уксах-чăлах, чирлĕ пулнă. Фронтра вилме ĕлкĕрейменнисем, осколок лекнĕ кăкăрĕсене яраяра тытса, килте виле-виле кайнă. Хуçалăх хытă юхăнса çитнĕ, — колхозниксен те, колхозăн та. Вăтăрмĕш çулсенче çуртран кăларнăскерсем, карчăкĕпе Исмулла кивĕ кĕлете пăсса тунă пĕчĕк пӳртре пурăннă. Ĕне-выльăх усраман вĕсем, пĕр сурăх та виçĕ качака, чăх-чĕп усранă. Вăрçă иртсен вунвуник çултан колхоз çĕнĕрен ура çине тăрать. Халĕ ĕнтĕ ял урамĕсемпе трактор-комбайнсем кăна мар, автомашинăсем те тăтăшах иртсе çӳреççĕ. Колхозăн выльăх-чĕрлĕх йышĕ те çуллен ӳсет. Ĕне, сысна, сурăх фермисене çĕнетеççĕ, ытти хуралтăсене те е вĕр-çĕнĕрен тăваççĕ, е киввисене юсаççĕ. Колхоз хуçалăхĕ çĕкленсе пынă май, Владимир Филипчă ытларах та ытларах колхозниксем çинчен шухăшлама пуçлать. Фронтра вилнĕ юлташсен çемйисем пурăнакан çĕрнĕ улăм витнĕ тăйлăк-тайлăк пӳртсем вырăнне икĕ пӳртлĕ пысăк çуртсем ӳсе-ӳсе лараççĕ. Пӳрт-çурт хăтлама вăрман инçе марри те хытă пулăшнă. Колхозниксемшĕн председатель нимĕн те шеллемен, колхозниксем те председательшĕн чунне пама хатĕр пулнă. Фронтовиксене, фронтра вилнисен килйышĕсене çĕнĕ çуртсене куçарса пĕтерсен, черет ватă çынсемпе ĕçре сусăрланнă çынсем патне çитет. Пĕррехинче правлени ларăвĕнче ытти пилĕк ватăпа пĕрле Исмулла та хăйне колхоз çĕнĕ çурт лартса пама йышăннине пĕлет. Исмуллапа карчăкĕ валли те, ыттисене планланă пек, пилĕк стеналлă (икĕ пӳртлĕ) çурт тума палăртаççĕ. Те тĕрĕс, те çук, ял çинчи сăмах, Исмулла, правлени членĕсем пĕр саслă пулса хăйне çурт лартса пама йышăнсан, макăрса ячĕ, тет. Пурине пуранă чух çамрăксем йышлă пулнă та: «Исмулла мучи, кăна çапла тусан мĕнле? Исмулла мучи, çакна капла тусан мĕнле?» — тесе çеç тăраççĕ, тет. Старик сухалне шăлкаласа, кулкаласа, ĕххĕм-ĕххĕм текелесе хăш пĕренине ăçта хумаллине, мĕнле ырсан, мĕнле картсан тĕрĕсрех иккенне кăтартса çӳрет, çивчĕ пуртă тытса, хăй те пура пурать.

Кĕркунне, сивĕсем пуçланиччен, кăмака кăларса, Исмуллапа карчăкĕ шурă пăрахут пек çĕкленсе ларакан çĕнĕ

çурта куçаççĕ. Çурчĕн тăрне тимĕр витнĕ, хăйне çӳхе хăмапа «тумлантарнă». Тулашĕнчен хăма çапнă çуртне вара Исмулла симĕс сăрпа сăрласа ярать, çивиттине кĕмĕлпе сăрлать. Чӳрече хашакĕсене старик чĕнтĕрлесе пĕтерет. Çил хапха вырăнне çĕнĕ туса лартнă вырăсла хапхине те эрешлет, сăрлать. Килкарти тавра хитре хăмаран сапур тытса çаврăнать, çурчĕ тавра сад лартать. Кунсăр пуçне мучи тата шурă мунча, кĕлет тăвать. Пурин тăрне те шифер витет. Лупасĕпе вити çине те... Лупасĕпе вити çине кăна-и, нӳхреппе пуссин хуралтисем çине шифер витет! Колхоз пуçланнăранпа ĕне усраса курманскер, сăвакан ĕне, пушмак, чĕчĕ пăруш усрать, икĕ сысна самăртать, вунă сурăх, хур-кăвакал кĕшĕлтетет унăн картишĕнче. «Лаша кирлĕ мар-и? — тет пĕрре Владимир Филипчă, старик патне каçхине калаçса ларма тесе кĕрсен. — Пирĕн кăштах уксахлакан чипер ăйăрах пур. Сыват та, эртельпе пусса какай тăвăпăр. Унччен, пусмалла пуличчен, кӳлсе çӳрĕн, хăвна та, колхоза та усă кӳрĕн». Çакна хирĕç Исмулла ăшшăн кулса илнĕ, тет. «Çук ĕнтĕ, шăллăм, лашасемпе çыхланмастăп, вĕсем ӳкерсе хăвараççĕ. Эс луччă мана хуртсем шанса пар. Арман кивелсе юрăхсăра тухса пырать. Чăнах та, мĕн усси халь çил арманĕн, колхозра унсăрах икĕ арман пур вĕт, моторпа ĕçлекеннисем, халĕ, ав, уптиркке, шур çăнăх авăртаканни, тутаратăп, тетĕн», — тенĕ пулать. Çакăн хыççăн Исмуллана, чăнахах, иртнĕ çул вилнĕ Кĕçтук мучи вырăнне утар хуçи туса хураççĕ. Утарта вара Исмулла мĕн виличченех тенĕ пек ĕçлет.

Хурт-хăмăр ĕçĕнче вун-вунпилĕк çул иртсе каять. Колхоз утарĕ те, Исмулла килĕнчи вĕллесем те кĕрлесе çеç лараççĕ. Ăста арман хуçи пулнă Исмулла хурт-хăмăра та аван пăхать иккен. Колхоз утарĕнче малтан сакăрвун вĕлле шутланнă, Исмулла вĕлле шутне виççĕре çитерет, утар артеле пысăк тупăш пама пуçлать. Халĕ ĕнтĕ кашни колхозниках пылпа чей ĕçет, чей ĕçет кăна мар, сутать те. Ку та юрĕччĕ, Исмулларан курмалăх чылай колхозник килĕнче хурт ĕрчетме тытăнать. Çапла вара пĕтĕм ял пĕр пысăк утар пулса тăрать, ăçта ан пăх, унта хурт вĕçет. Ял çине пыл шăрши сарăлнă — сăмсана кăтăклать.

Çитмĕл тултарсан, Исмулла тăнлавĕнче кăвак пĕрчĕсем палăра пуçлаççĕ. Çитмĕл пиллĕк тултарсан, тĕлĕнсе хытса кай-

малла япала пулса иртет: старик ĕçке ярăнать, урам тăрăх юрласа, каçхине туй-çуй тăвакан çамрăк-кĕрĕм патне клуба кĕрсе ура хуçса, такмак каласа ташласа çӳрет. Туйран та, ĕçкĕрен те юлмасть, ӳсĕр çынсене сĕрмекупăс каласа макăртать, хăй те макăрать. Утар палăрмаллах юхăна пуçланине сиссе, Владимир Филипчă, «ай-ай кăчухнехи ватăсем» тесе, пуçне сулкалать, Исмулла çапла улшăннăшăн хытă тĕлĕнет. Вара старике, пухура ăшă сăмах каласа, колхоз утарне вăйлă ĕрчетсе янăшăн йышпа тав туса, пенсие ăсатаççĕ. Исмулла хăй те, карчăкĕ те çакна питĕ хавас. Хавас пулмасăр: ватăлмалăх кунра та пĕрле пурăнма çукчĕ те, ялан — е арманта, е — вăрманта. Халĕ ак килте çеç ларĕ-ха, чăхха-чĕппе тăрантарĕ, выльăхсене пăхĕ, çум туртĕ... Çапла шутланă карчăкĕ... «Ара, ватăлмалăх кунра та пулин карчăк çине пăхса ларам-ха, эппин, пенси илсе», — тенĕ иккен Исмулли хăй те. «Сыпма» вара çав-çавах пăрахман вăл. Нумай сыпайнă-и, сахал-и, шав-шавах хаваслă çӳренĕ. Старик ирех «пĕр черкке» янине çавăнтан та пĕлме пулнă: вăл кĕтӳпе пĕрлех, урам енчи кантăкне уçса пăрахса, радиолине хускатнă, е унăн радиоприемникĕ уласа-мĕкĕрсе ларнă. Хăй кунĕпех лупас айĕнче те садра кăштăртатнă, ывăнса çитсен-тусан, унтах кайса-ӳксе çывăрнă.

Çапла тата темиçе çул иртет. Исмулла ĕнтĕ ял çине тухса çӳреме те пăрахать. Халĕ вăл юрлани те, ташлани те илтĕнмест. Те ĕçет халь, те çук. Çакна никам та пĕлмест. Пурнăç малаллах шăвать: çамрăксем ӳссе çитĕнеççĕ, ваттисем пурнăç çулне вĕçлесе кайсах пыраççĕ. Çамрăксен пурнăç ялан малалла, ваттисен — каялла, тесе ахаль каламан çав халăхра. Сисĕнмесĕрех тата пилĕк çул иртсе каять. Исмуллана ял çинче пачах та кураймăн. Те пур вăл тĕнчере, те çук. Карчăкĕ çут тĕнчере пуррине кĕтӳ хăвалакан хĕрарăмсем пĕлеççĕ-ха, вăл пĕр ĕнипе пилĕк сурăхне яланах хăй ăсатса хăй кĕтсе илет. «Исмулла мучи мĕнле-ха?» — тесе ыйтсан, стариккинчен вун çул çамрăкрахскер, Сăпани кинемей: «Ватăлчĕ ĕнтĕ, йăвашланчĕ, чирлекелет, — тесе тавăрать. — Юлашки вăхăтра тем чĕрепе аптракан пулчĕ-ха».

Владимир Филипчă та çамрăк çын мар, алла çитсе пырать ĕнтĕ. Вăл юлашки хут Исмулла патне августра кĕрсе тухнă. Старик садра, раскладушка çинче, улмуççи айĕнче выртнă. Сухалĕ те, çӳçĕ те унăн самаях шуралнă. Малти пĕр

шăлĕ ӳкнипе, мучи «с» сасăллă сăмахсене «ш» тесе калаçать. «Салам» вырăнне «шалам» тет те, вăтанса çăварне аллипе хуплать. «Япăхрăмăр, шăллăм, япăхрăмăр, эх-ха-хах, — тенĕ вăл ун чухне Владимир Филипча. — Çакăнтан хĕсет, чĕре тĕлĕнчен ...темĕн, нумаях та пурăнаймăп»... Владимир Филипчă ним чĕнмесĕр, шăппăн итлесе ларнă. Çав хушăрах вăл старикĕн ĕлĕк яштак пулнă пĕвĕ пĕкĕрĕлсе кĕнине, çурăмĕ кукăрăлнине, çын темле пĕчĕкленсе кайнине те асăрханă. Исмуллан пĕр куçĕ йĕпенсе тăма пуçланă иккен ĕнтĕ, хăрах хăлхи илтмен.

Чылайччен калаçса ларнă вĕсем ун чух. Исмулла аялтах çакăнса тăракан антоновка сортлă панулмие икĕ аллипе тыта-тыта пăхрĕ, тет, улмана ачашла-ачашла Владимир Филипчăран: «Кĕренкке ытла та таять пуль ку?» — тесе ыйтрĕ, тет. Унтан старикĕн шур сухалне пылхурчĕ пырса тăрăннă. «Ай-уй, çыхланса ларчĕ, янавар, ай, сĕрлет хăй, ай, хăтăласшăн, тух ĕнтĕ, тух, атя, кил, вĕç ав çавăнталла», — тесе пылхуртне çӳлелле вĕçтерсе ячĕ, тет. «Ну, хăвăн сывлăхусем мĕнле-ха, шăллăм?» — каллех калаçнă Исмулла, чылай чĕнмесĕр тăнă хыççăн. Председатель ыйхăран вăраннă пек пулнă: тем аса илсе ларнă çĕртен таврăнса, старик çине шеллесе пăхнă.

— Пырать-ха халлĕхе, — тенĕ вăл. — Хăш чух хул суркалать те... вăрманта вăрçă вăхăтĕнче амантни... Сиенлех мар.

— Манăн та аяк пĕрчисем кукăр сыпăнчĕç. Те çавăнпа, ак çак тĕлтен чиксе ыратать.

— Вăл тĕлте чĕре пулаканччĕ.

— И-и, ватăлсан, чĕри те, ӳпки те, аякĕ те... пурте ĕнтĕ...

Тепĕр уйăхран Владимир Филипчă Исмулла вырăнпах выртнине пĕлет. Старик мунчара тулли витрене лапка çине лартма тăнă та, «кăкăрĕнче темĕн татăлса кайнипе» лĕштĕрех тĕшĕрĕлсе аннă. Карчăкĕ, кӳршисене чĕнсе пырса, ăна аран-аран килне илсе çитернĕ: Исмуллана ниçтан тытма май çук, тет, кирек ăçтан тĕкĕнсен те, хаярăн кăшкăрса ярать, тет. Ӳчĕ-тирĕ калама çук хытă ыратнипе çапла кăшкăрнă, ахлатнă ĕнтĕ вăл. Инфаркт приступĕ çапса ӳкернĕ иккен ăна.

Пĕр ирхине, Владимир Филипчă çывăрса та тăман пулнă-ха, алăка инкĕшĕ Эрнепи пырса шаккать: «Атте вилет, атя-ха, сана чĕнет!» — тет вăл, хăвăрт утса килнипе пашкаса. Влади-

мир Филипчӑ йӑпӑр-япӑр тумланать те Эрнепи хыççӑн васкать. Вĕсем пырса çитнĕ çĕре пӳрте çынсем пухӑнма та ĕлкĕрнĕ, ытларахӑшĕ ватӑсем пулнӑ. Тахӑшĕ турумне çурта çутса хунӑ. Исмулла тĕпелти тӳшек сарнӑ кровать çинче выртнӑ. Ялти фельдшер кофеинпа тата камфора çӑвĕпе укол тунӑ хыççӑн чирлĕ çын турткаланма, йынӑша-йынӑша яма тытӑннӑ, йĕпйĕпе тара ӳкнĕ. «Мма-мма, ныгӑ», — тенĕ вӑл тем çавӑрса каласшӑн, калайман. Калама мар, куçне те уçса пӑхайман. Ăшталанма вара таттисĕр ăшталаннӑ. Владимир Филипчӑ старик тӑнне çухатманнине курса: «Пит хытӑ ыратать-и, Исмулла пичче?» — тесе ыйтнӑ йӑвашшӑн. Лешĕ илтнĕ, ăнланса пуçĕпе суланçи тунӑ. Тимĕр унӑн юн тымарне те тытса пӑхасшӑн пулнӑ, анчах та чирлĕскерĕн алли çумне сĕртĕннĕ-сĕртĕнмен çын пĕтĕм кĕлеткипе турткалашса илнĕ, йынӑшса янӑ. Мекĕрленсе пуçне кӑшт йӑтнӑ та çамкине пĕркелентерсе куçне вӑйсӑррӑн уçнӑ, пуçне чĕтретсе, çӑварне пысăк карса: «Тимĕр!» — тенĕ пекрех сăмах каланӑ. Унтан пĕр тĕлелле тинкерсе çăмăллăнах уйӑрса та илмелле мар: «Тимĕр... Хĕлип... Насар... арман айĕнче... выртаççĕ», — тесе янӑ. Çапла каланӑ та вырӑн çине йӑрст! тăсăлса выртнӑ. Çамки çинчи йĕрсем якалса-якалса пынӑ, сăмси шĕвĕрленнĕ, ӳт-тирĕ саралса кайнӑ. Пухăннисем куç шăлма, нăшăклама. хăшпĕри хӳхлеме тытăннӑ. Стена çинчи куçкĕские çӳхе утиялпа хупланӑ, татах çурта çутнӑ. Çав хушăра Исмулла карчăкĕ Сăпани кинемей сĕтел сунтăхĕнчен кăвак кăранташпа çырнӑ хут татки кăларать, юпа пек хытса кайнӑ, ним курми-илтми пулнӑ Владимир Филипчӑ патне пырса тăрать.

— Çакна сана пама хушрĕ...

— Мĕн япала?

— Вула-ха эс...

Тимĕр хута картах туртса илнĕ. Унта акă мĕн çырнӑ пулнӑ: «Перекет кассинчи пилĕк пин тенке вăрçăра вилнисен çемйисене валеççе пар; армана сӳтсе çĕрпе танлаштар, вырăнне тăпра тултарса тракторпа сухаласа кайтар; арман айĕнче аçупа пиччӳ, Хĕлип хăтапа Насар кĕрӳ, выртаççĕ. Çуртăма сут та укçипе Хĕлиппе Насара асăнса палăк ларттар. Çав палăк — мана ĕмĕрлĕх ылхан палли, Хĕлиппе Насара — ĕмĕрлĕх мухтав палли пултăр. Медале патшалăха тавăрса пар, йăнăшрăмăр, те, — эпĕ ăна тивĕçлĕ мар. Çакна эп сана тахçанах каласшăнччĕ, калаймарăм,

хевте ҫитмерĕ. Халĕ... Халĕ мĕн ĕнтĕ, кая юлтăм. Урăхларах пурăнмаллаччĕ, урăхларах...»

Ҫак хут Тимĕр аллине вут пек пĕҫертнĕ. Пуҫне йывăррăн ҫĕклесе, председатель ялăн кăнтăр еннелле, ҫырма урлă, хирелле пăхса илнĕ. Унта тĕнчере Исмулла ятлă хаяр та чее, телейсĕр те мĕскĕн этем пурăннă иккенне хăрушшăн астутарса кивĕ ҫил арманĕ чĕмсĕррĕн сĕнксе ларнă.

...Ыран ҫав армана сӳтеҫҫĕ.

1970

Пьесăсем

ХĔСĔР ХАСАР

Прологлă-эпилоглă сакăр курăнуллă драма

Драмăри çынсем

Ухатер — турхан, ирĕк чăваш, хусах.

Гаффар — турхан нукерĕ, унăн хăйматлăх шăллĕ.

Çутăпи — турхан йăмăкĕ, çамрăк хĕр.

Хаканбек — хысна хуçин тăванĕ, çамрăк арçын, хасар, пĕлхарсенчен хырçă пухма янăскер.

Сантимĕр, вăлах Мамай — хысна хуçин хăлхипе куçĕ, сутăнчăк чăваш.

Муэдзин Муаллим — пăлхар, Пӳлертен.

Арçынпа хĕрарăм — утă çулакансем.

Улька — вырăс майри, Ухатер патĕнче тарçăра, çамрăк хăрхăм.

Сарă ача, Хура ача — «вăрманти тăвансем».

Хĕрлĕ ача — «Пӳлерти тăван».

Талут — ирĕк пăлхар, сутăнчăк, Ухатер патĕнче тарçăра.

Тевел, Атнер, Акташ — Хаканбек нукерĕсем, «чăваш йĕкĕчĕсем.

Сениэль — турхан тăхăмĕ, хайлавçă, эпилогра.

Чалăш куç, Эрех шампи — сутăнчăк чăвашсем.

Шампа хĕрĕ — юхха.

Нукерсем.

Ĕçсем Пӳлер çывăхĕнче тата Пӳлерте вуннăмĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче пулса иртеççĕ.

Пролог

Пысăк вăрман хĕрринчи уçă вырăн. Аялта, инçех те мар, Явçырма (Кĕçĕн Çарăмсан) çуталса выртать. Çу уйăхĕн варри — пĕтĕм çутçанталăк чĕрĕлет: йĕри-тавра курăк ешерет, хурăнсем, çĕмĕртсем, шĕшкĕсем тата ытти чылай йывăç çулçă çурнă. Каçса кайса тăри юрлать. Хĕвеллĕ лăпкă кун. Кăнтăрла иртнĕ. Ут тулхăрни, унтан кĕçенсе яни илтĕнсе каять. Такамсем ут çинчен сике-сике аннă сасă. Пĕр енне ухă-çĕмрен, хĕç çакнă, тепĕр енне пысăк уртмах уртса янă Ухатер турхан, çар тумĕ тăхăннăскер, сцена варрине тухса тăрать.

Ухатер *(япалисене çĕре пăрахса)*. Ух-ха-ха! Тинех Явçырма хĕррине çитсе тухрăмăр! Хĕллеçрен шуçăм çутипе тухса, ут çинчен пĕрре анмасăр тенĕ пек, Çутă кӳлĕ, Курăш кӳлли, Атман кӳлли хĕррисемпе иртсе, Вăтапа Пасна шывĕсем урлă

каçса кунта çитрĕмĕр *(ал тупанĕ айĕн тӳпенелле пăхса)*, хĕвел çаплах çӳлте-ха, каçчен Пӳлере çитетпĕрех.

Ухатер нукерĕ Гаффар хĕçпăшал, икĕ йĕнер йăтса кĕрет.

Гаффар. Ăçта хурас кусене, хуçам?

Ухатер. Ак çакăнта пĕрле хур. Утсене тăлларăн-и? Халех ан шăвар-ха, пăшăхни кăшт ирттĕр.

Гаффар. Пĕлетĕп, хуçам.

Ухатер. Çутăпине Хаканбека пулăш. Йăмăкăмăр хытах ывăнчĕ пулас, халтан кайрĕ. Илесшĕн марччĕ ăна хăнана кĕтсе илме хампа пĕрле инçе çула, ӳкĕте кĕртеймерĕм. «Эп турхан йăхĕнчен, — тет, — манăн çирĕп пулма хăнăхмалла», — тет. Вара, мĕнех калайăн, илмех тӳр килчĕ.

Гаффар. Çаплах ĕнтĕ, хуçам, çаплах, Çутăпи тĕрĕс каланă.

Хасарсен çар тумне тăхăннă кĕрнеклĕ Хаканбек, илемлĕ арçын, çар тумĕ тăхăннă Çутăпие йăтса кĕрет.

Хаканбек *(Гаффара)*. Пыр-ха унта, нукер, утсене пăхкала. Пикемĕр Çутăпи йĕнер çинчен аннă-анман вилнĕ пек çывăрса кайрĕ. Хамăр та хыт ĕшентĕмĕр те, вăл... епле тӳсĕмлĕ сирĕн çĕршывăрăн хĕрĕсем!

Ухатер. Çамрăк-ха, вунулттăра анчах...

Хаканбек *(айккинелле)*. Çамрăк? Вунулттăра? Карчăк. Пирĕн енче вунулттăрисем виç-тăват ачаллă. *(Ухатере.)* Çаплах ĕнтĕ, çамрăк хĕрача.

Ухатер. Тăлăх ӳсрĕ.

Хаканбек *(Çутăпи çине ытарайми пăхнă пек туса)*. Ача пек тутлă çывăрать, мăнтарăн. Ăçта выртгарас?

Ухатер. Сулхăна, кĕççе çине... Пуçĕ айне йĕнер хур. Аттисене хыв, çухавине вĕçерт. *(Гаффара куçĕпе шыраса, вăрманалла.)* Гаффар!

Гаффар *(сцена хыçĕнчен)*. Эп кунта, хуçам!

Ухатер. Лашасене çавăт-ха, кăштах кăна шыв ĕçтерер, каярахпа лайăхрах шăварăпăр.

Гаффар енче ут тулхăрни, шывшăн антăхса кĕçенни илтĕнет.

Гаффар *(сцена хыçĕнче)*. Но-о! Ылттăнăмсем! Кайрăмăр! Кайрăмăр!

Ухатер *(хасара)*. Эпĕр хамăрах. Эсĕ ан пыр, Хаканбек, канса ярах. Таврăнсан апат çиййĕпĕр. *(Каять.)*

Хаканбек. Анса кайрĕç. Малтан учĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн шыв ĕçтереççĕ-ха, вара çерем çине леçсе яраççĕ. Унтан çăвăнма анаççĕ. Тен, тарăн мар çырма час ăшăнать тесе, шыва та кĕрĕç. Сехет е сехет çурă çараçланаççех икĕ ухмах. *(Çутăпи патнелле çывхарать.)* Тăван çĕрте манăн çичĕ арăм, хам иудей пулин те, асли вунçиччĕре, чи кĕçĕнни çиччĕре, вăталăххи вуникĕре. Кĕçĕннине тĕкĕнмен-ха, ӳссе çитессе кĕтетĕп. Нумай арăма нумай парне, пысăк мул кирлĕ. Çавăнпа килсе çитрĕм те çак варварсен тискер вырăнĕсене: Алмуш эльтĕпер казначейĕ ман кукка, куккам вара, Таббай Эзра, каган çарпуçĕн маликăн Пăлхарти хăлхипе куçĕ тата шанчăкĕпе тĕрекĕ. Кукка-и, кукка мана Алмушран вăрттăн пĕр хут, ик хут, виç хут хырçă сĕвелесе-хăпăтса илме ирĕк парать çак айван, шăршлă çĕр хурчĕсенчен! *(Çутăпие урипе тĕксе пăхать.)* Ним те туймасть, кашкăр йăтса кайсан та, йĕмне хывса илсен те... *(Курăнаканрах çĕре йăтса тухса выртгарать — айне кĕççе сарать, пуçелĕк вырăнне йĕнер хурать.)* Мĕнле хушнăччĕ-ха мана? Малтан аттисене, унтан ыттисене хывмалла... *(Çумне ларса Çутăпи аттисене хывать.)* Акă, пĕри пулчĕ... Акă тепри... *(Çĕре шаплаттара-шаплаттара лартать.)* Халĕ ĕнтĕ çухавине вĕçертер ытти тӳмисене ярар... *(Çутăпин çиелти туртирĕн тӳмисене вĕçертсе тухать.)*

Çутăпи *(йăшаланса илет, тĕлĕк витĕр)*. Аннеçĕм, ăçта эсĕ?..

Хаканбек. Кунтах, кунтах, ан шарла, çывăр, эсĕ питĕ ывăннă...

Çутăпи. Питĕ ывăннă... *(Çывăрса каять.)*

Хаканбек *(хĕрĕн çиелти тумне хывса илет, çурăмĕнчен лăп-лăп! лăпкаса)*. Çывăр, çывăр, канлĕрех çывăр, аннӳ кунтах вăл... аттуна та хывма хушрĕ, шăлаварна та... пĕç хушшисем пиçсе кайман-и-ха унта, йĕнер çинче пыра-пыра?.. *(Хĕрĕн шăлаварне салтма пуçлать, анчах та темрен сехĕрленсе ура çине сиксе тăрать. Йĕри-таврана тимлĕн пăхса çаврăнать. Çырма еннелле пуçĕпе сулса, мăшкăлласа кулса илет.)* Чăпăлтатаççĕ... Чăпăлтатăр, чăпăлтатăр. Чăпăлтатăр-ха пĕрер сехет, ыр курăр, киленĕр... *(Хĕр патне йăпшăнса çывхарать.)* Эх, сăнĕ... хĕвел пек... çӳçĕ сарă пурçăн тейĕн... кăкăрĕсем... мĕнле анаана хăпараççĕ... Паçăр, йăтса килнĕ чух, ăнсăртран тытса пăхрăм та — чул пек хытă. Арçын курман пулас ку карчăк... Ха-ха-ха! *(Çăварне аллипе хуплать.)* Мĕн эп ку аçтаха пек янрашатăп? Эй, сăваплă Яхве турă! Каçар ĕнтĕ мана эп çылăха-

мĕне кĕрес-тăвас пулсан! Виçĕ уйăх хĕрарăмпа выртман эп. Виçĕ уйăх тĕлĕксенче çеç куратăп лешне, йăлтах тĕмсĕлсе çитрĕм. Эй, сăваплă Яхве турă, каçар мана, мĕскĕн чуруна. *(Хĕрачан шăлаварне хывса илет.)* Ах, пĕççисем...

Тĕттĕмленет.

Çутăпи *(тĕлĕк витĕр)*. Ай, капла лайăх... уçă... Аннеçĕм, çума килсе выртрăн-и, йĕме те хыв-ха, йĕме те... Ай, епле ырă, канăçлă... Йĕме те хыв, аннеçĕм, кунта никам та çук... Ай, ырă, аннеçĕм... ачашла, ачашла çапла, пуçран ачашла, пуçран сав мана... Пуçран... Пĕçĕсене сарах, сарах, аннеçĕм, капла тата уçăрах, канлĕрех. *(Çутăпи сасартăк хаярăн кăшкăрса ярать, анчах та, çăварне хупланипе, урăх кăшкăраймасть.)*

Сцена майпен çуталать. Кĕççе çинче çурма
çара Çутăпипе Хаканбек.

Çутăпи *(вăранса çитсе куçне сăтăркалать)*. Эпĕ хытах çывăрса кайнă пулас, вилес пек ывăннăран вилес пек çывăрнă.

Хаканбек. Эпĕ те питĕ ывăннă, хытă çывăрнă.

Çутăпи. Манпа çывăрнă пулас? Юлашки тум таранчченех хывăнтарнă?

Хаканбек. Ху хывăннă — тĕлĕкпе астумастăн.

Çутăпи. Хă, апла иккен... кунта та эс кĕрсе тухман ĕнтĕ? *(Кирлĕ çĕре тĕллесе кăтартать.)*

Яштах ура çине сиксе тăрать. Хаканбек та сиксе тăрать.

Хаканбек. Эп мар, шăллăм кĕрсе тухнă... Эп сана качча илсе каясшăн.

Çутăпи. Миçемĕш арăму пулма?

Хаканбек. Пĕрремĕш...

Çутăпи. Юмах юптар... Тăхăн çине-пуçна. Авă, пиччесем шыв хĕрринчен кунталла çаврăнчĕç.

Тĕттĕмленет, кăштран çуталать. Çутăпи те,
Хаканбек та тумланнă.

Хаканбек. Епле лайăх! Çийĕмрен ту-сăрт илсе пăрахнăнах çăмăлланса кайрăм.

Çутăпи. Эпĕ те тĕк пекех çăмăллантăм — вĕçес килет.

Хаканбек. Эп сана хĕр тесе шутламан, эсĕ вара тап-таса хĕр иккен.

Çутăпи. Пирĕн ирĕксĕрех мĕн качча кайичченех таса хĕр пулас пулать, ахалĕн, кĕртлешнĕ вăхăтра тытас пулсан, хĕрне те, йĕкĕтне те, кирек кам йăхĕнчен пулсан та, вĕсен валли

тăватă суха тимĕрĕ çапса лартаççĕ те çумне икĕ алăпа икĕ урана çыхса хураççĕ, вара ĕнсерен пуçласа купарча таранах пуртăпа касса çураççĕ. Кайран арçынпа хĕрарăм пĕвĕн кашни татăкне йывăç çине çакаççĕ. Çавăнпах пуль, арçынсемпе хĕрарăмсем шыв хĕрне анаççĕ те çаппа-çарамасланса пурте пĕрле шыва кĕреççĕ, пĕр-пĕринчен нименле те хупланмаççĕ, нименле намăс ĕç те тумаççĕ.

Хаканбек. Санпа ман пек-и?

Çутăпи. А эсĕ măшкăллашса ан тăр, хýтĕленме хатĕрлен. Мана çапла ирсĕрленĕшĕн Ухатер турхан сана тавăрма тивĕçлĕ, вăл ахаль çын мар — патшалăхри тăваттăмĕш çын.

Хаканбек. Эп сирĕн çĕршывăрăн çынни мар, сирĕн патшалăхăр пирĕн патшалăха пăхăнса тăрать, Алмуш эльтĕперĕн ывăлĕпе хĕрĕ пирĕн патра, Итĕл хулинче, аманатра тăраççĕ. Сирĕн çыннăрсем Хазарире аманатра татах та нумай. Ман пуç сирпĕнсе ансанах вĕсен пуçĕсем те шăкăрах тăкăнаççĕ. Çийĕнчен, çарпуçĕ — малик — кунта вутпа та хĕçпе килсе кĕрсе, пурсăра тĕп тăвать. Ăнлантăн-и?

Çутăпи. Питĕ лайăх ăнлантăм.

Хаканбек. Апла пулсан, хăвна тирпее кĕрт те ут шăваракансене пирĕн хушăра ним те пулса иртмен пекех кĕтсе илме хатĕрлен. (Çутăпие ыталаса чуптăвать. Çутăпи унтан картах хăпса пуçне усса тăрать.) Ак кун пек маттур вара...

Çутăпи кăшкăрса макăрса ярать те чупса пырса Хаканбека мăйран уртăнать, чуптума пуçлать.

Çутăпи. Манра хĕрарăм вăранчĕ, Хаканбек! Анчах эп сана пурпĕрех вилесле кураймастăп.

Хаканбек *(хĕре аллипе пуçран савса)*. Ыраттартăм пулĕ, çавăнпа кураймастăн. Эс таса хĕр пулнăран ыратнă вăл, халь те ыратать-и, ак, шыва кĕрсе тухатпăр та, ыратми пулать.

Çутăпи. Эс шыв хĕрринче нимĕн те ан ту — пиччесем курсан, пĕтрĕм, сана ним те тумĕç, мана касса çурĕç.

Хаканбек. Эп шыв хĕрринче çеç мар, шывра та пултаратăп. Эс миçе çулта-ха?

Çутăпи. Хĕлле вунултă тултаратăп, халĕ вунпилĕк çул та тăват уйăх та çурăра. *(Пýрнисемпе шутласа кăтартать.)* Эсĕ вара миçере?

Хаканбек. Эпĕ... вăтăр пиллĕкре.

Çутăпи. Эсĕ лайăх арçын... Вăйлă... Хитре... Чуна кайса тиврĕ...

Хаканбек. Çавăнпа хĕрарăм çуралчĕ те ĕнтĕ санра.

Çутăпи. Ытла та лайăх япала-çке вăл. Паян кунĕпех йĕнер сăрчĕ кăтăкласа пычĕ. Юлашкинчен чăтаймиех пулса çитрĕм... Уласа ярассăм килчĕ. Йĕнер çинчен йăтса антарнă чух эс манăн кăкăра тытса пăхрăн. Вара... эпĕ урăх ним те астумастăп.

Хаканбек. Эсĕ çитĕнсе çитнине пĕлтерет вăл. Питĕ маттур эс, астуманни вăл çав тери лайăх.

Ут тĕпĕртетни, кĕçенни илтĕнет. Хавасланса, çăмăлланса кайнă Ухатерпе Гаффар кĕреççĕ.

Ухатер. Ха! Эсир ура çинче-çке! Кăçал шыв час ăшăннă, çимĕк çитиччен капла майпа çиччĕ мар, çитмĕл çиччĕ шыва кĕрсе тухма пулать.

Гаффар. Çитмĕл çиччĕ мар, тăхăрвунă тăххăр таран кĕреттĕмĕр ача чух.

Çутăпи. Эп вара кăçал пĕрре те кĕмен-ха!

Хаканбек. Эпĕ те!

Ухатер. Апла пулсан, кайса кĕрĕрех, эсир килнĕ çĕре эпир апат хатĕрлĕпĕр.

Çутăпи. Кайрăмăр!

Хаканбек. Кайрăмăр!

Çутăпипе Хаканбек шыва кĕме каяççĕ, Ухатерпе Гаффар апат хатĕрлес ĕçе пуçăнаççĕ, кăвайт чĕртеççĕ.

Чаршав

Малтанхи курăну

Ухатер турханăн вăрманти çурчĕ. Сад. Пахчара хăвăлтан тунă, çумăрпа хуралса кайнă авалхи тунката-вĕллесем. Çил шавлать. Ухатерпе Çутăпи.

Ухатер *(урайĕнче унталла-кунталла утать, уксахлать, çӳçенсе чӳречерен пырса пăхать)*. Çут тĕнче йăлтах улшăнса кайрĕ... *(Татах утать.)* Çĕр каçа епле тискерленчĕ... *(Утать.)* Çӳлти Турăпа çыхăну каллех татăлчĕ пулас... *(Чарăнса тăрать.)* Суранăм чарăнми сурать. Чун ыратать. Хасара пула тăван халăха çарататăп. Хĕлне-çуне, кĕрне-çурне пăхмасăр хырçă ыйтаççĕ... *(Чӳрече патне пырать.)* Çырма леш енне тĕтре карса илнĕ. Йăмрасем çĕре çити тайăлаççĕ, çумăр чашлаттарать, çил улать. Вĕллесем йăлтах хуралса кайрĕç... Çыр хĕрринчи капмар чулсем вара — шап-шурă...

Çутăпи. Тăхта, пиччеçĕм! Çĕрле Саврăш енче... пушар çути... Те — аçа çапнă, те... Хаканбек — унта... Эп витĕрех туятăп. Эп сисетĕп, анчах хăрамастăп... *(Пиччĕшĕ патне пырса ачашланать.)*

Ухатер. Ах, тăлăхскерĕм. Атте те, анне те хура çĕр айĕнче пирĕн... Тăван çĕрте хасар хуçаланать. Куртăм-ха, çĕрĕпех тĕрĕ тĕрлерĕн. Йĕппӳ сан çиçĕм пек çиçрĕ.

Çутăпи *(именсе)*. Темех мар... Ахальтен çеç... Шăлапир çине... Хаканбек пирки пăшăрханнă пек пулса... *(Пирне саркаласа кăтартать.)* Каçарсам мана, тархасшăн... Чăтса тăраймарăм пуль. Тем пулчĕ мана... Темшĕн хăра пуçларăм çавă хасаршăн... Аçа çапать, çумăр лӳшкет, çавăнтах — пушар çути... Вĕсем Саврăш енне хăçанах тухса кайрĕç... *(Кăштран.)* Эп тĕрĕс мар турăм пуль. Йĕппĕм çапла тума хушрĕ...

Ухатер. Эппин, йĕппӳне айăпла!

Çутăпи *(асăрханса пирне саркалать, унта çулăм ярса илнĕ çынна тĕрлесе хунă)*. Акă... Алсене пĕçертет... Хăратăп эпĕ ку пиртен, хăратăп! *(Ывăтса ярать.)*

Ухатер *(пире урайĕнчен илсе)*. Сиксе тухас пек куçĕсем... Хĕççи те çумĕнчех...

Çутăпи. Тĕрлесе хутăм та, вутра пĕтертĕм пек... *(Аллисем çине тĕлĕнсе пăхать.)* Çак аллăмсемпе вута пăрахрăм!..

Ухатер. Эс айăплă мар.

Çутăпи. Вута пăрахса çунтартăм!

Ухатер *(хавассăр кулса)*. Çĕрле йĕпсем усал. Мĕн выляТать вĕсене? Ак çакна, сăмахран? *(Пир çине тĕллесе кăтартать.)* Çапла-а... Хуть мĕн кала та, юрату марах...

Çутăпи. Чĕре сисет: Хаканбек вутра пĕтмен. Эпĕ ăна çĕлен çуратса паратăп. Илтетĕн-и, çĕлен?!

Ухатер *(шартах сиксе)*. Мĕнле апла — «çуратса паратăп»? Эсĕ йывăрлă-им? Хăçантанпа?

Çутăпи. Йывăрлă... Иккĕмĕш уйăх...

Ухатер *(шăлне шатăрах çыртса)*. Апла иккен, кунта та ĕлкĕрнĕ... Ылханлă Хаканбек! Хăçанччен чăтмалла çак пусмăра чăвашăн?! Хăçанччен чăтмалла çак мăшкăла?!

Алăка шаккаççĕ. Çумăрпа çил сассипе пĕрле пӳрте Сантимĕр кĕрсе ӳкет. Вăл лачкам йĕпеннĕ, чĕтрет.

Сантимĕр *(куçĕ алчăранă)*. Ыйтатăп каçару. Калла кайма çул çук. Çулсем шыв айне пулнă, çумăрĕ вара çаплах чарăнмасть, лӳшкет те лӳшкет, çыранти капмар чулсене çуса та-

сатса шап-шурă тунă. Эп витĕрех йĕпентĕм, шăнса кӳтрĕм, çавăнпа та сиртен ыйтасшăн хӳтлĕх.

Ухатер. Ыр çын пулсан, кĕрех.

Сантимĕр *(сăхманне хывать, куçĕ Çутăпи çинче чарăнса тăрать)*. Эсĕ кам? *(Хытă пăлханса.)* Виçĕмкун уйăхлă каçчĕ... Çакăн пек шурă кĕпепе эс мана тĕлĕкре курăнтăн!

Çутăпи. Эп сана палламастăп.

Сантимĕр. Çук! Виçмине эп сана тĕлĕкре куртăм... *(Хĕпĕртесе.)* Эс — уйăх хĕрĕ, çутă мĕлке. *(Ун патнелле аллисене тăсать.)*

Çутăпи *(каялла чакса)*. Вăл ăсран тайăлнă, тем супĕлтетет, куçĕ те тăмананни пек — нимĕн те курмасть.

Ухатер *(хăнана сăнаса пăхать)*. Тен, апла мар пуль: вăл лăпкăскер, курăк пек лăпкă, ан хăра унран. *(Кăшт тăхтаса.)* Хĕн-хур айне пулнă этем ку.

Сантимĕр *(сăхманне ача пек тытса ларать)*. Унта — тамăкчĕ... *(Лăпкăн.)* Эп тамăкран çăлăнса тухрăм...

Ухатер *(йăмăкне)*. Куратăн-и ĕнтĕ?

Сантимĕр *(куçне хупса)*. Çĕре çупăрлакан пур тĕлĕке те эпир туятпăр хумсем çăлтăр çутине туйнă пек... Çав тĕлĕк вăл пур çыншăн та пĕр...

Ухатер. Куратăн-и ак?

Çутăпи *(пăшăрхануллă сасăпа)*. Эп ăнланаймастăп!

Ухатер караслă пыл, çăкăр чĕлли илсе килет,
Сантимĕр умĕнче хытса тăрать.

Сантимĕр *(тĕлĕкри пек)*. Такан сасси илтĕнет, ут кĕçенет... Тĕпĕртетӳ... Ĕрлешӳ! *(Хулленреххĕн.)* Урама тухрĕ те выляма, таврăнаймарĕ... *(Тăхтасан.)* Хасар эсрелĕ утпа таптанă — эх, ывăлăмччĕ, ывăлăм! *(Сăхманне ача пек тытса сиктерет.)*

Çывăр, ульăм, паппа ту.
Папине, нянине!
Ачине — урине
тăппи-таппи çӳреме,
кăрăс-кăрăс! тутарма...

Ухатер. Акă пыл, акă çăкăр, тыт-ха... *(Сантимĕр чĕнмест. Ухатер Çутăпие.)* Анранă вăл. Сăхманне ил те тула тухса пытар.

Çутăпи сăхмана хăна аллинчен вĕçертсе илме хăтланать, анчах та лешĕ ăна, шартах сиксе, хăй çумне пăчăртать.

Сантимĕр *(тăманалла пушă куçне уçса)*. Ан тĕкĕнĕр! Ан тĕкĕнĕр! Эсир ăна вĕлересшĕн!

Çутăпи Ухатер çине пăхса илет те пăрăнать.
Сантимĕр, лăпланса, каллех куçне хупать.

Туятăп эп, ман чун пурнать манран, ман ӳтĕмрен уйăрăлса, сĕтĕрĕнет тĕнче тăрăх килсĕр-çуртсăр кушак пек... Халь эп тивĕç ăна кĕтмешкĕн чăтăмлăн — вăл сивĕ, пăрахăç çурта таврăнасса... Асăрхануллăрах пулсамăрччĕ чунпа, тĕркĕшӳре пĕрне-пĕри таптанă чух ман чунăма та лапчăтса ан кайăр! Ах, чунăм, чун! Тарса кайсам инçе-инçе — вăрмансене, уя, хире; пырса эс ан кĕр Пӳлере — унта шăршланчăк шухăшсем шăтса тухаççĕ йӳçĕ, çĕрĕк хура кăмпасем пек; унта çĕр кăкăрне таптать тăшман таканĕ. Çĕр ахлатать, тăшман асать. Тарса кайсам эс, чун, тарсам, тарсам!... *(Сăхманĕ аллинчен тухса ӳкет, çын урайне ларать.)*

Ухатер. Тем суйланать...

Çутăпи. Çывăрса кайрĕ... *(Сăхмана ачана тытнă пек пуçтарса тытать. Хĕр сăнĕ асамлă шалти çутăпа çуталса каять. Ача çывратнă пек туса утса çӳрет.)*

Нянине — паппине!
Ачине — урине
тăппи-таппи! çӳреме,
кăрăс-кăрăс! тутарма.
А-а-а! А-а-а!
Çывăр, ылттăнăм, часрах,
ĕнтĕ ларнă тăмани,
уйăх тухĕ, акă, тен,
ырă сунĕ вăл пире.
Нянине — паппине!
А-а-а-а!

Ухатер *(шухăшлăн)*. Капла иккен... *(Пуçĕпе сĕлтет те тухса каять.)*

Чаршав

Иккĕмĕш курăну

Йĕпе сад. Пĕлĕтлĕ уйăхлă каç. Шапчăк юрлать. Çеçкери çурхи йывăççем тĕксĕм çутăра хутран тунă пек курăнаççĕ. Шурă тум тăхăннă Çутăпи сукмак çине тухать. Алкумĕнче — Сантимĕр.

Çутăпи. Килсем ĕнтĕ кунта, килсем.

Сантимĕр *(аллисене тăсса ун патнелле пырать)*. Вилнĕ ачамăн сассине илтетĕп.

Çутăпи. Мана улталаканĕ таврăнмарĕ. Саврăш енне хырçă пухма кайрĕ те таврăнмарĕ. Мана инçетрен пушар çутипе саламларĕ. Эпĕ вара ăна çĕлен çуратса парасшăн...

Сантимĕр. Вăл таврăнĕ-ха. Ман ывăл вара ниҫçан та таврăнас çук. Çак уйăх çутипе пĕрле вăл мана сăмахсăр салам ярать — эпĕ пĕлетĕп.

Çутăпи. Манма тăрăшса пăх... Эпир яланах мĕн те пулин яланлăхах çухататпăр. Акă эпĕ уйăх çурă каялла хĕрлĕхе çухатрăм. Малтан вăйпа илчĕ, кайран хыçĕнчен хам çӳре пуçларăм.

Сантимĕр. Авă ун мĕлки мĕлтлетрĕ! Çавă тĕм хыçĕнче... Ĕлĕкхиллех йăрă та вăр-вар чупса çӳрет, анчах та халĕ темшĕн хăрать манран. Хăратнă пулĕ кам-тăр чĕррисем патне ан пыр тесе!

Çутăпи. Лере, çырма хĕрринче, каҫхи кайăк турат çинчен пăрлатрĕ, силленчĕк турат мĕлки сукмак çинчи уйăх çутине картларĕ.

Сантимĕр. Эп çав тери лайăх туятăп: ачамçăм кунтах, юнашарах. Тен, уйăха пула çапла пуль ку?

Çутăпи *(арçынна аллисенчен тытса)*. Эпĕ кĕтрĕм сана... Эсĕ кунта килсе тухасса туйсах тăтăм...

Сантимĕр. Сĕнкĕлтетрĕм кунталла... Вилес умĕн эмел курăкĕ шыракан аманса пĕтнĕ йытă пек...

Шăппăн та хавассăр кулаççĕ.

Çутăпи. Эп санăн ачу пулам. Пĕлетĕн-и, ав çавăнта пыы-сăк шурă чул выртать. Ун айĕнчи курăк та шап-шурах. Атя, кăтартатăп! *(Çавăтать.)*

Утар урлă каçса çăл тараси патнелле каяççĕ, — пысăк шурă чулĕ — унта.)

Куратăн-и, епле мăнă? Вăл ахальскер мар... Вăл, чул чĕреллĕ те, курăка асаплантарать. Акă, пăхсам: ун айĕнчи курăк епле шуранка та имшер.

Сантимĕр. Турат хушшипе ӳкекен уйăх çути пайăрки пек... Таптаса вĕлернĕ ачамăн çинçе аллисем пек...

Çутăпи. Чул чее те хаяр. Вăл мĕн шухăш тытни пурне те паллă. Эпĕ ăна вырăнтан хускатма, курăка ирĕке кăларма хăтланса пăхрăм. Халăм çитмерĕ — хускатаймарăм.

Сантимĕр. Эп халех... *(Чула хускатас тет, хускатаймасть.)* Епле вăл капмар та йывăр!

Çутăпи *(чула чăмăрĕпе çапса)*. Епле тӳрккес те вăйлă! Ун чунĕ чĕмсĕр те хĕрхенӳсĕр. Ах, мĕн тери асаплантарать вăл

курăка, мĕн тери пусарса тăрать. Курăкăн чунĕ çемçе. Каç-каçĕпе ĕсĕклесех йĕрет вăл. Кăнтăрла шуранка. Унăн мĕскĕн ӳтне сенкер мĕлкесем шăнтса ыраттараççĕ...

Сантимĕр. Вилнисем хĕвел çинче тата вилĕрех курнаççĕ.

Çутăпи. Çук, курăк чĕрĕ! Кашнинчех вăл манран пулăшу, хӳтлĕх ыйтнăн туйăнать. Анчах та эпĕ çак ылханлă чула нимĕн те тума пултараймастăп. Кам илсе килнĕ, кам хăварнă ăна кунта?

Сантимĕр. Çӳлти Турă пуль?

Çутăпи. Ан калаç кирлĕ мара — Турă ытла çӳлте!

Сантимĕр *(каçхи тӳпене итлесе)*. Ытла çӳлте!...

Çутăпи. Манар-и, манар мар хура çĕр айĕнчисене. Вĕсен чĕрине çĕрти вăрăм тымарсем ĕмеççĕ, çав чĕресем шуранкă курăк пулса шăтаççĕ...

Сантимĕр. Паллама та çукчĕ ачама! Ун сăнĕ-пичĕ уйăх çути кăвакартнă пек кăвакчĕ. Ак çакă чул айĕнчен тухакан курăк тейĕн; эх, мăнтарăн ывăлăм! Ытараймискерĕм!

Çутăпи. Эп кунта. Сан ывăлу — эпĕ вăл. Килĕшрĕмĕрçке санпа. Уйăхлă каçра асăрхамăн та-ха улшăнăва. Чуну та, килсĕр-çуртсăр кушак пек таçта çӳрекенскер, таврăнĕ çапах та хăвăн ăшнах.

Сантимĕр *(тĕлĕнсе)*. Туйăнать, таврăнать пулас. Акă итлеха, вăл кунтах çитнĕ ĕнтĕ...

Çутăпи хăлхине ун кăкăрĕ çумне тытса итлет.

Илтетĕн-и? Вăл таврăнчĕ! Илтетĕн пуль?

Çутăпи. Илтетĕп: чĕрӳ майпен пуçарчĕ юрă. Ку лайăх паллă!

Сантимĕр *(хĕр пуçне хăйĕн кăкăрĕ çумне хурса)*. Пăрахса ан кай мана, санпала мана лайăх. Санпала чун лăпланать, савăнать. Эп кунта шалкăм çумăр витĕр килтĕм... Эп туйрăм... Эп пĕлтĕм...

Çутăпи. Чуну лăпланать, савăнать...

Сантимĕр. Мана тĕлĕкре курăнтăн çак шурă кĕпӳпех садра.

Çутăпи. Çак шурă кĕпепех садра...

Сантимĕр. Тискерленнĕ тăнпуçăм мана кунталла хăваларĕ. Кунта — уйăх хуçаланать...

Çутăпи. Уйăх хуçаланать...

Сантимĕр. Кунта тем чухлĕ чĕр чечек пуç каçăртса уйăх çине пăхать, хĕпĕртесе ун çутă юррине итлет. Çук, çывăр-

маççĕ чечексем, темле юмах кĕтеççĕ — тĕнче çаврăннă май мĕскĕн чăваш та Çӳлти Турра юрăхлă пуласси çинчен, çĕрĕмĕр те шывăмăр ирĕке тухасси çинчен...

Эпĕ каллех сывă,
эпĕ каллех чунлă,
эпĕ каллех юрататăп...

Çутăпи. Каллех юрататăп...

Чаршав

Виççĕмĕш курăну

Хĕвеллĕ кун. Анчах та пĕлĕт юхнине пула хĕвел уйăха асилтерет. Ухатер хурт пăхать, Çутăпи вĕркĕчпе тĕтĕм кăларса тăрать. Хурт сĕрлет. Аякра аялта çырма кукри йăлтăртатса выртать. Пӳртпе утар хушшине курăк çине Сантимĕр вырнаçса ларнă. Вăл хăва хуллинчен карçинкке çыхать.

Ухатер. Кăçал пыл çук — çумăрлă çанталăк... Çавăнпах хурчĕсем те хаяр. Хыт сăхаççĕ.

Çутăпи. Сăхчăрах! Йăлтах сăхса пĕтерччĕр! Шыçăнса, илемсĕрленсе каяс килет — леш хайхи çырма хĕрринче тупнă шыва путса вилнĕ хĕрарăм вилли пек...

Ухатер. Эсĕ те хуртсем пекех усал, мĕншĕнни паллă.

Çутăпи. Çук, эпĕ хаяр мар. Хаяр, анчах та хам тĕлĕшшĕн. Эпĕ лайăх мар, пĕтнĕ çын. Юхха...

Ухатер. Хăйне хăй те юратман çын никама та юратмасть. Эпир хамăрти тупсăма юратмалла. Вăл вара таса...

Çутăпи. Тĕрĕс мар! Эп сана, ак çак утара, тăван тавралăха, яла, тӳпери хĕвеле, пурнăçа юрататăп!

Ухатер. Ма ăшна çунтаратăн? Вăл сана кавча илетех. Илтеретпĕр.

Çутăпи. Ун пирки мар.

Ухатер. Вĕсем халь пирĕнпе питех хирĕçесшĕн мар — анăçран хасара Кейӳ хытă хĕсме пуçларĕ. Тĕрӳ пирки канăçсăрланан пуль-ха?

Çутăпи. Çук, çук, пиччем. Ан асăн, кирлĕ мар. Чĕре çине чул хунăнах сăмахху. Эп вара паян питĕ телейлĕ. Пуринчен те телейлĕрех! Пуринчен те! Çут тĕнчере чи телейли! Эпĕ кун пек нихçан та телейлĕ пулман. Нихçан та! Ĕмĕрте те!

Йăлăмри çаран çинчен юрă сасси килет, çын сассисем, çава чашлатни илтĕнет.

Йĕкĕт сасси. Улма йывăç ут юпи
ут кăкарни илемлĕ.

Хĕр сасси. Аслă урам варринче
уяв туни илемлĕ.

Пĕрле. Мĕншĕн ут çулма тухмастăр,
çаран ӳсмест тетĕр-и?
Мĕншĕн уява кĕместĕр,
уяв иртмест тетĕр-и?

Йĕкĕт сасси. Ан ишĕл, çыран, ан ишĕл,
эпир каçса кайиччен.

Хĕр сасси. Ан авланăр, ачисем,
эпир ӳссе çитиччен.

Пурте пĕрле. Сакăр хуран сĕт çакрăм,
каçчен вĕреме кĕмерĕ.
Сакăр ялта пĕр ача —
эп ӳсессе кĕтмерĕ.

Сакăр ялта пĕр пике —
эп ӳсессе кĕтмерĕ...

Ухатер. Туятăп эп: ку этем сана инкек кăтартма килсе тухрĕ... Лешĕ те, ку та... Иккĕш те ют...

Çутăпи. Эп ăна тахçанах пĕлнĕ пек. Çавăн пек пулман-и санăн пĕрре те: тĕл пулатăн çынна, куçĕнчен пăхатăн, вăл сана тăваннăн туйăнса та каять? Мĕншĕн çавăн пек? Ху та пĕлместĕн.

Ухатер. Хăçан-тăр унăн чунĕ санăннинчен татăлса кайнă. Вĕсем пĕр-тăван. Çавăнпа та пĕрне-пĕри тунсăхлаççĕ, пĕрне-пĕри тĕнче тăрăх шыраççĕ...

Çутăпи. Эпир тупрăмăр пуль апла пĕр-пĕрне? Вăл ăçта-тăр пуррине, маншăн эп тунсăхланă пекех вилесле тунсăхланине пĕлнĕ эпĕ. Акă халĕ ĕнтĕ эпир пĕрле. Эп ăна шурăхнă курăк кăтартрăм та, вăл йăлтах ăнланчĕ. Эпир çав курăка ирĕке кăларма тупа турăмăр. Вăл хăйĕн хуйхине те манса кайрĕ.

Ухатер. Ун ăшчикĕнче тем пăтранать. Пăх-ха, аллисем пĕртте лăпкă тăмаççĕ, чĕтреççĕ. Куçĕ усал. Шалти тăнăçлăх çук ун пек çынсен. Вĕсем шанчăксăр. Хăрушă.

Çутăпи. Пиччем, эс ăслă, анчах — пуçупа, чĕрӳпе мар. Чĕре, юрату пекех, виçесĕр аслă...

Ухатер. Анчах та чуну таса мар пулсан, эс хăвна ху юратма пăрахан. Юрату вара вăл тӳрре тухас тесе хăтланакана чăтма пултараймасть...

Сцена хыçĕнче такам юланутпа килсе чарăннă сасă. Сада Муэдзин, Пӳлер мечĕтĕн минаречĕ çинчен кĕлле кăшкăрса чĕнекенре ĕçлекен пăлхар, кĕрет. Вăл чалмапа, атăпа. Çийĕнче — юланутпа çӳремелли тум. Аллинче — чăпăркка.

Муэдзин. Ас-салам алейкум! Аллах акпар! Килĕре-çуртăра — тăнăçлăх, ăшăра-чиккĕре — канăçлăх! *(Ик аллипе мăссăльманла сухал шăлать.)*

Ухатер. Э-э!... Таҫанах килмелле.

Муэдзин. Çапла, çапла... Пыл, прополис, чечек тусанĕ... Кирек мĕнле чир-чĕре те хирĕç тăма пултараççĕ вĕсем. Анчах та эп ахаль илместĕп, ахаль илместĕп... Эп... Ирĕк парсам, хисеплĕ турхан... *(Вĕлле хурчĕсенчен хăтăласшăн çапкаланать.)*

Ухатер. Лаша тарĕн шăршине юратмаççĕ хуртсем.

Муэдзин. Кăш-ша! турă чĕпписем!

Ухатер. Вĕсем туррăн мар, манăн.

Муэдзин. Çут тĕнчере пурне те турă тунă.

Ухатер. Ман турă — тар тухиччен ĕçлесси. Мечĕт — аслă тĕнче, ун çивиттийĕ — кăвак тӳпе, муаллимĕ — хĕвел, муэдзинĕ вара — çут çăлтăр.

Муэдзин. Турă пĕрре кăна. Вăл — мухтавлă. Аллах.

Çутăпи. Хисеплĕскер, çак шурнă курăка пехил парсам.

Муэдзин. Шурнă курăка?

Çутăпи *(вĕркĕчне çĕре лартса, шурă чул патнелле утать)*. Çапла, шурăхнă курăка, вăл çак чул айĕнчен ӳсет. Тен, пехил парсан, симĕсе çаврăнĕ?

Муэдзин. Мĕн-ма курăка?

Çутăпи. Ма тесен ăна питĕ хĕн, ӳсме те вăл ыратнипе авкалана-авкалана чул айĕнчен ӳсет. Çавăнпах, ав, епле шурăхса кайнă.

Муэдзин. Мĕнех вара, курăка-тăк курăка... *(Чул тавра кĕлĕ мăкăртатса çаврăнать.)* Аллахсăр пуçне турă çук. Ля иллях ил Аллах. Мухаммед рассул Алла! Аслă та мухтавлă Аллах хушнипе çак курăка пехил паратăп. Çырлах та хăтар ăна, Аллах...

Ухатер *(çывхарса)*. Çавăрса пăрахмалла та ку чула — ĕçĕ те пĕтрĕ. Вăй кирлĕ кунта!

Сантимĕр пырса тăрать.

Атьăр-ха, ушкăнпа тытар...

Пурте пырса тытаççĕ.

Пĕрре-иккĕ, хытăрах! Пĕрре-иккĕ, хытăрах!

Чул хускалмасть.

Çутăпи. Епле вăл хура чунлă, кутăн!

Сантимĕр. Епле сивĕ те хаяр!

Ухатер. Епле вăйлă та йывăр!

Муэдзин. Пурне те Аллах ирĕкĕ...

Шухăша кайса тăраççĕ.

Çутăпи *(хытă тарăхса)*. Капла майпа эпир нихăçан та, нихăçан та ирĕке кăлараймастпăр шурăхнă курăка!

Шухăшлă сăнĕсене пурте ун еннелле çавăраççĕ.

Чаршав

Тăваттăмĕш курăну

Леш декорациех: уйăх манерлĕ хĕвел, йывăççем çеçкере, çутă вăйăи... Ухатерпе Муэдзин пĕр кĕтесре шахмăтла выляççĕ. Пӳртрен инçех мар, авансценăна çывăх, курăк çине Сантимĕрпе Çутăпи вырнаçса ларнă. Арçын карçинкке çыхать, хĕрарăм ăна пулăшать. Карçинкки хатĕрпе пĕрех.

Муэдзин. Эхе-хей, çылăхлă çав эпир...

Сантимĕр *(Çутăпие карçинкке кăтартса)*. Куртăн-и, çыхса та пĕтертĕм?

Ухатер. Урăх ан та выля, хисеплĕскер.

Çутăпи. Епле илемлĕ карçинкке!

Муэдзин. Хирĕçтăру кĕвĕçӳлĕх çуратать, кĕвĕçекен вара пысăк çылăха кĕрет.

Çутăпи. Ытарайми карçинкке!

Ухатер. Вылямалла мар, хисеплĕскер. Санăн çӳремелле!

Муэдзин. Исса пророк мĕнле каланă: кам çылăхсăр, çав мана чулпа петĕр, тенĕ.

Сантимĕр. Хама çăкăрлăх ĕç тупрăм. Ялта ӳснĕ-çке эпĕ. Килйыш пысăкчĕ, çавăнпа та, тăранса пурăнма тесе, карçинкке çыхма вĕрентĕм. Куратăн-и, манăçман, аванах пулса тухрĕ!

Ухатер. Ман хамăн турă. Чăваш турри.

Çутăпи. Сан тĕп ĕçӳ вăл — мана юратасси. Çакна нихçан та ан манса кай эсĕ...

Муэдзин. Тĕрĕс тĕне тытман çынпа выляса ик хут çылăха кĕретĕп. Лашуна слонпа илтĕм, корольне шах паратăп!

Сантимĕр. Халăх чунĕ — капмар чул айĕнчен ӳсекен шуранкă курăк...

Ухатер. Эпĕ слонна ферзьпе илсе хам тапăнатăп.

Çутăпи. Эпир халь ирĕклĕ, çавăнпа та шуранкă курăка пулăшма тивĕçлĕ.

Муэдзин. Шанманлăх — иккĕленӳ çăлкуçĕ, иккĕленӳ вара... Татах çӳреп.

Сантимĕр. Кашкăра та, шăпчăка та пулăшар.

Ухатер. Ырлăхпа сывлăх паракан çӳлти Мăн Турă, эй, Тенгрихан! Ăс пар, вăй пар çĕнме тăшмансене. Эй, Тенгрихан, çырлах пире, сана хисеплекенсене. Сана маннисене — ылхан! Аçа çапса çунтартăр сире!

Сантимĕр. Эпир ача чухнехи пек таса та çылăхсăр пулăпăр. Эпир чечекрен, хурт-кăпшанкăран, çăлтăртан тĕлĕнсе савăнăпăр. Эпир çĕнĕрен, иккĕмĕш хут çуралăпăр. Çĕнĕ чăн-чăн пурнăç валли...

Муэдзин. Тĕрĕс тĕне тытманнисен турри çук... Пешкуна илетĕп.

Çутăпи. Тем чул ача çуратса тултарăпăр...

Ухатер. Тĕнчене илемлĕ те хаяр тунă. Ку вăл Турă...

Сантимĕр. Пĕлĕтсемпе курăксем тăнлă...

Муэдзин. Çырлахсам, Аллах.

Çутăпи. Йывăç та тăнлă...

Ухатер. Ку вăл Турă...

Сантимĕр. Çумăрсемпе тĕтресем тăнлă, çĕр тăнлă...

Çутăпи. Çутă! Çутă! Çутă!

Сантимĕр. Чечексемпе çăлтăрсем тăнлă... Пурте тăнлă...

Çутăпи. Çутă! Çутă! Çутă!

Муэдзин. Хăтар та, Аллахăм, çырлах...

Сцена хыçĕнче утă çулакансен юрри янăраса каять. Пурте шăпланса юрă итлеççĕ.

Арçын сасси. Алран кайми аки-сухи,
асран кайми атти-анни.

Хĕрарăм сасси. Аки-сухинчен уйрăлас çук,
атти-аннине, ай, манас çук.

Арçын сасси. Асран кайми пĕлĕш-тантăш,
пуринчен пахи — ялйыш, пускил.

Пĕрле. Ай, ĕçер-и, ай, çиер-и?
Виличчен пĕрле, ай, пурнар-и?

Хĕрарăм сасси. Ай-йай-йай-йа!...

Арçын сасси. Ай-йай-йай-йа!...

Çава йăтнă утă çулакансем сада кĕме ирĕк ыйтаççĕ.

Арçын. Пирĕн шыв ĕçес килет, çăвар йăлтах типсе кайрĕ.

Хĕрарăм. Пире ĕç ĕшентерчĕ. Килте ачасем кĕтеççĕ...

Хĕрарăмпа арçын, пĕр-пĕрне ытараймасăр пăхса, каçкӳлĕм çутинче шултра тумламсем йăлтăртаттараййăлтăртаттара тăкса, çăл шывĕ ĕçеççĕ. Сантимĕрпе Çутăпи вĕсене, чĕрне вĕççĕн тăрса, куçпа ăсатаççĕ.

Муэдзин. Аслă Аллаха — мухтав, çĕр питне — тăнăçлăх, этем тенине — ырă кăмăл.

Ухатер. Ăслă тăнлă çут тĕнчене — мухтав.

Шахмăтне шăкăр-шакăр! тутарса, тарăн шухăша путаççĕ.

Çутăпи *(Сантимĕре)*. Атя, пытанмалла вылятпăр. Ача чухнехи пек! Çаврăнса тăр. Пиллĕкрен шутла та мана шырама пуçла. *(Тунката-вĕлле хыçне пытанать.)*

Сантимĕр. Пĕрре — пĕрел, иккĕ — икел, виççĕ — виçел... *(Йывăççемпе вĕллесем хыçне пăха-пăха, сад тăрăх çӳрет.)* Э! Ак ăçта иккен эсĕ!

Çутăпи *(ахăлтатать)*. Эс вăрттăн пăхса тăнă!

Сантимĕр. Пăхса тăман... Çакăнтах çĕр çăттăр, ним чул та пăхман. Халĕ эсĕ шыра.

Çутăпи *(аякри кĕтесе пăрăнса, куçне аллипе хуплать)*. Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă... Тăваттă... Тăваттă... Пулчĕ-и?

Тĕмсем хыçĕнчен сухалĕ ӳссе кайнă, çипуçĕ, аттисем хăрăмпа та пылчăкпа вараланса пĕтнĕ Хаканбек тухать. Пĕр енне хĕç, тепĕр енне ухăпа ухă йĕпписем çакнă. Çутăпие хыçалтан пырса тытать. Лешĕ шартах сикет.

Эсĕ... чĕрĕ-и? Пушарта пĕтмен-и?

Хаканбек. Эсĕ вара мана вĕлертĕн те-и? Куратăп-ха, куратăп: эсир кунта мана пытарнă та иккен, çĕр шăтăкне ăмансем патне чавса чикнĕ. Эпĕ — ак вăл! Чĕрĕ те сып-сывах... *(Ахăлтатать.)*

Сантимĕр хытса кайса пăхса тăрать.

Эс мĕн, мана хавасах мар-им? Е? Мĕскер чĕтретĕн эсĕ? Эп тупăкран тăрса тухман. Эп сан арçынну... Чĕрĕ те сып-сывах. Чарăн-ха эс чĕтреме, ухмахскер! Атя, атя пӳрте. *(Чышкаласа, Çутăпие пӳрт патнелле илсе каять, алăк умĕнче чарăнса тăрать.)* Мĕн вара куçăра чарса пăрахрăр? Чĕрех эп, сып-сывах. Эсĕ, ак, чалма пуç, каллех пылшăн кастарса çӳрен пуль-ха? Кӳп нумайрах, часрах çурăлĕ хырăму... *(Кĕрсе каять.)*

Муэдзин. Мĕнле шуйттан ку? Каяс пуль... Сисетĕп: кӳкĕрт шăрши кĕре пуçларĕ.

Муэдзин ҫиелти тумне тăхăнать, пĕр аллипе пыл савăтне тытать, тепринпе чăпăрккине илет, шартлаттарса пăхать те пахча алăкĕ патнелле утать. Сантимĕр ăна хуса ҫитет.

Сантимĕр *(карҫинккине тăсса парса)*. Туянсамччĕ ҫакна...

Муэдзин. Чăнах та... Хуҫалăхра кирлĕ пулать...

Пыл савăтне карҫинккене лартать, Сантимĕре кĕмĕл парать те тухса каять. Ухатер Сантимĕр патне пырать, аллине унăн хулпуҫҫийĕ ҫине хурать. Иккĕш те пӳрт ҫинелле пăлхануллăн пăхса тăраҫҫĕ. Сцена хыҫĕнче ут кĕҫенни, лаша таканĕн сасси илтĕнет. Ҫутă сӳнет.

Чаршав

Пиллĕкмĕш курăну

Пӳрт ăшчикки. Тенкел ҫинче аллисене, пуҫне усса Ҫутăпи ларать. Вăхăтран-вăхăта пусăрăнса, анчах ҫавăнтах сике-сике тăрса, пӳрт тăрăх ҫиллине ниепле шăнараймасăр Хаканбек ăшталанса ҫӳрет.

Хаканбек. Мĕн пирки хăраса ӳкрĕн эс ытла та унта, садра? Халь акă тута усса ларатăн. Йăлтах хуйха ӳкнĕ. Ҫапла, ҫапла, йăлтах хуйха ӳкнĕ! Калăн, Саврăш енчен манăн виллĕме турттарса килнĕ. Анчах та эпĕ чĕрĕ те сып-сывах! Куратăн-и, эп — чĕрĕ! Ҫавăн пек тамăкран ҫăлăнса тухайрăм пулсан, малашне нумай-нумай ҫул хушши пурнăп-ха. Кив Саврăшра кахал эшкер хуҫаланать — патшалăха нимскер парасшăн мар. Хăшпĕрисем ик-виҫ ҫулшăн хырҫă парса татман. Кашни килтен — пĕрер сăсар тесен: «Ҫу варринче ăна ăҫтан тытар?!» — тесе ҫухăрашаҫҫĕ. «Эс мĕнле ухмах? Ухатер турхан ăҫта?» — тесе ыйтаҫҫĕ. Илсе тухрăмăр пĕр вун килтен ĕнисене. Ҫĕрле хурал пӳртне вут тĕртрĕҫ, вуннăран виҫ тĕкĕрҫе амантрĕҫ. Мана Гаффар ҫăлчĕ, Ухатер нукерĕ, леш, мăк сухаллăскер, халĕ вăл лавсемпе Пӳлере кайрĕ-ха. «Ухатер аманнă», — тетĕп. Ĕненмеҫҫĕ. «Эсир, хасарсем, ăна шанми пулнă», — теҫҫĕ. «Эпĕ чăваш кĕрӳшĕ пуласшăн-ха», — терĕм те, урсах кайрĕҫ, ҫĕрĕк ҫăмартасемпе пеме пуҫларĕҫ ушкăнран. «Кирлĕ мар, ҫухал, тĕп пул!» — тесе кĕрлеҫҫĕ. Ҫумăр чашлаттарса ячĕ. Аҫа ҫапать. Ҫĕрле хурал пӳртне вут хыпрĕ. Алăкран кăлармаҫҫĕ, чӳречерен кăлармаҫҫĕ, маччаран тухса тартăмăр... Ан лар-ха чĕнмесĕр, кала-ха мĕн те пулин, кала. *(Ҫуммăн пырса ларать. Ҫемҫен, йăпăлтатса.)* Ҫĕк-

лесем пуçна. Ак çапла çĕкле. Каласам мана: эп сана питĕ-питĕ кĕтрĕм, те...

Çутăпи. Сиснĕ эп эсĕ таврăнасса. Сан пеккисем пурте вилсе пĕтсен те тĕп пулмаççĕ.

Хаканбек *(яштах сиксе тăрать)*. Çапла, тĕп пулмаççĕ! Эп çуртсем хушшипе çӳрерĕм тигр пек, арăслан пек! Тискер кайăк сисĕмĕпе эп туйрăм хăрушлăх ăçтан килессе, çав хушăрах хам шухăшларăм ĕшенчĕклĕн те йăвашшăн: «Çапах та эсĕ кашкăр мар, этем, Хаканбек», — терĕм. Мана ĕнтĕ пĕри хуса çитсех пыратчĕ, эпĕ вăрмана кĕрсе ĕлкĕртĕм. Хăранипе элес-мелес юман тăррине чи çӳле улăхса ларнă хушăра шăхăрса та ӳлесе çич юланут вирхĕнсе иртрĕ. Хăлха хупланчĕ, куç хуралчĕ. Çав тамăкра эпĕ аçа çапнине те илтмерĕм, çиçĕм çиçнине те курмарăм. Йывăç çинче эп, таппа лекнĕ пек, ниçта кайса кĕме пĕлмерĕм. Çав самантра хăрани мар, урнă çиллĕм мăйăмран пăвса лартрĕ: мĕншĕн манăн çакăнта тата халь пĕтмелле? Мĕне пула? Эп çынсене те, тӳпене те ылхантăм, эп пĕтĕм çут тĕнчене ылхантăм! Юмана чăмăрсемпе хĕнерĕм, пуçăмпа чышрăм... Хаяр çиллĕме пула сывлăшсăр антăхрăм. Ах, тĕнчене мĕн тери курайми пултăм эп! Акă ĕнтĕ эпĕ чĕрĕ. Чĕрĕ! Чĕрĕ эпĕ!! Епле ырă вăл чĕрĕ-сывă пуласси, епле ырă эпĕ пурри... Ман çав тери юратас килет! Хама ачамра малалла пурăнтарас килет, ĕмĕрлĕхе, яланлăха... Эй, ман юратас килет! Ăссăрла, тĕмсĕлсе, вутлăн, çулăмлăн — юратас килет!

Çутăпие ярса тытать, хĕрӳллĕн ыталаса илет, антăхса кайса чуптума пуçлать. Çутăпи ăна сиввĕн сирет.

Çутăпи. Санран вара манăн çĕлен çуралĕ...

Хаканбек *(ларса)*. Çĕлен?

Çутăпи. Çапла, çĕлен... Юратăва эсĕ хĕрарăмпа выртас килнипе пăтраштаратăн. Юрату — турăран, сан ăшталанăву — кĕрт йыттинчен.

Хаканбек *(сиксе тăрать)*. Мĕн тери терт! Мĕнле тăрăшса итлетĕп, эс мĕн тенине ăнланаймастăп. Мĕн тетĕн эсĕ?

Çутăпи. Пирте чи çӳлли вăл Чун, тетĕп. Эсĕ вара чунсăр, çавăнпа ĕнтĕ эпир пĕрлех пулин те пĕр-пĕринчен çав тери аякра. Эсĕ çăл тараси панчи ав çавă чул пек...

Хаканбек. Эс мана хырçă пухма кайнăшăн кураймастăн. Астăватăп, тухса каяс умĕн, ирхине, сиввĕн те юттăн пăхрăн, унтан куçран шăтарасла пăхса ăша-чикке тĕпчерĕн, пачах ют,

палламан ҫынна тинкернĕ пек тинкертĕн. Вара эп шутларăм: юратнă ҫынна кун пек куҫпа пăхмаççĕ.

Ҫутăпи. Пирĕн ҫынсене ҫаратса эсĕ хăвăн чунна ҫарататăн, пирĕн ҫынсене вĕлерсе хăвăн вилĕмсĕр чунна вĕлеретĕн...

Хаканбек. Ирĕксĕр ҫапла тума тӳр килет: е эсĕ ҫарататăн, е сана ҫаратаççĕ; е эсĕ вĕлеретĕн, е сана вĕлереҫĕ. Урăх ҫул ҫук.

Ҫутăпи. Пур!

Хаканбек. Пур? Апла-тăк... Кхм!... *(Шухăша кайса, шалалла иртет, унта, Ҫутăпи хыҫĕнче, тĕрленĕ пире курах каять, салатса пăхать те ҫавăнтах пуҫтарса хĕвне чикет.)* Пурах апла? Апла-тăк... пĕтес пулать. Ку — вилĕм ҫулĕ.

Ҫутăпи. Вилĕм... Пурнăҫ... Сăмахсем! Пурте пĕрех. Чи кирли — чуна типесрен упраса хăварасси!

Хаканбек. Вара мĕн, сан чуну таса-и?

Ҫутăпи. Ыратать манăн чун...

Хаканбек. Мĕн хĕрхенмелли ăна.

Ҫутăпи. Эп айăпсăр.

Хаканбек. Айăпсăр?

Ҫутăпи. Эпĕ пĕлместĕп.

Хаканбек. Пăх-ха эс, пĕлмест вăл, хăй чун пирки пакăлтатать. Чуну сан пĕтнĕ ĕнтĕ! Вилнĕ...

Ҫутăпи. Ҫук, ҫĕнрен ҫуралнă. Тен, ҫĕнрен ҫуралнă чух ҫапла ыратать вăл? Кам пĕлет...

Хаканбек. Чуну сан пĕтнĕ!

Ҫутăпи. Ҫук, ҫĕнрен ҫуралнă! Эп чунра тĕлĕнмелле ҫĕнелӳ те ҫутă пуррине туятăп. *(Астуса.)* Ҫутă! Ҫутă! Ҫутă! Ҫук, ҫĕнрен ҫуралчĕ вăл... Чун ӳтлĕ мар, ҫавăнпа та ик хутчен те ҫуралма пултарать. Тен, ытларах та... Ывăнмалла мар ҫеҫ, санăн та ҫуралĕ...

Хаканбек. Таса мар-тăк, чуну сан пĕтнĕ.

Ҫутăпи. Ма таса мар?

Хаканбек. Куратăн-и ĕнтĕ, хăраса ӳкрĕн!

Ҫутăпи. Ҫук, хăраман. *(Шăппăн.)* Вăл пĕлет...

Хаканбек. Асту, шухăш тытни — ĕҫ туниех. Начар шутларăн — ҫынна пĕтертĕн.

Ҫутăпи. Пĕтертĕн?

Хаканбек. Е чĕртсе тăратрăн...

Ҫутăпи. Ним тума та ҫук, эпир пахчара хуҫа мар, тарҫă анчах. Хуҫа тесе йăнăшнă. Чун, юратушăн ҫуннă чух, хăйне чăрмантаракана, пусмăрлакана витĕр кураймасть.

Хаканбек. Эс маншăн арăм пекех!

Çутăпи. Эпĕ капмар чул айĕнчен хăтăлса тухас тесе йĕрекен шуранкă курăк.

Хаканбек. Эс аса ил-ха... Эс ху-çке...

Çутăпи. Иртнин сасси салхулăх çуратать. Эс ун чухне манăн хĕрлĕхе пĕтертĕн... Хирсе кĕрсе... Пурнăçа пĕтертĕн...

Хаканбек. Эп пусмăрламан.

Çутăпи. Çара арçын курманччĕ эп, курсассăн — пуçа йăлт çухатса, хăрушă çылăх турăм... Анчах эс маншăн ют.

Хаканбек. Кала, сана юрас тесен, ман мĕн тумалла? Мĕнле пулмалла? Эпĕ пулатăп, пулатăп!

Çутăпи *(хуйхăллăн)*. Пиртен килмест. Ним те тăваймăпăр.

Хаканбек. Эпĕ пĕлнĕ, эпĕ туйнă. Лере... Лере! Халтан кайса, хутланса кĕрсе çывăрса кайнă, мĕн пулать те мĕн килет тесе. Эс курăнтăн, çутăскер, лăпкăскер. Чӳречĕ панче ларатăн пек, тĕрĕ тĕрлетĕн. Тĕррӳне куртăм та, чĕрене çĕçĕ касса кайнă пек пулчĕ. Мĕн тĕрленĕччĕ — астуса юлаймарăм.

Çутăпи. Тем мар... Шăлапире тĕрлерĕм хăраса та пăлханса.

Хаканбек. Утпа таптаса вĕлернĕ ача мар-и ăнсăртран?

Çутăпи *(çӳçенсе)*. Вилĕ ача? Эй, пӳлĕхçĕм! *(Шăппăн.)* Йăлтах пĕлет...

Чаршав

Улттăмĕш курăну

Пӳрт çывăхне пысăк кĕççе сарнă. Унта Çутăпи, Хаканбек, Сантимĕр, Ухатер урисене хуçлатса ларнă. Умĕсенче — шерпет тултарнă куркасем. Анчах никам та ĕçмест. Йывăççем хыçĕнчен тем пысăкăш хĕрлĕ уйăх тухни курăнать. Чылайччен чĕнмесĕр лараççĕ.

Сантимĕр. Уйăх тухать...

Ухатер. Тухать çав...

Çутăпи. Уйăх...

Хаканбек. Уйăх...

Каллех вăрахчен чĕнмеççĕ.

Сантимĕр. Мĕн тери шăп... Çырма, йывăççем, уйăх — пурте мăнаçлă та илемлĕ. Кунта иртнĕ ĕмĕрсемпе пулас ĕмĕрсене пӳрнесемпе хыпаласа пăхма пулать пек туйăнать... Хуласенче вара çав тери сывлама йывăр, кичем, çав тери шавлă, ту-

санлă, таса мар, кулленхи хĕвĕшӳре вара ху пĕтессе малтанах курса тăма пулать...

Чĕнмесĕр лараççĕ.

Хаканбек. Саврăш енче кахал нумай, ĕçлес темеççĕ. Хăшпĕрисем икĕ-виçĕ çулшăн хырçă парса татман. Кашни килтен пĕрер сăсар тирĕ памалла, памаççĕ: «Эс мĕнле ухмах, ăçтан килнĕ? Ухатер турхана ăçта персе чикрĕр? Вăл лайăхчĕ», — теççĕ. Илсе тухрăмăр пĕр вун килтен ĕнисене. Çĕрле хурал пӳртне вут тĕртрĕç, вуннăран виç тĕкĕрçе амантрĕç. Мана Ухатер нукерĕ Гаффар çăлчĕ — алăкран кăлармаççĕ, чӳречерен кăлармаççĕ, маччаран тухса тартăмăр. Гаффар лавсене леçме Пӳлере кайрĕ, эпĕ кунта кĕрсе юлтăм. Саврăш енчи пăлхав пирки хасар патшине — малике — пĕлтерме Итĕл хулине ятарласа хыпарçă ямалла. Енчен те Алмуш эльтĕпер айăплисене тупса хăлхисене пăрмасан, малик хăйне пăхăнса тăракан Пăлхар çĕрĕ çине хĕçпе те вутпа килсе кĕме пултарать.

Ухатер. Паян эпĕ утарта сăвăслан вĕçнине куртăм. Инçех те мар йăви пур пулас. Сăвăслан — хĕрхенме пĕлмен усал та çăткăн чĕрчун. Вăл черчен вĕлле хуртне ярса тытать те йывăç çине çĕклесе каять, унта вара ун çуначĕсене кăшласа татать, хăйне çисе ярать. Паян пĕр сăвăсланĕ улăхран вĕçсе килнĕ хурта пӳлсе тытрĕ те ват улмуççи çине йывăррăн çĕкленме тытăнчĕ. Эпĕ хыçĕнчен кайрăм. Алла кивĕ милĕк лекрĕ, эпĕ сăвăслана çапса ӳкертĕм. Вĕлле хурчĕ вилнĕччĕ ĕнтĕ. Эпĕ вара вĕлерекене киленĕçлĕн вĕлертĕм. Çапла, сăвăслана эпĕ пысăк хаваспа вĕлертĕм! *(Кăшт чĕнмесĕр тăнă хыççăн.)* Усалли епле нумай ку тĕнчере...

Вăрахчен чĕнмеççĕ. Ӳссе пыракан хиврелӗхе Çутăпи асаплăн ахлатса яни хуплать.

Çутăпи. Эп айăплă мар! Эп урăх чăтма пултараймастăп! Килĕшетĕр-и, выльăх пек пулатăп! *(Тăват уран тăрать.)* Килĕшетĕр-и, уйăх çинелле йытă пек вĕрме пуçлатăп?! *(Вĕрет. Уласа ярать.)*

Сантимĕр *(ун патне чупса пырать)*. Чарăн! Ан мĕскĕнлен! Ура çине тăр, хушатăп сана: тăр! Йăлăнатăп! *(Çĕклесе тăратать. Лешĕ ĕсĕклет.)*

Хаканбек. Каятăп эп! *(Сиксе тăрать.)* Каятăп! Вăрăсемпе вут тĕртекенсене тăн кĕртме каятăп. Каллех çав енне, Саврăш енне çул тытатăп. Эп хăрамастăп! *(Çутăпие.)* Эс мана парăн-

ман, эс мана сăмах паман! *(Хĕвĕнчен тĕрĕллĕ шăлапире турт-са кăларать те чăр-чар! çурса ури айне пăрахать. Унтан пӳрте кĕрсе хĕçпăшалне илсе тухать; йĕнер те йăтса, пахча алăкĕн-чен тухса çухалать.)*

Юлнă виçĕ çын кĕççе çинче вăрахчен чĕнмесĕр лараççĕ. Акă Ухатер васкамасăр тăрса тĕрĕллĕ пире пуçтарса илет те пӳртелле кĕрсе каять. Кĕççе çинче юлнисем шухăшлă та шăпăрт. Уйăх тухса çитнĕ. Шăпчăк юрлама пуçлать. Тĕксĕм çутăра йывăççем хутран касса кăларнă пек туйăнаççĕ.

Сантимĕр. Уйăх тата эпир иккĕн...

Çутăпи. Шăпа тата эпир иккĕн...

Сантимĕр. Уйăх... Ăна епле тунсăхлă пуль çӳлти вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕсре...

Çутăпи. Епле тăлăххăн çутатать вăл.

Сантимĕр. Пире садра кĕтет вăл. *(Тăрса садалла утать.)* Кил кунта!

Çутăпи. Пыратăп! *(Чупса пырать, алран-алла тытаççĕ.)*

Сантимĕр. Уйăх... Таса кӳллĕн тĕпĕ курнать ун çутинче.

Çутăпи. Вĕт чулĕсем йăлтăртатаççĕ, хăйăрĕ çиçет. Сăртра сукмак курнать. Уйăх...

Сантимĕр. Мĕне-тĕр тахçан иртнине, манăçнине аса илтерет вăл.

Çутăпи. Ухă йĕппине, сиктĕрмене, ут таканĕн йĕррине аса илтерет... *(Уйăха.)* Тата мĕне, уйăх, каласамччĕ мана?

Сантимĕр. Чĕнмест. Вăл чĕлхесĕр...

Çутăпи. Пире вăл туять те, ăнланать те! Юратушăн чикĕ çук.

Сантимĕр. Анчах та мĕншĕн уйăх çути кулянуллă?

Çутăпи. Уйăх юн та, куççуль те нумай курнă, пĕлет вăл: юрату — асап.

Сантимĕр. Çук, савăнăç! Эп юратататăп тата эсĕ манпа юнашарах. Куçусене уйăх витĕрех çутатнă... Юратататăп... Чĕрене ниепле лăплантарма çук, вăл алхасакан ача пек. Ман пĕтĕм тĕнчене ыталас, чуптăвас, чуптăвас килет. *(Çутăпие ыталать, чуптăвать.)*

Çутăпи *(ирĕке тухасшăн)*. Çук, ирĕке яр... Кай, ан астар. Çуталнă çăлтăра ан сӳнтер; чун вучĕ ан пĕттĕр тесен, турă ырлăхне ан варала.

Сантимĕр *(хуйхăллăн)*. Туяп, эпир сăлтав кăна, ан сӳнтĕр вучĕ тенешкел. Савма саватпăр вара пĕр-пĕрне мар, кама-тăр урăхне, виççĕмĕшне, хамăртан чунпа çӳллĕрехне...

Çутăпи *(вылянчăклăн)*. Йывăççене е уйăха? Чечексене?

Сантимĕр. Эпир сăлтав çеç — эсĕ те, эпĕ те.

Çутăпи. Шăпрах, шăпрах, — йывăççем илтĕç, уйăх илтĕ...

Сантимĕр. Çапла, çапла! Эпир юрататпăр çăлтăрсене, уйăха, йывăççене, çĕрле мĕлтлетекен вут çутине тата çак ытарайми хăватлă тĕнчене.

Çутăпи *(пӳрнисене лешĕн тути çине хурать)*. Шăплан, шăплан... Шăпрах пул, — уйăх илтĕ, çăлтăрсем илтĕç...

Сантимĕр *(хĕрсе çитсе)*. Ан тив, илтчĕрех... Пур çут тĕнче те илттĕр.

Çутăпи. Асту-ха, акă çăлтăр анчĕ ярăнса! Вĕçсем, пурнах, халал паратăп, эй, çăлтăр, ан сӳнсем!

Сантимĕр. Юрату, çăлтăр, шăпа... Чăн-чăн çутах епле тĕксĕм! *(Çутăпие хăй çумне илет.)*

Çутăпи *(ун ахрăмĕ пек)*. Юрату, çăлтăр, шăпа... *(Картах туртăнать.)*

Сантимĕр. Куçранах лектертĕн, ним курми пулса тăтăм, вут тухса кайрĕ. Кам ертсе çӳрĕ ĕнтĕ мана?

Çутăпи. Уйăх сана ертсе çӳрĕ.

Сантимĕр. Çук, эп сана суйласа илтĕм.

Çутăпи. Уйăх вара хуйхăрсах вилĕ. Те кĕвĕçсе, пĕлĕт хыçне пытанчĕ. Инçе çулсем кĕтеç пуль, чун йĕрет.

Сантимĕр. Пĕлĕт хыçĕсем çутă та аслă...

Çутăпи. Чĕрем çинче арман чулĕ манăн. *(Улăшăнса.)* Çав шурă пĕлĕтсем шуранкă курăк пек!

Сантимĕр. Шуранкă курăк пек? Мĕн ку?

Çутăпи. Çапла, шуранкă курăк пек... Телейлĕ çын телейсĕррисене часах манать. Эпир шуранкă курăка манса кайнă. Халĕ эпĕ ăна ирĕке кăларма пултаратăп: тĕнче чиксĕр аслă, чĕре вĕçхĕрсĕр пысăк! *(Капмар чул патне чупса пырать те ăна çăмăллăнах куçарса хурать.)* Куртăн-и, вăл парăнчĕ! Ăна çĕнтертĕмĕр!

Сантимĕр *(аллисене тăсса пырать)*. Ăçта эс? Сассу сан таçта инçетре.

Çутăпи. Кунта эп. Çын тени — кунта. Пурте — кунта. Кунта — çук вилĕм, çут ирĕклĕх хĕççи çап-çутă, ялан çунать сӳнми хĕвел!

Тăшман алли вĕçтернĕ ухă йĕппи Çутăпие кăкăрĕнчен тирĕнет. Çутăпи чĕрине ярса тытать, ӳкме хăтланать, ывăçне куçĕсем патне илсе пырать. Шур кĕпи çине чĕп-чĕрĕ юн тапса тухать.

Чаршав

Çиччĕмĕш курăну

Ир пулнă. Пĕлĕт юхнине пула хĕвел уйăха асилтерет. Ухатер пӳрт çывăхĕнче хĕçне хăйрать, хăйраса пĕтерсен çĕмрен йĕннине ухă йĕпписем тултарать, уххине тĕрĕслет, ут йĕнерне майлать. Уткаланă хушăра уксахлани хытах сисĕнет пулин те, вăл хăйне вăр-вар та çирĕп тыткалать. Сантимĕр те çула пуçтарăнать — ăпăр-тапăрне карçинккене тĕлли-паллисĕр пере-пере чикет.

Сантимĕр. Чунĕ тухса та кайрĕ. Халь ĕнтĕ çав чун тӳпери тĕпсĕр те тĕттĕм вырăнсенче хуйхăрса çӳрет. Çăлтăр тусанĕ витнĕ хулĕсем хуçăк.

Ухатер. Хуйхăпа ху та хуçăлсах ӳкнĕ. Эс каллех анраса кайрăн.

Сантимĕр. Çапла-а, тĕнче анраса кайрĕ. Ухмахсене мĕн тери ырлăх çитрĕ! Унччен çавăрса пăрахнă капмар чул курăка тата нумайрах пусарса хучĕ... Эпир вара хамăра тахçан пĕрлештерсе тăнă пĕрпĕтĕм чуна шырарăмăр. Ăна эпир тупнăпа пĕрехчĕ, пĕрпĕтĕм телей çывăхрах пек туйăнатчĕ: акă вăл — аллуна çеç тăс тытса илме. Анчах та ку мираж çеç пулнă, çавна шуранкă курăк та кăтартса парать. Эпир — шуранкă курăк. Чул вара? Чула çӳлтен пирĕн чуна тĕрĕслесе пăхма турă пăрахнă пулĕ. Халь ĕнтĕ чăт... Чун кайнă...

Ухатер. Эсĕ те кай. Санра тăнăçлăх çук. Эсĕ — аркатаканçă.

Сантимĕр. Эпĕ каятăп. Пĕтерчĕ мана ку хуйхă, чуна хускатрĕ, лапчăтса хучĕ. Мĕн тери вăрттăн усаллăх! Мĕн тери хаярлăх! Пике тути çине хĕрхенӳллĕ те ăссăр кулă ӳкерĕнсе юлнă. Улталаннă сăнĕ тӳпенелле пăхать. Ах, манăн таптанса вилнĕ ачам пекех-çке! Вĕсем улталанчĕç...

Ухатер. Нумай пакăлтататăн. Ăнланма çук пуш сăмахпа эс ун чĕрине çыхлантартăн, пуçне çавăртăн. Вăл вара, малта хăйне мĕн кĕтнине пĕлмесĕр, сан хыçран кайрĕ. Эс ман пĕртен-пĕр йăмăка пĕтертĕн...

Сантимĕр. Вĕлерекенĕ ăçта тарчĕ-ши?

Ухатер. Ăна эп хамах йĕрлесе тупăп-ха, йăмăкăма вара никам та чĕртсе тăратаймĕ.

Сантимĕр *(хуйхăллăн)*. Ăна ĕнтĕ лере лайăх... Пурте унта пулатпăр...

Ухатер. Хывăх вĕçтерен... Пиçмен сăмахпа айван ăс инкек çуратать. Эс хăвпа ху анраса çӳретĕн.

Сцена хыçĕнче — юланут килсе чарăннă сасă. Муэдзин кĕрет.

Муэдзин. Кунта, тем, кӳкӗрт шӑрши перет.

Ухатер *(Сантимӗре)*. Каях. Çухал. Эс сутрӑн вӗсене, эс ху тивӗçне пит хӑвӑрт мантӑн, эс хӑравçӑ — ялан таратӑн. Эс инкек сапса çӳретӗн.

Сантимӗр. Эпир — шурхайнӑ курӑк, эпир — уйӑх курӑкӗ, çӗрлехи курӑк.

Муэдзин. Эй, темрен те аслӑ, хӑватлӑ Аллах, Аллахсӑр пуçне турӑ çук. Ля иллях ил Аллах. Каçар пире, эпир сана хамӑр пултарнӑ таран чунӑмӑра уçса паратпӑр. Эпир хамӑрӑн пӗтӗм çитменлӗхшӗн санран каçару ыйтатпӑр, пур чунран ӗненейместпӗр пуль, çителӗклӗ юратаймастпӑр пуль...

Ухатер *(пыл тултарнӑ савӑт тыттарать)*. Мӗн тени вӑл пурӑнӑç тени? Пурӑнӑç вӑл йывӑр чир пуль? Ӑна, эй, муаллим, нимле пылпа та сиплесе çитерес çук пуль?

Муэдзин. Рехмет, рехмет... Çӳлтен тӑнӑçлӑх антар пире, чунӑмӑрсене çӑлсам, эй, Аллах...

Ухатер. Анчах та сан Аллаху пулӑшасшӑнах мар çынсене... Пулӑшасшӑн мар! Кай та манӑн чуншӑн кӗлту... *(Хӗçпӑшалне çакать те, йӗнерне йӑтса тухса каять.)*

Муэдзин. Çӗр тӑрӑх, шыв урлӑ, çӗр айӗпе çӳрекенсемшӗн, пур халсӑр та чирлӗ асап тӳсекенсемшӗн кӗлтӑватпӑр сана, эй, Аллах!

Сантимӗр *(Муэдзин умне чӗркуçленсе)*. Аллаха ӗненекенсем телейлӗ! Ма тесен вӗсене çӑмӑл...

Муэдзин. Ман хыççӑн каласа пыр, ухмах: «Аллахсӑр пуçне урӑх турӑ çук, Мухаммед вара — унӑн пророкӗ. Эй, аслӑ та хӑватлӑ Аллах турӑ, яту сан яланах таса, яланах санӑн ирӗкӳ пултӑр, çӗр çинче те çӳлти патшалӑхри пекех пултӑр...»

Сантимӗр çакна хыçалтан йӑлтах каласа пырать. Унтан, тем асилнӗн, яштах ури çине сиксе тӑрать.

Сантимӗр. Мӗн-ха эп капла? Ăçталла сулӑнатӑп? Аллах мана мӗн парать вӑл? Мыскараçӑсем!.. Эпир пурте мыскараçӑсем, камит кӑтартакансем! Епле нумайӑй эпир! Эпир — шурхайнӑ курӑк, эпир — уйӑх курӑкӗ, çӗрлехи курӑк... Эп пуçламӑшсем патне таврӑнатӑп. Унта чунӑм манӑн малтанхи утӑмсем тума вӗреннӗ. Йӑлтах çӗнрен пуçлатӑп... Эп каятӑп... *(Карçинккине хул хушшине хӗстерет те тухса çухалать.)*

Муэдзин. Сыхла ӑна, турӑ, хирте, вӑрманта, шывсем çинче...

Хӗçпӑшаллӑ Ухатер турхан кӗрет, пӗр вӑхӑт пуçне усса тӑрать.

Ухатер *(Муэдзина)*. Хĕçе хăйранă, çĕмрен йĕнни тулли, ута йĕнерленĕ. Кунта эпир иккĕн анчах, йăмăкăм куç хупрĕ ир енне. Кала: мĕн хыпарпа эс Пӳлертен?

Муэдзин. Сантимĕр вăл Сантимĕр мар, Мамай унăн чăн ячĕ. Вăл Хаканбек çынни, ун куккăшĕн, Таббай Эзра казначейĕн, хăлхипе куçĕ, Таббай вара, ху пĕлен, каганпа маликăн Пăлхарири тĕрекĕ, чи шанчăклă йытти...

Ухатер. Мĕн тумалла ман, муаллим, ăс пар?

Муэдзин. Çын ятăм каçранах Алмуш патне. Гаффарăн тусĕсем, улт-çич нукер, куçран вĕçертмеççĕ Хаканбека, ун вăрттăн йăвисене йăлтах пĕлеççĕ.

Ухатер. Сантимĕр хасар мар, ирĕк чăваш, «вăрманти тăвансем» патне хушу яр: пуçне касса Таббай патне ăсатчăр сăран хутаçа чиксе — парне вырăнне пултăр çуралнă кунĕ тĕлне.

Муэдзин. Мамай... Сантимĕр мар... Хусах этем. Ун арăмĕ те, ачи-пăчи те ниççан та пулман.

Ухатер. Курнăччĕ йĕксĕксене — кун пеккине курман: чун варрине çĕлен пек шуса кĕме пултарать. Ахальтен мар пирĕн вăрмансенче çĕлен-калта шучĕ çук нумай йăшăлтатать.

Муэдзин. Çанталăк çумăрлă пирки вăл.

Ухатер. Çанталăк çумăрлă пирки...

Муэдзин. Çич арăм Хаканбекăн Итĕлте, çиччĕшĕнчен пĕр ывăл çук. Çав ывăла куç пек кĕтет вăл — кирлĕ çынна каларăм: тискер тăшманăн ывăл мар, хĕр те çуралмалла мар, вăл хĕсĕр пулмалла ĕмĕрлĕхе. Ăнлантăн-и?

Ухатер. Ман мĕн тумалла?

Муэдзин. Эс тумăн, тăвĕç çамрăксем. Халь сан çине килсе капланĕ Таббай казначейĕн пĕтĕм хăлхи те куçĕ, кашни пуснă утăмна йĕрлесе ăна пĕлтерсе тăрĕç. Эпир пулар кунта, Çутăпипе сывпуллашар.

Ухатер. Сывпуллашар.

Муэдзин *(кĕлтуса макăрать)*. Хăватлă та аслă Аллах турă! Мухтав сана! Эпĕ, чăн тĕрĕс тĕне тытса пыракан пăлхар çынни, тăшман вĕлернĕ таса хĕре Çутăпие, çылăхсăрскере, хĕрхенме ыйтатăп, çав тăлăха ют турăсене ĕненсе вĕсем патĕнче çӳренĕшĕн каçарма ыйтатăп. Эй, Аллах, каçарсам эс Çутăпие, каçар та çырлах. Хисеплĕ те чаплă, мухтавлă та аслă Алмуш эльтĕпер ячĕпе ыйтатăп. Вăл тăван çĕршывăмăрăн çутă шанчăкĕ, унăн тĕрекĕ, пехилле те хапăл ту ăна...

Ухатер *(çирĕп сасăпа кĕлтăвать)*. Ырлăхпа сывлăх паракан Çӳлти Туррăмăр, чăваш турри, эй, Тенгрихан! Хута кĕрсем, хӳтĕле пире, тăшман айне, çичĕ ют мăшкăлĕ айне ан ту пире, çĕнтерсе тухма вăй-хал парсам, ăстăн парсам, хăват парсам пире. Ман çутă йăмăка Çутăпие хĕрхен, каçар ăна, çырлах! Ан ылхансам айван ачусене, çак йывăртан-йывăр куна йăтма вăй пар мана, вăй пар. Çырлах, çырлах! Тăван çĕршыв ывăлĕ Алмуш эльтĕпер ячĕпе йăлăнатăп, пĕтĕм халăх ячĕпе ыйтатăп!

Кĕлĕ калама чарăнса пĕр-пĕрин çине пăхаççĕ.

Муэдзин. Вара кĕрер пуль?

Ухатер. Кĕрер... *(Аллипе сулать.)*

Васкамасăр пӳрте кĕрсе каяççĕ. Хурлăхлă кĕвĕ.

Чаршав

Саккăрмĕш курăну

Çĕнĕ вилтăпри — çыран çинче. Вăхăтлăх палăка (юпачченхи «салам калакне») тĕрĕллĕ шурă питшăлли çыхнă. Çиллĕ тăвăл витĕр кунĕн-çĕрĕн çумăр лӳшкенипе аялта Явçырма шавласа юхать. Тăпрана ешĕл çеремпе тирпейлĕн витсе тухнă. Витекенĕ унтах пуçне усса зал еннелле пăхса ларать — Ухатер турхан. Чаршав уçăлсан тепĕртакран васкамасăр ура çине тăрать — çар тумĕпе, хĕçпе.

Ухатер. Ак ĕнтĕ ĕмĕрлĕх çуртун витти те хатĕр. Епле капăр та вăл хӳхĕм. Хӳхĕм те нӳрĕ. Нӳрĕ те йывăр. Ах, йывăр... Йăтса йăтайми, сирсе сирейми. Çăмăл пулĕ-ши вăл, пулĕ-ши... тăпру? Пулмĕ çав, пулмĕ... ниççан та... *(Ĕсĕклесе йĕрсе ярать. «Э-э-х-х!» — тесе ахлатса ярса, сцена варринелле пырать. Залалла:)* Ытла йăваш эпир, чăвашсем, çынна ытла та хĕрхенетпĕр, сапăр тăватпăр, хамăра вара хĕрхенмеççĕ, сапăр тума мар, хăйсем çине ал çĕклемесĕрех чышкăпа, хĕçпе хăмсараççĕ, йăваш пулнине хăравçă тесе ăнланаççĕ. Чăваш мĕн авалтан çаратса мар, ĕçлесе, вăй хурса, тар тăкса çын пулма тăрăшнă... Йăмăкăм, илтетĕн-и мана? Тĕрĕс-и? Тĕрĕс! Ан ятла мана, Çутă Çăлтăрăм, упраймарăм. Тăшман пиртен чеерех пулчĕ, чеерех. Эпир тăшмана ытла çывăха ятăмăр... Ытла ĕнентĕмĕр ăна...

Сцена хыçĕнче: «Ухатер турхан! Ухатер турхан!» — тесе чĕнекен хĕрарăм сасси пăшăрхануллăн илтĕнсе каять. Ухатер сасă илтĕннĕ еннелле сăнаса пăхать.

Ма пит шуйханса ӳкнĕ манăн кил тарçи Улька хăрхăм? Ха епле чупкалать! Кунта эпĕ, кунта! Иртенпелех!

Улька хăрхăм васкаса чупса кĕрет. Çăкăнать.

Улька. Темле ик йĕксĕк — Пӳлертен!

Ухатер. Ма — йĕксĕк? Ăçтан курнать?

Улька. Вырăс сысни тесе, чалăш куçли купарчаран шап! шаплаттарчĕ. Тепри ыйтать эрех. Куçпа çиет.

Ухатер *(хăй тĕллĕн)*. Пĕрремĕш чĕкеççем...

Улька *(ăнлансах çитеймесĕр)*. Чĕкеççем?

Ухатер. Чĕкеççем.

Улька. Чĕкеççем мар, хуçам, çăхансем.

Ухатер. Шăп пул, хыт ан шавла.

Йытă хаяррăн вĕрни илтĕнсе каять.

Кампур пулас? Вĕçертрĕн-им?

Улька. Кампур. Вĕçертрĕм.

Ухатер. Анъярпа Яртыта та илсе килтĕн-и?

Улька. Илсе килтĕм.

Ухатер. Вĕсене те вĕçерт! Эп çук. Эп Саврăшра.

Улька. Тулаттарас-и?

Ухатер. Тулаттар... Айĕсене яриччен, чĕрисем çурăличчен!

Улька каять. Вăл кайнă енче арçынсем çухăрашни, кашкăр йытти такама урса кайса тăпăлтарни илтĕнет. Тепĕртакран ĕрлешӳ вăйланать.

Маттур Улька! Хăрхăм-чура пулин те, Çутăпипе аппăшĕпе йăмăкĕ пекчĕ. Йăмăкăн çутă ятне сума суса, ирĕклĕх тавăрса парас пуль хăрхăма...

Ĕрлешӳ майпен лăпланать. Улька кĕрет.

Улька *(çăкăнса)*. Хӳтерсе ятăм. Вут тĕртетпĕр, теççĕ. Хуçа таврăнсан, пыршăр-пакартăра кумать сӳретке çине, терĕм.

Ухатер. Тĕрĕс каланă.

Улька. Хăвна та, хуçуна та, юххана тухнă йăмăкне тĕп тунă пек, тĕп тăватпăр тесе паврарĕç. Çутăпие вĕлернĕ-им вара?

Ухатер. Вĕлермен. Хăй чирлесе вилчĕ.

Улька. Кусене кам янă-ши?

Ухатер. Хасарсем. Тăшман.

Улька. Пире Ага-Базара Саркелтен илсе килчĕç. Мана, вунвиççĕрискере, пĕр утмăлсенчи усламçă хасар туянчĕ. Рязань енче вунвиç çулхи хĕрача ачапча шутĕнче-ха, кусен вара

кавча кайса тахҫанах арăм пулнă. Мăйран кантрапа ҫавăтса пычĕ те темле мунча пеккине тĕксе кӳртрĕ, урайне тăсса ӳкерсе ҫав кантрипех хытă кăна хĕнерĕ, вара ҫăвăнма хушрĕ. Ҫăвăнса пĕтернĕ-пĕтермен ыткăнса кĕчĕ те тепре ҫапса антарчĕ... пăлтăрта хатĕрех ларнă...

Ухатер. Ольга... Эпĕ сана ирĕке ярасшăн... Тăван ҫĕршывна таврăн, аҫу-аннӳ, тăванусем патне, мăшăрлан, ҫурт-йĕр ҫаврăр, ача-пăча ҫуратса ӳстерĕр. Йăмăкăм ячĕпе, ăна сума суса...

Улька *(хăраса, пăшăрханса ӳкет)*. Хуҫам, Ухатер Айдарович! Мĕнпе юраймарăм вара, мĕн туса ҫиллентертĕм?! Тĕк пекех ҫăмăл пултăрччĕ Ҫутă Пике тăпри! Вăл, пурăннă пулсан, мана хӳтĕлетчех: хăйпе пĕр вĕҫрен кĕпе ҫĕлетсе тăхăнтартатчĕ, хăйпе юнашар лартса хăй мĕн ҫинĕ ҫавна ҫитеретчĕ, хăй мĕн ĕҫнĕ ҫавна ĕҫтеретчĕ. Ой-ой, хуҫам, ан хăвала мана, ăҫта кайса кĕрес ман?! У-у-у! *(Аллисемпе питне хупласа йĕрет.)* Ҫинчен, тыткăнра-чуралăхра пулнă хĕрсене пирĕн енче никам та, нихҫан та кавча илес ҫук. Хăйсем тыткăнра пулнисем те илмеҫҫĕ.

Ухатер. Ялунта санăн кам та пулин юлчĕ-и вара?

Улька. Юлман. Пурте чуралăхра. Итĕл хулинче. Аттепе анне манран виҫ ҫул каялла уйрăлнă. Те чĕрĕ ĕнтĕ, те вилĕ.

Ухатер. Апла эсĕ ман йăмăкпа тантăш?

Улька. Тантăш. Эпĕ пĕр уйăх аслăрах.

Ухатер. Ҫамрăк эсĕ, питĕ ҫамрăк, пурăнма ҫеҫ пуҫланă-ха.

Улька. Хуҫам, эсĕ ху та ватах мар-ха.

Ухатер. Вăтăр пиллĕкре... Тăнлавăмсем шап-шурах... Ытла та ир тăлăха юлтăмăр... Ҫутăпие те ҫавăнпах упраса хăварайманăм пуль — ăс ҫитмерĕ...

Улька. Хам пулам-и йăмăку, тепĕр йăмăку, Ухатер Айдарович... *(Ухатер патне пырать, кăкăрĕ ҫумне тĕршĕнет.)* Мĕн ĕмĕрлĕхе. Тăван йăмăку пулаймасан, хăйматлăх йăмăку...

Ухатер *(шухăша каять)*. Ак мĕнле иккен вăл ҫут тĕнче тени, эй, Тенгрихан! *(Улькана ҫурăмĕнчен лăпкать, пуҫĕнчен савать.)* Чăн йăмăк пул, пĕр-пĕриншĕн ҫирĕп тăрар ҫак хăрушă вăхăтра.

Улька. Ҫирĕп тăрар!

Ухатер *(тӳпенелле пăхса)*. Ҫумăр пĕлĕчĕсем ҫӳлерехрен ирте пуҫларĕҫ, ҫил те лăпланать пулмалла. Килте, унта, Пӳлерте, чиперех-и? Тарҫă-тĕрҫĕм сана итлет-и, мĕн хушнине тăвать-и?

Улька. Пĕри çеç итлесшĕн-пăхăнасшăн мар, кахал, тутлăрах çиесшĕн, нумайрах çывăрасшăн.

Ухатер. Хăшĕ?

Улька. Талут. Ирĕк пăлхар. Арăмĕ те хăй пекех юлхав.

Ухатер. Талут — тăшман. Таббай Эзра казначей ăна ман пата хăйĕн хăлхипе куçĕ пулма вырнаçтарнă. Мана ясар ĕçпе тытса каскана çурнă пек çуртарасшăн, е, ку ĕçĕ тухмасан, Алмуш умĕнче шанчăксăра кăларасшăн. Тимлĕн сăна вĕсене, хăйсене тытса тӳре аллине парас пулать.

Кашкăр йытти пӳрт енче каллех антăха-антăха вĕрме пуçлать.

Пыр-ха, Ольга, темле юланутсем...

Улька. Мĕн тес?

Ухатер. Гаффар пулсан — эп пур, ютсемшĕн — Саврăшра. Йытăсене вĕçерт, анчах кунта ан яр. Гаффара Кампур та, Анъяр та, Яртыт та лайăх паллать. Вĕçтер!

Улька *(çирĕппĕн тӳрленсе тăрса)*. Пиччеçĕм! *(Ухатере пырса питĕнчен чуптăвать те чупса тухса каять.)*

Ухатер *(ăшшăн)*. Йăмăкăм...

Кăштран йытă сассисем лăпланаççĕ. Вилтăпри умне Ухатер патне Гаффарпа «вăрманти тăвансем» тухса тăраççĕ. Гаффар сăран хутаç йăтнă.

Гаффар. Ырлăхпа сывлăх сана, хуçам, Çутăпи тăприне — çăмăллăх. Мухтав «вăрманти тăвансене» — сăмахне çирĕп тытаççĕ, тăшмана канлĕх памаççĕ. Акă Сантимĕр-Мамай пуçĕ, Таббая çуралнă кун ячĕпе — парне. *(Сăран хутаçне Ухатер умне хурать.)* Çĕлен пуçĕ. Шăршланасран тăвар ăшне хутăмăр: эпĕ хам — Гаффар, санăн хăйматлăх шăллу; «вăрманти тăван» — Сарă Ача; «вăрманти тăван» — Хура Ача; «Пӳлерти тăван» — Хĕрлĕ Ача. Мансăр пуçне пурте ирĕк чăвашсем, эпĕ çеç — пăлхар, санăн нукерӳ. *(Ячĕсене каласа пынă май кашниех пуçне тайса илет. Ухатер вĕсене ал тытса тухать.)* Парнене леçме хам каятăп, ма тесессĕн «тăвансене» Пӳлертен те ирттермеççĕ, ярса тытаççĕ. Пӳлерпе Чикетуран иртейсен, Пăлхара Чулман Атăл тăрăх шывпа анатăп. Ĕç ăнмасан, шыв çинче хутаçа шыва чăмтарма питĕ меллĕ. Таббай йыттисем те ытларах шывпа мар, тип çĕрпе кастарса çӳреме кăмăлларах параççĕ.

Ухатер. Ырă çул пултăр, Гаффар. Инçе çула тухиччен выртса кан, тăраниччен апат çи.

Гаффар. Выртса канма вăхăт çук, апатне çул çинче çийĕп, укçа-тенкĕ кĕсъере, вăйăм-халăм чĕрере — Çутăпи йăмăкшăн тавăрма, ĕçе вĕçне çитерме васкатăп. Ахалĕн Çутă Пикемĕрĕн йывăр тăпри ниепле те çăмăл пулаймĕ...

Ухатер *(кашнинпех ыталанса сывпуллашать)*. Çулăр такăр пултăр, çулăр ăнăçлă пултăр!

Гаффар *(çурма сасăпа)*. Çăлтăр витĕр çул курнать, эпир каяс çул пуль çав. } 2 хут

Сарă ача. Уйăх витĕр уй курăнать, (2 хут)

Хура ача. эпир çӳрес уй пуль çав. (2 хут)

Хĕрлĕ ача. Хĕвел витĕр хĕр курăнать, (2 хут)

Пурте пĕрле. эпир илес хĕр пуль çав. (2 хут)

Гаффар *(хутаçне ярса тытса хулпуççи çине хурать)*. Тепре куриччен, хуçам! *(Ал сĕлтет.)*

Ухатер *(ал сулса юлать)*. Тепре куриччен!

Йĕкĕтсем юрласа тухса каяççĕ. Йытă вĕрет, ут кĕçенет. Лаша таканĕн сассисем. Юрă кĕввин ĕнĕревĕ чылайччен янăрать, майпен лăпланать. Сцена хыçĕнче Улька сасси: «Чипер кайăр, йĕкĕтсем! Тепре куриччен!» Ухатер турхан сцена варринче чылайччен шухăша кайса тăрать. Залалла:

Атте те, анне те, тăван-пĕтен те, хампа пĕртăвансем те, мăшăрăм та, ачам-пăчам та, никам та çук манăн. Пурте нӳрлĕ çĕр айĕнче. *(Юрлать.)*

Уй варринче лаштра юман,
атте тесе, ай, кайрăм та,
«килех, ульăм», — ай, темерĕ:
чун хурланчĕ — макăртăм та...

Уй варринче чечен çăка,
анне тесе, ай, кайрăм та,
«килех, ульăм», — ай, темерĕ:
чун хурланчĕ — макăртăм та...

Уй варринче шурă хурăн,
савни тесе, ай, кайрăм та,
«килех, тусăм», — ай, темерĕ:
чун хурланчĕ — макăртăм та...

Вилтăпри çине ӳксе, ăна ыталаса, ĕсĕклесе йĕрет. Вăрахчен макăрнă хыççăн шăпланать. Вара тепĕртакран каçса кайса куккук авăтма пуçлать — ку çанталăк уяртасса, ăшăтасса пĕлтерет. Ухатер тăрса ларать.

Вунă хутчен авăтрĕ... Çанталăк ăшăтасса ку... Мая каясса... *(Куккук канмасăр авăтма тытăнать.)* Вуннĕр, вуниккĕ, вунвиççĕ, вунтăваттă... çирĕм... çирĕм пиллĕк... Пурнатăп-ха, нумай пурнатăп! Никам та çук пулин те, хăр тăлăх мар эп. Тăван халăхăм пур манăн, ялйышăм пур, хăйматлăх йăмăк пур! Шăллăм пур! *(Ура çине çирĕппĕн тӳрленсе тăрать. Сцена варнелле тухса:)* Юхать-юхать юханшыв, çавăн пекех пурнăçăмăр та кĕрлесе иртет. *(Çырманалла аллипе хăлаçласа кăтартать.)* Этем пурнăçĕ те çак çырма пекех юхса иртет. Чарăнса тăма та, пытанса юлма та ниепле те май çук. Патша та, ахаль çын та вăхăтлăх кăна. Çав вăхăтлăх, хăналăх пурнăçа та йĕркеллĕ пурăнса ирттерме пĕлместпĕр. Тăван енте тăшман хуçаланать, тăван халăха сутса, унран йĕрĕнсе, хасар кутне çулакансем — тăшманран та тăшман. Сутăнчăк чăваш чăн тăшманран çĕр хут хăрушăрах. Çар тытма чарнă Алмуша. Сыхлавçисем унăн виççĕр çынтан ытла мар, турханăн — вуннă... Вĕсенчен виççĕшĕ аманнă, пĕри — Гаффар — Пăлхар хулинче, виççĕшĕ — Хаканбек енче, сутăнчăк, тата виççĕшĕ килĕсенче утă çулаççĕ... Ухатер турханăн пĕр сыхлавçă çеç. Вăл — хăй... *(Хĕçне йĕннинчен туртса кăларать, чуптăвать.)* Эй, Тенгрихан, вăй-хал парсам мана!

Сасартăк Хаканбек, виçĕ нукер тата Ухатер патĕнче тарçăра тăракан Талут ирĕк пăлхар килсе тухаççĕ.

Талут *(сĕмсĕррĕн)*. Йыт вĕрессе кĕтсе тăратăн пуль, йытă аçи?! Эпĕ вĕсене куллен апат паратăп — кĕт вĕрессе, кĕтсе илеймĕн! Çара кутлă майруна леш тĕнчене ăсатрăм.

Хаканбек. Хăй йăмăкне хăйех вĕлернĕ вăл. Юхха пулнăшăн. Халь ман çине ярать. *(Нукерсене.)* Тевел, Атнер, Акташ, вăшт! сиксе ларăр та çыхса пăрахăр!

Тевел *(çĕрелле пăхса, тытăнчăклăн)*. А-алмуш хушман. Эп... Алмуша çеç пăхăнатăп.

Хаканбек. Атнер!

Атнер *(татăклăн)*. Алмуш хушман.

Хаканбек. Акташ!

Акташ. Турхан, эс çын вĕлернĕ, тăван юнна! Сыхлан!

Ухатер турхана хĕçпе касса пăрахма Хаканбек, Акташ тата Талут виçĕ енчен хупăрлаççĕ. Хупăрласа çитернĕ вăхăтра Акташ, теме астуса, хĕçне сасартăк лăштах усать те Тевелпе Атнер çумне кайса тăрать.

Алмуш хушман!

Виççĕшĕ те, пĕрин хыççăн тепри, ку вырăнтан пăрахса каяççĕ. Ухатер турхан икĕ çынна хирĕç пĕччен çапăçать. Часах вăл Талут аллинчен хĕçне çапса ӳкерет, хăйне касса пăрахать. Çапăçу Хаканбекпа куçма-куçăн пуçланать. Ухатер çаврăнăçуллă та ăста çапăçать, анчах та ăна унччен аманнă ури хытах чăрмантарать. Çавăнпа усă курса, Хаканбек вилтăпри çине сиксе хăпарать, «салам калакĕ» хыçне пытанать.

Хаканбек. Киле сăсар, пакша, тилĕ, упа, кашкăр, юс, кăш, хăнтăр, куян, качака, сурăх, лаша тирĕсем карап çине тиесе ăсатрăм. Халь акă санăн тирне, чăваш тирне, сĕвсе илетĕп, суккăр чăваш! *(«Салам калакĕ» пуçне çыхнă тĕрĕллĕ питшăллие сĕвелесе илсе ури айне пăрахать, таптать.)* Ак сана, ак сана! Кур, савăн! Акă ку — юлашкинчен! *(Хатĕрне кăларать те вилтăпри çине шакăртаттарса шăма пуçлать.)* Шăратăп чăваш çине, кирлех пулсан — сысса та хуратăп!

Унта Ухатер турхан сиксе хăпарать, Хаканбека хытă амантать, анчах та лешĕ ăна табак тусанĕпе куçран сапса ĕлкĕрет. Ухатер ним курми пулса юпа çумне кукленет, çав хушăра тăшманĕ ăна хĕçпе касса пăрахать. Иккĕш те юпа çумне тĕшĕрĕлсе анаççĕ. Таврара калама çук шăп пулса тăрать. Унтан куккук авăтма пуçлать.

Ухатер *(юлашки вăйĕпе)*. Тăшман тĕп пулчĕ... Çутăпи...

Хаканбек *(тăнне çухатса)*. Мĕскĕн... чăваш...

Куккук авăтса пĕтерет те, вилтăпри патне каллех Тевел, Атнер тата Акташ нукерсем килсе тухаççĕ.

Тевел. Турхан тăшмансене пирĕнсĕрех çĕнтерчĕ.

Атнер. Иккĕне хирĕç пĕччен çапăçрĕ.

Акташ. Пурĕпĕрех çĕнтерчĕ.

Тевел *(вилтăпри çине хăпарса, Хаканбека тапса пăхать)*. Сывлать-и ку? Эй, улпут, вăран, киле кайăпăр. *(Атнере.)* Атнер, пулăш-ха, тыт урисенчен. *(Акташа.)* Акташ, антарма пулăш! *(Антарса çĕре майласа хураççĕ.)*

Хаканбек *(тăна кĕрсе)*. Тăшман пуçне касса илсе сăран хутаçа... ярăр... Алмуша парне пултăр... Çуралнă кунĕ тĕлне...

Тевел. Ухатер турхан вăл ман хуçа, тăшман мар.

Атнер. Алмуш та пирĕн хуçа.

Акташ. Эпир пуçкасансем мар, Хаканбек, çĕр ĕçченĕсем. Сан пек калас-тăк, çĕр хурчĕсем...

Йăтса тухса каяççĕ. Талут виллине те сĕтĕрсе тухаççĕ. Ухатер турхан вилтăпри çинчен шуса анса тӳрĕленсе тăрать, сцена варринелле утать. Пĕвĕ тăрăх чĕп-чĕр юн юхать.

Ухатер. Пĕтрĕ, йăлтах пĕтрĕ! Хупланчĕ çут тĕнче! Ăçта эс, Çутăпи? Пыратăп, кĕтсе ил! *(Каснă йывăç пек йăванса каять.)*

Тĕттĕмленет. Йытăсем хаяррăн уласа яраççĕ, утсем кĕçенеççĕ. Юрă. Хăватлă хор. Унтан, вăл сасартăк шăп пулать те, — пĕччен сĕрмекупăс сасси чуна çурса каять. Пĕр вăхăт сĕрмекупăс калаççĕ — çав тери хĕрӳн те чуна парса. Вара ку та тăнчă шăпланать. Куккук авăтма пуçлать. Тĕнче çуталать.

Ухатер *(пуçне юлашки хут çĕклет)*. Пурăн, чăваш, ан вил... Чăвашсем, чăмăртанăр... *(Вилсе каять.)*

Чаршав

Эпилог

Чаршав умне Сениэль тухса тăрать. Хальхи тумпа: костюмпа, галстукпа.

Сениэль *(алне залалла кăнтарса)*.

Лăпланăр, ан пăлханăр, тăвансем,
кунпах ĕç вĕçленмен-ха, ан кулянăр.
Турхан Кăрахвини, ват асаннем,
çак халапа пире йăлтах каланă.

Ун вĕçĕ пуç усма хушмасть пире.
Ламран лама куçса пырса, трагеди
улăшăнса тăран çут тĕнчере
чут çеç пулса кайман трагикомеди.

Ку пĕлтерет чăваш пĕтмессине,
çич ют епле çунсан та пĕтересшĕн.
Ку пĕлтерет чăваш сыв чунлине...
Кама ятлас вĕçленеймен çак ĕçшĕн?

Паллах, мана, турханăн тăхăмне,
ӳркевлĕ хайлавçа. Эп — кам? Мĕн ятлă?
Мишша. Такмакçă. Пĕлтĕр-и камне?
Эппин, апла пулсан, ытах ан ятлăр.

Турхан таврашĕ питĕ чухăн халь,
çапах — мăнаçлă. Чухăн Сениэлĕн
курас килет юратнă халăха
пуян та ирĕклĕ, маттур пур енлĕн.

Мĕскĕнлĕхе тĕксен те тăшмансем
пире çĕршер çулсем хушши пĕр вĕçсĕр,

эпир йăшман, упраннă — ма тесен
суптăркаса нихçан ларман ним ĕçсĕр.

Аван пĕлетĕр хăвăр та ăна.
Пит вакласан, сăмах йӳнелнĕ, теççĕ...
Чим... Тăхтăр... Юланут... Эх, ыткăнать...

Такан сасси илтĕнсе тăрать; кăшкăрашу, шăхăрашу; ут кĕçенет.

Хыçĕнченех — тăваттăн... Кĕç çитеççĕ...
Ах, çитеймерĕç... Пост малта... Хурал...

Чаршав майпен уçăлать, Сениэль тĕттĕмре çухалать, сасси тата виç сăвă йĕркилĕх янăрать:

Камсем кусем? Тараканни — пĕчченçĕ.
Камсем? Çук, калар мар, пăхар, курар,
сыв юлăр. Шăпланатăп эп — тĕпчевçĕ.

1.

Кĕрхи вăрман хĕрри. Тĕттĕм. Хурăн çулçи сап-сарă тăкăнса тулнă, çавă çеç сценăна çутăрах сĕм парать — купи-купипе ылттăн тенкĕ йăлкăшать тейĕн. Аякра вут çутисем мĕлтлетеççĕ. Сар Ачапа Хура Ача мăйкăчланă Чалăш Куçа шал енчен кунталла танкăлтаттарса тухаççĕ те çĕре çапса ӳкереççĕ.

Сар Ача *(çĕрте выртаканăн кăкăрĕ çине аттипе пусса)*. Çакланчĕ, ак, тепри те, тепĕр сутăнчăк!

Хура Ача. Шалчи тулчĕ!

Сар Ача. Тулсах мар та, тулать!

Хура Ача. Гаффарпа Хĕрлĕ Ача ăçта çĕтсе юлчĕç?

Сар Ача. Гаффар Хаканбека хуса çитнĕпе пĕрехчĕ, йăлмаклă вĕренне ун çине питĕ меллĕн ывăтрĕ, анчах та хасар утне сасартăк тăп! чарса чĕвен тăратрĕ те йăлмака сирсе ывăтрĕ, вара малтанхинчен те çивĕчрех малалла тапса сикрĕ.

Хура Ача. Унăн урхамахĕ пирĕннинчен чаплăрах çав, куккăшĕ Таббай хăйĕнне панă.

Сар Ача. Пирĕн те япăх мар, анчах та, юлашки кунсенче пĕртте кантарманнипе, ывăнса çитнĕ.

Чалăш Куç *(атă айĕнче çĕлен пек авкаланса)*. Ытла хытă ан пус-ха, Сарă Ухмах, кăкăрăм çине, чĕрем çурăлса кайма пултарать. Утар пӳртне эп вут тĕртмен, Эрех Шампи тĕртнĕ. Вырăс ланчашкине, пире йытăпа тулаттараканнине, эпĕр вĕлермен, Талут вĕлернĕ. Манăн нимле айăп та çук...

Сар Ача. Халлĕхе эсĕ пирĕн тăшманпа туслă пулнăшăн айăплă.

Хура Ача *(Чалăш Куçа)*. Шăп пул, йĕксĕк, ахалĕн чунна кăларса илетĕп. *(Пырса тапать.)*

Чалăш Куç шăп пулать. Сар Ача ăна тунката çумне тăратса лартать. Вăрманта ут таканĕн сасси, лаша кĕçенни, çын сассисем илтĕнсе каяççĕ. Кĕçех шалтан çунакан турат йăтнă Гаффар тухать.

Гаффар *(çунакан хыр тураттине сцена варрине тăрăнтарса)*. Кунта иккен эсир?! *(Вăрманалла.)* Кунта вĕсем, кунта!

Пĕр çын тепĕр çынна пăявпа сĕтĕрсе çунакан турат патне çывхарать. Ку — Хĕрлĕ Ачапа Эрех Шампи.

Хĕрлĕ Ача *(сĕтĕрсе çитерсе)*. Йывăр, шуйттан! Те чунĕ те тухса кайрĕ? Чăтма çук шăрш перет — айне янă пулас.

Гаффар *(кулса)*. Сан аллуна çаклан-ха, тем те курăн.

Сар Ача *(пырса тапса пăхать)*. Тен, вилнĕ вăл?

Хура Ача. Сутăнчăксем пуçне касмасăр вилмеççĕ, пуçне касса илсен кăна вилнĕ пекки тăваççĕ, самантран каллех чĕрĕлсе ĕрчеççĕ. Çавăнпа та вĕсене, татăкăн-татăкăн вакласа, çунтарса ямалла. Кĕлне, уя тухса, çилпе вĕçтермелле.

Гаффар. Кăштах пушат йăлмакна, çупа-çупа яр. Апла та «вăранмасан», акă, вут тиверт те тепĕр турата, çара ури кĕллине «хыпаласа» пăх.

Эрех Шампи *(йăшаланса илет, вăйсăррăн)*. Тархасшăн ан вĕлерĕр... Тĕнчере çук путсĕр этем пулчĕ ку хасар: пире пăрахса хăварчĕ, хăй тарчĕ...

Гаффар. Путсĕре тухрĕ те-и хуçăр? *(Çĕрти сарă çулçăсене аттипе сирсе.)* Çакăн чуль ылттăн пама пулнă чух лайăхчĕ, халь начар.

Шампа. Парать, кĕтсех тăр. Эпир вĕсен тарçисем те мар, чурисем. Чурана ăна мĕн параççĕ? Ĕнсе чикки.

Гаффар. Пире хăвăнпа ан пăтраштар, эпир чурасем мар, ирĕк пăлхар-чăвашсем.

Чалăш Куç *(унччен чĕнмесĕр ларнăскер, сасартăк ахăлтатса кулма пуçлать)*. Ха-ха-ха-ха! Камит! Ирĕк пăлхар-чăвашсем! Пăлхарсем те мар-ха эсир, мĕскĕн чăвашсем, ялти çĕр хурчĕсем! Турхан йăмăкне тăр кăнтăрла хырăм йăттараççĕ, эсĕр — шăп, курман та, илтмен те. Çакăншăн тавăрма мар, кун пирки калаçса çӳреме те хăратăр. Турханăра кăх! тăваççĕ, эсĕр каллех çăварăра шыв сыпнă. Имĕш, Ухатер те, Çутăпи те чирлесе вилнĕ.

Турă тавăрасса кĕтетĕр, айвансем. Хăш турă? Аслати Турă-и, Аллах-и е Христус Турă? Ха-ха-ха-ха! *(Урса кайса, мăшкăлласа, ихĕрсе кулать, чĕлхине кăларса виртлет.)* Йывăр аманнă хасара виçĕ «паттăр» нукерĕн кăнтса пăрахма меллĕ самант килсе тухнă. Çук, çак ăмансен аллисем çĕкленеймен. Мĕн тунă-ха вĕсем? Пăрахса тарнă. Курман та, илтмен те, нимĕн те пĕлмеççĕ...

Гаффар. Санăн тата каламалли пур-и?

Чалăш Куç. Пур. Тевел те, Атнер те, Акташ та тахçанах ĕнтĕ çут тĕнчере çук, леш тĕнчере вĕсем.

Гаффар. Ăçтан пĕлен?

Чалăш Куç. Ак çак алăсемпе йӳçĕ парса вĕлертĕм. Таббай тĕрминче.

Гаффар. Мĕн чул тӳлерĕ?

Чалăш Куç. Мĕн пани йăлтах манăн.

Гаффар. Тата кама сутрăн, кама вĕлертĕн?

Чалăш Куç. Ахалех паттăрланатăн, мăк сухал. Нимĕн те тăваймастăн эс мана, мĕскĕн. Ку çĕршывра Алмуш мар, Таббай хуçа. Çавна тахçанах ăнланма вăхăт.

Гаффар. Арăмлă ар-и эсĕ, ачусем пур-и? Чăн яту мĕнле?

Чалăш Куç. Ха-ха-ха-ха! Тĕпчет мана, тӳре-шара тупăннă. Манкуна шăлма вĕрен малтан, манкаллă сурăх! *(Хăйне çыхнă кантрасене сирсе ывăтать, ура çине сиксе тăрать, Гаффар патнелле талпăнса пырать.)* Ме, кас, çур кăкăра, чĕрене кăларса ил, йытта пăрахса пар!

Гаффар *(ăна хирĕç васкаса тухать; иккĕшĕн аллине те хĕç пăрахса параççĕ, хĕçсене сывлăшрах ярса тытаççĕ, хаяр çапăçу пуçланать — хĕçсем чанклатаççĕ, çапăçаканĕсем кăшкăракăшкăра яраççĕ)*. Йытта мар, Таббая кайса паратпăр, пĕçерсе çитĕр — йытă çимест, йĕрĕнет!

Чалăш Куç. Сан ухмах пуçна — Алмуша!

Гаффар. Санне — Таббая!

Пăхса тăракан йĕкĕтсем татах туратсем чĕртсе çĕре тăрăнтараççĕ. Çапăçу арени çап-çутă çуталать. Сап-сарă ылттăн çулçă çинче хуп-хура вилĕм туй тăвать — тытăçу хĕрсех пырать.

Шампа *(пуçне çĕклесе)*. Мана та хĕç парăр-ха, çав эсреле *(Чалăш Куç çинелле кăтартать)* касса пăрахам, ман кĕçĕн хĕре мăшкăлларĕ вăл, хама хăратса сутăнчăкла ĕçе явăçтарчĕ, сутăннăшăн панă ылтăнне йăлтах хăйĕн кĕсйине персе чикрĕ!

Чалăш Куç *(ун еннелле сиксе пырса)*. Хуп шăршлă çăварна! *(Касма тăрать.)*

Йĕкĕтсем Шампана айккинерех илсе каяççĕ.

Шампа. Тискер кайăк! Хĕрĕм мăшкăла чăтаймасăр чут çеç çакăнса вилетчĕ. Парăр-ха ик аллăма пĕр хĕç! Касса пăрахам!

Хĕрлĕ Ача *(Шампана çурăмĕнчен лăп-лăп! лăпкаса)*. Эсĕ, пичче, питĕ вăйсăрланса çитнĕ, сана хĕç пама юрамасть, ху сăмсуна ху касса пăрахма пултарăн...

Хура Ача. Эс пăхса тăр.

Сар Ача. Гаффар, асăрхан, эсрел сулахай иккен!

Гаффар асăрханса ĕлкĕреймест — Чалăш Куç хĕçне, сасартăк сылтăм аллинчен сулахайне ывăтса, ун çине вăйлăн сулса ярать, Гаффарăн хĕçне çапса ӳкерет. Хĕç таçта çити ыткăнса кайса çĕре тăрăнса ларать, авкаланса чĕтренсе тăрать. Пурте шак хытса каяççĕ.

Чалăш Куç *(чи малтан «вăранса»)*. Эс мана, хăрах куçлă тесе, ним вырăнне те хурасшăн мар-и? Лекрĕн-и?

Гаффар *(чакса)*. Лекрĕм! *(Чикĕл-мекĕл тăвать те çунакан хулăн турата туртса кăларать, унпа тăшманĕ çинелле кĕрет.)* Савăнтăн-и?

Чалăш Куç (*хĕç патнелле чакса, ăна та ярса тытать, ик хĕçлĕ пулса тăрать)*. Ак халь килсе çыхлан! *(Хĕçĕсемпе сулкалашать, анчах та икĕ хĕçпе меллех мар иккен.)*

Гаффар *(çунакан туратпа тăшман çине кĕрет)*. Сыхлан, юлашки самантна пурăнатăн!

Чалăш Куç *(ахăлтатать)*. Ха-ха-ха-ха! Ухмах! Чухлатни ху мĕн каланине?! *(Гаффара касма хăтланать, анчах икĕ хĕçпе меллех мар. Икĕ хĕç тытни — унăн çапăçури йăнăшĕ. Çавна Гаффар тӳрех ăнланса илнĕ, вăл тепре чикĕл-мекĕл тăвать те тăшманĕпе алла-аллăн тытăçать.)*

Гаффар *(тăшманне пĕтĕм вăйран чараран чĕркуççипе шанлаттарса)*. Чухлап, чухлап! Ак эс чухлаймарăн! *(Хутланса кĕнĕ Чалăш Куçа атти пуçĕпе хырăмĕнчен тапать. Лешĕ лĕштĕрех каять, икĕ хĕçĕ те аллинчен тухса ӳкеççĕ.)* Тăмана! Нумайранпа арçынсемпе тытăçса курман пулмалла, хĕрсемпе, арăмсемпе çеç тытăçнă. Тӳшек çинче. *(Пăвса пăрахать.)*

Хĕрлĕ Ача *(Шампана)*. Куртăн-и ĕнтĕ, пичче? Хĕçпе ăна ухмах та çĕнтерет, эсĕ хĕççĕр çĕнтерсе пăх.

Шампа *(сывлăшне аран çавăрса ярса)*. Ух-х! Ку-уртă-ăм! Хальччен тем япала та курнă, кун пеккине вара курман. Çук, курман...

Гаффар *(йывăррăн сывласа, йĕкĕтсене)*. Пуçне касса илсе сăран хутаçа ярăр, тăлпăвне çĕре чавса чикĕр... çĕр йышăнать

пулсан, çĕр йышăнмасса пултарать ирсĕре, йышăнмасан вара йыт-качкана пăрахса памалла пулать.

Тирсе лартнă туратсем пĕрин хыççăн тепри сӳнеççĕ.
Юлашки сӳнес умĕн Шампа сцена варрине тухать.

Шампа. Чарара арçыннăн леш çăмарта текенни вырнаçнă çав унта. Хысаран лайăх тапсан, кирек мĕнле паттăр ар та авăнса анатех çав — çăмарта тени ачаш та хӳтлĕхсĕр япала, ăна часах тапса çурма та, ăу-ă-ă... тапса çурма та, тем тума та пулать. Эппин, каяр-ха малалла, кунтан та кăсăкрах япала курма пулмĕ-и унта?

Хĕрлĕ Ача. Ăçталла каясшăн эс, пичче?

Сар Ача. Ярĕç-и-ха сана?

Хура Ача. Ямĕç-и?

Шампа. Ярĕç, ярĕç, Пӳлере Хаканбек патне хăнана каятпăр. Эпĕ пĕр кăсăк тамаша шутласа тупрăм, ачамсем: хăвăрах пĕлетĕр, çăмарта тени вăл пире, арçынсене, пи-итĕ-питĕ кирлĕ. Арçынна унсăр май та çук темелле. Хăвăр шутлăр: çăмартасăр арçын арçын-и вăл? Арçын мар, кастарнă вăкăр. Така. Кастарнă такана сурăхсем шутсăр хисепе хумаççĕ, хăйсем патне пыма пуçласанах сĕксе йăвантараççĕ. Кĕсресем вара кастарнă ăйăра тапса вĕлерме, çисе яма хатĕр. Пушмак пăрусем пирки каламалли те çук. Хăвăрах пĕлетĕр...

Çаплах каласакан ватă патне Хĕрлĕ Ача пырса тăрать, аллипе ăна çурăмĕнчен лăп-лăп! лăпкать.

Хĕрлĕ Ача *(тепĕр аллипе сăран хутаçа силлесе)*. Пичче, çак хутаçра тусун пуçĕ выртать, Таббайпа Хаканбек валли парне. Юлашки хут пăхса илес килмест-и?

Шампа *(сехĕрленсе)*. Уй-уй-уй! шăллăм, тархасшăн хăтар мана çав йывăр ĕçрен: пăхассăм та, курассăм та килмест! Чĕн-ха кунта Гаффара — пĕр япала калатăп. Туссем, Пӳлерелле васкамалла пирĕн, ахалĕн кая юлма пултаратпăр — кайăк Итĕл хулинелле тухса ан вĕçтĕр хăйĕн ик çăмартимĕнĕпе...

Гаффар *(пырса тăрать)*. Чĕнтĕн-и мана, пичче?

Шампа. Чĕнтĕм. Илтнĕ-и эсĕ ваттисем каланине: «Пĕтĕм хĕре пăсса çӳрет, йăмăрккине касса илессе сиснĕ пуль-ха?» — тенине?

Гаффар. Илтнĕ-çке. Хамăн асанне те пĕр услап пирки çине-çинех калатчĕ. Халăх пĕлмесĕр каламан.

Шампа. Апла пулсан, шăллăм, кайрăмăр Пӳлерелле. Хасара вĕлерме юрамасть тет-ха ăна, ик патшалăх хушшинче вăрçă хусканса кайма пултарать, тет, йăмăрккине касма юрамасть тесе вара ниçта та каламан, апла-тăк юрать эппин. Аплатăк кайрăмăр!

Гаффар. Кайрăмăр... Эй, йĕкĕтсем, пуçтарăнăр! Кайрăмăр! Пӳлерелле! Хасар патне хăнана. Пулас хĕсĕр хасар патне!

Хĕрлĕ Ача *(сăран хутаçне сулкаласа)*. Ак кунта кучченеçĕ те пур, пит селĕм кучченеç. Ан пăсăлтăр тесе, тăвар ăшне хутăм.

Сар Ача *(пĕртен-пĕр çунакан турата туртса кăларса)*. Сӳн эсĕ те, вут куçĕ, кайма вăхăт.

Хура Ача *(çунакан турат патне çывхарса)*. Утсене йĕнерленĕ, тăллисене илнĕ, чĕлпĕрĕсем хатĕр.

Гаффар *(пырса тăрать)*. Йĕнер çине, тăвансем, вăхăт кĕтмест, васкамалла!

Пурте пĕрле. Кĕтмест. Кайрăмăр. Пулăш пире, Çӳлти Турă, эй, Тенгрихан! Тăшмана мăшкăл тума, çĕнтерме пулăш! Пулăш! Çутăпи йăмăк ячĕпе, Ухатер турхан ячĕпе, хĕн-хур куракан пĕтĕм халăх ячĕпе ыйтатпăр — пулăш!

Вут сӳнет. Лаша кĕçенни, ут таканĕсен сасси илтĕнсе каять, ши-и! шăхăрни янраса тăрать. Унтан — юрă. Вилĕмсĕр чăваш халăх юрри. Кун хыççăн — хаваслă чăваш ташши. Вăл лăплансан — сĕрмекупăс чăваш рапсодийĕ калать.

Чаршав

Чаршав умне каллех Сениэль тухать: Гаффар гримĕпе, тумĕпе.

Сениэль *(куракан халăха)*. Гаффар вăл эпĕ, Сениэль. Айăп ан тăвăр. «Мĕнле майпа?» — тейĕр эсир. Ак мĕнле майпа: Хаканбека хĕсĕрлетнĕ хыççăн Алмуш эльтĕпер Гаффара хăйматлăх пиччĕшĕ вырăнне турхан туса хурать. Хĕсĕр хасарĕ, çакă калама юраман вăрттăн ĕç пулнăран, хăйĕн инкекĕ пирки тăван куккăшне мар, унăн пусма айĕнчи йыттине те, кăмака çинчи кушаккине те, тĕпсакайĕнчи шăшине те каламасть, çаплипех Итĕле тухса шăвать. Пуйма каякан вилсе килнĕ, теççĕ чăвашсем мĕн авалтан. Пуйма Пăлхара пынă хасар вара мĕн курнă? Çакна асра лайăх тытса юлас тесен спектакле малалла пăхăр. Эпĕ — турхан тăхăмĕ — сирĕнпе сывпуллашатăп. Сывă юлăр! Пӳлерте тĕл пуличчен!

Музыка.

2.

Пӳлер. Рабатри (хăна килĕнчи) чаплă пӳлĕм. Ăна тĕрлĕ тĕслĕ пурçăн чаршавсемпе карса пĕтернĕ, стенасем çинче хаклă йышши иран кавирĕсем çакăнса тăраççĕ. Тĕпелте çуртасем çунаççĕ. Юхха çара çан çинчен шултра чечеклĕ пурçăн халат тăхăнса янă, çӳçне илемлĕн тураса якатнă — вăл хальрех çеç çăвăнса тухнă пулас. Пĕççи çине пĕççине хурса, саркаланса ларать, кĕмĕл куркаран вĕре-вĕре чей ĕçет. Алăк яри уçăлса каять те Хаканбекпа икĕ нукер килсе кĕреççĕ.

Хаканбек *(нукерсене)*. Эсир тутă-и?

Пĕри. Тутă, хуçам.

Тепри. Эпĕ те тутă, халĕ çеç апатлантăм.

Хаканбек. Апла ĕçес килет ĕнтĕ? *(Çĕртен пысăк кăкшăм илет те нукерсене кăмăс ярса парать. Пиалясене тыттарса.)* Тăраниччен ĕçĕр те алăка ирччене çирĕп хураллăр, манран ыйтмасăр кунта никама та кӳртмелле мар. Ăнлантăр-и?

Нукерсем кăмăса кана-кана ĕçеççĕ, хăйсем вăрттăн çара пĕçĕллĕ Юхха çине пăха-пăха илеççĕ. Хаканбек сисиччен пĕри хĕрачана куç хĕсет, лешĕ, ăна ăнланнине систерсе, васкамасăр пуçне пĕкет.

Пĕри. Ăнлантăмăр, хуçам. *(Пиалине тавăрса парать.)* Пысăк тав, пĕтĕм ăшчик уçăлса кайрĕ.

Тепри *(пиалине çĕре ӳкерет)*. Ай-ай! Ваттисене асăнмасăрах кӳпсе ятăмăр та, епле çилленчĕç леш тĕнчере! Куркана ӳкерсе сĕлĕ пĕрчи турĕç! *(Пĕшкĕнсе ванчăксене пуçтарать.)*

Хаканбек. Чăрманма кирлĕ марччĕ, тарçă-тĕрçе чĕнес. *(Алăкран тухса каять.)*

Нукер *(Юхха патне хăвăрт çывхарса)*. Шăпах çур çĕр тĕлĕнче...

Юхха. Ы-ых... Маларах май çук-и, манăн унччен епле чăтас-тӳсес çав ирсĕр кĕлеткене — эпĕ вунпиллĕк те тултарман вĕт-ха.

Нукер. Май çук. Пирĕн çынсем тулти хапха патне çур çĕр тĕлĕнче хурала тăраççĕ...

Юхха. Хăп! Килет, ав, лаплаттарса...

Хаканбек *(алăкра курăнать)*. Таçта кайса кĕнĕ, пĕри те çук. Ытла ирĕке янă кунта тарçăсене!

Нукерсем. Тавтапуç, хуçа! Эпĕр хатĕр. *(Хĕçĕсене тӳрлетсе алăк патнелле утаççĕ.)* Ăнăçу пултăр сире. Ырă каç пултăр.

Хаканбек *(алăка тачă хупса питĕрсе илет)*. Кун пек шанчăклăрах.

Юхха. Питĕрмелле марччĕ — тула тухас килĕ те...

Хаканбек. Ак кунта вăрттăн алăк пур, тӳрех пахчана тухать.

Юхха. Ăна хурал пĕлет-и?

Хаканбек. Пĕлет. Ма апла ыйтан?

Юхха. Хурал пĕлет пулсан, аван. Унта та хурал пур-и?

Хаканбек *(кулса)*. Пур-çке! Мĕнрен хăратăн эсĕ? Вăрттăн алăка ăна тата лайăхрах хураллаççĕ.

Юхха. Хăраса мар. Халь вăхăчĕ çавăн пекрех. Алмуш йыттисен аллине çакланас марччĕ, тытас пулсан, тӳрех касса çураççĕ. Сана нимĕн те тумĕç, эсĕ пирĕн патшалăх çынни мар, пире вара, юххасене, вĕсем тӳрех çӳçрен çавăрса илеççĕ те пуçтах патне сĕтĕрсе каяççĕ.

Хаканбек. Ан хăра. Манпа чухне сана никам та, ниçта та сĕтĕрсе каяймĕ. *(Тахта çине ларать.)* Тултарса пар-ха пĕр пиала туллиех кăмăс!

Юхха. Тен, пылпа чей ĕçетĕн?

Хаканбек. Ха-ха-ха! Чей вăл арçын апачĕ мар, карчăккĕрчĕк ĕçет ăна, чейе! Эпир вара, паттăр арсем, така пĕççи çиетпĕр, пиали-пиалипе кăмăс е алтăрĕ-алтăрĕпе симпыл-эрех ĕçетпĕр. Чей ĕçекен арçынсем вĕсем сан пек çап-çамрăк хĕрачасемпе выляймаççĕ, эпир вара вылятпăр-ха, вăй та пур, хал та пур! *(Ури çине тăрс! сиксе тăрать.)* Ых! *(Каллĕ-маллĕ утса çӳрет, Юхха тултарса панă пиалана пырса тытать. Ĕçет.)* Ах-х, пит аван-çке, пит аван... Кам шутласа кăларнă çак ыр япалана?

Юхха. Унран ырăрах япаласем те пур. *(Пĕççи çинчен халачĕ уçăлса каять.)* пылаккисем те тутлисем...

Хаканбек *(кулса)*. Пур-ха, пур, пĕлетĕп. *(Пиалине Юххана пырса парать.)*

Юхха. Тата-и?

Хаканбек. Çитет, çитет, тавах. Ытла нумай ĕçсен ĕшентерсе пăрахать, эпĕ вара унсăрах хытă ĕшеннĕ.

Юхха. Çĕркаç çитрĕн-и?

Хаканбек *(пиçиххипе пĕрле хĕçне те вĕçертсе пăтаран çакать, çар тумне те хывса хурать. Тахта çине йывăррăн ларса)*. Эппин, хывса ил-ха аттăмсене те, чĕкеçĕм.

Юхха *(хыпăнса)*. Наччасах! Ма паçăрах каламарăн?

Хаканбек *(мăкăртатать)*. Ашшĕ пирки те, ман сывлăх çинчен те нимĕн те ыйтмарĕ. Тăван ашшĕ те, хăйне хĕртен

арăм тунă пĕрремĕш арçын та ним те мар уншăн, пуш вырăн çеç, çӳп-çап. Вăт çĕлен... Мĕн хаклă-ши вара ăна?

Юхха *(атăсене пĕрин хыççăн теприне хывса шаплаттара-шаплаттара лартать)*. Мĕн тетĕн çак? Мĕн мăкăр-мăкăр тăватăн?

Хаканбек. Нимех те мар. Аçупа Чалăш Куç Кивĕ Саврăша кĕрсе юлчĕç, тетĕп-çке, хăтăшсем патне...

Юхха. Хăтăшсем патне мар, савнийĕсем патне — янтă эрех кӳпме.

Хаканбек *(тĕлĕнсе)*. Аçун, Шампан, савнийĕ пур-и? Йӳтенĕ кăптăрмăш, чике старик-хурсухал вĕт вăл?!

Юхха. Кăтартĕ-ха сана йӳтенĕ. Эпĕ ахальтен юххана тухрăм-и?

Хаканбек. Чăн та çав, эс хĕр марччĕ...

Юхха *(кутне пăркаласа утса атăсене алăк патне кайса лартать)*. Хĕр марччĕ, тет-ха... Мĕн пĕлетĕр-ши эсĕр, арçынсем, пирĕн ĕçĕмĕр-хĕлĕмĕр çинчен? Хăвăра пĕрехмай никам та тĕкĕнмен таса хĕр кирлĕ, хăвăр вара урса кайнă йыт аçилле хăтланатăр, чĕчĕ шăтасса та кĕтсе тăмастăр — тăванĕ тăван мар, ашшĕ ашшĕ мар, пиччĕш пичĕш мар... Тьфу! Намăса та пĕлместĕр, симĕсе те... Турăран та хăрамастăр. *(Пырса Хаканбек чĕрçине ларать, мăйĕнчен ыталаса илет.)* Ну, мĕн туса ларатăн тăмана пек? *(Йĕм тӳмисене хыпалать.)* Пур-и кунта санăн, Кивĕ Саврăш хĕрĕсем вăрласа юлман-и? Пур чух парса юл, тетчĕ ман анне çĕре кĕрес умĕн. Чăнах та, халь хура çĕр айне кĕрсе выртрĕ те, парас тесен те никама параймасть...

Хаканбек *(çӳçенсе)*. Темле, хăрушла калаçа пуçларăн эсĕ, чĕкеçĕм.

Юхха. Ним те хăрушла мар, чăнне калатăп.

Хаканбек. Чăнне чăн та, çапах çӳçентерет.

Юхха. Вăхăт нумая кайрĕ. Сарас пуль вырăн? *(Анаслать.)*

Хаканбек *(анасласа)*. Саран пуль çав...

Юхха васкамасăр чи курăнакан вырăна, тапчан çине, тӳшек сарать, ăна ик енчен чыша-чыша хăпартать, пуçелĕкне кăпăшка минтерсем хурать, вырăна шурă çиттипе витет.

Юхха. Вырăн хатĕр, хуçам, выртма пултаратăн.

Хаканбек *(хăй тĕллĕн)*. Сасси ма кун пек хăраса та чĕтренсе тухать унăн? Мĕнрен хăрать, мĕнле инкек кĕтет?

Юхха. Кĕлĕ тăватăн-и эсĕ? Ту, ту, тен, турă хăтарĕ сана кĕçĕр?

Хаканбек *(нимĕн ăнланмасăр)*. Мĕн калаçатăн эсĕ, чĕкеçĕм, камран, мĕнрен хăтарĕ турă?

Юхха *(ахăлтатса кулса)*. Камран? Манран ĕнтĕ, паллах! Мĕнрен? Ну, куна ху курăн.

Хаканбек *(пĕрле кулать)*. Курăп çав, курăп, часах курăп... *(Шăлаварне хывать.)*

Юхха *(шăлавара илсе çар тумĕпе юнашар кайса хурать, çуртасене сӳнтерет)*. Выртрăн-и?

Хаканбек. Выртрăм. Эс те кил.

Юхха. Вырăн ăшăнарах патăр-ха, вара выртатăп. Халĕ тула тухса кĕмелле-ха манăн...

Çекĕл шăлтăртатни, алăк уçăлса хупăнни илтĕнет.
Тулта йытăсем антăхса вĕреççĕ. Кантăкран уйăх çути ӳкет.

Хаканбек сасси. Епле хăрушă тулта. Епле хăрушă пӳртре. Тискер çĕршыв ку — кашни кĕтесре сана чукмарпа е сăнăпа кĕтсе тăраççĕ пек...

Пауза. Шăп. Шăрчăк чĕриклетет.

Ăçта çухалчĕ ку шăракут? Алăка та йĕркеллĕ хупмарĕ пулас...

Уйăх çутинче мĕлке мĕлтлетет.

Эсĕ-и, чĕкеçĕм?

Юхха сасси. Эпĕ, эпĕ... Мĕн, чăтăм пĕтсе çитрĕ-им, тăрса кайрĕ-и?

Тата темиçе мĕлке иртет.

Хаканбек *(вырăн çинчен сиксе тăрать)*. Кам унта?

Юхха. Эпĕ тетĕп-çке... Ак кунта эп...

Хаканбек сасă патнелле кайма тăрать, анчах та ăна такам хыçалтан ярса илет те пăвма пуçлать, кăшкăрма хăтланать — çаварне хуплаççĕ.

Васкăр. Кăвакçутчен ĕçе пĕтермелле.

Гаффар *(çĕççине йăлтăртаттарса)*. Пырне касса татсан, шанчăклăрах мар-и?

Хаканбек *(сехри хăпнипе пĕтĕм кĕлеткипе малалла туртăнса)*. Хура-ах! Кăраву-ул!

Ăна çĕре çапса ӳкереççĕ. Уйăх çутинче, шăплăхра тĕрмешеççĕ. Çынсем хашăлтатни, тапни-çапни илтĕнсе тăрать. Часах хасар йăшаланайми те пулать — ун çине темиçен хăпарса ларнă. Сасси те илтĕнмест — çаварне, çĕтĕкпе пăкăласа, шур тутăрпа çыхса хунă. Уйăх çутинче çакă аванах курăнать.

Юхха. Тепĕр хут калатăп, пуçлăр...

Гаффар *(тăрăхласа пăшăлтатать)*. Кун пек ĕçре васкама юрамасть, йăнăшма пулать — йăмăркки вырăнне кишĕрне касса илер мар...

Пĕр вăхăт хасар анрашни, чуна çурасла мĕкĕре-мĕкĕре яни илтĕнсе тăрать. Унтан — хаяррăн уласа макăрни.

Юхха. Пулчĕ-и?

Гаффар *(тытăнчăклăн пăшăлтатать)*. Ĕнтнĕ кĕççе татăкĕ парăр, ĕнĕк тусанне сапса юнне чармалла. *(Ури çине тăрать.)* Пулчĕ. Манăн алă çăмăл — тепре авланиччен тӳрленет. Кусене *(тĕттĕмре Юххана шурă тутăрпа чĕркенĕ япала тыттарать)* йытта пăрахса парăр...

Шампа сасси *(ихиклетсе)*. Аванччĕ йыт çисен, вăл та çимĕ-ха ăна, шăршлăскере...

Гаффар *(çирĕппĕн)*. Халĕ ăна çыхса пăрахăр, Сар Ача, Хура Ача, ак çакăнтан ярса тытăр, çирĕпрех çыхса лартăр. Пуранмалла çыхăр, ан салтайтăр.

Юхха *(хасар умне пĕшкĕнсе)*. Çăварна çыхнине салтатпăр, пăкăланă чӳпĕке кăларса пăрахатпăр. Çухăрма ан та шутла, пĕр сас илтсенех, пырна касса тататпăр. *(Çĕççине йăлтăртаттарса кăтартать.)* Ак, куратни çакна? Тĕрĕслĕх çиеле тухрĕ: турă — пăру мар, сан пуçу çине те тавăру чулĕ татăлса анчĕ...

Шампа. Тавăру çĕççи...

Юхха. Эсĕ мар-и Кивĕ Саврăша вут тĕртсе çунтарнă, Çутăпи аппапа Ухатер турхана вĕлернĕ, мĕн чуль çамрăк хĕре юххана кăларнă, мĕн чуль çынна, тăван халăхĕнчен туртса илнĕ, çаратнă ылттăнпа илĕртсе, сутăнчăклăх çулĕ çине тăратнă...

Гаффар. Вĕçерĕнтĕм, тарса хăтăлтăм терĕн пуль. Çук, ку çĕршывра эс пиртен ниçта та тарса хăтăлаймастăн, таçта пытансан та — тупса, туртса кăларатпăр: тасал лайăх чух, шăршу та ан пултăр кунта, тасалмасан, татах иртĕхсе çӳресен, пуçна касса илетпĕр...

Юхха. Хальхинче пуçна касмарăмăр-ха, тепрехинче... тепрехинче-и, калаçса та тăмастпăр.

Шампа *(хасара пырса тапать)*. Ыратни мĕн иккенне туйса ил кăштах! Чĕччи те шăтманччĕ хĕрĕмĕн... Хам умрах, ашшĕ умĕнче... *(Йĕрет.)*

Юхха *(ватта сирсе)*. Кирлĕ мар, атте, хӳхленипе телее калла кӳреймĕн. Пăрăн-ха кунтан, ан кансĕрле... *(Хасара, хăлхинчен.)* Ак мĕн каласшăн эп сана юлашкинчен: çирĕп шантаратăп, эсĕ чăн-чăн така мар, кастарнă така çеç иккенне эпир

никама та каламастпăр, турăсăр тата хăвăнсăр пуçне çакна урăх пĕр чун та пĕлеймĕ, эс те вара шăв-шав ан çĕкле. Çĕклесен хăвна çеç сиен пулĕ — яту кайĕ, пурте кулма пуçлĕç, санран аяккарах пăрăнма тăрăшĕç. Усал хыпар утпа çӳрет тенешкел, çак мерекке арăмусемпе вĕсен тăван-пĕтенĕн хăлхине те çитсе кĕме пултарать, ун чухне мĕн пуласса сисетĕн-и? Пĕлетĕн-и ун чухне мĕн пуласса? (Хасар çăварне çыхнă тутăра вăр-вар салтса илет.) Сурса кăлар чӳпĕке е... çисе яр — пĕрех... *(Хăвăрт тухса каять.)*

Ыттисем те шăппăн тухса çухалаççĕ. Урайĕнче çыхса пăрахнă Хаканбек çĕлен пек авкаланса, чашкăрса выртса юлать. Пӳлĕм кăштах çуталать. Тулта автансем шарлаттарса авăтаççĕ, йытăсем каçса кайса вĕреççĕ. Хаканбек ура çине сиксе тăрасшăн пĕтĕм вăйĕпе тапаçланать, тăраймасть. Юлашкинчен аллисене çыхнă кантрана аран-аран пушатса, урай тăрăх упаленет, тăрса ларать, уринчи тăллисене нăйкăша-нăйкăша салтать, ури çине сиксе тăрса чари тĕлне ярса тытать.

Хаканбек *(ӳлесе, хыт çухăрса)*. У-у! Ы-ых! Пĕтерчĕç, тĕп турĕç, пуçа çирĕç!!! Хура-ах! Кăраву-ул! Вĕлереççĕ! *(Вырăн çине йăванса каять.)*

Çуртра шăп, пĕр сас-чӳ те илтĕнмест. Çапла чылай вăхăт иртет. Пӳлĕм татах çуталать. Йытă пек нăйкăша-нăйкăша, хасар тӳшек çине майлашса выртать. Тепĕртакран кăтăш пулать. Майпен тул çутăлса çитет, урайне кантăкран хĕвел пайăрки ӳкет. Алăка шаккани илтĕнет.

Нукер сасси. Ыйхи тутлă пулчĕ-и, хуçам, ырă тĕлĕксем курайрăр-и? Тăма вăхăт: чей вĕренĕ, апат пиçнĕ. *(Алăка туртса уçма хăтланать.)*

Хаканбек. Питĕрнипех-ха вăл. Эпĕ хытă чирлерĕм, тăрса алăк уçма та хал çук — тем амакĕ пулчĕ...

Нукер. Апла, сиплевçе чĕнмелле мар-и?

Хаканбек. Чĕнесех пулать пуль çав... Пахча енчи алăкран кĕрĕр, унта питĕрмен.

Нукер. Ăнлантăм, хуçам. Муэдзин муаллим — Пӳлерте чи чаплă сиплевçĕ шутланать. Çавăн патне халех тухса вĕçтеретпĕр, тепĕр темиçе самантранах кунта пулăпăр! *(Тĕттĕмленет. Тепĕртакран çуталать.)*

Çав пӳлĕмех. Хаканбек — вырăн çинче, Муэдзин — ун умĕнче, нукер — алăк патĕнче хуралта.

Муэдзин *(сухалне шăлса)*. Аллахсăр пуçне урăх турă çук, Мухаммед унăн пророкĕ. Мухаммед ячĕпе ыйтатăп: мĕн ыратать?

Хаканбек *(йăшăлтатса илет)*. Нукер алăка тул енчен хураллатăр...

Муэдзин *(алăк енне)*. Илтрĕн-и? Е хăлху мăканнă?

Нукер тухса çухалать, алăка тачă хупса хăварать.

Хаканбек. Кайса çаклат, питĕр алăка...

Муэдзин алăка питĕрсе килет.

Кун пек, акă шанчăклăрах... Халĕ ĕнтĕ мана тимлĕн итле, Ухатер турханăн тусĕ, çав йĕксĕкĕн шанчăклă йытти: çакăнта курнине тĕлĕкӳнте е чăн пурнăçрах кама та пулин, хăçан та пулин çур çынна çеç кала — çĕр тĕпĕнчен шыраса тупса, халиччен этем курман усал вилĕмпе вĕлеретĕп. Чĕрĕллех тирне сĕветĕп, аллу-уруна касса вакласа хăвна чи çӳллĕ йывăç çине хĕрӳ хĕвел питтине çакса хуратăп. Ăнлантăн-и?

Муэдзин *(лăпкăн)*. Ăнлантăм. Мĕн ăнланмалла марри пур кунта? *(Кулса илет.)* Курмасăрах туйрăм. Кăтарт. Сиплес тесен, мĕне сиплемеллине курмаллах пирĕн, тытса, шăршласа, çыртса пăхмалла.

Хаканбек. Шăлна ан йĕр... Ир савăнан... *(Витĕнкĕçне сирет.)* Пăх, акă, кур...

Муэдзин *(хасарăн пĕççи хушшинелле пĕшкĕнсе)*. Этте-те-те-те-тетте! Ай-яй-яй-яй-яй-яй! Питĕ ăста çын тунă ку ĕçе: пĕр-пĕр мулла е урăх чаплă ăстаçă... Эпĕ ĕнтĕ шутлама та хăратăп...

Хаканбек. А эсĕ ан шутла, хăвăн ĕçне ту.

Муэдзин *(пĕчĕк арчинчен эмеллемелли япаласем кăларса хасара сиплеме пуçлать)*. Аван, аван, маттур. Ак çапларах тытха сулахай уруна. Пулчĕ. Халĕ ĕнтĕ сылтăммине кунтарах куçар... Лайăх! Питĕ лайăх! Çак курăк çулçипе çыпăçтарса та хăварсан, кăнтăрла тĕлне ӳт илме пуçлать. Тепĕр виçĕ кунтан мая каять. Эрнерен, шет, тӳрленсе те çитет. Паянлăха вара ан ĕç, ан çи, чăт, ыран — курăнĕ унта. Паян каçхи кĕлĕ хыççăн татах килетĕп. *(Япалисене пуçтарса арчине хурать.)* Юрать эппин. Эп каланă пек ту. Каçчен кăштах çывăрса илме тăрăш — ыратнине чаракан эмел те патăм эп сана. Çывăрса каннă хыççăн çынна вăй-хал хушăнаканччĕ.

Хаканбек. Нумай пакăлтатан. Çухал часрах!

Муэдзин. Çухалатăп, çухалатăп. *(Васкаса алăк патнелле утать, арчине сулкаласа.)* Кунта ман эмелĕсем пур, пĕтĕм хасара кастарсан та ытлăн-çитлĕн çитĕ! *(Тухса каять.)*

Хаканбек *(хытă тарăхса, хаяррăн)*. Куçкĕрет тăрăхлать, мăшкăлласа кулать. Кул-ха, кул, хĕпĕртесе савăн, анчах та часах хура куççульпе, юнлă куççульпе уламалла килсе ан тухтăр... Анчах, мĕнле ан хăрат, тепĕр темиçе сехетренех çак ĕç çинчен пĕтĕм Пӳлер пĕлĕ: пасарсенче, мечĕтре, мунчасенче, тимĕрç лаççисенче, ытти ăстасем патĕнче лĕкĕртете-лĕкĕртете пăшăлтатма, çын курманрах çĕрсенче вара хырăмĕсене тыта-тыта ахăлтатма пуçлĕç. У-у, ылханлă тĕнче! Ăçтан килсе çаклантăм эпĕ ку тăрăха: мĕн туртрĕ, мĕн илĕртрĕ? Мул! Мула хапсăнни! Тата — арăмсем. Çавсем пĕтерчĕç, çавсем тĕп турĕç. Пĕринчен тепри сăхăрах, пĕринчен тепри çăткăнрах! Ак халь мĕн тума кирлĕ вĕсем мана — арăмсем, кастарнă ăйăра кĕсресем мĕн тума кирлĕ? Пĕтĕм чун тепĕр май çаврăнса кайрĕ, ах! Пĕтĕм шанчăк, пĕтĕм ĕмĕт пĕтсе, сӳнсе ларчĕ... Тĕрĕс мар хăтлантăм çав Çутăпие вĕлерсе, тĕрĕс мар ĕç турăм, çилле тытса чараймарăм, хама ытла пысăка хутăм, варĕнче хамăн ачана йăтса çӳрекене вĕлерсе, турă умĕнче çĕр йăтайми çылăха кĕтĕм... Анчах... анчах та чура-хăрхăмран çуралнă тĕпчек мана ыр кăтартнă пулĕччĕ-ши? Мĕскĕн чăвашсем — пирĕн чура-тарçăсем. Çавна асра тыт, Хаканбек! Эс чаплă йăхран тухнă хасар. Санăн хăрхăмсенчен çуралнă ывăлсенчен ырлăх, телей-ăрăскал кĕтсе лармалла мар. Çаратас пулать чурасене, ĕçлеттерсе чунĕсене кăларса илес пулать, касас-чикес, çакас, вĕлерес пулать! *(Икĕ хутчен хыттăн ал çупса илет.)*

Нукер *(алăкран пуçне кăтартса)*. Мĕн хушатăн, хуçам, эп кунтах?

Хаканбек. Сиплевçе виçĕ кунсăр ман пата ан кĕртĕр, кашни утăмне йĕрлĕр. Пасарсене, мунчасене, халăх йышлă пухăнакан ытти вырăнсене çитсе курăр: мĕн калаçать халăх — пĕлсе-шăршласа килĕр.

Нукер. Юрать, хуçам, эс каланă пек тăвăпăр... *(Çухалать.)*

Хаканбек. Кăтартăп эп сире, мĕскĕнсене, хĕсĕр хасар — сехĕрленнипе шăтăкри вилесем çиеле туха-туха выртĕç, çĕр чĕтренĕ, ниçта ларса сысма вырăн тупаймăр! *(Хасар пуç çинченех шурă çиттипе витĕнет. Тĕттĕмленет.)*

Çав пӳлĕмех виç-тăват кунтан. Каç. Çуртасем ялкăшса çунаççĕ. Вырăна пуçтарнă. Çар тумĕ тăхăннă Хаканбек чи курнакан вырăнта, тахта çинче, хан пек саркаланса, юн çырми пек юхса тăракан пурçăн хăмач айĕнче ларать. Икĕ хутчен ал çупса илет. Нукер чупса кĕрет.

Нукер. Кунтах эп, хуçам.

Хаканбек. Мĕн калаçать Пӳлер халăхĕ — каласа кăтарт!

Нукер. Хаксем пирки, выçлăх пуласси пирки... Тем те калаçать. *(Хăлхи патнерех пырса.)* Тата такам такамăн леш мĕнне... касса илнĕ тет. Темиçе çĕрте те илтрĕм çав халапа.

Хаканбек. Юлташу та илтрĕ-и?

Нукер. Илтрĕ.

Хаканбек. Чĕн-ха, кунта кĕтĕр.

Нукер. Чĕнетĕп, хуçам. *(Тухса çухалать.)*

Хаканбек. Çапла тытатăн иккен сăмахна, Ухатер йытти, чунран кураймастăн мана, Аллах тарçи, хасар чури...

Тепĕр нукер *(кĕрсе пуç таять)*. Чунран итлетĕп.

Хаканбек. Мĕн калаçаççĕ пӳлерсем? Камăнне, мĕнне касса илнĕ?

Тепĕр нукер *(ырă мара сиссе)*. Ихи-хик! *(Çăварне аллипе хуплать.)* Калама та аван мар — пуçана хунĕмĕн çӳçне каснă чух хăлхин тăррине касса илнĕ. Хĕрĕнкĕрех пулнă пуçана. Касса илнĕ те, иккĕш те куççульпех йĕреççĕ — иккĕш те кăштах сыпнă пулнă... Кулса вилĕн...

Хаканбек. Тата камăнне мĕнне касса илнĕ?

Тепĕр нукер. Хуçам, урăх туршăн та нимĕн те пĕлместĕп... Çырлах...

Хаканбек. Ну, юрĕ, юрĕ... Çула тухма хатĕр-и эсир? Çулĕ çывăх мар, мĕн кирлине пурне те илтĕр-и?

Тепĕр нукер. Йăлтах хатĕр. Утсем каннă, тутă.

Хаканбек. Эппин халь сиплевçе, Муэдзин муаллима кайса чĕнĕр — ыр кăмăлĕшĕн тав тăвас тетĕп ăна юлашкинчен...

Тепĕр нукер. Итлетĕп. Халех чĕнсе килетпĕр сиплевçе. *(Тухса çухалать.)*

Хаканбек *(чылай чĕнмесĕр ларнă хыççăн)*. Акă уйрăлмалли вăхăт та çитрĕ, ĕмĕрлĕхе уйрăлмалли вăхăт... *(Хасар куçне, пĕрин хыççăн тепри, сăнсем курнаççĕ: прожектор çутинче — Тевел, Атнер, Акташ.)* Чипер юлăр, йĕкĕтсем, усалпа ан асăнăр.

Йĕкĕтсем. Чипер пынă çĕртех ӳксе ĕнсӳне хуç, вилеймесĕр виç кун тапкаланса вырт. *(Çухалаççĕ. Улька курăнать.)*

Улька. Эс хур тунă пĕр хĕрарăм куççулĕ те çĕре ан ӳктĕр.

Хаканбек. Тавах, тавах, вырăс сысни... *(Кивĕ Саврăш этеммисем.)*

Пĕри. Çыртнă кашни татăку пырна лартăр.

Тепри. Ĕçнĕ кашни тумламу наркăмăша çаврăнтăр.

Виççĕмĕшĕ. Пире çаратса тăхăннă кашни сăсару мунчалачăптана çаврăнтăр, укçу-ылттăну турпас пулса тăтăр. Ху йӳтемене тухса йытăлла вĕрсе çӳре. Йыт вилĕмĕпе вилмелле пултăр.

Хаканбек. Хăвăр калани хăвăра çиттĕр, кĕлмĕççем. Ыттисем ăçта эсир тата, ма курăнмастăр? *(Талутпа Чалăш Куç шуса тухаççĕ.)*

Талутпа Чалăш Куç. Сана пула пĕтрĕмĕр, хăвăн та пĕтмелле пултăр.

Хаканбек. Мана пула мар, выç куçăра пула хуплантăр. *(Сантимĕр-Мамай.)*

Сантимĕр. Эп санăн чи шанчăклă чуруччĕ, чи пултарруллă чуру. Çавна та хаклама пĕлмерĕн, ирсĕр.

Хаканбек. Юрать, юрать, Мамай, тĕрĕсех каснă сан хывăх тултарнă пуçна, сĕкĕнмелле марччĕ Çутăпи патне. *(Çутăпи курнать.)*

Çутăпи. Мĕскĕн этем: ху ачуна ху вĕлертĕн. Епле сана халь те çĕр çăтса анса кайман? Курас килме мар, сан çине ман пăхас килмест. Йĕрĕнетĕп санран. Ылханатăп. *(Пуçне пăрать. Çухалать.)*

Хаканбек. Юхха. Йытă ами. *(Ухатер тухать. Нимĕн те чĕнмест.)* Ма нимĕн те чĕнместĕн, паттăр турхан, чăваш халăх чапĕ, мухтавĕ, шанчăкĕ?

Ухатер. Пурĕпĕрех пĕтетĕр, шăршăр та юлмасть, çавăнпа нимĕн те каламастăп, ылханмастăп. Эпир вара, пăлхар-чăвашсем, тата пин çултан та пĕтместпĕр-ха, çĕкленсе кăна каятпăр. Сана: «Тĕп пул!» — тесе те каламастăп эпĕ, апла ылханмасăрах хĕсĕр хасар тĕп пуласси инçе мар. Хĕсĕр хасар — хăрăк йывăç. Хăрăк йывăç, ху пĕлетĕн, ешереймест: тымарĕсем типнĕ. Эсĕ, хасар, — хăвна ху çиекен чир. Çав чир вăл ытти халăхсене вилĕм шăтăкĕ чавни. Çав шăтăка юлашкинчен хăвах кĕрсе ӳкетĕн... *(Çухалать.)*

Хаканбек. Тавах, тавах, ухмах чăваш. Курăпăр, пурăнсан — курăпăр. Эсĕ вара нихăçан та, нимĕн те кураймăн. Тĕрĕсех касса пăрахнă эпĕ сана, тĕрĕсех. Малашне те сан пеккисене ним хĕрхенмесĕр касăп-ваклăп.

Алăка шаккаççĕ. Хаканбек картах сиксе илет, ура çине тăрать.

Кĕрĕрех, кĕрĕрех, алăк уçă! *(Каллех тахта çине паçăрхи пекех кайса ларать.)*

Муэдзин *(кĕрсе тăрса)*. Чĕннĕ терĕç. Ну мĕнле сывлăху, хисеплĕ Хаканбек?

Хаканбек. Мая кайрĕ. Чиперех. Сывалтăм тесен те юрать. Тепĕртакран эпир çула тухасшăн та, мĕнле, хаклă муаллим, эс парнене хирĕç мар пуль?

Муэдзин. Чăрманма кирлĕ мар, пирĕн ĕçĕ çавнашкал — инкеке лекнĕ çынна яланах пулăшатпăр, сиплетпĕр...

Хаканбек. Çапла ĕнтĕ, çапла, çапла пулмасăр. Эсĕ, муаллим, мĕн-и, ман инкек пирки ниçта та, пĕр сăмах та шарламан пуль?

Муэдзин. Ниçта та, пĕр сăмах та... Таса Коран çине алла хурса тупа тума пултаратăп.

Хаканбек. Çĕр çыртса та-и?

Муэдзин. Çĕр çыртса та...

Хаканбек. Кирлĕ мар... Ĕненетĕп сана... *(Алăк енне кăтартать.)* Çав ик ухмах мĕн шутлать?

Муэдзин. Никам та, нимĕн те сисмест, вар пăсăлнă пуль теççĕ. Сана тапăннă хурахсем сас памаççĕ — çĕр тĕпне анса кайнă тейĕн, пач çухалнă. Эсекелсем патне е пăрттассем патне каçса кайнă пулмалла. Сĕм вăрмансене тарса пытаннă.

Хаканбек. Пытанччăр, пытанччăр, пурĕпĕрех шыраса тупатпăр. Пиртен никам та, ниçта та тарса хăтăлаймасть... Ну юрĕ, пурте аван пырать, апла пулсан... Мĕнех, эп сана чунран тав тăвасшăн. Çавна палăртса, çак пĕчĕк парнене парасшăн — сахал тесе ан ӳпкеле: пурри — пĕрле, çукки — çурмалла. Çапла калатчĕç пулас кунта? *(Чечеклĕ кавир хутаçран пĕр ывăç ылттăн укçа кăларса урайне, хăйĕн ури патне купаласа хурать.)* Ил... Саншăн нимĕн те хĕрхенсе тăмăп... Хăвна кирлĕ мар тетĕн пулсан, чухăн тăлăх-туратсене валеççе пар.

Муэдзин *(кăштах шухăшласа тăнă хыççăн укçа патне пĕшкĕнет)*. Тăлăх-турата укçа тени кансĕрлемĕ...

Хаканбек. Кансĕрлемĕ, кансĕрлемĕ... *(Муэдзина çурăмĕнчен, чĕри тĕлĕнчен, çĕçĕпе чикет.)* Сана леш тĕнчене вăхăтлă ăсатни те пĕртте кансĕрлемĕ... *(Калаçа-калаçа пӳлĕме вут тĕртет. Тĕтĕм тухса тулать. Чаршавсем ялкăшса çунаççĕ. Ылттăн укçасене пуçтарса пĕрерĕн-пĕрерĕн хутаçа каялла шăнкăр-шăнкăр! ярать. Хутаçа хул урлă çакса, хĕçне ярса тытать, çаплипех пӳлĕмрен тухса тарма алăк патнелле вирхĕнет, анчах та, темĕн астуса, Муэдзин юн юхтарса выртакан еннелле çаврăнать.)* Леш тĕнчере тĕл пуличчен, хисеплĕ муаллим, Аллахсăр пуçне урăх турă çук. Унăн пророкĕ — Мухáммед! *(Çухалать.)*

Урса кайса чан çапаççĕ.

Чаршав

1973 çул,
Саврăштуç.

МАТРИАРХАТ

Икĕ пайлă тăватă картинăллă камит

Вылякансем:

Виолетта — «Кĕнеке» пĕрлешĕвĕн сектор пуçлăхĕ.
Вадим — упăшки, инженер-наладчик.
Верук — кӳрши, Виолеттăпа Вадимăн шкулта пĕрле вĕреннĕ тусĕ, пĕрлех ĕçлеççĕ, пурте çирĕм иккĕсенче.
Георгий Иванович — пĕрлешӳ пуçлăхĕ, хĕрĕхсенче.

Ĕçсем хальхи вăхăтра пулса иртеççĕ.

ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

Пĕрремĕш картина

Хула хваттерĕ. Диван çинче, хаçат тытса, Вадим выртать. Вăл мĕнле выртни, хаçата епле уçкаласа хупни, çийĕнчи спорт костюмĕ, уринчи çемçе тапочкийĕ, тирпейлĕн вирелле тураса якатнă çӳçĕ — пурте çак çыннăн пурнăçĕ лăпкăн та кăмăллăн шуни çинчен калать. Телефон шăнкăртатать. Вадим, хаçатран хăпса, трубка тытать, итлесе тăрать: йăнăш шăнкăрав пулмарĕ-ши, тет, анчах та телефон тепре шăнкăртатать. Ваннăран Виолетта вĕçсе тухать. Вăл чечеклĕ халатпа, пуçĕ çинче — бигудисем, аллинче — несессер.

Виолетта. Да! Верук-и ку? Çапла, паян каçхине... Атту эс пĕлмен пуль? План пайĕнче ман пирки çеç калаçаççĕ паян. Юрать, юрать... Мĕнле размер? Тĕсĕ мĕнле? Ĕренки? Мĕн тума сана хĕрлĕ кăшман тĕсĕ, мĕн тума — хĕм? Мĕнле атăпа тăхăнма тетĕн? Финнсем çĕленипе? Пĕрремĕш хут илтетĕп. Ну вара... Кĕрсе тух, Верук. Кĕрсе тух тетĕп-çке... Калама та аптратăп ĕнтĕ, ăçтан ĕлкĕрĕп çавăн чухлĕ лавккана çитсе... Пин те пĕр заказ парса тултарчĕç!.. *(Кăмăлсăррăн.)* Каларăм-çке сана, кĕрсе тух, терĕм...

Трубкине хурса, пӳлĕм тăрăх утать, пилочкăпа чĕрнисене хăйракалать, вăхăтран вăхăта упăшки çине пăхса илет.

Вадим *(хаçат вуланă май)*. Мĕн кирлĕ ăна?

Виолетта. Верука-и? Ыттисене мĕн кирлĕ, ăна та çавах кирлĕ. Эп командировкăна каясса пĕлнĕ те, пурте — ман пата... Валем хуçана пуççапма пынă пек пыраççĕ...

Вадим. Мĕн кирлĕ вĕсене?

Виолетта. Епле «мĕн кирлĕ»? Пĕрне — атă, теприне — кофта, виççĕмĕшне — шлепке, тăваттăмĕшне — тур пĕлтĕр мĕн... Эрнипех канăç памаççĕ... Эпĕ пĕр çын çеç, ман çĕр алă мар, мăшăр алă. Лейпциг тăрăх çапкаланса çӳреме каять теççĕ пуль. Хăйсем пек кураççĕ... А манăн вара питĕ кăткăс командировка... Пуç çаврăнса каймалла...

Вадим *(юлхавлăн хаçатне сирсе, тавçăрса илме хăтланать)*. Пастай, пастай, эс мĕн çинчен?

Виолетта. А эсĕ мĕн çинчен?

Вадим. Эпир санпа килĕшрĕмĕр-çке: эсĕ ниçта та каймастăн.

Виолетта. Эпир килĕшрĕмĕр те, тулĕк начальствăна пĕлтерме мантăмăр. Георгий Иванович ку килĕшӳ пирки нимĕнех те пĕлмест... Пĕлесшĕн те мар...

Вадим. Эпир санпа килĕшрĕмĕр-çке: эсĕ ниçта та каймастăн.

Виолетта. Мĕн эс кăрмаххун пек: килĕшрĕмĕр-çке, килĕшрĕмĕр-çке тесе тăратăн? Ĕçре çапла хушаççĕ — и всё! Ĕç вăл ача вăййи мар.

Вадим *(пăлханма пуçласа)*. Эпир санпа ĕнер килĕшрĕмĕр: кирек епле сăлтав туп, ĕçрен ху ирĕкӳпе тухма тесе хут çыр, шуйттан ту, анчах... Ак халь эс мана факт умне тăрататăн. Питĕ те чее политика!

Виолетта. Мĕн политики пултăр, Вадик?! Хам та кĕтмен эп... Пурччĕ пĕр вариант, анчах та çав Коркина плановичка... Ĕмĕрех кирлĕ мар çĕре сăмсине чикет. *(Витленĕ пекрех.)* Пĕр эрнене-и, Виоллета? Пĕр эрнене-и? А сан мĕн ĕç пур унта: пĕр эрнене-и, икке-и? Вăт упăте! Кашни хушăкран пăхса çӳреме хатĕр...

Вадим. Ма вара сан каймалла? Унта, сирĕн пайра, мĕн чухлĕ майра...

Виолетта. Пайра мар, секторта.

Вадим. Мĕн уйрăмлăх? Унта арсăр арăмсем те тем чухлех... Вăт çавсем кайччăр та... Сана мĕн, пуринчен те ылтарах кирлĕ-и?

Виолетта. Эс, тăванăм, ма тăна илместĕн: эп киле виççĕмĕш уйăх ĕнтĕ нухратне малтанхилле 160 мар, 220 рупий илсе килетĕп. Сан шутпа, мана мĕншĕн хушса тӳлеççĕ тетĕн эсĕ? *(Мăнаçлăн.)* Эп реклама пайĕн ахаль сотрудницинчен

Пĕрлешӳ секторĕн заведущийĕ таран ӳсрĕм. Эпĕ, калас пулать, Георгий Ивановичăн сылтăм алли. Илме те ответлăха пула 160 мар, 220 илетĕп — пур-и уйрăмлăх, çук-и? Ак тата — командировка! Тепĕр уйăхра тата тепĕрри кĕтсех тăрать. Ăçталла тетĕн эсĕ? Ĕмĕрне те пĕлейместĕн... Будапешталла! Вăт ăçталла çул тытатăп!

Вадим. Ну, пĕлетĕн-и... Ӳсни вăл ӳсни... Ăна хирĕç эпĕ нихăçан та пымăп. Анчах та эп ĕç укçи хушса панăшăн... кхм-кхм! Хай, леш... Категорически... Вопшĕм, эпĕ сана килйышран уйăрнине категорически сивлетĕп. Точка! Пăнчă!

Виолетта. А эс мĕнле шутланă: укçана ахальтен ӳстерсе параççĕ тетĕн-и?

Вадим. Ахальтен-и, ахальтен мар-и, эп çемьеллĕ çын, мана ачасем кирлĕ, çавăнпа та арăм тени çумра пултăр... Хам çумра...

Виолетта. Эс Тăхтаман мар пуль, ман сан çине кăна пăхса лармалла мар пуль?

Вадим. Апла иккен! Эп — инженер-наладчик — сначчăт, килте лармалла, арăм вара — ф-р-р-р! — Лейпцигăн—Будапештăн—шуйттанăн ярăнса çӳремелле? Çапла-и? Çук, эп хирĕçлетĕп! *(Хаçатне ывăтса ярать, пӳлĕм тăрăх утма пуçлать.)* Пĕлетпĕр эпир командировка мĕн иккенне... Унта мĕнсем... командировкăна пынисем йыт кĕтӳ пек, кĕтсе çех тăраççĕ. А эс — çутă çине вĕçекен лĕпĕш...

Виолетта *(тутине хĕретсе)*. Пĕлтĕр эсĕ те кайса килтĕн.

Вадим. Эп инçе мар, района кăна, а эсĕ ăçта? Лейпциге! Уйрăмлăх пур-и, çук-и? Мĕн унта эп, районта... Унта питех ыр кураймăн. Лейпцигре вара... Кунта сана валли театрĕ те, ресторанĕ те, тĕрлĕрен кабаре-тĕр-мĕн-тĕр те... Кутна вут хыпасси — пĕрре сурмалăх çеç. Халăх вара кун пирки мĕн тенĕ? Упăшки чупать — çурчĕн çурри çунать, арăмĕ чупма пуçлать — пĕтĕм çурчĕ кĕл пулать. Вопшĕм, эпĕ категорически хирĕç. Татсах калатăп: венсеремос! Патриа о муэрте!

Виолетта. Эс хăвăнне ху пĕл... Вăл санăн ĕç, манăн вара — хамăн ĕç.

Вадим. Сначчăт, саншăн ĕç тенĕ япала çемьерен хаклăрах? Çемье саншăн — так çапла, маскировка, чăн кирли вара, тĕп вырăнта тăраканни — ĕç...

Виолетта *(куçкĕски умĕнче хитреленсе)*. Мĕнле çемье пирки калаçатăн, Вадик?

Вадим. Мĕнле — «мĕнле çемье»? Çемьеллĕ çемье! Эп вара мĕн, çемье мар-им? Ача темшĕн çуратасшăн мар эс. Качча тухнă чух эс мĕн шутланă? Е эпĕ саншăн мĕн-и, çумçакки, ширма?

Виолетта *(чăматан кăларнă май)*. Ухмаха пеме ан хăтлан ĕнтĕ эс, Вадик, эс ман йĕркеллĕ упăшках, ăстаçă, ылтăн алă! Ав леш сӳтĕкĕн — пирĕн çĕнĕ бухгалтершăн — сĕлеке, йĕпе сăмса, стена çине пăта çапса лартма та йĕркеллĕ пĕлмест. А вăл — во! Еплерех пырать унпа...

Вадим *(чăматанран ярса тытса)*. Пăта! Сире пурсăра та пăта кирлĕ! Ниçта та каймастăн, ăнлантăн-и?

Виолетта. Эс мĕн, Вадик, тăна кĕр! Ку эп курнăçланни мар, ĕçрен хушнипе каймалли командировка.

Вадим. Итлес те теместĕп! Эс вара суйла: командировка е çемье. Альтернатива çук, пулма та пултараймасть... *(Чăматанне тăпăлтарать.)*

Виолетта. Эс мĕскер, тилпĕрен çирĕн-и элле? Кур-ха, сиксе ларчĕ... Ну, ме, ме, ил. Ярса тыт. *(Чăматанне вĕçертет, йĕрет.)* Мĕне пула мана çакăн пек асап, пӳлĕхçĕм... Вăт Тăхтаман!

Вадим *(чăматанĕпе ун патне пырса, именнĕн)*. Ну юрĕ, юрĕ ĕнтĕ... Эпĕ юратса калатăп вĕт: ан кай тетĕп, эсĕ вара... Ну лăплан, лăплан... Шăл куççульне... Ак çапла... *(Ыталать, чăматанне вĕçертмест.)*

Виолетта *(сассине улăштарса)*. Хăп, эсрел... Эс ху çинчен çеç шутлатăн. *(Упăшкине тĕксе ярса, ĕсĕклет.)* Эс мана нихçан та, нихçан та юратман! *(Часах çиеле тухасса сиссе, йĕрет.)*

Вадим. Тĕксе ан яр мана, чуна ан çур... Тархасшăн... Эп начар, эп путсĕр. Эп, пĕлессӳ килсен, йĕксĕк. Ан йĕр çеç. Кирлĕ-и, умна чĕркуçленетĕп? Ак, кур!.. *(Чĕркуçленсе ларать.)*

Виолетта. Кирлĕ мар эс мана... Чĕркуçленсе те кирлĕ мар. Тиран! Феодал! Тăхтаман! Виççĕш те эс!

Вадим. Эп сана пурпĕрех юрататăп. Юрататăп... Çакăн пеккине те... *(Ура çине тăрать.)* Чим-ха, мĕн çинчен сăмахлатпăр эпир? Командировка... Мĕнех вара, пултăр...

Виолетта *(куçне шăлса)*. Çапла пулмасăр!

Вадим *(чăматанне шухăшлăн йăтса çӳрет)*. Командировка... Мĕн япала-ха вăл командировка? Патшалăх шучĕпе ыр курса çӳрени. Мĕнех вара, командировка... Хальччен курман

япала-и? Ну, пĕр эрнене... Эс пĕрремĕш мар, эс юлашки мар... Кайăн вара... Ак тытăн та тухса кайăн...

Виолетта *(хавасланса)*. Чăнах-и? Каятăп-и?

Вадим. А мĕнех тĕлĕнмелли пур вара? Каятăн... Ту-ту-тут! терĕ пăрахут. Пирĕн халь феодализм мар, социализм, эп те Тăхтаман мар, йоккăр малай! Ав эс хальхи вăхăтри вăйлă, ĕçлĕхлĕ, вăр-вар хĕрарăм, эпĕ вара...

Виолетта. Вадик! Эсĕ — ылтăн... Хаклăскерĕм! *(Ыталаса чуптăвать.)* Эпĕ те юрататăп сана, ытарайми ман айванккаçăм...

Ыталанса чуптăваççĕ, хытса тăраççĕ. Чăматанĕ ӳкет.
Ун тавра ташласа та юрласа çаврăнаççĕ.

Виолетта. Ай, Вадик, ылтăнăмçăм, кая юлатăп вĕт! Георгий Иванович мана аэропорта 19.30 тĕлне шăп та лăп çитме хушнăччĕ, таçта-мĕнре çӳреме мар. Ак халĕ? *(Сехечĕ çине пăхать, пуçне ярса тытать.)* Ах, турăçăм! *(Куçкĕски патне чупать, пуçĕнчи бигудисене иле-иле пăрахать.)*

Вадим юпа пек хытса кайса пăхса тăрать.

Вадим *(ерипен, пусса)*. Мĕн тума кунта Георгий Иванович?

Виолетта *(куçкĕски умĕнче хуçкаланса)*. Мĕнле — «мĕн тума»? Вăл та пырать...

Вадим. Епле апла — «пырать»?

Виолетта *(куçхарши тĕкĕсене тытса)*. Епле пырать? Пĕрле вĕçсе пырать. Вĕçсе çитетпĕр: ĕçĕмĕре малтанхи хут пăхаççĕ. Ай, мĕн пулĕ ĕнтĕ! Калама та пĕлместĕп, епле хăпса пĕтĕпĕр ĕнтĕ... Экспоначĕ кăна 1300 штук, шуйттан ашса тухаяс çук... Ах, пĕлместĕп, пĕлместĕп!

Вадим. Эпĕ вара пĕлетĕп: ниçта та каймастăн эсĕ...

Виолетта. Епле апла — «каймастăн»? Мансăр вăл мĕн тума пĕлет унта!

Вадим. Санпала, сначчăт, хуйхă кăнтăрлара пулать, ажур, хрантсусла каласан?

Виолетта *(хытă тĕлĕннĕ)*. Ну, паллах! Пĕтĕмĕшле ертсе пырасси — пĕр япала, специализаци — пач урăх япала. Цифирсене вăл — нихт ферштейен. Кунта ансăр профиллĕ специалист кирлĕ-çке!

Вадим. Эс апла, сначчăт, специалист? Тăвăр профиллĕ ытарайми ĕçчен?

Виолетта. Çапла! Мансăр пуçне ăна никам та, тепĕр хут калатăп, никам та пулăшма пултарас çук! Тата çавна асту: ахальтен вĕреннĕ-и эпĕ... ахальтен ӳстернĕ-и ман ĕç укçине?..

Вадим *(шухăшлăн).* Халь эп те туятăп ĕнтĕ: ахальтен ӳстермен.

Виолетта. Ну, вăт... Куратăн-и, ак кунта *(сумккине çапса кăтартать)* экспонатсен списокĕ, пĕтĕм отрасльпе рекламăсем...

Вадим *(сиввĕн).* Вилсе выртам — кăларса ямастăп.

Виолетта *(лăпкăн).* Килĕшрĕмĕр-çке ĕнтĕ, килĕшрĕмĕр, яратăп терĕн...

Вадим. Анчах — пĕччен. Унсăр.

Виолетта. Мĕн тăвăп-ха унта эпĕ пĕччен, шутла-ха пуçупа?

Вадим. Эпĕ шутларăм ĕнтĕ: эс ниçта та каймастăн. *(Чăматана ыталать те диван çине выртать.)*

Виолетта. Вадик, тăванăм, ма выртрăн-ха вара çак чăматанпа?.. Мĕнле-ха çав... Хам та çимесп, çынна та памасп тенĕ евĕр. Чăматана ма çатăрласа тытрăн эс, чăматанăн мĕн айăп пур? Должнăç пур, командировка пур, ак билет 20.40 валли, акă вăл, кунталла пăх, юлашкинчен, ĕçрен хушса яраççĕ — çавă пур. Эс вара чăматана çатăрласа тытнă... Çăлав ункинчен ярса тытнă пек... Асту, командировкăна путлантарсан, Георгий Иванович сана пуçран шăлса ачашламĕ. Халлĕхе вара вăл сан пирки лайăх шухăшлать, пĕлетĕн эс çавна...

Вадим. Суратăп эп... Пурин çине те суратăп. Чăматана пĕрех памастăп. *(Чăматана çумне чăмăртать.)*

Виолетта *(сумккинчен хучĕсене туртса кăларать).* Ну, пăх эппин кунталла, пăхса ил, кутăн качака! Акă реклама материалĕсем. Акă экспонат литературин спискийĕ, ак автор правипе пĕрле памалли кĕнекесен шучĕ, ак сутмаллисем...

Вадим. Ç-у-ук!

Виолетта. Мăй таран ĕç вĕт кунта, ик çынна та — мăй таран.

Вадим. Çу-у-ук!!

Виолетта. Эп мĕн чухлĕ вăй хутăм, нервă пĕтертĕм, хисеп центрне виç хутчен çитсе килтĕм, вăл пур... *(Ĕсĕклет.)*

Вадим. Сĕлекӳне ан юхтар. Камит ан кăтарт. Пурпĕрех пулăшаймĕ!

Виолетта *(куçне типĕтсе, лăпкăн)*. Ухмах эс, Вадик, сипленес пулать сан. Кил хĕсĕк тесе, анлăлатма ыйтса, эпĕ заявлени патăм, часах пирĕн йыш хутшăнма пултарать терĕм. Георгий Иванович мана иртнĕ канашлура чи лайăх работница тесе палăртрĕ, çĕнĕ хваттер пама та пулчĕ, эсĕ вара...

Вадим *(кăсăкланса)*. Ĕç тухас пекех-и?

Виолетта *(хавхаланса)*. Паллах, тухас пек! Сăмах пачĕ-тĕк, Георгий Иванович хăй сăмахне тытатех... *(Сехечĕ çине пăхать.)* Вăхăт чупать те чупать. Вăхăт — укçа, Вадик... Хваттер те...

Вадим *(чăматана урайне лартать, диван çинчен тăрать)*. Хăш районта?

Виолетта. Мĕн «хăш районта»? А-а, хваттер-и? Ну, центра çывăх ĕнтĕ ăçта та пулин. Лимитне кăна туччăр, унта... Çав хваттерех леш упăте, леш бухгалтери йĕкехӳри сăхланать. *(Лешĕн пек туса кăтартать.)* Мана, тет, пама тивĕç, эпĕ, тет, çамрăк специалист. Командировка çинчен илтнĕ-илтмен тӳрех чупса пычĕ: начальникпа сăмах татрăр-им, чăнах та татрăр-им, тет. Эп чĕнместĕп. Пайсем тăрăх кайрĕ: чăшăл-чăшăл, пăшăл-пăшăл туса çӳрет. Пăхатăп: Коркина плановичка вирхĕнсе кĕрет. Вăл начальника кайăк кушак пек юратса пăрахнăçке, хăрушă! Куçĕпе çиет мана, çунтарса ярса кĕл туса тăкма хатĕр: сăмах татрăр-им, татрăр-им сăмах, тет. А эп ăна: çапла, татрăмăр тетĕп. Унăн куçĕ алчăраса кайрĕ, çăварне карса пăрахса, шак хытса тăчĕ. *(Ахăлтатать.)* Вара пурте шăп пулчĕç, чĕлхисене çăтса янă тейĕн. Вăт этемсем! Вĕсен пуçĕнче те пĕр япала çеç. Кăшт вăл-ку пулсанах, тӳнтерле шутлаççĕ... Хăйсем çапларан ĕнтĕ...

Вадим *(кашни сăмаха уйрăммăн)*. Эс ху ман пирки шутланă-и-ха? Чикĕ леш енне каятăн... Пĕр эрнене... Пĕччен мар... Начальникпа... Классически вариант! Кам çакăн хыççăн манран ан култăр, кала — кам? *(Хытă тарăхса.)* Лĕхĕртетсе, каçса кайса, хырăмĕсене тытса кулаççĕ вĕт капла манран? *(Чăматана каллех ярса тытать, ăна ыталать те диван çине выртать.)* Ниçта та каймастăн эсĕ!

Виолетта. Апла эс те эп унта çавăншăн каять тесе шутлан?

Вадим. Эп ним те шутламастăп...

Виолетта. Çук, шутлатăн...

Вадим. А мĕн уйрăмлăхĕ çынсем çапла шутлаççĕ пулсан?!

Виолетта. Эп сан пирки калатăп, çынсем пирки мар.

Вадим. Мĕн ман пирки каламалли, çынсем çапла шутлаççĕ пулсан.

Виолетта *(тапăна пуçласа)*. Сана тĕрĕслĕх кирлĕрех-и е çын мĕн калани?

Вадим. Çынсем çапла калаççĕ-тĕк, сначчăт, тĕрĕс калаççĕ! Тĕрĕс каламасан та, тĕрĕс пулса тухать...

Виолетта. Епле хвилосăф иккен эс, диалектик! Икĕпитлĕ хĕç. Çын мĕн каласран хăратăн, апла-тăк эс ху та вĕсен хăраххи. Вĕсем пекех, ним чухлĕ те уйрăм мар. Вĕсем пекех! *(«Вĕсем пекех!» — тее-тее, упăшкине алшăллипе çатлатта-рать, лешĕ чăматанĕпе хупланать.)* Пулчĕ! Чăматансăр каятăп... *(Хăвăрт пуçтарăнать.)* Тăмсай! Аялти кĕпе вĕççĕн каятăп...

Вадим *(диван çине тăрса ларать)*. Кайса кăна пăх! *(Куçне хаяррăн чалăртса.)* Вĕлеретĕп, çĕçĕпе пусатăп, çакса суллатăп!

Виолетта. Кĕвĕç упăшка! Тискер этем! Тăхтаман! *(Лăпланса.)* Вадик, итле-ха, тăванăм, сана Тăхтаман ролĕ пĕртте килĕшмест...

Вадим. Килĕшет, килĕшет. *(Хаярăн.)* Килĕше-е-ет... Астуха, Тăхтаман ăна, лешне, туйчченех вăрмана урăххипе тарса каякана, мĕнпе кастарать: са-ла-матпа... Нухайккăпа... *(Çухăрать.)* Астумасан, астутарăп! *(Диван çинчен сиксе тăрать.)*

Виолетта *(ахăлтатса кулать, юрлать)*. Турăçăм! Кама тухнă эп качча! Пурăнмаллаччĕ пĕччен, ыр курса. И-и, ăçта каяс килнĕ — унта кай, хуть кунталла, хуть унталла, хуть пасара... Хуть...

Вадим. Хуть ясара...

Виолетта. Хуть ташша.

Вадим. Хуть командировкăна...

Виолетта. Мĕн тума мана çакăн пек арман чуль, мĕн тума? Вăн Тряпкина Верук уйрăлчĕ те халь хăйне хăй хуçа. Ăçта каяс килнĕ каять...

Вадим. Кампа выртас килнĕ — выртать...

Виолетта. Нимле чару çук. Кунта вара — упăшка! Йĕркеллĕ ĕçлесе илейин тата хăй — çĕр тенкĕ, уйăхне, арçын! Арçын пулатăн-и эсĕ, приказсем парса выртать-ха, апăрша! *(Урине тăрс! тапать.)* Чăматана халех панă пултăр, ахалĕн Георгий Иванович патне шăнкăравлап, вăл сана часах тăна кӳртĕ... *(Телефон шăнкăртатать.)* Çавах пуль-ха ку...

Телефон патне чĕрне вĕççĕн пырать.

Да! *(Япшаррăн.)* Пуçтарăнатăп, Георгий Иванович. Хатĕрпе пĕрех, Георгий Иванович. Мĕн? Манман, Георгий Иванович. Да, да. Пурте эсир каланă пекех. Кăнтăрти районсен ушкăнĕнчен?.. Иртнĕ эрнерех... Пурĕ иккĕ... Юлашки-тĕлешкине капла та, куçпа пăхса та, чухлама пулать... Ну, мĕн эсир, Георгий Иванович. *(Ихĕлтетет.)* А мĕн ман пăлханмалли? *(Аллипе трубкăна хупласа, Вадима.)* Ну, калас-и ăна эс мĕн хăтланнине?

Вадим *(куçне-пуçне чалăртса, хăй мĕн-мĕн хăтланни пирки начальника калама кирлĕ марри çинчен паллăсем парать)*. Ух-х!.. Ма мана ытлашши хуйхă?

Виолетта. Кая юлмастăп, Георгий Иванович. *(Йăпăлтатса.)* Тĕл пуличчен... *(Трубкине хурать.)* Ак ĕçĕ те пĕтрĕ. Çитет ухмаха персе! *(Чăматанне илет те васкасах çула кайма хатĕрлене пуçлать.)* Сумлă çын вĕт вăл, мĕн пысăккăш учреждени пуçлăхĕ, пилĕк ача ашшĕ, эсĕ пур... Вăл, сăмах май каласан, иртнĕ эрнере санăн рационализацийӳ пирки ăшшăн калаçрĕ. Пӳрт-çурта хутас батарейăсем пирки... тем япала унта... Вăл каларĕ: тĕлĕнмелле идея, терĕ. Çавăн пекех каларĕ: тĕлĕнмелле идея! *(Чăматана хăвăрттăн-хăвăрттăн тумсем чикет.)* Тăванран та тăван арăмна вара хальччен те пĕлтерместĕн: мĕнле идея вăл çав чаплă идея! Сан çинченех вăл çапла та каларĕ: мĕн тери ăслă пуç! терĕ.

Вадим. Çаплах каларĕ-и?

Виолетта. Çаплах каларĕ!

Вадим *(кăшт мухтанса)*. Тупсăмĕ çиелтех пулнă... Георгий Иванович кабинетĕнчи батарейăсем пачах ăшăтмастчĕç. Слесарь-сантехниксене, тасатман тесе, вăрçатчĕç; котельнăйне — начар хутаççĕ тесе. Тупсăмĕ, каларăм ĕнтĕ, çиелтех пулнă. Эпĕ сивĕннĕ шыва юхтарса кăларма батарея çумне пĕчĕк крансем лартрăм, батарея патрубкисем хушшинчи çур метрлă стояк татăкне кăларса петĕм. Ак, пăхсам кунталла. *(Хут татăкĕ илет, çыркалать.)* Генилле пĕтĕм идея ансат, азбука е хисеп шучĕ пек (чертежне кăтартать). Ак, пăхса ил. Малтан ак çапла пулнă: кран çук, циркуляци çук, çапла вара ăшши те çук...

Виолетта *(япалисене чăматана хăвăрт чиксе)*. Çапла, çапла, вăл çаплах каларĕ: ăслă идея, чаплă пуç!

Вадим. Мĕнле?!

Виолетта. Урăхла каласан: чаплă идея, ăслă пуç...

Вадим. Тӳррен илес-тĕк, пĕтĕмпех ансат: ак, пăхсам, халь, патрубкăсем хушшинчи стояк татăкне касса пăрахнă хыççăн,

шыв ăçта кайса кĕтĕр. Апла-и, капла-и, вăл ирĕксĕрех батарейăналла вирхĕнет. Çак пулать те ĕнтĕ циркуляци тата ăшă... *(Калаçма чарăнать.)*

Виолетта. А вăл тата каларĕ: сирĕн мăшăрăр пулас...

Вадим. Пуçана-и? Савни упăшки! Чăнах-и? Ăçта чикен эс кусене? Кăна? Ак кăна? *(Чăматанри япаласене туртатурта кăларса урай тăрăх сапалать.)* Сана мĕн тума кирлĕ унта акăлчан кĕпи «мадам «Д»? Мĕн тума каçхине банкетра тăхăнмалли французла «макси»? Мĕн тума ГДРăн витĕр курăнакан сорочки? Мĕн тума? Эс мĕн, командировкăна каятăн-и е чиркĕве венчете тăма?

Виолетта сывлăшра вĕçекен тĕрлĕ тĕслĕ кĕпесене яра-яра тытса каллех чăматана чикет, Вадим вĕсене татах кăлара-кăлара ывăтать.

Виолетта *(ывăнса йывăррăн ларать, пĕтĕм вăйран кăшкăрать)*. Мана ку йăлăхтарса çитерчĕ! Халех милицие шăнкăравлатăп та, сана вунпилĕк талăка хулиганла ĕç тунăшăн тытса каяççĕ. Е, тен, ухмахсен çуртне шăнкăравлас? Çапла та çапла тес, упăшка урса кайрĕ, çăварĕнчен кăпăк кăларать, хваттер тăрăх чăматан йăтса чупать, çыртать, чĕпĕтет. *(Тăрать те çирĕппĕн телефон патнелле утать.)*

Анчах та сасартăках алăк шăнкăравĕ янраса каять. Алăкра Тряпкина Верук курăнать, вăл кăвак пальтопа, шурă шлепкепе, хĕрлĕ кăшман тĕслĕ хĕмсемлĕ атăпа. Тăсарах калаçать, хăйне танлăн тыткалать, тӳлек те пылак пăхкалать.

Верук *(урайĕнче сапаланса выртакан тум-юм çине пăхса)*. Мĕн пулса иртет кунта?

Виолетта. Унран ыйт. *(Чĕрнисене хăйрать.)*

Верук *(çухăрса калать)*. Вадим!

Вадим. Унран ыйт! *(Виолетта енне.)*

Верук *(ăнланса йăл кулать)*. Куратăп, куратăп, командировкăна кайма пуçтарăнасси хĕрсе пырать. *(Савăнса.)* Фермопилы! Çĕрпӳ пасарĕ! Çапла шутларăм та эпĕ... *(Савăнма чарăнаймасăр.)* Вадим, мĕнле хăятăн эсĕ? Ку йĕкĕтле мар, джентельмен кун пек хăтланмасть... Арăму умĕнче каçару ыйт та çак пур ăпăр-тапăра халех пуçтар...

Вадим. А эсĕ кам тата? Мана вĕрентме килтĕн-и? *(Виртлешсе.)* Фермопилы! Çĕрпӳ пасарĕ! Йăт кочĕ мар-и!

Верук. Эпĕ, сăмах май каласан, местком членĕ... Эсĕ ман çине ан кăшкăр!

Вадим. Пешка эс, тупăннă местком членĕ.

Верук. Ку вара мана тӳрременех кӳрентерни пулать! Местком ларăвĕнче пăхса тухма тӳр килет сана...

Вадим. Ах, ах, сехрем хăпрĕ! Халь мĕн тумалла ĕнтĕ манăн, мĕскĕнĕн, мĕнле хăтăлмалла? Чĕççе туса хурап эп сирĕн местком ларăвĕ çине! Çил ăçталла вĕрет, çавăнталла эсир те çаврăнатăр...

Верук. Ах, апла эппин!

Вадим. Ну, çитет! Тен, эсĕ местком ларăвĕ ирттерме килнĕ? Каçар, вăхăтлах мар. Тен, тепĕр вăхăта куçаран?

Верук *(ахăлтатать)*. Çук, куçармастăп! *(Кĕпесене пуçтарать.)* Эс, Виолетта, манăн секретарь пулан, эпĕ — председатель вырăнне. Кала, Тăхтаман гражданин, Вадим Михедерович, мĕнле тĕлĕнмелле саккунпа эс арăмун кĕпи-йĕмне пĕтĕм урай тăрăх сапаласа тухрăн тата мана кӳрентерсе пĕтертĕн? Ну! *(Виолетта енне çаврăнса.)* Ак ку кĕпине хăçан туянтăн?

Виолетта. А-а... Вунвиççĕмĕш ĕç уйăпе.

Вадим *(Верук çеммипех)*. Эп, хаклă председатель, Тряпкина Верук, ку кĕпесене çав манерпе урай тăрăх сапаласа тухрăм: ма тесен ман арăм, сан тусу, операпа балет примадонни мар, ахаль хĕрарăм çеç, çавăнпа та командировка тăрăх çакăн чул кĕпе сĕтĕрсе çӳреме нечăвă.

Верук *(Виолеттăна)*. Самолет миçере? *(Вадима.)* Çапла варварла хăтланса эс мĕн кăтартса парасшăн пултăн-çке?

Виолетта. Çирĕм те хĕрĕхре.

Вадим. Арлă арăм йĕвенсĕр кĕсре марне.

Верук. Аха, арăм тесе ăна çăварлăхласа çӳремелле сан шутупа?

Вадим. Йĕвенлесен те çитет.

Верук *(Виолеттăна)*. Кая юлмастăн-и? *(Вадима.)* Кĕвĕç туйăмĕ, Тăхтаман гражданин, авалтан юлнă путсĕр йăла.

Вадим. Пуласлăхăн та...

Виолетта *(япалисене чăматана чиксе)*. Çур сехет, çук, çирĕм минут... Эй, унта... Мĕнле атă тĕслине илес кофтине?

Верук. Сана, Тăхтаман гражданин, общество интересĕ хаклăрах-и е хăвăн-и?

Вадим. Маншăн общество интересĕ питĕ хаклă, хамăн интерессем те хаклă питĕ.

Верук *(Виолеттăна)*. Мĕнле атă тĕслине тетне? Ак çак атă тĕслине. Гэдээр кофтисем шăп та лăп çакăн тĕслисем пур.

(Вадима). Санăн, Тăхтаман юлташ, ăшу-чикку́ чисти харпăрлăх мăкĕпе витĕннĕ.

Вадим. Арăма куçакан-утакан япала тесе шутласан, çапла: ман харпăрлăх вăл. Уйрăмах арăм тени командировкăналла шунă чухне, уйрăмах никампа та мар, хăйĕн сопчăннăй начальникĕпе шунă чух. Вывод: е командировка, е çемье. Урăхла çул çук!

Виолетта. Хĕрĕх улттăмĕш размер-и?

Верук. Хĕрĕх саккăрмĕш те юрать: эп çав тери туллиленсе пыратăп... *(Вадима.)* Е çемье, е командировка — е апла, е капла? Пулас е пулас мар? Район шайĕнчи Гамлет эс, Тăхтаман гражданин. Юрать-и вара ыйтăва çапла çивĕччĕн лартма? Енчен те командировка путлансан, пĕтĕм коллектив шар курать, путланмасан — пĕр эсĕ çеç шар куратăн. Пĕччен...

Вадим *(пу́лĕм тăрăх кускалать)*. А мĕншĕн эпĕ? Мĕншĕн пуриншĕн те эпĕ тӳсмелле? Пĕччен. Пуриншĕн! Кхм! Эп, мĕн, сирĕншĕн Джордано Бруно-и? Иисус Христос-и?

Верук *(ахăлтатса кулать, Виолеттăна çӳçне турама пулăшать)*. Эсĕ — Прометей! Пилĕк-улт кун арăмсăр пурăнса пăх, пурнаймасан, эсĕ — эгоист. Калас пулать, нихçан сĕврĕлми...

Виолетта *(куçхаршисене татнă май)*. Ăна текех тӳрлетме çук ĕнтĕ... Питĕ шел, сана мар, мана юратса пăрахрĕ вăл...

Верук *(курнăçланса)*. Чăнах та, питĕ шел. Эпĕ командировкăсем тăрăх çӳреместĕп. Службăра-хĕсметре çӳлелле ӳсейместĕп. Ăна, паллах, манпа меллĕрех пулатчĕ. Телевизорпа кăтартрĕç-ха, куртăр та пулĕ, арăмĕ килте патша чух упăшки е ухмаха ерсе каять, е хăйне хăй кăх! тăвать. Пĕр сăмахпа каласан, çемье арканать...

Виолетта *(тутине, куç хăрпăкĕсене сăрласа)*. Епле шел!

Верук. А мĕн шеллемелли! Çемье — вилсе пыракан институт.

Вадим *(çывхарса)*. Мĕне шеллетĕн эс, мĕне? Ак мĕншĕн сăрланатăн эс? Мĕншĕн эс штукатурка тăватăн питне? Мĕншĕн? Ну, кала? Килте арăш-пирĕш тирпейсĕр çӳрет, вĕреннĕ çынсем каларăшле — неглиже, хăш чухне питне те çумасть — пăхма йĕрĕнмелле... Ăçта та пулин алăк урати урлă каçмалли пулсанах — куçкĕски умĕнче апла та, капла та *(туса кăтартать)* çаврăнкалать, упăте темерĕн. Кунтан хĕретет, лерен хуратать, куçхаршисене веç татса пĕтерет. А мĕн тума? Мĕншĕн? Тен, упăшкине килĕшерех парас тесе? Çапла пулмасăр, асту!

Килте вăл ярханах та йӳле пилĕк çӳрет, общи вакунти пек. Упăшки ун çине пăхать — вăл лӳ те тумасть. Мĕн ăна упăшка? Вăт, кам та пулин урăххи пулсан... Кунта вăл тӳрех писев те темтепĕр помада-кремсем ярса тытать... *(Хаярланса.)* Ух! Кашни кун сăнатăп вăл куçкĕски умĕнче ĕçе кайма епле хатĕрленнине — чĕремçĕм юнпа пĕвенет. Мĕн чул сăрă пĕтерет, эсрел. Ак халь тата — командировка...

Верук. Ах, епле йăлăхтармăш этем эсĕ, Вадим! Эс ман упăшка пулма пултарнине астусан — çӳç-пуç вирелле тăрать, шухăшлама хăрушă... Юрать-ха, эпĕ вăхăтра тавçăрса илтĕм...

Вадим *(сиксе тăрать, арăмĕ çине кăтартса)*. Апла-тăк, кам валли туса ирттереççĕ çак маляр ĕçĕсене?

Виолеттăпа Верук *(ташла-ташла юрлаççĕ)*:

Пите писев сĕрмĕттĕм,
Питĕм улма пек пулсан;
Çын çинчен шутламăттăм,
Хамăн арçын çын пулсан.
Эх, эх!
Хамăн арçын çын пулсан...

Виолетта. Ай, вăхăт, вăхăт!.. Эп сирĕнпе саççимах суйланса кайрăм!.. *(Чăматанне шалт! та пат! хупса питĕрет.)*

Верук. Вуланă-и хаçатра, нумай палкакан çемьере часах уйрăлса каяççĕ? Ăсчахсем каланă тăрăх, телейлĕ мăшăрсем кунне вăтамран 27 минут çеç пĕр-пĕринпе пĕрле пулаççĕ. Уйрăлма патне çитнисем — 117 минут. Эсир паян пĕр-пĕринпе пĕрле мĕн чухлĕ пулнă?

Вадим *(Виолеттăна)*. Эп ирĕк памасан та, çавах каятăн иккен?

Виолетта. Каятăп.

Вадим. Асту, эп хама хам тĕп тăватăп.

Виолетта. Ан хăрат, тархасшăн!

Вадим. Нивушлĕ эп сана ним чухлĕ те хаклă мар?

Виолетта. Коллектива сăтăр тăвас мар тетĕп эпĕ, ăнлан эс, эп хам тивĕçе пурнăçламалла... пурнăçлăп та... Эпĕ кайма тивĕçлĕ... *(Алăк патнелле утать.)*

Вадим. Çу-ук... *(Чăматанран çатăрласа тытать.)*

Верук *(Виолеттăна пулăшма васкать)*. Кайтăрах вăл, Вадим... Курмастăн-им, вăл пачах чун-чĕресĕр хĕрарăм!.. *(Хĕрарăмсем, пӳлĕм тăрăх тĕпĕртетсе, Вадимран чăматана туртса илме тапаçланаççĕ.)* Кайтăр вăл, кайтăр! *(Çухăрса.)* Нивушлĕ

санăн, Вадим, кăшт та пулин мăнкăмăллăх çук, эсĕ тивĕçлĕхне пачах çухатрăн-им вара, çав таранчченех пĕтсе лартăн-и? Кайтăр вăл, курмастăн-им, вăл пач чун-чĕресĕр хĕрарăм...

Виолетта. Çитет! Георгий Ивановича шăнкăравламах тӳр килет. *(Телефон патнелле утать.)* Çитет камит кăтартса! Тăрантăм!

Вадим *(маларах ĕлкĕрет)*. Ан хăйнă пул ман карьерăна пĕтерме, çула хуплама! Ай... *(Питне пĕркелентерсе чĕрине ярса тытать.)* Мĕн тăватăн эс мана? Ма асаплантаратăн? Вĕлеретĕн вĕт капла, вĕлеретĕн... *(Хутланса кĕрсе, диван патнелле пырать, выртать.)*

Виолетта *(хăраса)*. Вадик, тăванăм, мĕн пулчĕ сана? *(Стаканпа шыв илсе килет, пуçĕнчен тытса тăрса шыв ĕçтерет. Лешĕ йăвашăн пуринпе те килĕшет. Унтан Виолетта кухньăна чупать, питшăлли йĕпетсе ăна упăшки пуçĕ тавра явалать, чĕри тĕлне массаж тăвать. Вадим телейлĕн йăл кулса выртать.)* Ну мĕн эс çав териех кулянан, Вадик? Сăлтавĕ пулсан хуть! Ну — командировка, ну — пĕр эрнене, чипчиперех таврăнап, никам та мана çисе ямасть... Çав хушăра тĕнче те ишĕлсе анмасть.

Вадим *(пуçĕнчи питшăллине сирсе пăрахма хăтланса)*. Ишĕлсе анать! Ишĕлсе анчĕ ĕнтĕ! Курса савăнăр-ха, ырă çынсем, арçын выртать! *(Пĕтĕм вăйĕпе хăйне кăкăрĕнчен шаккать, йĕрсе ярас пек.)* Арçын! Тăнсăр выртать, хĕрарăмшĕн пулсан çакă ним те мар иккен! Вăл ăна çак чи йывăр вăхăтра та пăрахса хăварать. Тен, яланлăхах, ĕмĕрлĕхе...

Виолетта. Чим, мĕн калаçатăн эс çак, Вадим? Тьху, тьху, тьху! Ну лăплан, лăплан... Ахалĕн чĕри каллех апап пулать... Куççулисене те шăл-ха эппин... Ак çапла... вăт маттур, маттур. Ах, мăнтарăн ачи... *(Вадимăн сайра çӳçне арпаштарать, çав вăхăтрах сехет çине пăхса илме те манмасть.)* Ай, кая юлатăп вĕт! Ну, уйрăлнă чух чуптусам эппин мана, пуçна ан пăр, кирлĕ мар, ан имен... Ан пер кутăна, тархасшăн... Ан пер...

Верук *(шăппăн)*. Турăçăм! Мĕн патне илсе çитернĕ упăшкине...

Вадим *(çĕкленет)*. Пĕр-пĕр çамрăк йăр-япăшпа эпĕ командировкăна тухса кайнă пулсан, эсĕ мĕнле юрласа янă пулăттăн-ши? Мĕнле уласа янă пулăттăн? Мĕн каласа ăсатнă пулăттăн мана?

Виолетта *(ура çине тăрса, сиввĕн)*. Эпĕ каланă пулăттăм: «Вадик, тăванăм, каях... çулу такăр пултăр... анчах та унта ĕçне тума тăрăш!»

Вадим. Çапла çеç-и?

Виолетта. Ĕç тумасăр тата мĕн тăвасшăн эсĕ? Ой, вăхăт, вăхăт! Мĕнле-ха эп капла? *(Япалисене хăвăрттăн чăматана пĕтĕркелесе чикет. Вĕлт çеç куçкĕскинчен пăхса илет те, хулпуççи урлă сумккине çакать, чăматанне çĕклет, алăк патнелле таплаттарать.)* Вадик, ырă тусăм, адью! Сивĕтекен шкапра — икĕ банка хăйма. Какай илес терĕм те — черет çитмерĕ... Морозильник текеннинче — хуран кукли, чĕрĕллех шăнтнă хек... Хек! Ăнлантăн-и?

Вадим *(диван çинчен ялт çеç сиксе тăрать)*. Виолетта! Асту эс унта!

Виолетта *(алăкра)*. Мĕн — асту?

Вадим. Ну, леш, хайхи...

Виолетта. А-а? Пурте йĕркеллех пулать, Вадик... Ыталап, ылтăнăм!

Вадим *(чунран тарăхса)*. Çакна чăтса ирттерме пултарайместăп эпĕ! Эпĕ вилетĕп, илтетĕн-и? *(Чĕрине ярса тытать.)*

Виолетта. Илтетĕп, илтетĕп, хаклă симулянт. Ăсатса яратăн-и эс мана, Верук?

Верук. Кайрăмăр, кайрăмăр кунтан хăвăртрах... Мĕн патне илсе çитернĕ упăшкине, турăçăм! Ан вил, тархасшăн, Вадим! Эс вилсен, эп те тупăка санпа пĕрле выртатăп...

Вадим *(кăмăлсăррăн)*. Апла пулсан, питех васкамăп... *(Диван çине выртать.)*

Верук. Тăм чĕлхе!

Хĕрарăмсем каяççĕ.
Çутă сӳнет.

Иккĕмĕш картина

Вадим пижамăпа, пуçĕ тавра питшăлли явланă, пӳлĕм тăрăх ĕрĕхсе çӳрет. Хăвăртран хăвăрт утать. Сасартăк сĕтел хушшине ларать те, аллипе янахне тĕрелесе, тарăннăн шухăша каять. Унтан сиксе тăрать, ахлатса питшăллине сĕвсе илет те аякри кĕтеселле перет. Каллех ларать.

Вадим *(будильника циферблачĕпе хăй еннелле туса)*. Чарса та чарăнмерĕ, кайрĕ. Вĕçсе кайрĕ! Вăхăт тени укçа-мĕн... *(Виртлешсе.)* Вăхăт — укçа... Хваттер те вăлах... Çапла, çапла, çапла,

хваттер те... Ух, прагматистка! Пăх-ха, епле юрласа ячĕ... Вăхăта мĕнле мăшкăллать?.. Çапла, çапла, вăхăта мăшкăллать! Акă вăл — эмансипаци! Пурте кутăн-пуçăн çаврăнса кайрĕ... Пурте ӳпленчĕ, хăяккăн пырать... Хĕрарăм пуçлăх пулма тапаçланать, влаçа ярса илет те хĕрарăм пулма та пăрахать. Эпир вара... *(Такам йĕппе тирнĕн сиксе тăрать.)* Эпĕ пĕртанлăх ыйтатăп! Эпĕ арçынсене ирĕке кăларма ыйтатăп! *(Кăкăрне çапать.)* Эмансипаци! Мĕн-и, çĕнĕрен патриархат туса хуччăр кăна *(куçхаршийĕсене хаяррăн пĕрсе чышкисене чăмăртать)*, вăт ун чух кăтартăпăр... Вăт ун чух вара эпир... Анчах... хăçан пулать-ха ку? Ах, инçе... Ах, епле инçе! Пурăнса çитейместĕп вĕт... *(Кулянса.)* Çитейме-естĕп... *(Ывăннăн, пукан çине лаштах ларать. Каллех будильника ярса тытать.)* Халь ĕнтĕ вĕсем вырăна çитнĕ... Ресторанта апатланчĕç пуль. Пĕрер черкке çавăрса та хучĕç пуль. Тен, халĕ номере те хăпарнă, унта лараççĕ. Йĕри-тавра куçкĕскисем, кавирсем, вĕл-вĕл вĕçекен чӳрече каррисем, хăпарту пек хăпартланса тăракан минтерсем... Пӳлĕмĕ хаклăскер — люкс! Тен, хăйсемпе пĕрле хаклă йышши эрех те илсе хăпарнă... Лараççĕ. Ак çапла, ак, пĕрне хирĕç тепри... *(Туса кăтартать.)* Ура явса. Пĕр пĕççине теприн çине куçарса хунă хушăра арăмăн йĕм тĕпĕ курăна-курăна каять. ГДРта туса кăларнă витĕр курăнакан йĕмĕн тĕпĕ... Тьфу! Черккине те вĕçкĕнле... ясарла... кача пӳрнине айккинелле пăрса тытнă: «Сирĕн сывлăхăршăн, Георгий Иванович!» А лешĕ ăна хирĕç: «Сывлăхăм чиперех-ха, ӳпкелешместĕп». Арăм: «Çапла, эсир, самай çуллă пулин те, çирĕп, вăйпитти арçын-ха». Вăл: «Чăн та, эпĕ çирĕп, вăйпитти». Черккисене ĕçеççĕ, апат çыртаççĕ. Халь ĕнтĕ арăм тӳррĕнех, ним пытармасăрах: «Ывăнса çитрĕм эп унпа, йывăр кăмăллă çын вăл... Çăмăлттай. Кам та пулин урăххи пулсанччĕ мана, йĕркеллĕреххи, çулланнăраххи». Лешĕ: «Çапла, çапла», — тет, эрехне тутанса пăхса, малалла мĕн пуласса кĕтет. Арăм хăйĕннех юрлать: «Юратмасть вăл мана... чун тухать унпа манăн... Пĕлетĕр-и, хал пĕтсе çитрĕ йăлтах!» — тесе сăмсине нăшăк! туртать. Лешĕ ăна: «Çапла, çапла, рационализатор пулин те, шанчăксăр çын». Арăм малалла йăнкăртатать: «А эп мĕнрен япăх? Мĕншĕн ман унпа тертленсе пурăнмалла?..» Лешĕ: «Чăн та çапла!» Арăм каллех: «Нивушлĕ эп çав таранччен нĕрсĕр?» Куçкĕски патнелле кутне пăркаласа утса каять. *(Мĕнле утнине кăтартать.)* «Нивушлĕ мана никам та юратса пăрахаймĕ ĕнтĕ? Нивушлĕ

манра кĕрнеклĕ те çулланнăрах арçынсене килĕшмелли нимĕн те тăрса юлман?» Лешĕ ăна: «Ну мĕн эсир, мĕн эсир, Виолетта Петровна. Эсир çап-çамрăк-ха, персик пек илĕртӳллĕ, утма та епле ярăнса утатăр... тата ытти те...» Арăм, пуçне каçăртса пăрахса, куçĕсене хупса, лешĕ пырса чуптăвасса кĕтет. Лешĕ хăвăрттăн пырать, ыталать те... О-о-о!.. вара... *(Вадим пӳлĕм тăрăх кускалать.)* О-о-о-ох-хо-хо! Ах! Урăх тек чăтаймастăп ку асапа! Вăхăт, ĕçре ӳсӳ, командировка, хваттер; вăхăт вăл укçа, командировка — ĕçре ӳсӳ... Вăхăт — хваттер, ĕçре ӳсни — укçа... А арăм вара?! Чим-ха, мĕскер эп ку? Е антраса кайрăм-и? Пуç çаврăнса кайрĕ-и? Шухăш, çыхса янăн, пуç тавра чупать... Тăхта! Эп майĕпен лăпланатăп... Эп лăплантăм... Эпĕ, ак, лăпкă... *(Куçкĕски патне пырать. Хăй сăнĕ çине тĕсесе пăхать.)* Пĕлетĕн-и, Вадик, эс самай йĕркеллĕ арçынах-ха... Пăхма çирĕппĕн те пăхăнтаруллăн пăхатăн, янах шăммисем тухса тăраççĕ — вăйлă тип; çамку çӳллĕ, сăмсу тӳрĕ — римски сăмса... Тĕлĕнмелле экземпляр! Çук, эс самай, самай сĕтеклĕ-ха. Сана хăлха таран юратса пăрахма пултараççĕ-ха... Эп, ак, сăмахран, пĕрре курсах юратса пăрахрăм. Эп юрататăп сире, Вадим Владимирович, çапла, çапла, эп юрататăп сана, мĕн куçусене мăч-мăч! тутаратăн? Элле ĕненместĕн-и?.. А-а, сана ĕçпе кăтартса пани кирлĕ? Тархасшăн! М-м-м-мм... *(Хăйĕн куçкĕскири мĕлкине чуптăвать.)* Ĕнентĕн-и ĕнтĕ? Эх, эс те çав! Ну, ху шухăшласа пăх: кама юратăп-ха тата сана юратмасăр?.. А-а, çапла çав, вăт. Тĕнчере кама пуринчен те лайăх пĕлетĕн эс? Хăвна. Кам сана пуринчен те хаклăрах? Эсĕ ху. Йывăр самантра кам тăрăшĕ саншăн, кам сана шеллĕ? Эсĕ ху! Кама эс яланах курма хатĕр? Хăвна! Кампа сана тĕл пулма пуринчен те ырă? Хăвăнпа! Кам сана хирĕç пымасть, чунна тарăхтармасть, юнна пăсмасть? Эсĕ ху. Кам сан çине нихçан та сăмса каçăртса пăхмасть? Эсĕ ху! Кам нихçан та, нимле лару-тăрура та сана сутмасть? Эсĕ ху!.. Апла-тăк çак тĕнчере, сана мар-тăк, кама юратмалла-ха?.. *(Куçкĕскири мĕлки çине татах та тĕсесе пăхать.)* Эх, эсĕ, выльăх!.. Кӳпчемес... Питӳ хура, сăнсăр... Ӳтӳ-тирӳ сӳсленчĕк... Куç айĕсем кăнкăвак!.. Пĕркеленчĕк... Тьфу! Анчах та чим, чи-им, тăхта! Эпир халех... *(«Тăхта, эпир халех», — тее-тее, Вадим хăвăрттăн тум улăштарса тăхăнма пуçлать, куç умĕнчех йăлттам та ĕлккен арçын пулса тăрать. Холодильникран эрех кĕленчи кăларса сĕтел çине лартать, икĕ черкке тухса лараççĕ.)* Вăт çапла вăт!..

(Халь вăл пӳлĕм тăрăх çамрăк тигран çирĕп уттипе утса çӳрет, ташлать те юрлать.)

Любовь нечаянно нагрянет,
Когда ее совсем не ждешь...

Алăка шаккани илтĕнет. Алăкра шур шлепкеллĕ, сенкер пальтоллă, хăмăр кăвак шăк-шак кĕлеллĕ атă тăхăннă мăнтăркка сар хĕрарăм курăнса каять. Ку Тряпкина Верук.

Вадим *(хывăнма пулăшса)*. Верук, эс — матуркка... Эс — вилĕмрен çăлакан, ыр кăмăллă пирĕшти... Кăна эпĕ хам виличчен те манмăп...

Верук *(çухăрса)*. Вадим! Мĕн пулчĕ? Хăвна мĕнле туятăн эсĕ?

Вадим *(кăтартать)*. Чĕрепе аптратăп... Кам ячĕ сана? Виолетта?

Верук. Васкавлă пулăшу чĕнмелле мар-и?.. Çавă, Виолетта... *(Вадима сăнаса пăхать.)* Анчах та эсĕ...

Вадим. Анчах та эпĕ... Эсĕ килтĕн ĕнтĕ, эпĕ психолог...

Верук *(шлепкине хывса силлет)*. Урамра — çумăр...

Вадим. Мĕн тăвăн — кĕркунне...

Вĕсем сĕтел хушшине лараççĕ, пĕр вăхăт ним те чĕнмеççĕ.

Верук *(курнăçланса)*. Пĕлетĕн-и, çыраççĕ: каллех çав виçкĕтеслĕх... Бермуд виçкĕтеслĕхĕ... Хăрушла ку...

Вадим. Ним те пулмĕ...

Верук. Анчах та наука хальччен те кăтартса парайман вăйсем...

Вадим. Тĕшмĕш ку...

Чылайччен чĕнмеççĕ.

Верук. А Филиппинри медицина? Хилер тенине илтнĕ-и? Çавсем пĕр нимсĕр çара алăпа операци тăваççĕ... Çĕçĕсĕр пусаççĕ!

Вадим. Шăрлаттансем!

Каллех чылайччен чĕнмеççĕ.

Верук *(ним тума пĕлмесĕр)*. А çын пĕлмен вĕçекен объектсем? Официаллă йышăннă халь — пур вĕсем! «Труд» хаçатра, ав, тӳррĕнех çыраççĕ: турилккесем вĕçеççĕ, темле ăсхакăл пур, урăх планета чунĕсем... Пирĕн пек мар, тет, çавсем, темлерех симĕс те лапчăк тет-и?! Пирĕн планетăна тăтăшах сăнаççĕ, имĕш. Тен, мĕнле те пулин пулăшасшăн пуль...

Вадим. Фантастика! Мĕн тума кирлĕ эпир вĕсене, ху шухăшла? Вĕсен, мĕн, хăйсен хуйхи-суйхи сахал-и? Проблема тени çук-и? Мĕн мурĕ туччăр вĕсем çак путсĕр çĕр çинче? Кунта кашни виççĕмĕш çын хырăмне тăрантараймасăр выçлăхпа касăхать. Тăрантса пĕтер-ха çакăн пышшĕ этем кĕтӳне! Охо-хо! Вĕсем, мĕн, ăсран тайăлнă-и элле?

Верук. Айта луччă ĕçер-ха пĕрре...

Вадим. Эппин ĕçер...

Ĕçеççĕ. Чĕнмеççĕ.

Верук. Кайрĕ апла?

Вадим *(сиксе тăрать)*. Вĕçсе кайрĕ. Ал-лĕ турĕ! Итлес темерĕ... Эпĕ вара чут вилеттĕм — чĕре хĕссе лартрĕ.

Верук. Вăл яланах пĕр хăйне çеç юратнă! Эгоистка! Асту-ха, малти парта çинче ларатчĕ, туска кутĕнчех... Шутлать задачине, çырса илме тесе ыйтан — памасть. Çурăлса каять, анчах памасть.

Вадим. Памин! Эпĕ те ăна юратмастăп вĕт... Курассăм килмест! Вĕçкĕн!

Верук. Вăл сана нихăçан та хакламан, Вадим. Нихăçан та! Эс авланас умĕн ыйтрăм эп унран: «Вадима юрататни эс?» — терĕм. Пĕлетĕн-и, мĕнле тавăрса хучĕ вăл?

Вадим. Апла çемье уншăн ним те мар, çапла-и? Питĕ аван! Эпир ăна тавăратпăр... Хаяррăн тавăратпăр!

Верук *(хавхаланса)*. Тавăратпăр!

Вадим. Атту пăх-ха эс, влаçа тытса илнĕ! Кăтартăп эп сана власть!

Верук *(ача пек савăнса)*. Эпир сана кăтартăпăр!

Вадим. Учет секторне пуçлăха шăвăнса кĕнĕ... Карьеристка!

Верук. Авантюристка!

Вадим. Начальниксен тавра хĕвĕшетĕн апла, çапла-и? Йăпăлтататăн, юрама тăрăшатăн? Явкаланчăк!

Верук. Мĕнлерех явкаланать-ха тата! Иртнĕ эрнере юнкун никам чĕнмесĕрех Георгий Иванович патне кабинета кĕрсе кайрĕ. Кам чĕннĕ ăна? Çакна пурте пĕлеççĕ. Тахçанч-чен кĕтрĕç тухасса... *(Хуçкаланса.)* Ак тухрĕ, хĕрелсе кайнă хăй, савăнăçлă, куçĕсем йăл-ял! çунаççĕ... Хĕвел пек çиçсе тăрать! Мĕн тунă унта вĕсем, мĕн калаçнă? Тĕрĕслес пулать çакна!

Вадим *(тăпах чарăнать)*. А эс мĕн пит кăтиклетме пуçларăн-ха?

Верук. Епле апла — кăтиклетме?

Вадим. Шутла-ха пуҫупа: мĕн суйланатăн эс?

Верук. Эп кăна мар, пурте суйланаҫҫĕ... Акă халь тата — командировка!..

Вадим *(юри хыттăн)*. Çăварна хуп!

Верук. Эс ман çине ан кăшкăр... Пăх-ха эс ăна... *(Кӳренчĕклĕн.)* Эп халлĕхе санăн арăму мар-ха, пускил кăна, кӳршĕ, ăнлантăн-и? Эп сан патна сĕкĕнмен. Эс ху: «Чĕре-е хĕссе лартрĕ, — тесе нăйкăшрăн, — чĕре-е! Матуркка, вилĕмрен çăлака-ан, ыр кăмăллă пирĕшти...» Йыт кочĕ мар-и! Пуçана эс — Георгий Иванович пуҫани!

Вадим. Пуҫана? Мĕнле пуҫана? *(Куҫне чалăртса.)* Ма — пуҫана?

Верук. Ма тет-ха... Эс, мĕн, тăмана-и? Арăму начальникĕпе пурăнать, иксĕре пĕр арăм... И-хи-хик! Кулса вилĕн... Пăру вĕт эс...

Вадим. Хуп çăварна! Тасал кунтан!

Верук. Тасалăп та... *(Тăрать, шлепкине тăхăнать.)* Çĕр варринче... Кăшкăрать-ха тата... Мĕн туллашатăн эсĕ? Эс, мĕн, çут тĕнчере те пĕрре кăна-и? Тупăннă чаплă çын!

Вадим *(Верук патнелле ыткăнса)*. Пăрахса ан хăвар мана, Верук! Эп çав тери тăлăх! Ан тив, эп начар, эп путсĕр, кирлех пулсан — йĕксĕк. Кăшкăрашрăм ав... Ну, хĕрӳлленерех кайрăм, кĕске турталлăрах пултăм, каçар. Тархаслатăп... Курсам акă: умна чĕркуçленсе ларатăп. Акă! Кур! *(Чĕркуçленет.)*

Верук *(тĕлĕнсе каять, йăл кулса)*. Ума чĕркуçленнĕ арçынна хам ĕмĕрте пĕрремĕш хут куратăп. Пĕлетĕн-и, кăмăллă эпĕ...

Вадим. Ну, вăт, вăт! *(Пĕççине ик аллипе шаплаттарса.)* Ан кай çеç. Шкулти туслăх ячĕпе, тĕнчери пĕтĕм сăваплăх ячĕпе — ан кай. Асту-ха, эпир хăçан-тăр санпа... Эс хирĕçлеместĕнччĕ... Тутунтанах...

Верук *(курнăçланса, çурăк саспа)*. Вадим! Епле эс намăссăр...

Вадим *(хăвăрт ура çине тăрса)*. Вăт ку йăлтах урăх каласçу! Пар кунта шлепкӳне... Ирт кунталла, лар, лар... *(Лартать.)* Халь эпир санпа тата тепрер черкке яратпăр та шкулти вăхăтсене аса илме пуçлатпăр...

Верук *(черкке тытса)*. Вадим, эс мана питĕ килĕшеттĕнччĕ ун чухне...

Вадим. Мĕншĕн: «Ун чухне», — тетĕн? Нивушлĕ халь пĕр хĕлхем те юлман сан чĕрӳнте?

Верук *(вăтаннă пек пулса)*. Аплах мар пуль, Вадим...

Вадим *(улшăнса кайса)*. Çаплах! Пуртех çухалман-ха пирĕн! Хĕлхемĕ пулсан, вучĕ хыпса илетех!

Верук *(именерех)*. Пĕр вăхăтра эп сана кавча та тухасшăнччĕ.

Вадим. Пурнăçра тем те пулма пултарать: ак халь каллех çавăн пек май сиксе тухрĕ! Çавăншăн ĕçер те...

Ĕçеççĕ.

Верук. Ай, эпĕ ӳсĕрĕлсех кайрăм!

Вадим. А ăçтарах халь сан çав юратнă упăшку?

Верук. Таçта Çурçĕре кайса çухалчĕç. Юлташĕ илĕртсе тĕплерĕ ăна: унта пĕр-ик çул ылтăн тăпри кăларкалăпăр та, терĕç, каялла хамăр «Жигулисем» çине ларса кĕрлеттерсе килĕпĕр... Эпĕ унпа уйрăлтăм. Тĕрĕсрех каласан, вăл — манпа. А мĕне пула тетĕн? Ниме тăман сăлтава пула! *(Ахăлтатать.)* Пĕрре çапла вăл киле хытах сыпса таврăнчĕ, газ плити çине эпĕ бигудисене хăварнă пулнă, мĕн тăвас тен: маннă та кайнă! Пĕлетĕн-çке эсĕ, эпĕ ачаран çапла манаканскер. Вăл, апат ăшăтап тесе, бигудисене пĕçернĕ, ирĕлтернĕ, темле ромштекс пекрех япала туса хунă. Кĕрен тĕслĕскер, пăхсан чĕлхӳне çăтса ярăн. Ну вăл сикнĕ те ӳкнĕ çĕçĕпе, вилкăпа — хăй валли çĕнĕ блюдо пĕçерсе хунă пуль тесе. Кăштран тытăнчĕ иклетме-е! Васкавлă пулăшу чĕнме тӳр килчĕ...

Ахăлтатса кулаççĕ.

Вадим *(кулма пăрахса)*. Çемье — хăрушă япала вăл. Уйрăмах арăмĕ... *(чармаканă пӳрнисене сывлăшра вылятать)* мĕнрех пулсан.

Верук. Çемье — анахронизм. Ман шутпа, ку общество институчĕ элле тахçанах кивелнĕ. Хамран илсе калатăп: пĕччен пурăнма лайăхрах!

Вадим *(салхулланса)*. Ман арăм та çаплах шутлать пуль...

Верук. Пурте çапла шутлаççĕ! Курнăçланаççĕ çеç: ах, çемье, ах, çемье, теççĕ. А мĕн çемье? Ак кала-ха ху: мĕн парать сана çав çемье тени?

Вадим *(сиксе тăрать, аллинчи черккипе пӳлĕм тăрăх çӳрет)*. Çапла, мĕн пытармалли, çемье çынна путарса тăрать. Унăн творчество импульсĕсене пĕтерсе хурать вăл. Паллă ĕнтĕ, ке-

нар патне канарейка, майра кайăкĕ, кĕртсе лартсан, лешĕ виçĕ хут сахалтарах юрлать. *(Шĕвĕр пӳрнипе маччаналла тĕллесе.)* Асăрха: виçĕ хут! Апла-тăк, эпĕ кăçал пĕрре мар, виçĕ рационализаторла сĕнӳ пама пултарнă. Виççĕ! Тăхтăр кăштах, ăсчахсем тата тепĕр закономерность, саккун йĕркки, уçаççĕ акă: авланнă çыннăн ĕç тухăçлăхĕ виçĕ хут пĕчĕкрех. Эп чунран ĕненетĕп çакна, чунран!

Верук. Тен, икĕ хут çеç?

Вадим. Çук, виç хут! Эп татсах калатăп.

Верук *(кӳренсе тутине тăсать)*. Пăх-ха эс ăна, епле кутăн çын...

Вадим *(юрлать)*. Халь эпĕ пурне те ăнлантăм... Куçсем уçалчĕç ман. Витĕр куратăп! Ак таврăнтăр-ха, эп ăна кăтартап чуччи-муччи... Çемье ирĕклĕ ыр çынна тĕп тăвать вăл. Çемье — обществăна аталанма чăрмантарса тăракан тутăхнă тормăз. Ку вăл — тимĕр тăлă, ку вăл — сăнчăр, ку вăл — чуралăх! Тĕп пултăр çемье! *(Лăпланарах.)* Малтанлăха райри пекех туятăн хăвна... унтан тӳрех тамăка çакланатăн: пĕтĕм шуйттанĕ вырăнĕнче — арăму... Чи малтанах — чап-чап! уйăхĕ, пыл пек тутлăскер, анчах та ку вăл — шуйттанла илĕртмĕш кăна, кăштран кушакпа шăшилле вылясси пуçланса каять, антагонизм, ирĕклĕ майпа кĕрешесси... Иккĕшĕнчен пĕри парăнма тивĕç: лăпланса, пушмак кĕли айне пулнăскер, мĕн виличченех шăп пулмалла!

Верук сĕтел хушшинчен шăппăн тухать те алăк патнелле каять, тумланать.

Вадим *(çакна асăрхамасăр)*. Е эсĕ тиран, е чура — урăхла пулма пултараймасть! Е тата кунсăр пуçне — чунсем пĕрпĕринпе ниепле те килĕшсе тăраймасан? Психологилле тивĕçменлĕх! Ку вара хăвна ху майĕпен вĕлернĕпе пĕрех! Вăт çавăн пекех тикĕт курăкĕпе кĕлчечек те юнашар пурăнма пултараймаççĕ. Чăтма пултараймаççĕ вĕсем пĕр-пĕрне. Шутлатăн, мĕн çитмест-ха ĕнтĕ вĕсене? Ешерĕр ырлăха та сывлăха, савăнăр пĕр-пĕрин çине пăхса. Çук вĕт! Пĕр чечекĕ хăрса ларатех. Саккун! Пурăнма памаççĕ вĕсем пĕрне-пĕри, тĕп тăваççĕ, а мĕншĕн? Мĕншĕн? Вăт çемье пурнăçĕнче те çавăн пекех... Эс ăçта кайма пуçтарăннă, Верук?

Верук (*кӳренсе)*. Эй санпа! Вĕлерес патнех çитертĕн юррупа-халлапупа... Эп сана мĕн — асаннӳ-и?

Вадим. Верук, каçар, ну, каçар, Верук...

Верук. Каçар теме çеç пĕлен çав. Каларăмăр: çемье тĕп пултăр! Çитет. А эсĕ суйланса кайрăн, хăлаçланса пĕтрĕн... Мĕн хăвна ху çиетĕн ниме тăман япалашăн? Хĕрарăмсемсĕр пурăнас пекех хăтланатăн. *(Шлепкине тăхăнать.)*

Вадим *(выляса)*. Епле кун пек юратăр?.. *(Шлепкине илет.)* Çут тĕнчере май çук хĕрарăмсемсĕр пурăнма — май çук, май çук, май çук...

Верук. Яр, ан тыт... *(Çемçен.)* Кирлĕ мар... *(Кайма чарăнать.)*

Вадим *(каллех хĕрсе каять)*. Мĕн тери çĕнĕлĕх уçăлса кайрĕ ман умра, мĕн тери открыти, Верук! Эйнштейн е Менделеев ĕçĕсенчен пĕрре те кая мар...

Верук. А унта ман мĕн ĕçĕм пур?

Вадим *(выляса)*. Верук! *(Сĕтел патнелле çавăтать.)* Эп сансăр-и? Ноль.

Верук. А санпа иксĕмĕр эпир — икĕ ноль...

Вадим. Ларсам, ларсам, ак эпир тата тепрер черкке çавăрса хурăпăр.

Верук *(тарăхса)*. Пуçларĕ ĕнтĕ: «çавăрса хурăпăр», «çавăрса хурăпăр»...

Вадим. Çул курки.

Верук. Ху ĕç! *(Çаврăнса ларать.)*

Вадим *(хăй валли эрех ярать)*. Ну эппин, ан ятла... *(Ĕçет.)*

Верук *(сассине улăштарса)*. Вадим! Нивушлĕ эпĕ çав тери нĕрсĕр вара? Е ĕнтĕ ытла та ватă курăнатăп-и?

Вадим *(ĕçнĕ хыççăн апат çыртса)*. Эй мĕн эсĕ, Верук! Пĕрремĕш сортпа каятăн-ха.

Верук. Чăнах-и? Чăн та çапла-и? *(Ташласа трельяж патне пырать.)*

Вадим. Мĕн шӳтлемелли... Пӳ, пӳ-си, тăлпу, хул-çурăм, кĕлетке, пропорцисем... А купарчу тата! Сан пур енчен те йĕркеллех!

Верук *(куçкĕски умĕнче капăрланса)*. Тĕрĕсех-и ку? Эп вĕт чăнах та — аптрамастăп... А мĕн, ак, тĕслĕхрен, санăн арăму? Умран пăхсан — хăма, хыçран пăхсан та — хăмах. Шăвăç!

Вадим *(ӳсĕрĕлсе каять)*. Верук, эсĕ унран пин хут, миллион хут лайăхрах!

Верук *(çухăрса)*. Вадим!

Вадим. Вадим çав... Ман чĕлхе яланах тĕрĕсне калать...

Верук. Чăнласах-и? Эпĕ ĕнтĕ никамах та килĕшместĕп пуль тенĕччĕ.

Вадим. Мĕн эс, Верук! Эсĕ — пике, сарпике, ясарпи! Эсĕ — çурхи чечек! Роза!

Верук *(курнăçланса)*. А эсĕ — шăпчăк-и?

Вадим. Çук. Эпĕ — кенар... Кенар... эпĕ!

Верук. Эс мана яланах килĕшнĕ... Çук... Чим, мĕн калатăп эпĕ! *(Питне аллипе хуплать.)* Эп юратнă сана... Халĕ те юрататăп... Çапла, çапла, юрататăп... Каçар, анчах та мĕншĕн-ха эп...

Вадим *(тĕлĕнсе хытса)*. Нивушлĕ, Верук?

Верук. Çапла... Йăлтах калатăп сана... Йăлтах. Е — халь, е — нихçан та! Эс ним те курмастăн та, илтместĕн те... Эс япăхса тирпейсĕрленнĕ, тăнсăрланнă, пурин çине ал сулнă... Ахалĕн пулсан... Нивушлĕ курмастăн эсĕ? Сана вăл мĕнле тыткалас тет, çапла тыткалать... Унăн пĕрре те чунĕ çук — ялан хăйне усăшăн çех... А эс... Эс, карас пулă пек, çăрттан çăварне çакланнă...

Вадим *(аптраса)*. Вăт уш шутламан...

Верук. Паллах ĕнтĕ: упăшкисем арăмĕсем мĕн хăтланса çӳренисене яланах пуринчен кайран илтеççĕ. Шутламан тетĕн... Кун çинчен халь пурте калаçаççĕ...

Вадим. Мĕн калаçаççĕ?

Верук. Мĕн тетни? Эсĕ — Никам та мар Господин теççĕ, арăму çумне çĕлесе янă çĕлен çип, арăмĕ ăна пӳрне тавра мĕнле явас тет, çапла явать теççĕ.

Вадим *(вĕреме кĕрсе)*. Кам калать?!

Верук. Пӳрне хуçса шутласа парас-и? Тархасшăн: Коркина плановичка, микрорайон лавккисенчи Хусаиновапа Лепешкина сутуçăсем, пĕтĕм бухгалтери, сан мĕнпур юлташу, пурте калаççĕ! Вăл санпа кушак шăшипе выляннă пек вылять теççĕ, йăлăхса çитсен — тытать те çисе ярать... Тăварсăрах...

Вадим *(çухалса кайса)*. Тăварсăрах тетне? А эсĕ мĕнле вара?

Верук. Эп сана юрататăп та саншăн кулянатăп... Эс пĕлетĕн-çке: епле аванччĕ иксĕмĕр пĕрле чух, эс мана кăмăллаттăнччĕ... Астăватăн-и? Ĕмĕтленсе тăраттăн... Эпĕ те аннене каланăччĕ, качча тухатăп, тенĕччĕ. Кама? Бумагин Вадимне... Анне хирĕç марччĕ, анчах та асăрхаттарса хучĕ: «Асту, хĕрĕм, «малтан — каяс, унтан — тарас» пулса ан тухтăр... Вадим — ачи чипер ачах-ха, анчах та темле анрарах».

Вадим. Мĕнлерех, мĕнлерех?

Верук. Анрарах. Ну, кăна анне çапла каларĕ: мăран, тет, сĕлеке çăвар пекрех...

Вадим. А эс мĕн терĕн?

Верук. А эп мĕн? Эп: «Кавча каяс килет!» — тетĕп. Пурĕ те çав çеç. Ан тив, мăран пултăр, ан тив, анрарах пултăр, çапах та упăшка пулать! Унтан йĕрсе ятăм: эпĕ мăрана юрататăп, терĕм, сĕлеке çăвара юрататăп, ăнах кавча тухатăп, вăт çапла... Пурĕ те çавă çеç... Анне те ӳлет: тухах, тет, ан макăр çеç тулĕк, аçу чĕрĕ пулнă пулсан, вăл сана кăтартнă пулĕччĕ те-ха мĕнле тата кама кавча тухмаллине, мимӳне хăвăрт хăй вырăнне пăрса лартатчĕ, эпĕ, ак, санпа пĕрле нĕшкетĕп... Ну, кайран лăпланчĕ, хĕр япали-тупри хатĕрлеме тытăнтăмăр. Кунта сасартăк çак Виолетта сиксе тухать. Шуйттан кĕвенти! Кур-ха ăна, ниçта кайса кĕреймест, эп унран малтан кавча тухса каясран хăраса ӳкнĕ, кĕвĕçӳ кĕви çиме пуçланă... Айн, цвай — сана çавăрса та илчĕ... А эсĕ — пăру пек...

Вадим. Эпĕ-и пăру пек?

Верук. А кам пултăр тата? Манран сивĕтрĕ сана, çавăтса кайрĕ. Вăл хăй сана кавча илчĕ. Эсĕ çемçешке-çке, сăпайлă...

Вадим *(сиксе тăрать)*. Пăру? Çемçешке, сăпайлă? Эпĕ-и? Эп — хурçă, эп — вутчуль! Часах çакна кăтартса та парăп эп!

Верук. Вăт кăтарт-ха эппин, кăтарт... Арçын пек пул...

Вадим. Кăтартăп та!

Верук. Кăтарт çав!

Вадим. Кăтартăп та!

Верук. Ну мĕн кăтартса парăн эс, мĕн?

Вадим. Ак таврăнтăр кăна командировкăран, эпĕ ăна килсе кĕнĕ-кĕмен тӳрех лаплаттарса хуратăп: Виолетта, эс мана юратмастăн, апла та капла та улталатăн... Ыйтас килет: хăçанччен?

Верук *(канăçсăрланса)*. Ну?

Вадим. Эп калатăп: пирĕн çемье — суя, фикци. Эс мана хака хумастăн, эс, калас пулать, ман туйăмсенчен кулатăн çех, çав хушăра пĕр çын пур, вăл мана юратать тата çав вăхăтрах чунне те çунтарать... Эпир çапла...

Верук. Ну? Ну?

Вадим. Урăхла каласан, эп ун патне куçатăп! Сан патна эппин, Верук. Ма тесен, вăл, эсĕ эппин, Верук, мана яланах юратнă, калаймасăр, хапсăнмасăр, ĕмĕтленмесĕр тенĕпе пĕрех, çавăнпа та куçатăп, мĕншĕн тесен мана суя арăм, арăм-çум-

çакки кирлĕ мар, а кирлĕ — сотрудница-арăм, соратница! Эп ăна çаплах калăп: çĕр çул юратмасăр пурăниччен, луччă пĕр çул юратса пурăнас...

Верук *(çухăрса)*. Вадим!

Вадим *(тата хытăрах хĕрсе)*. А мĕн Вадим, мĕн Вадим?

Верук *(йывăррăн сывласа)*. Ыйтатăн-ха тата, намăссăр! *(Пуçне каçăртса хурса, куçĕсене хупать, пырса чуптăвасса кĕтсе вилсе кайса тăрать.)*

Вадим *(чуптуса)*. Çапла, эп ыйтатăп, эп ыйтатăп, ыйтатăп... Çапла, эпĕ намăссăр, намăссăр...

Алăка шаккани илтĕнсе каять. Ним те ăнланмаççĕ. Шаккани татах илтĕнет.

Виолетта. Вадик! Эс мĕн, хăлхасăр пултăн-и элле? Е ыйха çаптаратăн-и? *(Çăра уççипе шăкăртаттарни илтĕнет.)*

Вадим *(сехре хăпнăн)*. Арăм... Эп халех, эп халех... Çак минутрах! *(Аптраса йĕри-тавралла пăхкалать.)*

Виолетта. Уçатăн-и, çук-и? Эппин, йоккăр-маккăр, хуть уççуна çăраççирен туртса кăлар...

Вадим. Эп халех, эп халех... Çак минутрах!

Верук. Эпир халех! Эпир халех!

Вадим. Хупла çăварна эс! Во! (Çамкине çапса кăтартать.)

Верук *(кӳренсе)*. Эсĕ ху — «во»! *(Çамкинчен çапать.)*

Вадим *(чашкăрса)*. Ш-ш-ăп пул...

Верук. А эс ан кӳрентер ман ырă ята...

Вадим *(мăшкăлласа)*. Мĕскер, мĕскер? Ыр ятлă çын тупăннă!

Алăка хыттăн шаккаççĕ. Вадимпа Верук пӳлĕм тăрăх таппа лекнĕ пек кускалаççĕ. Унтан Вадим хĕрарăма шкапа тĕксе кӳртет, вара алăка пырса уçать. Çутă сӳнет.

Чаршав

ИККĔМĔШ ПАЙĔ

Виççĕмĕш картина

Сĕтел хушшинче Тряпкина Верук мăнаçлăн капланса ларать.

Виолетта *(алăк кукринче)*. Эс мĕн ку, таçта кинона е театра кайма пуçтарăннă пек тăратăн?

Вадим. Хм!.. Мĕншĕн ун пек калан? *(Тӳмисене хыпалать.)*

Виолетта. Ма пит шукăль тăхăннă?.. Галстукпа... Авланма каякан каччă пек!

Вадим. Эп-и? (Хăй çине пăхса илет.) А-а, сана кĕтрĕм эп! *(Сасартăк хăрама пăрахса.)* Çапла, эп сана кĕтрĕм... Аэропорт начальникĕ патне шăнкăртаттартăм та рейссене чарса лартма ыйтрăм. Уйрăмах — Мускавалла. Вăл: «Питĕ аван, тăванăм, итлетĕп», — терĕ. Хăвах куран, эсĕ — килте...

Виолетта *(хывăнать)*. Апла-тăк, пулăш дамăна тумне хывма, мĕн юпа пек тăратăн? Сехет кĕтетпĕр, иккĕ, эпĕ ĕнтĕ шăнсах кайрăм, каллех çав çĕтĕк сасă: «4212-мĕш рейса 22 сехет те 30 минута куçаратпăр!» — тет. Унтан хушса хурать: «Япăх çанталăка пула...» — тет. *(Сĕтел хушшинчи Верука курсан, пĕр вăхăта шăпланать, унтан çавăнтах хăйне хăй алла илет.)* Вадик, ылтăнăм, эс сĕтел çине те хатĕрлерĕн-им?

Вадим *(Верука асăрхамасăр)*. Çапла... Вăт... Ик çын валли хатĕрлесе хутăм... Аслатиллĕ çумăр пĕтĕм тӳпене хупласа илнине аэропортран пĕлтерсенех... Тӳрех шутларăм: шăнса килет ĕнтĕ ку, терĕм... Çапла вăт...

Виолетта *(юрланăн)*. Вадик, эс ытарайми çын! *(Куçкĕски патне пырса çӳçне тӳрлетет.)* Санра эпĕ тата тепĕр ырă, тӳрех калăпăр, рыцарла ен куратăп, ку вăл — вашаватлăх... Епле çак пархатарлă! Кил ман пата, хаклăскерĕм, чуптусам мана. *(Чуптутарттарма тесе пуçне каçăртса тытать.)*

Вадим *(чуптуса)*. Эп çавăн пек, эп çавăн пек...

Верук çиллессĕн ӳсĕрсе илет.

Вадим *(аптраса ӳксе)*. А эсĕ... Эсĕ епле майпа кунта лекнĕ?

Верук *(кӳренсе)*. Тăрпаран... Шăпăр çине утланса... Тухатмăш карчăк пек...

Вадим *(ăнланнă пек пулса)*. А-а... Çапла, çапла, çапла... Шăпăру ăçта-ха сан тата?

Верук. Шкапра... Унта персе чикрĕм...

Вадим *(малалла мĕн тумаллине шутласа)*. Шкапра? А-а... Çапла, çапла, çапла, шкапра. Паллах.

Виолетта. Вадик, эс виççĕмĕш персона валли прибор хума маннă...

Вадим *(çухалса кайса)*. Эп халех, эп халех... *(Кухньăна чупать.)*

Виолетта сĕтел хушшине Верука хирĕç пырса ларать. Пӳлĕмре аслатиллĕ çумăр уменхи пек шăп пулса тăрать.

Вадим *(сĕтел çине черкке килсе лартать, хăй те сĕтел хушшине ларать).* Ну вăт... Ну вăт пулчĕ те... Çапла-а...

Чылайччен чĕнмеççĕ.

Верук *(çухăрса).* Ну мĕн чĕнмесĕр ларатпăр, мĕн ларатпăр, Вадим, кала пурне те?!

Виолетта *(Верука итлемесĕр, малалла шахвăртать).* Епле аван вăл ху кама-тăр кирлĕ пулсан, хăвна кам-тăр кĕтет пулсан, çемье пулсан... Епле шеллетĕп эп пĕччен çынсене! Вадим, хаклăскерĕм, эс кӳренместĕн-и?

Вадим *(шахвăртăва ăнланса).* Эпĕ çилĕ тытса çӳрекен çын мар: эп сана йăлтах каçартăм...

Виолетта. А мĕн каçармалли? Каçармалли те ним те çук! Ватă вĕт вăл, кичем те салхускер... Çерçи тăмани пек... Эсĕ унран пин хут, миллион хут лайăхрах! Сансăр пуçне мана çут тĕнчере никам та, никам та кирлĕ мар, ытарайми ман айванскерĕм! Атя, черкке çĕклер санпа, Вадик, хамăрăн иртсе кайнă чи ырă кунсене асаилер... Эпир санпа питĕ çамрăк-ха! *(Вадима пăхса çаврăнать.)* Епле илемлĕ те хӳхĕм эс ку костюмпа!

Вадим *(эрех ярать).* Тăхта, тăхта, миçе сехете куçарчĕç вара рейсне?

Виолетта *(юриех пусса калать).* Ир-ччен!

Вадим. Пулма пултараймасть!

Виолетта *(хаваслăн).* Шанмастăн-и? Шăнкăравла тепре... Çĕрĕпех килте пулатăп, Вадик!

Вадим. Шуйттан!

Виолетта. Эсĕ кăмăлсăр-и?

Вадим. Аэрофлота шуйттан тетĕп-çке... Пĕрре пĕр тĕрлĕ, тепре тепĕр тĕрлĕ калаççĕ, ăнланса та пĕтерме çук вĕсене...

Виолетта *(юрлать).* Сурса хурах эс Аэрофлот çине! Самолет ирпе те пулмарĕ-тĕк, тата лайăх — тăраниччен çывăратпăр... Вадик, санпа эпир ним çылăха пĕлмесĕр, Адампа Ева пек çарамасланса çывăрăпăр... Вадик, эпĕ çав тери тав тăватăп сана! Атя пирĕн паянхи тĕлпулушăн черкке çĕклер. Эп килсе çитнĕ ятпа. «Килсе çитнĕ» тенине пысăкла саспаллипе пуçласа калар. Эс тата паян çав тери илемлĕ! *(Пăхса ытараймасăр.)* Темле пач урăхла, çĕнĕлле, ăнланса çитмелле мар... Санра мĕн-тĕр улшăннă, ку метаморфоза мана савăнтарать. Пире кашни çĕнĕлĕхех савăнтарать вĕт, çавăн пек туса янă ĕнтĕ этеме. Ĕçер-ха ĕмĕртенхи çĕнĕлĕхшĕн! Пирĕн, санпа иксĕмĕрĕн, малта мĕн чухлĕ ырă пуласлăх!

Вадим. Çапла-а, куçпа виçейми... çитсе çитейми...

Верук *(тарăхса, мăннăн)*. Çитет! Пăрахăр хуçкаланма — эпир театрта мар... Мĕнле намăс мар! Вадим, кала ăна пурне те! Эп урăх кун пек пултараймастăп — вăл мана асăрхаманçи пулса мăшкăллать! Кала ăна пурне те! Унран эп нумай мăшкăл тӳсрĕм... Ак халь манăн самант çитрĕ! Кала ăна вăл кам иккенне...

Виолетта *(хаяррăн, упăшки енне çаврăнса)*. Кам-ха эппин вара эп?

Пауза.

Вадим. Çыпăçтармăпăр ярлăксем... Эпир тахçанах пĕрне-пĕри пĕлетпĕр-çке... *(Хулпуççисене сиктеркелет.)*

Верук. Арăму мар, çумçакки вăл, акă кам!

Виолетта. А эсĕ вара кам-ха?

Верук *(хатăрланса)*. А эпĕ — сотрудница, соратница эпĕ!

Виолетта. Ав мĕнле иккен! Çыпăçтарнă куç хăрпăкĕллĕ соратница! Йĕмсĕр сотрудница... Ах эс, пыйтă! *(Верук хыççăн сĕтел тавра çӳрет, çӳçĕнчен ярса илесшĕн.)*

Вадим. Тăхта, Петровна, эп йăлтах ăнлантарса парăп, йăлтах ăнлантарса парăп! Юн тăкма кирлĕ мар! Лăплан, эп йăлтах ăнлантарса парăп...

Виолетта *(упăшкине хăлхана та чикмесĕр, сĕтел тавра Верук хыçĕнчен çӳрет)*. Апла сана 46-мĕш размерлă кофта кирлĕ? Мĕнле тĕслĕ тетĕн-ха? Çутă хăмăр килĕшмест? Хăмăр кăвакки аванрах тетĕн? Атту тĕсли? Халь эп сана кăтартап час «хăмăр кăвак»! *(Верук хыççăн сĕтел тавра чупать.)* Эп сана халь аннӳ те палламалла мар тăпаласа тăкап!

Верук. Хăтарăр! Пулăшăр! Вадим, ну мĕн-ха эс?!

Вадим *(Виолетта çулне пӳлсе)*. Тăна кĕр! Нимĕн те пулман пирĕн!

Виолетта. Эпĕ кансĕрлерĕм сире... Ил аллуна, сутăнчăк! Иуда Искариот! *(Вадима тĕксе ярать те каллех сĕтел тавра Верук хыççăн çӳреме тытăнать.)* Апла сана кофта кирлĕ? Тен, брюки? Халех, çак самантрах паратăп... Ăна та, кăна та! Ах эс, хура çĕлен! *(Мăшкăлласа.)* Ко-офта кирлĕ мана!

Верук. Эп мар ăна... Эп мар ăна... Ăна акă кам!

Виолетта. Çĕр арçын юлашки! *(Мăшкăлласа.)* Эп çемьене хирĕç тесе янрашать-ха тата. Пĕтсе пыракан япала — çемье тет. Эс иккен çемьене хирĕç, анчах та ют арçынсене хирĕç мар... Çапла-и? Вăт сана çавăнпа пăрахнă та вăл, йĕркеллĕ

мужик пулнă, çавăнпа пăрахнă... Ак халь эсĕ, куккук пек, унталла-кунталла, ют йăвасене аркатан?

Верук. Ан кӳрентер йĕркеллĕ çынна!

Виолетта *(чарăнса тăрать)*. Ку эсĕ-и — «йĕркеллĕ çын»? Ха-ха-ха!..

Верук *(шăлне çыртса)*. Çапла, эпĕ — йĕркеллĕ çын... А кам-ха вара эп? Сан нимле аморальнăй право та çук мана кӳрентерме. Пирĕн этем чысне саккун хӳтĕлет...

Виолетта. Вăл саккун сан пеккисем валли мар...

Верук. Ак татах кӳрентертĕн! А манăн, ху куран, свидетель пур!.. *(Пусса калать.)* Ва-ади-им! Чĕрчĕлĕх!

Виолетта. Ку свидетеле кĕтсе, тĕрме тунсăхлать... Ку вăл свидетель мар, суя свидетель... Тăван амăшне те хĕрхенсе тăмĕ, сутса ярĕ... Пăх-ха эс ăна, епле тумланса лартнă!

Вадим *(сассине пăхăнтарулăх кӳртес тесе)*. Ну, çитет ӳпкелешсе те пĕрне-пĕри кӳрентерсе... Атьăр, килĕшӳ сĕтелĕ хушшине ларатпăр...

Виолетта. Куратăн-и? Хăнк та тумасть... Ахальтен мар эс, Верук, мана асăрхаттарнăччĕ: кама тухатăн эс, тенĕччĕ. Этем мар вĕт ку, темле юхса тăракан протоплазма пек япала...

Вадим. Верук ун чух мана санран сивĕтесшĕнччĕ...

Верук. Кирлех пит!

Вадим. А мĕншĕн кунта эс, çак самантра?..

Верук. Ху нăйкăшрăн-иç чĕре тесе! «Васкавлă пулăшу-у», тетĕн... Ыр кăмăллă пирĕшти-и?.. Ак халь: эс мĕншĕн кунта, тет. Ну, мĕнле ĕнтĕ эс?

Вадим. Эп çапла каларăм-и? Епле чĕлхӳ çаврăнать? Эсĕ ху çыпçăнтăн...

Верук. Ан кӳрентер ыр çынна!

Вадим. Эс тахçанах ман хыçран çӳретĕн... *(Мăнкăмăллăн пăрăнать.)* Анчах та эпĕ парăнмарăм!

Верук. Эсĕ-и? Парăнмарăн-и? Турăçăм, мĕн пулса иртет-ха капла? *(Нăшăклатать.)* Мĕн пулса иртет? Мĕнре ĕнтĕ манăн аййăп? *(Виолеттăна.)* Ан ĕнен ăна!

Виолетта. Ăна-и? Е эпĕ ăсран тайăлнă-и?

Вадим *(диван çинчен сиксе тăрать)*. Эпир пурте ăсран тайăлнă! *(Пӳлĕм тăрăх çӳрет.)* Тăратпăр кирлĕ мара пакăлтатса... Тĕрĕссипе мĕн пулса иртрĕ-ха? Мана астарса тĕрĕс çултан пăрса ярасшăн пулчĕç, анчах та эпĕ парăнмарăм...

Верук. Ан ĕнен ăна... *(Йĕрет.)* Ун пек, кун пек эп нимĕн те шутламан...

Виолетта *(пырса Верука çупăрлать)*. Ан йĕр, ан йĕр, Верук, атту эпĕ те йĕрсе яратăп акă... *(Нăшăклатать.)*

Вадим *(пӳлĕм тăрăх утать)*. Кам айăплă? Акă мĕнле ыйтас килет ман! *(Пӳрнисене хуçлатать.)* Верук-и? Е, тен, çак командировка? Е пĕтĕмпех — çемье? Эмансипаци. Патриархат-матриархат?..

Хĕрарăмсем юрлаççĕ.

Верук *(куçне шăлса)*. Эс айăплă!

Виолетта. Эсĕ айăплă!

Вадим. А судьисем камсем?

Верук. Эпир судьисем!

Виолетта. Эпир судьисем!

Вадим. Ха-ха-ха! Пĕр майлă пулчĕç... Ха-ха-ха! Туссем! Туслашрĕç! Ха-ха-ха!

Верук. Ах эс, хăравçă куян!

Виолетта. Ах эс, мăйракасăр выльăх!

Верук. Ах эс, галстуклă протоплазма!

Виолетта. Ах эс, сперматозоид!

Виолетта ваннăйран швабра тата пылесос вĕçĕ йăтса килет.

Виолетта *(Верука пылесос вĕçĕ парса)*. Ак тыт! Сăтăр пĕрре çурăмĕ тăрăх!

Верук. Çурăмĕ тăрăх!.. *(Хĕпĕртесе çухăрать.)*

Хĕрарăмсем Вадима пӳлĕм тăрăх хăвалаççĕ, урăм-сурăм хытă çаптараççĕ.

Верук. Ак сана — кенар!

Виолетта. Ак сана — командировка!

Верук. Ак сана — çурхи роза!

Виолетта. Ак сана — эмансипаци!

Вадим. Тухатмăшсем! Ашапатмансем! Тимĕр тылă карчăкĕсем! *(Сĕтел айне кĕрсе каять, анчах та унта та хăтăлма çук.)*

Верук. Ак сана — патриархат!

Виолетта. Ак сана — матриархат!

Вадим сĕтел айĕнчен сиксе тухать те упаленсе алăк патнелле тарать.

Вадим. Хурах! Вĕлереççĕ!

Виолетта ăна алăкран тапса сирпĕтсе кăларса ярать те çăрана питĕрсе илет.

Виолетта. Ух-х!

Верук. Урра! Çĕнтертĕмĕр!

Алран-алла тытаççĕ, ташлаççĕ те юрлаççĕ.

Виолетта *(чарăнса, шухăша каять)*. Упăшка пур çинчех — тăлăх арăм... *(Хытă тарăхса.)* Тăлăх арăм эп, Верук!

Верук. Мĕн тери вак халь арçынсем...

Виолетта. Тĕп пулччăр арçынсем! Ух, юбка тарçисем, хăравçă чунсем! *(Чышкипе алăк енне юнать.)* Икĕпитсем, суеççĕсем, пĕр путлĕ ĕç те тума пултарайманскерсем!

Верук *(хирĕçлесе, систеререх)*. Ну уш, ан кала...

Виолетта. Сирĕн мĕн те пулин пулчĕ-им? Пулчĕ-им? Чăннине кала... Ан хăра... Пулчĕ-и?

Верук *(шанчăка çухатнăн)*. Эй мĕн эсĕ, ăçта-а-ан?.. Çĕрĕпех тем сӳпĕлтетрĕ...

Виолетта *(кӳренчĕклĕн)*. Кунта та пулин вăл хăйне кăтартайман! Мĕнлескерпе пурăнатăп эпĕ?

Верук. Ан кулян! Ун вырăнне ăна эпир куртан сирпĕтсе кăлартăмăр. Ларар, ĕçер, çĕнтерĕве уявлар...

Вĕсем сĕтел хушшине лараççĕ, черккисене тултараççĕ, анчах та, сасартăк салхулланса, тем итлесе тăраççĕ. Алăка шаккани илтĕнет. Шăнкăравлать.

Вадим. Уçăр! Шăнса кайрăм эпĕ... Ан тив, эп лайăх мар, ан тив, эп путсĕр, кирлех пулсан, йĕксĕк, анчах та эпĕ йĕркеллĕ çын! Мана тата пурте хисеплеççĕ!

Хĕрарăмсем, хуйха ӳксе, пĕр вырăнта чул пек хытса тăраççĕ... Кашниех хăйĕн шухăшне шухăшлать.

Виолетта *(юрилле)*. Мĕн ку эпĕр? Виле çинче ларнă пек... Эпĕр халь канса йăпанма пуçлатпăр... *(Магнитофон хускатса ярать.)*

Штраусăн «Кăвак Дунай çинче» вальсĕ шăранма пуçлать. Виолетта алăк кукрине кайса упăшкин плащĕпе шлепкине тăхăнать, янахне хӳхĕммĕн каçартса, тореадор уттипе сцена варнелле тухать, Верук патнелле пырать.

Виолетта. Мадмуазель... Çук, урăхларах: ырă пикем, кăмăл тума хирĕç ан пулсамăрччĕ... *(Урисене шаклаттарса пуç таять.)*

Верук *(янкăслăн)*. Эп шутланă тăрăх эсир, ырă йĕкĕт, манпа вальс ташласшăн?

Виолетта. Эсир витĕр курма пĕлни сире чыс кӳрет.

Алăка шаккани илтĕнет.

Вадим. Уçатăр-и, çук-и? Илтетĕр-и? Çитет алхасса!

Верук. Эпĕ хавас...

Вальс ташлаççĕ.

Виолетта. Эсир тĕлĕнмелле хĕрарăм. Сирте «ы» саспаллин пĕтĕм пахалăхĕ пур: эсир ытарайми, ытарайми, татах та ытарайми.

Верук. Эпĕ телейлĕ... *(Вăтанса çĕрелле пăхнă пек тăвать.)* Анчах та, ырă йĕкĕт, эсир мана ытлашши ырлатăр...

Виолетта. Сирти ырă енсем ытларах та мухтама хистеççĕ... Бал пынă чухне ăнсăртран эп сире асăрхарăм... Çапла, эп сире тахçанах куç хыврăм... Сирте мĕн-тĕр кун пекки, мĕн-тĕр ун пекки пур пулас... *(Верука çумне пăчăртать.)*

Верук. Тавах ыр сăмахшăн. *(Пăрăнса кайма хăтланса.)* Анчах та чипертерех, чипертерех... Ку — моветон... чарусăрлăх...

Виолетта. Енчен те сире çав тери хисеплекенсен шутĕнче пулмалли пысăк чыса эп тивĕç пулайсан, хама телейлĕ çын вырăнне хурăттăм, ырă пикем. Сире мĕн те пулин кирлĕ пулас пулсан, хушăр çеç...

Верук. Халлĕхе мана эсир ыр кăмăлли те çителĕклĕ, ырă йĕкĕт...

Виолетта. Анчах та манăн хамăн хĕрӳлĕхе тытса чарма хал çук!

Верук. Хăйне хăй тытса чарма пĕлни арçынна илем кӳрет.

Виолетта. Хĕрарăма вара — йăвашлăхпа сапăрлăх... Эсир — чĕрĕ пирĕшти, ангел...

Верук. Ах, татах каласăр, каласăр! Пуçăм епле ыррăн çаврăнать...

Виолетта. Эсир мана асамлăхăрпа çавăрса илтĕр, эсир ман шухăша çулăмлантартăр, юрататăп эпĕ сире. Ĕмĕрлĕхе! Мĕн виличчен! Эп сире хама пĕтĕмпех паратăп...

Верук. Епле телейлĕ эп! Тăванăм... Эп килĕшетĕп... Эп хирĕç мар...

Алăка шаккани илтĕнсе каять.

Вадим. Эп сирĕн пирки домоуправленине кайса калатăп! Сирĕн манран питĕрĕнсе ларма нимле право та çук! Хваттер ман ятпа шутланса тăрать!

Верук *(хыттăн)*. А мĕнле сирĕн хушаматăр? Эпир сире палламастпăр!

Вадим. Эсирех манран мăшкăлласа та куласшăн-и-ха? Пĕтрĕ! Чăтăм йăлтах пĕтрĕ... Çиллĕм тулса тăкăнчĕ... Халех домоуправ патне каятăп: алăка çĕмĕретпĕр!

Виолетта *(сĕтел хушшине ларса)*. Атя ĕçер иксĕмĕр, Верук... Атя чăн-чăн арçын-рыцарьсен ячĕпе ĕçер. *(Вăл ура çине тăрать, куçĕсем хĕм сапма пуçлаççĕ, пичĕ çунать, юрланă пек калать.)* Рыцарь арçынсем... Вĕсене Хĕрлĕ Кĕнекене кĕртес пулать, ахаллĕн çĕр çинчен пачах та çухалма пултараççĕ... Вĕсем çухаласран хăрас пулать, вĕсене ĕрчетсе аталантармалла... Вĕсем — пĕтсе пыракан элитнăй фонд!.. Хăш чух эп пирĕнтен малтан пурăннă хĕрарăмсене ăмсанатăп. Телейлĕ çынсем! Вĕсене ырă кăмăллă, чыс тытакан арçынсем юратнă, ĕçлĕ те хăйсене хĕрхенменскерсем. Çав арçынсем пысăк та илемлĕ ĕççем тунă, вĕсем килĕсене çĕнтерӳçĕсем пулса таврăннă, вĕсенчен инçет шăрши, йӳçĕ эрĕм, кăвайт тĕтĕмĕн шăрши кĕнĕ... Вĕсем черченкĕ те хӳтлевсĕр хĕрарăмсене ал çине çĕкленĕ... Вĕсем улăпсем пек пулнă... Балкон айĕнче çĕрĕпех тăма пултарнă, хĕрарăм чысĕшĕн дуэльсенче çапăçнă, вута та, шыва та сикме пултарнă; хĕрарăмшăн чунне шуйттана сутнă! Халĕ мĕнле? Халĕ арçын вăл алла вĕрентнĕ, хăравçă, мĕскĕн килти выльăх... Вăл ĕнтĕ хĕрарăм ячĕпе паттăрла ĕç тума пултараймасть, хĕрарăма хӳтĕлесе дуэле тухаймасть, вăл тĕрĕс сăмаха куçран калама та хăрать... Эй, рыцарь арçынсем, ау! Ăçта эсир?

Вадим *(домоуправа)*. Ак çакăнта... Ватăр алăка! Ватăр тетĕп, ан хăрăр. Ман шутран ватăр!

Кĕрслеттерсе алăка çĕмĕрни илтĕнет.

Верук *(алăк еннелле кăтартса)*. Вĕсем çапла çине тăни мана килĕшме пуçларĕ. Тен, парăнатпăр? Уçса кĕртетпĕр?

Виолетта. Ним тусан та! Атя ĕçер...

Вĕсем тăрса татах черкке çĕклесе чанклаттараççĕ:
«Рыцарь арçынсемшĕн!»

Вадим. Эй, эсир, уçăр! Эп пуриншĕн те каçаратăп!

Хĕрарăмсем ахăлтатса кулма пуçлаççĕ. Эрехне тăка-тăка кулаççĕ; ирĕккĕн, çуттăн, чарăнайми кулаççĕ.

Вадим. Чарăнăр кĕçенме! Эсир виçелĕх туйăмне çухатрăр... Çитет! Иртĕхрĕр, халь чарăнас пулать!

Хĕрарăмсем ташлаççĕ те юрлаççĕ:

Ахальтен мар уçмастпăр эпĕр,
Кулни куççуль çав вăхăтрах.

Эсир ку вăйă пуль-ха, тетĕр,
Анчах та çак чăнах, чăнах!

Эсир ку вăйă пуль-ха, тетĕр,
Анчах та çак чăнах, чăнах!

Вадим *(аллинчи алăкĕпе пӳлĕме кĕрсе тăрать)*. Виолетта, каçар! Малтанхинчен те хытăрах юрататăп... Эп çамрăк-ха, малашне йăлтах тӳрленĕп тесе шанатăп.

Виолетта. Кама каçармалла? Сана-и? *(Пауза.)* Мĕнех... Каçарма та пулать... Пулă çук чух рак та — пулă. *(Пырса çамкинчен чуптăвать.)*

Верук *(ăнланмасăр)*. А эпĕ вара мĕнле?

Телефон шăнкăртатать.

Виолетта. Итлетĕп! Георгий Иванович? *(Курнăçланса.)* Эп сире итлетĕп...

Трубкăри сасă. Самолет 23 те 30 минутра пулать. Вăхăтлă çитме тăрăшăр... Питĕ ыйтатăп. *(Пауза.)* Эсир мана илтетĕр-и? Çирĕм виççĕ те вăтăрта...

Виолетта чĕнмесĕр трубкине хурать те мĕнле тăнă çаплах хытса каять. Ун патнелле аллисене тăснă Верук — çăварне карса пăрахнă. Хăйĕн çемье вучахĕн питлĕхне — алăка — ик аллипе те çатăрласа тытнă Бумагин Вадим Владимирович та кулăшлан хытса тăнă.
Çак чĕлхесĕр сцена минут çурă тăсăлать.
Çутă сӳнет.

Тăваттăмĕш картина

Çав хваттерех. Пӳлĕмре лăпкă çутă çунать. Вадим, алăкне вырăна лартса пĕтерет те, ĕç вĕçленнине кăтартма мăлатукĕпе юлашки хут шак-шак! тутарса илет. Вăл каллех спорт костюмĕпе, çемçе тапочкипе: шурă çитти сарнă сĕтел çинче леш хайхи хура будильник çеç тиклетсе ларать. Комодран таса кĕпе-йĕм илсе, пур çутта та сӳнтерет те, çăвăнма кĕрес тесе, Вадим ваннăйра çутă çутать, шакăртаттарса шыв юхтарма пуçлать. Ваннăй алăкĕнчен ӳкекен çутă пайăркинче Верук курăнса каять, тĕттĕмре çухалать.

Верук сасси *(тăвăлса çитнĕ кăмăлпа)*. Телейлĕ пăру! Виолетта, каçар тет. Унченхиллех юрататăп тет. Çамрăк-ха, тӳрленĕп тет. Çулламан пăру, импотент! Ĕçе-ĕçе пуçĕ кукшаланса, пуç мими шĕвелсе кайнă, лешĕ тăми пулнă. Эрех ĕçтерсе, тĕрлĕ сăмахпа илĕртсе, чуптăва-чуптăва астарса ячĕ те: «Ху

çыпçăнтăн!» — тесе мăшкăллать, пăрăнса аяккалла тарать. Чим-ха, кăтартам-ха эп сире телейлĕ пурнăç... Анра! Савăннипе çĕр варринче алăкĕсене çаклатма мансах шыв шакăртаттарать.

Шыв шакăртатма чарăнать. Эхлете-эхлете Вадим ваннăна кĕрсе выртни илтĕнет. Çав хушăра ваннăй алăкĕнчен ӳкекен пайăркара этем мĕлки мĕлтлетет те, алăкĕ уçăлса кайсан, янкăр çутăра, вĕлтĕрти кĕпеллĕ Верук ваннăйне кĕрсе кайни курăнса юлать.

Верук. Мунчи тутлă пултăр! Хуçин çурăмне çуса ямалла терĕç те, хуçи майрине, савнийĕпе иккĕшне, яраплан çине лартса янă-яманах кунта васкарăм. Алăкне лартса пĕтерсен, çăвăнма шутлатех ĕнтĕ ку терĕм.

Вадим. Тьфу, шуйттан, хăратса вĕлеретĕн вĕт! Ăçтан, мĕнле майпа вĕçсе кĕтĕн эс кунта?

Верук. Шуйттан мар, тухатмăш. Яланхиллех — тăрпаран... Шăпăр çине утланса...

Вадим. А-а, çапла, çапла... А-а... шăприне ăçта хутăн хальхинче?

Верук. Çавăнтах... Шкапа... персе чикрĕм.

Вадим. А, мĕн-и? Çарамасах вĕçсе килтĕн-и?

Верук. Çарамасах... Маргарита пек. Эппин, эсĕ Маçтăрĕ пул, эпĕ Маргарита пулам... Çитменне, иксĕмĕр те тахçанах хĕр мар вĕт... Вара, тен, çурăмна та çуса ярăп.

Вадим. Чим-ха, чим, халех мар, сывлăш çавăрса ярам-ха, сехĕрленни иртсе кайтăр.

Верук. Ниçан та шутламан эс çакăн пек чăх чĕриллĕ тесе.

Вадим. Сехре хăпрĕ...

Верук. Арăмупа епле çывăркалан вара?

Вадим. Мар-ха, эс ăнланмарăн...

Верук. Мĕн ăнланмалла марри пур кунта...

Вадим. Пуç çине çапла пат! татăлса анса сехрене хăпартрăн.

Верук. Ан хăра... Юратнă арăмупа еркĕнĕ те Мускава çитсенех, ак, ваннăйне кĕрсе выртаççĕ.

Вадим. Каяйрĕç-и вара?

Верук. Кайрĕç... Хыçалтан йӳçĕ тĕтĕм çеç тухса юлчĕ.

Вадим. Ăш каллех вăркама пуçларĕ... Ма килтĕн эс?

Верук. Упăшкапа уйрăлнăранпа арçын курман.

Вадим. Икĕ çул-и?

Верук. Икĕ çул çурă...

Вадим. Вара?

Верук. Хĕрхен мана... Ан хăваласа яр...

Вадим. Ан васка... Пуçа çурăм, ак, пĕççе-каççа сăтăркалам халь...

Верук. Ĕмĕр кĕтме хатĕр, хăваласа ан яр çеç... Хĕрхен мана...

Вадим. Кай-кай-кай-кай!.. Епле намăссăр, э... Ак, тыт мунчала, сăтăрса яр эппин çурăма! Вара сан çурăмна та сăтăрăп!

Верук. Эх, Вадим...

Вадим. Мĕн — Вадим? Мĕн — Вадим?

Верук. Пуç çурăлса тухать, чĕрем кăкăртан тухса тарас пек тапать...

Вадим. Эп Виолеттăна сутмастăп... Вăл мана Иуда терĕ, анчах эпĕ ăна пурпĕрех сутмастăп. Юрататăп ăна, халĕ тата хытăрах юрататăп...

Верук. Юрат, анчах мана та хĕрхен...

Вадим. Эп çĕнĕрен çуралтăм — юрату хăвачĕпе... Эп Виолеттăпах пурăнасшăн, ача-пăча çуратасшăн, утьăкка сиктерсе ӳстересшĕн, кин кӳртсе хĕр качча парасшăн... Часах, ак, çĕн хваттер илетпĕр...

Верук. Айван эс, айван... Хăвна мĕн таранччен чике тăршшĕ лартнине те сисместĕн-çке... Ĕç вăхăтĕнчех, кабинетрах...

Вадим. Пурпĕрех юрататăп... Нимле суя сăмаха та ĕненместĕп.

Верук. Суя мар... Арăму санăн хĕсĕр, унăн ниçан та ача пулмасть.

Вадим. Эсĕ ăçтан пĕлетĕн? Кам каларĕ?

Верук. Пĕлетĕп...

Вадим. Эс хĕсĕр мар-и?

Верук. Эп хĕсĕр мар, Виолетта хĕсĕр.

Вадим. Эп пурпĕр ăнах юрататăп.

Верук. Каллех калатăп: юрат, анчах мана та хĕрхен...

Вадим. Йыт аçи туян, халь нумай хĕрарăм туянать... Пăру пеккине...

Верук. Ан кул манран, ача тăвасшăн эп... Хĕрхен...

Вадим. Мунча кĕрсе хал пĕтрĕ... Тавах çурăма çунăшăн...

Верук. Хĕрхен мана...

Вадим. Ну юрĕ... Çитрĕ... Кай, йăлăхтартăн! Курас килмест!

Верук *(хаяррăн кăшкăрса ярать)*. Ы-ыхх! Йĕксĕк! Ылхан сана, ылхан!

Кĕрешнĕ сасă, шыв хыттăн шăмпăлтатни илтĕнет. Унтан пĕр вăхăт шăп. Вара сасартăк ваннăй алăкĕ уçăлса каять те, çутăра каллех Верук вĕлтлетет, тĕттĕме чăмать.

Верук. Ак, пĕттĕр луччĕ, никама та ан пултăр. Упăшкапа та ун пиркиех уйрăлтăм... Хам упăшкапа выртаттăм, çак шуйттанпа выртнă пек туйма тăрăшаттăм. Туйăм-сĕмлешӳ сирĕлетчĕ те, çумри упăшка йывăç каска выртнăнах туйăнатчĕ. Ни ăшши, ни илемĕ... Курассăм килместчĕ...

Тумланса пĕтерсе, çутă çутса ярать. Ваннăйри çутта сӳнтерет. Хăй сиксе чĕтрет. Пичĕ тăрăх куççуль юхать.

Никама та ан пултăр... Ак, халь ӳстер ывăлпа хĕр... Йыт аçи туянса йыт аçипе пурăнма сунать-ха, йĕксĕк... Ак, халь ху леш тĕнчере йыт ами туянса йыт амипе пурăн... Ывăлпа хĕр ӳстер... Кин кĕртсе хĕр кайча пар... Хваттер ил...

Пырса каллех ваннăйра çутă çутать. Виле çине чылайччен пăхса тăрать. Хашлатса, ассăн сывласа ярать те, ваннăй алăкне вăраххăн хупать.

Йăшăлл! та тумасть, ăсанчех пулмалла... Хăйне хăй пĕтерчĕ — ухмах... Хĕрарăма çапла мăшкăллама юрать-и? Ну, тепре тĕл пуличчен, тамăкра тĕл пуличчен... Йыт аçи туянма каятăп...

Шартах сиктерсе, телефон шăнкăртатать. Верук малтанах телефон патнелле ыткăнать, анчах трубкăна тытиччен тăн килсе кĕрет те, хĕрарăм тăпах чарăнса тăрать. Куçĕсем йăл-ял! çиççе илеççĕ. Сцена умнелле тухать.

Нимĕн те манса юлмасть-и? Нимле хут татки те, çĕтĕк-çурăк та... Çӳçĕм пĕрчи те... Эх, Верук, Верук... Çакăн хыççăн та пурăнасшăн-и-ха эс çĕр çинче? Ача çуратса ӳстересшĕн-и? Ху пек çын вĕлерекен... Юхха... А мĕн... *(Хастарланса, хаяррăн.)* Çурататăп та! Ӳстеретĕп те... Йыт аçипе... Каятăп, ак... Туянатăп... Эх, Вадим, Вадим, ма чармарăн-ха чĕлхӳне, ма курмарăн эп тухатмăш иккенне...

Йĕрет. Унтан пуçне ялтах çĕклет те теме тăнласа тăрать. Шăп. Сехет шаккать.

Сехет шаккать иккен... Будильник... Анчах, тимĕр автан, эс ĕнтĕ эпĕ хальччен ес чунтан юратнă Вадима, мĕнле тăрăшса хыт авăтсан та, йывăр ыйхинчен вăратаймăн. Шакках эппин, авăтах... Вăхăт шăвать, вăхăт иртет... Ах, мĕн тери хăрушă... Шăл çине шăл лекмест... Сивĕ... Сиксе чĕтретĕп!.. Кайрăм... Тамăкра тĕл пуличчен!

Таçта тем кĕмсĕртетет. Çутă сӳнет. Каллех сехет шаккани кăна илтĕнет. Шăп. Ваннăйра çеç çутă çунать, пайăрки сцена çине хăяккăн пĕчĕк прожектор пек ӳкет. Тепĕртакран шăплăха пăсса алăк кукринче çын мăкăртатни, ура сассисем, хваттер алăкне уçса хупни илтĕнсе каяççĕ. Сцена çуталать. Малтан Виолетта, ун хыçĕнчен, кăшт каярахпа, Георгий Иванович кĕрет. Чăматанĕсене шкапа лартаççĕ. Виолетта джинс-йĕмпе, каçхи хăна юлашки модăпа çĕлетнĕ тĕксĕм костюм, хулăн патушлă пушмак тăхăннă. Апла пулин те, вăл Виолеттăран нумай çӳллех мар. Хăйне питĕ хуçалла тыткалать. Хĕрлĕ çӳçне кĕмĕл тура кăларса çине-çинех турать — çамрăк хĕрăм умĕнче çамрăкрах курăнасшăн. Хура куçлăхпа, галстукпа.

Виолетта *(кăмăллăн)*. Миçе шăнкăравласа та трубкăна тытакан пулмарĕ. Тӳрех ăнлантăм — мана ăсатнă-ăсатманах сучки патне кайса выртнă, алăка çаклатмасăрах шунă... Хальхинче хăй йăвине варалас темен, юта кайнă. Эп сасартăк килсе кĕресрен те аван капла. Хальхинче вĕçсе кайрĕçех пуль тенĕ ĕнтĕ, шеремет.

Георгий Иванович. Вĕçсе каяймарăмăр çав... Шел... Кĕрхи çанталăк — шанчăксăр.

Виолетта. Ирпе, тен, уяртĕ-ха?

Радио хускатать. Кухньăран çыртмаллисем илсе тухать. Георгий Иванович дипломатĕнчен сĕтел çине икĕ кĕленче коньяк кăларса лартать.

Виолетта *(ытарлă та çемçе сасăпа)*. Ге-ера...

Георгий Иванович. Ничеву-ничеву, рейс ирхине вунă-вунпĕр сехетсĕр пурпĕрех пулмасть. Кĕр тĕтри ир сирĕлмест вăл...

Виолетта. Кĕр тĕтри... Алăка тĕкĕ ярам-ха сых ятне...

Георгий Иванович. Эпир нимĕн те вăрламан. Эпĕ хамăн коллегăсем патĕнче пĕрремĕш хут хăнара. Тен, кайса чĕнен? Пĕрлех килччĕр...

Виолетта (*хăнан чĕрçине пырса ларать, мăйĕнчен ыталать; ачашшăн)*. Ге-ера...

Георгий Иванович. Аван, аван, юрать, тулĕк ан васка...

Виолетта каллех кухньăна чăмать. Будильник — курăнмалли вырăнта: çур çĕр иртни вунă минут. Радиопа хальхи рок музыки янăрать. Георгий Иванович коньяк кĕленчине уçать. Виолетта хаклă йышши икĕ хрусталь черкке илсе тухса лартать. Кофе чашкисем... Мельхиор кашăксем... Сахăр-пĕремĕк... Кăлпасси-сервелат. Консервăсем тата ытти те. Тулли сĕтел. Сĕтел хушшине хире-хирĕç вырнаçса лараççĕ. Виолетта черккесене коньяк ярать.

Виолетта. Алăка тĕкĕленĕ... Мĕн кирли — сĕтел çинче... Георгий Иванович, пирĕн патра эсĕ пĕрремĕш хут, çавăнпа та, çав ятпа, çĕклер-ха эппин... Тьфу, тьфу! Ваттисене асăнса тумлам тумлатар та, атя... кайрăмăр... *(Тумлатать.)*

Георгий Иванович. Сывлăхшăн пултăр...

Ĕçеççĕ. Виолетта черккесене татах тултарать.

Виолетта. Арăму хăрах куçлă пулса ан лартăр тесен, мăшăрлă ĕçмелле черккене...

Георгий Иванович. Вуникĕ пуçлă, çирĕм тăватă куçлă шуйттан вăл, пĕр пуçне татса ывăтсан та, тата вунпĕр юлать-ха...

Виолетта. Пур-ши тĕнчере телейлĕ мăшăрсем?

Георгий Иванович. Пур та пулĕ, анчах эпĕ курман...

Виолетта *(черкке çĕклет)*. Атя эппин... тĕкел пултăр...

Георгий Иванович *(черкке çĕклет)*. Атя... турă пулăштăр...

Шаклаттараççĕ. Ĕçеççĕ.

Виолетта *(татах черкке тултарать)*. Çакна ярар та, вара çыртăпăр...

Тĕплеççĕ. Çыртаççĕ.

Георгий Иванович. Ак, тинех ăшăнса çитрĕм...

Виолетта. Ман пит те вут пек пĕçерме пуçларĕ. *(Пит çăмартине, çамкине тытса пăхать.)* Çамка — вĕри çатма... Хам — кăвар...

Джинс курткине алăк кукрине кайса çакать. Тулли кăкăрне, çинçе пилĕкне, йĕмĕ çат тытса тăракан пĕççисене Георгий Иванович асăрхатăр тесе, умĕпе темиçе хут пăркаланса иртет. Хăна та костюм пиншакне хывса пукан хыçне çакнă, галстукне пушатнă. Виолеттăна ытараймасăр пăхса ларать.

Георгий Иванович. Хитре хĕрарăм эс, Виолетта...

Виолетта *(вăтаннă пек пулса)*. Ну уш калатăн та, Георгий Иванович...

Кĕвĕ çеммипе темиçе хускану туса илет.

Арçынпа пĕрре çывăх пулса илнĕ хыççăн хĕрарăмсем унран пачах именме пăрахаççĕ... Эп вара ун пек мар...

Георгий Иванович. Сас-хура пит çӳре пуçларĕ... Кабинетах ан пыр-ха урăх, кам та пулин «ăнсăртран» килсе кĕме пултарать...

Виолетта. Гера... Хваттер — чăнах-и вара?

Георгий Иванович. Чăнах... Вăл йăлтах хамăртан килет...

Виолетта. Атя ташлатпăр!

Уйрăмах хăватлă рок кĕрлет. Арçынпа хĕрарăм хуçкалана-хуçкалана, урса кайса ташлаççĕ. Люстра вутăн-хĕмĕн çунать. Çурт чĕтрет!

Георгий Иванович. Хоп! Хоп! Ос-са!

Виолетта *(пашкаса)*. Хоп! Урра!

Халтан кайса, креслосем çине ӳкеççĕ. Кĕвĕ чарăнать. Радио юлашки хыпарсем калать. Алăка хыттăн шаккаççĕ.

Тулти сасă. Намăса пĕлĕр, халь çур çĕр иртни пĕр сехет! Ыран кăвак çутпах ĕçе каймалла!

Виолетта *(алăк патне пырать)*. Юрать, юрать, Пăлаки аппа! Эпир ку — таврăннă ятпа, кăштах çеç...

Тулти сасă. Ырă каç пултăр...

Виолетта. Ырă каç... Вадим сирĕн патăрта мар-и?

Тулти сасă. Ку та пыман, лешĕ те, Верукĕ, таçта çухалнă...

Виолетта *(хăна патне таврăнса)*. Апла вăл тата урăх тупнă. Ну эп ăна, килтĕр кăна, кăтарта-ап... Георгий Иванович, пӳлĕмре ăшă вĕт, хывăн... *(Шкапран халат илсе ывăтса парать.)* Улăштарсам тумна...

Георгий Иванович алăк кукринче тумне улăштарать. Брюкине пукан хыçне майласа çакать. Çав хушăра, хăна умĕнчех, Виолетта та джинсне хывать, аялти кĕпе вĕççĕн çеç тăрса юлать.

Георгий Иванович *(хĕрарăм çине ытараймасăр пăхать)*. Афродита... Нарспи...

Виолетта *(хăна умĕнче конкурсри пек çӳрет)*. Нарспи вунçиччĕре çеç пулнă, эпĕ вара çирĕм иккĕре... Карчăк...

Георгий Иванович. Маначчĕ çакăн пек «карчăксем»...

Виолетта. Гера, эс ху та ват старикех мар-ха...

Георгий Иванович. Виç кунтан хĕрĕх тултаратăп.

Виолетта. Апла санăн менельник? Виç кун унталла, виççĕ кунталла — ку ниме те пĕлтермест... Тавай паянах паллă тăвар ăна!

Георгий Иванович. Эп хирĕç мар...

Виолетта *(кĕленче ярса тытать)*. Урра! *(Черккесене тултарать.)*

Вырнаçса лараççĕ. Малалла ӳпĕннĕ чух хĕрарăм кăкăрĕсем çаккине татаслăн карăнаççĕ. Хĕрĕнкĕ Георгий Иванович вĕсем çинчен куçне илмест.

Георгий Иванович *(панă черккене тытса)*. Арçын куçпа юратать, тет... Набоковăн «Лолита» романĕнче çамрăк ученăй вуник çулхи хĕрачана юратса пăрахать. Çутă куллишĕн тата... мăнтăркка пĕççишĕн...

Виолетта. Вуланă... Хĕрарăм та, хĕрупраç та «хăлхапа» юратать, «куçпа» мар... Ну, Георгий Иванович, сан сывлăхушăн...

Георгий Иванович. Яланах: «Гера», — те...

Виолетта. Гера... Малашне час-часрах лармалла пултăр çапла...

Георгий Иванович. Çапла пултăр...

Виолетта. Кăххăм! та темесĕр çĕре çит...

Георгий Иванович. Çĕр ытла нумай: йĕмтĕп çĕре пернекен пулĕ, çăпатана кутăн сыракан пулăп... Пĕр йӳтесен, пурнăçăн мĕн илемĕ...

Виолетта. Сассу хитре санăн, Гера, ху та йĕркеллĕ ĕçлĕ çын, ăслă, сумлă...

Георгий Иванович. Ан мухта, эпĕ «хăлхапа» юратмастăп...

Виолетта. Ĕçер...

Чанклаттарса ĕçеççĕ. Çыртаççĕ.

Георгий Иванович. Сана эп эсĕ пирĕн пата ĕçе кĕрсенех асăрхарăм... Пирĕн, тăван арăмран писнĕ арçынсен, çĕнĕ çырла çав тери çисе курас килет. Куллен-кунхи йӳçĕтнĕ панулми вара пыра ларать... Йĕклентерет... Тĕрĕссипе, эпĕ ясар çынах та мар тейĕпĕр, сан пек хĕр турра курсан вара пурпĕр пурне те манатăн; пуçа çухатса, сирĕн патăралла туртăнма пуçлатăн; çĕрле тĕлĕксенче куратăн, чĕнетĕн, йыхăратăн, асапланатăн, хĕрарăм патне пĕрремĕш хут туртăннă пек çунатăн...

Виолетта *(хăнана кресло çине лартать, хăй ун чĕрçине ларать, мăйĕнчен ыталать)*. Кала, Гера, малалла кала... О, мĕн тери аван...

Георгий Иванович *(Виолеттăна çурăмĕнчен лăпкаса, пуçĕнчен шăлса)*. Эп сана иккĕмĕш хут курсанах салтăнтартăм...

Виолетта. Мĕнле апла? Эпĕ астумастăп-çке?..

Георгий Иванович. Куçпа, паллах... Шăр-çарамас хывăнтартăм...

Виолетта. О-о! Эпĕ урăх пултараймастăп!..

Тутипе арçын тути çумне çыпçăнса ларать.
Йынăшса ярать.

Виолетта *(пăшăлтатса)*. Эпĕ сивĕ фригиднăй хĕрарăм шутланатăп — пурпĕрех вут явса илчĕ...

Георгий Иванович *(пуçĕнчен шăлать)*. Лăплан, лăплан, ан васка... Каç вăрăм-ха...

Виолетта. Калаç, татах калаç...

Георгий Иванович. Куçпа салтăнтараттăм та... ал çине ак çапла йăтса илеттĕм... *(Ура çине тăраççĕ, ал çине çĕклет.)*

Виолетта. Вара, Гера, вара?.. Кăкăра перĕн-ха... Чупту...

Георгий Иванович Виолеттăна ал çинче
йăтса çӳрет. Хĕрарăмăн çӳхе кĕпи уçăлса каять.
Илемлĕ, мăнтăркка, яштака урисем çутăра мрамор
пек çиçеççĕ. Георгий Иванович чуптăвать.

Георгий Иванович. Вара сан патна туртăнасси çĕр хут, пин хут ӳсетчĕ... Çĕрлесенче, вырăн çинче, ним тăвайман енне, минтере çыртса йĕреттĕм...

Виолетта *(вĕрин пăшăлтатса)*. Вунвиç çултах пăсрĕç... Çак куна çитсе миçе арçын куртăм пуль, сан пеккине курман...

Георгий Иванович *(шеллесе)*. Лăплан, лăплан, ачам... Тавах сана... Хама нихçан та кун пек телейлĕ туйман... Пĕрремĕш хут... Хам вара вунсакăр çултанпах арçын... Ну, мĕнле, лăплантăн-и?..

Виолетта. Лăплантăм, Гера... Лăплантăм, тăванăм... Ытарайми çыннăм...

Георгий Иванович. Ну вăт аван... Ну вăт маттур... *(Виолеттăна ура çине тăратать.)*

Виолетта. Тавтапуç сана, Гера... Ылтăнăм...

Георгий Иванович. Нимех те мар, нимех те мар... Сана лайăх пултăр çеç...

Виолетта *(сăнпа çутатса)*. А эс психолог, Гера... Хăрушă санпа... Ăрăмлă çын эс. Хилер. Инструментсăрах операци тума пултаратăн... Христоса амăшĕ мĕнле майпа çуратнине тинех ăнланса илтĕм — «непорочное зачатие» тенĕ-и-ха Библире?

Георгий Иванович. Çапла тенĕ...

Виолетта. Ан хăра, манăн пулмасть...

Георгий Иванович. Хăрас пур эпĕ кунта килместĕп те...

Виолетта. Эх, çуратасчĕ ман санран, Гера, малтанлăха ывăл, унтан хĕр...

Георгий Иванович. Ма ун пек сахал? Манăн, авă, виçĕ ывăл та икĕ хĕр... Гениллĕ Тютчев, сăмахран, Елена Денисьевапа виçĕ ача çуратнă... Пĕтĕм тăван-пĕтенне пăхмасăр... Çемйине, çеттуй Синод текен хăрушă учреждение пăхăнмасăр... Государь-императортан хăрамасăр...

Виолетта. Эпĕ те никамран та хăрамастăп... Пĕр ача та пулин çуратасчĕ... *(Пырса пуçне Георгий Иванович кăкăрĕ çине хурать.)* Вырăн сарма юрать-и, Гера?

Георгий Иванович. Саран пуль...

Виолетта. Пĕрле сарас-и?

Георгий Иванович. Хăвна мĕнле кăмăллăрах, çапла сар...

Виолетта. Ох, психолог, психолог...

Георгий Иванович. Сана ун пек килĕшет пулсан, çапла — психолог...

Виолетта. Ан тив, психолог пул, эп сана пурпĕрех ухмаха ересле юрататăп... Юрататăп, юрататăп, юрататăп!

Георгий Иванович. Эпĕ те сана юрататăп, Виолетта... *(Пырса çупăрлать. Чуптăваççĕ.)*

Виолетта. Спаççип, Гера...

Георгий Иванович. Хăвна та...

Çӳлти çутта, люстрăна, сӳнтереççĕ. Торшер çутаççĕ. Ик вырăнлă кравать çине Виолетта вырăн сарать. Сĕтел çине пуçтаркалать. Эрех çаплах ларать. Торшера та сӳнтереççĕ. Кравать çумĕнчи тумбочка çинче кăна симĕс çутă йăвашшăн çунать. Унтах — будильник куçса ларнă.

Георгий Иванович *(халачĕпех вырăн ăшне чăмать)*. Тĕлĕнмелле çемçе, патша вырăнĕ пек...

Виолетта. Анне панă тӳшек, кукамайăнах пулнă... Сыпăкран сыпăка куçса пырать... Манăн сурпан та, тухья та, хушпу та пур...

Георгий Иванович. Эх, самана, самана... Пĕтетпĕр пуль эпир майĕпен — чăвашсем?! Пĕр ачам та чăвашла пĕлмест, пĕлесшĕн те мар... Амăшĕ, Муркаш ухмахĕ, чарать... Чăвашла-вырăсла хутăштарсан, вырăсла таса калаçма вĕренеймеççĕ, тет. Чăваш чĕлхи мĕн тума кирлĕ вăл, тет... Мăнтăрланса çитрĕ, иртĕхсе кайрĕ... Ачамсене ӳстерсе пĕтермесĕр эпĕ хăйĕнчен ниçта та хăпса каймасса лайăх пĕлет, йĕксĕк... Куçкĕретех мăшкăллашать...

Виолетта *(тепĕр хĕрринчен пырса выртать)*. Пире, хĕрарăмсене, тӳрех сиссе илме çук çав, эпир вăл тĕлĕшпе çуралинченех академи пĕтернĕ...

Георгий Иванович. Малтан хырăм йăтрĕ, унтан парткома чĕнтерттерчĕ. Эпĕ — мĕн? Аспирант. Качча илмерĕн-тĕк, аспирантурăпа сывпуллаш... Иккĕрен пĕрре... Халĕ, акă, чавса çывăх та, çыртма çук... Çамрăк пулнă, айван пулнă... Шухăшсăр çӳренĕ...

Виолетта. Ну юрĕ, çывăрăпăр... Эп хам та çавăн майлăрах çыпăçрăм çак çулламан пăрăва: вунвиççĕрех хĕртен арăм тунăччĕ пĕр усал та чее çын... Кайран алран-алла кайрăм... Мунчала ланчашкине çаврăна пуçларăм... Пĕрре улттăн çĕрĕпе ура çинче тăраймиех лăскаса ячĕç те, киле çитсен — çакăнтăм... Анне, курса ĕлкĕрсе, пăява касса ячĕ... Чун тени типрĕ манăн çавăнтанпа... вилчĕ... кĕлеткем анчах çӳрет... Хаярланса çитрĕм... Вăхăт-вăхăт никама та шел мар... Хама хам та шеллеместĕп... Вăхăт-вăхăтпа вара темле... темĕскер пурăнмах та хушать, халех ан вил-ха, тет. Паян, ак, паян тĕлĕнмелле кун! Чĕрĕле пуçларăм, пурăнас киле пуçларĕ... Сывалатăп... Гера, тăванăм, ан ятла мана...

Георгий Иванович *(Виолетта пуçне хăйĕн кăкăрĕ çине илсе хурать).* Ятламăп, ятламăп... Эсĕ те ан ятла вара... Çывăр...

Виолетта. Мĕн-и, хывас-и?

Георгий Иванович. Хăвăн ирĕк... Халь эпир сыпнă... Халь юрамасть... Ирпе...

Виолетта. Ăнлантăм, тăванăм, ăнлантăм... Ытарайми сыннăм... *(Георгий Ивановича хытă-хытă ыталать, ĕсĕклесе йĕрет. Йĕрсен-йĕрсен, çывăрса каяççĕ.)*

Тумбочка çинче «шăши куç» çунать, ваннăйран çутă пайăрки пĕчĕк прожектор пек ӳкет. Шăп. Пӳлĕмре будильник тиклетни, урамра çил улани илтĕнет... Тепĕртакран — ваннăйра шыв шампăртатса илнĕ, çын йынăшса янă сасă.

Вадим сасси. Пĕтерчĕç... Пуçа çапса çурчĕç... Тĕп турĕç шуйттан хĕрарăмĕсем... *(Эхлете-эхлете ваннăран тухнă сасă.)*

Ваннăй алăкĕ яри уçăлса каять те, çĕрĕпех çунакан çутăра простыньпе чĕркеннĕ Вадим курăнать. Вăл пуçне питшăллипе яваласа çыхнă, пӳлĕм варринелле тухать. Ваннăй алăкĕ хăй тĕллĕнех хупăнать.

Вадим. Пуç çурăлас пек ыратать... Мĕнпе çапнă вара? *(Пуçне хыпаласа пăхать.)* Эпĕ тăна çухатнă пулмалла çав... Тен, леш тĕнченех çитсе килнĕ? Каçран ĕçнĕччĕ те пулас? Çапла, ĕçнĕччĕ... Арăма ко-ман-дировкăна ăсатрăмăр... Еркĕнĕпе

кайрĕç... Кайччăрах... Ӳпне-питне çаврăнса ӳкчĕр... Кăштах юлман-ши çавăнта? *(Сĕтел патне пырать.)* Аха, пур... *(Черккене коньяк тултарать. Ӳпĕнтерет.)* Ай-яй-яй, хăватлă! Мĕн пулчĕ ку? Элле, ларсан-ларсан, московски эрех коньяка çаврăннă-ши? Тепре те ӳпĕнтерем-ха, атту арăм хăрах куçлă юлма пултарать... *(Ĕçет.)* Та-ак... Аван... Пуç та питех кашлами пулчĕ... Малалла мĕн асăрхама пулать ку сĕтел çинче? Кăлпасси!.. Вунпĕр тенкĕлĕххи... Сăнаман, сăнама-ан... Ăçтан килсе ӳкнĕ вăл кунта? *(Вилкăпа тирсе илет. Çиет.)* Тĕлĕнмелле! Питĕ тутлă-çке. Хек пулăран чылай тутлăрах... Ак кунтах — консерва... Шпрот. Тутанса пăхар-ха, тутанса пăхар... *(Черккине каллех тултарать. Ĕçет.)* Тĕлĕнсе хытса каймалла: шпрот... Ак ку тата мĕн? Кофе! Турăçăм, час ирĕлекенни... Халь ĕненетĕп ĕнтĕ... чăнах та райра эпĕ! *(Ĕçет-çиет, пăхса лармасть.)* Аван, аван... Карашо! Нимĕçле каласан... Пурăнма пулать капла, пурăнма юра-ать... Йӳçĕ ĕçсе тутлă çинĕ хыççăн мĕн кирлĕ-ха пире, арçынсене? Хĕрарăм... Мăнтăр та хитре хĕрарăм...

Тăрса, сĕтел тавра утса çаврăнать.

Темскер, кунтах пек туйăнать çав Верук... *(Кĕтесре тем асăрхаса.)* Ай-пай-пай! Çавă мар-и ку, вырăн çинчи? *(Кравать патнелле кайма тăрать.)*

Çав вăхăтра алăка хыттăн шаккаççĕ. Вадим ăçта чарăннă, çавăнта юпа пек хытса тăрать, масар çинчен тăрса тухнă вилене асилтерет. Татах шаккаççĕ. Вадим шартах сикет, сиксе чĕтреме пуçлать.

Верук сасси. Виолетта, уç, эс таврăннă, терĕ анне! Уç хăвăртрах! Эпĕ, урса кайнă вăхăтра, ваннăйра Вадима çапса пăрахрăм!

Вадим сехĕрленсе ун-кун чупкалать. Пытанмалла иккенне чухласа илсе, каллех ваннăйне чăмать. Алăка тăпсинчен кăларса ӳкересле, тапа-тапа силлеççĕ.

Виолетта! Уç, клуххуй сысна! Упăшку ваннăйра вилĕ выртать!!

Çурма тĕттĕм пӳлĕмре вырăн çинчен сиксе тăнă Виолетта чупкалама пуçлать. Çутă çутса ярать. Георгий Иванович вăранать. Вырăн çинчен тăрса, тумĕсене ярса тытать. Кĕпи-йĕмне, костюмне тăхăнса пĕтернĕ çĕре Виолетта ăна шлепкипе плащне килсе парать.

Виолетта *(чуптуса)*. Тăхăн та, алăк хыçне тăр. Алăка уçнă чух эп çутта сӳнтеретĕп: Верук тĕпелелле иртет, эсĕ тухса шăвăнатăн... Тухан та тӳрех такси тытатăн. Рейс парсан, шăнкăравла... Эпĕ чăматансемпе пырса та çитĕп...

Алăк кукрине пăрăнаççĕ. Çутă сӳнет.

Виолетта. Кам ку? Çĕр варринче мĕн ахăрса çӳретĕн? Мĕн кирлĕ?

Верук *(ĕсĕклесе)*. Эпĕ ку — Верук... Эпĕ каçран Вадима çапса пăрахрăм... ваннăйра...

Виолетта. Мĕн суйланан? Килте çук вăл... Сахалтарах ĕçес пулать... галлюцинаци пуçланнă санăн...

Верук. Уç, уç хăвăртрах, нимĕн те пуçланман, чăнах çапса пăрахрăм!

Виолетта çăраççи уççине шăкăр-шакăр! пăрать.
Кĕртсе, Верука тĕпелелле ирттерсе ярать,
Георгий Иванович тухса шăвăнсан, залра çутă çутать.

Виолетта. Ăнланмалларах кала-ха: кама çапса пăрахрăн эсĕ? Ан хӳхле, сĕлекӳне шăл та çӳçне пуçтар, вара виллӳне кăтарт...

Верук. Вадима... Вăл ваннăйра саркаланса выртать...

Ваннăй патне пыраççĕ, алăкне яри уçса яраççĕ, çутă çутаççĕ.

Виолетта. Ай-вай-вай! Вилнĕ япала мĕнле майпа вара пуçне алшăллипе чĕркеме пултарнă вăл? Простыньпе те витĕннĕ?

Верук *(куççульне çăтса)*. Чăнах та...

Виолетта. Пыр-ха, унта, пăтара, чĕн пиçиххи çакăнса тăрать...

Верук чĕн пиçиххи кайса илет.

Нăшăклама чарăн... Эсреле çиччас чĕртсе тăрататпăр!

Чĕн пиçиххи шăхăрса аннă сасă.

Вадим сасси *(сысна çури пек çухăрса)*. Апапай! Пĕçерет! Ан çап урăх, тархасшăн, хамах чĕрĕлсе тăратăп!

Хĕрарăмсене ураран ӳкересле, ваннăйран залалла тарать...
Хĕрарăмсем шкапран, пĕри швабра, тепри пылесос
наконечникĕ, илеççĕ те Вадим хыççăн вирхĕнеççĕ, ăна,
çарапаккаскерне, сĕтел тавра хăваласа çӳресе хĕнеççĕ.
Вадим ниçта кайса кĕрейми çухăрать — намăс çĕрне пуçĕнчи
питшăллине салтса илсе, кĕске йĕм пек туса, хуплана.

Верук *(Вадима хуса ҫитсе)*. Ак сана ҫурăм!

Виолетта *(швабрăпа Вадима ҫурăмĕнчен сăптăрса)*. Ак сана хырăм!

Вадим *(ҫухăрса)*. Тухатмăшсем! Эсрел качакисем!

Верук. Ак сана — йыт аҫи!

Виолетта. Ак сана — йыт ами!

Верук. Ак сана — Виолетта хĕсĕр!

Виолетта. Ак сана — пĕр сана ҫеҫ юрататăп!

Хĕненине чăтайманнипе Вадим сĕтел айне упаленсе кĕрет. Ăна унта тата хытăрах ăшалама пуҫлаҫҫĕ.

Ваннăйра кĕрешрĕн-и-ха? Мĕнле кĕрешрĕн? Самбо? Каратэ! Джиу-джитсу?

Вадим. Верук айăплă!

Верук. Ак сана — Верук айăплă!

Виолетта. Ак сана — ваннăй!

Вадим сĕтеле ĕҫми-ҫими, чашки-тирки, савăчĕ-сапи мĕнĕпех ҫурăмĕпе ҫĕклет те сцена варрине ҫавăрса ҫапать. Вара лăпкăн ҫеҫ сцена умнелле утса тухать. Хĕрарăмсем хăйсен хĕнемелли хатĕрĕсемпе сцена варрине тăрса юлаҫҫĕ.

Вадим *(малти планра; шĕвĕр пӳрнине тӳпенелле пророк пек кăнтарса)*. Матриархат ҫĕнтерчĕ! Ахăрсамана ҫитрĕ!

Хĕрарăмсем пырса ун хулпуҫҫи ҫине простынь уртса яраҫҫĕ. Вăл халĕ ĕнтĕ чăнах та пророк пекех курăнать. Хĕрарăмсем ун патне пырса, иккĕш икĕ енчен, ăна хулран тытаҫҫĕ.

Пурте пĕрле. Матри-архат! Матри-архат! Матриархат!

Вĕсен ҫумне хальччен ех такси ниепле те тытайман Георгий Иванович шлепкине, плащне хывмасăрах пырса тăрать.

Тăваттăшĕ пĕрле. Матриархат! Матриархат! Матриархат! Матриархат!

Вĕсен сассипе телефон хыттăн шăнкăртатни хутшăнса каять. Самолет хăрушшăн кĕрлесе иртет. Ку сасăсем хыҫҫăн — ҫĕнтерӳ маршĕ. Артистсем залалла пуҫ таяҫҫĕ. Сăн-питĕнче — кулă.

Чаршав

1980, 1989 ҫулсем,
Шупашкар—Мускав.

Стаття та очерк

КĔТРЕТ ÇУТИ

Сăвăçа — пуçламăшĕнче — вăл мĕн иккенне, кам иккенне камăн та пулин — пĕрремĕш хут та юлашки хут — яланлăха каламалла-тăр. Ку — пĕртен-пĕр телей: яланлăха, хăй вăхăтĕнче Бурлюк Маяковскине каланă пек.

Геннадий Айхие чи малтан хавхаланса «уçаканĕ» М.А. Светлов пулнă. Акă мĕн каланă вăл çамрăк сăвăç пирки 1956 çулхи май уйăхĕнче: «Хăйне евĕрлĕ сасă, хăйне евĕрлĕ куç. Эсир мана, ватă йытта, çапла пăлхантарма пултартăр пулсан, хăвăр мĕн тăвас тенине турăр. Питĕ аван, ачамккă, маттур. Ку, — пĕр кулмасăр каласан, чăвашсен яш чухнехи Маяковскийĕ. Сăввăрсенче пурте сулмаклă, кăнттам, куçа курăнмалла вичкĕн. Кăнттамлăхĕ вара ырă енлĕ кăнттамлăх. Тĕнчене пачах хăйне евĕрлĕ куратăр. Сăнарăрсем питĕ илемлĕ, куçа тăрăнса аптратмаççĕ. Кун пеккине куçарма эпĕ пултараймастăп, çав тери йывăр ĕç, хал çитмесрен хăратăп, анчах та куçарасах пулать. Чи лайăх тăлмачсем тытăнĕç-ха вăл ĕçе. Ахматовапа, Маршакпа паллаштармалла сире. Сăввăрсенче — хавхалануллă уçăмлăх. Пысăк юрату...»

Каярах, 1961 çулхи сентябрьте, «Литературная газета» хаçатра Михаил Аркадьевич çапла çырать: «Ырă çул пултăр! Поэт яшлăхĕ — хупă чӳрече-ха, анчах та хуппи çурăкĕсенчен хĕвел çути кĕрет. Литература институтĕнче семинарсем ирттернĕ вăхăтра эпĕ Геннадие çав хĕвел пайăркисемпе танлаштараттăм, яшлăхне хĕвел кĕрсе çап-çуттăн çутатасса шанаттăм. Ĕç ямб, хорей тата ытти виçесене алла илнинче мар. Вăл виçесемпе çырма эпĕ кирек хăш вулама-çырма пĕлекенех вĕрентме пултаратăп, уншăн хаклă та илместĕп. Çамрăк поэтра чи кирли вăл мар. Чи кирли — сăвăç хăй ешĕллĕхĕн пăтранчăклăхне тăрăлтарса, çĕнтерсе, совет поэзийĕнче уççăн палăрма пултарни.

Геннадипе ĕçлеме кăткăсчĕ. Апла чĕнме пачах юрамасан та, эп ăна, шӳтлесе, «совет Бодлерĕ» теттĕм. Вăл, сăмахран, йытта ахаллĕн кăтартса пама пултараймĕччĕ, ăна ихтиозавр пекрех япала туса ытти йытăсенчен урăхла вĕртернĕ пулĕччĕ.

Эпĕ темиçе çул хушши вĕренекенĕме курмасăр пурăнтăм. Илтнĕ тăрăх, çаплах нумай çырать иккен, нумай ĕçлет, хăй çĕрĕнче Твардовскин вăл куçарнă «Теркинĕ» чăвашла тухнă.

Халь çеç Геннадийĕн çĕнĕ сăввисене вуларăм. Тавах ăна ман ĕмĕте тӳрре кăларнăшăн...

Эсир те вуласа пăхăр çав сăвăсене: ăслă, талантлă, тĕлĕнмелле çĕнĕлле çырнă, пуринчен ытла — этемле. Çапла пултăр тесе тăрăшаттăм та эпĕ: Геннадий сăввисенче этемпе поэт пĕр пултăр теттĕм...» (М. Светлов. «Геннадий Айхи сăввисем»).

Çакăн хыççăн Айхи сăвăç малашне те лирине ăста каларĕ, вĕрентекенĕн, Ленинла преми лауреачĕ Михаил Светловăн ятне ямарĕ, чыслăн упрарĕ, Чăвашъеншĕн çеç мар, пĕтĕм çĕршывшăн паллă ят пулса тăчĕ. Çĕршывшăн кăна-и, Европăшăн... Чăваш совет поэчĕ Геннадий Айхи сăввисене халь поляксем, чехсем, словаксем, венгрсем, французсем, тĕрĕксем, акăлчансем, бразильсем, нимĕççем хăйсен тăван чĕлхипе вулаççĕ, сăвăç пултарулăхĕ пирки нумай калаçаççĕ, çыраççĕ. Айхи тăрăшнипех чикĕ леш енчи чи чаплă поэтсен произведенийĕсем чăвашла янраççĕ. Çав поэтсен шутне Петĕфи, Лорка, Данте, Шелли, Уитмен, Вийон тата ыттисем кĕреççĕ. Вырăссенчен Тютчев, Маяковский, Блок, Пастернак, Твардовский сăввисемпе поэмисем хамăр чĕлхепе шăранаççĕ.

Геннадий Айхи сăввисем вырăсла «Новый мир», «Литературная газета», «Литературная Россия» тата ытти хаçатсемпе журналсенче çапăннă, унăн словакла «Сылтăмри хĕрарăм» (1967), чехла «Кунта» (1967), полякла «Пĕрремĕш юр каçĕ» (1973), венгрла «Ăрăмçă тăхăмĕ» (1974) ятлă сăвă кĕнекисем тухнă. Словакла тухнă кĕнекене ырă хак парса Душан Слободник критик «Регистра анлăлатни» ятлă пысăк рецензи çырнă. «Çамрăк чăваш Айхи совет поэзине нумайсасăлăх (полифоничность), нумайвиçелĕх (многомерность) кӳрекенсенчен пĕри», — тенĕ рецензире.

Чехла сборнике Зденек Матгаузер «Руде право» хаçатра рецензиленĕ: «...Уçăмлă сăнарсемлĕ нумай сийлĕ поэзи, питĕ сисĕмлĕ, çĕкленӳллĕ. Айхи е микрокосмоса макрокосмос туса ярать, е пĕр-пĕринчен питĕ аякра тăракан тупсăм сферисене пĕрлештерет», — тесе çырнă вăл унта («Руде право», ноябрĕн 3-мĕшĕ, 1967).

Поляксем те чăваш сăвăçне хисеплеççĕ, ăна 1962 çултанпах пĕлеççĕ. «Чикĕсене сарни» статьяра Флориан Неуважный критик: «Сăмахсем пулăшнипе поэзи этем тĕлĕнĕвĕн чиккисене сармалла, шухăшăн, туйăмăн, кăмăлăн, ĕмĕтĕн, пĕтĕм пурнăçăн рамкине анлăлатмалла. Çавна Айхи лайăх ăнланать», — тет («Нове ксенжки» журнал, № 5, 1974).

Венгрла тухнă кĕнекен хыççăмахне Жужа Раб çырнă. Унта çакăн пек каланă вырăн пур: «Айхи хăй халăх культурин авалхи пуянлăхне çĕнĕ идейăсемпе çыхăнтарать. Унăн сăввисем — хăй халăхĕн авалхи кĕввисемпе хальхи ĕмĕчĕсен пĕрлешĕвĕ. «Ирĕклĕ сăввисем» (верлибр) хальхи Франци поэзийĕпе тачă çыхăннă, чăвашсен авалхи сăввин виçипе, поэзийĕпе пуянланнă».

Геннадий Айхи Франци поэчĕсене тӳрех французларан куçарса 1968 çулта чăвашла уйрăм кĕнеке туса кăларни тăван республикăшăн çеç мар, пĕтĕм Европăшăн тенĕ пек савăнăç пулчĕ. Антологие 15—20 ĕмĕрсенчи 77 сăвăç кĕнĕ. «Франци поэчĕсем» кĕнеке тăван поэзире уйрăмах палăрса тăракан ĕç пулса тăчĕ. Ахальтен мар ун çынлăхне, куçару ăсталăхне, чĕлхе пиçĕлĕхĕпе сĕткенлĕхне Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай пысăк хак пачĕ. Чăваш литературипе искусствин ытти ĕçченĕсем те çакнах палăртрĕç. Франци поэзине пирĕн çĕршывра пуçласа çапла туллин кăларнине СССР писателĕсен Союзĕ те ырăпа асăнчĕ. Ăнăçлă ĕçе саламласа, тăванла республикăсемпе çĕршывсенчи паллă поэтсем, куçаруçăсем ăшă сăмах каларĕç. Куçарусем çинчен пичет те нумай çырчĕ.

Халăхсен туслăхне çирĕплетме пулăшнăшăн тата çулталăкри чи ăнăçлă куçару тесе, Франци Академийĕ Геннадий Айхие «Франци поэчĕсем» кĕнекешĕн 1972 çулта преми памалла турĕ. 1974 çулта Чăваш кĕнеке издательстви кăларнă «Венгри поэчĕсем» антологи те Айхи тăрăшнипе пулнă япала. Хальхи вăхăтра Айхи чăваш поэчĕсен антологине Франците кăларас ĕçе вĕçне çитерсе пырать. Çав кĕнекенех кайран Польшăра, Венгрире кăларас пирки калаçу пырать.

Айхин Шупашкарта, хăй çырнисем, чăвашла тăватă кĕнеке тухнă: «Аттесен ячĕпе» (1958), «Пĕтĕм пурнăçшăн çĕкленнĕ музыка» (1962), «Утăм» (1964), «Палăрăм» (1971). «Чĕрĕ тĕвĕ» — авторăн пиллĕкмĕш кĕнеки. Айхи, хăшпĕрисем пек, сăввисене çырнă-çырман кĕнеке туса кăларасшăн издательствăсене чупмасть, вĕсене вăхăтпа тĕрĕслет: лайăх сăвă нумай çул иртсен те лайăхах янăрать, вилĕ çуралнă сăвва çав куннех пичетлесен те вăл чĕрĕ пулаймасть.

«Чĕрĕ тĕвĕ» алçырăвĕн тĕп пайне сăвăç 1957 çулта çырнă, вăл — Айхин Литература институтĕнче хӳтĕленĕ диплом ĕçĕ, ăна поэзие ăста пĕлекен çынсем ун чухнех пысăк хак панă. Михаил Светлов, сăмахран, ĕçе çапла хакланă: «Это отличный, при неизбежных недостатках, диплом». Унтанпа автор

сăвăсен пуххине татах лайăхлатнă, юсанă, ҫĕнĕ сăвăсем нумай хушнă. Халĕ вăл, куратăр ĕнтĕ, виҫĕ пайран тăрать: «Этем пĕлтерĕшĕ», «Кăчкă турачĕ» тата «Лирикăллă поэмăсем».

«Эп тӳррĕн калаҫасшăн, — тет поэт малтанхи пайра. — Чун ҫулĕпе пыма ирĕклĕрех пуль маншăн». Ҫав ҫулпа пырса, вăл ăна йĕркеллĕн, васкамасăр сăнать, унта мĕн курнине малтанах йăлт каласса та сунмасть. Ҫапах та шанать сăвăҫ:

Чун ҫӳллĕшне сиссе,
ăс ирĕклĕн сас парĕ,
хăй хăватне пĕлсе,
ҫирĕпленме пултарĕ.
Систерĕ чун вăйне
сăмахăн вăй-хавалĕ,
чĕре тĕпченине
тусăмсене вăл калĕ.

Чăн та, ҫакă чăнласах ҫапла пулнине сборнике малалла вуласан куратпăр. Чун ҫулĕпе пырса, поэт этем пĕлтерĕшĕ пирки шухăша каять: «Этем пĕлтерĕшне чакми тумашкăн пур ырă вăй пĕрлешрĕ тĕнчере, — тет вăл. — Шăпамăр пирĕн — ҫак кĕрешӳре чи малтисем, ҫынлăхлисем пулмашкăн». Айхин В.И. Ленина, Чăваш ҫĕршывне, космонавт амăшне А.А. Николаевана, Алтайри ҫĕнĕ ҫĕр ĕҫченĕсене сума суса ҫырнă сăввисем ку пайра уйрăмах витĕмлĕ те килĕшӳллĕ янăраççĕ. Тăнăҫлăха мухтакан, вăрҫа ылханакан сăввинче вăл ҫапла калать:

Ҫĕршывăн вĕҫсĕр ҫирĕплĕхĕнче
эпир халь, вăрҫă хыççăн ӳснисем,
мĕнпур ҫирĕплĕхĕмĕре туятпăр.

Малалли сăввисенче поэт Шандор Петёфине, Константин Иванова, Иакинф Бичурина ырăпа асăнать, вĕсен вилĕмсĕрлĕхне савса мухтать.

«Кăчкă турачĕ» — Оксана Деметера сума суса, тав туса халаллана пай. Кунта йăлтах — музыка та ҫутă; ăстăн шыравĕ тахҫан сунни, шанни; чĕр туйăмăн пăлхавĕ ӳсни, тăнăҫланни; Килĕшӳпе Илемрен, Юратуран килекен телей хуҫаланни... Анчах ҫак телей пĕтме те пултарать иккен, ăна упрас, ҫĕнетес пулать. Юрату та ҫутҫанталăк пек, тĕнче пек ҫĕнелсех, чĕрĕлсех пытăр, тет Айхи:

Тен, ҫĕнĕлĕх кăшт урăх пуль ҫынсен?
Анчах та пĕл эс: Ҫĕнĕлĕх пурах...

Кĕнекене илем кӳрекенни, унăн чи пысăк ăнăҫлăхĕ — унта кĕнĕ икĕ лирикăллă поэма: «Чĕрĕ тĕвĕ» тата «Пуҫламăшĕ».

Лирикăллă япалара сюжетпа композици йĕрне тупма çăмăлах мар, Айхи ĕçĕсенче вара уйрăмах йывăр, вĕсене шухăшпа туйăм аталанăвĕнче, вĕсем мĕнле çуралса ӳссе пынинче шырас пулать, çапах та, епле кăткăс пулин те, тупма пулать. «Чĕрĕ тĕвĕ» поэмăн содержанийĕ — кӳтсе çитнĕ чун, лайăх çынсем енне туртăннă май, епле лăпланса, вăй илсе, çуталса, çирĕпленсе пыни. Поэмăра чунсăр, çемçе алăллă сивĕ çынсем çинчен те калать автор, тĕнчене тĕрĕс çулпа яракансем вĕсем мар, тет, хаяр çапăçусенче пуç хунă паттăрсене çине-çинех асăнать. Çынсем сана шанччăр, ĕненччĕр тесен, санăн хăвăн та ялан ирĕклĕ те çутă, илемлĕ, çӳллĕ чунлă пулмалла, тет. Кайăксем пек алăсемшĕн эрех черкки çĕкленĕ пĕр тăсланкă çамрăкран тăрăхласа кулать, яш чух хăй ун пек алăсем курманни, пархатарлă алăсем вĕсем марри çинчен çырать:

Хĕл варринче ĕне кӳлсе,
тĕл-тĕл кĕренленсе хуралнă,
кӳтсе тăртаннă алăсем
пĕрре те кайăксем пек марччĕ.

Ăру ахлатнă пек тапраннă амăш юрри ун асĕнче. Чун калăпăшĕ пек упранĕ çак юрă, вăрçă вăхăтĕнчи йывăр вăхăтсем нихçан та асран тухмĕç. Тĕрĕслĕх — Тĕнче Пуррин çути. Чăн юрату — тĕрĕслĕх. Шанчăклă, вĕри, çирĕп алăсем — тĕрĕслĕх. Вăл пирĕн Атăл та, анне те; пире çĕршыв пек, пурнăç пек кирлĕ.

Айхи пултарулăхĕшĕн чи характерлă тепĕр поэма — «Пуçламăшĕ». Авторĕ хăй те çаплах шутлать. Акă мĕн çырать вăл кун пирки редактор патне янă çырăвĕнче: «Хама эпĕ — хальхине те — çакă икĕ япаларан пуçланнă тесе шутлатăп. Ман шутпа, хама кура, — маншăн характерли, мана мĕн кирли çав япаласенче тупăнчĕ...»

«Пуçламăшĕ» те, умĕнхи поэма пекех, витĕрех лирикăллă произведени. Вăл сакăр сыпăклă. Кĕске содержанийĕ çакăн пек: куç сарăлать, куç уçăлать, тĕнче сарлакаланнă май, куçсем, йывăрланса та юнăхса, ăна курма пуçлаççĕ, тĕрлĕрен тĕссене уйăраççĕ, чуншăн чи çывăх тĕссене тупаççĕ, — вĕсем — çав тĕссем — савни куçĕсем.

Пĕр вĕсенче çеç маншăн халь
ялтраççĕ эп ăнланмалли
чĕлтĕртетсе çунан тĕссем,
мана вĕсем асилтереççĕ
эп, ывăнсан, куçа хупса,
таçта хамрах, хам витĕрех,

манрах ҫӗкленнӗ тӗссене
хам ӑнланса тинкернине...
Эп сан куҫусенче кӑна
упрайӑп вӗсене, — унта ҫеҫ
вӗсем пӗлтерӗҫ пурнӑҫа...

Сассен пӗлтерӗшӗ... Пӗрченлӗхрен тухасшӑн ӑнтӑлса кӑшкӑрнӑ сасӑ... Чунӗ ачаранпах епле аталанса пынине ҫывӑх ҫынна каласа пама тӑрӑшни, пӗрченлӗхрен, вилнӗ пек хытса кайнӑлӑхран хӑрани, вӗсенчен хӑтӑлма тӑрӑшни...

Ҫут тӗнче илемӗ, унӑн тупсӑмӗ — хускану, куҫӑм, тесшӗн поэт. «Эпӗ кӗрлев ҫуралнине ялтетӗп», — тет вӑл, савнине те, пуҫласа юратнӑскерне, лешӗ хусканура чухне, вӑл калаҫнӑкулнӑ, утса ҫӳренӗ хушӑра, ытларах савать.

Сисрӗр пулӗ, поэмӑри тӗп тема — пирвайхи юрату. Ун ҫинчен проза чӗлхипе пӗчӗк статьяра каласа пама питӗ йывӑр, май та ҫук темелле. Произведение ху аллупа тытса, ху куҫупа вулас пулать, ун чухне ҫеҫ туйӑм-сисӗм, шухӑш пӗри теприне мӗнле куҫса е пӗри теприне мӗнле ҫӗнетсе, пуянлатса, улӑштарса пынине, аталантарнине е пӗтерсе лартнине чунпа туйса илме пулӗ. Лирикӑлла геройӑн пирвайхи юратӑвӗ ӑнӑҫман, анчах та вӑл унра пурпӗрех калама ҫук пысӑк телей туйӑмӗ, кӗтрет (чудо) ҫути хӑварнӑ.

Ҫак икӗ поэмӑн лирикӑлла пӗлтерӗшӗ питӗ пысӑк. Кун пек тарӑн та анлӑ, витӗмлӗ те килӗшӳллӗ, ҫӗнӗлле ҫырнӑ произведенисем поэзире нумай мар. Назым Хикмет 1956 ҫулта Польшӑра пулса иртнӗ поэтсен симпозиумӗнче «Чӗрӗ тӗвӗ» поэмӑна вуласа панӑ, ҫавӑнтанпа поляксем Айхие пӗлекен пулнӑ, пичетлеме пуҫланӑ. Хикмет каярахпа ҫапла каланӑ: «Чӗрӗ тӗвӗ» пек япаласем тӗнче литературинче пулнӑ, «Пуҫламӑшӗ» пекки пулман». Франци сӑвӑҫӗсемпе туслашса каясси те Хикметпа ҫыхӑннӑ. Вӑл шутланӑ тӑрӑх, Айхире бодлерлӑх пур иккен. Бодлерӑн тӗп палли — драматизм. Айхи те драмӑна юратать, ҫырнӑ чух тӳрех хатӗр выводсем тӑвасшӑн мар, малтан кӑткӑс ыйту лартать, вара пӗтӗм кӑткӑслӑхсене ҫӗнтерсе, пуҫласа уҫӑмлатнӑн, ыйтӑва уҫӑмлатма тӑрӑшать. Ҫапла вара лирикӑллӑ туйӑм яланах уҫӑмлатмалли, татса памалли пысӑк ыйту пек тухса тӑрать. Айхин, пысӑк поэт пулнӑ май, халӑхран пыракан хӑйъевӗрлӗх (оригиналлӗх) пур, ҫав вӑхӑтрах «элюарлӑх» сисӗнет, эстетизм пурри палӑрать, хӑш чух унран хӑпас та пулать. Вӑйпиттиленсе пынӑ май, поэт ҫавна хӑй те аван туять, ҫитменлӗхсенчен хӑтӑлма тӑрӑшать. Тӗлӗнӳпе артистизм

пысăк пулни, халăх пурнăçĕпе, поэзисĕр пуçне музыкăпа, живописпе, философипе тăтăшах интересленни, ĕçченлĕхпе ăсталăха тăван халăхран тата тĕнче корифейĕсенчен вĕренсе пыни Айхи поэзине яланлăх илемлĕ те чĕрĕ хăварассăн туйăнать.

Хикметсĕр пуçне поэт ĕçне Пастернак, Евтушенко, Ахмадулина, Шкловский, Митта Ваçлейĕ пысăк хак панă, чикĕ леш енчи туссем те ăна хапăлласах йышăннă.

Çеçпĕле чунран хисеплекенскер, Айхи хăй те çырас ĕçре, уйрăмах «хурăма пултарассинче», çĕнĕлĕхсем чылай турĕ. Ку тĕлĕшпе халь асăннă икĕ поэма питех те интереслĕ. Пирĕн поэзири строфасен, вĕсен ăшĕнчи, синтаксисĕ, ытла та классикăлла хытса çитнипе, шухăш-кăмăла, чун калаçăвне, чун ритмне ирĕк паман пек, строфасен тăватйĕркеллĕ читлĕхне хупса лартса пынă пек туйăнатчĕ. Строфа читлĕхĕнче вара яланах икĕ «кайăк»: 1—2-мĕш йĕркесем — пĕр сăмахçаврăнăшĕ, 3—4-мĕш йĕркесем — тепре. Уçасах, çĕмĕресех килнĕ сăвăçăн çав читлĕхе. Читлĕх мар, пур çилсене те, пур шывсене те ирĕклĕн йышăнакан пурнăç лапкăшĕсем-талккăшĕсем тăвас килнĕ. Çавăнпа сăвăç, синтаксис элеменчĕсене читлĕхрен кăларса, ирĕклетме, пиçĕлетме, сарлакалатма тăрăшнă. Шалтан тĕртсе тăракан канăççăр хистевпе кисренӳ Пастернак энергийĕн кусăмĕ-хусканăвĕпе çыхăннă пулĕ.

Тепĕр ен — психологиллĕ туртăм, сăмах йывăрăшне ӳстерес тени, унăн калăпăшне, виçине, сулăмне ӳстерес килни. Айхие вулама çăмăлах марри ытларах çакăнпа çыхăннă.

Абстрактлă-философиллĕ терминсене чăвашла шырани, чăваш поэзине кĕртес тени те пархатарлă, çĕнĕ туртăм. Çав терминсене тумасăр, тупмасăр Митта «кун пек япаласем» теме юратнă субстанцисем (вăйсем) çинчен çырма май çукчĕ. «Чудо» тени чăвашла мĕнле пулнине те лайăхах пĕлместĕмĕр-ха эпир. Хăшĕсем ăна кавычка лартса «чудо» тесех çыратчĕç; чăвашсем вара авалтанпах кĕтрет тенĕ иккен.

Кĕске статьярах пысăк поэтăн пултарулăхĕпе пурнăçне тĕплĕн пăхса тухма пачах май çук. Вулакана вăл кам таврашĕ иккенĕ те, ăçта çуралса ӳссе çын пулни те интереслентерет, шухăш-кăмăлĕ епле пиçсе çирĕпленни те канăç памасть. Пуçларăмăр пулсан, малашне ыттине те пĕтĕмпех каласа кăтартăпăр-ха. Турă майне парсан, паллах...

1974 çул, август.

ЭП — ÇЕÇПĔЛÇĔ!

Асту-ха, вулаканăм, ача чухне е яш вăхăтра эсĕ сăвă çырман-и? «Çырман», — тейĕн те, çакă тĕрĕс мар пулĕ, çавăнпа та эсĕ куçкĕретех суйнăран аванмарланса, вăтанса кайăн: çырнă! Çырнă çав, пĕр сăвă та пулин, пĕр строфа е пĕр йĕрке те пулин çырнах! В.И. Ленин, ав, мĕн тери урă та çирĕп ăслă этем, пурнăç çине ытла та тăрă ăс-тăнпа пăхакан философ, политик, «тимĕр» логикăллă çын та Çĕпĕртен амăшĕ патне янă пĕр çырăвĕнче: «На горизонте — Саянские горы или отроги их; некоторые совсем белые, и снег на них едва ли когда-либо стаивает. Значит, и по части художественности коечто есть, и я недаром сочинял еще в Красноярске стихи: «В Шуше, у подножия Саяна...», но дальше первого стиха ничего, к сожалению, не сочинил!» — тет («Письма В.И. Ленина к родным» кĕнеке, Политиздат, Мускав, 1977, 40 стр.). Карл Маркс яш чух тĕлĕнмелле лайăх сăвăсем çырнине пурте пĕлетпĕр ĕнтĕ. Мао Дзэдунăн вунсакăр сăввине Хусанкай чăвашла куçарса кĕнекен кăларнăччĕ. Стаднюк «Война» романĕнче çырнине ĕненес пулсан, вунултă çулхи Иосиф Джугашвили сăввисем, грузин литературин ырă тĕслĕхĕсем пулса, сăмах теорийĕн пособийĕсене, хрестоматисемпе грузин чĕлхин учебникĕсене лекнĕ.

Ходил он от дома к дому.
Стучал у чужих дверей —
Со старым дубовым пандури,
С нехитрой песней своей.

А в песне его, а в песне,
Как солнечный блеск, чиста,
Звучала великая правда,
Возвышенная мечта.

Сердца, превращенные в камень,
Заставить биться сумел.
У многих будил он разум,
Дремавший в глубокой тьме.

Но вместо величья и славы
Люди его земли
Отверженному отраву
В чаше преподнесли.

Сказали ему: «Проклятый!
Пей — осуши до дна...

И песня твоя чужда нам,
И правда твоя не нужна!

(И. Стаднюк, «Война»,
Сов. писатель, 1985, 583 стр.)

Çапла янăрать Джугашвилин юлашки сăвви. Кун хыççăн вăл урăх пĕр йĕрке те çырман, Джугашвили пулма та пăрахнă... Сталин пулса тăнă. Сталин камне вара эпир паян ытла та аван пĕлетпĕр — пин çулта пĕрре çеç çуралакан диктатор-палач, хăрушă çын... Çавăн пекех историре авалтанпах тĕрлĕрен ытти патшасемпе хансем, императорсем, ăсчахсемпе политика деятелĕсем те поэзи уйĕнче палăрмаллах çирĕп тăрăшни паллă. Эпир, ахаль çынсем тесен ĕнтĕ, хăшĕ-пĕри, хамăр çырман пулсан та, çын çырнине те пулин, альбомсене куçарса илнисем йĕркеренех пулнă вара. Халĕ те вăл çапла, малашне те çаплах пулĕ, пиншер яш-кĕрĕм сăвă çырĕ е ытти-сем çырнине хавхаланса вулĕ: тӳпере асамат кĕперри йăлтăраса кайтăр тесен, тӳпен хăйне майлă лару-тăру пулмалла. Яшлăх — этем чунăн çавăн йышши лару-тăрăвĕ ĕнтĕ вăл. Эпир асамат кĕперĕ çине пăхса киленетпĕр, киленме васкатпăр, мĕншĕн тесен вăл халь тесен халь çухалма, ирĕлсе пĕтме пултарать...

Пиншер çамрăкпа хĕр, çитĕнсе пынă май, хăйсен чунăн самантлăх асамачĕпе ĕмĕрлĕхех сывпуллашаççĕ, урăх унпа нихçан та тĕл пулса çĕнĕрен туслашмаççĕ. Урăхла каласан, сăвă çырмаççĕ, çын çырнине хавхаланса вуламаççĕ, çыра-çыра илмеççĕ. Мĕн пулчĕ-ха? Ним те пулмарĕ, «асамат кĕперĕ» çухалчĕ çеç...

Чăн-чăн поэт çеç пĕтĕм çут тĕнчене хăй витĕр кăлараслăх телейлĕ пултарулăхне упраса хăварма пĕлет, çут тĕнче сăрĕсен пуянлăхĕпе çĕнĕлĕхне ывăнми тишкĕрет. Çавăнпах пуль ĕнтĕ, иртет пулин те, вăхăт поэтшăн иртмен пекех тăрать. Поэт, хальхи пурнăçра туллин те тимлĕн пурăнса, унтах иртнине те, пулассине те кĕртсе яма мел тупать.

Чăн-чăн поэта тӳрех темиçе енлĕ куратăн е туятăн. Нумай шăнăçулăх тата чикĕсĕр вĕçĕ-хĕррисĕрлĕх — çакă пулать пуль ĕнтĕ вăл искусство произведенине искусство марринчен уйăрса тăраканни? Поэтăн ăнăçсăр япаласем те пулма пултараççĕ, вĕренчĕкле е ытлашши «маçтăрла» çырнисем, анчах та пĕр япалана яланах асра тытмалла: туйса тăр — сан умăнта поэт, урăхла каласан, уйрăм чун пахалăхĕллĕ, чĕр пурнăçа çĕкленӳллĕн те илемлĕн курма пулăшакан темле вăйсемлĕ çын.

Ак мĕн калас килчĕ хам пирки сăмах хускатас умĕн вулакана. Тен, хамăн чăваш поэзийĕнчи вырăна палăртса аппаланмăп та эпĕ, иртерех пуль, малашнехи шăпама палăртма та май çук пулĕ, анчах та хам çырма мĕнле пуçланине, мĕнле вĕренсе пынине каласа хăварма тивĕçĕм пур пек туятăп.

Вулама эпĕ пилĕк çултах вĕрентĕм. Хусанта «Хĕрлĕ ялав» хаçат тухса тăратчĕ, ăна ялĕпех çырăнатчĕç. Анне тăватă, атте икĕ класс пĕтернĕ çынсемччĕ. Малтан хаçат ячĕн саспаллийĕсене аннерен ыйтса пĕлтĕм: «х», «ĕ», «р», «л», тата ытти те. Çапла вара алфавитăн малтанхи саспаллине («а») эпĕ юлашкине («я») вĕреннĕ хыççăн çеç вĕрентĕм. Шултран «Хĕрлĕ ялав» тенине вулакан пулнăскер, вĕтĕрех çырнă сăмахсемпе текстсене те часах шыв пек юхтарса вулама пикентĕм. Шкулта пĕрремĕш класра ытти ачасем «а-а», «бе-е» тесе вĕренсе ларнă вăхăтра эпĕ, парта айне пытарса, «Нарспи» вулаттăм, каярахпа алла такам чăвашла куçарнă «Том Сойер темтепĕр курса çӳрени» лекрĕ.

Атте фронтран сулахай хулне хытă амантса таврăннăччĕ, çĕрле колхоз кĕлечĕсем патĕнче хурал тăратчĕ, каçран çула май вулав çуртне кĕме юратнă пулмалла та, ирхине эп ыйхăран вăраннă тĕле пуç вĕçне тем чул кĕнеке килсе хуратчĕ. Аслă ывăлне вĕреннĕ çын тăвасси килнĕ пуль ĕнтĕ, хам вĕренеймесĕр юлнине ывăл вĕрентĕр, тенĕ пуль. Проза хушшинче поэзи те сиксе тухкалатчĕ. «Сывлăм» ятлă сăвă кĕнекине вуланине астăватăп. Пĕр сăвви, «Манас çук эс ăна» ятли, мана уйрăмах килĕшнĕччĕ, эпĕ ăна, пăхмасăр калама вĕрентĕм те, пĕр уяв концертĕнче клубра пĕтĕм халăх умĕнче сцена çинчен янтраттартăм. Анне çавна халь те астăвать:

Пушă мар, çăмăл мар çав салтакăн хутаçĕ —
пĕтĕм пурлăх пырать хăвпала яланах, —

тет те куçне шăлкалама пуçлать, вăрçăра пуçне хунă куккапа ытти тăванĕсем чунне ыраттарса аса килеççĕ ĕнтĕ.

Эпир вăрçă хыççăн ӳсрĕмĕр те, пурнăç çав тери йывăрччĕ. Çуркуннех хĕрӳ ĕç пуçланатчĕ те мĕн хура кĕркуннечченех пуç çĕклейми тĕрмешетчĕ колхоз ĕçĕнче халăх, хĕвел ансан тин хăйĕн килти ĕçне пуçăнма май тупатчĕ, маларах пуçăнсан, уполномоченнăйсем («полномочисем») пырса е аттен пурттине, е аннен çавине, кĕреçине туртса илсе аврисене çапса хуçатчĕç, хăйсене тĕрмене ярассипе хăрататчĕç. Ялти чи хăрушă сăмах пысăккисемшĕн те, ачасемшĕн те «полномочи» сăмахчĕ, тата — «милици».

Атте-анне ерçейменнипе, пĕчĕк чух пире ытларах асанне, утмăлсенчен тахçанах иртнĕ Агриппина Емельяновна, Турхан Крахвини, асăрхаса, пăхса тăнă. Пĕрре кĕркунне пирĕн купăста патне кӳршĕсен качаки вĕренчĕ. Асанне ывăнса çитрĕ те качакана хӳтерме мана хушрĕ. Пĕтĕм шăтăк-çурăка питĕрнĕ — ăçтан кĕрет качака? Ултă хутчен хӳтерсе кăлартăм, лачкам тара ӳкрĕм, качака ăçтан йăпшăнса пахчана кĕнине пĕлтĕм-пĕлтĕмех — вутă шаршанĕ çинчен тăратма çатан урлах ярăнтарать иккен. Юлашкинчен пуçа усса асанне патне таврăнтăм та, асаннене:

Кӳршĕ качаки хушка.
Хушăка вăл хĕсĕннĕ.
Ме-ке-кек! тет качака,
Эх! теп выльăх мĕскĕнĕ!
Ун патне эп пытăм та
ăна туртса кăлартăм,
унтан вăрçма тытăнтăм,
çапла сăмах каларăм:
— Урăх капла юрамасть
Купăста пуç кăшлама,
пахча картине хуçма,
çимĕçе сиен тума.
...Унтанпа усал хушка
улттă сикрĕ пахчана,
пахча картине хуçса
Купăста пуç кăшлама, —

терĕм те, асаннен куçĕ чарăлса кайрĕ: «Ах, эс мăшкăллашса тăратни-ха, каттăршнăй ачи!» — тесе пĕррех хăмсарчĕ йĕтĕрпе, чутах чĕлхесĕр тăватчĕ. Эпĕ каллех качака хӳтерме чупрăм, каçхине хăй çутсан, такмака хаçат татки çине çырса хутăм. Çак ĕç 1949 çулхи кĕркунне пулса иртрĕ, чăваш хушшинче çĕн сăвăç çуралнине манăн вулама та, çырма та пĕлмен асанне сисмесĕрех тенĕ пек юлчĕ. Кайран тин, нумай çул иртсен, эпĕ университет пĕтерес умĕн, сакăрвуннăран иртнĕскер манран: «Эсĕ, Мишша, ачам, çав Хусанта мĕскере вĕренсе çӳрен çак?» — тесе ыйтрĕ. — «Такмак çырма, асанне, сăвă çырма». Çакна илтсен, асанне питĕ кăмăлсăрланчĕ: «Хă-ă, апла иккен, эпĕ сана ырă çынах пулĕ тенĕччĕ, пулаймарăн иккен, эсĕ ун пек иккен, юрĕ ĕнтĕ, мĕн тăвăн, тур çырнинчен иртме çук»...

Каярахпа «Качака» «Малтанхи юр», «Фонари» кĕнекесене кĕчĕ, «Пионер сассипе» «Хатĕр пулта» та çапăнчĕ. Шел пулин

те, асаннене вуласа кăтартаймарăм эп ăна, вăл 1967 çул çĕре кĕчĕ. Малтан эпĕ сăввăмсене ăшра кĕвĕлеттĕм, çавăнпа та чылайăшĕ, хут çине ӳкеймесĕрех юлса, манăçнă. Сăмахран, 1949 çул çырса хунă сăвă тепре çеç — «Тантăшсем», 50-мĕш çулта вара чылай: «Хĕлле», «Хĕл пулсан», «Мулкач», «Ир пулсан», «Хурăн», «Çырма» тата ыт. те. Çавăнтанпа хама килĕшнĕреххисене эпĕ хут çине çыркаласа хума пуçларăм, 1953 çулхи çулларан вара калав та çыркалама хăтлантăм. Вăл вăхăтра лапăртатнисенчен «Аслатиллĕ çумăр хыççăн», «Саврăшпуçĕн, ай-хай, савăк тĕнчи», «Вырсарни каç» калавсем каярахпа пичетре те тухрĕç.

Асанне каларăшле, «турă çырнинчен» иртсе пулмарĕ — 1956 çулта пирвайхи хут «Хĕрлĕ ялав» хаçатра (каллех — «Хĕрлĕ ялав»!) пичетленсе куртăм. Вăл вăхăтра унта ĕçленĕ В. Моисеев ман пата январĕн 4-мĕшĕнче ак мĕнле çыру янă пулнă: «Егоров юлташ! Сирĕн «Ни унта, ни кунта» сăввăра хаçатра пичетлерĕмĕр, чĕлĕм туртакан çинчен çырнине те кăшт йĕркелесе пичетлеме хатĕрлесе хутăмăр. Ыттисемпе усă кураймастпăр. Хаçат номерне ярса паратăп. Пысăк писатель пул! Ырă сывлăх, телей, ăнăçлăхпа пултарулăх сунса — В. Моисеев». Çак этем пирĕн кӳршĕ ял çынни пулнă иккен те, çавăнпа мана «ыр суннă» вăл. Сăвви каярахпа «Малтанхи юр» кĕнекене кĕчĕ.

Кӳршĕ ял çынни мана чăнах та ырă сунни унăн тепĕр çырăвĕнчен те лайăх курăнать. «Егоров юлташ! — тет вăл каллех хăйĕн мартăн 7-мĕшĕнче çырнă çырăвĕнче. — Сăввăра пăхса тухрăм. Ун çине хăшпĕр паллăсем туса каялла ярса паратăп. Çапла туни сире ăнланса илме лайăхрах пулĕ. Сăввăра тăрăшсах йĕркеленĕ. Сирĕн сăвă çырас енĕпе пултарулăх та пур пек туйăнать. Анчах ку сăввăрта çитменлĕхсем нумай-ха. Сăввăр тăп-тăп сюжетлă пулса тухайман, сапаланчăкрах. Пĕрремĕш йĕркесене повторить туса пыратăр. Ку вара яланах витĕмлĕ мар. Çаплах ку сăввăн пĕлтерĕшĕ те паллă мар. Ку сăввăра пичетлейместпĕр. Уншăн пăшăрханса ан ӳкĕр. Нумайрах çырăр. Лайăхрах сăввăрсене пирĕн пата та ярса парăр. Сире ырă сывлăх, пултарулăх сунса — В. Моисеев».

Çакăн хыççăн кӳршĕ ман пата тата пĕр-ик çыру ячĕ-ха, кашнинчех ырă канашсем пачĕ, тăван пичче тейĕн, питĕ тăрăшрĕ маншăн, ноябрĕн 4-мĕшĕнче «Харитонова халалласа» ятлă сăвва пичетлесе пачĕ, 1957 çулхи мартăн 16-мĕшĕнче — «Урçа каччă» ятлине, мартăн 22-мĕшĕнче «Малтанхи сăвăсем» статьяра, мана пултаруллисен шутĕнче асăнса, çапла çырчĕ:

«Пуçласа сăвă çыракансем хушшинче, сăвă техникине ăнланса илсе, пĕр хăйсене кăна тивĕçлĕ сăвăсем çырассишĕн тăрăшакан çамрăксем те нумай. Вĕсем — В. Тютин, А. Тимофеев, М. Артюшкин, М. Егоров, А. Ашкеров тата ыт. те». Çакăн хыççăн ман ентеш шыва анса кайнăн тăнч çухалчĕ. Ун вырăнне ман сăвăсем пирки «Хĕрлĕ ялав» редакторĕ И.В. Скворцов хăй хуравлама пуçларĕ. Исак Васильевич çав тери ырă кăмăллă çынччĕ те, мана нихăçан «çапса хуçмастчĕ», хуравне пултарнă таран çемçетсе, çамрăк авторăн кăмăлне хăвармасăр пама тăрăшатчĕ, «вĕрентсе» тăна илместчĕ. Сăмахран, çав 1957 çулах, августра, вăл ман пата акă мĕнле çыру ячĕ: «Сирĕнтен «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцине ĕнер икĕ пĕчĕк стихотворени килсе çитрĕ. Пĕринче пыл хурчĕсем çинчен çырнă, тепри ĕнтĕ «Лирика» ятлă. Вĕсене литература страници е литература кĕтесĕ пичетленĕ чухне пичетлеме юрĕччĕ, анчах юсаса тӳрлетмеллисем пур. Май пулсан, пичетлĕпĕр — шантарсах калаймастпăр». «Шантарсах калаймасан» та, пĕр сăввине, «Лирика» тексннине, пичетлерĕ-пичетлерех вăл! Пылхурчĕсем çинчен çырни каярахпа «Малтанхи юр» кĕнекере тухрĕ.

Çырусен пайĕн заведующийĕ Г. Ломоносов та мана юп куратчĕ: «Зоя» ятлă сăввăра начар теме çук, ăна культура пайĕ литература страницинче кĕртес тесех усранăччĕ, анчах кĕртме май пулмарĕ-ха...» Çак ырă этем, туберкулезпа чирлĕччĕ те, часах вилчĕ.

Июлĕн 10-мĕшĕнчех-ха «Çырма вĕренес пулать» статьяран хам «сăмахсемпе пĕлсе, вырăнлă усă курманни, сăнарсене илемлĕ сăмахсемпе эрешлесе парас вырăнне, проза чĕлхипе ытларах усă курни, рифмăсем чухăн пулни тата вĕсемпе пĕр сăвăрах темиçе хут усă курни» çинчен пĕлтĕм («Хĕрлĕ ялав», № 81, 1957). Статья авторĕ çĕнĕ ят — И. Левуков. Малашне сăввăмсем пирки çак юлташ (каллех ентеш, Тимушкел чăвашĕ!) хурав пара пуçларĕ. Малтанласа пичетлекелерĕ-ха, ытлашшиех «вĕрентмерĕ», 1958 çулта «Çăлкуçĕ», «Авланас тесе çӳрет», «Ман юлташăн йăмăкĕ» пек хăшпĕр сăвă тухкаларĕ, 1959 çулта вара çак чăваш ман пĕр йĕркене те кăлармарĕ, сăвă çырма вĕрентсе страница-страницине хут ярса тăма пуçларĕ, ку этем вĕрентнĕ пек çырас пулсан, сисетĕп, эпĕ нихăçан та сăвăç пулаймастăмччĕ. Вăл хурласа тавăрнă сăвăсем кайран пурте тенĕ пек Шупашкарти хаçат-журналта, кĕнекемсенче тухса пĕтрĕç. «Пăтрашуллă, ăнланмалла мар япала ку. Ăçта сирĕн

поэзи?» — тесе ыйтатчĕ вăл кашни сăввăм пиркиех. Вара эпĕ ним калама та аптăраттăм. Аптăраса çитсе, çапла, медучилищĕре экзаменсем пĕтсен, Хусана çитсе килме, редакцине кĕрсе тухма шутларăм. Ыйтатăп. Вăл çын текех кунта ĕçлемест, ĕçнипе кăларса ятăмăр, теççĕ. Ун вырăнĕнче халĕ В. Алексеев текен çын саркаланса ларать. «Мишша Егоров! — терĕ вăл мана курнă-курманах. — Санăн ман патра чылайранпа сăвăсем выртаççĕ. Вĕсене эпир литература пĕрлешĕвĕнчи хăшпĕр юлташсемпе пăхса тухрăмăр. Чылайăшне чипер ларса юсамасăр, паллах, хаçата кĕртсе яма çук. «Çамрăк хурăн», «Йăнăшмастăпши?», «Шикли» ятлисене суйласа хăвартăмăр. Эсĕ хăвăнне лайăхраххисене суйласа альманах валли е литература пĕрлешĕвĕ валли ярса пар-ха», — терĕ. Кăштран коридора чĕнсе тухрĕ те: «Итле-ха, сан çирĕм пилĕк тенкĕ тупăнмасть-и? — терĕ. — Каçпа уписательнă тавăрса парăп, çурт алăкĕ кутĕнче улттăра тĕл пулăпăр». Эпĕ кăларса патăм, каçхине 6-ра та, 7-ре те, 8-та та пырса çакланмарĕ. Хальччене çук...

К. Петров пулăшнипе «Уйăх хĕрĕ» баллада тухкаларĕ. 1960 çулхи 37 номерте Ю. Григорьевпа В. Алексеев çырнă «Пирĕн çамрăк авторсем» материал (статья темелĕх çук, пĕчĕк!) çапăннă. «М. Егоровăн «Телятница» сăвви пулса çитнĕпе пĕрех (ятне чăвашла çырма май пулман-ши?), ăсталăх та пур. Унăн чăваш сăмахĕсемпе вырăнлăрах усă курма тăрăшни çеç кирлĕ тата васкама юрамасть», — тенĕ унта. Пĕр авторĕ çав манран çирĕм пилĕк тенкĕ «кĕтсен-кĕтсен пĕтмелле» илекенниех пулчĕ пулас? Тепĕрийĕ «Хĕрлĕ ялав» (1960 çултан — «Ленин ялавĕ») хаçат çумĕнчи литкружок членĕ-мĕн. Майăн 30-мĕшĕнче çак «членран» тĕлĕнмелле ăслă çыру илтĕм, çав çырăва хальччене усратăп, ĕмĕр усрама хатĕр. Кун пек вара мана хальччен никам та «вĕрентменччĕ-ха», вĕрентнĕ-тĕк вĕрентнĕ! «Хисеплĕ Егоров юлташ! — тесе пуçлать вăл хăйĕн историе тивĕçлĕ çыруне. — Сирĕн «Ленин ялавĕ» хаçат редакцине янă сăввăрсене тĕплĕн пăхса тухрăмăр та пуçа килнĕ шухăшсенчен хăшнепĕрне сире пĕлтерме шут тытрăмăр. Чи малтанах сире акă мĕн калас килет: эсир — çамрăк çын, вĕренесси те (сăвă çырма кăна мар!), çитĕнӳсемпе савăнасси те сирĕн малашне. Çавăнпа та, пирĕн хăшпĕр сăмахсем сире çырлахтарсах каймаççĕ пулсан, е эпир ăнланни эсир ăнланнинчен мĕнпе те пулса уйрăлса тăрать пулсан, кăмăлсăр ан пулăр, хăюлăхпа чăтăмлăхăра пухса вĕçне çити вулăр, малашне илемлĕрех те уçăмлăрах çырма

ырă шухăшлă тарăху пухăр. Çакăн пек умсăмах хыççăн сирĕн поэт чĕри кăртах сикрĕ пулĕ, анчах та хăрăр, «турă» пулăшсан...

Сирĕн сăввăрсен темисем: колхоз пурнăçĕ — «Пăру пăхакана», Тăван çĕршыва юратни — «Юратап», тат. ыт. те. Çак сăвăсене пĕрерĕн илсе тишкерсен, çакăн пек ӳкерчĕк тăрать. «Пăру пăхакана» сăвăри йăнăшсемпе кăлтăксем çинчен çирĕм çичĕ хут калани ачаш ача çăварне пӳрне чиксе çырттарнă пекех пулĕччĕ. Çавăнпа та ун çинчен шарламăпăр.

«Юратап» (мĕншĕн «юрататăп» мар-ши?) сăвăн ятне кахаллăн кĕскетсе çырни чĕлхе илемĕшĕн пачах та тăрăшманнине çав тери уçăмлăн кăтартса парать. Ку — сăмах майĕн каласан. Сăвва тарăнраххăн пăхса тухсан, унăн техникăлла тата стилистикăлла çитменлĕхĕсем куçкĕретĕнех тухса тăраççĕ. Тăван çĕршыв илемĕпе киленекен поэт çамрăк чĕре тапнине итлесе хăйĕн шухăш-туйăмне уççăн кăтартса пама пултарайманни чăнах та пулать. Вырăссен чи чаплă лирикĕ Есенин та çапла каланăччĕ: Тăван çĕршыва ăнланмасăр юрататăп, — тенĕччĕ. Е Лермонтовăн «Тăван çĕршыв» сăввине аса илĕр-ха. Есенин е Лермонтов сăввисемпе сирĕн сăвă хушшинче пĕр уйрăмлăх кăна пур: икĕ аслă поэт ăнланма йывăр туйăмсене этем ăнланмалла чĕлхепе çырнă; сирĕн сăвăра уçăмлăхне тупма май пур пулсан та, сирĕн шухăшсем чăнах та таса та çутă пулнине ĕненес килмест. Сăвăн юлашки пайне («...тусăмпа утса пыруçăн...» тата малалла вĕçне çитиччен) вуласа пăхăр та çак йĕркесен илемсĕрлĕхĕнчен тĕлĕнсе кăшт та пулса вăтанăр:

Çапла шухăшлатăпах:
«Ах, çиллен, çиллен, савниçĕм, —
пур санран та юратни.
Ан çиллен-çке...
Вăл, савниçĕм,
анне ман,
«Çĕршыв» ятли.

Паллах, çак сăвă автор кăмăлне кăна çырлахтарма пултарать. «Зоя» пирки каламалли те çук: питĕ япăх сăвă. Теми те тахçанах мăкпа витĕннĕ. Хальхи совет çынни те эсир каланă пек шухăшламасть. Зоя та кахал пулма пултарать, Марьесем те тăван çĕршыва чапа кăлараççĕ.

«Ленин ăсхакăлĕ» сăвăра вулакан кăмăлне кайма пултаракан пĕр деталь çинче чарăнса тăрас килет:

Шывне ăсма манса тăрать
ракета курнă уйăх хĕрĕ.

Калăпăр, çак икĕ йĕрке ытла илемлех мар, анчах вĕсенче поэзин ылттăн пĕрчи пур. Çав «Уйăх хĕрĕ» тавра пĕтĕçтерсе лайăх сăвă çырма пулать. Эсир вара кăлăхах сăвва «Ленин ăсхакăлĕ» ят паратăр. Ленин ăсхакăлĕ çинчен калас пулсан, вуншар том кĕнеке çырас пулать. Сирĕн, паллах, çавăн пек йывăр çĕклеме вырăнтан тапратма та вăй çитмест. Çавна пула сăввăн ытти çитменлĕхĕсем çинчен калама та кирлĕ мар.

«Çăлкуçĕ» сăвăра ĕç темине çутатса пама çăлкуç сăнарне илнĕ, анчах каллех вырăнсăр. Сăвва вуласа тухнă хыççăн çакăн майлă шухăшсем çуралаççĕ: автор, çынсенчен курса, çăлкуç сăнарĕпе мĕнле те пулин (мĕнле? — автор хăй те пĕлмест) сăвă çырма шутланă. Пуçа ытла ĕçлеттермесĕр 7—8 яка йĕрке çуралать. Анчах сăвва пĕр вĕçĕмсĕр тăсма май çук-çке, мĕнле те пулин вĕçлес пулать. Редакцире ытлах ан тиркесе кайччăр тесен, мĕнле те пулин лайăх шухăш (вĕрентсе!) парас пулать. Шăп çак самантра поэтăн вĕри пуçне «ĕç» тата «этем илемлĕхĕ» текен шухăшсем вĕçсе кĕреççĕ. Тепĕр пилĕк минут асапланнă хыççăн сăвă хатĕр. Çапла вĕт, Егоров юлташ!

«Умри çутă» сăввăн шухăшĕ питĕ аван, интереслĕ — кивĕ пулсан та! Анчах автор каллех уçăмлăхне çухатнă, нимĕн ăнланма та май çук, — хăть выртса макăр.

Çав тери уçăмлă, яка çыракан сăвăçсем пур пирĕн, анчах вĕсен шухăшĕсем шĕвекрех.

Хисеплĕ Егоров юлташ, эсир çав сăвăçсенчен куларах çыратăр пулсан, хăвăрăн лайăх шухăшлă сăввăрсене вулакансене ăнланмалларах çырма тăрăшăр. Вырăссем калашле, «ылттăн варрине» тупăр, вара сирĕн сăввăрсем тарăн шухăшлă тата уçăмлă пулĕç. Халлĕхе хăвăрăн чун савни муза патне кайăр та шăппăн канашлăр».

Çак çын хыççăн кайса, сăвă çырма вăл вĕрентнĕ пек пуçланă пулсан, мĕн курнă пулĕччĕ-ши М. Егоров? Шутлатăп та паян çавăн пирки, çӳçенсе каятăп. Сăмах май çавна çеç калам, «критик» туласа тăкнă «Зоя» («Ят хуни» ятпа), «Ленин ăсхакăлĕ» («Уйăх хĕрĕ» ятпа), «Çăлкуçĕ», «Умри çутă» сăвăсем каярахпа кĕнекемсенче ним улăштармасăрах тухрĕç, «Пăру пăхакана» хамăр район хаçатĕнче çапăнчĕ, юбилейĕм ячĕпе кăларнă «Ирхи юрă» кĕнекене те кĕчĕ.

«Вĕрентекенсем» кайран та нумай пулчĕç, анчах та эпĕ пурпĕрех сăвă çырма пăрахмарăм, хам суйласа илнĕ çулпа никама итлемесĕр çирĕппĕн утрăм; кусем вĕрентсе çеç калатчĕç-ха,

канаш паратчĕç, пусмăрласа тире сӳмен. Тавах çавăншăн Хусана, унти çынсем çапах та çынна хĕрхенме пĕлетчĕç, Шупашкара килсен вара, Шупашкара килсен, мĕн пуçланса кайрĕ!

Хусан хаçатĕнче эпĕ хаçатне 1963 çулта ҳупиччен сăвăсем татах кăларкалăрăм: «Вутчуль», «Çыру», «Йăрăм çутă ӳкрĕ пĕлĕте», «Вива Куба!», «Аслă саккун çинчен юрлатăп» тата ытти те. Кайран çав сăвăсем пурте тенĕ пек кĕнекемсене кĕчĕç.

Вунă класс пĕтернĕ тĕлелле эпĕ 250 ытла сăвăпа темиçе поэма, юмах çырса тăкнă иккен! Ку ĕнтĕ упранса юлни çавăн чухлĕ, çав шутран паян куна çити çĕре яхăн сăвви халĕ те пичетленеймесĕр терт кураççĕ-ха. Паллă ĕнтĕ, пĕр сăвă та чун тарĕсĕр, чĕре савăнмасăр е ыратмасăр çырăнмасть. Сăмахран, «Терцинсем» (1957) сăвва илер:

Ĕмĕтĕмсем сӳнес пек туйăнни
паян мана уйрăммăнах пăлхатрĕ.
Эп çыртăм çĕрĕпех чарăнайми.

Мĕн-ма сӳнеççĕ? Тен, талант çукрах-тăр,
Хыпса çунни йăваш-тăр чĕремре?
Мĕскер шыратăп эп? Мĕскер çухатрăм?

Çухатрăм эпĕ шăп вунçиччĕре
хастарлăха. Ăçта, епле? Пĕлместĕп.
Пуçа, шăмă-шакка тем çĕмĕрет.

Эп çавăнпа хевтесĕр те илемсĕр.
Халь-халь татăлас пек янраççĕ нервăсем,
тăрлавсăр реквиемсем кĕвĕлеççĕ.

Çĕр варринче, теме аса илсе,
сĕм кантăкран пăхатăп хăпăл-хапăл.
Çут уйăх çук, пăч-тĕттĕм — пур тĕнче.

Пăшăрханса тула чупса тухатăп.
Капан пек пĕлĕт... Пĕлĕт хыçĕнче,
лупас енче, çут уйăха куратăп.

Эй, уйăх, уйăх, тух, кармаш инçе,
сан пек хавассăн йăл кулас килет ман,
çĕр варринче теме аса илсе.

Эй, уйăх, уйăх, тух хĕвелленсе...

Çак сăвва «тĕтреллĕ», «пессимистла» тесе халĕ те пичетлесшĕн мар, 1978 çул «Юрату юрри» кĕнекере тухнăпа пĕрехчĕ, гонорарне те илтĕм, анчах тухса ĕлкĕреймерĕ, пĕтĕм кĕнекине çак сăвă-мĕнĕпех чарса лартрĕç, кăлармалла мар турĕç, «Ытараймипе» «Савăнăç куççулĕ» кĕнекесенчен те катертрĕç.

«Ма ку ялан шкул тапхăрне аса илет, элле кăшт вĕçкĕнленес-мухтанас шухăшĕ пур-и?» — теме пултаратăр. Вăл та пур пулĕ те, анчах çавна та калам: мĕншĕн тесен шкул пĕтернĕ тĕле ман çав хайхи «асамат кĕперĕ» пур тĕсĕсемпе те çиçсе ялкăшма, сарăлнăçем-сарăлса пыма, чӳхенме пуçларĕ. Вăл халĕ те çаплах ялкăшать, халĕ те çухалмасть, ирĕлсе пĕтмест. Çав вăхăтран пуçласа эппин эп хама сăвăç тесех шутлатăп. «Санăн сассу, паллах, — пирĕн поэзире принципиаллĕ çĕнĕ сасă, — тенĕччĕ мана пĕр питĕ паллă поэт çитмĕлмĕш çулсен пуçламăшĕнчех (пытармăпăр — Айхи). — Унра — лирикăн чăн-чăн чĕрĕлĕхĕ, туйăмсен витерӳлĕхĕ, ăс-хакăлăн романтикăлла вĕçевĕ те пур... Санăн лирику, шухăш-кăмăлăн çӳллĕ лирики пулнă вăхăтрах, пурнăçăн конкретлăхне те, унăн хăшпĕр «аяллăхне» те, — натурăн кушăрхалăхĕ, материллĕхĕ таранах, — пĕтĕçтерсе тăрать. Çав вăхăтрах çакă пĕрпĕтĕмлĕх, çакă шăрату-хутăштару — килĕшӳллĕ те ирĕклĕ. Унтах — юмор та, ирони те (скептиклăх та!), чунăн тӳрĕ сăмахлă «исповечĕ» те пур...» Шутлатăп та, тен, çак хакпа килĕшмесĕр тăма та май çук пуль? Аванах тытса илнĕ пулас вăл эп çыркаланисен тупсăмне! Ман пултарулăха хальччен кун пек объективлă та тĕрĕс хак паракан пулманччĕ-ха.

Тĕрлĕрен «вĕрентекенсем» хушшинче мана уйрăмах Пушкин, Лермонтов, Блок, Есенин, Шелли, Лорка, Çеçпĕл, Айхи лайăх вĕрентрĕç. «Айхирен мĕне вĕреннĕ?» — тесе ыйтсан, çапла ответлеме пултаратăп: сăмахпа каласа та ăнлантарма май çук пек чун сисĕмĕпе туйăмĕсене парадокс, оксюморон меслечĕпе, сăмаха сăмахпа çапăнтарса çĕнĕ çивĕчлĕх, çĕнĕ пахалăх тупас меслетпе пĕлтерме вĕренме тăрăшрăм. Айхи кăткăс, çав вăхăтрах питĕ ĕнерӳллĕ поэт, сăмаха ун пек витĕр туйса полифонилле (нумай саслă) тарăнăш пама пĕлекен пирĕн Çеçпĕл анчах пулнă пулĕ. Çак ăсталăха Айхи Çеçпĕлрен тăрăшсах вĕренни куçкĕретех паллă. «Ыр кĕвĕллĕ, ыр туртăмлă ыр çутă», — тет, тĕслĕхрен, Айхи е: «Ман ăсăн тупсăмне çити çутатрĕ хĕрарăм вăйĕн ирĕклĕ çути, илемĕн ирĕкне мана кăтартрĕ кашни вĕри самантлăха çити», — тет. Çеçпĕлĕн «Çĕнĕ кун акинче» «хăватлă, çĕн чĕреллĕ çĕн ĕмĕр чăвашĕ» тени пур. Е: «Çĕн куна, çĕн тĕнчене юратса çĕн юрă хутăр», — тенĕ «Тинĕсе» сăввинче. Е тата: «Эй, эп савнă, юратнă куçсем... сирĕн тĕпĕрсенче — пăхсан — кăвак çĕнĕлĕхĕн сиренĕ, чечеке чуптуса-сăхса çĕнĕ шухăш ĕçме эп вĕреннĕ...» Айхи Çеçпĕлрен

мĕне-мĕне вĕреннине йăлтах калас пулсан, хăйне уйрăм статья çырмалла, халлĕхе кунта эпир илсе кăтартни те çитĕ. Кĕскен каласан, Айхи ниççан та, никамран та, нимĕн те «ĕмме» тăрăшман, вăл кирек хăш поэтăнне те тупсăмне ăнланма тăрăшнă, унăн чи вăйлă енĕсене, çĕнĕлĕхĕсене хăй витĕр кăларнă, пачах урăхла пахалăхра усă курма вĕреннĕ.

Хальхи хăшпĕр çамрăк сăвăç вара «вĕренес» тенине пач урăхла ăнланать-мĕн. Пĕр-пĕрин темине, кĕвви-çеммине, сăнарĕсене, рифмисене пĕр намăса пĕлмесĕр сăптăра-сăптăра илеççĕ, хăшпĕрисем юлташĕн сăввинех кăшт улăштаркалаççĕ те хăйĕн туса пичетлесе кăлараççĕ. Ним улăштармасăр пичетлекеннисем те пур. Нумаях пулмасть пĕри тата ман 5—6 сăвăпа ытти 2—3 поэтăн сăввисенчен ĕмсе «поэма» тунă та журналта çапса кăларнă. П. Афанасьевăн «Ман ăру» сăввине пĕр пикесăвăç сăптăрса илнĕ, вырăсла куçарттарнă, тăлмачĕ вырăсла питĕ «ирĕклĕ» куçарнă та, сăвви палламалла мар улшăнса кайнă, çав хытă улшăннă сăвва пике вырăсларан каялла чăвашла куçарнă та хăй кĕнекинче çапса кăларнă. Е тата: манăн 1970-мĕш çулта тухнă «Шкул вальсĕ» кĕнекере «уйăх карталаннă» тесе пуçланакан сăвă пур, пикен вара сăвви «карталаннă уйăх» тесе пуçланать, кĕвви те, сĕмĕ те йăлтах ман сăвăри пек. Манăн сăвăра «пĕтрĕ кăмăл ман» тенĕ пулсан, пике «ыйхă çĕтрĕ ман» тет. Уйрăмлăхĕ, хăвăрах куратăр, çукпа пĕрех. Тишкеререх пăхсан, çак «поэтессăн» пĕр сăвви те хăйĕн марри, вĕсене çынран илни уççăнах палăрать. Вăт çавăн пек тамашасем те пулкаласа иртеççĕ-ха халлĕхе пирĕн чăваш поэзийĕнче. Апла пулин те, поэзийĕмĕр пурпĕрех пĕр вырăнта тапăртатса тăмасть, ялан малаллах талпăнать, çут тĕнче илемне поэзи чĕлхипе каласа пама тăрăшать. Пĕлетпĕр ĕнтĕ, çут тĕнче илемĕ вилĕмсĕр, çапла вара поэзи те вилĕмсĕр пулма тивĕç. Паянхи çĕнетӳпе пысăк улшăну тапхăрĕнче вăл уйрăмах хăватлăн аталанасса, çĕкленсе каясса пĕтĕм чун-чĕререн шанса тăрас килет. Шанса тăни аван вăл, шанчăк пуррисем телейлĕ, тенĕ Çеçпĕл, анчах та... (ах, мĕншĕн çав «анчах та» тени йăлăхтармăш шăна-пăван пек таттисĕр явăнать-ши пирĕн тавра), анчах та паянхи çĕнетӳпе пысăк улшăну тапхăрĕнче те чăваш поэзине хăватлăн аталанса, çĕкленсе кайма çав майлах хăватлăн та чеен, ниме пăхмасăр хаяррăн чăрмантарса, путлантарса пыма хăтланакан вăйсем пур. Сăмаха татса та тӳррĕн калас пулсан, çав вăйсем сирĕлме мар, куллен вăйлăраххăн

та сĕмсĕртереххĕн хупăрласа пыраççĕ пек. Ю.В. Андропов вилсенех-ха, пичетлесе кăларас ĕмĕтпе, юптарса та, тӳррĕнех те темиçе сăвă çыртăм. Пĕрне, «Шупкисем» ятлине, «Коммунизм ялавĕнче» пичетлесе кăларма май пулчĕ, ыттисем те тухкаларĕç. «Çутă» ятлине вара ниçта та кун çути кăтартма май килмерĕ, мĕнле пырса панă çапла маях тавăра-тавăра тыттарчĕç. Акă вăл, çав сăвă:

Кăмăл, пулсамччĕ эс пурпĕр хаваслă.
Шăппăн калас-тăк,
çутă пытарăнчĕ. Тĕттĕм. Курмастăп.
Тĕттĕм. Курмастăп.

Çутă, çинçе пайăркаллăччĕ эсĕ,
çутă та темĕн,
кăшт пĕлĕтпех хупланса, систермесĕр
хăвăрт пĕтен-мĕн.

Тĕттĕм. Курмастăп. Ан тив, çĕнĕлентĕр
савăнăçлă çутă,
çиçтĕр, ан тив, кăмăла вăл çĕклетĕр,
çумăр пек çутăр.

Ан пăтрашиччĕ малта çутă, тĕттĕм.
Ăнăçтăр çул та.
Çутă курасчĕ, курасчĕ пĕрпĕтĕм
çулăмлă çутă...

Эзоп чĕлхипе çырнă темелле-и çакна, аллегори меслечĕпе темелле-и, пĕлместĕп, калас тенине йăлтах калама май килчĕ темелле, Хрущев вăхăчĕ хыççăн Брежнев самани хусканнă пек, тепĕр неосталинизм пуçланасран кулянса, пăшăрханса çырни куçкĕретех ĕнтĕ; сăввăн тĕп шухăшне лайăхрах палăртас тесе, «çутă пытанчĕ» тес вырăнне «çутă пытарăнчĕ» терĕм, «пытарăнчĕ» сăмахне аялтан кăранташпа туртса паллă турăм; «ан тив, çĕнелтĕр савăнăçлă çутă» тесе мар, «ан тив, çĕнĕлентĕр савăнăçлă çутă» тесе çырса, «çĕнĕлентĕр» сăмахне те аялтан туртрăм. Сăвва «Çĕр чунĕ» кĕнекере пичетлесе кăларма май пулми терĕм. Анчах та Чăваш кĕнеке издательствин тĕп редакторĕ алçырăвне Тимофеев Анатолий текен çамрăк редактор-сăвăçа тыттарнă та, лешĕ «Çĕр чунĕ» сборнике тĕпрен аркатнă, «Çутă» сăвă пирки вара çапла çырса хунă: «Вулаканăн пĕлесси килетех ĕнтĕ: сăмах мĕн çути çинчен пырать-ши? Хĕвел çути пулсан, кăшт пĕлĕт хупăрланипех пĕтсе ларас çук вăл. Кунта ритм уксахланине, чăваш нихăçан та «çутă пытарăнчĕ», «ан тив, çĕнĕлентĕр савăнăçлă çутă» тесе каламаннине те аса

илтерес килет». Çак маттур çамрăка манăн хамăн вара çапла калас килет: «Аса илтерме кирлех мар, шăллăм, чăваш чĕлхине хăвăн авантарах вĕренес пулать, ритм тени мĕн тени пулнине пĕлес тесен, «Çутă» сăвă çемми май ура тапса лар эппин. Мĕн калам урăх, вĕрен, шăллăм, ват енне кайиччен мĕне те пулин вĕренсе юл. Эсĕ рецензийӳ вĕçĕнче: «Автора халăх кăмăлне каякан сăвăсем çырма ырлăх-сывлăх, çĕкленӳллĕ туйăм сунас килет», — тенĕ. Манăн та сана çавнах сĕнес килет. Эс хупланипех «çутă» чăнах та «сӳнсе» ларас çук, тĕрĕс калатăн, хĕвел çути кăшт пĕлĕт хупăрланипех пĕтсе ларас çук вăл. Сан йышшисем çитмĕлĕн хупăрласан та пĕтсе ларас çук»...

«Вăхăт çитĕ, вăхăт пулĕ, çĕн тĕнче килсен», — тенĕ Çеçпĕл утмăл-çитмĕл çул каялла. Эпĕ ун хыççăн паян çапла калатăп: «Ан манăр, эп — çеçпĕлçĕ, эп — ун, ан манăр!»

Вăхăт тени шăвать те шăвать, иртет те иртет. Акă тепĕр «çĕн тĕнче» те килсе çитрĕ — пĕрех, халăха нимĕн ырри те çук: ĕçлет-ĕçлет халăхăмăр, ырă пурнăç тенине ниепле те хӳререн ярса илеймест, ыр кураймасть чăваш, хурлăх çеç курать. Хамăрах начар пуль эпир? Ак, илем-ха тĕслĕх: пĕр тус вăтăр пилĕк çул мана кураймасть, кĕвĕçет, тулашать, ниçта кайса кĕрейми турткалашать — эп ăнăçлă та тухăçлă ĕçлени, тĕнчере эпĕ пурри килĕшмест ăна. Хăй вара чи çывăх тус пек курăнма тăрăшать, сисмест тет ĕнтĕ, хăйне вăтăр пилĕк çул хушши витĕрех курса тăнине туймасть, шеремет. Лайăх чăваш-и çак этем? Лайăх чăваш мар. Е, илĕпĕр, пĕр редакции тепĕр туса. Вăл халĕ çеç мана хам яш чух сăрмаклана «Пирвайхи тăвăлсем» хайлавăма тавăрса тыттарчĕ: «Каймасть, — терĕ, — пулса çитеймен». Çырнăранпа хĕрĕх çул иртрĕ, çаплах пичетлеместĕп-ха, юлашкинчен, ĕçпуç «пулса çитейменнинче» маррине сиссе пуль, поэмăна Хв. Акивер ыйтса илчĕ...

Вăт çавăн пек пурнăç. Шухăшлан та, тепĕр чух пурăнас килми пулса каять: мĕн ачаран пуçласа ватта кĕриччен чуна кăларса илесле пусмăрлаççĕ, пĕрехмай «вĕрентеççĕ», вĕрентекенĕсем вара хăйсем, тĕсесерех тимлĕн пăхсассăн, ним вĕрентме пултарас çынсем те мар-мĕн, пусмăрçăсем, талантсăр кĕвĕç чунсем кăна.

Гоголь каларăшле, ытла та кичем-çке сирĕн хушшăрта çӳреме, вилĕ чунсене чĕрĕ пек курса çӳреме, господасем...

1989

ВИЛӖМСӖР ҪУТĂ

(Сениэль чăваш писателӗсен вунтăваттăмӗш съездӗнче калана сăмах)

Эпӗ Шупашкара килни ҫирӗм виҫӗ ҫул ытла иртрӗ, унтанпа миҫе кăна съезд пулса иртмерӗ-ши, анчах та мана нихҫан та сăмах паман, паянхи кун пӗрремӗш хут тухса калаҫатăп.

Тахҫанах, тӗрӗсрех каласан 1973-мӗш ҫулхи декабрӗн 29-мӗшӗнче, мана пӗр хӗрача ак ҫакăн пек сăвă ҫырса халалларӗ:

* * *

СЕНИЭЛЬ Мишшине

Малтанхи юр ҫăватчӗ пит хавассăн,
шап-шурă та илемлӗччӗ тӗнче.
Ҫапах темме сывлаттăн ассăн-ассăн,
ҫӳреттӗн эсӗ кулянса пӗччен.

Пӗррехинче ташша уттартăн эсӗ,
сенкерччӗ каҫӗ, уйăхӗ ҫап-ҫут.
Хуллен янратчӗ тунсăхлă шкул вальсӗ...
Кăвак хуппи-ши ҫиҫрӗ е куҫу?..

Кичемлӗхе чӗрӳ йăлт ӗнтӗ манӗ,
сан ҫумăнта юратнă мăшăр халь.
Кӗнекӳсем тухсах тăраҫҫӗ санăн,
ан пăшăрхан, Мишша, ан пăшăрхан!

Сăвă халаллакан хӗрачийӗ Раиса Яковлева ятлăччӗ, халӗ ăна Раиса САРПИ тесе чӗнеҫҫӗ... Пăшăрханмастăп, Раиса Васильевна, пăшăрханмастăп... Усал ҫынсем 1977 ҫулта манăн ҫемье пурнăҫне аркатрӗҫ; хваттере туртса илсе, мана урама хăваласа кăларасшăн пулчӗҫ. Унтан «Тăван Атăл» журналăн 1978 ҫулхи пӗрремӗш номерӗнче тухнă «Юратупа Ирӗклӗх» поэмăна тапăнчӗҫ, авторне обществăшăн ют ҫынсен ушкăнне кӗртме, мăйӗнчен «антисоветчик» текен ярлăк ҫакса яма хăтланчӗҫ. Ҫав ҫулах, февраль уйăхӗнче, «Юрату юрри» кӗнекешӗн малтан писательсен Союзӗнче, унтан кӗнеке издательствинче икӗ кун «тире сӳрӗҫ», кӗнекеме, тухнăскерне, магазинсене ăсатма чарса, ҫунтарса ямалла турӗҫ. Ҫакăн хыҫҫăн эпӗ хытă чирлесе кайрăм — пачах ҫыврайми пултăм. Хама хам пӗтересрен-и е урăх сăлтавпа, органсенче ӗҫлекен пӗр юлташ хыҫран ҫӳре пуҫларӗ: киле те пырса ларать, тӗрлӗ ыр канаш парать, хăй мана чунранах шелленине те пытармасть. Сисрӗм,

службӑра тӑрать пулин те, чунĕ те пур ҫав ҫыннӑн — чӑваш ачи ĕнтĕ, ӑҫта ĕҫлесен те, чунне упраса хӑварайнӑ, мӑнтарӑн, типсе кайма паман. Ӑна хисепе хурса, эп вӑл мĕн каланине йӑлтах хӑлхана чикрĕм: пульницана ҫӳресе сывлӑха юсарӑм, гимнастика тума хӑнӑхрӑм, ҫуран нумай утрӑм. Ҫапла майпа кĕр енне алла ручка тытакан та пултӑм, «Ҫулҫӑ ҫумӑрĕ» поэма хайларӑм. Кун йышши ытти япалана эпĕ ытла уҫӑмлӑн, тӳрремĕн ҫырнӑччĕ те, хальхинче стиле кӑштах улӑштарма тӳр килчĕ: «Тĕп Ултавҫа» аллегори-символ меслечĕпе питле-питле, хама та, вулакансене те Вилĕмсĕр Ҫутӑ патнелле ытарлӑн йыхӑртӑм. Тепĕр ҫулӑн варринче (1979, июнь) мана издательствӑра редакторта ĕҫленĕ ҫĕртен «хам ирĕкпе» кӑларса сирпĕтрĕҫ, ҫавӑнтанпа хальчченех ниҫта та ĕҫе илмеççĕ...

«Ҫулҫӑ ҫумӑрĕ» поэма вӑл вӑрӑм япала, пичетленсе тухсан вуласа савӑнӑр, унсӑр пуҫне эпĕ ҫавӑн чухнех «Поэт пулас килмест» ятлӑ шӳт те шӑратса кӑлартӑм.

Господасем! Нимех те тӑваймарӑр вĕт: пĕтмерĕ Сениэль! Кӑҫалхи ҫул вĕҫĕнче ĕнтĕ аллӑ ҫул тултаратӑп, хама вара вунҫич ҫулхи пек туятӑп, кӑҫал авланасшӑн-ха, хĕр шыратӑп!

Господасем! Юбилей кĕнекине кӑларас мар тесе мĕн чухлĕ тӑрӑшрӑр тата! Республикӑри пур кĕнеке лавккисенчен кĕнекемсем сутӑнса пĕтни ҫинчен пичетлĕ вӑтӑр виҫĕ е ытларах та хут татӑкĕ тӑратсан тин пилĕк листа аран-аран кĕртккелесе патӑр, а хӑвӑр вара саккӑршар та вуншар, вуникшер, автор листи ҫулсерен тенĕ пек кĕртетĕр, издательство директорĕпе тĕп редакторне эсир ним намӑса пĕлмесĕр пусмӑрлатӑр, мафи, эшкер туса хунӑ, хӑвӑрӑн ниме тӑман япалӑрсене чĕкре пек чĕкĕретĕр, халӑх укҫине савук кĕреҫепе хыратӑр.

Господасем! Сирĕнпе пĕр кĕпĕрленчĕк йышра ҫӳриччен, пӑрахас тенĕччĕ эпĕ 1978 ҫулхи февральте сӑвӑ ҫырма пачах.

ПОЭТ ПУЛАС КИЛМЕСТ

Чӑваш поэт пуличчен...
Илле Тӑхти

Чӑваш поэчĕ пулас вырӑнне
пулас-мĕн йĕтĕн — вӑтӑрччӑр, тыллаччӑр.
Сӳсрен тĕртсе шуратнӑ пӳс-пирне
хутаҫ валли касса ваклатӑр хачӑ.

Чӑваш поэчĕ пуличчен пулас
ыйткалакан — миҫе эрне тӳсейĕп
ҫимесĕр... сӑнаса пӑхас...
Нумайлӑх тӳсейсен, «поэт ку» тейĕр.

Чăваш поэчĕ пулас вырăнне
кил-çуртсăр пĕччен çын пулас-тăр манăн:
çĕп-çĕтĕк те тăп-тăлăх иккенне
хаваслă çуклăхра хаваслăн манăп.

Поэт пулас килмест, чăваш поэт,
чĕп-чĕрĕллех тире сӳсе илеççĕ.
Хуçасăр йытă ман пулас килет, —
кăнса выртсассăн тин ăна сĕвеççĕ.

Поэт пулас килмест, чăваш поэт;
куштан та йăпăлти нумай-мĕн пирĕн,
нумай-мĕн вĕчĕх-кĕвĕç — пĕтерет
çав йыш хăйне те, ыр çынна та питĕ.

Ах, Çеçпĕл, ман Митта пулас килмест,
Митта пулсан, Айхи пулма та тивĕ.
Поэт пулас килмест, чăваш поэт,
чăваш поэт шăпийĕ — пăх тутиллĕ.

Пулас килет хăватлă ват юман.
Хаяр аçа çапса мана çунтартăр.
Çунса пĕтмен хăрушă тĕпĕм ман
поэт тăпри çинчи юпа пек лартăр.

Чăваш поэчĕ пулас вырăнне,
вĕреçĕлен пулас, Тăхти каларăш,
кăвар тăкас çынсен чунĕсене.
Кăвар чунсем пире тӳрре кăларĕç!

Господасем! Куратăр ĕнтĕ, манăн чăнах та поэт пулас килмест, эпĕ вĕреçĕлен пулса тăтăм! Тавах чăтăм çитерсе итленĕшĕн, господасем!

1990 çулхи
сентябрĕн 13-мĕшĕ,
кĕçнерникун,
Шупашкар.

Михаил Сениэль: «ТУСЛĂХА ÇУХАТМАРĂМ...»

Михаил СЕНИЭЛЬ — хальхи паллă чăваш поэчĕ. Сениэль Тутарстан чăвашĕ, Пӳлертен çирĕм çухрăмри Саврăшпуç ятлă ялта çуралса ӳснĕ. Ялта çичĕ класс, Аксура вунă класс, Чистайра медицина училищи, Хусанта университет, Мускавра литературăн аслă курсне пĕтернĕ, халĕ литература ĕçĕпе пурăнать — писатель-профессионал. Вăл вунвиçĕ кĕнеке пичетлесе кăларнă, ăна лауреат та теме пулать — «Ялавпа» «Тăван Атăл» премийĕсене илнĕ. Унпа пирĕн корреспондент **Арçук Тарасов** калаçать.

— Чăваш çыравçисен вунтăваттăмĕш съездĕнче тухса каланă сăмахăрта эсир, Михаил Павлович: «Кăçалхи çул вĕçĕнче ĕнтĕ аллă тултаратăп, анчах та хама вара вунçич çулхи пек туятăп», — терĕр, поэзире çав-çавах хĕрӳ те яш чунлине систерсе каларăр пулĕ?

— Ăна çеç мар. Çав сăмахрах малалла эпĕ: «Кăçал авланасшăн-ха, хĕр шыратăп!» — терĕм. Ку сăмаха ытларах залри хăшпĕр «господасене», ĕмĕрĕм тăршшĕпе паян кунченех çула хупласа, тăллантарса пыракан кĕвĕç чунлă çынсене каларăм эпĕ: «Господасем! Нимех те тăваймарăр вĕт: пĕтмерĕ Сениэль!» — терĕм. Литературăна кĕме мана питĕ йывăр пулчĕ. Малтан: «Талвир йытти», — тесе хытă хĕсрĕç, асăннă çыравçăпа ун чухне эпĕ пурĕпĕр туслăха çухатмарăм, пĕр-пĕрне ăшă сăмахпа та пулин пулăшса пыраттăмăр. Унтан, çав вăхăталлах, 1975 çулта, Айхие Аристарх Дмитриевпа «Чĕрĕ тĕвĕ» сборник кăларса патăмăр, эпĕ Айхи пултарулăхне хакласа «Кĕтрет çути» ятлă статья пекки те кĕртрĕм çав кĕнекене. Вара... пуçланса кайрĕ, кăравул, чут çеç чĕрĕллех çисе ямарĕç: ак сана «Чĕрĕ тĕвĕ»! терĕç ĕнтĕ. Ытти тӳснĕ хĕн-хур пирки темех каласа тăмăп, съездра каланă сăмахăм «Тăван Атăл» журналăн 1991 çулти пĕрремĕш номерĕнче тухать, кăсăкланакансем çавăнта вуласа пăхма пултарĕç.

— Поэзи ĕçне эсир хăçан пуçăннă?

— Вулама-çырма мана анне эпĕ пилĕк çулта чухне вĕрентрĕ. Сăвва малтан улттă-çиччĕсенче пуçра сăвăлаттăм, каярахпа хут çине çырса хума пуçларăм, 1949 çулта, саккăрта чухне, çырнă икĕ сăвă халĕ те упранаççĕ, çав вăхăтри хут çине чернилпа çырса хунăскерсем, хăçан çырнине те кăтартма манман — типтерлĕ ача пулнă...

— Поэт пуласса ун чухнех пĕлнĕ пулĕ?

— Ун чухнех пĕлмен пулĕ те, 1952 çулта вара пĕлнĕ, «Манăн ĕмĕт» сăвăра: «Пушкина каç-каç вуланăçемĕн поэт пулас, поэт пулас килет!» — тенĕ вырăн пур. Çав вăхăтранпа тĕллеве çирĕп тытса пытăм, пĕрремĕш хут 1956 çулта пичетлентĕм. Хаçачĕ Хусанта Тутарстанри чăвашсем валли тухса тăратчĕ, 1963 çул пуçламăшĕнче ăна тутарсем хупса хучĕç, хаçат хупăниччен Юрий Айташ, Порфирий Афанасьев, Нина Артемьева тата эпĕ унта чылай сăвă пичетлесе кăларма ĕлкĕртĕмĕр.

— Эсир вунă класс пĕтернĕ тĕлеллех икçĕр ытла сăвă-поэма çырнă теççĕ?

— Поэми иккĕ-виççĕрен ытла мар, сăввине икçĕр алла яхăнах сăрмакланă. Çухалса пĕтни тепĕр аллă пуль. Калавсем, повесть, драмăлла сценăсем çырнă. Повеçĕн алçырăвĕ халĕ çухалнă, «Ял ачисем» ятлăччĕ, çирĕм тăватшар страницăллă икĕ тетрадь, калавĕсемпе пьеса пеккисем упраннă, хăшĕ-пĕри пичетре те тухнă. Упранса юлнă сăвăсем — сакăр автор листи, пилĕк пин йĕрке ытла! Ун чух çапла хăрушла талпăнса ĕçлени каярахпа йывăра килчĕ, час-час чирлеме пуçларăм, пуç ыратнипе аптăраттăм, сывлăха пула 1964 çул чут çеç Хусан университетĕнчен пăрахса каймарăм, турă сыхларĕ пулмалла, аттепе аннен (Павел Гавриловичпа Вера Гавриловна) вĕри кĕллине турă илтсе хĕрхенчĕ пулĕ, сывалтăм, вĕренсе те тухрăм, паян кунчченех пурăнатăп, вунвиçĕ кĕнеке пичетлесе кăлартăм. Çырни вара вĕçĕ-хĕррисĕр нумай, паян тесен паян тӳрех вунă кĕнеке кăларма пултаратăп. Çырас ĕмĕт татах та пысăк!

— Литературăра çул уçма сире уйрăмах кам хытă пулăшнă тесе шутлатăр?

— Хусанта — «Хĕрлĕ ялав» хаçат сотрудникĕ В.М. Моисеев (кӳршĕ ял çынни), редакторĕ И.В. Скворцов, «Хусан» альманах пуçарса яраканĕ А.Ф. Талвир. Шупашкарта — Петĕр Львов, Юрий Скворцов, Аристарх Дмитриев, Т.И. Иванов-Таçук, Стихван Шавли. Алексей Филиппович Талвир «Литературная Россия» хаçатпа çывăхлатрĕ, малтанхи хут унта вăл пулăшнипе пичетлентĕм. Каярахпа вара çамрăксем пĕрне-пĕри пулăшса пыма пуçларăмăр. Вăл ушкăна Хветĕр Акивере, Юрий Айташа, Алексей Трофимова, Юрий Артемьева, Вениамин Тимакова, Петĕр Эйзина, Атнер Хусанкая кĕртме пулать пулĕ. Мана 1979 çулта кĕнеке издательствинчен «хам ирĕкпе» кăларса

çапсан, «Советская Чувашия» тата «Коммунизм ялавĕ» редакторĕсем М.И. Ивановпа Д.Ф. Семенов тăтăшах çул пара пуçларĕç.

— *Политикăпа кăсăкланатăр-и?*

— Унпа халь кам кăна кăсăкланмасть пулĕ?

— *Коммунизмпа коммунистсем пирки мĕн шутлатăр?*

— Кун пирки шарламăпăр, шăллăм. Ман ĕç — поэзи. Ĕнерӳлĕхпе гармони. Тĕнчепе чун илемĕ, ыратăвĕ... Хамăн çитес менельникпе усă курса, юлашки вăхăтра çырнă темиçе сăвва сĕнсе пăхасшăн.

1990

ЧУНĔ ХЫТНĂСКЕРСЕМ

Чăваш халăхĕн Аслă Пухăвĕ пĕрремĕш хут кĕрлесе иртнĕ-иртмен, К.В. Ивановăн «Хальхи самана» сăввинчи пекрех калас-тăк, «чăваш хушшинче те чунĕ хытнă çынсем тапаланма пуçларĕç, тăрса çапла каларĕç»:

М. АВЕЛИН, «Вучах» хаçатăн кăçалхи (1992 çул, чӳк) 38-мĕш номерĕнче: «Çӳлти Шăльăш (Дух Святый) хушнипе çăтмахри пек... пурнăçран икĕ куна тамăка (Чăвашсен наци конгресне) кайма шутларăм. Пихампарсем (пророксем) каланă тăрăх, тĕнчери пурнăç йĕркеленес умĕн пĕр-ик çула Антихрист килет. Çав Антихристпа куçа-куçăн калаçас килчĕ... Вун сехетре антихристсен пухăвĕ пуçланчĕ. Чи чаплă, чи ăслă, чи паллă çынсем (аллă пиллĕкĕн вĕсем, виç хĕрарăм) тĕпелти сĕтел хушшине кĕрсе ларнă чух ĕлĕкхи пекех мĕскĕн чăвашсем хыттăн, тăрса алă çупрĕç» (залри антихристсем президиумри антихристсене çапла саламланă пулать ĕнтĕ «Вучах» хаçатăн «ятарлă корреспондентне» ĕненес пулсан. — *М.С.*).

Н. ВАСИЛЬЕВ, «Чебоксарские новости» хаçатăн 197-мĕш номерĕнче: «был... один человек, который, судя по всему, в душе не мог согласиться со многим из происходящего, но не проронил ни слова. Хранил молчание Председатель Верховного Совета республики Эдуард Кубарев...» (ку «человек» иккен, «антихрист» мар. — *М.С.*).

М. АВЕЛИНАХ, «Вучахра»: «Почему я конгресс называю собранием антихристов? Потому что там не было И. Тореева, Мишши Юхма, А. Асламаса, Р. Сарби и сотен дургих делегатов, способных сказать слово, не ласкающее уши В. Станьяла, А. Хузангая, многих народных депутатов Чувашии, министров и членов Президиума ВС ЧР...» (Ав мĕнле иккен? Мĕнех, питĕ ăнланмалла. — *М.С.*).

Кусем — вырăсланарах панисем — «тăрса çапла каларĕç» пулас-ха. Пуçĕпех вырăсланнисем, хăйсем çав хушăра «Советская Чувашия» хаçатра пичетленекен заметкисем айне лартнă хушамачĕсем хыççăн «стопроцентный чуваш» тесе çыраканнисем, мĕнлерех шутлаççĕ-ха?

Н. ЯКОВЛЕВ, «СЧ», кăçалхи 215-мĕш номер: «Друзья» народа, займитесь делом».

В. ТРОФИМОВ, çавăнтах: «У некоторых ученых мужей действительно есть «комплекс» выдумывать проблему и вок-

руг нее плести ажурные наукообразные кружева. Но это не делает им чести, народ теперь «под иноземным гнетом» грамотным стал. Вот очень беглая характеристика выступлений некоторых из тех лиц, кто готовил и проводил конгресс».

В. ФЕДОРОВ, çавăнтах: «Идея независимости Чувашской Республики противоречит идее конгресса чувашского народа, призванного «связать» всех чувашей, проживающих вне республики, для возрождения чувашской культуры, языка».

А. БОЙКОВ, «Пĕлӳ» общество членĕ, «СЧ», 219-мĕш номер: «Чувашский национальный конгресс поддержал предложение академика Г. Волкова, чтобы у столицы Чувашской Республики было одно название на русском и чувашском языках — Шупашкар... Мне кажется, время само определит, какому названию жить. И нет необходимости административным путем резать по живому».

Н. ЯКОВЛЕВ (ку леш, «друзья» народа, займитесь делом» текенни): «Сегодня некоторые лжепатриоты (Г.Н. Волков академик — «лжепатриот»? Кулса вилĕн. — *М.С.*) выдвигают новые «идеи» о единственном государственном языке, о переименовании улиц на чувашский манер, а вместо Чебоксары оставить название столицы только Шупашкар и т.д. Такие «мероприятия» в трудное экономическое время немыслимы...» (Ав мĕнре иккен «май çуккин» сăлтавĕ. — *М.С.*).

В. ПОТАПОВ, Куславкка хулинчи запасри майор, «СЧ», 219-мĕш номер. Заметкин ячĕ те, содержанийĕ те майорла: «Я отвергаю». «Вновь и вновь возвращаюсь к ЧНК, — тенĕ малалла, — ищу объяснение чувству недоумения и даже разочарования, все больше и больше заполняющему меня... Я отвергаю даже в мыслях необъективные утверждения, записанные в итоговых документах ЧНК о том, что «чувашский народ... в течение семи столетий испытавший национальный и социальный гнет», оказался у «пропасти», «перед национальной катастрофой...» Стратегический замысел организаторов и вдохновителей ЧНК, по-моему, направлен не на сплочение и возрождение чувашской нации, а напротив, на разобщение и еще большую зависимость ее от новых «непризнанных гениев» и новоявленных вождей» «всемирного» уровня (сăмах кунта Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕпе Кĕçĕн Канашĕ, ревизи комиссийĕ пирки пырать пулас; «всемирного» уровня тенипе С.Н. Падюков бизнесмена, США ран

Аслă пухăва килсе çитнĕскере, тĕксе илесшĕн пулĕ. — *М.С.*). Я считаю элементом проявления национализма предоставление права чувашскому населению вне границ ЧР создавать свои «национально-территориальные единицы». Так же, как и факт утверждения в резолюции ЧНК о том, что «подлинным хозяином на земле должен быть крестьянин»... Этому же служит, по-моему, объявление только чувашского языка (хотя бы даже в рамках резолюции ЧНК) официальным, что не соответствует действующей Конституции ЧР...»

Çакăн пек япаласем шăналăкăн-шăналăкăн çапăнса пыраççĕ, çырасса вĕсене, хушамачĕ хыçне е текстра «стопроцентный чуваш» тесе çырса, вулакан пуçне сĕрĕмлекенсем çыраççĕ, вырăс юнĕллĕ çынсем хутшăнасшăн мар çак ĕçе, чăвашсене кӳрентерсе мар теççĕ, малашне те пĕрлех пурăнмалла вĕт. Евгений Федорович Анфимов шофер пурăнать, ак, манпа кӳршĕллĕ, вунçич çул юнашар. Çак тап-таса вырăспа нихçан та урлă пулман. «Хăвăрăнне хăвăр пĕлĕр ĕнтĕ, эпир, вырăссем, хутăшар мар, чăрмантарар мар», — тет, чăвашла та перкелешет. Кăрмăшра ӳснĕ иккен, ачаран чăвашсем хушшинче пулнă. Нимле куштанлăхĕ те çук çав çыннăн, хăй вырăс пулнипе мухтаннине, хăйне пысăка хунине нихçан та курман. Пĕррехинче каларăм эп ăна çавăн пирки. Кулса ячĕ, чăвашла такмак çавăрттарса хучĕ те: «Чăвашран вырăс пулнисем куштан пулаççĕ», — терĕ. Тĕрĕсех калать вĕт ман кӳршĕ вырăс? Тĕрĕсех. Çакă çӳлте илсе кăтартнă цитатăсенчен те аван курăнать.

Мĕнех, сулкалашчăрах аллисемпе манкуртсем, «хама хам неснайскисем». Мана тата тепĕр япала канăççăрлантарать — хăйсене «турă чурисем» текенсем шутсăр хаярланса та усалланса кайни. Пăхăр-ха, «Советская Чувашия» хаçатра мĕн кăна çырмаççĕ С. Захаровапа Г. Калентьева, вĕсемпе пĕрле ал пуснă 50 «турă чури»: «Новые еще более тяжкие испытания ждут нас... Чувашия без России погибнет. Чуваши это поняли еще 400 лет назад, приняв православие (суйсан пысăк çылăх пулать, тенĕ халалсенчен пĕринче, кусем куçкĕрет суяççĕ — чăвашсене «упшур командисем» тĕне мĕнле кĕртсе çӳренисене, чăвашсем православие нихçан та хăйсен тĕнĕ тесе шутламаннине хăлха хĕррипе те илтмен пулас, илтесшĕн те мар. — *М.С.*)... Первым тяжким испытанием для Чувашии станет Национальный конгресс, который пытается привести ее к язычеству-колдовству, к поклонению идолам, тем самым он обре-

кает народ Чувашии на тяжкие страдания... («Не дайте диаволу увлечь вас», «СЧ», 219-мĕш номер).

Çук, хисеплĕ турă чурисем, ку юрра эпир пĕрре мар илтнĕ. Сирĕн хушăра, çав 52 çын хушшинче, нивушлĕ пурте çапла шутлаççĕ? Апла пулсан, эсир çиелтен çеç турă путеккисем, çылăхсăр чун тесе çветтуйла курăнма тăрăшакансем, чăннипе вара пурсăрăн ăшне те тахçанах усал кĕрсе вырнаçнă, унта шуйттан ларать. «Советская Чувашия» хаçатра тухнă «Исповедь» сăвăра манăн çакăн пек йĕркесем пур:

Дарами жизни вечной
владеть даст только Бог.
Он — в нашем сердце грешном.
И это — свет, любовь.

Çветтуй Синод обер-прокурорĕ К.П. Победоносцев, И.Я. Яковлев тусĕ, Ф.М. Достоевский тусĕ пулнăскер, чăвашсем тăван чĕлхепе турă кĕнекисем пичетлесе кăларнăшăн, чиркӳре чăвашла кĕлĕ ирттернĕшĕн, юрă юрланăшăн чунран савăннă, малалла та çаплах тума пехил панă, кусем вара... Кам хĕтĕртсе тăрать вĕсене?

Астăватăр ĕнтĕ, статьяна эпĕ М. Авелин турă чуринчен пуçларăм. Хаярлăх енĕпе вăл та çак 52 чураран ӳксех юлман. «Тамăкран (конгресран) ятарласа «Вучах» валли çырнă репортажĕнче вăл çапла та каланă: «Хуравлатăп (Хусанкая. — *М.С.*): сан пеккисем (Станъял, Туркай, Илле Иванов) — шав хускатакансем. Шав хускатса, алла влаç илсе... Чăваш Республикине салатаканĕ эсĕ пулăн...» Çапла хайрăнать хăйне хăй «турă чури» текенскер Чăваш Наци конгресĕн президентне Атнер Петрович Хусанкая хирĕç.

Хаярлăх кăна та мар ку çынра. Мĕн тăвас тетĕн: «Чĕри шăнса кайнă çав, чĕрĕ виле пулнă çав...» Генийĕмĕр К.В. Иванов кунта та йăнăшман, тĕп-тĕрĕсне каланă.

1992 çул, чӳк.

ВИЛӖМСӖР ЧУН...

«Асӑнмалӑх...» поэма авторӗ Людмила Атнакӑл (Людмила Николаевна Васильева) Тутарстан республикин Аксу районӗнчи Таркӑн ялӗнче 1930 ҫулхи пуш уйӑхӗн вун пиллӗкмӗшӗнче ҫуралнӑ, 1949 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗн вун пӗрмӗшӗнче вилнӗ. Ҫапла вара, вӑл пурӗ те вун тӑхӑр ҫул ҫеҫ пурӑннӑ, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи тата хыҫҫӑнхи калама ҫук йывӑр ҫулсене пула хӗне кайса ҫамрӑклах ҫӗре кӗнӗ. Ашшӗ, Хветут Микулайӗ, ӑна Атнакӑл Микулайӗ те тенӗ, ялти учитель пулнӑ. Ӑна 1934 ҫул пуҫламӑшӗнче колхоз председательне суйласа лартаҫҫӗ. 1935 ҫул пуҫламӑшӗнче пӗр йӗксӗк, колхозри выльӑх хвершӑлӗ, правленине темиҫе хутчен те тырӑ ҫыртарса илме пырать: ҫыртарса илет те сутса ӗҫсе ярать, татах пырать. Ҫакна пӗлсе тӑракан председатель ӑна юлашкинчен правленирен хӑваласа кӑларса ярать, урӑх пӗр пӗрчӗ тырӑ та ҫырса памасть. Вара ҫав ҫын Микулая тавӑрма шутланӑ, ӑна йӳҫӗ парса вӗлернӗ.

Амӑшӗ, Антун Кӗтерни, хут вӗренмен ахаль хресчен хӗрӗ пулнӑ. Вӑл ватӑличчен пурӑннӑ, сакӑр вун ҫичӗ ҫула ҫитсе вилнӗ. Ҫамрӑклах арҫынсӑр тӑрса юлнӑскер, виҫӗ хӗртен иккӗшне вӑл упраса ҫитереймен: Люда аппӑшӗн Зоян та пурнӑҫӗ ҫамрӑклах татӑлнӑ — хӗр ҫирӗм тӑватӑ ҫулта чухне гриппа чирлесе вӑхӑтсӑр вилнӗ. Чи кӗҫӗнни, Валя, халӗ те сывӑ. Вӑл, утмӑлтан иртнӗскер, Илешни ялӗнче пурӑнать. Унта 1963 ҫултанпах клуб пуҫлӑхӗнче ӗҫлесе пенсие тухнӑ.

Валентина Николаевна, 1955 ҫул пуҫламӑшӗнче кавча кайса, мӑшӑрӗпе пӗрле ултӑ ача пӑхса ҫитӗнтернӗ — икӗ хӗр, тӑватӑ ывӑл. Урӑхла каласан, Валя шӑпи, аппӑшӗсемпе танлаштарсан, самаях ӑнӑҫлӑ темелле, анчах та пурнӑҫра хуйхисуйхи унӑн та мӑй таранах пулнӑ: вунӑ ҫул каялла кӗҫӗн ывӑлӗ ҫарта пӳкле вилӗмпе вилнӗ, аслӑ ывӑлӗ, Чернобыль пӑтӑрмахне пӗтерме хутшӑннӑскер, пӗлтӗр ҫӗре кӗнӗ. Мӑшӑрӗ сакӑр ҫул каяллах пурнӑҫран уйрӑлса кайнӑ.

Людмила 1938 ҫул Таркӑнти пуҫламӑш шкулта вӗренме пуҫлать, 1942 ҫул тӑватӑ класс вӗренсе пӗтерет. Ҫитмен пурнӑҫа пула виҫӗ ҫул колхозра ӗҫлет. Вара 1945 ҫулта тин Илтрекъелӗнчи ҫичӗ класлӑ шкула вӗренме кӗрет, тӳрех улттӑмӗш класа ларать, ҫак тулли мар вӑтам шкула пӗтӗмпех

пиллĕк паллăсемпе вĕренсе пĕтерет, Мухтав хучĕ илме тивĕçлĕ пулать. Çакăн хыççăн пĕр çул хушши Чистайри ял хуçалăх техникумĕнче шут ĕçне вĕренет. Çакă ăна пит килĕшсех пĕтмен курăнать, вăл 1948 çулхине Аксури педагогика училищине вĕренме кĕрет.

Хĕрача спортпа туслă пулнă, йĕлтĕрпе аван çӳренĕ, яланах кроссене хутшăннă. Пĕррехинче вăл районти йĕлтĕрçĕсен кросĕнче пĕрремĕш вырăна тухнă, унтан питĕ пиçĕхсе килнĕ хыççăн, çырмара вакă умне выртса, шыв ĕçнĕ. Пысăк йăнăш тунă Люда сивĕ те чĕрĕ шыв ĕççе: унăн малашне апат анми пулнă, çиме витмен, вăл хĕне кайнă. Сывлăхĕ хавшанăскер, утаймиех пулса çитсен, Чистай пульницине кайса выртнă. Малтан ăна, чирĕ ытла та шала кайнă тесе, пульницана илесшĕн те пулман. Çакна курсан: «Коридорта вилетĕп, ниçта та каймастăп!» — тенĕ Люда. Вара илнĕ. Унта вăл икĕ уйăх выртнă. Икĕ уйăхран ăна, сыватса çитермесĕрех, пульницаран кăларса янă. Ултă уйăхран, çăварĕнчен юн аннипе, хĕр вăхăтсăр вилсе кайнă.

Людмила питĕ илемлĕ те маттур хĕр пулнă: хура мăшăр куçĕ çăлтăр пек çунса тăнă, пĕвĕ тăпăлкка та яштака курăннă. Уçă шăнкăрав пек сасăллă, çӳллĕ кăкăрлă, акăш пек ярăнса утакан пике чылай каччă чĕрине çунтарнă. Вăл вилсен, ăна пытарнă чух, пĕри, илтрекъелсем, пĕтĕм халăх умĕнче унăн тупăкĕ çине ӳксе, татăлса макăрнă.

«Эпĕ, йăмăкĕ пулсан та, аккаран яланах вăтанаттăмччĕ, — каласа парать Валентина Николаевна. — Вăл çав тери ăслă та илемлĕ çынччĕ, эпĕ ун çине пăхса тăранаймастăмччĕ, вăл сисмен хушăра ăна ытарайми сăнаттăм. Анне пире, виçĕ хĕре, пысăк тертпе пăхса çитĕнтерчĕ. Вĕренме нихăçан та чарман. Вĕренĕр, аçу вĕреннĕ çын пулнă, тетчĕ. Аккан ĕмĕчĕсем çунатлăччĕ: малалла вĕренме ĕмĕтленетчĕ, паллă сăвăç пуласшăнччĕ. Вăл калатчĕ: Валя, эпĕ ӳтĕмпе вилсен те чунăмпа вилместĕп, тетчĕ...»

Ĕненетпĕр эпир поэтесса йăмăкне: ӳчĕ аллă çул каяллах çĕре кĕнĕ пулин те, Людмила Николаевна Васильева (Атнакăл) чунĕ халĕ те пурăнать: çав чун — «Асăнмалăх...» поэма. Çур ĕмĕр арча тĕпĕнче выртнă вăл, анчах та произведени пурпĕрех, çапах, паян çырнă пек янăрать...

Поэмăна «Хыпар» хаçатăн 1998 çулхи 141—142 номерĕсенче (утăн вун тăваттăмĕшпе вун пиллĕкмĕш числисем) тата «Ялав» журналăн çиччĕмĕш номерĕнче тупса вулама пулать.

«Асăнмалăх...» поэма авторĕ сăвăсем те çырнă. Вăл вăхăтсăр вилнĕренпе аллă çула яхăн иртнĕрен, вĕсенчен нумайăшĕ çухалса пĕтнĕ, анчах та, телее, пуртех мар. Йăмăкĕ Валентина Николаевна «Асăнмалăх...» поэмăпа пĕрле çамрăк хĕрсем вăл вăхăтра пĕрне-пĕри çыра-çыра панă «альбомсенчен» пĕрерĕшне, аппăшĕ Нюра ятлă тантăшне çырса панине, упраса хăварма пултарнă. Ытти сăвă-юрăпа хутăш унта Людмила сăввисем те пур. Авторĕ ытла çамрăк пулнăран, пуçласа çыраканăн кашни япали ăнăçлă пулса тухнă теме çук: хăш-пĕр сăввине ун чухне çав тăрăхри, Тутарстанри Аксу районĕнчи, яш-кĕрĕм хушшинче сарăлнă юрăсем майлăрах çырнă. Тепĕр йышшине халăхра çӳрекен такмак сĕмĕ панă. Апла пулин те, Людмила Николаевна Васильева (Атнакăл) чăн-чăн талант пулни упранса юлайнă сăвăсенче те яр-уççăн курăнать, унăн йĕркисене тӳрех палласа илетĕн, никамăннипе те пăтраштармастăн.

Поэтесса сăввисенче ун чухнех тĕп тема çут тĕнче илемĕ, уйрăлу, асăну пулнă. Мăнтарăн хĕрупраçĕ ун чухнех сиснĕшим хăйĕн ĕмĕрĕ çав тери кĕске, пурĕ те вун тăхăр çул çеç пуласса? Шухăшлатăн та, пуçа çакăн пек шухăш та пырса кĕрет: Кĕçтенттин Ивановпа Çеçпĕл Мишши хыççăн тепĕр генилле поэта çухатмарĕ-ши тăван халăхăмăр?

1998, раштав.

ТУПМАЛЛИ

Повеҫҫем

Бандероль 7
Ҫутӑ шыв хӗрринче 74

Новелла-калав

Малтикас ачи 145
Ушкӑн-ушкӑн шур пӗлӗт... 154
Ашшӗҫӗр ӳҫет 159
Сочинени 163
Фараон 166
Моцарт ҫырнӑ рондо 174
Ҫулҫӑсем тӑкӑнаҫҫӗ 180
Асамлӑ хунарсем 186
Ҫурхи тӑман 204
Уйӑх ҫути 221
Горизонтри кӑвак комета 224
Пушар 240
Кивӗ арман 250

Пьесӑсем

Хӗсӗр хасар 267
Матриархат 319

Статья та очерк

Кӗтрет ҫути 369
Эп — ҫеҫпӗлҫӗ! 376
Вилӗмсӗр ҫутӑ 390
Михаил Сениэль: «Туслӑха ҫухатмарӑм» 393
Чунӗ хытнӑскерсем 396
Вилӗмсӗр чун... 400

Михаил СЕНИЭЛЬ
(Михаил Павлович Егоров)

ҪЫРНИСЕН ПУХХИ
СОБРАНИЕ СОЧИНЕНИЙ

Том шестой

БЕССМЕРТНАЯ ДУША

Повести, новелла-рассказ,
пьесы, статья и очерк

1960—2000
На чувашском языке

Редактор *И.П. Турган*
Художественный редактор *В.В. Садкова*
Корректор *Г.П. Егоров*
Оригинал-макет *Э.В. Кирилловой*

Подписано в печать __.__.2016
Формат 60×84 1/16
Бумага офсетная
Учётно-изд. л.
Тираж 300 экз.

Печать оперативная
Гарнитура Times
Физ. печ. л. 25,25
Заказ №

Отпечатано с готового оригинал-макета
в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время»
428034, г. Чебоксары, ул. М. Павлова, 50/1.
E-mail: newtime1@mail.ru; тел.: (8352) 41-27-98.